Э46
4-44802

Владимир Кузьмин

ЭЛКЕР ҪĂЛТĂРЛĂХĔ

ациональная библиотека ЧР
4-044802

К 87.39(Чув)6
Э46

ВЛАДИМИР КУЗЬМИН

ЭЛКЕР ÇĂЛТĂРЛĂХĔ

„Хĕвел" пахчинчи
çул урлă хисеплĕ
кӳршĕме Геннадий
Максимова,
ырă сунса

23.11.2009

Шупашкар
Çĕнĕ Вăхăт
2009

Семен Эльгер
Народный поэт Чувашии

Всему живому на Земле ты,
солнце, щедро чествуешь,
Кругом растут деревья, травы. Мир цветет.
Тобой никто не обделен.
Ты радостно приветствуешь
с улыбкой доброй жизнь Земли.
Тебя здесь каждый ждет.

Многоязычный род землян
себя же пусть не губит,
пусть чтит себе подобным он.
Под солнцем всем есть место.
Один другому, зла желая,
пусть голову не рубит,
Один народ другого
пусть не растопчет местью.

1918
Перевод Н.Теветкеля

Чăваш халăх поэчĕ Семен Васильевич Эльгер çуралнăранпа 115 çул тултарнине халалласа.

Ч-44802
Национальная библ
Чувашской Респ
Проверено 22 МАР 2017

ЧĂВАШ ХАЛĂХĔ:
ÇЕМЕН ЭЛКЕР, ЭСĔ – МАНĂН ПОЭТĂМ, ЭСĔ – МАНĂН ĂСЛĂЛĂХ ЮРТТИЙĔ

ИМ ГОРДИТСЯ ЧУВАШИЯ

Почетная Книга Трудовой Славы и Героизма Чувашской АССР учреждена 29 августа 1962 года постановлением бюро обкома КПСС, Президиума Верховного Совета и Совета Министров Чувашской АССР. В нее занесены особо отличившиеся работники промышленности, сельского хозяйства и других отраслей народного хозяйства, науки и культуры Чувашской АССР.

Первым в Книгу, в ознаменование героического космического полета, 29 августа 1962 года занесен славный сын чувашского народа летчик-космонавт СССР Андриян Григорьевич Николаев, дважды Герой Советского Союза, генерал-майор авиации.

Накануне Международного женского дня, в 1964 году в этой Книге появилась вторая запись об увековечении подвига летчика-космонавта СССР, Героя Советского Союза, жены Андрияна Николаева Валентины Владимировны Терешковой.

30 апреля 1964 года в Книгу ТСГ занесены дважды Герой Социалистического Труда бывший председатель Кольцовского колхоза имени Ленина Вурнарского района ЧАССР Сергей Ксенофонтович Коротков, Герой Социалистического Труда, бывший председатель колхоза имени космонавта А.Г.Николаева Мариинско-Посадского района ЧАССР Василий Васильевич Зайцев, главный инженер Чебоксарского хлопчатобумажного комбината Чувашской АССР Александра Ивановна Васильева, Герой Социалистического Труда фрезеровщик Чебоксарского электроаппаратного завода Николай Александрович Королев и народный поэт Чувашской АССР Семен Васильевич Эльгер.

Среди деятелей науки, литературы и искусства Чувашской АССР С.В.Эльгер удостоен чести быть занесенным в Почетную Книгу Трудовой Славы и Героизма – первым!

Эльгер Семен Васильевич родился 1 мая 1894 года в деревне Большие Абакасы Ибресинского района Чувашской АССР в крестьянской семье. Член КПСС с 1930 года.

В 1918-1919 годах С. В. Эльгер работал секретарем сельского Совета, председателем комитета бедноты в деревне Большие Абакасы, заведующим земельным отделом Кошлаушского волисполкома Ядринского уезда Казанской губернии. По окончании годичных педагогических курсов в 1920 году в течение двух лет занимался педагогической деятельностью.

В 1922 году С. В. Эльгер перешел в органы печати. Сначала он работал в газетах «Канаш» и «Пирен ял», затем в литературно-художественном журнале «Сунтал», с 1935 года работал старшим редактором художественной литературы Чувашгиза. С января 1950 года являлся писателем-профессионалом.

С.В. Эльгер был одним из основоположников чувашской советской литературы. Начав литературную деятельность в 1918 году, он весь свой талант, знания и труд посвятил этому важному партийному делу. Как большой художник слова и общественный деятель, поэт в своих произведениях выражал мысли и чувства народа, его жизнь. В поэме «Под гнетом», романе-хронике «Дни войны», в историческом романе «На заре» он яркими красками показал невыносимо трудную жизнь чувашского народа в годы царизма, рост политической сознательности крестьянства и солдат на фронтах первой империалистической войны, борьбу народа против помещиков и капиталистов в дни Февральской и Великой Октябрьской революций, в начале гражданской войны.

Чувашскую деревню в годы становления и укрепления Советской власти, борьбу представителей старого и нового мира, победу трудового народа над эксплуата-

торами поэт представил в драматической поэме «Восемнадцатый год».

С. В. Эльгер шел по жизни мужественной поступью поэта и человека, всегда знающего свои цели в литературе, свой долг советского патриота и гражданина. В годы Великой Отечественной войны он написал ряд очерков и публицистических статей о славных сынах чувашского народа, храбро сражавшихся с немецко-фашистскими захватчиками на фронте, о рабочем классе и колхозном крестьянстве, проявивших трудовую доблесть в тылу. Поэт создал также небольшие рассказы, поэмы и сказки для детей и юношества.

Многогранна и богата деятельность С. В. Эльгера как поэта. Плодотворно работая почти полвека в литературе, он в то же время много сил и энергии отдал воспитанию молодых писателей и поэтов. С созданием чувашской писательской организации С. В. Эльгер бессменно избирался членом правления Союза писателей, в литературно-художественных журналах постоянно выступал с консультациями и статьями по теории литературы, редактировал произведения молодых авторов.

Одновременно поэт вел активную общественно-политическую деятельность. Он избирался членом Чувашского обкома КПСС, депутатом Верховного Совета РСФСР третьего и четвертого созывов.

За большие заслуги в развитии чувашской советской литературы, активную общественно-политическую деятельность 30 апреля 1964 года Семен Васильевич Эльгер занесен в Почетную Книгу Трудовой Славы и Героизма Чувашской АССР.

С В Эльгер награжден орденами Ленина, Трудового Красного Знамени, медалью «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941 – 1945 гг.». Ему присвоено почетное звание народного поэта Чувашской АССР.

С. В. Эльгер умер 6 сентября 1966 года.

ИЗ ДЕВЯТИТОМНОЙ «КРАТКОЙ ЛИТЕРАТУРНОЙ ЭНЦИКЛОПЕДИИ»

(Москва – 1975)

Эльгер, Семен Васильевич (19.1V – I.V). 1894, дер. Большие Абакасы, ныне Ибресинекого р-на Чувашской АССР, – 6.IX.1966, Чебоксары) – чувашский советский писатель. Член Коммунистической партии с 1930. Народный поэт Чувашской АССР (I940). Род ился в крестьянской семье. Во время 1-й мировой войны попал в плен, возвратился в 1918. Принимал участие в установлении Сов. власти в деревне. С 1922 сотрудничал в газете «Канаш» («Совет»), журн. «Сунтал» («Наковальня»), был редактором Чувашгиза (1937-49]. Печатался с 1921. Эльгер – один из зачинателей чуваш. сов. поэзии. В 1928 вышел первый сборник его стихов «Эпоха» («Самана»), в котором основное место занимают стихи историко-революционного характера, а также баллада о В.И.Ленине «Стальной корабль». В 1931 опубл. историч. поэму «Под гнетом» (рус. пер. I960). Эльгер – автор романов: о борьбе чувашского крестьянства за землю и полит права в 1905-07 – «На заре» («Шурăмпуç килсен», 1940, рус. перев, 1958), о событиях 1-ой мир. войны и революции – «Сквозь огонь и бури» («Вутпа çулăм витĕр», 1949); о жизни Чувашии в годы Гражданской войны повествует драматическая поэма Э. «Восемнадцатый год» – «Вунсаккăрмĕш çул», 1953). Эльгер присуще бережное отношение к богатствам народной речи, к изобразит, средствам чуваш, песен, сказок и легенд.

Соч.: Çырнисене пухса кăларни: т. 1-5, Шупашкар, 1960 – 1964.

Лит.: Кузьмин А., Худож. проза нар. поэта Чувашии С.В. Эльгера, Чебоксары, 1961; Хлебников Г. Чуваш. роман, Чебоксары, 1966; Чуваш, писатели. Биобиблиографич. справочник, Чебоксары, 1964.

Н. С. Дедушкин.

МИХАИЛ ЮРЬЕВĂН «ЧĂВАШ ПИСАТЕЛĔСЕМ» БИБЛИОГРАФИ СПРАВОЧНИКĔНЧЕН ШУПАШКАР – 1968

Семен Васильевич Элкер 1894 çулхи майăн 1-мĕшĕнче Чăваш АССРĕнче, Йĕпреç районĕнчи Мăн Упакассинче, вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн пулас поэтăн малалла вĕренме май килмен. Çĕршывра пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçланичченех вăл ялта ака-суха туса пурăннă. 1915 çул пуçламăшĕнче ăна патша çарне илсе кайнă. Запасра тăракан пĕр полкра уйăх ытларах пурăннă хыççăн вăл аманса Австро-Венгрие тыткăна лекнĕ. Вăрçăра хавшанă сывлăха тӳрлетес тесе, С.Элкерĕн чылай вăхăт хушши Петроградпа Хусанти госпитальсенче выртма тивнĕ.

Октябрьти Аслă революци хыççăн вăл Хусанти аслă шкулсене кĕме хатĕрлекен курса вĕренме кĕнĕ. 1918 çулхи кĕркунне С.Элкер каллех яла тавăннă. Малтан вăл чухăнсен комитечĕн председателĕ, унтан Кушлавăш вулăс ĕçтăвкомĕн членĕ пулнă, пĕр вăхăт вулăсри çĕрĕç пайне ертсе пынă. 1919 çул вĕçĕнче С.Элкер каллех Хусана кайнă, учительсем хатĕрлекен курсра вĕреннĕ. 1920 çулта хăйсен ялĕнчи пуçламăш шкулта ĕçлеме пуçланă.

1922-1935 çулсенче С.Элкер «Канашпа» «Пирĕн ял» хаçатсен тата «Сунтал» журнал редакцийĕсенче ĕçленĕ, ун хыççăн Чăваш кĕнеке издательствинче илемлĕ литература редакцийĕн аслă редакторĕ пулнă.

1950 çултанпа вăл пенси илсе пурăннă, халăх ĕçне хастар хутшăннă. 1958 çулта ăна КПСС Чăваш обкомĕн членне, икĕ хутчен РСФСР Верховнăй Совечĕн депутат-

не суйланă. 1937 çултан пуçласа вун пилĕк çул хушши пĕр вĕçĕмсĕрех Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени членĕ пулнă.

Тăван литературăна аталантарас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн 1940 çулта Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ С.Элкере Чăваш халăх поэчĕ ятне панă, 1945 çулта ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, 1950 çулта Ленин орденĕпе наградăланă. 1964 çулта КПСС обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ тата Министрсен Совечĕ писатель ятне Чăваш АССР Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп Кĕнекине кĕртмелле тунă.

С.Элкер 1930 çултанпа парти ретĕнче тăнă, 1934 çултанпа СССР писателĕсен Союзĕн членĕ пулнă.

Поэт 1966 çулхи сентябрĕн 6-мĕшĕнче Шупашкарта вилнĕ.

Хăйĕн пирвайхи произведенийĕсене С.Элкер 1917 çулта çырнă, малтанхи сăвви («Çамрăк хурăн») 1921 çулта «Канаш» хаçатра пичетленнĕ. «Самана» ятлă пирвайхи сăвă кĕнеки (1928) поэт уйрăмах чăваш халăхĕн кун-çулĕпе интересленнине кăтартса панă. Çав кĕнекери «Хурçă карап» сăвă, В.И.Ленин çинчен çырнăскер, поэт пултарулăхĕшĕн уйрăмах паха та хаклă.

Поэт халăхăн ĕлĕкхипе хальхи пурнăçне, унăн шухăшĕмĕчĕсене хăйĕн нумай произведенийĕсенче туллин те тĕрĕс сăнласа панă. «Хĕн-хур айĕнче» поэмăра чăваш хресченĕсем XVIII ĕмĕр вĕçĕнче пусмăрçăсене хирĕç кĕрешнине çырса кăтартнă. «Шурăмпуç килсен» романра чăваш халăхĕ 1905-1907 çулсенчи революци юхăмне хутшăнни çинчен çырнă. «Вутпа тăвăл витĕр» (малтанхи вариançĕсем «Вăрçă кунĕсем» тата «Вутпа çулăм витĕр» ятсемпе тухнă) роман-хроника пĕрремĕш тĕнче вăрçи

тата граждан вăрçи вăхăтĕнче салтаксен революциллĕ ăнланулăхĕ ӳссе пынипе, вĕсем çĕр улпучĕсемпе капиталистсене хирĕç кĕрешнипе паллаштарать.

«Вунсаккăрмĕш çул» драмăллă поэмăра С.Элкер Совет влаçĕ тунă тата вăл çирĕплексе пынă çулсенчи чăваш ялне, кивĕ тĕнчепе çĕнĕ тĕнче представителĕсен кĕрешĕвне, ĕçхалăхĕ эксплуататорсене хăюллăн çĕнтернине кăтартса панă.

С.Элкер Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕсем фронтра фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç хăюллă çапăçнă паттăрсем çинчен, тылра вăя шеллемесĕр ĕçленĕ рабочи класпа хресченсем çинчен очерксемпе публицистикăллă статьясем нумай çырнă. Иван Смирнов пулеметчик çинчен çырнă «Вăл вилĕмсĕр» поэма чăваш совет литературин Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи лайăх произведенийĕсенчен пĕри шутланать.

С.Элкер пултарулăхĕ нумай енлĕ. Унăн çутçанталăк илемне сăнласа кăтартакан сăвăсем те, çĕршыв чапне мухтаса юрлакан сăвăсем те, сăвăласа çырнă юмахсем те сахал мар. «Хĕрлĕ çăлтăр» (1922), «Чиркӳ сумĕнче» (1923), «Илемсĕр пурнăçпа тутлă ĕмĕтсем», «Тĕттĕм çын аташать» (1926), «Йăмра» (1934), «Кивĕ ялта» (1935), «Унтри» (1938), «Ĕç шыраса» (1947), «Итлемен ача», «Электричество» (1949) калавсем, «Шуçăм килнĕ чух» (1926) поэма, «Хурапа шурă» (1936) повесть тата «Вутпа тăвăл витĕр» (1958) роман-хроника писатель хăйĕн ăсталăне ӳстерес тесе ывăнма пĕлмесĕр ĕçленине, яланах пурнăçпа тан пыма тăрăшнине лайăх кăтартса параççĕ.

Поэт тăван литературăри ытти писательсен ĕçне те тимлĕ сăнаса тăнă. Вăл К.Ивановпа Хумма Çеменĕ, М.Данилов Чалдунпа А.Эсхель тата Г.Тал-Мăрса çинчен

тĕплĕн тишкерсе çырнă. Ытти статьясенчен çаксем уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ: «Чăваш илемлĕ литературипысăк пултарулăх тапхăрĕнче», «Çырма пуçлакансем пирки ик-виçĕ сăмах» (1933), «Сунтал» - чăваш чĕлхин хурçă сунталĕ» (1939), «Творчество ăсталăхне ӳстерессишĕн» (1935).

С.Элкерĕн чăвашла çакăн пек кĕнекесем тухнă: «Самана» (сăвăсем, 1928), «Хĕн-хур айĕнче» (поэма, 1931, 1937, 1948, «Вăрçă кунĕсем» (мемуарсем, 1937), «Шурăмпуç килсен» (роман, 1940, 1953), «Тĕп пултăр фашизм» (виçă пайлă пьеса, 1941), «Улăпсем» (сăвăллă юмах», 1941), «Ирĕклĕх юррисем» (сăвăсем, 1942), «Çутă кунсем» (ача-пăча сăввисем, 1945), «Вăл вилĕмсĕр» (поэма, 1946), «Юмахсем» (1947), «Тырă вырнă чух ирхине» (поэма, 1948), «Вутпа çулăм витĕр» (роман-хроника, 1949), «Ешĕл хунав» (очерк, 1952), «Вунсаккăрмĕш çул» (драмăллă поэма, 1953), «Ашшĕпе ачисем» (калав, 1957), «Хĕрлĕ çăлтăр» (калавсем, 1959), «Ирĕк çĕршывра» (сăвăсем, 1960). Поэт, хăй çырнисене пĕтĕмпе пĕтĕçтерсе, 1960 – 1964 çулсенче пилĕк том (кĕнеке) туса кăларчĕ.

С.Элкер çырнисенчен çак произведенисене вырăсла куçарса кăларнă: «Шурăмпуç килсен» (роман, 1958), «Улăпсем» (сăвăллă юмах, 1959), «Хĕн-хур айĕнче» (поэма, 1960).

Поэт пултарулăхĕ çинчен çырнă паллăрах статьясем: Шолки Петри – Класс кĕрешĕвĕн историллĕ поэми» («Сунтал», 3-4 №, 1932), Д.Данилов – «Хĕн-хур айĕнче» – историллĕ поэма» («Трактор», 5 №, 1933), Е.Захаров – «С.В.Элкер» («Чăвашсен илемлĕ литератури» кĕнекере, 1934), Е.Романова – «Усăллă кĕнеке» (Вăрçă кунĕсем» мемуарсем çинчен, «Сунтал», 4 №, 1938), Е.Романова – С.Элкерĕн «Унтри» калавĕ» («Сунтал», 8 №, 1938),

В.Долгов – Элкер – Чăваш халăх поэчĕ» («Сунтал», 8 №, 1940), А.Эсхель – «Семен Элкерĕн творчествăлла çулĕ» («Сунтал», 3 №, 1941), Л.Агаков – «Пирĕн геройсем вилĕмсĕр» («Ялав», 5 №, 1946), Г.Краснов-Кĕçĕнни – «Чăваш халăх поэчĕ» («Ялав», 2 №, 1947), А.Эсхель – «Халăх поэчĕ» («Ялав», 2 №, 1951), М.Сироткин – «Халăх поэчĕ» («Коммунизм ялавĕ», майăн 3-мĕшĕ, 1954), Н.Григорьев – «Вунсаккăрмĕш çул» («Ялав», 1 №, 1955), Митта Ваçлейĕ – «Юратса çырнă кĕнеке» («Ешĕл хунав» кĕнеке çинчен, («Ялав», 4 №, 1955), А.Кузьмин – «С.Элкер пултарулăхĕн пирвайхи тапхăрĕ» («Тăван Атăл», 6 №, 1960), А.Кузьмин – «Вырăс писателĕсен Элкер прозинче палăрнă илемлĕ традицийĕсем» («Ялав», 12 №, 1960), А.Кузьмин – «Элкерĕн çĕнĕ повеçĕ» («Хурапа шурă» повесть çинчен, «Коммунизм ялавĕ», 1963, августăн 4-мĕшĕ), В.Долгов – «Хĕн-хур айĕнче» поэма» («Чăваш литературин сăн-сăпачĕ» кĕнекере, 1963), П.Хусанкай – «Ушкăн çăлтăрăн асли» («Ялав», 4 №, 1964), Г.Хлебников – «Вăл – самана юрăçи» («Коммунизм ялавĕ», 1964, майăн 9-мĕшĕ), Н.Григорьев – «Халăх поэчĕ» («Тăван Атăл», 3 №, 1964), А.Алга – «Поэта асăнса» («Ялав», 10 №,1966).

Поэт пултарулăхĕ çинчен вырăсла çырнисем хушшинче А.Кузьминăн «Художественная проза народного поэта Чувашии С.В.Эльгера» кĕнеки (1961) уйрăмах паллă вырăн йышăнать. М.Сироткинăн «Очерк истории чувашской советской литературы», Н.Дедушкинăн «Чувашская литература периода Великой Отечественной войны», В.Абашевăн «Чувашская поэма», Н.Павловăн «Проблема конфликта в чувашской драматургиии», П.Хусанкайăн «Книга дружбы», Г.Хлебниковăн «Чувашский роман» кĕнекисенче те поэт пултарулăхне тĕплĕн тишкернĕ. Ку-

семсĕр пуçне, унăн пултарулăхĕпе çак статьясенче те чылай паллашма пулать: А.Эсхель – «Халăх поэчĕн çулĕ» («Тăван Атăл», 18№, 1944), М.Сироткин – «Творчество С.В.Эльгера» (ЧНТИ кăларакан ученăй запискăсен VI кĕнеки, 1952), К.Горбунов – «Народ и его певцы» («Знамя», 8 №, 1955), Е.Шатуновский – «На крутом берегу» («Литературная газета», 1955, февралĕн 24-мĕшĕ), М.Сироткин – «Народный поэт Чувашии Семен Эльгер» («Дружба», 6 №, 1956), Ю.Анненков – «Роман в стихах» («Хĕн-хур айĕнче» романа вырăсла куçарни çинчен, «Литература и жизнь», 1961, июлĕн 12-мĕшĕ), С.Даронян – «Монография о С.Эльгере» («Советская Чувашия», 1962, январĕн 18-мĕшĕ), М.Юрьев – «Запевала советской поэзии» («Советская Чувашия», 1964, майăн 9-мĕшĕ), М.Сироткин – «Чувашская литература двадцатых годов» (Кироври пединститут кăларакан ученăй запискăсен XXVI кĕнеки, 1966), В.Канюков – «Некоторые особенности развития чувашской литературы тридцатых годов» (çавăнтах).

СЕМЕН ЭЛКЕРЁН АСА ИЛЁВЁСЕНЧЕН

КИЛ ЙЫШЁ. Пирён кил йышё пысăк. Анне 11 ача çуратнă та, вёсенчен икё ывăл, чи аслипе чи кёçённи çуралсанах вилнё. Пёр тăвансем тăххăрăн шёшкё хунавёсем пекех сыввăн ӳссе çитёнетпёр. Асли Улюк (1876 çулта çуралнă) акка, пёчёкрех, асси пуснă тет хăйне хăй; ун хыççăнхи пичче Хёветюк (1878 çулта çуралнă), ку вара аттепе шăкăртатсах калаçкалатчё. Маттюк, Якур, Ириçça, Павăл, Тимахви, Симун, Марья – Улюкпа Хветюкран кёçённисем. Кил-çуртри йывăр ёçсем пётёмпех çав икё асли çине – Улюкпа Хветюк çине ӳкнё ёнтё. Ыттисем ачашрах пулнă пулас.

1924 ç.

* * *

Сентябрь вёçнелле Шупашкара Василий Бисяков килчё. Вăл мана хам анне вилни çинчен пёлтерчё.

Мёскён, шеремет анни!.. Усал дизентери чирёнчен упранаймарё такки. 1925 çулхи августăн 16-мёш кунёнче эпё ирхине ирех унпа юлашки хут калаçса уйрăлтăм. 2 эрнелёхе курнăçма кайсан 1-15 числасенче вăй пур таран ăна пулăшрăм. Ёç çи вăхăчё – ăна пăхакан та çукчё. Çавăнпа эпё килте пулăшкаласа тăни ăна питё кăмăллă пулчё. Вăл мана уйрăлас умён:

– Ачам, эп тахçан чёрлёп... Кайма вăхăт çитрё пулсан каятăн пулё... Спаçипă, сана, Симун ачам, мана самаях пулăшрăн... – терё.

Укçам сахал пулчё, тен, эпё ăна вилёмрен те çăлса хăварнă пулăттăм. Эпё Шупашкара килсен вăл апат начаррипе тата пăхакан çуккипех вилнё пулас. Шеремет, хăй виличчен пёр уйăх малтан çеç ёçлеме пăрахрё. Сыв

мар пулсан та пуса татать, эпĕ пыриччен пĕр-икĕ кун анчах тырă вырма кайман... Ĕçлеме хам чартăм. Ватă вăл... анчах вăл вилнĕшĕн унăн çемçе кăмăлне аса илсе çавах та чунăм хурланать. Анне! Иртрĕ ĕмĕрӳ.

1925 çул, ноябрĕн 25-мĕш кунĕ.

К ДЕСЯТИЛЕТИЮ СО ДНЯ СМЕРТИ ОТЦА

31 января 1928 года исполнится 10 лет со дня смерти отца моего – Василия Федотова. Смерти его мне не суждено было видеть, так же как не видел и смерти матери.

Прощался я с отцом в последний раз в июле 1917 года, когда я выехал в Казань на лечение от открывшейся раны.

Был тихий и солнечный июльский день. Брат Тимофей запряг лошадь, сели на плохонькую телегу, простился с родителями, и ничуть не подозревая то, что это «последнее расставание» с отцом выехал из отцовского дома.

Несмотря на недостатки, нужду и переживания бесконечного горя отец мой был еще бодр. От роду он имел 69 лет. Но не было еще седины на волосах.

Лицо отца: худощавое, морщинистое – цвета бледно-румяного оттенка. Длинно-остриженные русые волосы горшком покрывали его в среднюю величину квадратную голову.

Светло-серого (и даже голубого) цвета глаза смотрели на человека проницательно. (У нас из 9-ти выросших детей только один Павел наследовал цвет отцовских глаз. А прочие все, как мать, имели и имеем карие глаза). Борода у отца окружала подбородок небольшим квадратиком, в курчавых волосках.

Рост – средний, сложение – среднее, немного сутуловатый.

Язык – быстрый, строптивый и живой. Из детей его, особенно сыновья Павел, Тимофей, частично и я наследовали отцовский стиль разговора. Павел и Тимофей даже с рекордом.

Характер отца был вспыльчив. В ярости гнева он готов был растерзать своего противника.

Не любил он сидеть или лежать без дел. Либо плотничал, либо работал в лесу у лесопромышленников (работал по клепке дубовых досок и при теске шпал). Если дома – то занимался починкой кожаных рукавиц и подшивкой валенок, каковых носили ему мужики почти со всей деревни. Не курил, мало пил.

Мать моя была характером мягкая, теплодушная и безгранично любила своих детей, и любила их всех одинаково. Она не хотела разлучаться с ними и вечно хотела держать их при себе на глазах. Если отец начинает ругать кого-либо из детей за непослушания, мать заступается за деетй, и гнев отца направляется на нее. Но он не бил жену и уважал ее.

Мать не лишена была поэтической возвышенности. Говорила о старине, о пережитом ей самой и картинно разрисовывала свой рассказ своим слушателям.

1.11.28 г.

ПЕРВАЯ ЛЮБОВЬ

Первая любовь моя появилась в последний год учебы к ученице В., девчонке белокурой, худощавой и синеглазой. Ей было одиннадцать лет. До этого я не знал чувства любви. А любовь эта, нежная и чистая любовь, разгорелась так страстно и так сильно, что я не мог видеть спокоя в отсутствии Вассы... Писал я ей свои горя-

чие и пышащие пламенем слова... Но она не смогла ответить мне ни письменно и ни словесно. Быть может она не могла понять чувства и порывы любви. Я мучился и страдал, не получая взаимного ответа. В.С. жила от нас далеко, на другом конце деревни, в расстоянии полутора версты... Чувство страстной любви ослабло медленно, не получив ответа. Через год я ее постепенно стал забывать, но эта любовь оставила глубокий след на всю молодость, она снова и снова вспыхивала при каждой встрече с этой девушкой. Но писем к ней больше не писал. В.выросла стройной и скромной. Большеглазая, белокурая девица, единственное дите у зажиточных родителей, не суждено было соединить свою жизнь с моей. Правда, она меня также любила, об этом узнал я только тогда, когда стал уже взрослым парнем. Но начавшаяся империалистическая война развеяла все наши мечты, разлучив нас навсегда. Я стал инвалидом и не думал жениться. Расставаясь со всякой мыслью, что когда-нибудь буду женатым, уехал в Казань, а она в это время вышла замуж за достойного и уважаемого мною парня Н., за что я был доволен.

1930 г.

60 ҪУЛ ТУЛТАРТĂМ. 60 тултарни – çын пурнăçĕ хăй ĕмĕрĕн тӳпемне хăпарса çитнине пĕлтерет. Ватăлса пынă май этем хăйĕн хыçала юлнă пурнăçне лайăхрах ăнланма тытăнать.

Эпĕ тăрлавсăр çынах пулман. Яланах урă ăслă та тӳрĕ кăмăллă пулма тăрăшнă. Ĕçлеме юратнă. Хамшăн кăна мар, халăхшăн та ĕçлеме хавас пулнă. Çамрăк чух вăй та, сывлăх та çителĕклĕ чухне, халăх ĕçĕнче вĕресе кăна тăнă. Халăх хушшинчи пысăк ĕçсенчен пăрăнса тăман, çав ĕç

Национальная библиотека Чувашской Республики

хушшине кĕрсе кайса мĕн чухлĕ те пулин ĕçлеме тăрăшнă.

Манăн ачалăхпа яшлăх кун-çулĕ вăл кивĕ саманара, çĕр-шыва самодержавиллĕ патша влаçĕ пусса тăнă вăхăтра иртсе кайнă.

Советлă çĕнĕ саманана çитсе мирлĕ ĕçе тытăниччен, ирĕклĕ пурнăçпа ирĕклĕн ӳссе çитĕнсе пыма пуçличчен манпа пĕр тантăшри тата манран аслăрах çынсен те чи малтан вăрçă вучĕпе революци тăвăлĕсем витĕр тухмалла килчĕ. Çав вутпа тăвăл самани витĕр тухасси вăл çăмăл пулмарĕ. Кĕрешмелли, чăтса тӳсмелли пайтах пулчĕ. Выçă та нумай хăшкăлнă, тӳснĕ. Çапах та çав ĕмĕртен ĕмĕре асăнмалла историлле паллă ĕçсене курмалла пулнăшăн, çав вутпа тăвăллă саманара ӳссе çитĕннĕшĕн эпĕ хама телейлĕ тетĕп.

Хамăн ĕçсенче эпĕ яланах таса чунлă пулма тăрăшрăм, ĕçĕмсем халăхшăн усăллă пултăрччĕ тесе çунтăм.

Мĕншĕн тесен халăх хăйĕн тӳрĕ кăмăллă та таса чунлă ывăлĕ-хĕрĕсене анчах юратать. Вăл вĕсене пархатарлă ĕçсемшĕн хăçан та пулин тав туса тавăратех.

1954 çул, майăн 23-мĕшĕ.

КИЛЕ ТАВРĂНСАН

Эй, Кушлавăш, ешĕл уй, –
Çут ачалăхăм сăпки!
Пĕл, ăнланччĕ мана, туй:
Эс ман пурнăç кăвапи,
Туй, эп хушăн çуннине,
Пĕл – сана манмассине.
Йышăн мана ытамна –
Вăрçă хуçнă ывăлна!

Йышăн... Сывлăх пирчиччен
Пар канма чĕрçӳ çинче...
Ик-виç çул эп аякра
Саншăн тĕмсĕлтĕм ăшра:
Малтан – вăрçă хирĕнче,
Тыткăнра, ют çĕрсенче,
Унтан – хамăр çĕр-шывра,
Тĕрлĕ шавлă хулара.
Эс таçта та яланах
Аса килтĕн час-часах...

Эй, Кушлавăшăм, нихçан
Тĕрĕс ачуна ан ман!
Ирĕк пар, – атте-аннем
Йăва хывнă кĕтесре,
Вĕсен ашшĕ-амăшсем
Ĕмĕр пурăннă çĕртре
Киленме – вăрмансенче,
Çак вут-çиллĕ кунсенче.
Таврари сĕм вăрману,
Уй çинчи шенкер сăну –
Илĕртетчĕç ют çĕртен,
Сăрт-ту урлă, инçетрен...
Сан чĕрçӳ çинчи мăн ял –
Сăртламри Упакасси
Мана панăччĕ ăс-хал,
Пачĕ – сăвăçă сасси.
Уншăн – тав сана, рехмет!

Халь çав сас санпа пуплет.
Санăн тăрăх çӳресен –
Курăнать ман яш кун-çул,

Аслă вăрмана кĕрсен –
Эх, илемлĕхĕ мĕн чул!
Уй тӳписенчен пăхсан
Курăнать вун икĕ ял;
Вак шывсем юхаç туран:
Йĕкĕс, Кушлавăш, Çавал...
Çак йăмраллă тĕп ялсем,
Йăлтăркка юхан шывсем,
Хырлă, чăрăшлă вăрман –
Ĕмĕр тухмĕç асăмран;
Хуть таçта пулам, ĕçлем –
Пуçăмрах ман çак илем.
Вĕсенчен инçе кайсан –
Чĕреме касать суран;
Хуçăк турат типнĕ пек
Саншăн типшĕретĕп тек...

Ак халь çак уйра утса
Мĕн-мĕн пулнă – йăлт сăнап;
Иртнĕ пурнăçа курса
Йăл кулап е хурланап...
Эй, Кушлавăш, ешĕл уй,
Пĕл ман чунăма эс, туй:
Ĕмĕр манмăп эп сана;
Ан ман эс те ывăлна!

1918, июнь.

КУШЛАВĂШ УЙĔ ĔЛĔК ТАТА ХАЛĔ

Элкер çинчен калаçма пуçласанах чылай çын унăн шкулта вĕреннĕ чухне тата каярахпа астуса юлнă «Хĕн-хур айĕнче» поэмин пуçламăшне аса илет:

Кушлавăш текен вун икĕ ял уйĕ
Хура вăрманпа хупланса выртать;
Çулла е хĕлле – такам та туйĕ –
Вăрманлăх кунта хŷтлĕхне тытать.
Хаваслă кĕтес! Сывлать вăл кал-кал...
Илемлĕ, аслă çакăнти вăрман.
Пĕр-икĕ ĕмĕр пирĕнтен авал
Вĕçĕ-хĕрри ун ниçта курăнман...

Анчах та Кушлавăш уйĕ ăçтине, мĕн анлăшне тата унта камсем хăйсен ĕмĕрне ирттернине пĕлмен чăваш

Çемен Элкер. 1920 çулхи пуш уйăхĕ. Хусан.

та нумай. Семен Васильевич 1966 çулта пичетленĕ «Кушлавăш уйĕ» очеркра çапла çырса кăтартнă ун пирки:

«Кушлавăш уйĕ Канашран Çĕмĕрлене тата Улатăралла каякан чукун çулсем хушшинче выртать. Унта пурĕ вун икĕ ял. Вĕсенчен вуннăшĕ: Кушлавăш сали, Пысăк Упакасси, Пĕчĕк (Анатри) Упакасси, Шуркасси, Шĕпекеч, Ершипуç, Кӳстӳмĕр, Хураçырма, Кив Мӳрĕш (Мамалай), Çĕн Мӳрĕш (Булатово) – чăваш ялĕсем: иккĕшĕ – Кольцовкăпа Зеленовка (Амачкин) – ĕлĕк помещиксем тытса илнĕ çĕр çинче ӳссе ларнă вырăс ялĕсем.

Кушлавăш уйне хĕвел анăçпе çурçĕр енчи Хапăс-Уравăш–Хирпуç–Рункă-Ачча çĕрĕсенчен Кĕçĕн Çавал шывĕ уйăрса выртать; хĕвел тухăçĕпе кăнтăр еннелли Хумпуç уйĕнчен Кушлавăшпа Йĕкĕс шывĕсем тата çак шывсем тăрăх тăсăлакан хыр вăрманĕ уйăрать; кăнтăрпа хĕвел анăç хушшинчен Сăр вăрманĕ чикĕлесе тăрать.

Пĕр хĕрĕх-аллă çул ĕлĕкрех çеç-ха, Çавалпа Вăрнар шывĕ тăрăх тĕлĕпе хырлăх, тĕлĕпе юманлăх кашласа ларнă чух, Сĕм Чăрăшлă Кӳстӳмĕр катипе Уравăш-Хирпуç ращисем те ирĕклĕн сарăлса ӳснĕ чух, Кушлавăш уйĕн çурçĕрпе хĕвел тухăç хушшинчи чикки те хура вăрманпа хупланнă пекех туйăнатчĕ.

«Кушлавăш уйĕ» тенине урăх çĕрти чăвашсенчен хăшĕ-хăшĕ «Кушлавăш тăрăхĕ» теççĕ, теприсем тата «Кушлавăш таврашĕ» тесе чĕнеççĕ.

Кушлавăш уйĕнчи вун икĕ ялăн кашниннех хăйне уйрăм ячĕ пур. Анчах та ытти çĕрти чăвашсем çав ялсене пурне те «Кушлавăш» ячĕпе çыхăнтарса каласан çех аван пĕлеççĕ. Сăмахран: Кушлавăш Упакасси, Кушлавăш Хураçырма, Кушлавăш Шуркасси тесе каламалла тата ытти те. Çапла вара кунти чăваш ялĕсене пĕрлештерсе тăракан пĕр кăк, пĕр тĕп ят «Кушлавăш» пулса тăрать.

Пĕр тăрăхри темиçе яла çакăн пек пĕр тĕп ятпа çыхăнтарса чĕнесси вăл авалах, çак тăрăхри ялсем уй çĕрĕпе усă курассинче пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса тăнинчен тухнă. Вĕсен тырă акса тумалли, çаран çулмалли пусу çĕрĕсем темиçе ялăн пĕрле хутшăнса тăнă. Ăна вырăсла «сложное землепользование» тенĕ.

Хальхи Кушлавăш уйĕ текен тавралăх вăл XVII ĕмĕрччен вăрманлă ятсăр вырăн пулнă. Унта ниçта та нимĕнле «Кушлавăш» тени пулман. Вăрман хушшипе хĕвел анăçĕнчен тухăçалла пысăк мар, анчах та çыран туллиллĕ шывсем юхса выртнă. Шывĕсен те ячĕсем пулман. Пĕр пысăкрах шывне çех Кĕçĕн Çавал тенĕ. Ун çумĕнче выртакан çĕрсене Кĕçĕн Çавал тăрринчи вăрманлăх тенĕ. Пулас Кушлавăш уйĕ те çак вăрманлăхах кĕнĕ.

Хăçан, хăш çулта килсе çитнĕ ку вырăна чи малтанхи çынсем – ун çинчен уççăнах татса калама çук. Анчах та 1700 çул тĕлнелле ку таврара çынсем пурăннă ĕнтĕ. Йăлкăшса юхса выртакан Вĕлтренпе Пăтавăш тата Кĕçĕн Çавал хĕррисенчи уçланкăсенче икшер-виçшер кил-çурт курăнкаланă.

Чи малтанхи çынсем кунта пĕчĕк ушкăнсемпе Çавал шывĕн анат вĕçĕнчен килсе ларнă. Малтанах Кушлавăш çыннисем килсе çитнĕ те хăйсем йышăнса илнĕ тавралăха «Кушлавăш» çĕрĕ тесе çыртарнă. Çавăнтан вара Çавал тăрринче Кушлавăш уйĕ пуçланса кайнă.

Анат Çавалта Кушлавăш тенĕ ял иккĕ пулнă: пĕри – Пысăк Кушлавăш, тепри – Кĕçĕн Кушлавăш. Çыннисем иккĕшинчен те куçса килнĕ. Вĕсем çĕнĕ вырăнта XX ĕмĕр пуçланичченех халăх çĕрĕсене е шыв арманĕсене околодкăсем çине уйăрса уйрăммăн тытнă тата вĕсене тара панă чух та ĕç хучĕсене яланах икĕ околодка хăйсе-

не тĕллĕн, уйрăммăн тутарнă. Пĕрине Пысăк Кушлавăш, теприне Кĕçĕн Кушлавăш околодкисем тенĕ. Çавăн пекех ĕлĕк çуралнисемпе вилнисене çырса пынă метрика (загс) кĕнекисенче те пĕр ял çыннисемех пĕрисем Пысăк Кушлавăш, теприсем Кĕçĕн Кушлавăш околодки тесе çыртарнă. Тата околодка тес вырăнне тăтăшах «ял» тесе çыртарни те пулнă. Кусем, паллах, кушлавăшсем Анат Çавалти икĕ ялтан куçса килнине пĕлтернĕ.

Анат Çавал çĕрĕнче халĕ Кушлавăш текен ялсем çук. Икĕ ялĕнчи çынсем те ĕлĕкех тĕрлĕ еннелле куçса пĕтнĕ пулмалла. Анчах та çав ялсем ларнă çĕре халичченех пĕр «Кушлавăш кĕперĕ» текен вырăн çех палăртса тăрать. Çав Кушлавăш ялĕсем хальхи Алмантай Упакассисем çывăхĕнчех пулнă.

Кушлавăш çыннисем пĕр Кĕçĕн Çавал тăррине çех мар, урăх çĕрсене те куçса кайнă пулас. Кушлавăш тенĕ ял халĕ Хĕрлĕ Чутайпа Элĕк хушшинче те пур. Ăна тури чăвашсем «Кăшлавăш» теççĕ. Тата Тутар республикинчи Тетĕç хули çывăхĕнче те Кушлавăш-Рункă текен ял тĕл пулать. (Рункă тенисем Кушлавăшсемпе авалтанпах йĕкĕреш ачасем пек çыпçăнса пурăннă. Ун пек ял Анат-Çавал çĕрĕнче те пулнă; хальхи Кушлавăш уйĕ умĕнче те, Пасарлă Аччаран анатарах, Çавал çинче Рункă тĕл пулать. Тата Тутар Республикинче Пăва хули çывăхĕнче те Рункă ялĕ пур. Кусем пурте Çавал çинчен куçса ларнăскерсем пулмалла). Тӳсме çук йывăр пурнăç хистенĕ унти чăвашсене хăйсен вырăнне пăрахса урăх çĕре куçмашкăн.

Кушлавăш пирки тата тепĕр ыйту тухса тăрать. Кушлавăш тени çармăс (мари) чĕлхинчен куçса юлнă имĕш. Çармăсла «Кушлавăш» тени чăвашла «Вăрманкасси»

тенине пĕлтерет теççĕ. Мĕншĕн тесен çармăсла «кожла» тени «вăрман», «вăрманта» тенине пĕлтерет; «вăш» тени – çармăсла «вож» е «важ», авал «аж», авал «касă» тенине пĕлтернĕ пулмалла. Хальхи мари чĕлхинче ку сăмах «кăк», «тĕпĕ» тенисене пĕлтерет. Çармăссемпе чăвашсем пĕр сăмахах хăйсене май хыттăн е çемçе сасăсемпе каласси вăл вĕсен сасă законĕсем уйрăм тăнинчен килет.

«Кожлавож» тенинчен Анат Çавал çĕрĕнчи Кушлавăш ялĕсене çармăссем авалах, вĕсем хăйсен хурăнташлă йăх-ăру-кăк йĕркисемпе пурăннă ĕмĕрсенчех, пуçласа яни те палăрать.

Кушлавăшсем пуçланнă ĕмĕрте Çавалăн анат вĕçĕнче, паллах, сĕм вăрмансем пулнă, унта çармăссем те пурăннă. Этнографсем каланă тăрăх, чăвашсемпе хутшăнса кайнă çармăс йăхĕсем пурăна киле йăлтах чăвашланса çитнĕ. Çавалăн анат вĕçĕнче те, Кушлавăш тăрăхĕнче те халь çармăссем çук. Анчах та чăваш хушшинчи хăш-пĕр ялсемпе çырма-çатра ячĕсем паян кунченех çармăс чĕлхине е çармăс халăхне аса илтереççĕ. (Кушлавăш уйĕпе унăн çывăхĕнчех Пăтавăш, Кăкавăш, Măркавăш ятлă пĕчĕк юханшывсем, Уравăш, Явăш, Туçи-Çармăс, Хурăнсур-Çармăс ятлă ялсем пур тата ытти те).

Кушлавăш çĕрне Анат-Çавалтан чи малтан куçса пынă çынсем хушшинче те çармăссем пулма пултарнă.

XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче вăрманлă Кушлавăш çĕрне çĕнĕрен çĕнĕ хресчен ушкăнĕсем пырса хутшăннă. Малтан Çавалăн анат вĕçĕнче ларакан Алмантай-Упакасси чăвашĕсем чылайăн куçса пынă. Алмантайсем кивĕ вырăн тăрăх кушлавăшсен кӳршĕ ял çыннисем шутланнă. Çавăнпа та кушлавăшсем вĕсене савăнсах йышăнса илнĕ. Вĕсем хыççăн, нумай та иртмен, Çĕрпӳ çывăхĕнчи Имĕ-

лтеш çыннисем, унтан Шупашкар çывăхĕнчи Паçпак (Байсубаково) хресченĕсем пырса çитнĕ.

Пулас пысăк уй варринчи Пăтавăш улăхне лартнă килçуртсен кассине «Кушлавăш» текен ят панă. Мĕншĕн тесен ку яла пуçласа яракансем Кушлавăш ялĕсенчен чи малтан куçса пынă çынсем пулнă. Имĕлтешсем, вăйлă хуçалăхлă хресченсем, пурте пекех Пысăк Упакасси ялне пырса хутшăннă.

Паçпак хресченĕсем нумайăшĕ Пăтавăш улăхĕнчи Кушлавăш ялне ларса вырнаçнă; хăш-пĕрисем Упакасси ялĕсене кайса хутшăннă.

Алмантай Упакассипе (халĕ Пĕчĕк Упакасси) Кушлавăш Упакасси (халĕ Пысăк Упакасси) çыннисем хăйсене пĕр кăкран куçса килнĕ тăванла чăвашсем вырăнне шутланă.

Кушлавăшсемпе упакассисем вырнаçнă çĕре тепĕр çирĕм-вăтăр çултан татах темиçе ушкăн çемье пырса хутшăннă. Кусем тăварахра пурăннă çур вирьялла чăвашсем, Пармантейпе Утикасси çыннисем, пулнă. Пармантейсем йышлăн пынă та Пăтавăш çырмин ту вĕçнелли çĕре, шултăра юманлăх çумне, ларса вырнаçнă. Утикассисем пармантейсенчен инçе мар, Пăтавăш улăхĕн сулахай енне ларса хăйсене уйрăммăн пурăнма тытăннă. Ку икĕ касă пурăна киле ӳссе сарăлнипе пĕр ял пулса тăнă. Ялне Ершипуç ятне хунă.

Юлашкинчен XVIII ĕмĕр варринче Кушлавăш çĕрне Кӳстӳмĕрпе Кивĕ Мӳрĕш (Мамалаево) ялĕсене пуçлакансем, унтан, чи юлашкинчен, Çĕнĕ Мӳрĕш кассине (Булатовăна) тăвакансем куçса пынă. Кушлавăш уйне халăх тулса çитнĕ. Ирĕк çĕр юлман. Хăйсен уй çĕрне, вăрмансене ирĕклĕн хăртас-касас ĕçе чарса лартнă пирки, хăйсем патне куçса пыракансене урăх йышăнайман. Пăта-

вăшпа Кушлавăш шывĕсен анат улăхĕсенче хура тăпраллă тӳрем çĕр сарăлса выртнă. Кунта тырă тума та, çаран ӳстерме те çав тери аван вырăн пулнă. Анчах та часах Кольцов, Путилов тата Кушников помещиксем çитсе тăрăннипе Кушлавăш чăвашĕсем çакăнти ырă çĕрпе усă курайман.

Кушлавăш (Байсубаково) сали XVIII ĕмĕр пуçланнă вăхăталла Пăтавăш çырмин сулахай енне, пулас пысăк уй варрине, вырнаçса ларнă. Кушлавăшăн çĕрĕ аван пулнă. Кĕçех унта Шупашкар çывăхĕнчи Паçпак (Байсубаково) чăвашĕсем куçса пырсан, паçпаксен пысăк ушкăнĕ харсăрлансах çак яла вырнаçса юлнă та пĕтĕм ял пурнăçне хăйсен аллине тытса илнĕ. Вĕсем Кушлавăш ялне те Байсубакино тетересшĕн пулнă. Анчах кушлавăшсем парăнман, хăйсен ялĕ ятнех тытса хăварнă.

Кушлавăш уйĕнче чиркӳ пулман.Чăвашсем христиан тĕнне йышăннă тесе шутланнă пулсан та чиркӳ тенине лартасшăн пулман. Кушлавăш чăвашĕсен хăйсене çирĕплетсе хунă Çĕрпӳ хулинчи Троицки чиркĕвне кайма лекнĕ. Унта çӳреме утмăл çухрăм пулнă. Çакна шута илсе тата миссионерсем хистенипе Кушлавăшра пĕр пĕчĕк чиркӳ пекки йывăçран пуракаласа лартнă. Çапла вара Кушлавăша сала теме пуçланă.

1746 çулта, Елизавета патша указĕ тăрăх хуласенчи бобыльсен сийне пĕтермелле пулнă. Нимĕнле ремеслана та пĕлмен, суту-илӳ тума пултарайман чухăн бобыльсене хуласенчен ялсене кăларса, кирек те мĕн ĕçлесе пурăнма ирĕк панă. 1750-1760 çулсенче чăваш хушшинчи пасарлă ялсене тата чиркӳллĕ саласене нумай вырăс бобылĕсем пырса кĕнĕ. Кушлавăша та, çывăхри Пасарлă Аччана та, Чиркӳллĕ Хапăса та, Нурăс салине те, чăваш хушшинчи паллă ялсене пурне те чиркӳллĕ саласене Ху-

сантан, Сĕверен тата урăх хуласенчен кăларса янă чухăн бобыльсем пырса тулнă. Кушлавăша вырнаçнă çирĕме яхăн бобыль чиркӳ çывăхне хăйсен поселкине тунă, çĕр илсе тырă акма тытăннă. Хусан çыннисенчен хăшĕ-пĕрисем каярахпа 25 çухрăмри Хумпуç-Хурамал салине куçса кайнă. Кушлавăш чăвашпа вырăс хутăшлă сала пулса тăнă.

Бобыльсем чăваш ялне хулари вырăс культурине илсе пынă.

Кушлавăш чиркӳ прихучĕ пысăк пулман. Вăрман хушшисенчи пĕчĕк ялсенче 300-400 çемьерен ытла шутланман.

1839 çултан пуçласа Кушлавăш салине вулăс центрĕ туса хунă. Анчах та вулăсне «Байсубаковски вулăсĕ» тенĕ. Ку вулăса Кушлавăш уйĕнчи ялсенчен пуçне тата Çавал тепĕр енчи Уравăш, Утар, Хирпуç, Рункă ялĕсем кĕнĕ. Вулăсра пур пуçлăхсем те вырăссенчен тăнă.

Аçа çапнипе çунса кайнă чиркӳ вырăнне Кушлавăшра пысăк чиркӳ туса лартнă та ăна «Воскресение Христа» ятне панă.

Вулăс кантурлĕ Кушлавăшра кашни эрнекун чылаях пысăк пасар пула-пула иртнĕ.

Ухилькассипе Хураçырма Кушлавăш сали çывăхĕнчех. Пăтавăш çырмин сылтăм улăхĕнче, тата икĕ касă юнашаррăн ларса тĕвĕленнĕ: пĕрне Ухилькасси, теприне Хураçырмакасси тенĕ. Вĕсене пĕр ятпа Огилино ялĕ тесе çырнă. XIX ĕмĕр варринелле çак икĕ касă пĕтĕçсе пĕр ял пулса тăнă та, ăна Хураçырма (Хорсирмы) теме пуçланă.

Ухилькассисем Кушлавăш çĕрне Шупашкар çывăхĕнчи Ишек патĕнчен 1710-1715 çулсем тĕлнелле килсе ларнă. Ишек патĕнче вĕсен тĕп ялĕсенчен пĕри, Хураçырма тени, халĕ те пур. Анчах та Ухилькасси (Огилино)

тени çук. Ухилькасси тени çĕнĕ çĕре малтан пырса ларнă паллăрах çын ятĕнчен те тухма пултарнă. Каярахпа Хураçырмакасси ытларах ӳссе сарăлнипе Ухилькассине хупласа хунă.

Пысăк Упакасси Вăрманлă Çавал тăррине чи малтан килсе йышăннă хресченсем, 1700 çул тĕлнелле е унччен маларах та пулĕ, пуçласа янă ял. Пулас ялĕ малтан пилĕк уйрăм касăран (околодкăсенчен) тăнă. Вĕсем тарăн Вĕлтрен çырми хĕррипе, унăн икĕ еннипе те тĕвĕленсе ларнă.

Асăннă касăсем XIX ĕмĕрте ӳссе пĕр ял пулса тăнă.

Пысăк Упакассине тата каярахпа Кушлавăш улăхĕнче ишкер-виçшер кил-çуртпа уйрăммăн пурăннă çемьесем те хутшăнкаланă пулас.

XVIII ĕмĕрĕн варри тĕлнелле Пысăк Упакассинче мĕн пур касăсене илсен те пĕр аллă çемьерен ытла пулайман-ха: вĕсенче 200 çынна яхăн пурăннă.

Шуркасси Пысăк Упакассинчен кăнтăр-хĕвел тухăç енне лле Кушлавăш шывĕ тăрăх вырнаçса ларнă. Кунта пурăнакансенчен нумайăшĕ Кĕçĕн Кушлавăшран куçса килнĕ çынсем пулнă. Ял ятне вĕсем ку вырăнта чи малтан пурăнма пуçланă Шуркасси çыннисен ячĕпе панă пулмалла. Анчах та ку çыннисем такăш Шуркассинчен, те Çĕрпӳ хулинчен кăнтăр-хĕвел тухăçнелле лараканнинчен, – ку паллă мар. XVIII ĕмĕр варринче ку ялта пурĕ те 15-20 килтен ытла пулма пултарайман. Малалли çулсенче Шуркасси хăвăрт ӳссе пынă.

Шĕпекеч Пысăк Упакассинчен кăнтăр енче ларать. Халăхра юлнă сăмах тăрăх, ку вырăнта чăрăшлă-çăкаллă вăрман пулнă. XVIII ĕмĕрте çăкалăхри уçланкăра пĕр Шĕпекеч ятлă çыннăн утарĕ пулнă. Шĕпекеч хăй унтах пурăннă. Унăн ывăлĕсем пулнă та, вĕсем те ашшĕ çум-

нех кил-çурт çавăрса лартнă. Ку пĕчĕк яла каярахпа ытти çĕртен куçса ларакансем те пулнă. Шĕпекеч пĕчĕк ял. Унта XIX ĕмĕрĕн вĕçнелле те 20-25 килтен ытла пулман. Пуçланни çĕр çул иртнĕ пулин те ялĕ питĕ пĕчĕккĕн çех ӳссе пынă. Унта пурăнакансенчен нумайăшĕ Кĕçĕн Кушлавăш околодки çыннисем пулнă.

Пĕчĕк Упакасси Пысăк Упакассинчен виçĕ çухрăм хĕвел тухăçнелле, Вĕлтрен улăхĕнче, ларать. 1700 çулсем тĕлнеллех пуçланнă. Вĕлтренĕн анат вĕçнелле ларнăран ăна урăхла Анаткас е Анатри Упакасси те теççĕ. Кунта пĕтĕмпе тенĕ пекех Çавал анат вĕçĕнчен куçса килнĕ Алмантай-Упакасси чăвашĕсем пулнă, вĕсем Пысăк Упакассинчи алмантайсемпе çывăх хурăнташлăн çыхăнса тăнă. Ваттисем каланă тăрăх, çак икĕ Упакассинчи алмантайсемпе имĕлтешсем кунта вырнаçса ларсан та тата темиçе вунă çул хушши хăйсен кивĕ вырăнти тĕп ялĕсене хăнана кайса çӳренĕ: имĕлтешсем – утмăл çухрăма, алмантайсем – çитмĕл пилĕк çухрăм таран.

Пĕчĕк Упакассинче XVIII ĕмĕр варринче те çирĕм-вăтăр çемьерен ытла пулман пулĕ-ха.

XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнчех Пĕчĕк Упакасси патне Кушников помещик пырса 360 теçеттин çĕр (пĕр теçеттин 1,09 га) касса илнĕ. Ял çывăхнех хăйĕн именине туса лартнă. Çакăн хыççăн вăл Упакасси ялне те хăй аллине тытса илме тăрăшнă. Ялти сутникпе пуянсене хăй майлă çавăрса Пĕчĕк Упакассине вăл «Кушниково» ят йышăнтарнă. Ку ят Упакасси çумне çыпçăнса кайран та çĕр çул таранах çакăнса тăнă. Пĕчĕк Упакассине XIX ĕмĕрĕн варрине çитичченех Кушниково ялĕ тесе çырнă. Анчах та чăвашсем патшалăх хресченĕсем шутланнă пирки выçтах Кушников ĕмĕчĕ пурнăçа кĕреймен. Вăл имени-

не Путилов помещике сутса Кушлавăш уйĕнчен тухса кайнă.

Ершипуç Пысăк Упакассинчен икĕ çухрăм çурçĕр хĕвеланăç еннелле ларакан пысăк ял. Халăх йышĕ тĕлĕпе те, хуçалăхпа культура енчен те çак икĕ ял пĕрехрехех тăраççĕ.

Ершипуç малтан икĕ ялтан тăнă: пĕрине Пармантей-касси, теприне Утьăккасси (Одиково) тенĕ. Вĕсем улăхлă Пăтавăш çырмипе уйрăлса тăнă. Икĕ касси те 1710-1720 çулсем тĕлнелле пуçланнă пулмалла.

Халăхри сăмахсем тăрăх Пармантей çыннисем Шупашкар районĕнчи Ишлей çывăхĕнче ларнă Йĕрĕхшывпуçĕ ятлă ялтан куçса пынă пулать. Йĕрĕхшыв тесе ĕлĕк Рыкша шывне каланă. Рыкша вăл Ишлей патĕнчен пуçланса тухать.

Ишлей таврашĕнче вирьялларах диалектпа калаçакан чăвашсем пурăнаççĕ. «Шыв» сăмаха вĕсем «шу» теççĕ. Йĕрĕх шывĕ тенине кĕскетсе вĕсем «йăр-шу» тенĕ. XVIII ĕмĕрте пĕтĕм ялсене шута илнĕ чухне вырăс чиновникĕсем ку шыв ятне вырăс чĕлхин фонетикипе хуçкаласа «Йырых-ша-Рыкша» тесе çырса хунă. Кунтах Йĕрĕхшупуçĕ ятлă ял та пулнă. Çапла вара Ершипуç тени çав Йĕрĕхшупуç тенинчен куçса килнĕ теççĕ. Ку чăнах иккенне ĕненме пулать. Йăршусем те Карачура пулса тăнă.

Кӳстӳмĕр Ершипуçĕнчен çурçĕр-хĕвел анăçнелле Кĕçĕн Çавал çывăхĕнче ларакан вăтам ял. Ку яла пуçлакансем Кушлавăш çĕрне ершипуçсенчен те каярах, 1720-1730 çулсем тĕлнелле куçса килнĕ пулмалла. Мĕншĕн тесен çĕнĕ вырăнта вĕсем хăйăрлă та тăмлă начар çĕре çех йышăнса илнĕ. Иртнĕ ĕмĕрте Кӳстӳмĕр ял вулăсра Юмансар обществи ячĕпе шутланса тăнă. Каярахпа вăл

чылай вăхăт хушши Ершипуç обществинче тăракан ял шутланнă.

Кӳстӳмĕр çыннисем кунта Çĕрпӳ хулинчен хĕвел тухăçнелле ларакан Кĕçтимĕр е Кӳстимĕр текен ялсенчен куçса килнĕ пулмалла. Унта вĕсен Юмансар обществи те пулнă.

Кивĕ Мӳрĕш (Мамалаево), Çĕнĕ Мӳрĕш (Булатово) Кушлавăш уйĕн çурçĕр кĕтессинче, Çавал хĕрринчи хăйăрлă çĕр çинче, пуçа-пуçăн тĕкĕнсе лараççĕ. Ку ялсене пуçлакансем те кунта, кӳстӳмĕрсем пекех, кая юлса çитнĕ пулас. Вĕсем валли чипер çĕр юлман, çакна пула мӳрĕшсем Çавал тăвайккинчен хăйăрлă вырăнсене йышăнса илнĕ. Чăн та, мӳрĕшсен ватă аслашшĕсем куçса килнĕ вăхăтра кунта, Çавал улăхĕнче, вăрманлăх, çаранлăх пулма пултарнă. Ун чухне вăл вĕсене çырлахтарнă. Кайран, вăрманне касса пĕтерсен, вĕсен хăйăрлă уй кăна тăрса юлнă.

Чăваш историкĕ В.Димитриев тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, Мӳрĕш ялĕсене пуçлакансем Шупашкар уесĕнчи Çатракассисемпе вĕсен таврашĕнчи ялсенчен куçса килнĕ çынсем пулнă. Анчах кунта тата çакна та шута илмелле. Çатракассисем çех пулнă пулсан вĕсем хăйсен ялĕсене Мӳрĕш текен ят парас çук. Ку ялсене чи малтан пуçлакансем Çĕрпӳ уесĕнчи Нӳрĕш (Нӳрши) е урăхла Мӳрĕш ялĕнчен куçса килнĕ çынсем пулнă пулмалла. Çĕрпӳ районĕнчех ĕлĕк Мамалаевăпа Булатово текен ялсем те пулнă.

Кив Мӳрĕшпе Çĕнĕ Мӳрĕш халь ĕнтĕ ӳссе кайса пĕр ял пулса тăнă. Вĕсенче иккĕшĕнче пĕр шкул. Шкулне ĕлĕк «Нюшкассинская школа» тетчĕç.

Мӳрĕшсем каярахпа мĕлĕшсем пулса кайнă.

Кольцовка ялне Сĕве хули дворянинĕ Петр Кольцов

1745 – 1750 çулсенче чăвашсенчен тытса илнĕ çĕр çинче туса лартнă. Крепостной хресченĕсене вăл тĕрлĕ çĕртен пуçтарнă: унта Рязань, Калуга, Кострома кĕпĕрнисенчен кӳрсе килнĕ хресченсем тата Хусанпа Сĕверен илсе пынă таркăн хресченсем пулнă.

Кольцов Кушлавăш чăвашĕсем вăрман кăкласа тасатнă çĕре, Пăтавăшпа Вĕлтрен çырмисем пĕтĕçсе улăхланнă вырăнти хура тăпраллă çĕре касса илме тăнă. Паллах, ку лайăх çĕре Кушлавăш чăвашĕсем помещике парасшĕн пулман, ăна хирĕç тăнă. Иккĕмĕш хутĕнче помещик салтак ушкăнĕпе килсе кĕнĕ те вăйпа хăратсах кушлавăшсенне 600 теçеттин ытла çĕрне касса илнĕ.

Кольцов помещик Кушлавăш уйĕнчи именине хĕрĕх çула яхăн тытса тăнă. Унтах вăл пĕчĕк эрех савăчĕ тутарнă. Савăчĕ çулсерен пин витре эрех юхтарнă. Ку эрехпе помещик чылай тупăш илнĕ.

Пуйса çитнĕ Кольцовăн ватлăхĕнче ялта пурăнас килмен пулас. Вотчинине пĕтĕм крепостной хресченĕсемпе пĕрлех вăл Аворин ятлă помещике сутса янă. Аворинĕ вара темиçе çултан именине Солова сутнă. Соловĕ кунта нумаях тăман, хăй черечĕпе Кольцовкăна вăл Ушаков ятлă улпута сутнă. Çапла вара кольцовкăсен 1750 çултан пуçласа хресченсене ирĕке кăлариччен (1861 çулччен) тăватă улпут улшăннă. Ушаковĕ – хресченсене улпут аллинчен хăтарнă хыççăн та Кольцовкăра нумай вăхăт хушши пурăннă.

Зеленовка (урăхла Амачкино) Кольцовкăпа пĕр вăхăталлах пуçланнă пĕчĕк вырăс ялĕ. Зеленовка çĕрĕ Кольцовка çĕрĕпе юнашарах, Кушлавăш шывĕ Çавала хутшăннă çĕрте выртать. Зеленовка хăйăрлăрах хытанка çĕр çинче ларать. Чи малтан ку вырăна Путилов помещик тытса илнĕ пулас. Çĕрĕ япăххине кура Путилов

кунта нумай тăман. Вăл Пĕчĕк Упакасси патĕнчи Кушников помещикăн хура тăпраллă çĕрне сутăн илнĕ те унта куçса кайнă. Унăн малтанхи çĕрĕ пулнă вырăна вара Амачкина помещица йышăнса илнĕ те ăна хăйĕн качча кайнă хĕрне панă. Ку çĕр «Путилов пăрахса хăварнă пушă вырăн» тесе шутланнă. Амачкинан акмалли тата çаран çулмалли çĕрĕ мĕн пурĕ те хĕрĕх теçеттин çех пулнă, вăрманĕ вара 866 теçеттин шутланнă.

Зеленовка ялне Амачкина тутарнă. Çавăнпа ăна таврари чăвашсем халичченех Амачкин ялĕ теççĕ. Амачкина ку именине Ветошкина помещицăна сутса хăварнă.

Тата çакăнтан тĕлĕнмеллеччĕ. Зеленовкăпа Кольцовка кӳршĕ ялсем шутланаççĕ. Анчах та вĕсен çыннисем авалтанпах кашни хăйне урăхларах пурăннă. Вĕсем пĕрпĕринпе хутшăнсах кайман. Кольцовка вырăсĕсем чĕмсĕртерехчĕ те чăвашла калаçма пĕлместчĕç. Зеленовка çыннисем, уçă та кăмăллăскерсем, чăвашсемпе хутшăнатчĕç, ваттисем пурте чăвашла аван пĕлетчĕç. Кунашкал йăласем вĕсен хăйсене евĕрлĕ историлле условийĕсенчен килнĕ пулмалла. Ваттисем каланă тăрăх, Зеленовка çыннисем вырăсланса кайнă чăвашсенчен тухнă пулать.

Путилов çĕрĕ Кольцовка çĕрĕпе юнашарах, Пĕчĕк Упакасси умĕнче, тата тепĕр Путилов текен помещик 360 теçеттин çĕр тытса тăнă. Путиловпа кӳршĕллĕ пурăннă Пĕчĕк Упакасси, Пысăк Упакасси, Шуркасси, Шĕпекеч ялĕсем çав вăхăтра Улатăр çывăхĕнчи Бурнашево (Явлей) патĕнчех 750 теçеттин акмалли тата çаран ӳстермелли çĕр тытса тăнă пулнă.

XVIII ĕмĕр вĕçнелле пулас Путилов помещик Упакассине çĕр улăштарма сĕннĕ: вăл хăйĕн çĕрне упакассисене пама пулнă, ун вырăнне упакассисенчен хăйсен

Бурнашево патĕнчи çĕрне пама ыйтнă. Упакассисен Бурнашевăри çĕрĕ Путиловăннинчен икĕ хут ытларах шутланнă. Çапах та вĕсем, Улатăр патнех çӳреме инçе пирки, Путилов сĕнĕвĕпе килĕшнĕ: инçетри çĕрне помещике панă та унăн Кушлавăш уйĕнчи çĕрне хăйсем илнĕ. Ку çĕре упакассисем «Путилов çĕрĕ» е «вырăс çĕрĕ» тетчĕç те ăна тăватă ял пĕрле акса тăратчĕç. Тата Пĕчĕк Упакасси çыннисем хăйсен колхозне те çав çĕр ячĕпе «Путиловка» текен ят пачĕç.

Анчах та колхозсем тунă хыççăн чылай вăхăтран Кольцовкăри колхоз председателĕ С.Коротков: «Путиловка» – помещик çĕрĕ пулнă, эпир те помещик хресченĕсем пулнă» тесе темле майпа çав 360 теçеттина хăйсен аллине çавăрса илчĕ. Суд ку ĕçе тĕрĕс татса паман: кольцовкăсен помещикĕсем Кольцов, Анорин, Солов, Ушаков пулнă. Путилов – урăх, вĕсемпе çыхăнман помещик шутланнă. Вĕсен çĕрĕсем те хăйсене уйрăм тăракан çĕрсем пулнă.

Ширшов хуторĕ Путилов çĕрĕпе юнашарах, Кушлавăш шывĕ хĕрринче тепĕр начар помещикăн Василий Ширшовăн пулнă. Унăн мĕн пур çĕрĕ те 44 теçеттин çех шутланнă. Ашшĕ вилсен кунта унăн ывăлĕ Александр Ширшов хуçаланса пурăнчĕ. Вăл хутор çĕрĕ тăрăх Пĕчĕк Упакасси еннелле икĕ ретпе йăввăн лартнă хурăн аллеи ӳстернĕ те хурăнсем вара таçтанах илемлĕн курăнса ларнă. Ăна чăвашсем «Саша хурăнĕсем» тенĕ.

Саша Ширшов хуторне халăх Аслă Октябрь революцийĕ хыççăн шăлса ывăтрĕ.

Кушлавăш ялĕсем XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче те пĕрпĕринчен вак-тĕвек вăрмансемпе уйрăлса тăнă. Унта та кунта катасем, уй варринчех ватă юмансем, хурамасем, çӳллĕ хырсемпе чăрăшсем пĕлĕтелле кармашса ларнă.

Пысăк Упакассипе Кушлавăш сали хушшинче Вĕлтĕрен улăхĕпе унăн юпписем çинче «Хусах кати» текен чăтлăх ращи ларнă. Ку ращана çын пырса кĕме шикленнĕ, мĕншĕн тесен унта таркăн-хурахсем пытанса пурăннă.

Вунă ялĕнчи пурнăç пуринче те пĕр пекех пулнă. Акмалли çĕрĕ нумаях пулман, тырри-пулли çитмен.

1841 – 1850 çулсенче Кушлавăш уйĕнчи ялсенче пурĕ 3500 çынна яхăн пурăннă.

XIX ĕмĕр вĕçĕ чăваш ялне чылай улшăнусем кӳнĕ. 1870 çулсенче кашни вулăс центрĕнчех патшалăх хуçалăх министерстви тытакан пуçламăш шкулсем уçса панă. Каярах вĕсене земски шкулсем тенĕ. Ун пек шкул 1875 çулта Кушлавăш салинче те уçăлнă.

1894 çулта Кушлавăшсен Байсубаковски вулăсне Хапăс вулăсĕпе пĕрлештерсе пĕр вулăс – Тойсински вулăсĕ туса хунă. Вулăс центрне Уравăша куçарнă. Уравĕш ялне Туçи Хирпуç тенĕ, çавăнпа вулăс ятне Тойси текен ят панă. Ку ята уравăшсен тĕп аслашшĕсем хăйсен Çĕрпӳ хули лешенчен илсе килнĕ.

Тойси вулăсне кĕриччен 1893 çулта Кушлавăш уйĕнче пурĕ пилĕк общество пулнă, вĕсенче 985 кил, 5648 çын шутланнă.

Икĕ вулăса пĕрлештернĕ хыççăн Туçи вулăсĕнче пурăнакан халăх йышĕ 14 пин çурă çынна çитнĕ. Ку шутран 1368 вырăс, ытти чăваш пулнă.

1895-1897 çулсенче Кушлавăш уйĕнчи кашни обществăрах пĕрер церковно-приходски е грамота шкулĕ уçса панă.

XIX ĕмĕр вĕçĕнче кушлавăшсемшĕн тата тепĕр тĕлĕнмелле ĕç пулса тăнă. 1895 çулта юнашар Хумпуç уйĕ урлă Мускавран Хусана каякан чукун çулне туса пĕтерсе ĕçе янă. Кушлавăш уйĕнчен ултă çухрăм вăрман урлă

каҫсанах Йĕпреҫ ялĕ патĕнчен чукун ҫул станцийĕ туса лартнă. Ку вара халиччен упа шăтăкĕнчи пек сĕм вăрманлăхра пурăннă ҫынсемшĕн тĕнчене пăхмалли чӳрече касса уҫнă пекех туйăннă. Йĕпреҫ станцинчен пур еннелле те пысăк ҫулсем хывăннă. Кушлавăш уйĕ урлă та Йĕпреҫрен ҫĕр ҫухрăм тăсăлакан – Етĕрнепе Кăрмăш хулисен пысăк ҫулĕ хывăнса выртнă. Ку ҫул хăй каҫса каякан Пысăк Упакасси, Ершипуҫ, Кӳстӳмĕр ялĕсене шăв-шав кӳрсе тăма тытăннă.

ХХ ĕмĕрĕн малтанхи ҫулĕсенче земство кашни вулăсрах пĕрер пĕчĕк больница тата эмел хатĕрлекен амбулатори уҫса парать. Тойси вулăсĕ валли больница тата амбулатори Уравăшра уҫăлать. Больницинче 1912 ҫулччен врач пулман, икĕ лекĕр (фельдшер) тата пĕр акушерка-сестра кăна ĕçленĕ. Ҫав вăхăтра Кушлавăш ялĕсенчен 25-30 ҫухрăмра ларакан Нурăс больницинче кăна пĕр врач ĕçленĕ.

Кушлавăш хресченĕсен XIX ĕмĕр вĕçĕнче ҫĕр кашни ят пуҫне икĕ теҫеттин ҫур ытларах ҫеҫ тивнĕ. Ҫĕре арҫын ячĕ тăрăх кăна валеҫсе панă, хĕрарăмсем ҫĕр илме тивĕҫ пулман. Ҫемьере хĕрарăмсем ҫех пулсан вĕсем хăйсен ашшĕ ҫĕрĕпе кăна пурăннă. Теҫеттин ҫĕртен тырă лайăх пулнă ҫул та ыраш 60 пăтран ытла тухман. Кушлавăш хресченĕсем тулă акман.

ХХ ĕмĕр пуҫламĕшĕнче Кушлавăш ҫыннисемшĕн пулнă паллă ĕҫсенчен тепри вăл Шăхранпа (Канашпа) Арзамас хушшинче чукун ҫул хывса тухни пулать. Чукун ҫул тунă чух лини тăрăх кăткă ҫулĕ ҫинчи пек халăх хĕвĕшрĕ. Пур ĕҫе те алă вăйĕпе турĕҫ. Пирĕн енчи ҫынсем те унта пайтах тар тăкрĕҫ. Укҫине сахал тӳленĕ.

Совет саманинче аллă ҫул тăршшинче Кушлавăш уйĕн сăн-сăпачĕ тĕпренех улшăнчĕ. Кушлавăш текен вун икĕ ялта ĕлĕк, совет самани пуҫланиччен, пурĕ те ултă пĕчĕк

пуçламăш шкул кăна пулнă пулсан, халĕ – сакăр пысăклатнă шкул. Ĕлĕк пĕтĕм шкулĕсене вĕренме çӳрекен ачасен йышĕ çулсерен 200 ачаран иртмен пулсан, халь çав ялсенчех 1200 ытла ача вĕренет. Ĕлĕк ултă шкулта çичĕ учитель вĕрентсе пурăннă, халĕ вун икĕ ялтах 90 учитель шутланать.

Совет саманинче Кушлавăш уйĕнче административлă улшăнусем те пулкаларĕç. 1927 çулта, уессемпе вулăссене пĕтерсе районсем тунă чух, Туçи (Тойси) вулăсне Вăрнар районне кĕртрĕç. Вăрнар поселки пулса тăчĕ.

Тăватă ял: Пысăк Упакасси, Пĕчĕк Упакасси, Шуркасси, Шĕпекеч Вăрнара çӳреме инçерех пулать тесе Йĕпреç районне куçрĕç. Ку ялсене ĕлĕк уес хулине, Етĕрнене, çӳреме сакăр вун çухрăм ытла шутланнă. Халь ĕнтĕ Вăрнар районне кĕнĕ ялсем те, Йĕпреçе куçнисен те район центрĕсем чи инçетре пулсан та, вун-вун икĕ çухрăмран инçех мар.

Кушлавăш ялĕсем икке уйрăлса икĕ района куçни вĕсен хушшинчи тăванла çыхăнăва нимĕн чухлĕ те улшăнтармасть. Мĕншĕн тесен ку çыхăну вăл иртнĕ ĕмĕрсенчи йывăр пурнăçпа хура кун-çулта пиçсе çирĕпленнĕ çыхăну.

С. Элкер.

1961 – 1966.

* * *

Кулкаласа калаçнă хушăрах Хураçырма ачи Виталий Григорьевич Родионов пуçĕнче çирĕпленсе çитнĕ ăс хайлавне Элкерĕн очеркĕ çумне хушса, ăна тарăнраххăн ăнланма сĕнет. Хăйĕн ĕçĕнче Çемен Васильевичăн тĕплесех калайманни те пулкаланă, университет ученăйĕ хăш-пĕр кăлтăксене тӳрлетме пулăшать. Вăл хăй çуралнă Хураçырма ялĕн историне те тĕплĕнрех тишкернĕ.

КУШЛАВĂШПА ХУРАÇЫРМА

Çак ялсем – Кушлавăш уйĕ варринче. Кушлавăш уйĕ тесе Кĕçĕн Çавалпа Кушлавăш шывĕсен хушшинче вырнаçнă çĕрсене калаççĕ. Ку тăрăхра çынсем пирĕн эрăччен икĕ пин çул маларах пурăнма пуçлани паллă. Çакна Кивĕ Мĕлĕш çывăхĕнче, Кушлавăш çĕрĕ çинчи икĕ улăп тăприне тĕпченинчен пĕлме пулать. Вĕсене 1962 çулта Мускав тĕпчевçи Т.А.Кравченко ертсе пыракан ушкăн чавса пăхнă. Çав улăп тăприсене Баланов культурин çыннисем пирĕн эрăчченхи XV-IX ĕмĕрсенче хăварнă иккен. Вĕсем индоиран йăхĕсенчен тухнă тесе шутлаççĕ. Çав йăхсем малтан Анат Днепр енчен Днепрăн сулахай çыранĕпе Дон тата Ока пуçĕсен тĕлĕнчен иртсе пирĕн тăрăха 3-2-мĕш пин çуллăхсен чиккинче килнĕ. Каярах Кĕçĕн Çавалăн сылтăм енне Городец культурин çыннисем çитеççĕ. Кӳстӳмĕр ялĕ çывăхĕнчи Усрав вăрманĕнче, Хула çырми ятлă 4-5 метрлă сăмсахра археологсем 1962 çулта чавса кăларнă япаласем те çакна çирĕплетеççĕ. Çак хулаш пирĕн эрăн малтанхи пин çуллăхăн варринче (1500 çул ĕлĕкрех) пулса кайнă тесе шутлаççĕ. Вĕсем каярах «çармăс» ятпа паллă пулаççĕ, хальхи мари чĕлхине çывăх чĕлхепе калаçаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ кунти çырма-çатра, юхан-шыв ячĕсем, тĕпрен илсен, çармăс чĕлхинчен юлнăскерсем: Кушла+вăш, Пăта+вăш, Ура+вăш, Кăка+вăш, Мăша+вăш, Вăр+нар, Су+нар, Шĕ+нер... «Çавал» тени вара индоиран чĕлхиллĕ йăхсенченех юлнă пулас.

1560 çулсенчи хутсенче çапла çырса хăварнă сăмахсем пур: «Деревня Кошлоуш Большая, что была пустошь мордовская Демердеевская на чебоксарском рубеже меж двух рек Кошлоуша и Чертанла-Щучки».

Çакăн тăрăх акă мĕн пĕлме пулать. Пĕрремĕшĕнчен, Хусан ханлăхĕ вăхăтĕнче кунта тыткăнри ирçесем ĕçлесе пурăнни паллă. Хусана илнĕ хыççăн вĕсем ку вырăна пăрахса кайнă. Иккĕмĕшĕнчен, çав вăхăталла (XVI ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче) кунта Пысăк тата Пĕчĕк Кушлавăшсем пуçланса каяççĕ. 1670 çулсен пуçламăшĕнче çак икĕ ял Рункă вулăсне кĕни паллă. Вăл вăхăтра çав вулăс Çавалпа Йĕшшӳ (Йĕрĕх шывĕ, Рыкша) пĕрлешнĕ çĕререх вырнаçнă пулнă. Унта çак ялсем кĕнĕ: Байбахтины, Бикчюрины, Мамалаевы, Янбулатовы, Имельдешевы, Болатовы, Алмандаевы, Арткули, 1-й Ораевы, Яушевы, Малой Ураевы. Рункă чăвашĕсем çав тăрăхра Хусан ханлăхĕ вăхăтĕнче пурăнни паллă. Вĕсем XV ĕмĕрте Атăлăн сулахай енчен, Рункă ятлă шыв таврашĕнчи чăваш ялĕсенчен куçса ларнă темелле. Вĕсен хыççăн Çавал çине Алат тăрăхĕнчи (Алатская даруга) Кушлавăшсем куçса пыраççĕ. Çĕр хĕсĕкрен вĕсем унта нумаях тытăнса тăмаççĕ, 1560 çулсен тĕлнелле Кĕçĕн Çавалпа Кушлавăш шывĕ хушшине куçса каяççĕ, ирçе ялĕ вырăнне йышăнаççĕ. Çав вăхăталлах Алмантай тата Имĕлтеш çыннисем те Вĕлтрен çырмипе Кушлавăш шывĕ хушшине пырса лараççĕ. Вĕсен общинине Кĕçĕн Кушлавăш, маларах куçса ларнă Алат тăрăхĕнчи чăвашсен общинине Пысăк Кушлавăш тенĕ.

1723 çулта пĕрремĕш çырав (перепись) пулать. Ун чухне Рункă вулăсне Кушлавăш уйĕнчи çак ялсем кĕнĕ (выраслах илсе кăтартатăп): д.Кошлоуши из д.Имельдешево, Кашлауши Рунги, д.Кошлоуши из д.Мамалаево, д.Кашлауши из д.Булатовы, д.Рунги Байсубаковой, что на Кошлаушах, д.Байсубаковой, что на Кошлаушах.

Хальхи Кушлавăш (урăхла ăна Чиркӳкасси тенĕ) XVIII ĕмĕрте «село Воскресенское Байсубаково тож» ятпа

çӳренĕ. Маларах куртӑмӑр ĕнтĕ: Паçпак (Байсубаково) Рункӑ вулӑсне кĕни те, кĕменни те пулнӑ. Çак уйрӑмлӑх Кушлавӑшсен XIX ĕмĕрте те пулнӑ: пĕр пайĕ Пысӑк Кушлавӑш общинине, тепĕр пайĕ уйрӑм Паçпак общинине пӑхӑнса тӑнӑ.

Çапла вара хальхи Кушлавӑш ялне Шупашкар районне кĕрекен Паçпак (Байсубаково) ялĕн çыннисем XVII ĕмĕрте пуçласа янӑ темелле. Ун чухне вĕсен çĕрĕсем вӑрман хĕрринче пулнӑ, Паçпаксенчен анатарах Пысӑк Кушлавӑш çĕрĕсем сарӑлса выртнӑ. Çав хура тӑпраллӑ çĕрсене 1745 çулта П.Ф.Кольцов Сĕве улпучĕ туртса илме пуçӑннӑ. Вӑл ĕнентернĕ тӑрӑх, ӑна çав уйра 258 теçеттин сухалакан çĕр, вӑрман тата улӑхсем панӑ-мĕн. Çавӑнтах Çĕрпӳ улпучĕн Амачкинӑн та 186 теçеттина яхӑн çĕр пулни çинчен пĕлтернĕ вӑл. Ун чухне çав улпут чӑваш çĕрĕсене туртса илеймен – сенĕкпе те айпӑлтапа хирĕç тӑнӑ чӑвашсем хӑйсене хӳтĕлеме пултарнӑ.

1752 çулта Кольцов улпут хӑйĕн хресченĕсене куçарса килсе Кульцав ялне никĕслет. Ун умĕн Пысӑк Кушлавӑш ялне салатаççĕ, унӑн вырӑнне Алманчӑк (Зеленовка) ялĕ ӳссе ларать. Пысӑк Кушлавӑшсен тĕп пайĕ Паçпакран тӑварах, хальхи Ершепуçпе Кӳстӳмĕр ялĕсене куçса ларать, пĕчĕкрех пайĕсем хальхи Хураçырмапа Рункӑ ялĕсене каяççĕ. Юлашки ялĕнче вĕсем Хирпуç çыннисемпе пĕрлешсе пĕр община туса хураççĕ.

Çапла вара Хураçырма ялĕ 1751 çул тĕлнелле пуçланса кайнӑ теме май пур. Ӑна малтан яла пуçласа яраканĕ ячĕпе Ухиле (Огилио) тенĕ, кайран шыв ячĕпе палӑртма пуçланӑ.

Кушлавӑш уйĕнче Алат тӑрӑхĕнчи тата Рункӑ вулӑсĕнчи чӑвашсем хутӑшса каяççĕ. Хусан енчи чӑвашсен тĕррисем шултӑра, тухйисем шĕвĕр тӑрӑллӑ, тевет пулнӑ

пулсан, Рункă чăвашĕсем вирьялларах курăннă: вĕсем ати, апай, маçак тесе каланă. Кунта майĕпен анатри калаçупа çи-пуç çĕнтерет. Çапах та Кушлавăш уйĕнче паян кунченех асаннене апай теççĕ. Ати тени «аслати» сăмахра упранса юлнă.

1859 çулта Хураçырма ялĕнче икĕ общинăна пăхăнакан çуртсем пулни паллă. Пысăк Кушлавăш общинине 32 кил тата Паçпак общинине 2 кил кĕнĕ. Маларах тепĕр икĕ кил Кĕçĕн Кушлавăш общинине пăхăннă. 50-мĕш çулсенче вĕсем Пысăк Кушлавăш общинине куçса каяççĕ.

Кушлавăшпа Хураçырма ялĕсен хушши XIX ĕмĕрте те темиçе çĕр метр кăна пулнă, XX ĕмĕр варринче вĕсем пĕрлешсех ларчĕç. Кушлавăшра вулăс çурчĕсем тата чиркÿ пулнăран вăл яланах ытти ялсене хăйĕн патнелле туртнă. Вун икĕ ял масарĕ те çакăнтах пулнă. Уравăш-Хирпуç ялĕсем урăх прихута кĕнĕрен тата вĕсене Кушлавăша çÿреме инçерех пулнăран вĕсем вулăс центрне хăйсен çывăхнерех куçарма яланах ĕмĕтленнĕ. Акă вулăс старшинине суйланинех илер. 1887 çулта суйлав пулса иртет. Малтан çав вырăна Хураçырма хресченне Яков Данилова лартнă пулнă. Уравăш-Хирпуçсем çине тăнăран ун вырăнне Кивĕ Мĕлĕш çыннине суйлаççĕ. Вăхăт нумай та иртмест – старшина вырăнне каллех Я.Данилов йышăнать.

XIX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулăсенче Паçпак вулăсĕнчен Туçи (Уравăш) вулăсĕ туса хураççĕ, çакăн хыççăн Кушлавăшпа Хураçырма вулăс айккине тăрса юлаççĕ. 1918 çулта Кушлавăш уйĕнчи чăвашсем каллех хăйсен вулăсне йĕркелеççĕ, малтанхи пекех Кушлавăш ялĕ тавра чăмăртанаççĕ. Шел, тепĕр çултанах «сепаратистсене» тăн кĕртеççĕ: вулăс ялĕпе центрне каялла тавăраççĕ.

Халĕ Кушлавăшпа Хураçырма ял хуçалăх центрĕ те

пулма пăрахрĕ. Çавна май кунта çĕнĕ объектсем çĕкленмеççĕ, çамрăксем валли ĕç вырăнĕ те сахал. Юлашки çулсенче çак ялсем ватăлса кайрĕç: сакăр çул вĕренмелли шкул вырăнне пуçламăш шкул кăна тăрса юлчĕ, мĕн пур ача пĕр класра вĕренет. Кушлавăш-Хураçырма çĕрĕсенче çитĕннĕ тыр-пула, утă-улăма урăх ял çыннисем пухса хăйсен кĕлечĕсене, фермисене турттараççĕ. Ялсен мăнаçлăхĕ чакса пырать.

Паянхи кун вырăнти хуçасене ятласа, кĕрĕк арки йăваласа ларни вырăнсăр. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан Хураçырмасемпе Кушлавăшсем ентешлĕхе чăмăртанчĕç, ялсен шăпи пирки пĕрле шухăшларĕç. Вĕсем пĕчĕк ĕçрен пуçлама калаçса татăлчĕç. Малтан ял историне çырма, вĕсене уйрăм кĕнекен кăларма палăртрĕç. Утă уйăхĕн 21-мĕшĕнче ялсен кунне ирттерме шухăшларĕç.

Малашне çамрăксем валли ĕç вырăнĕ тупас, вĕсене ялалла туртас, çĕнĕ йăва çавăрма пулăшас ыйтусене те хускатма, вĕсене пурнăçлассишĕн тăрăшма ĕмĕтленеççĕ çак икĕ ялăн тĕп хуламăрти ентешлĕхĕнче. Кирек ăçта пулсан та пирĕншĕн тăван ял яланлăхах тăван та хаклă кĕтес пулса юлать. Тымара хăртас марччĕ, мăрьерен тĕтĕм кăларма пăрахас марччĕ.

Виталий Родионов, профессор.

2006 çулхи çурла уйăхĕ.

КУШЛАВĂШ УЙĔ ЙĔПРЕҪ ЕНЧЕ ЮЛСАН

* * *

Кушлавăш уйĕн туртăмĕ мĕн чухлĕ пултаруллӑ çынна хăй ытамне илчĕ. Çав ытама ĕмĕрлĕхе лекнĕ чăваш ачисем хушшинче Константин Дмитриевич Алимасов Йĕпреç тăрăхĕнче самай сумлă вырӑн йышăнать.

Çын пуласси ачаран паллӑ тенĕ пекех, унăн ячĕ таçта çитиех ырӑпа сарӑлчĕ, хăй çуралнӑ Улатăр енчи чăваш ялĕнчен вăрман витĕр кӳршĕри Йĕпреç районĕн чикки урлă хăюсăррӑн каçса кĕнĕ вăхăтранпах. Хура çырла сăнлĕ правур кавча Йĕпреç хурӑнĕсем хăйсен çирĕп хуллисемпе явакласа илчĕç те, çурхи шывне ĕçтерсе ӳсĕртрĕç, Кушлавăш уйĕнче çĕнĕ тымар яртарчĕç. Хăйĕн авалхи вăрман хӳттинче пытанса ларакан Эйпеçне манмасăр вара вăл çĕнĕ пурнăç туса ячĕ. Юман тымарĕ пек никĕсне Йĕпреç район хаçачĕн редакцине çапрĕ. «Çĕнтерӳшĕн» хаçатра ĕçлекен аслă юлташĕсен ăслă сăмахне пуçа хыврĕ, пĕлĕвне, ăсталăхне ӳстерсе пынӑ май вĕсенчен те хытăрах, çӳллĕрех вĕçме пуçларĕ хаçат тĕнчинче. Çӳлелле, çӳлелле хăпарса пычĕ те тĕп редактор пуканĕ çинех улăхса ларчĕ. Хаçат редакторĕнче чи нумай çул – 22 çул ĕçлесе чемпион ятне илнĕ Вăрнар ачи Серафим Ефимович Ефимова хуса çитесси те нумаях юлман-ха Константин Алимасовăн редактор çулĕ çинче. Вăл 1996 çултанпа «Çĕнтерӳшĕн» коллективне хăйне евĕр пĕлсе, тăнлă-пуçлă ертсе пырать.

Çулăн-çулăн редактор çупкă та çиет, çу та хыпать. Алимасов та пурнăçри çав ырлăх-хурлăх юххинчен аяк-

ра тăрса юлман. Анчах ырă сăмахĕ, хисепĕ унăн ятне ытларах çĕклет. Вăл Раççейри «Пичет отличникĕ» палла тивĕçнĕ, «Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ». Ăна Раççей журналисчĕсен Союзăн Хисеп грамотипе наградăланă, Чăваш Республикин президенчĕ Н.В.Федоров ятарлă указпа мухтанă.

Хамăн журналистика ĕçĕнчи вĕренекенĕмĕн ĕçнехĕлне сăнасах тăратăп, унăн ӳсĕмĕшĕн хĕпĕртетĕп. Çак кĕнекене хатĕрленĕ чухне килти архивра шăпах унăн кĕске очеркĕ алă айне лекрĕ. Ăна вăл СССР 60 çул тултарнине йĕпреçсем мĕнле хастарлăхпа кĕтсе илнине халлланă. Районти кашни колхозăн тата унти ялсен историне çырса кăтартнă иккен çамрăк журналист. Вун пĕрмĕш маршручĕ – «Трудовик». Материалĕ 1982 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнче «Çĕнтерӳшĕн» хаçатра тухнă. Унта Кушлавăш уйĕнчен Йĕпреç енне тăрса юлнă Пысăк Упакасси, Шуркасси тата Шĕпекеч ялĕсен утăмĕсемпе паллашма пулать.

ĂРУРАН ĂРĂВА – СУЛМАКЛĂ УТĂМПА

Кушлавăш текен вуникĕ ял уйĕ. Çак тăрăхра вырнаçнă Пысăк Упакассине 280 çул каялла, XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче (хăш-пĕр документсенче XVIII ĕмĕрте тесе ĕнентереççĕ). Атăл тăрăхĕнчи Çавал шывĕн анат юхăмĕнчи вырăнсенчен (хальхи Сĕнтĕрвăрри тата Çĕрпӳ районĕсенчен) хĕсĕк пурнăçран хăтăлас ĕмĕтпе «ирĕклĕх» шыраса куçса пынă çынсем никĕсленĕ. Ку вырăнта утса витĕр тухма çук вăрман кашланă, вырăн-вырăнпа çеç юханшывсен хĕррипе пĕчĕк уçланкăсем пулнă. Куçса килекенсем шăпах çав уçланкăсенче хуçалăхсем çавăрнă. Кунта чăваш хресченĕсем вăрман касса-хăртса уйсем тунă, çĕр ĕçленĕ. Çулсем иртнĕ майăн Турикартиш (хальхи Советски), Малтикартиш (хальхи Комсомольски), Маття, Шĕшкĕпуç, Савкка урамĕсем пулса кайнă. Яла никĕслекенсем Домиковсен, Тряковсен, Ерилеевсен, Ениковсен, Ярчеевсен, Исаевсен йăхĕсенчи çынсем, тесе çирĕплетеççĕ вăтам шкул музейĕ валли пухнă хăш-пĕр документсем. Пысăк Упакассине ытти çĕртен çынсем куçасси вăтамран 40 çула яхăн пынă.

Хĕсĕк пурнăçран тарса килнĕ хресченсен «ирĕклĕхĕ» ку тăрăхра нумай вăхăта пыман. Чăваш халăх поэчĕ Семен Элкер «Хĕн-хур айĕнче» поэмăра çапларах çырнă кун пирки: «Анчах, инкеке, пытанчăк ялсем часах-мĕн тухнă «тĕнче» куç умне; патша тарçисем, усал пуçлăхсем кунти кĕтесе те пуçланă çитме»... Хресченсен сахал ĕç çинче тата вăрман ĕçĕнче шараçланса тупнă пур-çук укçи хырăç-марăç тӳлеме кайнă, пуяннисенчен ĕмĕр тăршшĕпе хĕн-хур курнă. Çак саманан асаплă пурнăç паллисене хресченсен пăлхавне хутшăннă Чакка сăнĕнче уçăмлăн кăтартса панă Элкер. Мăн Упакассинче çуралса ӳснĕ поэт ял

халăхĕн иртнĕ кун-çулĕпе яланах интересленнĕ, Чакка кĕрешӳçĕ сăнарĕ те унăн произведенийĕнче ăнсăртран çуралман.

Октябрьти Аслă революци пусмăрпа асап танатинчен хăтарсан тин ирĕке тухнă Упакасси ялĕнче те çĕнĕ пурнăç вĕреме тытăннă.

Ялти ватăсем халĕ те астăваççĕ-ха, Кольцовкăра çуралса ӳснĕ Иван Першуткин тăван ялне фронтран таврăннă чухне (1917 çулхи кĕркунне пулнă ку ĕç) Упакассинчи шкула кĕнĕ. Унта вăл Александр Николаевич Соловьев учительпе курнăçса, ăна тата шкул ачисене Аслă Октябрь çĕнтерĕвĕ çинчен каласа панă. Çак хыпара илтнĕ хреченсем те унпа тĕл пулса калаçнă. Кӳршĕ ял çынни хурал пӳртне пухăннă тĕттĕм халăха пĕтĕм власть Советсен, халăхăн аллине куçни, çĕнĕ пурнăç малашлăхĕ çинчен ăнлантарнă. Ахальтен мар ĕнтĕ И.Першуткин упакассисемшĕн упранакан çутă сăнар пулса юлнă.

Шăпах çак вăхăталла ĕççыннисен ĕмĕртен кĕтнĕ ĕмĕчĕ пурнăçа кĕнипе хавхаланнă Семен Элкер, 1918 çулта килне таврăнса, халăх ĕçне хĕрӳллĕн пуçăнать. Тăван ялти чухăнсемпе вăтамсене вырăнти Совет йĕркелеме пулăшать. Ăна ял Совет çыруçине лартаççĕ. Часах унăн чухăнсен комитечĕн председателĕ пулма та тивнĕ. Совет влаçне çирĕплетессишĕн çине тăрса кĕрешекен Элкере Кушлавăш вулăс Совечĕн членне, çĕрĕç пайĕн пуçлăхне суйласа хураççĕ. Çĕршывра çав вăхăтра хĕрӳ граждан вăрçи пынă май, фронтсенче шуррисене хирĕç çапăçакан Хĕрлĕ Çара пулăшас, тылра çĕнĕ революциллĕ йĕркесене çирĕплетес тĕлĕшпе Семен Васильевич чунне парса ĕçленĕ.

ÇАПЛА ЧĂМĂРТАННĂ КОЛХОЗ

Ку вăхăт ял пурнăçĕшĕн хĕрӳ тапхăр пулнă. Шăп çав çулсенче Пысăк Упакассинче хресченсем коллективлă ĕç йĕркине анлăн куçасси тапранса каять. 1927 çулта кунта ялхуçалăх артелĕ, тепĕр çултан вара Шĕпекечре çĕр ĕçлесе хатĕрлекен юлташлăх йĕркеленĕ. Иккĕшĕ те Юпала, хальхи Эконом поселокĕ вырнаçнă государствăн вăрман фончĕ çине куçса лармаллискерсем пулнă. Артель тата юлташлăх руководителĕсем çĕр илес ыйтупа çĕрĕç комиссариатне пынă, анчах та çак коллективлă фонда маларах йĕркеленнĕ юлташлăхсене уйăрса панă пирки упакассисемпе шĕпекечсен ыйтăвне тивĕçтерме май килмен. Ун хыççăн ялхуçалăх юлташлăхĕсем саланса кайнă.

1930 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнче Пысăк Упакассинче 136 хуçалăхран колхоз йĕркеленнĕ. «Победа» ят панă ăна мал ĕмĕтлĕ хресченсем. Кулаксемпе хӳрешкисем пĕрлешӳллĕ хуçалăх пирки элек сăмахĕсем сарнă, вăл вăхăтра вĕсен витĕмĕ вăйлă палăрнă. Çураки тĕлне тин çеç йĕркеленнă колхозра хуçалăхсен йышĕ палăрмаллах чакнă. Ялти çамрăксем пĕрлешӳллĕ хуçалăха çĕнĕрен пысăклатса çирĕплетессишĕн канăçа пĕлмесĕр ĕçленĕ. «Трудовик» колхозăн хисеплĕ колхозникĕ, çитмĕл тăваттăри Василий Иванович Кардышев çапла аса илет çав хĕрӳ вăхăта:

«Пĕрлешӳллĕ хуçалăх умне йывăр лару-тăру тухса тăрсан, ялта хресченсен шавлă пухăвĕ иртрĕ. Унта парти райкомĕн яланхи представителĕсем Семен Маркияновпа Георгий Антонов килнĕччĕ. Вăл вăхăтра ялта парти организацийĕ пулман. Пухура пĕрлешӳллĕ вăйпа çуракине мĕнле ирттересси çинчен калаçрăмăр. Колхоза

çырăннă чухăнсен лашасем çукчĕ, акма вăрлăх та пулман. Эпир, çамрăксем, пĕр шухăш-тĕллевлĕ пулса, ялти кулаксен лашисене туртса илесси çинчен ыйту хускатрăмăр. Кулаксен чунĕсем мĕн тери вĕчĕрхенсе кайрĕç ун чухне, шăв-шав çĕклерĕç, сиенлĕ ĕçсем тăвассипе хăратрĕç. Пуху эпир çĕнтернипе вĕçленчĕ: хресченсем пирĕн шухăшпа килĕшрĕç, чылайăшĕ колхоза çырăнма пулчĕç...»

Кăвар чĕреллĕ коммунарсем – Акрапия, Василий, Филипп Кудяковсем, В.Кардышев, О.Кузнецова, Е.Лазарев, М.Ярчеев, Е.Кадричев, П.Акелов, Н.Садыкова, В.Тихонов – ялти хресченсене парти политикине ăнлантарса пани, кулаксене тăрă шыв çине кăларни кăлăхах пулман, палăртни пурнăçа кĕрсе пынă. Пĕрремĕш çураки, йывăр условисенче иртнĕ пулин те, пуянсемпе вĕсен хÿрешкисен серепине лекнĕ чухăнсемпе вăтамсене коллективлă ĕç йĕркин пĕлтерĕшне ăнланса илме май панă. Колхоз йĕркеленичченялта Матвей Афанасьевич Афанасьев учитель çеç комсомолец пулнă. Вăтăрмĕш çулхи сентябрьте комсомол ретĕнче тăракан учительсем Е.Филиппов, А.Громков, П.Семенов, Д.Миронов, Д.Егоров, М.Антонов килнĕ хыççăн, Пысăк Упакассинче çĕнĕ пурнăç малашлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿ анлăн сарăлнă, çивĕчленнĕ.

Кулаксем хăйсене çăварлăхланине курса, ирсĕр ĕçсем тума хăтланнă. Вĕсем халăхра пысăк хисеп çĕнсе илнĕ Артемий Громков çине темиçе хутчен те тапăннă. Кашнинчех ялти учитель тăшмансен ирсĕр аллинчен хăтăлма пултарнă.

Тепĕр çултанах Упакасси «Победа» тата «Трудовик» колхозсене пайланнă. 1932 – 1933 çулсенче, «Победа» пĕрлешÿллĕ хуçалăха Петр Еников ертсе пынă вăхăтра, Çĕнурам вĕçĕнче ĕне, сысна тата лаша вити туса лартнă.

Шăпах çав вăхăталла ялта тĕлĕнмелле хыпар сарăлнă. Хресченсем тин çеç илсе килнĕ «Фордзон» трактор колхоз уй-хирĕнче пĕрремĕш суха касси хывнине курма васканă.

Колхоз стройĕ татăклăн çĕнтернĕ. Пысăк Упакассинчи «Победа», «Трудовик», Шуркассинчи «Строитель», Шĕпекечри «Осовиахим» колхозсем йывăр условисенче аталанса пынă. Вĕсем, Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн пĕрлешсе, «Трудовик» пулса тăнă.

ТĂВАЛЛА

1961 çулхи кĕркунне пулнă-ха ку. Бригадирта ĕçлесе опыт пухнă А.Шордеев, колхозниксен аслă пухăвĕнче хăйне колхоз председательне пĕр саслă пулса суйласан, çапла каланă: «Сирĕн шанăçа тӳрре кăларма тăрăшăп...» Ун чухне «Трудовик» колхозăн ӳсĕмĕсем питех те пĕчĕк пулнă. Çавăнпа та Антон Григорьевичăн хуçалăха хăвăртрах ура çине тăратас тесе чылай шухăшлама тивнĕ. Колхоз çав çул кашни гектартан 9 центнер тĕштырă, 40 центнер çĕрулми туса илни пурнăç ыйтăвне тивĕçтермен. Пĕчĕк те кивĕ витесенче пурĕ те 294 пуç ĕне выльăх, 159 пуç сысна пулнă. Ял хуçалăхĕнче усă куракан 100 гектар çĕр пуçне 9,7 центнер аш-какай, 87 центнер сĕт туса илнĕ. Лакса ларнă колхоза ертсе пыма малтанхи кунсенченех мĕн тери йывăр пулнă пулин те, Антон Григорьевич пуçне усман, халăхпа ĕçлес хĕрӳлĕхе вăйлатсах пынă.

Çак кунсенче колхоз аталанăвĕпе интересленнĕ май, Антон Григорьевичпа (халĕ вăл ял Совет ĕçтăвкомĕн председателĕнче ĕçлет) тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ. Акă мĕн каласа пачĕ вăл çав йывăр тапхăра аса илсе:

– Колхоза çĕклесси коммунистсемпе, ĕç ветеранĕсемпе, ял халăхĕпе пĕр тĕллевлĕ пулса, тачă сыхăнса ĕçленинчен нумай килчĕ. Пирĕнпе юнашарах çĕршывĕпех чапа тухнă Кольцовкăри Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз, районти тĕреклĕ хуçалăх – «Путиловка» пулнă. Вĕсен ĕç опычĕпе паллашма çав хуçалăхсене темиçе хутчен те кайса килтĕм.

Çакăн хыççăн кирек мĕнле ĕçе те – пысăк-и вăл, пĕчĕк-и, – председатель наука вĕрентнĕ пек йĕркелесе пынă, çакăнта вăл колхоз экономикине малалла хăватлăн аталантармалли иксĕлми çăлкуç тапнине курнă. Тепĕр икĕ çултан колхоз самаях тухăçлă тырпул пухса кĕртнĕ, 1966 çулта вара вăтам хуçалăхсен шутне кĕрет. Малашнехи çулсенче – çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ. Акă, Совет влаçĕн çур ĕмĕрхи юбилейне чыслăн кĕтсе илессишĕн пынă социализмла ăмăртура мала тухнăшăн «Трудовик» колхоза КПСС райкомĕпе райсовет ĕçтăвкомĕн Асăну ялавне панă тата Чăваш АССРĕн Ĕç Паттăрлăхĕпе Мухтавăн юбилей кĕнеки çине кĕртнĕ. 1970 çулта хуçалăх нихçан пулман тырпул – кашни гектартан 30,2 центнер тĕштырă пухса кĕртнĕ. В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ ятпа колхоза КПСС Центральнăй Комитечĕн, ВЦСПСăн Ленинла грамотипе, хуçалăх председательне вара Ленин орденĕпе наградăланă. Çакна та палăртма кăмăллă: саккăрмĕш пилĕкçуллăхра колхоз Пĕтĕм Союзри Халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсен выставкине икĕ хутчен хутшăннă.

1973 çул. «Трудовик» колхоз ĕçченĕсемшĕн кĕрешӳпе паттăрлăх çулĕ пулнă вăл. Хуçалăх республикăра чапа тухрĕ.

– Пирĕн колхоз çĕрĕç культурине ӳстерессишĕн çуллен-çул пысăк тимлĕх уйăрчĕ, – каласа парать Ленин орденĕн кавалерĕ, колхозри партбюро секретарĕ В.И.Ге-

расимов. – Эпир çав çул кашни гектартан 30 центнер ытла тĕштырă, 227 центнер çĕрулми туса илтĕмĕр. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутмалли плансене иртерсе пурнăçларăмăр. Колхоз 832.727 тенкĕ тупăш илчĕ.

Ахальтен мар ĕнтĕ партипе правительство колхоз ĕçченĕсен пархатарлă ĕçне пысăка хурса хакларĕç. Колхоз председательне А.Г.Шордеева Социализмла Ĕç Геройĕ ятне пачĕç. «Ылтăн Çăлтăр» хуçи район çыннисемшĕн çутă маяк пулса тăчĕ. Кунсăр пуçне уй-хир бригадирне К.Прохоровăна Ленин орденĕпе, М.Краснова сысна пăхакана Октябрьти Революци, А.Васильев агронома, Ф.Савельева сысна пăхакана Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, Г.Миронов бригадира, А.Романов комбайнера, А.Яковлева сурăх пăхакана «Хисеп Палли» орденсемпе наградăланă.

Чăн та, 1973 çулти кĕр мăнтăрĕ колхоз ĕçченĕсене иксĕлми телей парнелерĕ, тата сулмаклăрах çитĕнӳсен çулĕпе талпăнма хавхалану, çĕнĕ вăй-хал кӳчĕ.

ПОЭТ ЯЧĔПЕ ХИСЕПЛЕНЕТ

ИСТОРИРЕН. 1897 çулхи хĕл кунĕсенче Хусан кĕпĕрнине кĕрекен Етĕрне уездĕнчи Туçа вулăсĕнчи Пысăк Упакасси ялĕнче шкул уçăлнă. Çакна кунта вĕреннĕ Е.Васильева панă «Мухтав хучĕ» те çирĕплетет. Малтан вăл Осип Павловăн çуртĕнче вырнаçнă. Ялти пĕрремĕш учительсем – Лев Григорьевпа Гурий Захаров.

1930 çулта тин икĕ сыпăклă шкул ятарласа туса лартнă çĕнĕ çурта куçнă.

1967 çулта вăтам шкула кунта вĕреннĕ, çирĕммĕш çулсенче учительте ĕçленĕ Чăваш халăх поэчĕн Семен Васильевич Элкерĕн ятне панă.

– Шкулта музей уçма палăртнă, – каласа парать истории учительници Н.Ерилеева. – Ял, колхоз тата шкул историне тĕпчесе, Семен Элкер пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă тĕрлĕ материалсем пухатпăр. Ку шкултан вĕренсе тухнă çынсемпе çыхăну тытатпăр, вĕсене отпуска килсен хăнана чĕнетпĕр.

Мухтава тухнă ентешĕсем сахал мар упакассисен. Акă, вăтăрмĕш çулсенче ку шкулта учительте ĕçленĕ Д.Мироновăн ывăлĕ Юрий Дмитриевич Мускаври государство университетĕнчен вĕренсе тухнă, халĕ пĕр министерствăра ĕçлет. Мирон Яковлевич Яковлев вара икĕ çар училищинче, çар академийĕнче, КПСС Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи партин аслă шкулĕнче пĕлӳ илнĕ, халĕ Мускавра пурăнать. Николай Ерилеев, Василий тата Анатолий Николаевсем (йĕкĕрешсем) çар академийĕнчен, Раиса Ястребова вăрман промышленноçĕн академийĕнчен, Анатолий Архиповпа Виталий Семенов ялхуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухнă. Аслă пĕлӳ илнисем Я.П.Ерилеев, Н.А.Сумкин, Ф.В.Елдырев, Е.И.Федькова тата ытти çемьесенче те нумай.

Упакассисен ентешĕ М.Я.Яковлев тăван яла отпуска килсен, хăй вĕренсе тухнă вăтам шкулта хăнара пулчĕ. Тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ вăл виçĕ хутлă çĕнĕ шкулпа паллашсан. Кунта вĕренӳ ĕçне кабинет системипе йĕркеленĕ, аслă пĕлӳ илнĕ педагогсем ĕçлеççĕ, урăхла каласан, пĕлĕве тарăнлатма, анлăлатма майсем çителĕклĕ.

ÇУЛСЕРЕН УЛШĂНАТЬ ПЫСĂК УПАКАССИ

Яла пырса кĕрсен, чи малтан Чакка несĕлĕсен ырă та пархатарлă ĕçĕ ăруран ăрăва куçса пынине курса, чунтан хĕпĕртетĕн. Урамсен икĕ айккипе кашни çурт умĕнче ватă

йăмрасем лараççĕ. Элкер выляса чупнине курнă, коллективизаци кĕрлевне итленĕ, çĕнĕ пурнăç таппипе ӳснĕ йывăççем вĕсем. Тата çакна та палăртма кăмăллă: кашни кил çумĕнче тенĕ пекех – палисадник, сад пахчи, вĕллесем...

Çулсерен улăштарать хăйĕн сăнне Элкер çĕршывĕ. Колхозниксем кирпĕчрен çĕкленĕ çĕнĕ пӳртсен йышĕ ӳссех пырать. «Трудовик» колхозра строительство анлăн сарăлнă. 25 çул каялла уй-хир пулнă вырăнта ял Совет ĕçтăвкомĕн,сыхăну уйрăмĕн, фельдшер пункчĕн, Культура çурчĕсем çĕкленчĕç. Юлашки вунă çул хушшинче куллен кирлĕ таварсем сутакан магазин, учительсем валли тăватă хваттерлĕ çурт, талăкра виçĕ тонна çăкăр пĕçерекен пекарня, столовăйпа правлени çуртне, ăшă гараж-мастерской туса лартрĕç. Йĕпреç – Пысăк Упакасси асфальтлă çул çывăхĕнче, Кушлавăш шывĕ хĕрринче, выльăх-чĕрлĕх комплексĕ ӳссе ларчĕ. Кĕçех 140 вырăнлă ача сачĕ хута каять. Малашнехи çулсенче çĕнĕ объектсен никĕсĕсем хывăнĕç.

«Трудовик» колхоз юбилейлă çулта та çĕнĕ çитĕнӳсем çулĕпе утăмлать. Мухтанмалли çителĕклех кунти ĕçченсен. Хуçалăх Кушлавăш уйĕнче тухăçлă тырпул çитĕнтерчĕ. Çур ĕмĕр каялла пĕр гектартан 5-7 центнер тырă илнĕ çĕрсем çинче кăçал вăтамран 30,7 центнер тĕштырă пухса кĕртрĕç. Колхоза республикăри Хисеп хăми тата Советсен çурчĕ умĕнчи Ĕç Мухтавĕн стенчĕ çине кĕртнĕ. «Трудовик» тепĕр сулмаклă утăм турĕ: государствăна сĕт сутмалли çулталăкри плана октябрь уйăхĕ тĕлне ирттерсе пурнăçлани çинчен рапортларĕ.

– Государствăна аш-какай хатĕрлесе парассипе те плана пурнăçлама тăрăшатпăр, – терĕ колхоз председателĕ Ю.Ластухин.

Кунти колхозлă ял ĕçченĕсем мал ĕмĕтлĕ, тунă çитĕнӳсемпе лăпланса пурăнмаççĕ, ӳсĕмсен çулĕпе утаççĕ. Вĕсен паянхи тĕп тĕллевĕ – СССР Союзĕ 60 çул тултарнине ĕç парнипе кĕтсе илесси.

Константин АЛИМАСОВ,
СССР Журналистсен союзĕн членĕ.

* * *

Константин Алимасов çырни çумне çакна хушасшăн.

Хурамал ялĕнче çуралса ӳснĕ Василий Иванович Андреев, паллă журналист, сăвă-поэма маçтăрласа чăваш литературине Деферан тата Хурамал хушма ятсемпе кĕрсе юлнă паллă писатель Элкерпе туслă, ентешлĕ çыхăнура тăнă. Семен Васильевич унпа Йĕпреç тăрăхĕ, литературăпа искусство пурнăçĕ çинчен çырусем урлă калаçнă. Василий Иванович хăй те çав майпах хутшăнусене çирĕплетсе пынă. Ун чухнехи çул-çӳрев, çыхăну ларутăрăвĕ çынсене паянхи пек васкавлă çывăхлатайман.

Йĕпреç хаçачĕн редакторĕнче чухне Хурамал юлташа эпĕ редакцире хаваспах ĕçлеттертĕм, вăл вăхăтра унпа туслашсах кайрăм, пичетленмен поэмисене те май килнĕ таран халăх умне кăларма тăрăшрăм. Вăл яланхи пекех нумай çыратчĕ. Йĕпреç тăрăхĕнчи паллă çынсен пурнăçне сăнлама юрататчĕ. Комсомол активисчĕсен очерк пухине ВЛКСМ райкомне хатĕрлесе парса хăварчĕ. Кайран ăна, хăй вилсен, Шупашкар архивне пачĕç пулас. Унпа нумай çын усă курса юлчĕ ĕнтĕ. Район хаçатĕнче пичетленнĕ пĕр статйинчен илнĕ йĕркесем, акă, Пысăк Упакасси çамрăкĕсен хĕрӳ вăхăтне çапла палăртаççĕ:

«Çирĕммĕш çулсен вĕçĕ тата вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕ – ялсенчи класс кĕрешĕвĕн чи хаяр тапхăрĕ. Вăл вăхăтра пирĕн районти комсомол организацине

И.Свешников, М.Орлов, Сорокин, Е.Маргинов, З.Яковлев, Н.Теплов т.ыт.те ертсе пынă.

Вĕсем кашниех ялсенчи комсомол ячейкисене вăйлатассишĕн тата çĕнĕрен йĕркелесе ярассишĕн нумай вăй хунă. Комсомол историйĕнче вĕсен пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ паллă вырăн йышăнĕ.

Ялсенчи малтанхи комсомолецсен ячĕсем те нихăçан та манăçа тухмĕç. Шкулсенче вĕренекен комсомолецсемпе пионерсем вĕсем çинчен татах тĕплĕнрех тĕпчесе пĕлĕç, паха асаилӳсем çырĕç.

Акă, пирĕн алра темиçе асаилӳ.

– Пирĕн ялти комсомол ячейкине 1930 çулта йĕркеленĕ, – тесе çыраççĕ Пысăк Упакассинчи С.В.Эльгер ячĕпе хисепленекен вăтам шкулта вĕренекенсем. – Вăтăрмĕш çулччен ялта пĕр комсомолец пулнă. Вăл Матвей Афанасьевич Афанасьев учитель. Çав çулах яла комсомол ретĕнче тăракан учительсем Ермолай Филиппович Филиппов, Татьяна Семеновна Розова, Марфа Игнатьевна Никитина килнĕ. Вĕсем ялта комсомол ячейки йĕркеленĕ. Çамрăксене комсомола явăçтарассишĕн çине тăрса ĕçленипе ячейкăра 17 комсомолеца çитет, вĕсенчен виçĕ хĕрача. Комсомол ячейкин секретарĕ пулма Михаил Кузьмич Ярчеева суйлаççĕ. Вăл халĕ 60-тан иртнĕ. Паянхи кун та колхозра тăрăшса ĕçлет.

Çав çулта ялта колхоз йĕркелеççĕ. Ăна «Победа» ятлă хураççĕ. Малтанхи уйăхрах колхоза 100 хуçалăх ытла çырăннă. Анчах та çураки тĕлне 10 хуçалăх кăна тăрса юлнă. Колхоза кулаксем салатма тытăннă. Пĕрлешӳллĕ хуçалăха çĕнĕрен пысăклатса çирĕплетессишĕн комсомолецсем нумай ĕçленĕ. Вăл вăхăтра ялта парти организацийĕ пулман. Колхоз тăвас ĕçре парти райкомĕн яланхи представителĕсем Семен Маркиянов тата Геор-

гий Антонов нумай пулăшнă. Учительсем те активлă хутшăннă. Вĕсем ялти хресченсене парти политикине ăнлантарса панă, кулаксене тăрă шыв çине кăларнă. Кулаксем комсомолецсене курайман. Вĕсем çинчен элеклĕ сăмахсем сарнă. Громков учителе тапăннă. Вăл ун чухне комсомол ячейкин секретарĕ пулнă. Кулакла элементсем Димитрий Миронович Миронова питĕ курайман. Миронов Пысăк Упакасси çынни ялти кулаксемпе спекулянтсене лайăх пĕлсе тăнă.

Учитель-комсомолецсем хутпĕлменлĕхе пĕтерессишĕн нумай ĕçленĕ. Шкула пырайманнисене килĕсене çӳресе вĕрентнĕ. Комсомолецсем эрнере пĕрре спектакль лартнă. Ку ĕçе пионерсем те хутшăннă: Мирон Сябуков, Яков Спиридонов, Татьяна Елдырева, Романов, Егоров т.ыт.те.

Кулаксем темле хирĕç тăнă пулсан та, ялта колхоз чăмăртаннă. Вăл вăхăтра активлă кĕрешекенсем – Димитрий Миронович Миронов, Степан Михайлович Михайлов, Михаил Кузьмич Ярчеев т.ыт.ячĕсене колхозниксем халĕ те ырăпа асăнаççĕ. Çавăн пек йывăр условисенче комсомол ячейки çуралнă. Колхоз туса хурас тата ялти хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе унăн ролĕ калама çук пысăк. Унтанпа кунти комсомол организацийĕ нумай ӳсрĕ.

Коммунистсемпе комсомолецсем тата партире тăман активистсем çĕннишĕн пĕтĕм вăя хуни харама каймарĕ. Колхоз стройĕ татăклăн çĕнтерчĕ. «Победа» колхоз йывăр условисенче аталанса пычĕ. 1936 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне ку хуçалăхăн майракаллă шултра выльăх 30 пуç, вăл шутран сăвакан ĕне пĕр пуç кăна пулнă. Пысăк Упакассинчи «Победа», Шуркассинчи «Строитель», Шĕпекечри «Осоавиахим» колхозсем пĕрлешсе «Трудовик» пулса тăнă

хыççăн пысăк хуçалăх вăйлăн аталанма пуçларĕ. Ăна ĕнтĕ чылай çулсем комсомол воспитанникĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ А.Г.Шордеев коммунист ертсе пырать. Вăл парти, комсомол организацийĕсемпе тачă çыхăнса ĕçленипе хуçалăха ăнăçлăн аталантарса пырать.

В. Андреев.

Хам та çамрăкчĕ те вăл вăхăтра, манăн, Вăрнарта комсомол ĕçĕпе çулăмлăн ĕçленĕскерĕн, Йĕпреçри хастар комсомолецсемпе, çамрăк коммунистсемпе пĕрле ĕçлес, вĕсене хаçат урлă пулăшас килетчĕ. Пысăк Упакассинчен Николай Андреев ВЛКСМ райкомне ертсе пыратчĕ. Ăна хăйсен ялĕсемех Петр Яичников нумай пулăшатчĕ. Эдуард Николаев, Василий Абрамов комсомол райкомĕнче туптанса аслăрах вырăнсенче ĕçлеме вăй илчĕç. Вĕсем Йĕпреç комсомолийĕн, Кушлавăш уйĕнчи ял çамрăкĕсен паллă ертӳçисемччĕ. Комсомол историйĕ çинчен материалсем пухассишĕн Петр Яичников сахал мар тăрăшрĕ.

Манăн Йĕпреç хастарĕсем 2006 çулта «Çĕнтерӳшĕн» хаçатĕнче çакăн çинчен хавасланса халăха пĕлтерчĕç:

ЁҪ ГЕРОЙНЕ ХАЛАЛЛАСА

КПСС Йĕпреҫ райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Н.Г. Лермонтов юлташ А.Г. Шордеев юлташа ҫĕнĕ партбилет илнĕ ятпа саламлать. 1973 ҫулхи апрель.

Тăван ҫĕршыв Антон Григорьевичăн пархатарлă ĕҫне тивĕҫлипе хаклана, ăна 1973 ҫулхи чӳк уйăхĕнче Социализмла Ёҫ Геройĕн ятне панă. Шел, кун-ҫулĕ вăрăм пулмарĕ ертӳҫĕн, утмăл тултарицченех вăл пурнăҫран уйрăлса кайнă.

Кăҫал А.Г.Шордеев ҫуралнăранпа 75 ҫул ҫитет. Ҫавна май «Трудовик» колхоз правленийĕпе Пысăк Упакасси ял тăрăхĕн администрацийĕ ку ҫулталăка районти пĕрремăш Ёҫ Геройне халаллама йышăнчĕҫ. Халĕ уй-хир бригадисенче, выльăхчĕрлĕх фермисенче, техника паркĕнче чапа тухнă ентешĕ ячĕпе Асăну вахти пырать. Ялти пултарулăх ăстисем, халăх таланчĕсен районти тата вырăнти фестивалĕсене хутшăннă май, хăйсен программине Антон Григорьевич уйрăмах юратнă юрăсене кĕртрĕҫ. Кунпа пĕрлех сцена ҫинчен ăна халлланă хайлавсем те янăрĕҫ.

Спорта килĕштерекен яш-кĕрĕм вара Герой ячĕпе уçă турнирпа спартакиада ирттерес тĕллевлĕ. Пĕтĕмлетерех каласан, Пысăк Упакасси тăрăхĕнче пурăнакансемшĕн Ăсхакăл çутлăхĕн çулталăкĕ хăйсен колхозĕн чапĕпе чысне çĕклессишĕн ырми-канми тăрăшнă çыннăн таса сăнарне чун-чĕрере тытнине кăтартса панипе те асра юлĕ».

* * *

Манăн та «Хыпар» хаçатра 2006 çулхи çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕнче ÇĔР ÇĂЛТĂРĔ очерк пичетленчĕ.

Пĕр ирпе, хампа пĕр çуртра пурăнакан, райсовет ĕçтăвкомĕнче ĕçлекен Николай Иванович Иванов мана шухă çил çуната турта хушшине кĕртсе кӳлсе пачĕ те – эпĕ хуплă çунапа Вăрнар çулĕ тăрăх Пысăк Упакассинелле шутартăм.

Авалхи çак вырăнта каш-кашлакан сĕм вăрман тымарне хăртса, ун вырăнне хăйсен тымарне янă чăвашсем, тунката çĕрне сарса тырă уйĕ туни, пӳрт-çурт лартса ял çавăрни, тĕнче курăмри Элкер çăлтăра хăйсен ĕмĕрлĕх çăлтăрĕ туса хуни çинчен шухăшлакаласа пыратăп. Шухăшĕ вĕçĕмсĕр те – анчах çулĕ кĕске. Вунă çухрăм – хыçалта. Акă эпĕ тахçанхи сĕм вăрман варринчи упаллă пулнă Упакассине – патшалăх çапла ят панă хăйăрлă, лачакаллă вырăна – Çĕр тĕкки пулса юлнă, тĕнче илемĕн анлă картине кĕнĕ вилĕмсĕр Çеменĕн Тăван çĕршывĕн ытамне кĕрсе ӳкрĕм.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăх кантурĕнче мана Шордеев кĕтсе илчĕ. Антон Григорьевич йăл-л кулса алă пачĕ те чӳрече патнелле туртрĕ:

– Тӳрех мухтанма пуçлам-ха. Пирĕн Çемен Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэминче пек хĕн-хур айĕнче мар паянхи Упакассисем. Патша саманине хирĕç тăнă Емельк-

ка Пăкачпа ирĕклĕхшĕн çапăçнă Чаккасемпе Пахомкăсен йăх тымарĕ тарăна кайрĕ, сарăлчĕ. Вĕсенчен пĕр паттăрĕпе паллаштармаллах пуль.

Савкка урамĕнчи ултă кĕтеслĕ капмар çурт умĕнче чарăнтăмăр. Кунта Ениковсем пурăнаççĕ. Кил хуçи, Василий Николаевич, колхозри ăста платниксенчен пĕри. Антон Григорьевич кăтартнă пӳртсене шăпах хăйĕн строительсен звенипе тăвать-мĕн. Унсăр пуçне тата вĕсем саккăрăн пĕлтĕр виçĕ пин чăх усрамалăх вите туса пĕтернĕ. Председатель ăна, тем тытса тума та пултаракан маçтăра, правленирех хытă мухтанăччĕ. Ахальтен пин ĕç кунĕ тунă-и?

Василий Николаевич питĕ вашават, кăмăллăн та уççăн калаçать. Таса тумлă, типтерлĕ арăмĕ кăмакаран чукун яшкипе хур шарккăвĕ кăларса сĕтел çине кăпăклă сăра лартнă хушăра вăл пире минутлăха та тунсăхлаттармарĕ. Ман умра Шордеева мухтаса илчĕ.

– Эс мана, Антон Григорьевич, йăпăлтатса ларать тесе ан шутла. Сана халăх мĕн каланине çеç калатăп. Чăнчăн мăн Этемех эс. Сана пула ял çынни ура сырчĕ. Сана председателе суйличчен...

– Ан та асăн-ха вăл нуша çулĕсене, Ваçли, – тăм куркасене сăра тултарчĕ арăмĕ. – Ара, гектартан ултă центнер тырă, утмăл центнер çĕр улми илнĕ колхоз та пулман пуль Чăвашра. Йăлтах выççа тăрса юлнăччĕ. Тав, Антун, ура çине тăратрăн тĕшĕрĕлнĕ хуçалăха, çăкăр çитертĕн пире. Эп сана уншăн тахçанах çур литр ĕçтересшĕнччĕ-ха. Тинех майлă саманта лекрĕн. Эп çиччас...

Пуянланнă тулли сĕтел хушшинче шăкăл-шăкăл калаçса ларатпăр. Эпĕ пӳрте кĕрсенех стена çинчи сăн ӳкерчĕксем хушшинче Ленин орденне асăрханăччĕ. Майĕпен ун пирки ыйтса пĕлмелли черет те çитрĕ. Ман ыйтăва

кĕреке хуçи çуршар стакан шурă эрех тултарнă хыççăн тин хуравларĕ:

– Çапăçăва кĕрес умĕн пире фронтра çакăн чухлĕ эрех ярса паратчĕç те алюмини куркана... «Тăван çĕршывшăн! Сталиншăн!» – тесе кăшкăрса хавхалантаракан командир хыççăн урнă пек ыткăнаттăмăр, унран иртсе кайса вилĕме хирĕç чупаттăмăр...

Калаçнă май унăн пит çăмартийĕсенчи тĕллĕн-тĕллĕн путса кĕрекен вырăнсем туртăнкаласа илеççĕ. Ку вăл – вăрçă палли – парни-мĕн.

– Эх, эрехне те ун чухне пуçласа ĕçсе куртăм, – пушатнă савăта сĕтел çине шап! лартрĕ салтак. – Аса илӳсем капланса килчĕç. 1945 çулхи нарăсăн вуннăмĕшĕччĕ. Çав куна нихçан та манмастăп. Польшăна фашист йăхяхĕнчен тасатассишĕн çапăçатпăр. Бельск хулине нимĕçсенчен тытса илессишĕн наступлени пуçланчĕ. Хăрушă шăв-шавра хăлха та хупланать. Çухатусем тӳссе малаллах талпăнатпăр. Хыçалалла та, аякалла та пăхма юрамасть. Автомат дискне иккĕмĕш хут улăштарнă вăхăтра çывăхрах граната çурăлнине темле сиссе юлтăм. Хытă амантрĕç. Авă, çĕввисем халĕ те пур. Маншăн ку çапăçу юлашки пулчĕ. Çĕнтерӳ кунне госпитальте кĕтсе илтĕм. Ленин орденĕ ĕнтĕ вăл... Çĕршывăн аслă наградине...

Юлашки çапăçу... Анчах та Еников сержантшăн тăватă çул хушшинче мĕн чухлĕ пулнă-ши вĕсем?

Упакасси ачи салтака 1939 çулта кайнă. Ун чухне ĕнтĕ фашистла Германи Польшăна çавăрса илнĕ, Хĕвел анăç Белоруссие СССРпа пĕрлештернĕ.

– Чикĕ самай анăçалла куçнăччĕ пирĕн çĕршывăн... Çийĕр-ха, çийĕр, вăтанса ан ларăр. Çирĕм хур чĕппи ӳстернĕ эпир кăçал, пурин валли те çитет, акă сире пĕрер тукмак. Арçын аллинче яланах тукмак пулмалла. Пире

те тукмак тыттарнăччĕ, пире те унпа юнатчĕç поляксем. Кĕçех чикĕ леш енче нимĕçсен чаçĕсем йышлăн йăшăлтатма пуçларĕç. Эпир те çывăрсах лармастпăр, çĕнĕ чикке вăйлататпăр, – пирĕнпе пĕрле черккене çавăрса хунă хыççăн вăл çĕнĕрен хаваçланчĕ, калавне малалла тăсрĕ. – 1941 çулхи çĕртме уйăхĕччченех пысăк хăрушлăх умĕнчеччĕ. Çарта вăл туйăм кунсерен палăратчĕ. Акă, çирĕм пĕрремĕш числара пире Брестран çирĕм пилĕк çухрăмри Жабинка станцине куçарчĕç. Унта сăнав посчĕсем тăратчĕç. Çур çĕр иртсен мана нарядран улăштарчĕç те – çывăрма выртрăм. Ыйхă килмест. Пуçра пĕр май хăрушă шухăш явăнать. Тĕлĕрсе кайнăччĕ кăна, хытă кĕмсĕртетнĕ сасăпа кăртах вăранса кайрăм. Пурте тĕлĕнсе тăратпăр, вĕренӳри çар вăййи пуçланчĕ пуль тетпĕр. Тула сиксе тухрăмăр та куратпăр – чукун çул станцийĕ çунать. Çав хушăрах аялтанах самолетсем вĕçсе иртрĕç. Çуначĕсен айĕнче – хура хĕрессем. Фашистсем! Нивушлĕ провокаци? Çук çав, çĕршывшăн та, маншăн та юнлă, хаяр вăрçă пуçланчĕ.

Вăл вăхăтра, паллах, вут-çулăм авăрĕнче пурте пăтраннă, арпашăннă. Ениковсем те хăйсен чаçне, Бреста таврăнайман, ытти салтаксен юххипе тухăçалла чакса пынă.

– Халь те калама хăрушă, – аптранăн çĕвĕк питне сăтăрса илчĕ Еников. – Чакни мар, тарни пулчĕ вăл пирĕншĕн. Нимĕç кут хыçĕнчен вут-çулăмпа ăшаласа пынă чухне хирĕç тăма-и унта, кашниех хӳтлĕх шыраса чăтлăхалла тапать, Вилĕмрен е тыткăнран мĕнле те пулин çăлăнса юласси çинчен шухăшлать. Çав асар-писерте пулса курман çын ăнланмасть ăна. Кинора çеç яка вăл, унта пурте паттăр. Эй Турă, темле чăтрăмăр. Пурте халран кайнă, выçăллă-тутăллă. Нимĕçсенчен таракан уш-

кăнсем йышлансах пыраççĕ, виç çĕр çынран та иртрĕ пулмалла. Пăшалли те, çара алăлли те, кĕтӳссĕр сурăх кĕтĕвĕ пек, анраса, пуç усса пыратпăр. Хамăр та сисмерĕмĕр – Елецк хули патĕнче тăшман ункине лекрĕмĕр. Юрать-ха, çав вăхăтра темле полковник-танкист тупăнчĕ. Аслă офицер кĕтӳссĕр кĕтĕве пушăпа шартлаттарнă пек пистолетпа хăратсах пĕр çĕре чăмăртарĕ, регулярлă çар чаçĕ пекех йĕркелерĕ. Кашнин халĕ – хăйĕн командир. Полк майлă ушкăна вăл, фашистсемпе тытăçса-çапăçса, хамăрăн фронт линийĕ патне ăнăçлах ертсе тухрĕ. Тавах çав вырăс паттăрне. Чулхуларан терĕç. Вăл пулман пулсан-и, тыткăнра тем кураттăмăр. Çĕнтерӳ кунĕнче кашнинчех çав йăрă та хастар офицера аса илетĕп вара. Çăлăнăç Турри вырăнне хурса ун ячĕпе çĕр грамм яратăп. Атьăр эпир те...

Вăрçă хăйĕн саккунĕпех аталанса пынă. Хуйха савăнăç çĕнтерме пуçланă. Ениковсем те фашистсене анăçалла хăвалаççĕ акă. 1943 çулхине вăл Воронеж хули çывăхĕнчи çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн пĕрремĕш награда – «Паттăрлăхшăн» медаль илме тивĕçнĕ. Ун пирки хăйсен чаç командирĕ ашшĕ патне янă çырăва салтак сунтăхран кăларса кăтартрĕ.

Ениковсен полкĕ Каменец-Подольск çывăхĕнчи Острополь ялĕ патĕнче сывлăш çавăрмалăх чарăнса тăнă. Çавăн чухне ăна штаба чĕнтернĕ. «Сирĕн умра пысăк ĕç. Острополь ти кĕпере тĕрĕслемелле тата ăна хамăрăннисене каçма сыхласа хăвармалла!» – кĕске те витĕмлĕ пулнă командир сăмахĕсем.

Кĕçех Еников хăйĕн сапер командине строя тăратнă та задание пурнăçлама тухса кайнă. Острополь – район центрĕ пулнă пысăк ял. Хĕрринчи килсенчен ыйтса пĕлнĕ тăрăх, кунтан нимĕçсем ирех тухса тарнă. Разведчиксем

ял варрине ҫитнĕ. Чиркӳ патĕнчен сарлака шыв юхса выртни лайăх курăнать. Ун урлă хывнă вăрăм кĕпер тĕрĕстĕкелех. Ку енчи ҫыранра пĕр грузовик тăрать. Тавралла ҫар форми тăхăннă ҫынсем хĕвĕшеççĕ. Отделени командирĕ вăтăра ҫитиччен шутлать. «Фрицсем вĕт кусем, кĕпере сирпĕтме хатĕрленеççĕ», – вĕлтлетсе илнĕ Еников пуҫĕнче. Чăнах та, йывăр ещĕксем йăтнă гитлеровецсем, чул хӳме ҫуммипе пытанса, хăвăрт аялалла анма тытăннă. Вăл хăйĕн салтакĕсене васкатса тăшман еннелле чуптарать. Кĕпер ҫывăхрах ĕнтĕ. Лешсем вĕсене асăрхаман-ха. Ҫав самантрах Еников команда парать: «Огонь!» Ҫичĕ автомат пĕр харăс шатăртатма тытăнать. Кĕтмен ҫĕртен тапăнакансенчен сехĕрленсе ӳкнĕ тăшмансем ниҫта кайса кĕреймеççĕ. Ҫапăҫу нумая пымасть. Чĕрĕ юлнисем аллисене ҫӳлелле ҫĕклесе ҫырана хăпараççĕ.

Еников сержант отделенийĕнче Житомир каччи, нимĕҫле лайăх пĕлекен Войцеховский ефрейтор пулнă. Чĕрĕлле ярса илнĕ фрицсене «чунран калаҫтарма» вăл командирсене самай пулăшнă. Хальхинче те ку лайăх пулнă. Ялан савăнăҫлă украинец нимĕҫ салтакĕсене кĕпере сирпĕтме вырнаҫтарса ĕлкĕрнĕ взрывчаткăсене хăйсенех илтерет.

Операци йĕркеллех пулса пырать. Кĕпер юсавли ҫинчен часрах чаҫе пĕлтермелле. Машина пур. Анчах ăна кам тытса пырĕ-ха? Отделенире унашкал ҫын ҫук. Войцеховский малалла тĕпчет, ҫухăрашать. Кĕҫех паллă пулать: шофер чĕрех юлнă иккен. Ениковсем тыткăна илнисен аллисене хыҫалалла пăрса ҫыхса лартаççĕ. Акă, кабинăна шоферпа юнашар хастар тăлмачă йышăнать. Командир тăватă боеца кĕпер сыхлама хăварать те тепринпе кузов ҫине улăхать. Унта вун икĕ гитлеровец вăкăрла пăхса ларать. Нимĕҫсен «студебеккерне» курса

хамăрăннисем ăнсăртран пеме пултараççĕ. Çавăнпа та вĕсем ялта тупнă хĕрлĕ хăмачран ялав туса кабина çумне вырнаçтараççĕ.

Еников чаçе тĕлĕнтерсе те култарса çитсе кĕрет. «Подполковник юлташ! Задание тĕп-тĕрĕс пурнăçланă. Кĕпер çарсене каçма хатĕр. Машинăпа пĕрле вун икĕ «чĕлхе парнелетпĕр», – çĕре сиксе аннă-анман хăпартланса пĕлтерет вăл полк командирне. «Пурне те правительство награди илме тăрататпăр», – савăннипе мухтаса, çурăмĕнчен лăпкаса илет сержанта командир.

Тепĕр темиçе эрнерен арми командующийĕ пĕтĕм полк умĕнче Еников аслă сержант кăкăрĕ çине Ленин орденĕ çакса янă. Кунашкал хаклă наградăна кĕçĕн командирсенчен илме тивĕçлисем сахал пулнă. Упакасси паттăрĕ вара полка та, чăваш ятне те чапа кăларнă. Çав çулах ăна тата икĕ награда – Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе «Паттăрлăхшăн» медаль – панă.

Рота старшини Василий Еников 1947 çулта тин демобилизаци йĕркипе тăван ялне таврăннă. Ытла та вăрăма тăсăлнă унăн çар ĕçĕ. Çавăнтанпах ĕнтĕ вăл пуртă-сава алăран яман. Ĕмĕрхи платник çав хушăрах суха тума та, тырă акса ӳстерме те тăрăшсах хутшăннă. Çĕр ĕçĕнчен уйрăлман.

...Сĕтел хушшинчен тухрăмăр, кайма хатĕрленетпĕр. Василий Николаевич та кĕске кĕрĕкне тăхăнчĕ. Салтакри аслă ачи патне çырнă çырăва почтăна çитерсе ярасшăн. Амăшĕн хăйĕн ăшталанăвĕ, вăл Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекен хĕрне кĕтсе илме хатĕрленет. Кĕçĕнни Коля шкултан хашкаса персе çитрĕ.

– Турри мана телей пачĕ пулмалла, – терĕ Еников ассăн сывласа. – Сусăрлантăм пулин те – киле сывах

çитрĕм. Ыттисем вара... Фронта тухса кайнă арçынсенчен хамăр ялтанах çурри ытла пĕтрĕ.

Йывăрлăха çĕнтерсе телей тупнă паттăр салтак, ĕçчен хресчен килĕнчен тарăн шухăшлăн тухрăмăр.

Ĕç майĕпе манăн Пысăк Упакассинче кун хыççăн та сахал мар пулма тиврĕ. «Трудовик» колхоз ĕçченĕсемпе калаçнине, савăннине шутпа палăртма та май çук пуль. Элкер çăлтăрлĕ ялта тепĕр Çăлтăр çиçрĕ. Тĕрекленсе чапа тухнă хуçалăх пуçлăхне Антон Григорьевич Шордеева Социализмла Ĕç Геройĕн ятне пачĕç. Çемен Элкер менелникне 1999 çулхи çу уйăхĕнче пырсан Василий Николаевичпа чылайччен калаçрăмăр. Вăл пиншакĕ çине наградисене çаксах тухнăччĕ ентешĕн, чăваш халăх поэчĕн уявне. Салтак паттăрлăхĕн наградисем çумĕнче мирлĕ ĕçре çĕнсе илнĕ тата виçĕ медальччĕ. 2004 çулта Элкерĕн 110 çулне паллă турăмăр. Вăтам шкул çуртĕнче Çар Мухтавĕн музейне уçнă вăхăтра эпĕ ял çыннисене тепĕр хут пăхса çаврăнтăм, хамăн тахçанхи паллаканăма Еникова шырарăм. «Василий Николаевич çук-çке..» – теме ĕлкĕреймерĕм, мана Владимир Ильич Герасимов, хăй вăхăтĕнче колхозра Шордеевăн сылтăм алли пулнă маттур çын, хурлăхлă хыпар пĕлтерчĕ: «Нумаях пулмасть пытартăмăр ăна». Антон Григорьевич та çук пирĕн хушăра. Ячĕ çеç юлнă паттăрсен. С.В.Элкерпе Пысăк Упакассин мухтавлă ытти ывăл-хĕрĕн ырă ячĕ мăнаçлăн упранать музейре, халăх асĕнче пурăнать.

* * *

Хăйĕн «Кушлавăш уйĕнче» Семен Васильевич Элкер палăртнă тăрăх, пысăк упакассисемпе пĕчĕк упакассисем пĕрлешме те шут тытнă иккен. Анчах та, авалхи тĕн-тĕшмĕше пула, ĕçĕ патне çитнĕскерех чарăнса ларнă

тет. Пĕчĕк упакассисем вара, 1927 çултанпа Йĕпреç районĕн пĕр пайĕ пулса, хăйсем тĕллĕн аталанса кайнă. Çĕрĕ вĕсен начарах мар, халăхĕ ĕçчен. Колхоз тунă. Ăна хăйсен ĕлĕкхи помещикĕн Путиловăн этемле кăмăлне ытараймасăр-ши, «Путиловка» ят панă. Ку таранчченех çав ятпах пурăнаççĕ.

Паллах, совет халăхне, уйрăмах хресчене вилес патне çитернĕ аçтахаллă хăрушă вăхăтра та пĕчĕк упакассисем те чĕррĕн тăрса юлнă, пĕрлешӳллĕ хуçалăхне тытса пынă, майĕпен вăйлатнă та. Пысăк упакассисем вĕсен хӳрине тăрса юлнăччĕ. Георгий Семенович Ильин председатель вăй хунипе «Путиловка» Йĕпреç районĕнче малтисен ретĕнчеччĕ. Астăватăп, 1963 çулхи авăн уйăхĕнче, Вăрнар, Элĕк, Йĕпреç районĕсене пĕрлештерсе производство управленийĕ тунă вăхăтра, «Трудовик» колхозра пулнăччĕ, Çĕнĕ председатель Антон Григорьевич Шордеев вĕри çатма çине пăрахнă чĕрĕ пулă пек сиккелетчĕ. Юхăннă хуçалăх лекнĕ-çке ăна. Витисене тахçанах Йĕкĕс шывĕ хĕрне лартма йышăннă «Межколхозстрой» организацийĕ ĕçе вăраха янă. Утмăл килограма çитнĕ сыснасенех, район планне тултарассишĕн, самăртса çитеричченех суттараççĕ. Халăхĕ ярункана кайнă. Шордеевăн та ĕçе йĕркелеме Ильинсенчен нумай вĕренмелле пулчĕ. Каярахпа хăйĕн ĕçне йĕркелесе ячĕ. Георгий Семенович пурнăçран вăхăтсăр уйрăлчĕ те, хуçалăхĕ анаталла анма пуçларĕ. Шордеев мухтава кăларнă «Трудовик» те, вăл председательте ĕçлеме пăрахсан, малалла аталанаймарĕ. Çапла Йĕпреç енне юлнă Кушлавăш ялĕсен уйĕсене çумкурăк пусса илчĕ, халăхĕ тăрăшма пăрахрĕ, хуçалăхсем юхха кайрĕç. Халĕ вĕсене пултаруллă йĕркелӳçĕсем Антон Шордеевпа Георгий Семенович пекех çĕнĕрен уралантарассишĕн çĕнĕ тапхăрти хăватпа çине тăрса ĕçлеççĕ.

ЭЛКЕР ÇĔРШЫВĔ – ИЛЕМ ÇĔРШЫВĔ

Анатолий Петров,
Йĕпреç район администрацийĕн пуçлăхĕ

Анатолий Иванович Петров 1953 çулта Йĕпреç енчи Пучинке ялĕнче колхозник семйинче çуралнă чăваш. Ялти шкулта вĕреннĕ хыççăн Шупашкарти строительство техникумĕнчен строитель-техник специальностьне илсе тухнă хыççăн, Главкосибирскстройăн Искитим хулинчи «Отделстрой» тресчĕн 26-мĕш строительство управленийĕнче мастерта, Совет Çарĕнче службăра тăрсан, тăван ялĕнчи «Красный партизан» колхозра строитель-техник, строительство цехĕн началникĕ пулса ĕçленĕ.

Совет саманинче патша саманинчен пин хут ытларах тăрăшнă хресченшĕн. Çамрăксене ялта, çуралнă вырăнта тытса хăварассишĕн Мускав правителĕсем хытă тăрăшнă. Çавна май вăйлă колхозсем ятарлă строительство цехĕсем туса хунăччĕ. Строительство бригадисем те – колхозранах. Çамрăк колхозниксен хăйсен кăмăлĕ, килĕшĕвĕ çеç кирлĕччĕ. Сана ху сисмесĕрех вăйлă çурт лартса параççĕ. Çав юхăмра хăйсен колхозне, ялĕсене патшалăх пулăшăвĕпе пуянлатса хăварассишĕн ырминканми ĕçленĕ Гурий Андреевич Андреевăн хĕрӳлĕхĕпе, ял нушишĕн çунакан Анатолий Петров, хăйне председателе суйласан, канăçне çухатнă. 1992 çултан пуçласа, Йĕпреç район администрацийĕн пуçлăхне суйлинченех вăл «ялти партизансене» хресчен çарĕн авангардне кăларчĕ. Çав вăхăтрах хăй те пĕлĕвне хальхи вăхăт шайĕпе ӳстерсе пычĕ.

Гурий Андреевич Андреев, Республикăри хресченсен союзĕнче тăнă чухне, Чăваш Çăкăрĕшĕн мĕн чухлĕ çапăçман пуль ял хуçалăх аталанăвĕн çулĕ çинче чаркăç тытса тăракан бюрократсемпе-тăнсăрсемпе. Анатолий

Петров та, Патшалăх Канашăн иккĕмĕшĕпе виççĕмĕш суйлавĕсенче депутат пулнă май, хресчен пурнăçĕшĕн сахал мар чунне парса кĕрешнĕ. Çынна икĕ хутчен депутата ахальтен суйламаççĕ.

Хăй ертсе пыракан хуçалăха ĕнтĕ вăл, Анатолий Петров, республикăра малтисен ретĕнчех тытса пыма пултарчĕ – Гурий Андреевич умĕнче намăс курмарĕ.

Пучинкесем ăна юратаççĕ, Йĕпреçсем – хăйсен пуçлăхне суйлаççĕ. Ахальтен-и? Вăл – Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ строителĕ, Чăваш АССР Аслă Канаш президиумĕн, КПСС Тĕп Комитечĕн, СССР Министрсен канашĕн, ВЦСПСăн тата ВЛКСМ Тĕп комитечĕн Хисеп грамотисене, СССР халăх хуçалăх выставкин кĕмĕл медальне, Раççей Федерацийĕн ял хуçалăх министерствин тата ытти ведомствăсен хисеп хучĕсене илме тивĕçнĕ.

Анатолий Петровăн тĕп тĕллевĕ – Йĕпреç тăрăхĕнчи халăхăн пурнăçне вăйлатса, тăван тавралăхăн социаллă аталанăвне тĕнче культурин шайĕнчен кая мар тытса пырасси.

РЕСПУБЛИКА КУННЕ УЯВЛАМА ТИВĔÇРĔМĔР

Чăваш Республики Президенчĕн Н.В.Федоровăн «2008 çулта Республика кунне Йĕпреçре ирттересси çинчен» йышăннă указĕ пирĕншĕн пысăк ĕмĕте пурнăçа кĕртме май пачĕ. Çав тивĕçе çĕнсе илессишĕн конкурса эпир ытти çулсенче те хутшăннă-çке. Акă тинех пирĕн черет те

çитрĕ. Президентпа Правительство пирĕн района шаннине тата пирĕн çине пысăкран та пысăк яваплăх тиенине туйса, çав тери тăрăшма тиврĕ. Питĕ тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр уява. Çивĕч конкуренцире çĕнтерни ăнсăртран мар.

Республика Президенчĕ Николай Федоров хăйĕн Указĕнче пирĕн район социаллă пурнăçпа культура, инженери, транспорт инфраструктурине аталантарас, ялсенче строительствăпа хăтлăх пахалăхне çĕклес енĕпе пысăк кăтартусем тунине палăртнă. Çакна эпĕ вырăнти тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парасшăн.

Мухтанса каламастăп, республика ăмăртăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх район юлашки вăхăтра социаллă пурнăçпа экономика кăтартăвĕсемпе кашни кварталтах çӳлелле çĕкленни сисĕнет. Пирĕн тăрăхра предприятисем хупăнма чарăнни тата панкрута тухнисем вырăнне çĕннисем уçăлма пуçлани те ырă пулăм. Унченхи юсавпа техника предприятийĕ (РТП) вырăнĕнче халĕ «Йĕпреçри юсавпа техника» ООО уçăлнă. Çĕнĕ предприяти çулталăкра район бюджетне кăна 1,5 млн. тенкĕ аренда укçи хывать, кунсăр пуçне тĕрлĕ налуксене вăхăтра тӳлесе бюджетăн тупăш пайне пуянлатса пырать. Йĕпреçри кирпĕч завочĕ те çĕнĕрен сывлăш çавăрса ячĕ. Унăн çĕнĕ хуçи – «Волжский кирпич» ООО хĕрлĕ кирпĕч хĕртекен тоннель кăмакине ĕçе ячĕ. Унта 40 çын валли ĕç вырăнĕ хушăнчĕ.

Йĕпреçри «Реал-Бизнес-Лес» ООО – вăрман тирпейлекен промышленноçăн çĕнĕ предприятийĕ. Унăн малашлăхĕ пысăк. Çак предприяти кăларакан биотопливо (пеллетсем) экологи тĕлĕшĕнчен таса тата çунтармалли ытти топливăран йӳнĕрех, хĕрӳлĕхпе ахаль кăмрăкран ирттерет. Тепĕр усăллă енĕ – районта йывăç тирпей-

ленĕ хыççăн юлакан каяшсене туянни. Çĕнĕ биотопливăна ыйтакансем хушăнсах пыраççĕ. Пирĕн районти котельнăйсенчен хутса ăшăтмалли хурансем валли пысăк заказ парасшăн.

Районта çынсене йыхравлакан ĕç вырăнĕсем йышланчĕç, тĕрлĕ професси çыннисем – станочниксем, строительсем, тракторист-машинистсем, рабочисем – пурĕ 200 çын хутшăнчĕ. Районти вăтам ĕç укçи пĕлтĕрхи тапхăртинчен 34,5 процент таран ӳсрĕ. Уйрăмах строительсен шалăвĕ сисĕнмеллех хăпарчĕ.

Пирĕн тăрăхра строительство ĕçĕсем кăçалхи пек анлă сарăлни нихăçан та пулман. Чăваш Тимешри вăтам шкулăн çĕнĕ çуртне çичĕ уйăхран хута ятăмăр. Çак объекта уçнă чухне ЧР Президенчĕ Н.Федоров капмар та хăтлă пĕлӳ çуртне XXI ĕмĕрти тĕнче шайĕнчи шкулпа танлаштарчĕ.

Йĕпреç поселокĕнче пирĕн куç умĕнчех тепĕр пысăк объект – физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли комплекс çĕкленчĕ, ăна «Патвар» ят патăмăр. Сывлăх керменне тума 120 млн. тенкĕ уйăрнă. Çак комплексра район центрĕнче пурăнакансем кăна мар, ял çыннисем те хăйсен сывлăхне çирĕплетме пултараççĕ. Çак ырă пулăм чăннипех пурнăçа кĕтĕр тесе ятарлă график туса хутăмăр.

Çавăн пекех Хĕр шывĕнчен Йĕпреçе тата таврари ялсене таса шывпа тивĕçтерекен водовод пирки те каласа хăварасшăн. Вунă çул ытла каяллах тума пуçланă объект тăхăр вуннăмĕш çулсенче «сухалланнăччĕ». Ăна хута ярас тĕлĕшпе хĕрӳ ĕç пычĕ. «Водстроймонтаж» ООО шыв пăрăхĕсене 24 çухрăм тăршшĕ хывнă. Буинскран икĕ çухрăмра шыв хранилищине туса пăтернĕ, унта шыв тасатмалли сооружени çĕкленчĕ. Кĕскен каласан, групповой водовод – кăткăс объектсен комплексĕ, унта гидроузел, насус

станцийĕ, газификацип электротивĕçтерӳ тата çыхăну кĕреççĕ. Таса шыв Йĕпреçе тинех çитрĕ.

Малашне ял вилет тени чăнлăхпа килĕшсе тăмасть, пачах тепĕр майлă ӳкерчĕк куратпăр – ял-поселоксенче çулсеренех пурăнмалли çуртсем çĕкленеççĕ. Пирĕн район уйрăм çурт-йĕр тăвассипе республикăра лайăххисен шутĕнче. Федерацин «Пурăнмалли çурт-йĕр» программипе килĕшӳллĕн çамрăк семьесене хваттер е çурт туянма паракан субсиди сумми ӳссех пырать, вăл çак вăхăт тĕлне 2 млн. та 400 пине яхăн тенкĕпе танлашать. Сăмах май каласан, ялти çамрăк специалистсене тата семьесене çуртсем çавăрма федераци бюджетĕнчен 1570 пин тенкĕ уйăрса панă.

Ял аталаннине çирĕплетекен тепĕр Указ республикăра çул-йĕр тăвассине хăвăртлатассипе çыхăннă. Япала на ятран калар, 4-5 çул каялла Савкка, Алших, Çĕрпӳел, Анатриял, Чăваш Çармăс, Çиçĕмкасси, Орел, Красная Заря, Новая Жизнь, Костер, Спотара, Ленинкасси ял-поселоксенче пурăнакансем хăйсем патне автоçул çитесси пирки тĕлленме те пултарайман. Кăçал кăна районта халăх пурăнакан 13 пункта асфальт сарнă çулпа çыхăнтартăмăр. Кĕскен каласан, лайăх çул Йĕпреç Енри пур ял-поселока та çыхăнтарчĕ.

Лайăх çул, газ пулсан, ял пурăнать. Апла-тăк, ял хуçалăхĕнче те ырă улшăнусем пуласси пирки иккĕленӳ çук.

Агропромышленноç комплексĕ – пысăк та нумай енлĕ хуçалăх. Унăн çивĕч ыйтăвĕсем те сахал мар. Çирĕплетсе калатăп, паян йывăр лару-тăруран тухса пыратпăр. Ял хуçалăх продукцине туса илекенсем мĕнпур майсемпе усă курса машинăпа трактор паркне пуянлатса пыраççĕ. Районта паянхи кун тĕлне 13 млн. тенкĕлĕх техника (пурĕ 28 единица) туяннă. Хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕх йышĕ

чакса пырасси чарăнчĕ. Аш-какай тата сĕт туса илессипе кăçал лайăхрах ĕçленĕ. Ӳсĕм пĕлтĕрхипе танлаштарсан 12 тата 21 процентпа танлашать. Тĕш-тырă акса çитĕнтерме лаптăксене ӳстерсе пыратпăр. Кăçал, акă, кĕр тыррине пĕлтĕрхинчен пĕр пин гектар нумайрах акса хăвартăмăр. Ял хуçалăх таварĕсене туса илекенсене патшалăх пулăшать.

Ялсенче уйрăм хушма хуçалăх аталанса пынине те хамăр куçпа куратпăр. Йĕпреç тăрăхĕнче «АПК аталанăвĕ» наци проекчĕ çул хывсах пырать. Ял çыннисем хушма хуçалăха аталантарма илнĕ кредит калăпăшĕ 155 млн. 700 пин тенке çитрĕ. Ку – республикăра япăх мар кăтарту. Çак вăхăт тĕлне нацпроект пулăшăвĕпе 1 пин ытла çемье усă курнă. Уйрăмах Эйпеç, Энтриел, Пысăк Упакасси, Пучинкке ял тăрăхĕсенче пурăнакансем ырă тĕслĕх кăтартаççĕ.

Пирĕн районăн илĕртӳлĕх енĕпе те ырă енсем пур.

Йĕпреç тăрăхĕ чăннипех илĕртӳллĕ вырăн: çутçанталăк илемĕ, таса сывлăш, вăрман пуянлăхĕ, уçă тӳпе айĕнчи музей, Камай уйĕ т.ыт.те. Тĕслĕхрен, пирĕн республикăра ялти туризм тин çеç вăй илме пуçларĕ, Йĕпреç Ен ку енĕпе палăрма та ĕлкĕрчĕ. Кăçал çулла пирĕн патра ялти туризм ыйтăвĕпе Пĕтĕм Раççейри семинар-канашлу иртрĕ. Эпир тĕрлĕ регионсенчен килнĕ делегацисене Йĕпреç районĕнчи ялти туризм программипе паллаштартăмăр. Хăнасене Пучинке ял тăрăхĕнчи «Карăк кати» текен вырăн кăмăла кайрĕ. Ӳлĕмрен Йĕпреç районĕ те туристсен çул çӳревĕн маршручĕ пуласса шанса тăратпăр.

Çак пысăк уява чи çӳллĕ шайра ирттерес тесе нумай вăй-хал хума тиврĕ ĕнтĕ.

«Хуçа мĕнле пурăнни алăк урати урлă каçсанах курăнать», тенĕ чăвашсем. Йĕпреçсен республикăн тĕп уяв-

не килекен йышлă хăнасем умĕнче намăс курас мар тесе питĕ пысăк калăпăшлă ĕç туса ирттерме тиврĕ. Акă, Йĕпреç поселокĕн Энгельс тата Маресьев урамĕсем палламалла мар çĕнелсе улшăнчĕç: тĕп çулсене тата тротуарсене тĕпрен юсарăмăр, скверсене, кану вырăнĕсене çĕнĕ сăн кĕртрĕмĕр, суту-илӳ çурчĕсене, ытти учрежденисен çурчĕсене тата вĕсен территорийĕсене илемлетрĕмĕр. Паллах, кунта строительствăпа хăтлăх тĕп вырăнта пулчĕ, ку енĕпе район администрацийĕ çумĕнче туса хунă дизайн канашĕ пысăк пулăшу кӳчĕ.

Район центрĕнчи культурăпа кану паркĕ уяв мероприятийĕсен тĕп вырăнĕ пулса тăнă май, унта та çĕнетмелли чылай пулчĕ. Кĕскен каласан, пĕрлехи вăйпа социаллă пурнăçпа культура, инженери, транспорт инфратытăмне аталантарассипе нумай ĕç туса ирттертĕмĕр. Президент хăйĕн Указĕпе республика Правительствине Республика кунне ирттерекен районсене общество инфратытăмне аталантарма укçа-тенкĕ уйăрса пама хушнăччĕ. Пирĕн республикăра çакăн пек йăла пур: кам ĕçлет, талпăнать – çавна ытларах пулăшаççĕ. Эпир те хамăр енчен пуçарулăхпа тăрăшулăх кăтартрăмăр. Уяв тĕлне Йĕпреçри чукун çул станцийĕ тата ун таврашĕнче территори çĕнĕ сăнпа илĕртме пуçларĕ.

Çавăн пекех халăх пурăнакан пунктсене, автоçулăн айккисене тирпей-илем кĕртессипе ял тăрăхĕсен администрацийĕсем тата ял хуçалăх кооперативĕсемпе колхозсен правленийĕсем çине нихçанхинчен пысăк яваплăх тиенчĕ.

Çĕртме уйăхĕн 25-мĕшĕнче уяв халăхне Камай уйĕ йышăнчĕ. Кунта йăлана кĕнĕ «Камай уйĕн урхамахĕсем» турнира хресчен лашисемпе ăмăртма Раççейри ытти регионсенчен те килчĕç. Çавăн пекех çак илемлĕ вырăна

республикăри ял тăрăхĕсен командисен иккĕмĕш спартакиадине хутшăнакансем йышлăн пухăнчĕç. Çавăнпа та Пучинке ял тăрăхĕ тирпей-илем енĕпе чи çӳллĕ шайра пулчĕ.

Уявсенче çĕнĕ объектсене уçасси йăлана кĕнĕ. Эпир те ку енĕпе ĕçлерĕмĕр. Сăмахран, физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли комплексăн иккĕмĕш пайне – кермен умĕнчи лапама, фонтанпа аллейăна Республика уявĕнче савăнăçлă лару-тăрура уçрăмăр. Кунсăр пуçне комплекса çак вăхăт тĕлне Хĕр юхан шывĕнчен таса шыв килсе тăма пуçларĕ. Газозаправка станцийĕ, пурăнмалли çурт-йĕр, çĕнĕ çулсем тата ытти объектсем уçма палăртатпăр.

Элкер çĕршывĕ Йĕпреç Ен чаплансах, илемленсех пырать. Хăй вăхăтĕнче поселокран аякри хуласемпе облаçсене куçса кайнă ентешсем халĕ вăрман тăрăхĕнче капмар çуртсем лартаççĕ. Уçă сывлăшра пурăнма та, канма та мĕн тери аван. Йĕпреçре чиркӳ ĕçлет ĕнтĕ. Ирçе Çармăсри чиркӳ çуртне те çĕнететпĕр. Кушлавăш текен вун икĕ ялтан Пысăк Упакассипе Пĕчĕк Упакассине, Шĕпекечпе Шуркассине çĕнетсе вăйлатмалли план пурнăçа кĕрсе пырать.Чăваш халăх поэчĕн тăван вырăнĕ малашне пуян та культурăллă, хăнасем умĕнче мухтанмалли, хальхи саманари туртăмлă илем кĕтесĕ пултăрччĕ тесе çине тăратпăр вырăнти халăхпа пĕр шухăш тытса. Аллааллăн тытăнса пĕрле тăрăшсан – палăртнисем пурнăçланасса шанатпăр.

2009 çул.

ПУЛТАРУЛĂХ ÇĂЛКУÇĔ ИКСĔЛМИ ТАПАТЬ

Вячеслав Федоров,
Шупашкарти «ЙĔПРЕÇСЕМ» ентешлĕхĕн пуçлăхĕ

Кăлкан çăра çӳçлĕ, ăшă хĕлхем сапакан вичкĕн куçлă, тулли ырă кăмăллă сăн-питлĕ, тасан, уççăн калаçакан вăрвар тăлпан арçынна йĕпреçсен ентешлĕхĕн уявĕнче пуçласа курсан куçăм умне Йĕпреç районĕнчи Энтриелте пурăнакан Василий Васильевич Федоров йăкăшт тухса тăнăн туйăнчĕ. Каснă-лартнă çавă: «Гвардеец» колхоз председателĕ, Йĕпреç поссовечĕпе Энтриел ял советне ертсе пынă партипе совет органĕсен çивĕч активисчĕ, умăлмĕшситмĕлмĕш çулсенчи принциплă коммунист, активист. Анчах та... типтерлĕ тумланнă йăрăс пӳллĕ арçын ман алла çирĕппĕн чăмăртарĕ те: «Вячеслав Васильевич», – тесе пуçне пĕкрĕ. Эпĕ вара тинех ăнлантăм хам умăмра кам тăнине. Энтриелĕнчи Федоровăн ывăлĕ иккен.

Эпĕ Йĕпреçре ĕçленĕ вăхăтра вăл, паллах, аякра пулнă. Шкулта ĕçлекен Серафима Тимофеевнапа Василий Василеьвич хăйсем пекех малалла ăнтăлакан, пĕлӳшĕн çунакан ывăл пăхса ӳстернĕ.

Çамрăк чух пуçра ялан шырав. Вячеслав Федоров та хăйĕн пурнăç çулне шыранă, заводра токарьте те ĕçлесе пăхнă. Ун хыççăн Чăваш патшалăх университетĕнче «инженер-электромеханик» специальнăçне илнĕ, тĕрлĕ çĕрте инженер должнăçĕсенче хăйне ырăпа кăтартнă. Пултарулăхне кура ĕç картлашкипе çӳлерех те çӳлерех улăхса пынă. Акă вăл «Чувашагропромстрой» пĕрлешĕвĕн пĕр трестĕнчи тĕп инженер, строительство материалĕсен комбиначĕн директорĕ, «Чувашстром» пĕрлешĕвĕн тĕп инженерĕ, 1995 çултанпа – хăй йĕркеленĕ «Строма» уçă акционер обществин генеральнăй директорĕ.

Хальхи пурнăç ытларах та ытларах çаврăнăçуллăх, пĕлӳ ыйтать. В.В.Федоров Раççей Федерацийĕн Правительстви çумĕнчи Халăх хуçалăх академине вĕренсе пĕтерет, Германири Бад Гарцбург хулинчи Менеджмент институтĕнчен аслă категориллĕ менеджер квалификацине ăнăçлă вĕренсе илет. Хăй тĕллĕн вĕренме пăрахмасть.

1998 çулта пултарулла йĕркелӳçĕ-ертӳçе Шупашкарти йĕпреçсем хăйсен пуçĕнче тăма шанаççĕ. Çавăнтанпа ĕнтĕ вăл çулсерен ентешлĕх пухăвĕсене ирттерет, Йĕпреç район администрацийĕпе тачă çыхăну тытса ĕçлет. Хăй тавра хастар йĕпреçсене пухнă. Вĕсем Шупашкарта та, Йĕпреçре те тĕрлĕрен тематикăпа интереслĕ мероприятисем ирттереççĕ, мухтамалли ентешсене мухтаççĕ, пулăшу кирлисене пулăшаççĕ.

* * *

Пирĕн Йĕпреç районĕ ĕлĕк-авалтанах нумай нацийлĕ халăхсен пăттинче йăшаланнă. Вăрманпа пуян симĕс тавралăха такамăн пуясла алли те туртăннă. Кĕреш юмансемпе йăрăс пикесем пек хырсене касса кирлĕ çĕре питĕ нумай ăсатнă. Çирĕммĕш ĕмĕр тĕлнелле Рязань хули енчен пăравус хура тĕтĕм мăкăрлантарса, чуна çуракан сассипе таврана янратса, хашлата-хашлата çитет. Чукун çул станцийĕ тусан пирĕн тăрăха чăвашсем те, тутарсем те, мăкшăсем те, Мускавран юсанма ссылкăна янă темле ăслă çын та капланса килет. Пурнăçра хăйсен вырăнне шанчăклăн тупайман хула чухăнĕсем-бобыльсем те, патша вĕсене «хресчен» ятне панă хыççăн, Чăваш анлăшне те пурăнма куçаççĕ. Вырăс Тимеш ялĕ те çавнашкалах чăваш ялĕсен хушшине хĕсĕнсе юлать.

Çавăнпа Йĕпреç тăрăхĕ – Çемен Элкер поэт чапа

кăларнă нумай ял ушкăнĕ – хăйне евĕр нумай нациллĕ çынсен пĕчĕк патшалăхĕ пекех. Ку çыхăну, аталану, паллах, пире, чăвашсене те, пурнăç тытăмĕнче, ăслăлăх аталанăвĕнче усă памасăр пулма пултарайман. Çавăнпа эпир, чăвашсем, Йĕпреç тăрăхĕнче нихçан та нимĕнле «национализм» юррине ĕнĕрлемен, «совет халăхĕ» текен ятпа вăрçăра та çĕнтернĕ, хамăра хамăр та мăн эртелпе тăрантарса пурăннă.

Маншăн, нумай çĕрте пулса, нумай наци çыннисемпе хутшăнса пурăннă май, тĕнче цивилизацийĕн представителĕсем Йĕпреçре тымар яни, вĕсен ачисем Шупашкара çитсе хăйсен пултарулăхне тем енчен те кăтартни этемлĕхĕн вăйлă енĕ пек çеç шутланать.

Эпир – ытти районсенчи пек «таса чăвашсем» мар, эпир – интернационалистсем.

Пурпĕрех хамăрăн йăхташсене, чăваш ăсчахĕсене, халăх хушшинче культурăна çĕнетсе, вăйлатса пыракансене, наука ĕçченĕсене, çар çыннисене, пурнăçра тĕнче культурине сарма тăрăшакансене мухтас килет. Йышлăн вĕсем.

Пысăк Упакассинче çуралса ӳснĕ Семен Васильевич Васильев-Эльгер Сăр вăрманне чăвашла сасăпа янраттарса янă. Çав сасă халĕ, аякка-аякка сарăлса, тĕнче уçлăхне çитиех вĕçсе, эхо пек каялла Чăваш çĕрĕ çине килсе çапăнать, пирĕн, литературăна юратакансен чĕринче, çĕнĕ хĕлхем йăлкăштарать. Çавна эпĕ хамăрăн ентешĕмĕр 115 çул тултарнине К.В.Иванов музейĕнче ирттерес умĕн чăннипех туйса илтĕм. Çав вăй мана Шупашкарти паллă выpăна кайма хистерĕ. Хама сăмах парсан, самаях пăлхантăм. Ман умра вĕт литературăпа искусство ĕçченĕсем, хаклă хăнасем чăр-чăр пăхса лараççĕ. Манăн вара çакна палăртас килчĕ.

Патша саманинчи чухăнлăхра, вун тăххăрмĕш ĕмĕрте кун çути курнă Семен Васильевич Эльгер, çирĕммĕш ĕмĕрте ĕçлесе пурăннă, эпир вара çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте те унăн ăс-тăнĕ, халăх хушшинче туса хăварма ĕлкĕрнĕ пултарулăхĕ çинчен хăпартланса калаçатпăр, унăн хăватлăхĕнчен тĕлĕнме пăрахмастпăр. Мĕншĕн тесессĕн вăл – вилĕмсĕр, ялан пирĕн хушăра. Хальхи вăхăтра та вăл – кĕрешӳçĕ, халăха малалла чĕнекен çĕмрен. Çавăнпа та уйрăмах çамрăксен унăн кивелмен хайлавĕсене вуламалла, вĕсенчен кашнин хăйне евĕр шухăшлав тумалла, пурнăçра Элкер пек паттăр пулма тăрăшмалла. Элкер пире чăваш нацийĕн малашлăхĕшĕн кĕрешмелли, çĕнтермелли çинчен хăйĕн пурнăç туйипе тĕллесе кăтартать.

Семен Васильч пек талантлă çынсем Йĕпреç тăрăхĕнче сахал мар пулнă, халĕ те пур вĕсем. Эпир вĕсемпе мухтанатпăр.

Вячеслав Федоров республикăри паллă мероприятисенче яланах пулать. Вăл, общество ĕçне активлă хутшăнаканскер, нимле пысăк канашлу-тĕл пулу хĕрĕвĕнчен те аякра тăрса юлмасть. Ăна, республика калăпăшĕнчи паллă çынна, унашкал тĕл пулусене яланах чĕнеççĕ, паллă çынсем унпа ĕçлĕн калаçаççĕ.

2007 çулта, ноябрĕн 3-мĕшĕнче, Шупашкарта Чăваш наци конгресĕ пухăнчĕ. Делегат пулса В.В.Федоров та пулчĕ унта. Конгресс ĕçлеме пуçличчен те, ларусен тăхтавĕсенче те Чăваш патшалăх драма театрĕн керменĕнче питĕ хаваслăн нумай çывăх çынна хăйĕн ăшри иксĕлми куллипе савăнтарса çӳрерĕ. Çавăн чухне Геннадий Верблюдов фото ăстин куçĕ тĕлне те пулнă иккен вăл. Акă (сылтăмран сулахаялла), Вячеслав Васильевич Владимир Кузьминпа тата Йĕпреç ачипе Николай Жирнов çыравçăпа хитрен калаçать.

КУШЛАВĂШ УЙĔ ВĂРНАР ЕННЕ КАÇСАН

1927 çул...Çĕршыв питĕ йывăррăн ура çине тăрать. Çĕнĕрен çĕнĕ улшăнусем кивĕ йăла-йĕркене Мускав аттипе таптаççĕ. Уессемпе вулăссен чиккисем арканса район текен администраци картине кĕреççĕ. Кольцовкăсемпе зеленовкăсем, ершипуçсемпе кӳстӳмĕрсем, кушлавăшсемпе хураçырмасем, Кив Мӳрĕшпе (Мĕлĕшпе) Çĕн Мӳрĕш (Мĕлĕш), çĕнĕ картана кĕнĕскерсем, хăйсен тĕп кантурне Вăрнара пуç çапма тытăнаççĕ.

СССРти коллективизаци хумĕ килсе çапать те... ирĕклĕн те, ирĕксĕррĕн те хресченсем, пĕр хушă ялсен общинисенче пурăнса-тертленсе курнăскерсем, кашни ялта уйрăм пĕрлешӳсем тума пуçлаççĕ. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем – колхозсем – Кушлавăш уйĕн пысăк пайĕнче те шăтса тухаççĕ: 1930 çулта – Ершипуçĕнче «Трудовик» (163 кил, 712 çын, 625 га çĕр), Пармантейпе Утикассинче – Крупская ячĕпе тăр. (88 кил, 568 çын, 408 га çĕр), Кушлавăшра – Дзержинский яч. т. (54 кил, 225 çын, 220 га çĕр),

Кӳстӳмёрте – «Красная Звезда» (105 кил, 425 çын, 500 га çёр), Хураçырмара – «Ландыш» (87 кил, 418 çын, 442 га çёр), Кивё Мёлёшре – Ворошилов яч.т. (108 кил, 409 çын, 495 га çёр), Çёнё Мёлёшре – Молотов яч.т. (64 кил, 251 çын, 408 га çёр), Кольцовкăра – Сталин яч.т. (194 кил, 861 çын, 1060 га çёр), Зеленовкăра – Ленин яч.т. (106 кил, 610 çын, 637 га çёр).

Аллăмёш çулсенче вак колхозсене пёрлештереççё. Ершипуçёнче (Ершепуçёнче) Утикасси, Кӳстӳмёр, Хураçырма, Кушлавăш ялёсенчен «Родина» колхоз чăмăртанать. Хăй тёллён ку хуçалăх уралансах çитеймерё. Вăрнарти зооветтехникум çумне пёрлештерсен те асăннă ялсен утти пурнăç хăвăртлăхёпе тан пыраймасть-ха. Мёлёшсем те пёрлешсе мăн ял хуçалăхё туса пăхрёç. Хăйăрлă начар çёр хура тăпраллă çёре çитеймест çав. Концентраципе специализаци хăватлăн аталаннă тапхăрта мёлёшсем республикăри «Свинопром» пёрлешёвён сысна самăртакан «Вурнарский» совхоз тытăмёнче кăштах ырă курса юлчёç. Совет Союзё арканчё те, совет хуçалăхёсем (совхозсем) те пурнăç шывёпе юхса кайрёç. Раççей çёршывёнче мёлёшсем «Цивиль» хуçалăх турёç, 2000 çулта «Сявал» ял хуçалăх производство кооперативё ятпа ёçлеме пуçларёç, тепёр икё çултанпа вара вёсен – «Агро-Инвест» ял хуçалăх кооперативё. Улшăну вёсене нимех те памарё, икё ялта ёçлекен 54 çын юлчё, вёсем гектартан 16 центнер тёштырă, 160 центнер çёр улми туса илеççё, 100 ёнерен çулталăкра 1700шер килограмм сёт сăваççё. Совет влаçё вăхăтёнче вёсем кашни ёнерен 4 пин килограмм енне сёт сунă. Вакланнă, арпашăннă хуçалăхсем уйрăм çынсен аллинче хăçан вăй илесси те паллă мар-ха.

Кушлавăш уйёнчи вырăссем кӳршисенчен ытларах

ӑнтарчӗç. Н.М.Храмкин ертсе пынипе зеленовкӑсем-алманчӑксем – чапа тухрӗç. Председательне 1936 çулта Вӑрнар районӗнче пӗрремӗш çынна Ленин орденӗпе наградӑларӗç. 1950 çулта кольцовкӑсемпе пӗрлешсен, Алманчӑкӑн мухтавӗ мӑн колхоз кӑрманӗнче тамалчӗ. Зеленовка çыннисем аякка тухса кайма пуçларӗç, П.В.Амачкин подпоручик тӑрӑшнипе никӗсленӗ ял куç умӗнчех çӗр çинчен çухалчӗ. Пӗр карчӑк кӑна пурӑнать халӗ унта.

Кольцовкӑн шӑпи урӑхларах пулса тухрӗ. Турӑ кульцавсене чӑннипех телей панӑ. 1908 çулта çуралнӑ, шкулта ултӑ класс кӑна кӗтернӗ чӑн-чӑн хресчен чунлӑ, çирӗп кӑмӑллӑ, хӑй хыççӑн халӑха тӗрӗс çулпа ертсе пыма пултаракан çӗр паттӑрӗ Сергей Ксенофонтович Коротков ӗлӗк-авалхи чухӑнсен-бобыльсен, таркӑн хресченсен йышлӑ йӑхне çӗр çинчи чӑн-чӑн этемсен ретне кӗртме пулӑшрӗ. Вӑрнар райхаçатӗнче ӗçленӗ чухне манӑн унпа темиçе хутчен те пӗрле ларса калаçма тӳр килнӗччӗ. Унӑн турӑ пани пурри яланах сисӗнетчӗ. Чӗрӗк ӗмӗр хуçалӑх пуçӗнче тӑрса вӑл кольцовкӑсемпе зеленовкӑсене çӗршыв шайӗнче чаплантарчӗ. Пысӑк çитӗнӳсемшӗн 1948-50 çулсенче 13 ӗç паттӑрне Социализмла Ӗç Геройӗ ятне панӑ. Соцӗç геройӗсенчен бригадирта, ферма заведующийӗнче, колхоз председателӗнче ӗçленӗ А.Ф.Доманинӑн, А.Д,Ашанин бригадирӑн кӑкӑрӗ çинче, Социализмла Ӗç Геройӗн ылтӑн çӑлтӑрӗпе юнашар 5-шер Ленин орденӗ, Коротковпа В.Д.Ашанин Ӗç геройӗсен – 4-шар Ленин орденӗ йӑлкӑшатчӗç, икӗ ялти 104 ӗçчен орден-медаль илнӗ.

2004 çултанпа хуçалӑх С.К.Коротков ячӗпе хисепленет. Хуçалӑхӑн çӗр çителӗклӗ – 1887 га. 30 центнер ытла тӗштырӑ туса илеççӗ кашни гектартан, çӗр улми – 300 центнера яхӑн. Ӗне выльӑх, сысна усраççӗ. Вӗсем тупӑш параççӗ.

Сергей Ксенофонтович Коротков

Икĕ пая пайланнă Кушлавăш çĕрĕ Вăрнар енче ытларах тухăçлă. Чăвашсемпе вырăссем кунта вуншар çул туслă пурăнаççĕ. Йĕпреç ен кушлавăшсем те хăй вăхăтĕнче мухтава тивĕçнĕччĕ, Элкер çуралнă вырăнтах – «Трудовик» колхозра – Социализмла Ĕç Геройĕ ятне илнĕ пĕр çын, Ленин орденне тивĕçни – пиллĕк.

Кушлавăш уйĕ, хăйĕн авалхи йăли-йĕркине манмасăр, тĕрлĕ çĕртен пухăннă халăхĕпе, Чăваш çĕршывне малалла аталантарать.

Кольцов помещик пысăк хуласенчен пухса килнĕ вырăс бобылĕнчен – чухăн çынсен йăхташĕсенчен чăваш çĕрĕнче çĕршывĕпе, тĕнчипе паллă çынсем çуралса ӳснĕ. Хăшĕсем вĕсенчен чăн-чăн ĕçчен хресчен, ăста йĕркелӳçĕ-ертӳçĕ пулса хăйсене те, Чăваш çĕршывне те, Раççее те, тĕнчене те тĕлĕнтернĕ. Сергей Ксенофонтович Коротков, хресчен чунлă хастар, Кольцовкăна тата унăн çыннисене мухтава кăларнă. Хăйне икĕ хутчен Социализмла Ĕç Геройĕ ятне панă. Ялĕнче бронзăран палăк лартнă.

ВЫРĂССЕН ЧИ ТАВА ТИВĔÇЛĔ БАСĔ

Унран маларах Кольцовка Максим Дормидонтович Михайлов ячĕпе шавласа кайнă.

СССР халăх артисчĕ Максим Дормидонтович Михайлов 1893 çулхи çурла уйăхĕнче Кульцавра çуралнă. Максимкăн ашшĕпе амăшĕ çамрăкла вилнĕ. Вăл кĕçĕнни

пулнă. Михала аслашшĕ пилĕк мăнуклă тăрса юлнă. Ачалăхĕ Максимкăн ялтах иртнĕ. Вăл аслашшĕнех хывнă: юман кĕреш пек, тăлпан, чурăс кăмăллă, тимлĕ, çине тăракан, янăравлă саслă. Юнашар ялта Кушлавăшра вĕреннĕ чухне чиркӳ хорĕнче юрланă. Пуп патне хăнана килнĕ пиччĕшне, юрă ăстине тата вĕрентекене, çак ача юрлани уйрăмах килĕшнĕ. К.Н.Поливанов вара ăна Лаишево уесĕнчи Бетьки текен яла илсе каять, икĕ класлă шкула вырнаçтарать. Ачан сасă майĕпен ӳссе çирĕпленет, баса çитет. Çак ăслă Константин Николаевич Максимкăна тĕрĕс çул çине тухма пулăшать. Вун çиччĕри йĕкĕт çывăхри Хусана çитет. Пристаньре япала йăтса тăранать. Спас мăнастирĕн хорне вырнаçать, çав хушăрах пасторсен (протестант пупĕсен) курсне хăй тĕллĕн вĕренме çӳрет.

Хусанти музыка училищинче Ф.А.Ошустович профессор-вокалистпа паллашни уншăн тепĕр пысăк утăм пулнă. Вăл унран нумай вĕреннĕ.

Пасторсен курсĕ хыççăн Максим Михайловăн тĕнчиркӳ енĕпе чылай вăхăт Уфара, Омскра, Хусанта, Мускавра тияккăнра (пачăшкăна пулăшаканĕ), аслă тияккăнра ĕçлеме тивет. Унăн уçăмлă та янравлă хулăн сассине итлеме халăх чиркĕве шăнăçайми пухăннă.

Чиркӳпе çыхăнман юрăç пуласси ăна Мускавра пурăнма тытăнсан канăç памасть. Паллă юрăçсемпе паллашни, вĕсенчен вĕренни, А.М.Горькийпе тата А.В.Луначарскийпе тĕл пулни, вĕсен канашне итлени паллă баса радиовещани студине илсе çитерет. Унта вăл нумай юрлать. Вăйлă сасса пĕтĕм çĕршыв итлет.

Кĕçех уншăн Пысăк театр алăкĕ те яриех уçăлать. Унта вăл 1932 çултан пуçласа 1956 çулччен пĕтĕмпе 25 операра юрлать. Халăх умĕнче вăл юлашки хут 1957 çулта

юрланă. Максим Дормидонтович вăйлă юрăçсемпе пĕрле ĕçленĕ, ăна Ф.И.Шаляпин вырăссен чи тава тивĕçлĕ басĕ тесе ырланă. М.И.Глинкăн «Иван Сусанин» оперинчи Иван Сусанин партине чи тĕлĕнмелле юрланă юрăçсен Федор Иванович Шаляпинпа Максим Дормидонтович Михайловăн сăн ӳкерчĕкĕсем Воронеж облаçĕнчи Сусанино ял музейĕнче юнашар вырнаçнă.

Çуралнă тăван çĕршыва мухтавлă артист нихçан та манман, килсех çӳренĕ. Мускавра та хваттерĕнчен ентешĕсем татăлман. Республикăна килсен Кульцавра, Шупашкарта концертсем панă. Юрий Илюхин музыковед аса илнĕ тăрăх, 1956 çулта М.Д.Михайлов Чăвашрадио хорĕнче А.Г.Казакова тава тивĕçлĕ артисткăпа вырăс юррисене юрланине никам та манас çук. Мускав филармонийĕн концертмейстерĕнче чăваш композиторĕн С.М.Максимовăн хĕрĕ Галина Степановна ĕçленĕ. Çивчĕ чунлă аккомпаниаторпа вăл нумай çĕрте юрланă. Репертуарĕнче унăн Гаврил Федоровран çырса илнĕ чăваш юррисем те пулнă. Вĕсенчен пĕрне мухтавлă юрăç Кремльти Пысăк керменти йышăнура шăрантарнă.

Чăваш Республикин президенчĕ Николай Федоров тата Раççей Федерацийĕн культура министрĕ Михаил Швыдкой СССР халăх артисчĕ М.Д. Михайлов ячĕллĕ Тĕнчери XI опера фестивальне Шупашкарта 2001 çулта уçнă чух.

Ывăлĕ те, мăнукĕ те çемье йĕрĕпех кайнă. Игорь Максимович Пысăк Театрта 27 çул юрланă. Максим Игоревич малтан аслашшĕпе ашшĕн театрĕнче оркестрта ĕçленĕ, каярахпа конкурсра çĕнтер-

се, солиста куçнă. Шупашкарта час-часах пулать, операпа балет театрĕнче ăсталăхне кăтартать.

Аслă юрăçа халалласа Шупашкарта операпа балет искусствин пĕтĕм тĕнчери фестивалĕсем пулаççĕ. Михайлов уявне Раççейри, АПШри, Франциpи, Турциpи тата ытти çĕршывсенчи чаплă театрсенчен пултаруллă артистсем ăмăртма килеççĕ. Максим Дормидонтович мăнукĕ кашнинчех мухтава тивĕçет.

Кушлавăш уйĕнче 12 ялтан пĕринче, Вăрнар районĕнчи Кольцовкăра, мухтав çăл куçĕ иксĕлми тапать.

Аслашшĕн фестиваль-уявне килсен, 2005 çулта, Максим Игоревич Михайлов Шупашкарти опера театрĕнче «Евгений Онегин» операри тĕп роле тĕлĕнмелле ăстан кăтартнăччĕ. Фестиваль артисчĕсемпе пĕрле Кульцавра вăйлă концерт панă çĕре хутшăнчĕ.

* * *

СССР халăх артисчĕ М.Д.Михайлов, Кушлавăш уйĕнче çуралнă мухтавлă вырăс, вăрнарсене-ентешĕсене хăй пекех лира-муза ăстисем пулма, хăйĕн чапне малалла аталантарма халалласа хăварнăн, Кушлавăш-Вăрнар çĕрĕ тулăх илем çĕрĕ пулса тăчĕ. СССР халăх артистки

Н.В.Павлова, Раççей халăх артисчĕ Ю.В.Васильев, чăваш халăх артисчĕсем А.Н.Кутузова, М.М.Михайлов, В.В.Смирнова, Л.И.Семенова, М.Д.Туринге, Раççей тава тивĕçлĕ артистки М.И.Еланова, Раççей тава тивĕçлĕ художникĕ В.П.Петров-Праски Витти, чăваш халăх писателĕ А.В.Емельянов... Илемпе мухтав хунавĕ çуллен чечекленет.

ХУСАНКАЙСЕМ ЭЛКЕРĔН ĂС-ХАКĂЛĔ ПИРКИ

П. Григорьев-Савушкин художник ӳкернĕ.

Петĕр Хусанкай (Петр Петрович Казанков) 1907 çулхи кăрлачра Тутар АССРĕнче, Элкел районĕнчи Сиктĕрме ялĕнче, çуралнă.

1923 çулта икĕ сыпăклă шкултан вĕренсе тухнă, Хусанти чăваш педтехникумĕнче, Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Вăрçă хыççăн А.М.Горький ячĕпе хисепленекен Литература институчĕ çумĕнчи Литература аслă курсĕнчен вĕренсе тухнă.

Çамрăк чухне «Сунтал» журнал секретарĕнче, «Коммунар» хаçат корреспондентĕнче, литература консультантĕнче, тăлмачра ĕçленĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче ахаль салтак, командир пулса çапăçнă, йывăр аманнă.

Чăваш АССРĕн, РСФСРăн аслă канашĕсен депутачĕ пулнă. Чăваш писателĕсен организацийĕн правленине ертсе пынă, 1934 çултанпа – СССР писателĕсен Союзĕн членĕ, 1950 çултанпа – чăваш халăх поэчĕ. Константин Иванов премийĕн лауреачĕ. Унăн ятне 1967 çулта Чăваш

1950 çулхи ноябрь уйăхĕ. Мускавра Чăваш литературипе искусствин эрни иртнĕ кунсем. Ӳкерчĕкре (сулахайран сыл тăмалла): Я.Г.Ухсай, А.Т.Твардовский, С.В.Элкер, П.П.Хусанкай.

АССРĕн Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп кĕнеки çине çырса хунă.

Поэт литература ĕçне вун çиччĕрех тытăннă. «Çирĕм улттă», «Магнитту», «Çĕр йĕркелӳ» поэмăсемпе анлă çул çине тухнă. Каярахпа «Таня», «Аптраман тавраш» поэмăсем», «Тури Вылта туй сикет», «Çуллахи талăк», «Эп сăмах хăватне ĕненетĕп», «Тăван çĕршыв» поэмăсем, «Тилли юррисем» тата ытти произведенисем поэт чапне çĕкленççĕ.

Хусанкай пĕр харăсах икĕ чĕлхепе, чăвашла та, вырăсла та ăста çыракан поэт тата куçаруçă-маçтăрĕ пулнă. Çеçпĕл Мишшин поэзи ярăмне вырăсла куçарни мĕне тăрать!

Вăл чăваш халăх поэчĕпе Семен Васильевич Элкерпе çывăх пулнă, унăн пултарулăхне ĕненнĕ, халăх хушшине сарма тăрăшнă.

Петр Петровича эпĕ пуçласа писательсен Атăл леш енчи «Кувшинка» кану çуртĕнче курнăччĕ. Вăл ун чухне

Болгари Халăх Республикинчен тин кăна таврăннăччĕ те, чăваш писателĕсене хăйĕн аякри тăван çыравçăсен пурнăçĕ, пултарулăхĕ пирки питĕ тăнлăн, асра юлмалла каласа паратчĕ. Эпир те, çамрăк çыравçăсем, унăн кашни сăмахне хăлха тăратсах итлеттĕмĕр. Аташса кайма пуçланă хăш-пĕр писательсене вăлтса тăн панисене тăнланă май эпĕ хамăн кун кĕнекине çырса хунине тупса вуларăм: «Атăлăн лăпкă шывĕнче ишсе киленни сывлăхшăн лайăх, анчах Атăлăн «хаяр шывĕнче» ишсе тăнран кайни сывлăхшăн сиенлĕ».

Кашни ир вăл уçă сывлăшпа киленетчĕ, çурт умĕнчех гимнастика тăватчĕ, кранри уçă шывпа кăкăр таран çăвăнатчĕ. Сывлăхне сыхлатчĕ. Çемен Элкер канмалли çурт умĕнче чечек йăранĕсене шăваратчĕ.

Хусанкайпа Элкер çамрăксем хушшинче пулни, вĕсене юратни, пулăшма тăрăшни асра юлнă.

Уйăп Мишши, С.Элкер, К.Турхан, А.Талвир, П.Хусанкай тата Болгари писателĕ Г.Караславов.

Петĕр ХУСАНКАЙ

ÇЫВĂХ ТУСНЕ ХАЛАЛЛАНИСЕМ

Ç.Элкере

Йĕс таканлă тимĕр кăвак ут
Такăнминччĕ çурма çул юртсассăн.
Ялкăшинччĕ чунăм тепĕр хут,
Сивĕнминччĕ сăвăра пĕр саншăн.

Ах, пĕлетĕп: халь сана кичем,
Мана хытă ӳпкелетĕн пулĕ.
Эп чĕнмерĕм... Каçарах, пиччем!
Çырупа çеç мар-çке кăмăл тулĕ.

Юрататăн эс тăван уя,
Атăла чунна памашкăн хатĕр.
Пуклак пуçлă тупăлха туя
Час-часах сана ертсе тухать-тĕр.

Эс çӳретĕн пулĕ пĕр-пĕччен, –
Тăнăçра ӳсет çав пысăк шухăш.
Каçпала, пĕр авăк тĕттĕмччен,
Пур юмах та, пурăнăç та хутăш.

Вак ĕшнеллĕ лăпкă вăрмана
Эс кĕретĕн уйăх хăпарсассăн.
Вăрман урлă алă пар мана, –
Уçăрах янратăр манăн сассăм!

1927

ÇИРĔМ УЛТТĂ

Елкере

Çирĕм улттăн вĕсем,
Çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă çулпуç
Сахал мар.
Вĕсен йачĕ пуриншĕн те ылттăн,
Çирĕм улттăн вĕсем,
Çирĕм ултă чăн-чăн комунар.

Авăн уйăхĕн çирĕммĕш кунĕ,
Тамăкри пек вунсаккăрмĕш çул.
Кам пытарĕ пайан,
Кам тунĕ?
Авăн уйăхĕн çирĕммĕш кунĕ
Çирĕм ултă маттур –
Пулчĕç çук.

Каçпи тинĕс чăнах та йĕрет-çке,
Каçпала ес итлеха,
Сăна:
Шаумен.
Аçиспек...
Чшаппаритçе...*
Каçпи тинĕс чăнах та йĕретçке –
Çирĕм ултă йата асăнать...

* 26 комиссартан чи паллисем. Шаумене унти пролетариат «Капкас Ленинĕ» тесе хисепленĕ.

«Çирĕм улттă» поэмăна эпĕ вăтăр çул ытла ĕлĕкрех çырсаттăм. 1926 çулхи кĕркуннерен пуçласа 1927 çулхи çуллаччен манăн пĕрремĕш хут Чăваш çĕршывĕнчен инçенелле тухса çӳремелле пулчĕ. Эпĕ Вăтам Ази тăрăх пайтах хутларăм. Юлашкинчен Ашхабадран Красноводска, унтан Каспи тинĕс урлă Баку хулине çитрĕм. Çирĕм улттă Баку комиссарĕн трагедиллĕ шăпи çинчен шухăшланă майăн эпĕ çав материалсемпе интереслентĕм. Астăватăп – çав сăлтавпах «Бакинский рабочий» ятлă хаçатăн редакцине те кĕрсе тухсаттăм. Унччен вырăс поэзийĕнче çав темăпа çырнă сăвăсенчен Есенинăн «Çирĕм улттă çинчен хунă балладине» вуласаттăм. Вăл ман асра юлнăччĕ. (Маяковскипе Асеевăн çав темăпа çырнă сăввисене эпĕ хам çырнă хыççăн тин вулама ĕлкĕртĕм). Çав романтикăлларах баллада, çирĕм улттă комиссара вĕлернĕ вырăна хам куçпа хам курни, Каспи тинĕсĕн хăйне майлă сăн-сăпачĕпе хум шавне хам курсаилтсе туйни, Якулов художникăн çав темăпа çырнă картини, 1918 çулхи пичетре тухнă тĕрлĕ документсене вулани – çакă пурте мана ун чухне хам ăнланнă пек революциллĕ-интернационаллă шухăшпа пысăкрах япала çырса пăхма хистерĕ. Вара 1927 çулхи çулла, Бакуран Сталинград урлă Атăлпа Шупашкара таврăнсан, С.В.Эльгер хваттерĕнче (ун чух вăл хальхи К.Иванов урамĕнче пурăнатчĕ), виçĕ ир хушши садра ĕçлесе, çак «Çирĕм улттă» поэмăна çырса пĕтертĕм. Вăл вăхăтри чăваш критики ăна сăнаса чылай пысăк хак панине астăватăп. Сăмахран, Г.Кели статйине асăнма пулать. Унтан вара поэма нумай сăвă пуххине, шкул кĕнекисене кĕчĕ. Кăçал вăл пуçласа вырăсла тухрĕ.

Хамшăн пулсан, çав поэма, идеи енĕпе кăна мар, чăваш поэзинчи çĕнĕ шкул – Çеçпĕл шкулĕ – çирĕплен-

се пынине тепĕр тĕслĕхпе кăтартса панă пирки те хаклă пек туйăнать. Ун чухнехи критика та ăна çаплах хаклanăччĕ.

Бакури çирĕм ултă комиссара пирĕн революци тăшманĕсем персе вĕлерни 40 çул тултарнă кун Чăваш радио станцийĕ радио итлекенсене манăн çав чи малтанхи поэмăна тепĕр хут итлеттерме кăмăл тунăшăн радиора ĕçлекенсене тав тăватăп.

19. XI. 58.

ЭЛКЕРЕ – ВĂРÇĂ ХИРĔНЧЕН

Нумай-и пурнăçăм, сахал-и, –
Пăхассăм çук калла-малла.
Сана тытма эп тивĕç алă,
Салтак пиччеçĕм, салтакла.
Пĕрре килет этемшĕн аллă,
Пуртех çитеймĕпĕр алла.

Вут-çиллĕ, кĕллĕ-хĕмлĕ тапхăр!
Ăша çунтармăш самана!
Кам юнлă чӳклеве юраттăр?
Сана вăл тунсăх е мана?
Анчах вутран ӳсет çĕн паттăр
Чармашкăн юхакан юна.

Сĕм пĕлĕт витĕр тавра курăм
Уяррăн çĕкленет умра.
Ăна эп халь мухтаймăп юррăн,
Ман юррăм – м а л а л л а! у р р а!
Ăна çĕклет ман пилĕк-çурăм
Çывăхартать ман ал-ура.

Курап, курап çĕршывăн аслă,
Тулли, паха кĕрекине.
Куратăп халăхăн пуласлăх
Ытарайми кĕнекине.
Шанатăп ăшшăн та хаваслăн
Куçран пăхса пуплессине.

Эп çирĕм çул сана пĕлетĕп,
Ачаранпах сан умăнта.
Хальччен пулса хаяр çиле те
Вĕртмерĕмĕр хушшăмăрта.
Салтакăн флягине çĕклетĕп
Пĕччен халь саншăн эп кунта.

Тавсси, поэт! Пуçламăш пусăм
Ман çеç те мар сан çĕр çинче.
Паян сан уявна эп, тусăм,
Чыслатăп вăрçă хирĕнче,
Анчах, ăçта пулсан та пуçăм,
Ман чунăм Атăл хĕрринче.

Десна та Сож, Нева та Днепр...
Мĕнле шыв урлă эп каçман!
Кашни хума вăрçса илетпĕр,
Илемлĕ пур тăван çыран.
Çапах та Атăл шайлă тепĕр
Шыв-шур курман эп ку таран.

Тахçан, сĕм авалах ят панă
Чăваш хăй чĕлхипе ăна.
Унта çуралнă-çке, тăванăм,
Вилес килет унта кăна.

Унта эп юрата пуçланă
Асран кайми Российăна.

Салтакчĕ эп. Историк куçĕ
Ялхахланатчĕ тĕтĕмпе.
Куça çеç мар, чуна та йӳçĕ
Пулатчĕ, тен, вăхăчĕпе.
Анчах пĕр шухăш – хамрăн ку çĕр! –
Тени çиçетчĕ çиçĕм пек.

Курап, курап çĕршывăн аслă,
Тулли, паха кĕрекине.
Куратăп халăхăн пуласлăх
Ытарайми кĕнекине.
Итле, тăван йăх, паттăр саслă
Ывăлусен кĕввисене!

1944. Польша.

ХАЛĂХ СĂВĂÇИН УЯВНЕ

Висла шывĕ тăрăх аслати кĕрлерĕ,
Илтĕнми вăл турĕ тупă сассине.
Туй пĕкки пек хӳхĕм асамат кĕперĕ
Карăнчĕ шыв урлă, каçрĕ леш енне.

Çĕнтерӳллĕ халăх тепĕр пысăк утăм
Ярса пуснă евĕр куртăм эп çавна.
Çавăн чух эс аллă тултарсаттăн, тусăм,
Савăнса асилтĕм инçетре сана.

Кĕрекем çумрахчĕ: флягăна çĕклерĕм,
Сыпрăм, çăкăр çыртрăм, турăм эп тупа.

Анăҫа васкарăм, тăшмана йĕрлерĕм
Ҫухрăм шутне маннă йывăр атăпа.

Хамăр ҫутă ҫулшăн, ирĕклĕ ҫĕршывшăн
Сывлăш ҫавăрмасăр утрăм малалла.
Ĕмĕрлĕх пĕрлешнĕ тăванла кил-йышшăн
Аллăмран ямарăм тĕрĕс пăшала.

Сарлака Россия, ылтăн Украина,
Хĕм хĕвеллĕ Грузи пулчĕҫ асăмра...
Казахпа туркменăн, латышпа литвинăн –
Пур йăхсен ҫилли те ҫунчĕ ăшăмра.

Тӳсĕмлĕ, илемлĕ, чул касан чĕлхешĕн
Чунăм пулчĕ хурҫă, шухăшăм – кăвар;
Аслă Ивановшăн, Ҫеҫпĕлшĕн, Элкершĕн –
Хамăрăн мухтавшăн ҫапăҫрăм хаяр.

Таврăнтăмăр акă. Ырă кĕрекемĕр
Ян янрать пурне те хаваслантарса.
Килейменнисемшĕн хурланса илетпĕр
Сан тавра, пиччемĕр, салтакла тăрса.

Сан паха ятушăн, сан таса чĕрӳшĕн,
Халăх халал(л)анă хисепӳшĕн те,
Асапа ҫĕнтернĕ ҫамрăк ĕмĕрӳшĕн,
Ватăлми хастарлĕ тимлĕхӳшĕн те –

Тайăл сана пуҫăм, тайăл сана пуҫăм!
Ҫĕр ҫулччен курасчĕ пĕлĕтпе ҫĕре.
Курăнми пулсассăн... сывă пултăр, тусăм,
Пархатарлă шухăш ĕмĕр-ĕмĕре!

Сывă пултăр пирĕн сассăмăра илтнĕ,
Ĕмĕте ăнланнă çитĕнес тăван!
Вăл пурне пĕлсессĕн эпĕ, пурнăç çитнĕн,
Кулянмасăр, лăпкăн кайăп çакăнтан.

Вăл чуна çутаттăр, ăс-пуçа пуйтартăр,
Чĕрене çĕклетĕр, ăшăттăр юна,
Кайăк пек юрлатăр, аслати пек çаптăр –
Çавăн пек поэтшăн эп хыпса çунап.

Ĕненеп, шанатăп: вăл çуралĕ, килĕ,
Час ăна ӳстерĕ аслă самана.
Халăх чун хавалĕ, унăн ырă пилĕ
Çулăмлă, çунатлă тутăрччĕ ăна.

Эй, эп тунсăхланă, ĕмĕтре паллană
Ăмăрткайăк куçлă халăх юрăçи!
Тайăл сана пуçăм, пил сана, тăванăм,
Пирĕн уява эс ĕмĕр урлă çит.

Шыв-шурсем хумханччăр, сĕм вăрман кашлатăр,
Чыс тăватпăр пурте хамăр Элкере.
Çĕнĕ йăх шавлатăр, шухăш шухăшлатăр,
Вĕçсĕр пултарулăх пытăр тĕнчере!

1954

УШКĂН ÇĂЛТĂРĂН АСЛИ

С.В.Элкерĕн 70 çулне

Элкер е Ĕлкер – пĕр ушкăн çăлтăрăн чăвашла ячĕ. Урăхла ăна Ала çăлтăр теççĕ. Сăмахăн тĕпĕ-тымарне ку чухнехи чăваш сăмахĕсен кĕнекисем пĕри те ăнлантарса параймаççĕ-ха... сахал-и ун пекки чĕлхемĕрте? Халăхăмăр – хура çĕр ĕçченĕ çеç мар – тĕнче тĕпчевçи те, сăвăçă та, çăлтăрçă та хăех пулнă.

Элкер... Пайтах çăлтăр çутăлчĕ ун тавра. Çутти те, чухраххи те, тĕксĕмми те курăнĕ, тинкерсе пăхсан. Пĕрпĕр питĕ çӳлти çăлтăр сӳнсен ун çути кунта çитиччен темиçе çĕр çул та, пин çул та иртет, теççĕ вĕреннĕ çынсем. Хăй çук ĕнтĕ, çути çаплах çул тытать, ярăнать пулать тĕнче уçлăхĕнче. Ăçта çитĕ пирĕн хамăра кура хыпăннă сăмах çути? Кирек ăçта çитсен те, малтан вутхĕм тивертсе чунăмăра çурта пек çутнă вĕри чĕреллĕ сăвăçăмăрсенчен пĕри вăл – çак халăх сăвăçи. Маншăн çапла. Ытти тантăш-тусăм та, кĕçĕнреххи те тунаймĕ çакна.

Элкер... Ăру ваттине тахçан авал ял çинче хунă ят-и ку, несĕл пуçласа яракан пархатарлă ар-ама ĕрчетнĕ çăлтăр карти пек йыш-и, тавраш хушамачĕ-и? Ăçтан пĕлес! Пĕлсен хăй пĕлет-тĕр. Маншăн пулсан, çĕнĕ саманари кун-çулта чăваш ĕçне хутшăннă йышăн чăвашла хушамачĕсем яланах халăхăмăр сапаланса çухалса пĕтес çĕртен тепĕр хут чĕрĕлсе çĕкленсе кайнине пĕлтеретчĕç. Элкер, Элле, Элмен, Элтиван; Лашман, Патман, Юман; Алентей, Аксентей, Савантей; Пайраш, Тукташ, Янкас, Чĕкеç, Курак, Шăпчăк; Ырсем, Этюкка, Тани Юн... Çаксанашкал ятсем хăйсем тĕллĕнех юррăн илтĕнетчĕç мана; чĕлхе илемне, сăмах ăшшине туйтаратчĕç, малашлăха

П. Хусанкайпа С.Элкер. 1954 çул.

ĕнентеретчĕç. Тен, пăртак Дон Кихот та пулнă пулĕ эпир. Пултăрах. Ӳкĕнместĕп.

Элкер... Хĕрĕх çул ытла хĕрсе вулатăп ăна. Аллă çул асапланать вăл, шурă ана çине хура вăрлăх акса. Хăвăрт та иртет-çке вăхăчĕ! Асапĕсĕр хавасĕ çук, хавасĕ çĕнĕ

асап çуратать. Çапла татти-сыпписĕр, куç шарса кайичченех, çăпатана кутăн сыричченех...

Хĕрĕх çул патнеллех куратăп, итлетĕп ăна. Акă вăл хальхи Çеçпĕл урамĕпе туяланса анать. Ун чухне вăл Канаш урамĕччĕ. Унта пĕртен пĕр хаçат, тин çеç пулас чĕлхе тимĕрçисен пуканĕ çине çапса лартнă «Сунтал» тата лаççине сарса яма ĕлкĕреймен «Капкăн» вырнаçнăччĕ. Анать Çемен пичче... Çаврака, пысăк куçĕ чăнкă çамки айĕнчен, çын çине пăхман пек, таçта инçетелле тинкернĕ. «Хĕн-хур» айĕнче тĕвĕленнĕ вăхăт. Анчах вăл курать, курать... Йăл кулса çутăлса илет унăн шухăшлă пичĕ-куçĕ.

Акă вăл инвалидсен ушкăнĕ тытакан апат килĕ пеккинче. Буфет пуçлăхĕччĕ пулас. Çын çукрах хушăра «Капкăн» вуласа ларать.

– Кунта пĕри, темле «Çиппăтти» тесе алă пусса, сăвăсем кăларкала пуçларĕ. Хăш сăвви – самаях. Славни çыркалать. Кам вăл çав, пĕлместĕн-и?

– Çук, пĕлместĕп...

Ăçтан калайăн-ха? Намăс пек. Часрах çăпатана салтса сăран атă тăхăнас ĕмĕтпе пурăнаттăм та, тем те çырнă пулĕ çав...

Элкер... Акă вăл 1925 çулхи чăваш уявĕнче. Автономин пилĕк çулĕ. Облăçран республикă туса хунă çул. Хальхи вырăс театрĕ ун чухне – хĕллехи чăваш театрĕ. (Атăл хĕрринче, хальхи «Çулла» кафе патнерех, çуллахи те пурччĕ). Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн чаплă ларăвĕнче Тинехпи Петĕр Михалкки халăхăмăр ăçтан хунаса кайни çинчен лекци вуласа пачĕ. Кайран (е тепĕр каç-ши?) концерт пулчĕ. Элкер сасси асăмра ĕнер илтнĕ пекех янăрать-ха:

Чăваш ĕç çынни!

Чăнах та вара эс сахал чăтрăн-и?..

Сăвăçă ятарласа çав кун валли çырнă «Паян» ятлă сăввине пĕтĕм чунĕпе çĕкленсе вуларĕ. Хавхаланса тейĕччĕç хальхи хаçат хыпарçисем. Ун чухне çав сăмах тĕнсех каймастчĕ-ха.

Çавăнта илтсе юлнă йĕркесем мана хамăр халăх кунçулĕн этаплă тапхăрĕсем çинчен шухăшланă вăхăтра яланах аса килетчĕç.

Паян эс историн мăн çулĕ çинче
Умна та, хыçна та пăхса тĕлĕнен...

Çĕнĕ виçеллĕ сăвăпа, тĕрĕс сăмах майлашăвĕпе çырса кăтарт-ха çав пысăк шухăша çапла кĕскен!

Элкер... Мускавра тухса тăнă «Ĕçлекенсен сасси» ятлă журналта курсаттăм эпĕ чи малтан çак хушамата. 1923 çулта пулчĕ пулас ку. Поэтăн «Икĕ тĕнче» ятлă сăвви мана пысăк шухăша янăччĕ. Халĕ тухса тăракан томĕсенче курмарăм-ха эпĕ ăна. Тем çитмен пекех туйăнчĕ. Хуçин хăйĕн кăмăлĕ, хăйĕн ирĕкĕ.

Ас тумастăп ĕнтĕ: те Хусантах, те Шупашкара куçсан тин пуçласа вуларăм эпĕ «Хурçă карап» сăвва. Анчах Атăл çыранĕпе çак йĕркесене касса татса утăмлани – хальхи пекех асра:

Кăвак тинĕсре шавлакан хумсем урлă
Шăвать пĕр карап тăп çыран еннелле.
Вăл ишнĕ шыв çулĕ пит тертлĕ, хĕн-хурлă,
Нумай вăл кĕрешрĕ умри хĕнпеле...

Тискер çил кашлатăр, сив тинĕс шавлатăр,
Нимрен те шикленмĕ çак хурçă карап!
Манми капитанĕн çулне çухатмасăр,
Çитес çĕре çитĕ вăл – пулмĕ асап!

Ленин вилни çулталăк тулнă тĕле çырнă ăна сăвăçăмăр. Ман шутпа, хамăр поэзи историйĕнче çак 28 йĕркеллĕ сăвă – чи хăватлă, чи тарăн шухăшлă, чи ăста калăпланă сăвăсенчен пĕри. Кисренми çӳллĕ палăк пек çĕкленет вăл малашлăх тӳпинелле. Вăл – нумай ĕмĕр хушши пиçĕхсе таса хурçăн янăра пуçланă тӳсĕмлĕ чăваш сăмахĕнчен Ленина лартнă хăйне евĕрлĕ пĕр палăк. Хăйĕн поэтикă çĕнĕлĕхĕпе вăл Çеçпĕл теорине чăнлать. Тинкеререх пăхсан, Çеçпĕл шкулĕнче Элкерĕн çӳллĕ маччаллă, пысăк та çутă хăйĕн класĕ пурри палăрать. Çеçпĕлĕн «Хурçă шанчăкĕпе» Элкерĕн «Хурçă карапĕ», маншăн пулсан, пĕр вĕркĕчпе вĕрĕнсе, пĕр вучахра шăраннă чăннипех тимĕр татмалли сăмах хĕçĕсем. Çеçпĕлĕн амфибрахийĕ кĕскерех йĕркеллĕ, пĕрпĕрин çумне тачăраххăн хĕсĕнсе, пĕр-пĕрин «чавсине сиссе» утăмлакан салтаксем пек, Элкерĕн амфибрахийĕ, – темине кура, – сарлака, мăнаçлă, аславлă, тейĕттĕм эпĕ.

Элкер... Чăваш хушаматлă чăваш сăвăçи. халăх ывăлĕ. Патша Раççейĕн нушаллă салтакĕ. Вăрçăпа революци çулăмĕ витĕр тухса, тĕнчене урăхлатма килнĕ аслă партийĕн ретне тăрса çивĕчленнĕ хастар кĕрешӳçĕ, гражданин, патриот. Хăйне çутçанталăк кăтартнă халăхшăн тăрăшасси, ун ятне çĕклесси çамрăкранпах канăç паман ăна. 1917 çултан пуçласа юлашки çулсене çитичченех унăн сăвви-калавĕсенче, романĕ-юмахĕсенче хăйшĕн чи кăмăллă, чи юратнă пĕр кĕвĕ илтĕнет. Эпĕ кунта хăшпĕр сăввисене çеç илсе кăтартасшăн. Акă 1918 çулхи виçĕ сăвăри виçĕ çавра.

Чăваш çынни, паттăрлан,
Ху ĕмĕрне ан çывăр!

Вĕренӳпе маттурлан, –
Тĕттĕмлĕх вăл пит йывăр!..

Çĕр чĕлхеллĕ халăх та
Çут тĕнчере тан пултăр.
Вĕсен пуçне никам та
«Пĕттĕр!» тесе ан пустăр...

Чыс та тав, мухтав сана
Çак таранччен чăтнăшăн, –
Халăхлăхна, ху ятна
Çухатмасăр тытнăшăн.

Аван каланă. Халăхлăх – çĕнĕ сăмах. Тăванлăх, çынлăх пекех, чĕлхе йĕркине пăхăнса тунă вырăнлă, кирлĕ ăнлав.

1926 çулта çырнă «Тахçан, ачаран» сăввинче поэт «тăван халăх ячĕ ӳснине курасчĕ» тет.

Миллион чĕлхишĕн вунă çын ĕçлесен те,
Ăна вилми чун кĕрессе шанап...

Хальхи тӳперен пăхсан, тĕлĕнтереймĕç çак шухăшсем. Чăваш ывăл-хĕрĕ çĕршерĕн те пиншерĕн туртăнать тăван сăмахлă Шупашкаралла. Сăвăçсем, тĕпчевçĕсем, кĕнекеçĕсем – хамăрăн. Тĕрлĕ енлĕ тăван культурăмăра вĕренсе-тĕпчесе, çĕршер кандидат та вуншар доктор тухрĕ. Анчах ун чухнехи «Сайра маяксен» саманинче çыра-тăран çынсем пăт-пат çеç курăнкаланă çав. 1923 çулта халăхăмăр çинчен поэт çапла çырнă:

Нумай ĕмĕрти пусмăрпа мăшкăлта
Сăвви-юррине те вăл ян янратман;
Çапах та асаплă хура кун-çулта
Этем тивĕçне хăй нихçан çухатман!

Чăваш ячĕ, унăн этем тивĕçĕ космос тӳпине çити çĕкленнинче Элкерĕн ырми-канми тăрăшăвĕ те пур. Халăхăн пархатарлă хура тарĕ ун сăввисенче ĕнчĕ пек ялтăрать.

Элкер... Чăваш çĕршывĕн сăн-сăпатне, халăх кăмăлне, унăн, хăй каларăшле, «ĕмĕтлĕ ялĕсене» ытла та лайăх чухлать-çке вăл!

Çанталăк сана пит савсах та тăмасть, –
Çемçе нӳрĕ çилĕ тăтăш лăпкамасть.

Часах – типĕ, сивĕ; хуплать пăрпа юр?
Санра çавăнпа кăшт кичемлĕх те пур.

Çавах та эс маншăн пит хаклă, паха, –
Эсех-çке илмерĕн хавшак сывлăха.

Хĕлле хир-уй тăрăх сив çил шăхăрни,
Çулла типĕ шăрăх хĕртсе çунтарни,

Кичемлĕх кӳрсен те, ĕçчен чăваша
Нихçан та ямасть вăл салху шухăша.

Е акă халăхранах илнĕ танлаштарусене мĕнле майлаштарса, мĕнле кĕвĕлесе, çĕнĕ виçепе çырнă «Чăваш хĕрĕсем».

Хĕрелнĕ çырла пек илемлĕ хĕрсем
Нумай пирĕн лăпкă, ĕçчен ялсенче;
Вĕсен хура куçлă сăпай сăнĕсем
Вĕри хĕм чĕртеççĕ яш çын чĕринче.

Хăва хуллисем пек яштак пĕвĕсем
Савсах пăхтараççĕ маттур каччăна;

Шăнкăр шыв юххи пек янрав сассисем
Уçса çемçетеççĕ чи чăрсăр чуна.

Илемлĕ романс тумалли сăвăсем те çук мар поэтăн.

Сăмахран, «Сакăлта çыр хĕрринче» сăвви. Ĕлĕкрех вăл «Хăрнă чечек» ятпа тухнине ас тăватăп.

Çуралнă çĕршывпа халăх çинчен, тăван чĕлхепе ун пуласлăхĕ çинчен шухăшласах поэт хамăр культурăн çыннисене те пайтах ăшă кăмăллă сăвă халалланă. Вĕсен хушшинче Н.И.Ашмарин, К.Иванов, В.П.Воробьев, Çеçпĕл, Талмăрса тата ытти ятсем те пур. Тахçантанпах вăл Н.В.Никольский профессорпа та çыру çӳрететчĕ. халь пурăнакан сăвăç-терĕш те унран çыру илменни пит сайра пулĕ. Эрне, хăш чух тĕрлĕ пули-пулмипе те чăрмантараттăмăр-и, тен. Яш чух çын хăйне сахалтан та Çĕр кăвапи пек шутлать. Йывăра илместчĕ-ши асли? Кăмăлĕ çапла ĕнтĕ: çыннăн ăнăçлă ĕçĕпе савăнма, шанчăклăрах çамрăксене ура çине тăратма, пичетлĕ ĕçĕн йывăрлăхне ăнлантарса пама хăнăхнă вăл – асăрхануллă ăста, хистемесĕрех вĕрентме пултаракан сăмах тимĕрçи.

Элкер... Çемен пичче! Санăн темиçе туюна ас тăватăп. Тĕрли лекрĕ аллуна: самшит тыткалли те, пăхăр пуçли те, шăмă авăрли те... Хам та эп сана касса-эрешлесе тунă йытă пуçлă пĕр туя парнеленĕччĕ пулас. Куну-çулу, сарăмлă-сарăмсăр çĕре кĕнĕ хамăрăн ытти тăвансемпе танлаштарсан, ӳпкелемеллех пулмарĕ. Тата та вăрăм пултăр ĕмĕрӳ! Тую кивелсех тăтăр, хуçăлни хуçăлтăр, çийĕнни çийĕнтĕр. Аллу сывă пултăр та куçу куртăр. Чухлавлă ăсу-халу тĕрĕстĕкел уйлатăр. Ху каларăшле, «тăрăш пурăнма çӳç шуричченех». Санăн çӳçӳ кăвакарман та-ха. Аçу-аннӳ сиплĕ юн пилленĕ-мĕн, çăра юн, таса юн! Вăй патăрах!

Самана аслă шывĕн шăнк варрипе ишрĕ сан киммӳ. Халĕ

Çвмен Элкер çвмйипе 1938 çулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнчв.

те ишет-ха. Унта тем те пулать: çил-тăвăл та, хушка хум та, шуçи хурах та (виръялла каласан)... Анчах «эпĕ – Чакка-çке!» теттĕн эсĕ çавăн пек пăтăрмахлă кунсенче. Мана çавă савăнтаратчĕ. Халь те савăнтарать. Аса илӳ çырас кăмăлăм çукрахчĕ: иксĕмĕр те чĕрĕ-ха. Тантăшусем сайралса пыраççĕ. Ман ӳсĕмрисем те пит йышлах мар ĕнтĕ. Кам пĕлет: санăн тепĕр уявна, тен, эпĕ çитеймĕп... Сăлтавăм урăхла та пулма пултарать: çул çӳреме юрататăп. Курса-илтсе ĕлкĕресчĕ, тетĕп, çын ĕмĕрĕ вăрăм мар, тĕнчемĕр аслă. Мĕн курни-илтни пирĕн пеккисен нихăçан та сая каймасть. Епле пулсан та, куçа-куçăн сас

параймасан, халăх пур. Вăл пирĕн питĕ пурнăçлă-çке! Унăн кун-çулĕ вĕçĕмсĕр. Çĕнĕрен çĕнĕ вĕри чĕресем, çунатлă кăмăлсем çуралĕç. Çавăнпа сăмахăм юлтăр, тетĕп. Инçетри çăлтăр çути пек, тен, çитĕ вăл çав çĕнĕ ăрури чăваш ывăлĕ-хĕрĕ патне. Унта хăйсен ушкăн çăлтăрĕ пулĕ. Пире ун ячĕ паллă мар. Эпир ăна пĕлеймесĕрех кайăпăр. Анчах пирĕн саманари чăваш сăвăçисен çăлтăр ушкăнне пĕрлештерсе, çутă парса тăраканни – халăх йышăннă пĕр çăлтăр. Вăл– Элкер.

Тайма пуç сана, тусăм. Тавсси!

1964

ЭЛКЕРЕ

Çуллен сайраланса пыратпăр
Асаплă ватă салтаксем.
Сурансенчен те хăтăлатпăр –
Салтах, сестра, пит ан тĕксем...

...Чăваш çăлтăрĕсем яп-ялтăр,
Шултраланаççĕ кĕрхилле:
Ав Кĕвенте, Ала, ав Алтăр...
Çӳлте те пурнăç çĕртилле!

Эс ху та çăлтăр хушаматлă,
Пĕр ярăм çăлтăрччĕ: Элкер!
Каятăн... Çут тĕнче – самантлăх,
Çĕртен шăтса çĕрех кĕрер.

Элчел çитсе куçна хуптарчĕ.
Тусу та, тăшману та çук.

Хăшне, тен, алă та çуптарчĕ,
Ун пеккисем те пур ку чух...

Эс канăçсăрччĕ, кансĕрлеттĕн.
Мĕн кирлĕ пулнă? – Хушăн мар:
Эс халăх кăмăлне пĕлеттĕн,
Чăвашшăн сапрăн шĕл кăвар.

Çав шĕл кăвар – чăваш сăмахĕ,
Чечен чĕлхе – чăваш чĕлхи.
Вăл упрансассăн – хам хамах эп,
Упранмасан – эп çын мĕлки...

Чăваш çĕршывĕнче пурнатпăр
Чăваш чĕлхишĕн çапăçса.
Кам чĕлхене таптать – çав паттăр...
Епле чăтас çак намăса?

Ыйткалакан пек кĕленетпĕр:
«Тархасшăн, **Çăкăр** сăмаха
Лавкка çине çырсамăр, – тетпĕр. –
Тăван шкула ан хупăр-ха...»

Эс çакăншăн та сас параттăн
Ниçта кайса кĕме çукран.
Кĕç «националист» пулаттăн,
«Çӳлте» ыйту тăратчĕ сан.

Камсем вара, ман пит пĕлесчĕ,
«Интернационалистсем»,
Кам хушнипе ирĕксĕрлеççĕ
Чăваш ачисене вĕсем?

«Атте, анне» тесе ачашшăн
Пуплен хальхи Сенттисенне
Ма çăварне хупса лартасшăн
Шкула пырса кĕрсессĕнех?!

Çапла-ши Ленин хушнă, калăр!
Çапла-ши сĕннĕ Мускавран?
Чăваш ĕçне тăвар-ха хамăр
Пур танлă халăхпа пĕр тан.

Патшалăх – хамăрăн. Патшалăх!
Пур Конституци – Тĕп Саккун.
Апла пулсассăн пур тĕп халăх,
Çĕршыв тытма чĕлхи пур ун.

Республика! Чăваш çĕршывĕ!
Уес-кĕпĕрне мар текех.
Вăл аслă тĕнчене çул хывĕ
Ракетăллă карап пекех.

Чăваш чĕлхин сăвап-хисепĕ
Пин хут та ӳсĕ хальхинчен.
Чăваш ятпах кĕресшĕн эпĕ
Коммунăн аслă хапхинчен!

...Элкер, Элкер... Чăваш мухтавĕ!
Эс юлашки могикан мар.
Тăпру çинче пур халăх тавĕ
Палăкупа халь юнашар.

Йĕри-тавра (эпир кĕтетпĕр!)
Çĕкленĕç çĕнĕ ăстасем.

Çĕр пин сăмахлă вут чĕлхемĕр
Çиçтерĕ вĕçĕмсĕр хĕлхем.

Çакна шанми пулсан, кăвак пăр
Пулса пăрлантăр ман чĕре!
Яшсем! Сире шанса каятпăр,
Çитерĕр ĕмĕтĕмĕре!

1968

* * *

Атнер Петрович Хузангай 1948 çулта Шупашкар хулинче çуралнă. Питĕр патшалăх университечĕн хĕвел тухăç факультетне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн СССР Наука Академийĕн Хĕвелтухăç пĕлĕвĕн институтĕнче аспирантурăра вĕреннĕ. Чĕлхе, поэзи, ӳнер тĕпчевçи, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн чĕлхе пĕлĕвĕн пайĕн ертӳçи.

Чăваш халăх поэчĕн Петр Петрович Хусанкайăн тата СССР халăх артисткин Вера Кузьминична Кузьминан ывăлĕ тăван килĕнче тата ăслăлăхпа сăмахлăх ăстисен хушшинче чăвашлăх туйăмне аталантарса пынă.

Ашшĕн «Аптраман тавраш» сăвăлла романĕнче ывăлне халаллани пур:

Атнер! Ик аллăма хурам-ха
Сан ик хул пуççийӳ çине.
Хура куçусенче курам-ха
Ачалăхăм таврăннине...

Пехил сана, пĕртен-пĕр ывăл,
Ăру малашлăхĕ, пехил!
Пуянлăхăм – Тăван çĕршывăм,
Атте-аннен чечен чĕлхи.

Çавна эп сан валли упрасшăн
Ăша çунтартăм кунран-кун.
Выля, ачам! Тӳленĕ саншăн:
Тӳленĕ, тар, куççулĕ, юн.

Атя, Атнер! Çулу сан такăр.
Йĕри-тавра пăхса тинкер:
Тĕпче, шыра, самант та ан тăр,
Çитмен ĕмĕтĕме çитер...

Алексей Талвир, Петĕр Хусанкай тата унăн ывăлĕ Атнер Семен Элкер патĕнче хăнара (1952 çулхи июль уйăхĕ).

Ашшĕ-амăшĕн пехилне асра тытса, Атнер Петрович чăваш чĕлхишĕн, чăваш культуришĕн, чăваш халăхĕн малашлăхĕшĕн вăй-халне шеллемесĕр çӳлелле хăпарса пычĕ, иртнĕ ĕмĕрĕн сакăр вуннăмĕшпе тăхăр вуннăмĕш çулĕсен чиккинче чăвашĕн культура пурнăçĕнче мала тухса палăрма пултарчĕ, кивелнĕ, йăшса пыракан малашсăрлăх обществинче хăйĕн уçă сассине пачĕ, çĕнĕ общество пурнăçĕнче хăйĕн усăллă вырăнне тупрĕ. Акă вăл СССР писателĕсен союзăн членĕ, университет преподавателĕ, доцент. Халăх ăнлавĕ çивĕчленнĕ вăхăтра пултарулла, курăмлă интеллигента халăх республикăн Аслă Канашне депутата суйлать. Унта ăна Культура, чĕлхе аталанăвĕ тата нацисен хутшăнăвĕсен комиссине ертсе пыма шанаççĕ. Мĕн пур хавалĕпе ăнтăлса, халăха ырă тăвассишĕн çунса вăл 1991, 1993 çулсенче Чăваш Республикин президенчĕн суйлавĕсене хутшăнать, нумай сасă пухать. Политикăн чее те хаяр вăййинче, укçа миххисен хушшинче çамрăк демократа аяла туса хăварчĕç.

Кĕрешӳре Хусанкай пурпĕрех хăйĕн вĕри чун-хавалĕпе çĕнтерӳçех пулса юлчĕ, татах та çирĕпленчĕ, хастарланчĕ. Ун хыççăн та хуравлă ĕç нумай пулчĕ уншăн. Чăваш наци конгресне ертсе пычĕ. Пĕрлешӳллĕ Нацисен Организацине (ООНа) кĕмен халăхсен конгресĕсенче чăваш халăхĕн-нацийĕн аталану малашлăхĕн интересĕсене çирĕппĕн хӳтĕлерĕ. Чĕлхепе общество çыхăнăвĕсене ăнăçлă тĕпчекен ученăя тинтерех йĕркеленнĕ Раççейри тюркологсен комитечĕ çичĕ çынран тăракан комитетне кĕртнĕ. Ăслăлăх ĕçĕсемпе нумай çĕршывра палăрса ят илнĕ Тухăç тĕпчевçине Атнер Хусанкая эпĕ чăваш çĕрĕнчен тухнă паллă ентешĕмĕр Никита Яковлевич Бичуринсен вилĕмсĕр ретĕнче куратăп. Чăвашра унашкал çынсем нумай мар.

«Тăван Атăл» журнал кăларнă çулсенче, астăватăп, редакци коллегийĕн йышне Атнер Петрович уçăмлăх сывлăшĕпе кĕрсе кайрĕ, унта тăрăшса ĕçлекен сумлă писательсемпе Лаврентий Таллеровпа, Анатолий Емельяновпа, Василий Алагерпа, Николай Дедушкинпа, Александр Артемьевпа тата ыттисемпе те хăйне мăнна хумасăр, пуçа каçăртмасăр, ăнлануллă, юлташла туйăмпа журналшăн, чăваш литературишĕн вăхăтне шеллемесĕр тăрăшрĕ.

Культурăллă çемьерен шăтса ӳснĕ ачаран культурăллă çынах пулать çав. Атнер Хусанкай та ашшĕ-амăшĕн ятне çĕртмест, чăваш нацийĕн паллă та курăмлă ертӳçисенчен пĕрийĕ. Купăста анинче те пуçĕсем пĕр пек мар та, этем анинче те – çавнашкалах.

Акă мĕн шухăшлать вăл ашшĕ хисепленĕ чăваш халăх поэчĕ Семен Васильевич Эльгер пирки.

ВИÇÇĔМĔШ «ÇĂЛТĂР»

Эпĕ Шупашкарти 4-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕреннĕ. Аттен килте кĕнеке нумайччĕ. Вĕсене эпĕ чăвашлисене те, вырăслисене те пуçа çĕклемесĕрех вулаттăм. Çапла чăваш халăх поэчĕн Çемен Элкерĕн «Хĕнхур айĕнче» поэми те ман куç тĕлне иртерехех пулчĕ. Теодор Драйзер, Борис Пастернак, Геннадий Лисин–Айхи тĕлĕнмелле тыткăнлатчĕç.

Ăслăлăхпа сăмахлăх ăстисене хам куçпа курни, вĕсен интереслĕ, тавлашуллă калаçăвĕсене хăлхана чикни сăнарлăх шухăш-ĕмĕтне вăратса çунатлантарса ячĕ пулмалла. Поэзин ăсран кăларакан хăватлă вăйĕ чуна канăçсăрлантарма пуçларĕ.

Атте писательсен Союзĕн ĕçĕпе те, патшалăх ĕçĕпе

Семен Васильевич Элкер чăваш çыравçисемпе пĕрле (ларакансенчен сулахайран иккĕмĕшĕ). 1939 çулхи авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче ӳкернĕ.

те час-часах çул-çӳревре пулнă пирки манăн аннепе театрта вăхăта ирттерме тиветчĕ. Унта эпĕ чăвашсен пултаруллă артисчĕсемпе çывăхлантăм, вĕсем вылякан кашни спектакле курса тĕлĕнеттĕм. Литературăпа театр искусствипе маншăн пĕр пултарулăх тĕвви нче вăйланса пычĕç.

Аслăрах поэтсемпе писательсем, аттен çывăх тусĕсем: Çемен Элкер, Митта Ваçлейĕ, Алексей Талвир, Петĕр Осипов, Илпек Микулайĕ, Петĕр Чичканов... Писательсен Кăкшăмри кану çуртĕнче, Йăлăмра, Атăл хĕрринче вĕсем, кĕрекере-и е канура, яланах пĕрлеччĕ. Сăра-эрехпе аташмастчĕç. Шăкăл-шăкăл калаçу çумра ишекен лăпкă юхан шыв хумĕ пек юхатчĕ. Анне вĕсене тутлă апат-çимĕçпе хăналатчĕ. Эпĕ çав талантсем хушшинчен тăнланса ӳснĕ.

Туслă икĕ çемье: В. Кузьмина, А. Хусанкай, Е. Эльгер, С. Эльгер, П. Хусанкай.

Семен Васильевичпа атте хушăран хырлăхри сукмакпа туйисем çине таянса васкамасăр утатчĕç. Чĕлхи çинче те вĕсен пĕрмай «пурнăç», «халăх», «литература» сăмахсемччĕ. Эпĕ кăмпа, сырла пуçтараттăмччĕ. Кăмăл çаврăмĕнче чăвашла юрласа та илетчĕç.

Литература пурнăçĕ вăл вăхăтра чăваш халăхĕн çак икĕ поэчĕ тавра йĕркеленсе пынине эпĕ майĕпен ăнланса илтĕм. Ăшра аттепе мухтанаттăм, унăн аслă юлташĕ пулнишĕн хăпартланаттăм.

Петр Петрович Семен Васильевичăн пултарулăхне туйса ĕненме, ăша хывма чун-хавал çитернĕ, унран вĕренме те вăтанман, ятне çӳле çĕклеме те, кирлĕ чухне хăйне хӳтĕлеме те хастарлăхне çитернĕ. Ахальтен-и «Çирĕм улттă» поэмине Елкере (Элкере) халалланă. Тĕнче умĕнче сăмах тытма, чăваш халăхне çӳле çĕклеме пултарнă патриотсем пулнă вĕсем. Вĕсен туслăхĕ, икĕ çемье туслăхĕ манăн ăсран халĕ те иксĕлмест. Çемен

Элкер чăваш халăхĕн историйĕнче Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши хыççăн виççĕмĕш «çăлтăр» вырăнĕнче.

Атнер Хусанкай.
2009 çулхи çу уйăхĕ.

ТĔП ЭЛКЕРÇĔ – ĂСЧАХĂН ТАСА СĂМАХĔ

Виталий Григорьевич Родионов Кушлавăш уйĕн варринче, Пысăк Упакассинчен инçех мар вырнаçнă Хураçырма ялĕнче, 1947 çулхи юпа уйăхĕн пиллĕкмĕшĕнче çуралнă та... хресчен-колхозник килĕнчи ĕмĕрĕпех çитмен пурнăç тути-масине тӳсе-тӳсе, ăшран тапакан илем юххине малалла чуптарасшăн Çĕрпӳ хулине çитнĕ. Авалхи лăпкăлăх хулинче ял ачи культурăпа çут ĕç училищинче тĕнче культурин анлă алăкĕнчен хăюсăррăн йăпшăнса кĕрсе, сăнарлă пурнăç кĕввипе чунне хавасланторса янă, «пиллĕк» паллă çамрăк талантшăн пурнăç палли пулса тăнă. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче те, А.М.Горький ячĕллĕ Тĕнче литературин институчĕ çумĕнчи аспирантурăра та «пиллĕк» паллă унăн пĕлĕвне çирĕплетнĕ. 1980 çулта филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕн, 1993 çулта филологи докторĕн диссертацийĕсене хӳтĕленĕ вăхăтра та çамрăк ученăй «пиллĕкпе» тĕлĕнтернĕ комиссисен хуравлă çыннисене.

Журналистикăра та, литературăра та хăйĕн ăсталăх йĕрне хăварма пултарчĕ вăл хăй вăхăтĕнче, халĕ те

сăнар хыççăн сăнар тĕртет ăс-тăн вĕтĕ хĕçĕпе пурнăç вырăнĕнче. Шупашкартан Йĕпреç райхаçатне ĕç практикине пырсан, пулас журналиста эпĕ те, талантне кура, «пиллĕк» лартса панăччĕ.

Университет пĕтерсен, хаçатри-журналти ĕçпе вакланса кайманшăн эпĕ Виталий Григорьевичшăн хамăн ăшăмра савăннă та. Наука картлашки çине ярса пуснă хыççăн Родионов уççăнрах сывласа ячĕ пулас. Чăваш Республики Министрсен Канашĕн наукăпа тĕпчев институтĕнче кĕçĕн тата аслă наука сотрудникĕнче, литературăпа фольклор пайĕн заведующийĕнче тăрăшрĕ. Хăй вĕренсе тухнă университета таврăнсан вăл, профессор, чăваш литературин кафедра пуçлăхĕнче ĕçлерĕ. Сиссе те юлаймарăмăр, кĕç пирĕн чăваш филологийĕпе культурин пĕлĕм алăкĕнчен шаккаса кĕрсен, сĕтел хушшинчен васкаса пире хирĕç тухакан деканăн çирĕп аллине юлташла, ăшă кăмăлтан тытмалла пулса тухрĕ. Уншăн, паллах, хĕпĕртерĕмĕр. Ăна хапăлласах саламларăмăр: Чăваш Республики наци академийĕн член-корреспондентне суйланăшăн, ЧР наукин тава тивĕçлĕ деятелĕн хисеплĕ ятне панăшăн, РФ Писательсен Союзĕн членне илнĕшĕн...

В.Г.Родионов ĕнтĕ хăйĕн пурнăçĕнче нумай монографи, вĕрентӳ пособийĕсемпе кĕнекесем кăларчĕ. «Чăваш литератури. 1917-1930-мĕш çулсем» учебникшăн питĕ паллă преми илчĕ. «Чăваш литературин çак тапхăра халаллана академиллĕ историйĕ хальлĕхе çуккине асра тытса, автор ку кĕнекене монографи принципĕсене тĕпе хурса çырма тăрăшнă. Кĕнеке аслă шкулсенче вĕренекенсемшĕн кирлĕ пулнă хушăрах чăваш литературине аслă классенче вĕрентекен учительсемшĕн хушма материал пулма пултарасса та шута илнĕ», – тенĕ умĕн каланинче.

Виталий Григорьевич ентешӗмӗрӗн, ял кӳршин Семен Васильевич Эльгерӗн пурнӑҫӗпе пултарулӑхне тӗплӗн пӗлет. Ун пирки вӑл пичетре сахал мар хайлав кӑларнӑ.

Хураҫырма ачипе нумай ҫул хушши пӗрле пӗр хулара пурӑннӑ май, унӑн уҫӑ кӑмӑлӗ, ӑслӑ пуҫӗ, юлташлӑхпа туслӑх туйӑмӗ иксӗлми хӑватпа тапса тӑнинчен нимӗн чухлӗ те тӗлӗнместӗп. Ӑна тепӗр чухне ҫавнашкал аслӑ ҫын тесе те калаймӑн. Калаҫса кайсан ҫеҫ ӑслӑлӑхӗ сана хӑв сисмесӗрех ҫавӑрса илет. «Эпир пӗр тымартан – Кушлавӑш уйӗ панӑ хӑватран», – тесе ирхи хӗвел пек йӑлл кулать те майлӑн сӑмах ҫӑмхине сӳтсе ярать.

Маншӑн Виталий Родионов вӗренекенӗм те, вӗрентекенӗм те. Виталий Григорьевич хӑй те Элкер ҫумӗнчи тепӗр телей ҫӑлтӑрӗ – чӑваш халӑхӗн Ҫӑлтӑрӗ.

КӖРХИ ҪӐЛТӐР

Сӑнанӑ-и эсир кӗрхи тӳпене ҫӗрлесенче? Вӑл яп-янкӑр та тӑп-тӑрӑ. Ҫӑлтӑрсем шултӑра, куҫӗсене чарӑлтарсах пӑхаҫҫӗ ҫӗр сине.

Тӑрӑлӑх. Тасалӑх. Вӗҫсӗрлӗх. Вилӗмсӗрлӗх.

Унталла та кунталла тӳп-тӳрӗ ҫулсем ҫуталса тӗссӗрленеҫҫӗ. Ҫӑлтӑрсем ӳкеҫҫӗ. Сӳнеҫҫӗ. Вилеҫҫӗ.

Самантлӑх. Уҫӑлми куҫ хупкӑмӗ...

Ман умра Ҫ.Элкерӗн вилес умӗн ҫаптарнӑ сӑн ӳкерчӗкӗ выртать. Кӗрхи кунсенче ӳкерттернӗскер. Юлашки. Поэтӑмӑр сулхӑн пӳлӗмрен хӗвеллӗ урамалла тинкерет. Унӑн куҫӗсем тӗмсӗлнӗ, шухӑшӗпе вӑл вӗҫсӗр тӳпере ярӑнать, Тен, аса илӳ авӑрне чӑмнӑ. Кӗрхи Элкерӗн кӗрхи шухӑшӗсем. Кӗрхи ҫӑлтӑрӑн ӳксе ҫуничченхи пӗр са-

манчĕ. Çĕр хăвачĕ хăй патне туртса илнĕ самант. Çĕре таврăнас умĕнхи курăм. Кăвак хуппи пек хăналăх хапхи хыçа юлнă самант. Умра тăрă тасалăха, вĕçсĕр вилĕмсĕрлĕхе çитерекен çул выртать. Умра – Сĕт кӳлĕ...

Чăн-чăн Элкере эпир паян кунччен те лайăх пĕлместпĕр-ха. Унăн пултарулăхне хăрах енлĕн кăна çутатнă, çыравçăн официаллă сăн-сăпатне гипсланă. Элкерĕн «Шурăм пуç килсен» е «Вăрçă кунĕсем» çеç мар, унăн «Хурапа шурă» повеçĕ те, хăй вăхăтĕнче пичетленмен сăввисемпе аса илĕвĕсем те чылай. «Хĕн-хур айĕнче» поэмăн темиçе варианчĕ (редакцире) упранать. Пĕринче Чаккана революционер пек кăтартнă, тепринче вăл–чăваш халăхĕн патриочĕ. Кун кĕнекинче çырнисемпе çырусем çыравçăн чун-чĕрине тарăнрах туйма, унăн ĕмĕттĕллевне тĕрĕсрех ăнланма пулăшаççĕ.

Мĕнлерех çутăлнă-ши поэзи тӳпинче Элкер çăлтăр? Мĕн канăçсăрлантарнă поэтăмăра, ăçта шыранă çăлăнăç? Мĕншĕн хĕнпе хур, хурапа шурă? Мĕншĕн вăл урăхла мар, Элкерле çырнă, тата мĕнре палăрать çав стиль?

Вун-вун ыйту çăмхаланать, çиппин вĕçне тупма ыйтать...

Хĕлхемрен хыпнă вут. Çĕнĕ вăхăтри çутлăх Анăçран Тухăçалла куçса пыни паллă. Çавăнпа та чăвашра вăл чи малтан Сăр шывĕ тăрăхĕнчи ялсене çитсе кĕрет. Хĕрлĕ Чутайпа Етĕрне хутлăхĕнче чăвашран та вĕреннĕ çынсем тухма пуçласçĕ, вĕсенчен палларахххисем словарь тăвас, кĕнеке куçарас ĕçе пуçăнаççĕ (Ермейпе Григорий Рожанскисем, Петр Талиев т.ыт.те).

XIX ĕмĕрĕн 40-60-мĕш çулĕсенче чăваш çутлăхĕн тĕп пайăрки Çавал тăрăхне çитет. Халĕ тури чăвашсемпе харăс çав ĕçе анат енчисем те хастар хутшăнаççĕ (М.Дмитриев, Г.Филиппов). Çав юхăм пуçĕнче малтан

В.Вишневский, каярах Н.Золотницкий тăраççĕ. Çав çулсенчех Н.Ильминскин мăсăльман тĕнĕпе кĕрешекен вĕрентӳ системи йĕркеленсе пырать, вăл чăваш хушшинче 70-мĕш çулсенче анлăн сарăлать. Чăваш ĕçĕн пуçне И.Яковлев тухса тăрать. Çав тапхăрти чăваш çутлăхĕ анатрисен хăвачĕ-хевтипе аталанать.

Çырулăхăмăрпа культурăмăр аталанăвне тăрăхсем çине уйăрса пăхни традици пĕлтерĕшне ытларах курма май парать. Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнче авă çапларах çыхăну пур: Рожанский – Н.Базилевский – В.Лебедев. Етĕрне – Шупашкар хутлăхĕнче: Петр Талиев – В.Громов – Чăваш Хвети – С.Михайлов (Янтуш)... Пăва тăрăхĕнче: И.Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем т.ыт.те.

Çакăн пек тепĕр пĕлтерĕшлĕ тăрăх вăл Кушлавăш уйĕ, Ç.Элкерĕн тăван енĕ. Кунта çутлăх ĕçĕ 1865 çулта Кушлавăш чиркĕвне ĕçлеме Иван Петрович Оточев (1837-1876) пуп куçсан пуçланать. Вăл 1860 çултан пуçласа Хусанта тĕн семинарийĕпе училищинче чăваш чĕлхине вĕрентсе пурăннă, Н.Золотницкипе çывăх туслашса кайнă. Каярах, священника тухсан, Кушлавăш тăрăхĕнчи чăваш ачисене вĕрентме пуçăнать. Унăн чи юратнă вĕренекенĕсем Пĕчĕк Упакасси каччи Митрофан Дмитриев тата Хураçырма хĕрĕ Ксения Тимофеева пулнă. Кĕçех М.Дмитриев хăйсен ялĕнче шкул уçать, таврари чăваш ачисене тăван чĕлхепе вулама-çырма вĕрентет. Çав шкула Ç.Элкер ашшĕ – В.Федотов – та çӳрет.

И.Оточев Кушлавăш тăрăхне илсе çитернĕ хĕлхем çамрăк чăвашсен чĕрине чĕртсе вутлантарать, çутлăх ĕçне кӳлĕнтерет. М.Дмитриев каярах паллă музыкант-педагог ятне тивĕçет, вăл К.Тимофеевăпа пĕрле чăвашсен малтанхи профессилле музыкантне И.М.Дмитриева (вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçленĕ, Ф.Павловпа

С.Максимов композиторсене, А.Букаревăпа К.Эсливанова юрăçсене анлă çул çине кăларнă) çитĕнтерет, Д.Филимонова тата ытти чăваш ачисене çутлăх ĕçне кӳлĕнме пулăшать.

Ç.Элкер ашшĕ хресчен ĕçне пăрахман пулсан та хăй вăхăчĕшĕн вĕреннĕ те мал туртăмлă чăваш пулнă. Çакна эпир вăл Н.В.Никольский патне янă çыруран та куратпăр. Унта çапла çырнă: «Эй, тăвансем, эпĕ сирĕнтен сăмах ыйтасшăн, каласа парăр-ха мана, тархасшăн. Акă çапла эсир 1908 çулхи календарь çине çырса янăччĕ, вăл 56-62 -мĕш страницăсем çинче, томас-шлакпа, фосфорапа, селитрăпа çĕре çемçетесси çинчен çырса янăччĕ, томас-шлакпа тырă лайăх пулать тесе çырнăччĕ эсир, мĕнле вăл пĕр çуллăха анчах тырă лайăх пултарать-и? Çав япаласене эпир çырса ярса илесшĕн, тулĕккĕ çтан илмелли адресне пĕлместпĕр. Халь эпир первай проба илсе акса хăварасшăн, вара ăна кура, тырăсем лайăх пулсан, тата нумайтарах çырса илме пултаратпăр. Тата пирĕн çĕрсем пĕр пек мар, тăмлă çĕр, хăйăрлă çĕр, хура тăпраллă çĕрсем пур пирĕн, çакă тĕрлĕ çĕрсене пурне те çемçетет-и вăл, çавсене çырса ярăр. Пирĕн кăçал кунта, çитменнине, ыраш калчисем начар юлчĕç». Çемен Элкерĕн пиччĕшĕ Егор Васильевич çырăва çапла вĕçлет: «Тата ыйтам сирĕнтен: чăвашла газет кăларма май çуки сирĕн? Эсир пĕр вăхăтра кăларнăччĕ, халь ма пăрахрăр, цензор хушмасть-им чăвашла газет çапма? Тата поляксем, грузинсем, нимĕçсем валли ма газетсем кăларма чармаççĕ, пирĕн чăвашăнне ма чараççĕ?»

Çапла вара, пулас çыравçăн кил-йышĕ «Хыпар» хаçата та, чăваш календарĕсене те тăтăшах вуласа тăни, хресчен ĕçĕнчи çĕнĕлĕхсене асăрхама тăрăшни иккĕленӳсĕр. В.Федотов хăйĕн ачисене чăвашлăх туйăмĕ парса çитĕ-

нтернĕ. Чăваш хаçатне кăларма мĕншĕн чараççĕ тени те хăй вăхăчĕшĕн хăюллă ыйту пулнă. Ç.Элкер мĕн ачаранах чăваш кĕнекине тата халăхăмăра юратса çитĕннĕ теме пултаратпăр. Ахальтен мар вăл 1917 çулта «Хыпар» хаçатра чĕлхе, вĕрентӳ ыйтăвĕсене хускатса хĕрӳ статьясем çырать, халăхăмăр пуласлăхĕ çинчен шухăшласа чĕрине çунтарать. Çав ăшри вут унăн мĕн юлашки сывлăшĕ тухичченех упранса юлма пултарнă, П.Хусанкая тата ытти çыравçăсене чăвашлăхшăн çунма йыхăрнă.

«Хĕн-хур курса пурăнтăмăр...» Ç.Элкер 1917 çулта çапла çырать: «Эх! эпир чăвашсем вырăспа тутар хушшинче авалтанах хурлăх, хĕн-хур курса пурăнтăмăр, хамăр сикмен пиркиех каллех юлатпăр вĕсен ури айне. Вĕсем вĕренеççĕ, çуталаççĕ, эпир çаплипех пурнатпăр, кайран каллех пиртен кулма пуçлĕç...»

Ç.Элкер пултарулăхĕнче «хурлăх», «хĕн-хур» сăмахсем яланах тĕпре темелле. Çав хушăрах ку ăнлавсен пĕлтерĕшĕ уншăн тĕрлĕ тапхăрта тĕрлĕрен пулнă. Вун ултă çулта вăл, авă хăй вĕренме каяйманнине хуйхă вырăнне йышăнать. Çав хушăрах килĕнчи лашана вăрлани те уншăн пысăк хуйхă.

Тепĕр ултă-çичĕ çултан, тĕнче вăрçи вучĕ витĕр тухсан, Ç.Элкерĕн хĕн-хурĕ – тыткăнри салтак инкекĕ.

1917 çул тĕлнелле Ç.Элкер уйрăм çын хуйхи çинчен мар, тăван халăхăмăр шăпипе телейĕ çинчен шухăшлама пуçлать. Пур халăх та чĕрĕлет, чăмăртанса пĕрлешет, ирĕклĕхшĕн кĕрешет. Çак ĕçре чăваш мĕншĕн çывăрса юлать? Ĕлĕк ытти халăхсем чăвашсенчен вĕсем сахаллине тата тĕттĕммине кура мăшкăллană. Эппин – вĕренмелле, çĕнĕ шкулсем уçмалла, пуçсене çĕклесе çут çанталăка йĕри-тавра пăхмалла! Вара тин тĕттĕм чăваш хĕнхур курма, хăйĕнчен мăшкăллаттарма пăрахĕ.

Ç.Элкер чăвашсене вырăссем хĕсĕрлесе пурăннишĕн вĕсене тавăрма чĕнмест: «Вĕсем çапла пиртен хĕсĕрлесе-мăшкăлласа кулнисене эпир часах манаяс çук, анчах çавах та вырăссемпе те, тутарсемпе те малашне ĕлĕкхине ас туса, вĕсем çине çилленсе, вĕсемпе çапăçса-вăрçса пурăнас мар! Яланах пуринпе те килĕштерсе пурăнма тăрăшар!!! Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăннине нимĕн те çитес çук».

Ç.Элкер хăйĕн пĕрремĕш историлле поэмине чи малтан «Хĕн-хур айĕнче» мар, «Айăпсăр таркăн» ят пама шутланă. Çакă вăл поэмăн шухăшласа хунă тĕп шухăшĕнчен килнĕ. Чаккан пĕр айăп та çук çинчен (Пахомка йышшисем айăпа кĕрсе таркăна тухнă) таркăн пулса тăма тивет. Мĕнпурĕ те вырăс тӳре-шари юлашки тире сĕвиччен пусмăрланăран, вырăсран тухнă вăрă-хурах инкек кăтартнăран.

Поэмăри сăмах наци ирĕклĕхĕ çинчен, чăваш хресченĕн (хутла пĕлменскерĕн) вырăс тиек-пурмисĕн куçĕнчен пăхса пурăнма тивни çинчен пырать.

Ку вăл малтанхи вариантра. Каярах поэтăн конфликта социаллăх еннелле ытларах та ытларах куçарма тивнĕ, çакă наци танмарлăхĕ, ютшăнăвĕ çинчен çырнисене кăларса пăрахма хистенĕ. Тĕслĕхшĕн çавăн пек кăларса пăрахнă пĕр çаврана илсе кăтартар (вăл 1925 çулта тухнă вариантра пичетленнĕ):

Çак икĕ халăх часах пĕрлешмен,
Сĕм вăрман витĕр сукмак та хуман,
Пĕр-пĕрин патне кайман, çӳремен,
Ютшăнса тăрса пĕрле пурăнман.

Икĕ халăх пĕр-пĕринчен ютшăнни çинчен калани 1930 çулти тата кайранхи ытти вариантсенче те çук.

Тепĕр тĕслĕх. Малтанхи вариантсенче Пахом çыннисем Чакка патне пырса кĕрсен унран ĕçмелли-çимелли ыйтаççĕ, хăратса та илеççĕ. Эппин, вĕсем чăваш ялне çаратма (чухăнне е пуянне – вырăс халăхĕсемшĕн пурпĕрех) пынă. Юлашки вариантра Пахом çыннисем яла Чаккана хăйсен енне çавăрма, ăна пулăшма пынă иккен.

Çапла вара, «Хĕн-хур айĕнче» поэмăн тĕп идейи икĕ сийлĕ: малтанхи тата кайранхи. Малтанхин тĕп шухăшĕ чăваш наци пусмăрĕн тата унăн ирĕклĕхĕн ыйтăвĕсем тавра явăнать. Каярах çав шухăша автор социаллă пусмăра тата класс кĕрешĕвне вăйлатса тĕссĕрлетнĕ. Сăлтавĕ вара 30-мĕш çулсенче парти классен кĕрешĕвĕ (çыравçă кирек хăш вăхăтра çырса кăтартсан та) яланах тĕпре тесе вĕрентнинче.

Çав çулсенче чылай поэтăн икке пайланма тивет: пĕрне официаллă пичет валли çырмалла, теприне – хăйĕн хыпнă чунне пусарма. П.Хусанкай авă Сталина мухтаса çырнă хушăрах вилĕмсĕр «Тилли юррисем», «Юлашки пăлхар» поэма хайлать, унта вăл Турхан Энтри ячĕпе революцие сивлет, мала наци идейине кăларса тăратать.

Ç.Элкерĕн чăн поэзийĕ те вăхăтра кун çути кураймасть. Поэт ытларах çут çанталăка туртăнать, йывăр самантсенче, Чакка пек, вăрмана тарма кăмăллать.

Çавăн пек ирĕклĕх тупса поэт хăйне каллех ыррăн туять, çĕнĕ сăвăсем хывать.

Официаллă идеологи аслăрах çулсенчи çыравçăсене епле пулсассăн та хăйĕн майлă çавăрасшăн пулнă, хăй хушнипе юрлаттарма тăрăшнă. Вырăсра М.Горькипе çапла хăтланнă, чăвашра – Н.Шелепипе тата Ç.Элкерпе. Революциччен чипер сăвă-поэма хайлама пултарнă Шелепи куçсăр кăна мар, поэзи сассисĕр те тăрса юлать.

Элкертен вара «çĕнĕ пурнăç юрăçи» туса хураççĕ. Шел, поэтăн мăнкăмăллăхĕ çителĕксĕр пулнă, хăйне вăл вĕренмен çын вырăнне хунă, çавна май «нумай вĕреннĕ» идеолог-критиксене ĕненнĕ, вĕсем каланине итленĕ.

Ç.Элкер мухтав юррисем çырассинчен çут çанталăка кăна мар, халăх сăмахлăхне те тарнă. Чылайăшĕ ăнăçлă пулса тухнă, çапах та вĕсене пурне те пичетлеймен поэт («Сахрун мучи калавĕсем» т.ыт.те). «Выçлăх аллинче» поэма та кун çути курайман, мĕншĕн тесен унти тĕп герой выçăпа вилни критик-цензорсене çырлахтарма пултарайман.

Официаллă хутсенче Ç.Элкер «чухăн хресчен» ывăлĕ шутланнă, чăннипе вара вăтам хресчен кил-йышĕнче çитĕннĕ. Çыравçа çакăншăн айăплама кирлĕ мар. Вăл кăна мар-çке, Ф.Павлов та хăй Кушлавăш чиркĕвĕнче юрланине пытарнă. Унсăрăн совет органĕсенче ĕçлеме май килмен-тĕр. Самани çапла пулнă, пытарăнчăк пулма хистенĕ.

«Ху чĕлхӳне ан хурла!..» – тесе ят панă Ç.Элкер 1917 çулта «Хыпарта» пичетленнĕ пĕр статйине. Унта вăл çапла калани пур: «Кам хăй чĕлхине юратмасăр унтан йĕрĕнсе тăракансене Турă та юратмĕ, ун пек халăхсем Турă умĕнче те, ытти халăхсем умĕнче те малалла каяймĕç, вĕсем пурăннăçем пĕтсе çĕр çинчен çухалсах пырĕç...».

Пирĕн пек ют халăх патшалăхĕнче пурăнакан халăхсен чĕлхе ыйтăвĕ яланах тĕпре тăнă. Официаллă чĕлхе тăван чĕлхе мар пулсассăн атте-анне чĕлхин сумĕпе пĕлтерĕшĕ чылай кая юлать, вăл кил-йышра усă курмалли чĕлхерен çӳлерех çĕкленеймест.

Чăвашăн тепĕр инкекĕ вăл чĕлхене (йăла-йĕркепе çипуçа та) тĕнпе çыхăнтарма пăхнинче. Чăн чăваш тĕнĕпе

пурăнакансем, енчен те вĕсем тутар тĕнне уяма пуçларĕç пулсан, тутарла кăна калаçма пуçланă. Чăваш тĕнĕ – чăваш чĕлхи, тутар тĕнĕ – тутар чĕлхи. Çак принципа пула чылай чăваш тутара тухса пĕтнĕ, пуçне хыртарса тӳпеттей тăхăннă.

Чăваш хушшинче вĕреннĕ çынсем курăна пуçласан çак чир татах та шалалла кайнă: вырăс тĕнне кĕнĕ вĕреннĕ чăваш хăвăртрах вырăсланса кайнă, чăваш ĕçĕнчен пăрăннă, ачи-пăчи вырăс пулса çитĕннĕ. Паянхи кун, ял чăвашĕ хулана-мĕне йышлăн куçнă тапхăрта, çак чир хула халăхĕ хушшинче те сарăлчĕ, халăхăмăр пĕтсе ларасси патне илсе çитерчĕ.

Ç.Элкер çак хăрушă чире 1917 çултах асăрханă. Тĕрĕссипе ку тĕлĕшпе вăл К.Иванов шухăшне малалла тăсаканĕ пулнă.

Ç.Элкер те вĕреннĕ чăваш çынни чăвашла калаçманшăн чунтан пăшăрханать. Ун шучĕпе, хăйсен чĕлхине, хăйсен тăван халăхне питĕ хисеплесе юратакансем кăна ытти ют халăхсене хăйсенчен мăшкăллама памĕç. «Ху чĕлхӳне ан хурла!» – тет вăл кашни чăваша чĕлхе ячĕпе пĕр пулма чĕнсе. Ку тĕлĕшрен Ç.Элкер Çеçпĕл Мишшинчен маларах вăраннă, наци идейипе Октябрьти революцичченех çунма пуçланă (каярах, 1921 çулта, Çеçпĕл Ваçанкка патне «Чăваш чĕлхи ячĕпе пурте пĕр пулар!» тесе çырать).

Чăвашлăхшăнах Ç.Элкере 30-мĕш çулсенче айăплама пăхнă. Тĕслĕхрен, 1938 çулта пĕр критик поэт çинчен элеклĕ статья çырса «Красная Чувашия» хаçата, МГБ тата ВКП(б) чăваш обкомне çитерет. Çав çăхаври хăшпĕр йĕркесемпе паллашар-ха: «...С.Эльгер на всем протяжении своей «деятельности» только и делал, что рьяно защищал буржуазных националистов. Этого-то он

тщательно скрывает от партии и советской общественности... Давно пора разоблачить этого махрового националиста и «литератора» С.В.Эльгера, ибо он своим «творчеством» приносит непоправимый вред социалистическому строительству».

Çакăн пек çăхав хыççăн пуç илерен (ссылкăран) хăтăлса юлма ун чухне май пулман-тăр. Çав хушăрах чăваш идеологĕсене пĕр япала хăратнă: ватă çыравçăсем хушшинче тĕслĕх илмелли çын юлманни, чăваш Горькийĕ çукки.

Çав лару-тăрура Ç.Элкерĕн икĕ çул пулнă: е тĕрмере çĕрмелле, е пуç илерен хăтăлса официаллă идеологсен читлĕхĕнчи «сар кайăк» вырăнне йышăнмалла. Пĕрремĕш çулĕпе кайма çамрăклăх вăй-халĕ те, çирĕп ĕненӳпе мăнаçлăх та сахал мар кирлĕ-çке! Элкер ун чухне хĕрĕх тăваттăри вăрçă инваличĕ, икĕ ача ашшĕ пулнă. Тата çамрăк П.Хусанкай тĕслĕхĕ те мĕне тăрать. Вăл, репрессирен хăтăлса юлнăскер, мухтав сăввисемпе пĕр вăхăтрах вилĕмсĕр «Тилли юррисем», «Юлашки пăлхар» тата ытти ăнăçлă сăвă-поэма хайлама пултарнă. Ç.Элкер иккĕмĕш çула суйласа илет. Чи малтанах ăна хистесе статья çыртараççĕ, унта вăл хăш-хăш çыравçа мĕншĕн репрессилени çинчен каласа кăтартать. Ку вăл ватă поэтăн сăмахĕ пулнă, халăх ăна лайăхрах ĕненме пултарнă. Çавăн чухне çырнă сăмахсемшĕн поэт кайран мĕн виличчен ӳкĕнсе пурăннă, хăйне айăплă тесе шухăшланă.

Ç.Элкер суйланă çул вăхăтлăх компромисс çулĕ пулни халĕ пире пачах та иккĕлентермест. Çапла, «Хĕн-хур айĕнче» поэмăна класс кĕрешĕвĕ кĕртнĕ вăл, вăйсăр вариантсем çырнă. Çапла, «Шурăмпуç килсен» роман, революцине класс кĕрешĕвне мухтакан ытти сăвă-калав хайланă. Ун чухне пурте çапла çырнă, урăхла çырма вара

майĕ те пулман. Çав хушăрах наци идейинчен пĕрре те хăпман поэт. Ку туйăм унăн ят-сум илсе пынă майăн вăйлансах пынă, вăхăтăн-вăхăтăн çиеле тапса тухнă.

50-мĕш çулсен вĕçнелле писатель пултарулăхĕнче тепĕр хут «кăвак хуппи» уçăлать. Çыравçă «Хурапа шурă» повесть çырать, малтан кăларма май килтереймен сăввисене çĕнетсе пичетлет. Çав çулсенче вăл чăваш чĕлхипе культурин пуласлăхĕ пирки хытах пăшăрханать.

60-мĕш çулсен пуçламăшĕнче наци интеллигенцийĕ хăюллăрах пулма пуçлать, наци политикинчи хăш-пĕр ĕçсене уççăнах сивлеме пăхать. Çак ĕç пуçне интеллигенци шур сухалĕ Ç.Элкер тăрать, официаллă идеологсене «канăçсăрлантарма» (П.Хусанкай) пуçлать. Паллах, ун пеккисене нихăçан та пуçран шăлман, ята-сума та пăхса тăман. Ку хутĕнче те парти обкомĕ халăхăмăрăн поэтне вырăна лартма тата унăн çăварне хуплама васкать: парти конференцийĕнче Элкере хытах айăплаççĕ, национализмпа сехрене хăпартаççĕ. Шиклĕрех çыравçăсем «кĕрĕк пĕркенме» васканă, Ç.Элкертен пăрăнса çӳреме тăрăшнă, вăл çырнисене пичетлеме пăрахнă. Хута кĕрекенсем те пулман мар. Кунта чи малтан П.Хусанкай ятне асăнмалла. Вăл Элкерĕн обкома янă çырăвĕсене нумайлатса çыравçăсем, ытти творчество çыннисем патне çитерме хăраман, ватă поэтăмăра хӳтĕлеме чĕннĕ. Каярах çак ĕçе С.Шавли, Хв.Уяр тата ытти хастар çыравçăсем хутшăнаççĕ.

Çапларах лару-тăрура иртнĕ поэтăмăрăн юлашки çулĕсем. Чĕлхемĕре хӳтĕлесе, культурăмăр пуласлăхĕшĕн чунтан пăшăрханса уйрăлнă вăл пирĕнтен. Тӳре-шарашăн вăл канăçсăрлантараканĕ тата кансĕрлекенĕ пулсассăн, хура халăхпа интеллигенцишĕн яланах пулăшаканĕ, малта пыраканĕ пулса юлчĕ. Пирĕншĕн вăл – наци çăлтăрĕ, идеал енне çул кăтартаканĕ.

ЭЛКЕР ПОЭЗИЙĔ. «ХĔН–ХУР АЙĔНЧЕ»

Кирек хăш жанрпа çырсассăн та Элкер чунĕпе поэт пулнă. Ахальтен мар вăл йывăр вăхăтра уй-хире е вăрмана тухса утать, йывăç-курăкпа, улăх-çаранпа калаçать.

Пирĕн кашниннех хамăрăн пурнăç кăвапи пур. Çав хушăрах Чăваша çуратакан Амапа та кăвапаранах çыхăннă эпир, çав Ама кăкăрне ĕмнĕ, çав Амаран калаçма-пуплеме вĕреннĕ, чĕрçийĕ çинче утьăкка сикнĕ. Чăваш Сăмахĕпе, Поэзийĕпе тата Сăмахлăхĕпе те пĕр эпир. Ç.Элкер те çакна ача çулĕсенчех сиснĕ, ун пирки çапла аса илнĕ: «Мана ытларах поэзиллĕ япаласем килĕшетчĕç, вĕсене вара чĕререн киленсе вуланă». Пурнăçĕ вĕçĕнче çырнă сăввинче те çав шухăшах пĕлтернĕ:

Чăн-чăн поэт пулман пуль эпĕ,
Мана тĕсмест-тĕр ун хисепĕ.
Анчах поэзие юратнă,
Унпа пуçа çех хытă ватнă.

Чăваш халăх поэчĕн ятне тивĕçнĕскер, вăл сăвăран мĕн виличченех писмен, ăна чун-чĕререн юратнă. Çапларах çын пулнă поэзи тӳпинчи Элкер çăлтăр...

Çыравçă пурнăçĕпе пултарулăхне çак тапхăрсем çине уйăрса пăхма пулать: 1. Ачалăх, вăрçăпа тыткăн тапхăрĕ (1894-1916). 2. Ирĕклĕ çырнă тапхăр (1917-1930). 3. Репрессипе вăрçă тапхăрĕ (1931-1945). 4. Юлашки тапхăр (1946-1966).

Ачалăх, вăрçăпа тыткăн тапхăрĕ. 1906 çулта чăвашла «Хыпар» хаçат тухма пуçлани ял çыннисене савăнтарнă, пурăнма хавхалантарнă. Тепрер çултан хаçат хупăнни хресченсене хытах хурлантарать. Хăшĕ-пĕри, вăл тухма пăрахнине пĕлменнисем, хаçат редакторĕ пулнă

Н.В.Никольский патне тĕрлĕ ыйтупа çырусем çырнă.

1910 çулхи январĕн 4-мĕшĕнче Пысăк Упакасси ялĕнчи (вăл ун чухне Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесне кĕнĕ, халĕ Чăваш Республикин Йĕпреç районне кĕрет) Василий Федотов кил-йышĕ Никольский патне Хусана çыру çырса янă. Кил хуçи, çырма-вулама Д.Дмитриев шкулĕнче хăнăхнăскер, тырă тухăçне ӳстермелли мелсем пирки ыйтса пĕлесшĕн. Аслă ывăлĕ Якур чăвашла хаçат кăларма май килет-ши тесе ыйтать. Çемен хăйĕн вĕренес килни, вĕсен лашине вăрланăран вăл хăйĕн пĕлĕвне ӳстерме инçете кайма пултарайманни çинчен кулянса пĕлтерет. «Çапла ĕнтĕ, укçа çук пирки паянхи кун та килтех пурăнатăп, ним тума та çук, – тесе пăшăрханать пулас çыравçă. – Темĕн чул манăн кĕнеке вулас килет... халĕ ялти учительтен кĕнекесем иле-иле вулатăп, анчах ĕнтĕ эпĕ вуламан кĕнеке шкулĕнче те юлмарĕ. Халĕ кĕнеке вула пуçласанах килтисем ятлаççĕ, ĕçсĕр теççĕ. Ман ăçта çав тĕрлĕ нумай кĕнеке вуласа ăша лăплантарас-ши?»

Малалла вăл çиме çăкăр çитменни, хăй пĕр-пĕр ĕçе вырнаçма, учитель пулма ĕмĕтленни пирки çырать.

Империализм вăрçи тухсан пулас çыравçă çапăçу хирĕнче пулать, аманса тыткăна лекет. Çав çулсене аса илсе вăл кайран «Вутпа тăвăл витĕр» роман-хроника хайлать (1930-1935). Ç.Элкерĕн çак тапхăрне пурнăç материалне пухнă, хĕн-асап курса çитĕннĕ вăхăт тесе хакламалла.

Ирĕклĕ çырнă тапхăр. 1917 çулта Ç.Элкер «Ху чĕлхӳне ан хурла», «Чăваш хаçачĕ» тата ытти статьясем çырать, вĕсене çĕнĕрен тухма пуçланă «Хыпарта» пичетлесе пырать. «Асăннă статьясем эпĕ литературăра ĕçлеме пултарнине кăтартса пачĕç, – аса илет каярах Ç.Элкер. – Тал-Мăрсапа Ф.Павлов çак статьясене вуласан: эсĕ чăвашсен пулас журналисчĕ е писателĕ те пулма пулта-

ратăн тесе хучĕç». Çапах та вăл малтан ытларах поэзи енне туртăннă. Ку çыравçă пĕчченлĕхе, ирĕклĕхе кăмăлланинчен килнĕ пулĕ. Ытлашши калаçман, хăйне çынран каярах лартаканăн туйăмĕ ăшра капланнă, сăвă йĕркисене хывăнса хут çине çырăннă. Унăн чи малтанхи сăввисем пурте вăрçă кĕввипе çыхăннă.

Çыравçă чăваш поэзине лирик пек пырса кĕнĕ. 1918 çулхи çĕртме уйăхĕнче хайланă «Киле таврăнсан» сăввинчи лирика харкамçи, вăрçă хирĕнче темиçе çул пулнăскер, тăван еншĕн хытах тунсăхлани сисĕнет.

Элкер сăввисенчи лирика харкамçин пысăк ĕмĕчĕ – тăван чĕлхепе тăван халăхăмăр «çут тĕнчере тан пулни», ăна ытти халăх пусманни («Тĕрлĕ йывăç-курăксем...», 1918). Тăван чĕлхемĕр мотивне Элкер Турхан Яккăвĕпе К.Иванов хыççăн çине тăрсах аталантараканĕсенчен пĕри пулнă. Çеçпĕл çĕре кĕрсен вăл унăн сăввисенчи çак мотива эстафетăри пек малалла тăснă. 1923 çулта хайланă «Таптаннă, хăртаннă чăваш ĕç çынни» сăввине поэт çапла вĕçленĕ (вăл çаврасене автор «çырнисен пуххине» теме пула кĕртмен):

Тăван чĕлхене савакан юлташсем,
Тапранăр хастарлă – ĕçе пуçăнар!
Хăватлăн янраччăр чĕлхен кĕввисем,
Кал-кал çул, пĕтми çул ун валли уçар.
Тапранăр, тимленĕр, чĕлхе ăстисем,
Чĕре вут-хĕмне ялкăшсах çиçтерер:
Октябрь тивлечĕн Сунталĕ çинче
Туптар чĕлхене, хăйрар, çивĕчлер!

Çав ĕçе «Пирĕн чăваш çĕршывне Çурхи илем кĕриччен, Ялсем, уй-хирсем çине Хĕвел çути ӳкиччен» – эппин, XX ĕмĕр пуçламăшĕнчех – К.Иванов пуçăннă. Вăл

Чуралăхри чĕлхене
Шанчăк пама курăннă,
Тухас сăвăç туссене
Çул кăтартма пуçăннĕ.

(«Нарспи авторне», 1925)

«Тăван чĕлхен сухине кӳлĕннĕ» поэтăмăрăн ĕмĕтне, шанăçне ăша хывнă Элкер 1926 çулта «Мĕн хаваслăхпа, мĕншĕн ман пурнас?» ятлă хăйне евĕр програмăллă сăвă хайлать. Шел пулин те, «Çырнисен пуххине» (I том, 155 с.) çав хайлавăн вăйсăртарах, ватлăх çулĕсенче юсанă вариантне кĕртнĕ.

Элкер 20-мĕш çулсенчи чăваш лирикинче Çеçпĕл ĕçне тăсаканĕ пек палăрса юлнă. Вăл тăван халăхпа çĕршыв тата чĕлхе мотивĕсемсĕр пуçне вăрçă, тăван ен кĕввисене кăмăллана. Философилле сăввисенче поэт ытларах чухне Пысăк Вăхăт категорийĕпе шухăшлать, унăн харкамçине вилĕмсĕрлĕхпе вилĕмлĕхĕн кăткăс çыхăнăвĕ илĕртет. Çулла «Сакăлта çыр хĕрринче Хăй ăçтине йăлт манса» чалхăрса ларакан сарă чечек сивĕ кĕрпе лачăрах шăнса ларать иккен. Çав вырăнта «Хăрнă чечек тĕпĕ çеç Ларать çилпе чĕтренсе!» («Хăрнă чечек», 1923). Харкамçă çын ĕмĕрĕ те чечекĕнни пек кĕске пулнине аса илтерет, çавна манса кайма юраманнине систерет.

Элкер эпика енне ирĕклĕ çырнă тапхăрăн малтанхи çулĕсенчех туртăннă. Унăн чи малтанхи сăвăлла баллади (Н.Вăçанкка ăна эпикăллă поэма тенĕ) «Селтти» (1919) пулнă. Унта çав ятлă тăлăх карчăк «чипер этем çинченех» тулли лав айне пулса сарăмсăр вилни çинчен çырса кăтартнă. Вилнĕ амăшне курнă чирлĕ Кулюçăн чунĕ те çав çырмарах тухнă иккен. Вĕсен чунĕсем арçурине çаврăнаççĕ, çĕрлесенче иртен-çӳрене хăратаççĕ. «Çапла

вĕсем нумайччен Çӳçентернĕ халăха, Çампах Селтти çуртĕнчен Ял та тарнă аякка...»

1919 çулта сăвăç «Сахрун мучи калавĕсем» ятлă поэма хайлать. Ятне кура унăн жанрне сăвăлла калав е очерк тесе палăртма та май пур. Унти пайсенче чăвашăн йăла-йĕркепе çыхăннă пурнăçне çырса кăтартнă.Чăваш йăваш пулсассăн та питĕ тӳсĕмлĕ те çирĕп иккен. Хăйĕн ĕçĕ пирки вăл хăнара та манса кайман, кĕлĕ-юрăпа та асăнсах тăнă. Хайлавра автор чăвашăн йăлапа мифла пурнăçне çулталăк çаврăнăшĕнче (çуртан пуçласа хура кĕрччен) хăй еплерех курса хаклани тĕпре тăрать.

20-мĕш çулсенче Элкер халăх халапĕсене сăвăланипе çырлахмасть, унăн хальхи пурнăçĕ пирки те эпикăлла хайлавсем çырать. «Выçлăх аллинче» ятлине (1921-1922) сăвăç выçлăх çулсенчи пурнăçран илсе çырнă сăвăлла калав тесе ăнлантарнă. Кунти ĕç-пуç та çурхи уяр кунсенче пуçланать те хĕл вĕçĕчченех тăсăлать.

Халăхăмăрăн пурнăçне анлăн кăтартас туртăм Элкерĕн çултан-çул вăйланса пынă. Çакна унăн 1927 çулта хайланă «Улăпсем» ятлă сăвăлла эпосĕ те аван кăтартать. «Сунталта» пичетленнĕ вариантăн (1927. 10 №) ум сăмахĕнче поэт çапларах каланă:

«Улăп ятне асăннине пур çĕрти чăвашсем хушшинче те илтме пулать. Анчах мĕнлескер, кам пулнă çав Улăп? Ун çинчен никам та пат татса ăнлантарса параймасть. Ваттисенчен нумайăшĕ: «Улăп вăл сĕм авал темле тĕлĕнмелле çӳренĕ питĕ пысăк пăхаттир пулнă», – теççĕ. Тепле сайраран, хăшĕ-пĕрисем çеç вăл мĕнле çӳрени çинчен калаçкалаççĕ. Анчах тĕрлĕ вырăнти чăвашсем тĕрлĕ май, урăхларах калаçаççĕ.

Улăп юмахĕ вăл – чăваш халăхĕн сĕм авалхи пурнăçĕ çинчен пĕлтерекен юмах. Çакнашкал юмахсем вырăссен

те «Илья Муромец», «Святогор» текеннисем тата урăххисем те пур. Хусанта вилнĕ Катанов профессор çырнă тăрăх, Улăп çинчен калакан юмахсем тĕрĕк халăхĕсем хушшинче те пур. Анчах ку халăхсем ăна пурте Улăп темеççĕ, хăшĕ Алăп, хăшĕ Алиф теççĕ. Унăнах кăркăссен Атша ятлă Улăпĕ çинчен çырни пур (Известия Казан.общ.археологии и этнографии. Т.13.Вып.1). Анчах Атша Улăп ытла та сĕм авалхи ĕмĕрсенче пурăнать. Чăвашсен Улăпĕ – чăваш халăхĕн вăл выльăх кĕтĕвĕсемпе çӳрессине пăрахса çĕр ĕçĕ çине куçас умĕнхи пурнăçĕ çинчен пĕлтерекен юмах. Ку Улăп ватă амăшĕ калакан сăмахсенчен аван палăрать. Апла пулсан чăвашсен Улăпĕ кăркăссен Атшинчен чылай кайран пурăннă.

Эпĕ ку поэмăна Улăп çинчен чăваш хушшинче калакан татăк-кĕсĕк халапсене пухса, хăшне-пĕрне «Атшаран» илсе тата хамран та шухăшласа çырнă. Автор. 1927 çул, августăн 15-мĕшĕ».

Каярах Элкерĕн хайлавне тĕпе хурса çак ĕçе Çуйăн Хĕветĕрĕ пуçăнни паллă. «Ноябрь уйăхĕнче пĕр çĕнĕ автор çырнă фольклор япалине тӳрлетсе тинке тухрĕ, – тесе çырать вăл 1947 çулта В.Хурамал патне. – Улăп çинчен çырнă япала ку. Пуçламăшĕ кăна-ха. Эпĕ 2000 йĕркене яхăн тӳрлетрĕм. Тӳрлетсе кăна мар, нумай тĕлте хамăнах сăвăласа хума тиврĕ. Авторĕ 5000 строка çырса панă, малалла çырать. Пĕтĕмĕшле çырсан 30-40 пин йĕрке пулма пултарать. Ăна лайăх çырса йĕркелеме пĕлсен вăл япала чăннипех те чăваш халăхĕн эпосĕ пулса тăрать. Çавăнпа та ку ĕç мана питĕ хытă интереслентерет».

Каярах (1961 çулта) поэт Çуйăн Хĕветĕрĕ çырнинче халăхăннипе уйрăм авторăнне уйăрса пăхма кирли пирки каланă, илтнĕ хальлĕнех прозăлла çырни вырăнлăраххине астутарнă. Кунта эпир Элкер сăвăлла эпос йĕрке-

лес ӗмӗтрен сивӗнсе çитнине, сăмахлăха мӗнле илтӗнет, çавăн пек çырса хумалли принципсемпе çирӗпленсе çитнине куратпăр.

«Улăп» эпосра Элкер Ахрат улăп Эсремет ятлă усал паттăрпа çапăçнине ӳкерсе кăтартнă. Юлашкинчен «Вил пек Эсремет ӳтне Ярать Ахрат тинӗсе, Ун Хăямат йыттине Пăрахать хăй шăтăкне». Пурăнсан-пурăнсан вăл амăшӗпе кӗмӗл пăлан йӗррипе анăçалла куçса каять, Атăл хӗрне çитсе тухать. Кунта Ахрат вӗтӗ, «çӗр ӗçлекен этемсене» курать. Амăшӗ ăна малашне унăн ачи-пăчинчен те çавнашкал вӗтӗ çынсем юласса, улăпăн йăхӗ ӗрчесе каясса пӗлтерет.

Эпосра автор чăваш халăхӗ тухăçран анăçа куçса кайни, вăл Атăл çине çитсе вырнаçни, кӗтӳ кӗтсе çӳреме пăрахса çӗр ӗçне пуçăнни пирки сăнарлăн çырса кăтартнă. Çыравçă халăхăмăрăн историне тарăн пӗлни, халăх сăмахлăхӗнчи илемлӗх саккунӗсене аван чухлани сисӗнет хайлавра.

Çапла вара, ирӗклӗ çырнă тапхăрта поэт хăйӗн тӗп сăвви-поэмине хайлама, тăван литературăра хăйне тивӗç вырăн тупма пултарнă. Унăн поэзийӗ эпика анлăхӗпе, лирикăри хăйне евӗр мотивсемпе тата сăвă кӳлепипе уйрăлса тăрать. Чăваш силлабико-тоники енне вăл хăйӗн çулӗпе утнă, Çеçпӗлӗн поэтикăри традицийӗсене малалла тăснă.

Репрессипе вăрçă тата юлашки тапхăрӗсем. Çак тапхăрсенче Ç.Элкер тӗпрен илсен проза хайлавӗсем çырать, хăйне драматургире тӗрӗслесе пăхать. Унăн ку вăхăтра хайланнă сăввисем публицистикăлла сăмахсене çывăх, вӗсем çирӗпленсе çитнӗ соцреализм эстетикипе çураçăнса тăраççӗ. Хушăран малтанхи тапхăрта палăрнă туртăм кӗввисем те илтӗнсе каяççӗ. Çакна «Çул-

ла ку...» сăвăра та асăрхама пулать. Çу иртсе пынă вăхăта сăнланă унта. Элкер ун пек чухне вулавçа яланах уй-хире, унтан вăрмана илсе çитерет. Кунта «Типшек çулçăсем... çурхи çеçкесем! – Пĕр сассăр ӳкеççĕ тăван туратран», хăмăр пĕлĕтсем «хĕвел айнелле» хуллен шăвăнаççĕ. «Унтах – çула тухнă хура хăлатсем Майпе ярăнаççĕ тĕнче хĕрнелле...»

Лирика харкамçи çут çанталăка сăнаса çапла пĕтĕмлетет:

Хĕвел йăлкăшать-ха, çанталăк вĕри,
Анчах синкерленчĕ çут тĕнче хĕрри.
Сив кĕр те çитмен-ха, инçе вăл, инçе,
Çавах ун чаршавĕ – çанталăк çинче.

Çут çанталăкри пулăма асăрханă харкамçă çакна çын пурнăçĕ çине куçарса шухăша путать:

Çаплах пурнăçра та, çур ĕмĕр иртсен
Темле сисĕм-туйăм тытать кăмăлна;
Вăю та нумай-ха, ватту та çитмен,
Анчах ак шеллетĕн васкан кун-çулна.

(«Çулла ку...», 1940)

Ку тапхăрта çыравçă «Тырă вырнă чух, ирхине» (1937), «Ирĕклĕхшĕн, миршĕн!» (1940-1941) тата «Вăл вилĕмсĕр» (1943-1945) ятлă поэмăсем çырать. Пĕрремĕшĕнче вăтам хресчен хăйĕн кил-йышĕпе колхоз майлă çаврăнса пынине ӳкерсе панă. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх хирĕнче комбайн çӳрет, грузовик тырă турттарать пулсан, Хĕлип ав ĕлĕкхиллех тăрмашать, пур ĕçре те «хăйĕн йĕркипе» хăтланать. Соцреализм саккунĕсемпе килĕшӳллĕн юлашкинчен вăтам хресчен колхоз уссине ăнланса илет те унта кĕрсе çамрăк хĕрĕпе ытти ачи-пăчине савăнтарать.

Иккĕмĕшĕнче пĕрремĕш империализм вăрçине хутшăннă салтаксен пĕр пайĕ усăсăр юн тăкнине ăнланма пуçланине, çавна пула атакăна кайманнине каласа панă. Çар сучĕ çав салтаксене персе пăрахма хушать. «Конвойсем те чунсăр мар» иккен: вĕсем тивмелле мар переççĕ, хăйсен офицерне итлемеççĕ, юлашкинчен ăна та, сутăнчăк унтера та персе пăрахаççĕ.

«Вăл вилĕмсĕр» поэмăра Ленинграда хŭтĕлесе вилнĕ Иван Смирнов взвочĕн паттăрла ĕçĕ çинчен каласа кăтартнă. Çав чăваш ачин интернациллĕ взвочĕ нимĕç танкĕсене хирĕç тăрать, çуран салтаксене малалла кайма памасть. Çавăн йышши çапăçусенчен пĕринче Смирнов пулеметчик паттăрсен вилĕмĕпе вилет.

Хайлава Элкер хаçат материалĕсемпе усă курса çырнă пулсан та унти ĕç-пуç питех те ĕнентерŭллĕ те чĕрĕ пулса тухнă. Автор хăйĕн геройĕсен чун-чĕрипе хавхине, кăмăл-туйăмне уçса парас тĕллев лартнă, вĕсен хăтланăвне психологи тĕлĕшĕнчен сăлтавлама пултарнă.

Хăйĕн «Вун саккăрмĕш çул» ятлă эпикăлла хайлавне Ç.Элкер драмăлла поэма тесе хаклана. Унăн малтанхи вариантне 1948 çулта «Тăван Атăлта» пичетленĕ, 1954 çулта юсаса çĕнетнĕ вариантне уйрăм кĕнекен кăларнă.

«Хĕн-хур айĕнче». Хайлав малтанласа «Сунталăн» 1925 çулхи 8-мĕш номерĕнче пичетленме пуçланă. Унта автор çапла ăнлантарнă: «Айăпсăр таркăн» ятлă историлле поэмăн малтанхи сыпăкĕ». Хайлав умне икĕ эпиграф кĕртнĕ: «Пурнăç – хŭри пăрнăç» (ваттисен сăмахĕ); «Ни пурмис мар, ни тиек мар – Пуççапмасăр кĕмелле мар» (авалхи юптаруллă юмах). Поэма 1926 çул пуçламăшĕнчен (1 №) V сыпăк таран пичетленнĕ. Кайран вăл тепĕр хут 1928 çулта (7 №) тин çапăнма пуçланă, 1929 çул пуçламăшĕнче юлашки XIII сыпăкĕ («Шăннă вăрман

хӳттинче») кун çути курнă. Унтах вăл малалли сыпăксенче мĕн пулса иртессине каласа панă.

Çак журналта пичетленнĕ текста хайлавăн пĕрремĕш варианчĕ (редакцийĕ) тесе хакламалла. Ăна Элкер 1923 – 1928 çулсенче хайлани паллă. «Хĕн-хур айĕнче» поэмăна 1923 çултах çырма пуçланăччĕ, – аса илнĕ сăвăç 1931 çулта çапăнса тухнă кĕнекин ум сăмахĕнче. – Ун хыççăн ăна пĕр-икĕ тапхăр та çырма пăрахса, çулталăк-çулталăкĕпе выртта рнисем те пулчĕç. Анчах поэмăн малтанхи сыпăкĕсем («Сунталра») çапăнса тухнă пирки тата вулакансенчен нумайăшĕ ăна çырса пĕтермех ыйтнă пирки ку поэмăна юлашки çулсенче те пулин çырса пĕтермеллех килчĕ. Çакăнпа пĕрлех поэмăн «Сунталра» çапăннă сыпăкĕсене те чылай çĕнĕрен тӳрлетсе якатмалла пулчĕ. Анчах 6-7 çул ăна пролетари литературин паянхи задачисемпе çыхăнтарса çитерме ниепле те май пулмарĕ».

Ум сăмаха 1930 çулхи юпан 20-мĕшĕнче çырнине шута илсен, поэмăн иккĕмĕш вариантне Элкер 1929-1930 çулсенче йĕркелесе çитернине пĕлетпĕр. Унта вăл пилĕк çĕнĕ сыпăк хушнă, хайлав вĕçне «пролетари литературин задачисемпе çыхăнтарса» урăхлатнă. Ку редакци 1931 çулта уйрăм кĕнекен пичетленсе тухнă.

Хайлавăн виççĕмĕш вариантне Элкер 1946 çул вĕçĕпе 1947 çул пуçламăшĕнче йĕркелени паллă. «Декабрьпе январьте тата февралĕн пуçламăшĕнче хамăн «Хĕнхур айĕнче» поэмăна çĕнĕрен тӳрлетсе тухрăм, – пĕлтерет вăл пĕр çырăвĕнче. – Икĕ главине (VII, IX главасемччĕ пулас) кăларса пăрахрăм. Вĕсен вырăнне çĕнĕрен виçĕ глава (750 йĕрке) çырса хушрăм. Поэмăна ĕнер Чăвашгиза тăратрăм ĕнтĕ. Пуçăм çинчен тахçантанпа капланса тăракан пысăк çĕклеме илсе пăрахнă пекех пулчĕ. Поэма

тексчĕн чылай вырăнĕсене тӳрлетрĕм. Хăш-пĕр уйрăм сăмахсене улăштарасси те сехечĕ-сехечĕпе шухăшлаттарчĕ. Нумай ыйхăсăр каçсем ирттермелле пулчĕ. Восстани тапхăрне сартăм. Çав кирлĕччĕ унта».

Ку вăл Элкерĕн 1947 çул тĕлĕнчи курăмĕ, ăнлавĕ. Хайлаври ĕç-пуçа ытлашши революцилетсе янине ун чухнехи литературăра вăй илнĕ романтикăлăхпа ăнлантарма кирлине маларах каланăччĕ ĕнтĕ.

50-мĕш çулсен вĕçĕнче «Хĕн-хур айĕнче» хайлавăн виççĕмĕш вариантне вырăсла куçарма пуçăнаççĕ. Куçаруçăсем автора поэма вĕçне улăштарма, хусахсемпе (вĕсене Пахомка çынни Ивашка ертсе çӳрет-мĕн) пĕрле пултарма, ирĕклĕхшĕн кĕрештерме сĕнеççĕ. Кăмăлсăр пулсан та, Элкер çак вĕçленӳпе килĕшет, виççĕмĕш редакцин вĕçне куçаруçăсем сĕннĕ пек улăштарать. Çапла майпа хайлавăн тăваттăмĕш вариантĕ çуралать. Ăна автор 1960 çул тĕлнелле юсаса çырнă, çав çулах чăвашла тата вырăсла пичетлесе кăларнă.

* * *

Семен Васильевич Эльгер (1894 – 1966) был мудрым поэтом, с юных лет пережившим угнетение и все те унижения, которые пришлось испытать родному народу на своем историческом пути, до последнего дыхания отстаивавшим права и свободы чувашей в отношении языка, культурного развития и национального самоопределения. Моральный авторитет его среди младших современников всегда был высок (П.Хузангай почитал Эльгера как своего непосредственного Учителя и наставника). Хотя Эльгер начинал как лирик, во всей его поэзии ощущается широкая поступь эпического повествования. Его лирический герой говорит с эпохой (первая книга стихов

поэта так и называлась «Самана», 1928), с человечеством, «он с веком наравне». Сам поэт мыслил категориями Большого исторического Времени, в философской проблеме смерти и бессмертия для него лежит разгадка тайны бытия. Его поэмы «Селтти», «Сахрун мучи калавĕсем» (Рассказы деда Сахруна, 1919), «Выçлăх аллинче» (В руках голода. 1921 – 1922), укорененные в почве чувашской деревни, рассказывают о повседневных и трагических событиях в жизни крестьянства. В 1927 г. Эльгер на основе народных преданий, отчасти используя общетюркские аналогичные сюжеты, предпринимает попытку создания чувашского эпоса «Улăпсем». Позднее (1948, 1954), апробируя и расширяя поэтику эпического, он создает драматическую поэму «Вун саккăрмĕш çул» (Восемнадцатый год). И все же самым известным, классическим произведением 20-х гг. стала поэма Эльгера «Хĕн-хур айĕнче». Угнетенный, униженный и безмолвный чуваш доходит до такого состояния, что чаша его терпения переполняется, и тогда он готов на все – на самые отчаянные поступки и действия, на бунт, жестокий и беспощадный. Такова главная тема поэмы, которую воплощает главный герой Чакка. Другая тема – это спесь, презрение к соплеменникам (куштанлăх) и продажность (сутăнчăклăх), отрицательные черты чувашского менталитета, сформированные многовековым пребыванием в условиях экономического и духовного рабства.

К написанию данной исторической поэмы поэт приступил в 1923 г. и завершил ее первую редакцию в 1928 г. а над второй редакцией работал в последующие два года. Третья и четвертая редакции появились в 1947 и 1960 гг. Основной причиной такой переработки и изменения

структуры поэмы были общественно-политические факторы. Самым органичным и удачным текстом автор считает первый вариант поэмы, который имел совершенно другое название – «Айăпсăр таркăн» (Безвинный беглец).

Если в поэзии Эльгер возвышал и романтизировал своих героев, то в прозе, опираясь на собственный жизненный опыт, он был гораздо приземленнее и реалистичнее. Таковы его роман-хроника «Вăрçă кунĕсем» («Вутпа тăвăл витĕр», 1930 – 1935), повесть «Шурăмпуç килсен» (1940, 1952 – 1953), прототипы которой взяты, в основном, из реальной жизни, и его отдельные рассказы. Особое место в творчестве Эльгера занимает повесть с философским подтекстом «Хурапа шурă» (Черное и белое, 1960), где он показал себя как писатель-моралист, мастер психологического письма, способный тонко чувствовать и передавать сложные интимные отношения.

ЭЛКЕР ПРОЗИ

1917 çулта «Хыпар» хаçатра пичетленнĕ хăйĕн статйисен вĕçне Ç.Элкер «Кушлавăш çынни Семен В.Эльхерин», «С.В.Э.», «С.Э.» тесе кăтартнă. Пĕррехинче унпа пĕр çуртрах пурăнакан Г.Тал-Мăрса ăна çапла каланă: «Эпĕ сана Эльхерин теместĕп, мĕншĕн тесен мана хушамату «херин» тесе вĕçленни килĕшмест. Ăна Эрхел е Элкер темелле. Улăштарас пулать хушаматна». Хăйĕн литературăри псевдонимне те вăл Элкер пекех тавраш ятне кĕртсе лартнă.

Çав вăхăтра чăваш çыравçисен вăрттăн ят илес туртăм вăйланать. Çак пулăма вĕсем чăваш ячĕ-шывĕ христиансен пулнишĕн çырлахманнипе, наци ăнĕ ӳссе пынипе

ăнлантармалла. Пĕрисем пĕр-пĕр пахалăхлă япалана символланă (Çеçпĕл, Ахах, Юман), теприсем хăйсен ятне йăх-таврашра шыранă (Милли, Тал-Мăрса, Элкер). Çак туртăм вăл е ку çыравçăн пултарулăхне хăй евĕрлĕ çулпа кайма пулăшнă. Тăван йăх, ял аваллăхне пĕлме тăрăшни юлашкинчен чăваш халăхĕн историйĕ патне илсе çитернĕ. Ун йышши çыравçăсем калура ытларах чухне аса илӳ çине таянаççĕ, аваллăх халапĕсене кăмăллаççĕ. Пурнăç ыйтăвĕн чылай хуравне вĕсем историре шыраççĕ.

Малтанхи Элкершĕн истори факчĕ вăл – хăйĕнпе пулса иртни. Çулсем шунă майăн çав пулса иртни хакланса та сăвапа куçса пырать. Ытларах чухне çав ĕç-пуç асапланупа çыхăннă. Асап тăвĕ çине утакан харкамçă тĕрлĕ хĕн-хур тӳсет, çавна май вăл сăвапа тухса пырать. Элкер поэзийĕнчи Лариван («Выçлăх аллинче»), Чакка («Хĕн-хур айĕнче»), Иван Смирнов («Вăл – вилĕмсĕр») йышшисем вилсе апостолсене çывăхланаççĕ, чăннипех те вилĕмсĕрленеççĕ.

Элкерĕн прозăри харкамçисем урăхларах сăн-сăпатлă. Вĕсене автор пурне те ĕнентерӳлĕх куçĕпе пăхса калăпланă, аталануллăн кăтартма тăрăшнă. Çак принципсем соцреализм меслетĕнчен тухса тăни паллă ĕнтĕ. Фабула-сюжетсене марксизм вĕрентĕвĕнчен мар, хăйĕн пурнăçĕнчен илни Элкере хытса ларнă эстетика картинчен тухма, ирĕк сывлăшпа сывлама май панă. Çакна унăн «Вăрçă кунĕсем» («Вутпа тăвăл витĕр») роман-хроникинче (1930-1935) аван курма пулать.

Жанр енчен пăхсан çак хайлав автобиографиллĕ повеçе çывăхрах тăрать. Çыравçă 1939 çулта «Вăрçă кунĕсем» ятпа пичетленнĕ хайлава истори факчĕсемпе тата пулăмĕсемпе пуянлатса 1949 çулта ăна çĕнĕ ятпа пичет-

лет, жанрне роман-хроника тесе палăртать. Тĕрĕссипе хайлав тенденциллĕрех те схемăллăрах пулса тухать. Унăн чи вăйлă сыпăкĕсем – автор хăй тӳссе ирттерни çинчен çырса кăтартнисем.

Кушлавăш уйĕнчи пĕр ялта çирĕм çул пурăннă Семен Васильева 1915 çул пуçламăшĕнче салтака илеççĕ, Пенза кĕпĕрнинчи Мокшан хулинче çар вăййине вĕрентеççĕ. Пилĕк эрне хушшинче «çамрăк салтаксен шухăшĕ вылять, юнĕ вĕрет». Вĕсем хăвăртрах фронта çитсе таракан тăшмана хăваласшăн.

Салтаксен романтики пĕрремĕш çапăçурах сĕвĕрĕлет. Çакна калавçă (хайлава тĕп харкамçă каласа панă пек йĕркеленĕ) çырнинчен пĕлетпĕр: «Юлашки кунсенче пирĕн салтаксем пит те салхулланса çитрĕç. Вĕсен утти те йывăрланчĕ... Выçă та хуйхăллă салтаксем ним чĕнмесĕр, тарăхнăн сĕнксе утса, пиншер мăшăр ура сăтăрса хускатнипе вĕçекен хăмăр тусана çăтса пыраççĕ».

Пĕр çапăçура ураран аманнă Семен тыткăна лекет, тĕрлĕ хĕн-хур курса асапланать. Виçĕ хут операци сĕтелĕ çинче пулнă чăваш каччи юлашкинчен ура çине тăрать, инвалидсен лагерьне лекет. Унтан вăл ытти инвалидсемпе пĕрле Раççее таврăнать. Пĕр хушă Питĕрти госпитальте вăй пухсан тăван ялне çитет, Хусанта сывалать.

Çак кăткăсах мар фабулăллă хайлаври тĕп харкамçă пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç-пуçа курать (тĕнче вăрçи, Питĕрти пурнăç, Граждан вăрçи), вĕсем çинчен уйрăм çын куçĕпе çырса кăтартать. Тĕрĕссипе унта чăн пулнипе шухăшласа кăларнине уйăрса пăхма майĕ те çук. Çапах та хăшпĕр сăнарсене (Февралев, Цыганов, Барта, Щербаков йышшисене) автор идейăллă содержание соцреализм меслечĕпе килĕшӳллĕн йĕркелес тĕллевпе кĕртни иккĕлентермест. Вĕсем хăйне евĕр идея-сăнарсем пулса

тухнă, вăл е ку идеологи тĕлĕшĕнчен ытла та тĕрĕс каласаççĕ е хăтланаççĕ. Çав çынсене сăнланă чух автор ытларах вĕсен сăмахĕсене каласа парассишĕн тăрăшать. Çакă уйрăмах хайлав вĕçĕнче сисĕнет.

Ç.Элкер хăйĕн повеçне «Вăрçă кунĕсем» ят пани унти ĕç-пуçа хăй вăрçăра пулнă вăхăтпа (1915-1916) çыхăнтарнинчен килнĕ. Çапларах шухăшланă та вăл унăн малтанхи вариантне çырнă çулсенче (1930-1935). Çав хайлав чăннипех те автобиографиллĕ повесть пулнă. Унта пейзаж пĕлтерĕшĕ капашсăр пысăк, детальсем те йышлă, вăхăт ерипенрех шăвать. Çак малтанхи варианта чи ăнăçли тесе шутламалла.

Ç.Элкерĕн тепĕр повеçĕ (ăна автор роман тенĕ) «Шурăмпуç килсен» ятлă. Ăна автор 1940 çулта уйрăм кĕнекен кăларнă, 1952-1953 çулсенче çĕнĕ сыпăксем хушса хайлава чылай пысăклатнă. Шел пулин те, çав тулли вариант та ăнăçлах пулса тухайман: унти идея-сăнарсем (Бурцев большевик, Любимов пуп) малтанхи редакцири пекех схемăллă, чĕрĕ мар, лозунг сăмахĕсемпе каласма кăмăллаççĕ. Автор унта Долбиловпа Вера Ивановна юратăвне хушса кăтартни хайлава чĕрĕлĕх кĕртет ĕнтĕ. Çĕнĕ вариантра И.Я.Яковлев тата ытти паллă çынсем те пур, хайлаври талккăш (ĕçсем Турханта тата Етĕрнере те пулса иртеççĕ) нумай анлăланнă. Çав улшăнусем хайлава роман жанрĕ енне чылай сулăнтараççĕ. Çапах та унти калăва нумай сийлĕ тата стильлĕ тесе калама çук пулĕ.

Ĕç-пуçа çăралатни, характерсене типласа тата аталанура кăтартни хайлава эпикăлăх сĕмĕ кĕртеççĕ, чи малтан соцреализм эстетикин тĕп енĕсене аса илтереççĕ. 30-мĕш çулсенче çыннăн ĕçри паттăрлăхĕпе çĕршыв хуçалăхĕ ура çине тăнине сăнлани уйрăм çын пурнăçĕпе туйăмне çырса панинчен пĕлтерĕшлĕрех тесе ăнланни

çыравçăсене ушкăнла ĕçе сăнлакан проза патне илсе çитернĕ. Чăваш хресченĕн ăнне улшăнура кăтартма кăмăллакан Ç.Элкер те çав çулсенче поэзирен прозăна куçса каять. Çапах та вăл сăвăç пулни «Шурăмпуç килсен» повеçре те палăрать.

Хайлаври харкамçăсене Ç.Элкер чăн пурнăçран илни иккĕленӳсĕр. Калăпăр, Муççа çыравçăн ашшĕне Ваççана, Леврен Ç.Элкере хăйне, Çитăр Иванĕ хăйсен ялĕнчи И.Сидоров хресчене аса илтереççĕ. «Иван Сидоровăн арăмĕ вырăс майриччĕ те, çавăнпа ăна ялта «Майра Иванĕ» тетчĕç, – каярах аса илнĕ çыравçă. – Сидоров ялта шкул çурчĕ лартас пирки тата двухклассныйăй шкул уçас пирки хытă тăрăшрĕ, пухусем пухса приговорсем тутарчĕ, хăй вăйĕпех уесри земски управĕсене кайса çӳрерĕ... Вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторĕпе И.Я.Яковлевпа тата Хусанти учительсен семинарийĕнчи чăваш преподавателĕсемпе (Кузьма Сергеевпа, Ф.Н.Никифоровпа тата ыттисемпе те) çыхăну тытса тăратчĕ, вăхăтран-вăхăт вĕсем патне ятарласах курса каласа тесе кайса килетчĕ. Аслă ывăлĕ унăн Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренетчĕ...»

«История родного края» кĕнекере (Чебоксары, 1993. Ч.1) Н.А.Почуев учителе (вăл социал-демократсен Кăрмăш-Етĕрне-Васильсурск ушкăнне йĕркелекенĕсенчен пĕри пулнă) арестлени çинчен калакан документ пур (276 3). 279-мĕш номерлĕ документра Туçи вулăсĕнче (унта Ç.Элкерĕн тăван ялĕ те кĕнĕ) социал-демократсен ушкăнĕ ĕçлени пирки каланă. Тĕп активистсем çаксем пулнă: В.Богоявленский тиек, Таисия Будникова тата Анна Андреева вĕрентекенсем, Будниковăн тăванĕ, Юхтанов, Беляев, Почуев, Долбенков. Вĕсем патне Тимахви Хури пырса çӳренĕ (350-353 с.).

1905-1907 çулсенче Кушлавăш салинче (вăл ял Пысăк Упакассинчен виçĕ çухрăмра ларать) чăннипех те революцилле ушкăн ĕçлени паллă. Ăна ертсе пыраканĕсем М.П.Долбиловпа Н.И.Почуев вĕрентекенсем (вĕсем иккĕшĕ те Етĕрне хули çыннисем) пулнă. Пĕрремĕшĕ Кушлавăшри, иккĕмĕшĕ Зеленовка ялĕнчи шкулсенче ĕçленĕ, гектографпа тĕрлĕ листовкăсем нумайлатса салатнă.

Çапла вара «Шурăмпуç килсен» повеçри сăнарсемпе хăш-пĕр ĕç-пуç чăннипех пулса иртни иккĕленӳсĕр. Çав хушăрах унта автор типласа, пулма пултарассине пулнă пек туса кăтартни те сахал мар. Сăмахран, Муççапа ытти чухăнсем земство пуçлăхне хирĕç тăни, стражниксемпе çапăçни (Улăхкассипе Уйкасра) чăннипе пулса та иртмен. Çыравçăн пурнăçа революцилле ăн еплерех улшăнса пынине кăтартас тĕллевĕ кĕрттернĕ вĕсене.

Çав çулсенчи чăваш çĕр ĕçченĕсем пĕр-пĕринпе хирĕçнин тĕп сăлтавне Ç.Элкер тĕрĕс асăрханă. Çĕр хĕсĕк пулни тарăхтарнă та вăрçтарнă вĕсене. Паллах, çав хирĕçӳсене класс кĕрешĕвĕпе кăна ăнлантарни çителĕксĕр. Наци пусмăрĕ вăйланса çитнине те, ялти куштан-сутăнчăксем влаçпа пĕр чĕлхе тупнине те курмалла кунта. Социал-демократсем улпут çĕрĕсене вăйпа туртса илме йыхăрни чăвашшăн мар, вырăс хресченĕшĕн кăна юрăхлă пулнине ăнланнă Муççа йышшисем. Çакна Ç.Элкер ăнăçлă кăтартма пултарнă. Кирек мĕнле пулсан та çак çыравçă хăйĕн прозипе чăваш романĕ енне çул хывни, вăл ăна чи малтан историлĕхпе пуянлатни иккĕленӳсĕр.

Элкер калавĕсем. Ç.Элкер калавĕсем чылай чухне пулни-иртнине каласа пани пек пулса тухнă. Чăвашсен пулмасла халапĕсене («Тăрнаккайпа тăрнасем», «Çĕвĕç Йăван») илемлетсе çĕнетме кăмăлланăскер, çыравçă

хивре те кĕтмен çĕртен урăхла çаврăнса ӳкекен ĕç-пуç çырса кăтартма та кăмăллана. Çав приключенилĕхпе ăнсăртлăх, унăн шучĕпе, çыпăçусăр тата ĕнентерӳсĕр пулмалла мар. Çавăншăнах вăл М.Данилов-Чалтунăн «Тайга паттăрĕсем» ятлă калавне тиркенĕ. Паттăрлăх хавхиллĕ хайлаври сăнарсен хăтланăвĕ ĕнентерӳллĕ пулмаллине тĕрĕсех асăрханă Элкер. Шăпах çав енпе уйрăлса тăрать те ун пултарулăхĕнчи приключенилĕх. Тĕслĕхрен, «Вутпа тăвăл витĕр» хайлаври ĕç-пуç та, хăшпĕр тĕлпулусем те енчен енне çаврăнаççĕ, ăнсăртран пек (калăпăр, Çемен Хусанта Бартăпа Щербакова тĕл пулса калаçни) курăнаççĕ. Çав хушăрах ун чухне венгрсемпе Питĕр рабочийĕсем Хусана шуррисене хирĕç çапăçма чăннипех пырса çитни паллă. Эппин, çав çынсемпе тĕл пулнине ĕненме те май пур.

«Унтри» калава Ç.Элкер сăваплă пурăнăç жанр тытăмне тĕпе хурса йĕркеленĕ. Тĕп харкамçă ачаран тĕрлĕ асап (унта анекдотпа мыскарасем те сахал мар) тӳссе çитĕнет, юлашкинчен сăвапа тухать (хисеплĕ пекарь ударник пулса тăрать). «Куштан» калава тĕлĕкрен пуçлани те автора интрига енне сулăнтарать. Кунти тĕп герой («пит те хаяррăн» каласакан Хаяров) сатира журналĕнче питлемелли çын, вăл хăйĕн тĕлĕкне пурнăçа кĕртет, ял пуянĕсем пулăшнипе вулăс старшини пулса тăрать. Урăх самана çитсен çав тăранми куштан нимсĕр-мĕнсĕр тăрса юлать.

Çак икĕ калавăн тытăмĕ пĕр евĕрлех, вĕсенчи тĕп харкăмсем кăна хире-хирĕçлĕскерсем: Унтри пурнăçне Турă курса тăрать, Хаярова шуйттан хĕтĕртет. Чăваш литературинче çав ыйтусене Игн.Ивановпа И.Юркинран пуçласах хускатнă, Элкер те унта хăйĕн сăмахне каланă.

«Хурапа шурă» повесть (1960). Хайлав ячĕ. Ят хыçĕ-

нче яланах тĕп шухăш тăрать. Çакна чăваш çыравçисем XIX ĕмĕртех шута илнĕ. Турхан Яккăвĕ хăйĕн поэмине тĕп харкамçă ячĕпе «Варуççи» ят парать. Ун хыççăн çак мелпе К.Иванов («Нарспи»), Н.Шупуççынни («Хитре Чĕкеç», «Пĕтелмей»), Ç.Элкер («Унтри»), Трубина Мархви («Мучар»), М.Чалтун («Якур», «Лизавета Егоровна»), Ухсай Яккăвĕ (»Тутимĕр», «Кĕлпук мучи»), П.Хусанкай («Таня») т.ыт.те усă кураççĕ. Çапла туса вĕсем хайлаври ĕç-пуç ята кăларнă çын тавра пынине кăтартаççĕ. Чылай чухне çав героя романтика е питлев сăрĕсемпе ӳкерме тăрăшаççĕ.

Ленăпа Сергей юратăвĕ пирки çырнă хайлава Ç.Элкер малтан «Лена санитарка» ят панă. Автор тĕп шухăша çав сăнар урлă каласшăн пулнă. Повеçе пичете хатĕрленĕ чухне редакторсем хайлав ятне улăштарма сĕнеççĕ. Çапла вара, çыравçă «Хурапа шурă» ят патне çитсе тухать. Философиллĕ сĕмлĕ повесть геройсен пурнăçĕнче савăнăçĕпе юнашарах хуйхи, телейĕ çумĕнчех инкекĕ çӳрени çинчен каласа кăтартакан хайлав пек пулса тухать. Çав-çавах унта тĕп вырăнта Лена тăрать.

Сăнарсен тытăмĕ. Лена сăнарне калăплама Сергей, Наçтӳç тата Попов сăнарĕсем пулăшаççĕ. Аса илер-ха çамрăк санитаркăпа Сергей хушшинчи хутшăнăва. Хĕр юратăвне пула унччен хуçалса ӳкнĕ Сергей çĕнĕрен чĕрĕлсе тăрать. «Манăн каллех пурăнас килекен пулчĕ», – тет калавçă. Тепĕр вырăнта Сергей Кашăк Хĕветĕрне çапла пĕлтерет: «Пирĕн ун чухнехи юрату ахаль юрату мар-çке-ха вăл, таса юрату пулнă. Елена Яковлевнăн чи малтанхи юратăвĕ мана ун чухне, тин çеç вăрçăра çĕмĕрĕлсе пурнăç шанчăкне çухатнă çынна, темĕнле имлĕ эмел ĕçсе сывалнă пек çĕнĕрен чĕртсе ячĕ, хамăр ялти савнă хĕр пăрахнипе салхулланнă инвалида çутă ĕмĕр

хушса пачĕ. Унăн таса юратăвĕ мана пурăнас килекен турĕ, пурнăçшăн кĕрешме хавал чĕртсе ырми вăй кӳчĕ».

Наçтӳç сăнарĕ Ленăн тепĕр енне палăртма пулăшать. Акă вăл Сергей арăмĕ урăх арçынсемпе ермешсе çӳренине пĕлсен мĕн калать: «Тĕлĕнетĕп эпĕ: мĕнле вăл саккунлă мăшăру пур çинченех урăх çынпа пурăнмалла?! Мĕншĕн ху мăшăрна суймалла, улталамалла?! Мăшăрланнă чух пĕрле пурăнма сăмах манă тăк – пурăн!..»

Лена – туйăм хыççăн кайса мăшăр хушшинчи сăваплă тасалăха вараламан çын. Редактор кĕскетнĕ пĕр вырăнта Сергей хăйĕн вĕри туйăмĕпе Ленăпа çывăхланасшăн пулни çинчен çырса кăтартнă. Сергей ытамĕнчен вĕçерĕннĕ ĕлĕкхи савни акă çапла калать: «Ют мар та, эпĕ упăшкаллă арăмне эсĕ пĕлетĕн-çке-ха? Юрататăп-и, юратмастăп-и ăна – пурĕ пĕр хамăн мăшăра улталама юрамасть».

Ленăпа Сергей пĕр-пĕрне малтан та юратнă, халĕ те юратаççĕ. Сергей туйăм хыççăн кайма та хатĕрччĕ. Лена килĕшменни ăна çапла шухăш патне илсе çитерет: «Чĕре туртни хыççăн кайма юрамасть. Чĕре туртнине ăс-пуçа пăхăнтарас пулать». Ку ĕнтĕ пурнăçра туйăм кăна мар, кăмăл-сипет те пур тенине, çавăнпа ăса та итлемелле тенине пĕлтерет.

Попов сăнарĕ Ленăн чунне туллин уçма пулăшать. Упăшки эрех ĕçе-ĕçе супнине те, ун пек чухне килĕнчен тухатуха тарса тĕрлĕ çĕрте çĕр каçнисене те тӳссе ирттернĕ çав хĕрарăм. Çав-çавах мăшăрне усал сунман, Наçтӳç пек ыттисемпе улталаман. «Упăшкам пур çинченех мĕнле чунпа урăх арçын ытамне кĕрсе çыпçăнам-ха эпĕ?! – тĕлĕнсе хуравлать Лена хăйĕн пĕрремĕш юратăвне. – Çук, ун пек пулма нихçан та килĕшместĕп. Çакна ан ман!..»

Поповсен кил-йышне туртса пыраканĕ, тăрантарса усраканĕ ĕçкĕç упăшки мар, чирлĕ арăмĕ пулни те çав сăнара тĕрĕс хак пама май парать. Лена çĕре кĕрсен тепĕр икĕ-виçĕ эрнеренех Попов хуйхине эрехпе пусара-пусара арăмĕн вил тăпри çинчех вилсе каять. «Аннене вăл питĕ нумай нуша кăтартрĕ, çавăнпа вĕсене юнашар пытарас мар», – терĕ Сима ашшĕне пытарма пынă кӳршисене». – каласа парать калавçă. Кунта автор çапла майпа Попов хăйĕн арăмĕпе тăван хĕрне мĕн тери нушалантарса çитернине ĕненмелле кăтартса панă. Лена хăйĕн упăшкине юратман, чунĕпе вăл яланах Сергей çумĕнче пулнă. «Пирĕн ун чухнехи юрату вăл иксĕмĕрĕнне те ĕмĕрлĕхех чĕресене, пуçсене кĕрсе юлнă, – ăнлантарать Сергей хăйсен юратăвĕ çинчен. – Эпир çав юрату çинчен калаçмасан та ăна туйсах тăратпăр. Çав туйăмпа халь пĕр-пĕрне ырă тус-юлташ пек хисеплесе пурăнма пултаратпăр».

Çак сăмахсене илтекен Кашăк Хĕветĕрĕ пуçне пăркаласа иккĕленет, юрату ĕçĕ ун пек пулмасть пуль вăл тесе хуравлать. Лена сăнарĕ урлă автор пире апла юрату пулма пултарнине пуçĕпех ĕнентерет. Ахальтен мар Лена Сергее чунне уçса çапла сăмахсем калать: «Эпĕ сана юратни вăл – чи малтанхи таса юрату. Çавăнпа та эпĕ ăна хам виличчен те манас çук».

Тĕп идея. Юратăва мăшăр тата амăшĕ тивĕçĕсемпе хирĕçтерме кирлĕ мар тет автор. Сергейпе Лена шăпине Мăн Турă хăй сырнă. Геройсем ăна саманапа çыхаççĕ. «Пирĕн пурнăç çулĕсене вăл кĕтмен çĕртен пĕрлештерчĕ те, вăлах пĕр хĕрхенӳсĕр хăвăрт уйăрса ячĕ...» – пурнăç тупсăмĕ пирки шухăшласа калаçать Лена. Вăл хăйсем уйрăлнишĕн никама та айăпламасть. Çĕр çинчи çыннăн тĕллевĕ – çав шăпапа çураçасси, тем пек йывăр пул-

сассăн та хуçăлмасăр юлма пултарасси, тасалăхпа сăваплăха упраса хăварасси. Вĕсене пĕрле пулма пӳрмен пулсассăн таса юратăва ӳт-тир шайĕнчи выльăхла туйăмпа варалама кирлех-ши? Çав тасалăхпа сăваплăх çынна тĕрĕс çултан пăрăнасран, Наçтӳç тунă йăнăшсене тăвасран упраса сыхлать.

Прототипсем. Ç.Элкер яланах хăй тӳссе курнă ĕç-пуç çинчен çырнă, историлле хайлавĕсене халăхра çӳрекен халапсемпе истори документчĕсем çине таянса калăпланă. Çавăнпа та вăл тунă чылай сăнарăн прототипĕ пур.

«Хурапа шурă» повеçри калавçă (Сергей) автор хăй пулни иккĕлентермест. Çав хушăрах Лена сăнарне çыравçă темиçе çынран илсе идеаллă кăтартнă тени тĕрĕсрех пек. «Вутпа тăвăл витĕр» роман-хроникăра Семен Васильевăн тăван ялĕнче Клавти ятлă савнийĕ пур пек кăтартнă. Элкер хăйĕн малтанхи юратăвĕ пирки çапла çырнă: «Манăн ачаш та таса юратăвăм питĕ хыпса çуннăран Вассана курман чухне канăça çухататтăм... ун патне вĕри те кăвар сăмахсемлĕ çырусем çыраттăм... Хуравсем кĕтсе илейменрен çак туйăм вăраххăн сӳнме пуçласанах Вассана курмассерен каллех вăранатчĕ. Çав малтанхи юратăвăм ĕмĕрлĕхех чĕрене кĕрсе юлчĕ. Кайран эпĕ вăл та мана юратнине пĕлтĕм. Пирĕн ĕмĕтсене вăрçă путарчĕ, ĕмĕрлĕхех уйăрса ячĕ. Эпĕ хам инвалида тухнă хыççăн авланас шухăш тытман. Эпĕ Хусана кайсан вăл пĕр лайăх йĕкĕте качча тухрĕ. Çакăншăн кăмăллă юлтăм».

Лена сăнарне калăпланă чухне çыравçă хăйĕн пĕрремĕш юратăвне асра тытнă темелле.

Лена биографине аса илтерекен тепĕр сăнар пур çав роман-хроникăра. Вăл – Настя санитарка. Унпа Семен Васильев Хусанта сывалнă чухне паллашать, темиçе хут кинона кайса килет. Автор пире Настя Семена килĕш-

тернине кăтартать. Çав Настьăпа Ленăн амăшĕсем вырăс, ашшĕсем вара чăваш. Ахăртнех, çыравçă Лена сăнарне Хусан больницинче туслашнă хĕртен илсе те калăпланă. Элкер Нурăс больницинче чăнласах выртнă, анчах та унта вăл нимĕнле хĕрпе те паллашман. Хусанти паллашăва Нурăса куçарни çыравçа хĕрпе каччă уйрăлса кайнине сăлтавлама кирлĕ пулнă.

Попов кил-йышĕн прототипĕ те пулнах-тăр. Çемье ĕçкĕç кил хуçине пула арканнă тĕслĕхе таçта та, кирек хăш саманара та тупма йывăр мар. Наçтӳç сăнарне те Ç.Элкер чăн пулнă çынран илсе калăпланă. Унăн, хăй аса илнĕ тăрăх, 1923 – 1927 çулсенче Анастасия ятлă «арăм пекки» пулнă-мĕн. Çав пурнăçри хĕрарăма повеçе кĕртсе автор Ленăн идеаллă сăнарне вăйлатнă. Тен, малтанхи ăнăçсăр мăшăрланăвĕ çинчен аса илнĕ май çирĕпленнĕ унăн çак хайлава çырас шухăшĕ? Кирек мĕнле пулсан та сăнарсене вăл хайлавăн тĕп идейипе çураçтарса калăплани, çавна май геройсене хăйсен прототипĕсенчен урăхларах сăнлани иккĕленӳсĕр.

Ç.Элкер халăх пурнăçне социаллă куçпа пăхса тишкерекен эпик кăна мар, вăл туйăмпа кăмăл-сипет, ăс шайлашăвĕсем çинчен философилле шухăшлакан тишкерӳçĕ те. Çакна унăн «Хурапа шурă» повеçĕ те ĕнентерет.

Виталий Родионов.

ЭЛКЕР – ЖУРНАЛИСТ

Элкер пурнăçне тĕплĕн тишкернĕ май Виталий Григорьевич Родионов Çемен Васильевичăн журналистикăри пултарулăхне тĕплĕн палăртать. Тĕпчевçĕ унăн çулçӳрев очеркĕсем, историпе этнографи очеркĕсем паянхи кун та пысăк пĕлтерĕшлине ĕнентерӳллĕ илсе кăтартать. Вĕсен шутĕнче – «Кушлавăш уйĕ» очерк (1961-1966).

Хăй вăхăтĕнче хаçат-журнал валли сырнă очеркĕсем те Семен Васильевичĕн çивĕчлĕх пĕлтерĕшне çухатман. Вĕсенче вăл чăваш халăхне питĕ кирлĕ чи хумхануллă та пысăк ыйтусене хускатнă. «Ху чĕлхӳне ан хурла», «Пурнăçра икĕ япала кирлĕ», «Йывăр вăхăт», «Чăваш хаçачĕ» (Пурте 1917 çулта «Хыпарта» кун курнăскерсем), «Чăваш йышĕ хăвăрт ирĕлет» (1959), «Хам чăваш, ачасем – вырăс» (1959) тата ыттисем те.

Тăван халăхăмăра, халăхăн ашшĕ-амăш чĕлхине, авалхи культурине вăраха ямасăр çăлса хăварассишĕн тăрăшмалли çинчен чăваш халăх поэчĕ парти обкомĕн пуçлăхĕсем патне питĕ хумхантаракан сыру сырса янă.Çавна май хăйне валли хăрушлăх тупнă, анчах парăнман, хăйĕн шухăшĕнчен чакман. Хăюллă салтак çав вăхăтра чăваш халăхĕ умĕнче паттăрлăх кăтартнă, халăхшăн усăллă ĕç тунă, республика пуçлăхĕсене йăнăша тӳрлетмелли мелсене кăтартса панă. Çав историлле хутсем И.Я.Яковлевăн халал сăмахĕсемпе, Çеçпĕл Мишшин сырăвĕсемпе пĕр ретре тăраççĕ. Поэтăн тĕрлĕ аса илĕвĕсем те («Милли ушкăнĕнчен – «Канаш» союзне», «Хăрушă тĕлĕк хыççăн», «Г.В.Зайцев – Тал-Мăрса») тăван литературăмăршăн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Паянхи кун та вĕсем илемлĕ литература пек вуланаççĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ пичетленмен, кунсерен сырса пынă типтерсенче упранаççĕ, тет тĕпчевçĕ профессор.

Çирĕммĕш çулсен пуçламăшĕ пурнăç таканари шыв пекех хумханнă. Кам сăмахпа, чеелĕхпе çĕнтернĕ – çавă çиеле тухнă, хăйĕнчен «ухмахраххисен» пуçне минретнĕ. Хирĕç тăру, пĕрпĕрне курайманлăх, хăрушă тавăру мелĕсем хуçаланнă.

1923 çулта çапла А.Милли пуçарнипе «Чăваш сыравçисен

ушкăнĕ» ятлă пĕрлĕх чăмăртаннă. Унта Н.Шелепи, Ф.Павлов, С.Элкер, Н.Ваçанкка тата ытти çыравçăсем те кĕнĕ. Çак пĕрлĕхе коммунист мар çын ертсе пыни партин Чăвашри ертӳçисене тивĕçтермен. Вĕсем Миллие пуçлăхран кăлармалли вăхăт шыранă.

Милли пирки. Вăл – Алексей Прокопьевич Прокопьев. Иккĕмĕш хут тухакан «Хыпар» редакторĕ пулнă. Унта пĕрремĕш номертен пуçласа хаçата 1918 çулта чăвашсен Тĕп çар канашĕн сулахай эсерĕсен ушкăнĕ хупичченех ĕçленĕ. Сулахай эсерсем Совет влаçне ырлакансем пулнă, сылтăм эсерсем Учредительнăй пуху майлă, большевиксене хирĕç тăнă.

Прокопьев 1918 çулта чăваш коммунисчĕсене пĕр чăмăра йĕркелекенсенчен пĕри пулнă. Граждан вăрçинче Хĕвел тухăç фрончĕн 5-мĕш çарĕн политпайĕнче фронтри чăвашсем валли «Чухăнсен сасси» хаçат кăларса тăнă. Чĕмпĕр чăваш çыравçисен пултарулăх ушкăнне йĕркеленĕ, «Атăл юрри» журнал кăларнă çĕре хутшăннă. Чăваш çыравçисен ушкăнĕн Шупашкарти пĕрремĕш съездĕнчех, ушкăн членĕсемпе ВКП (б) обкомĕн кăтартăвĕсем пĕр-пĕринпе килĕшсе тăманнине пула, Милли ушкăнне салатса ярасçĕ, хăйне «буржуази националисчĕ» тесе намăслантарасçĕ. Вăл вара Мускава тухса каять, археологи институтĕнчен вĕренсе тухать, Чăваш енне тĕпчекенсен ушкăнне йĕркелет. Анчах унăн тăшманĕсем те сывăрмаççĕ. Вĕчĕрхенӳ туйăмĕ сынна ялан шывра е шурлăхра путарма, вут-çулăмра çунтарса яма хĕмленсе тăрать. Вăтăрмĕш çулсен вĕçнелле ăна, чăваш халăхĕн малашлăхĕшĕн вăй-халне шеллемен патриота, «Хыпарта» ĕçленине тата иккĕленӳллĕ вăхăтра 1917 çулхи революцисен вăхăтĕнче революцилле юхăма хирĕç, патша саманин йĕркине сыхласа хăварас тĕллевпе Раççей империйĕн тĕп хулинче ирттерекен Учредительнăй пуху тĕллевĕсене чун сывăхне йышăннă тесе, Шалти ĕçсен комиссариачĕн хура читлĕхне яланлăхах тапса кĕртсе ярасçĕ.

Хăв та сиссе юлаймастăн тăрăшса ĕçленĕ хушăрах сан пукану айне вăрттăн сирпĕтӳ хурса хăварнине. Вăл вăхăтра общество ĕçĕнче халăхра палăрнă Н.Золотовпа унăн ĕçтешĕсем Миллие вăл класлăха асăрхамасть тесе, чăваш илемлĕ литературишĕн пурин те пĕрле тăрăшмалла текен тĕллев лартнишĕн вĕчĕрхенсе айĕпланă. Халăх сăмахлăхне, совет тапхăрĕччен çырнă произведенисене, çав шутра К.Ивановăн «Нарспине» те, йышăнасшăн пулман парти чурийĕсем. Хăрушă вăхăт пулнă.

Мĕнлерех тытнă-ши хăйне çак лару-тăрура Ç.Элкер? Ун пирки акă мĕн хайланă Виталий Родионов:

«Чăваш халăх поэчĕ партин XX съезчĕ хыççăн 30-мĕш çулсене аса илнинче çав çусенче хăй тунă пĕр йăнăшшăн (репрессиленĕ писательсене мĕншĕн айăплани çинчен çырса кăларнă статьяшăн) питĕ хытă ӳкĕнсе çырнă. Тĕрĕссипе, ун чухне ăна çав статьяна çырма ирĕксĕрлесе хистенĕ-мĕн. Çав тапхăртах поэтăмăра 1923 çулта А.Милли обществинче пулнăшăн тата сăвăсенче «чăваш халăхĕ» тесе çырнăшăн (çапла çырнине ун чухне национализм, чăваш обществи хире-хирĕç классенчен тăнине йышăнманни вырăнне хунă) айăпласа партирен кăларма пикенеççĕ, Берия йĕрлевçисем канăç памаççĕ.

Ç.Элкере тапăнасси маларах, 1933 çултах, пуçланнă. Çав çулччен вăл «Сунталăн» секретарĕнче пулнă, яваплă редакторĕнче вара А.Петтоки ĕçленĕ. 1932 çулта парти Тĕп комитечĕн литература организацийĕсене тепĕр евĕрлĕ улăштарма йышăннă постановленийĕ тухнă хыççăн пирĕн критиксем çĕнĕ юрă тапратаççĕ: малтан пролеткультçăсене мухтанă пулсан, халĕ вĕсене хурлама пуçлаççĕ. Аса илер-ха Н.Шупуççынни статйинчи пĕр вырăна: «Çапах та творчество ĕçĕ малалла хăвăртрах кайма тапраннă хушăрах, парти Чăваш обкомĕн культпроп пуçлăхĕ Кузнецов юлташ каланă пек, хăш-хăш писательсем хушшинче урлă-пирлĕ арпашăнса кайни курăнчĕ.. Çав урлă-пирлĕ арпашнийĕ çĕрĕк либерализм ăшне кĕрсе кайса ют класлă идейăсем кĕрсе кайнипе килĕштерни пулса тăрать. Вăл оргкомитета ертсе пыракан юлташсенчен пĕри – Петтоки юлташ парти Тĕпкомĕ постановленине тĕрĕс мар «каялла чакни» тесе ăнланнинчен килнĕ...

Петтоки юлташ çавăн пек йăнăш ăнлантарнине парти обкомĕ пит татăклă кăтартса çĕмĕрсе тăкрĕ» (Сунтал. 1933. 3-4 №).

Кĕçех А.Петтокие редактортан кăлараççĕ, ун вырăнне Н.Шупуççыннине лартаççĕ. Çав уйăхсенче Ç.Элкерĕн пурнăçĕ те чаплах пулман-тăр. Редактор ăна идеологи йăнăшĕсемпе хăратса тенденциллĕ статья çырма хистет (кунта сăмах «Милли ушкăнĕнчен – «Канаш» союзне» статья çинчен пырать). Те статья килĕшменрен, те ытти сăлтава пула – майĕпен Ç.Элкере секретарь ĕçĕнчен (октябрьте), çулталăк вĕçĕнче редколлегирен те кăларса пăрахаççĕ, ун вырăнне В.Алакĕре тата Н.Кириллова (Патмана) илеççĕ.

Н.Шупуççыннипе Ç.Элкер хушшинчен хура кушак чупса кайнине чăваш халăх поэчĕн «Сунталта» пичетленнĕ «Кăтартуллă республикăшăн, произведенисен пахалăхĕшĕн» (1933. 8 №) статйин историйĕнчен аван курма пулать. Çав статьян малтанхи вариантĕнче Ç.Элкер «Еркĕн» поэма авторне хытах вăрçнă иккен. Критикăна чăтма пултарайман Шупуççынни вара статьяри хăй çинчен çырнă вырăна чĕрсе пăрахнă. Çакна эпир Ç.Элкерĕн сыхланса юлнă ал çырăвĕсемпе танлаштарса пăхсан аван куратпăр. «Е тата Шупуççыннин «Еркĕн» поэмине илетпĕр, – тесе çырнă Ç.Элкер хăй статйин малтанхи вариантĕнче. – Ку пысăк поэмăна Шупуççынни васкаса, ик-виçĕ уйăх хушшинче çырса пĕтерчĕ. Çавăнпа та поэмин ритмики тĕрĕс мар, сăвă йĕркисем ни силлабикăпа, ни тоникăпа çыхăнман начар сăмах куписем. Тата пуринчен ытларахăшĕ – çак поэмăра панă ĕçсем вĕсем, чăваш халăх историйĕ енчен илсен, ниепле те пулма пултарайман пушă фантазиллĕ шухăшсем кăна».

Октябрь уйăхĕнче Ç.Элкерĕн çак йĕркесене кăларса пăрахнă статйи тухать, çав вăхăтрах вăл яваплă секретарь ĕçĕсене туса пыма та пăрахать.

Мĕн çырнă-ши Ç.Элкер «Чăваш çырăвĕн ушкăнĕ» çинчен? Н.Шупуççынни пекех питленĕ-ши вăл ăна е урăхларах каланă?

«Чăваш илемлĕ литературипе тĕлĕшпе ĕçлекенсем йышланаççĕ пулин те, ку вăхăтра Шупашкарта (çавăн пекех ытти хуласенче те) вăл литераторсене пĕрлештерсе тăракан ним-ле организаци таврашĕ те çукчĕ-ха, – аса илет Ç.Элкер. – Ун пек организаци тума хăтланнисем 1921 – 1922 çулсенче Шупашкарта (Общество ревнителей чувашской литературы) тата 1920 çулта Чĕмпĕрте (литкружок) пулнă пулин те, кусен ĕçĕсем ăнăçман. Шупашкар организацийĕ хăйĕн ĕçĕсене те кăтартман. Чĕмпĕрти литкружок çеç 2 номер «Атăл юрри» ятлă журнал кăларса хăварнă».

Çак йĕркесем журнал редакторне ниепле те килĕшме пултарайман. Пĕрремĕшĕнчен, унта автор А.Милли ĕçне пысăка хурса хаклать. Иккĕмĕшĕнчен, 1922 çулта Н.Шупуççынни Шупашкарти обществăра хăй тăнă, эппин, ун ĕçĕн пĕлтерĕшне хакламан пек пулса тухнă.

Малалла Ç.Элкер А.Миллие «Хыпарта» ĕçленĕ çулсемчченех лайăх пĕлни, «Атăл юрри» вăл пуçарнипе тухни, хăй Милли чăвашсен пулас литераторĕ тесе хавасланни, ăна хисеплени çинчен çырать. Çав хушăрах статья авторĕ А.Милли чăваш литературипе интересленекенсене еплерех шыраса тупса хăй тавра пĕрлештерме тăрăшни, хăйĕн укçипе устав кăларни, пичет тутарни çинчен ăшшăн каласа парать. «Рабфакра Милли ушкăнне çырăнас текенсем 30 çынна яхăнах, – аса илет Ç.Элкер. – Уйрăм паллă çынсенчен пирĕн ушкăна Иван Мучи, И.Максимов-Кошкинский, Ф.Павлов, облĕçтăвком секретарĕ Г.Михайлов тата урăххисем те кĕме пулчĕç».

Апрелĕн 29-мĕшĕнче организацилле пуху пуçтарăнать. Пухура 40-50 çынна яхăн пулать. Вĕсем А.Милли докладне итленĕ хыççăн «Ушкăн» уставне йышăнаççĕ, ертсе пыма канаш уйăраççĕ: Милли (председателĕ), Ваçанкка (секретарĕ), Элкер, Шелепи тата Аверкиев (членĕсем).

Çакăн хыççăн «Ушкăн» канашĕ чăваш писателĕсен 1-мĕш конференцине хатĕрленме пуçлать. Ç.Элкер çав тĕлĕшпе А.Милли мĕн чухлĕ тăрăшни, вăй хуни çинчен аса илет. Малалла вăл общество мĕншĕн саланса кайнин сăлтавне лайăх

кăтартса парать. «Çак вăхăтрах, – тет вăл, – Милли хăй обществи çине Элменпе Золотов Микулайĕсем енчен сиввĕн пăхнине, унăн программине тиркенине те аванах пĕлсе тăрать. Акă пĕлетпĕр: эпир конференци пухма хатĕрленнĕ тĕлеллех, июнь уйăхĕнче, Элменпе Николай Золотов та хăйсем уйрăм чăваш писателĕсен ушкăнĕ тума хатĕрленеççĕ иккен».

Конференци уçăлнă кунсенче Элменпе Н.Золотов А.Милли «Ушкăнне» хирĕçле «Канаш» союз туса хураççĕ, çапла майпа оппозицине кĕрсе каяççĕ. Мĕнле майпа çĕнтереççĕ-ха вĕсем? Чи малтанах, конференцине саламланă пек туса А.Милли хыççăнах сăмах илеççĕ. Элмен парти Чăваш обкомĕ ячĕпе, ыттисем «Канаш» хаçат тата союз ячĕпе салам сăмахĕ калама тухаççĕ те «саламсене каланă хыççăнах, сасартăк Милли программине тиркесе, унăн обществине çĕмĕрмешкĕн тытăнаçĕ».

Ç.Элкер Милли оппоненчĕсен сăмахĕсене те илсе парать: «Милли программĕ вăл хытса шăнса ларнă чăваш аваллăхĕ çинче тапăртатса тăрать... Милли чĕрĕлекен çутă, çĕнĕ пурнăçшăн тăрăшмасть... Милли национализм енне туртăнать!» – тесе кăшкăраççĕ трибуна çинчен хĕрсе кайнă Элменпе Золотов Н.Пирĕн Милли аптăрать, вăл хăй программĕшĕн вирлĕн хирĕç тăраканни те пĕртен-пĕр çын анчах. Анчах ăна та лайăххăн калама ирĕк памаççĕ».

Акă епле пулса иртнĕ Милли обществине аркатни. Паллах, асаилӳре аркатуçисене тӳрккеслĕх енчен кăтартни журнал редакторне килĕшме пултарайман. Кунта вăл автор Миллие ăш пиллĕн ӳкернине туйман мар ĕнтĕ. Тата çав ушкăн çапла çăмăллăн арканса кайнă тени ун чухнехи «класс кĕрешĕвĕ хаярланса пырать» тенипе ниепле те çураçман-çке! Çакна Н.Шупуççынни аван ăнланнă. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл пĕр номер маларах çеç, Д.Данилов тĕпчевçĕпе тупăшса, лешĕ Милли обществи хăйне хăй арканнă тенине хирĕçлесе, çапла калать: «Çапла литература фронтĕнчи çапăçăва кăтарни нимĕн чухлĕ те чăннине кăтартмасть. «Теорилле» пулма пултарнă тесе шухăшлани оппортунистла теорисене «ют класс организацийĕсемпе вĕсен идейисем çапăçусăрах пĕтме пултараççĕ» те-

нине тĕреклетеççĕ. Çапла ăнлантарни писательсен речĕпе вулакан массăсен пуçĕсене пăтратни кăна пулса тăрать».

Н.Шупуççыннин çак шухăшне Ç.Элкер тепĕр номертенех хирĕçлет, А.Милли нимĕнле «ют класс организацийĕ» те йĕркеленеммине кăтартса парать. Статья вĕçĕнче вăл Миллие Н.Золотовпа унăн юлташĕсем мĕншĕн айăплани çинчен ăнлантарать: «Милли обществипе «Канаш» союзĕ хушшинчи уйрăмлăха эпĕ конференци хупăннă чух Миллипе Золотов Н. хушшинче пулнă пысăк тавлашуран тин сиссе çитрĕм, – тесе çырать вăл малалла каланă шухăш хăйĕн пулманни, вăл унпа килĕшмесен те пултарни çинчен шахвăртса. – Ку уйрăмлăх «Канаш» союзĕ «Канаш» хаçат платформи çине тăрса чăваш илемлĕ литературинче класлă çул-йĕршĕн кĕрешес, малашне социализмла пурнăç тăвассишĕн кĕрешес задачăсене лартнинче. Милли хăй обществи умне, нимĕнле класлăха та асăрхамасăр, чăваш илемлĕ литературишĕн пурте пĕрле (националистсем те, кулакла писательсем те, пролетарла писательсем те) тăрăшас задача лартнă».

Паянхи кун Миллие айăпланă çак сăлтавсем ытла та айван, куштанлану çеç пулни куç умĕнчех. Е тата «Милли чăвашсен авалхи йăлисене идеализацилесе вĕсем умĕнче пуç тайнă» тенине илсе пăхар. Çав çулсенче чиркӳсене аркатнă, масар-çăвасене чыссăрлатнă, ырă йăла-йĕркене тăпăлтарнă, халăх сăмахлăхне пуянсемпе чухăннисенни çине уйăрнă, «чăваш халăхĕ» теме те чарнă пулнă.

Халăхăмăрăн ырă йăлисемпе фольклорăн хакне паянхи кун эпир пĕлсе çитрĕмĕр ĕнтĕ. Çавăнпа та ун чухне Н.Золотов мар, А.Миллиех тĕрĕс пулнă тесе калама пултаратпăр. Вăл çав çулсенче халăх сăмахлăхне, çи-пуçне, археологи палăкĕсене ялтан яла пĕччен пухса çӳренĕ, вĕсене Чĕмпĕрти педтехникум тата Шупашкарти краеведени музейĕсене панă. Экспедицине вăл 1922 çулта тухса кайнă та сакăр уйăхран Шупашкара 44 кĕпе, 3 пин çавра юрă пухса таврăннă. 1923 çулта Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх выставкине хутшăннă, унта пĕрремĕш степеньлĕ диплом илме тивĕçнĕ.

А.Милли хăй чăваш ялĕсенче çӳрени, унта мĕн-мĕн пухни

çинчен «Чăваш çĕршывне тĕпчекен ушкăнăн» («Общество по изучению Чувашского края») 1923 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче иртнĕ ларăвĕнче каласа парать. Шăп çав командировка хыççăн пуçăнать те ĕнтĕ вăл «Чăваш çырăвĕн ушкăнне» чăмăртама. Çав ушкăнăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри халăх сăмахлăхĕпе йăлисене пухса тĕпчесси, пултарулăхра вĕсемпе усă курасси пулнă та ĕнтĕ. Çак ырă ĕçе А.Милли тăшманĕсем, идеологи сферине тӳнтеррĕн куçарса, «аваллăха идеализацилени», «класлăха йышăнманни» вырăнне хунă. Политикăлла ярлăк çакни вĕсене хăйсен авторитарлă влаçне çирĕплетме, хăйсем çеç тĕрĕс тума пултараççĕ тесе калама кирлĕ пулнă.

А.Миллин «Чăваш çырăвĕн ушкăнĕ» еплерех йĕркеленсе саланнине пăхса тухнă май эпир чăваш культура историйĕнчи тĕрлĕ пулăмсене, вĕсен чăн сăлтавне асăрхама пултартăмăр».

ЭЛКЕР – «ХЫПАРТА» ÇУРАЛНĂ ЖУРНАЛИСТ

Турă панă хăвачĕ чун-чĕрине кăтăклантарса хĕмлентернĕ вăхăтра Măн Упакасси ачи Çемен ашшĕн, хăйсен кӳршин Сидоровăн, арăмĕ вырăс пулнăран Майра Иванĕ текен тăнлă хресченĕн, çунатлă шухăшĕпе пĕрле малашлăха утмалли çула курнах. Кӳршĕри Кушлавăш шкулĕнче пĕлӳ илнĕ ашшĕ Василий Федотов чăвашсене ăслăлантарассишĕн тăрăшакан Н.В.Никольский патне çыру çырма хал çитерни те, И.Сидоров Măн Упакассинче шкул çурчĕ лартса ачасене икĕ çул вĕрентес ĕмĕтпе Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторĕпе И.Я.Яковлевпа тата Хусанти учительсен семинарийĕнчи чăваш учителĕсемпе çыхăну тытни тата ытти пулăм та алла кăранташ-ручка тыттарнă. Чухăнлăхра нушаланакан хут пĕлмен ентешĕсене май килнĕ таран пулăшас килнĕ вĕренсе ăслăланса пыракан талпăнуллă чăвашăн. Çапла майпа вăл чăвашсен «Хыпар» хаçат ĕçлевçисемпе çывăхланать, хăй те хаçата тăтăшах çырма пуçлать.

Журналист-публицистăн кун кĕнекинче хăварнă «Ачалăхри паллă кунсем» асаилĕвĕсем унăн пурнăçĕнчи пĕр тапхăрне пирĕн куç умне кăларса тăратаççĕ:

«И.Сидоров 1906-1907 çулсенче «Хыпар» хаçата илсе тăчĕ. Хусанта е Чĕмпĕрте тухнă чăвашла кĕнекесене илсе вĕсене чăваш ялĕсенче салатрĕ. Çав вăхăтра чăваш ялĕсенче читальнăсемпе библиотека таврашĕ çукчĕ, çакна пула усăллă кĕнекесем тупса вулама та питĕ йывăрччĕ. Сайра хутра кăна уйрăм кил-çуртсенче шкул ачисен учебникĕсене е кĕлĕ кĕнекисемпе «святойсен пурнăçĕ» çинчен калакан кĕнекесене куркалама пулатчĕ пулсан Иван Сидоров килĕнче вара хăйĕнех пĕр пĕчĕкрех шкап тулли кĕнеке тăратчĕ.

Иван Сидоров илсе тăракан «Хыпар» номерĕсене те çыру пĕлекенсем алран алла çӳретсех вулатчĕç, ун хаçачĕсене пуринчен ытла ялти учитель хăй патне пухăннă çамрăк хресченсене вуласа паратчĕ. Анчах та çак хушăрах нимĕнле хаçатпа та интересленмен çынсем ялта пушшех те нумай пулнă. Пирĕнпе юнашарах пуян Матви Мĕтри çемйи пурăнатчĕ. Унăн çитĕнсе çитнĕ ывăлĕсем те пурччĕ ĕнтĕ. Пирĕн çемьере тăтăшах кĕнеке-хаçат вуласа ларакансене курсан çав Мĕтри тăрăхласа кулма кăна тытăначĕ. «Хуть хăçан кил – сирĕн ачасен аллинче ялан кĕнеке-хаçат кăштăртатать! Те темĕнле тиек-улпут пуласшăн ĕнтĕ вĕсем!.. Суха касси тăрăх çӳрекенсем пулмаççĕ пулмалла ку ачасем сан, Ваççа пичче!» – тетчĕ те вăл аттене унăн-кунăн пăхкаласа мăшкăллăн кулса илетчĕ.

Кӳршĕсем темĕн каласан та пирĕн çемье кĕнеке-хаçат таврашне юратма пăрахмарĕ. Вĕсене пиччесем тĕрлĕ çĕрте – пасарсенче, чукун çул станцийĕсенче тупкаласа илетчĕç. «Хыпар» хаçата пирĕн килте ятарласах çырăнса илмен. Унăн уйрăм номерĕсене кăна Ачча пасарĕнче пĕр коробейникран илсе тăнă, пасарта илеймен номерĕсене И.Сидоровран илсе вуланă. Тăван чĕлхепе тухакан хаçатри çĕнĕ хыпарсем, унта патшалăхри тата тĕнчери лару-тăру çинчен каласа панисем, паллах, пире хытă интереслентернĕ. Эпĕ хам пуринчен ытларах хаçатри сăвăсене, калав пеккисене кăмăлласа вулаттăп. «Хыпар» хаçата хупни пирĕн çемьене чылай пăшăрхантарчĕ.

Çав вăхăталлах «Хыпар» редакторне Сидор Игнатьева арестлени те паллă пулчĕ. Ун çинчен пире И.Сидоров пĕлтернĕччĕ

пулас. С.Игнатьев «Хыпарăн» чи активлă та революциллĕрех редакторĕ шутланнă.

«Хыпара» хупса хуни малта пыракан чăваш хресченĕ-семшĕн умри хунара сӳнтерсе лартнă пекех туйăнчĕ пулмалла. Çавăнпа вĕсем уншăн хытах кулянчĕç.

«Пĕртен-пĕр чăваш хаçачĕ пĕтрĕ, редакторне те хупса лартрĕç... Хăçан та пулсан çĕнĕрекн кăларма май çук-ши чăваш хаçатне? Тухĕ-ши вăл, тухмĕ-ши?» – çакăн пек ыйту тухса тăчĕ хаçата юратнă çынсем умне. Анчах та ун çинчен камран ыйтса пĕлес? Редакция хупнă, унта ĕçленĕ çынсем ăçта пурăнни паллă мар. Кам патне çырса ярас? «Атьăр-ха Никольский профессортан ыйтса пăхар», – терĕç те пирĕн пиччесем, ун патне çыру çыртăмăр. Мĕншĕн Никольский патне? Мĕншĕн тесен ун чух Никольский пулни тата чăвашла календарьсене кăларса тăни паллă пулнă.

Никольский нумай кĕттермерĕ, ответ çырса ячĕ. «Пилĕк пин тенкĕ пулсан чăвашла хаçата каллех кăларма пултараттăмăр. Тата çак укçа çулленех кирлĕ пулĕччĕ. Анчах та ун чухлĕ укçана ниçтан та тупса илме çук», – тесе пĕлтерчĕ вăл çырăвĕпе. Никольский ответчĕ савăнмаллах мар пулсан та çав пысăк вĕреннĕ çынтан çыру илни мана çав тери çĕклентерсе ячĕ. Эпĕ çак статья пуçламăшĕнчех хам çинчен «кĕнеке çыракансене темĕнле турă вырăннех хурса хисепленĕ» тесе çырнăччĕ. Никольский çырăвне илнипе хытă хавасланнине пула манăн çакăн пек кулăшла инкек те пулса тăчĕ. Çыруне такам пырса панă вăхăтра эпĕ хамăр пӳртре пĕр-пĕчченех пулнăччĕ: пиччесенчен пĕри, хаçата юратаканни, пахчара темскер чакаланатчĕ. Çырăва васкавлăн вуласа тухрăм та ăна пиччене кăтартас тесе анкартине кайма чупса тухрăм. Анкартине тухмалли калинкке уçах тăратчĕ. Юпах тиха пек ĕрĕхсе пыраканскер калинкке урати урлă каçнă чух пĕрре кăна ялт! çӳлелле сикрĕм. Сикрĕм те, çамкам калинкке тăррине витнĕ хулăн хăмана шан-н! пырса çапăнчĕ. Пуçăм янраса кайрĕ, куçсенчен вут-хĕм сирпĕнсе тухрĕ. Шăм-шакăм лăчăрах тĕршĕнсе анчĕ. Ни макăрас, ни кулас! Анчах та кам айăплă? Никам та мар – хамах!..

Çамкана тытса хыпашларăм та ыратнине палăртмасăр пичче патне утса кайрăм. Вăл ан куртăр тесе çырăва вуланă чух ыратакан сурана ал лаппипе хупласа тăтăм.

Пичче çырăва ик-виçĕ хут вуласа тухрĕ те:

– Çук, тухаймасть пулĕ çав ĕнтĕ ку хаçат!.. Кам пама пултартăр пилĕк пин таран?! Халăхран пуçтармалла та – май килмест пулĕ. Пухма ирĕк памĕç, – тесе çырăва мана каялла пама тăчĕ. Çав самантра вăл курах кайрĕ: ман çамка çине пысăк мăкăль тухса ларнă иккен! Тата тирĕ шăйрăлса кайнипе унтан юн сăрхăнма тытăннă.

– Ах, чим! Мĕн пулнă вара сана?! Çамку çине юнлă çăпан ӳссе ларнă! – терĕ вăл сасартăк хăраса кайса.

Эпĕ ăна хампа мĕн пулни çинчен каласа кăтартăм.

– Акă мĕн тунă сана савăнăç! Анчах çырăвĕнче савăнмалли нимĕн те çук вĕт!.. Юрать-ха, пуç мими кисренмерĕ пулсан. Виçесĕр савăннипе вилме те пултараттăн! – тесе хучĕ пичче сӳрĕккĕн кулкаласа.

«Хыпар» хаçат чăнах та урăх тухаймарĕ. Анчах та вăл сапса хăварнă чăваш поэзийĕн хĕм пĕрчисем ман чĕрене те лексе унченех поэзие юратнă кăмăл-туйăмра нумай çулсем хушши сӳнмесĕр çиççе тăчĕç.

* * *

Хусана вырнаçсанах мана февральти революци хыççăн тухма пуçланă «Хыпар» хаçат редакцине кайса курас шухăш тытса илчĕ. Унта эпĕ чăвашсен çĕнĕрен ӳсекен журналисчĕсемпе писателĕсене курма пулать пулĕ тесе шухăшланă. «Хыпарăн» малтанхи номерĕсенчех А.Милли çырнă пысăк сăвăсемпе пичетленсе тухнăччĕ те – çав Миллие курма ĕмĕтленнĕ тата урăххисемпе те паллашма пулĕ тенĕ. Кунта çакăн çинчен те каласа асăрхаттармалла: кĕнеке-хаçат кăларакансемпе эпĕ ачаранпах интересленнĕ, писательсене вара темĕнле турă вырăннех хурса хисепленĕ. Çавăнпа та «Хыпар» редакцинче пулассине тата унта ĕçлекенсене курассине пит те пысăк вырăна хунă.

Эрнере икĕ хут кăна тухакан «Хыпар» редакцийĕ ун чухне

Хусан хулин пĕр лăпкă районĕнчи Дегтярев урамĕнче икĕ хутлă пысăк мар çуртăн аялти хутĕнче вырнаçса тăратчĕ.

«Хыпар» хаçат редакцинче эпĕ август-сентябрь уйăхĕсенче çеç мĕнпурĕ улт-çичĕ хут пултăм, кайран унта çӳремен, мĕншĕн тесен Октябрь революцийĕ çывхарнă май ку хаçат тӳрленми йăнăш çулпа кайни ман пек политикăллă айванселшĕн те паллă пулчĕ. (Манăн сентябрьте панă статьясене вăл октябрь уйăхĕнче тин пичетлесе кăларчĕ.) «Хыпар» редакцийĕ пĕртен-пĕр пӳлĕм кăна йышăнса тăратчĕ те, ун ăшчикĕ чухăнччĕ. Виç-тăватă кив сĕтел, пилĕк-ултă пукан тата пĕр-икĕ пысăк мар шкаф кăна ларатчĕç çак пысăк мар пӳлĕмре.

Редакцинче мана яланах редколлеги членĕ М.Филиппов тата хаçат секретарĕ А.Лбов юлташ йышăнса илетчĕç. Филипповĕ университетăн юридици факультетĕнчи виççĕмĕш курсра вĕренекен Чистай уесĕнчи чăваш пулнă. Тарават кăмăллă çын, вăл редакцие пынă çынсемпе аван калаçатчĕ. Филипповпа эпĕ лайăх паллашса çитрĕм. Унтан хама Милли поэтпа паллаштарма ыйтрăм. Анчах та Милли хăй, хаçата калăпласа кăларакан редактор пулнă пирки, редакцире сайра хутра кăна пулкаланă та, ăна курма çукчĕ. Пĕррехинче, юлашки хут кайсан, редакцине тĕссĕрленнĕ кăвак костюмпа кăвак шлепке тăхăннă, хул хушшине портфель хĕстернĕ пысăк мар, хăйпашка та шурччас питлĕ çын пырса кĕчĕ. Вăл редакцири çынсем енне çăмăллăн пуç тайса Филипповпа тата Лбовпа темĕн калаçкаларĕ те пушă сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Портфелĕнчен хаçатăн çитес номер гранкисене кăларчĕ, корректура вулама пикенчĕ.

– Акă эсĕ курас тенĕ Алексей Прокопьев килчĕ, паллаш! – терĕ мана Филиппов.

– Мĕнле Прокопьев? Мана вăл мар, Милли кирлĕ терĕмçке! – тетĕп эпĕ.

– Прокопьев – Милли ĕнтĕ вăл, – терĕ Филиппов.

Филипповпа эпĕ мĕн калаçнине Милли илтрĕ-и, илтмерĕ-и – пуçне çĕклесе пăхмасăр çаплах корректурине вуларĕ.

Поэта темĕн вырăнне хунипе эпĕ хам вырăнтан та тапранаймарăм-ха. Вăхăтран-вăхăт майĕпе çех ун çине пăхкаласа

илетĕп. Пĕрре пăхатăп та – вăл, ырханскер, шурччас та çӳхе питлĕскер, çав тери имшер те мĕштĕркке çын пек курăнать, тепре пăхатăп та – мăн кăмăллă чĕмсĕр интеллигент пек туйăнать. Ĕçне пăрахса унталла-кунталла пăхкаласанах эпĕ унпа калаçма пуçланă пулăттăм тен. Анчах та вăл куçĕсене гранкисем çинчен илмерĕ, ниçталла та пăхмарĕ, корректурине пикенсех вуласа ларчĕ. Çакна пула эпĕ ăна сăмах хушма хăяймарăм тата мĕнтен калаçма пуçлас пирки те аптăрарăм. Писательсене-поэтсене ытла та пысăка хурса хакланипе унăн умĕнче именерех те тăтăм пулас. Вара «Хыпар» редакцинчен Милли поэтпа калаçмасăрах тухса кайрăм.

Çакăнтан кайран çак Миллие манăн шăпах тепĕр çур çултан кăна, 1918 çулхи çуркунне тин, курма тӳр килчĕ. Мăнкун эрнинче эпĕ киле кайса курма шут тытрăм. Мускава Улатăр урлă каякан поездпа Хусантан çĕрле тухрăмăр. Купесĕр уçă вагонра ларатпăр. Мăнкун эрни тăнă пирки пулас, поездра çын сахал. Хунарсене çутман та, вагонсенче тĕттĕм, çакна пула ху çывăхăнта ларса пыракан çынсен сăнне те уйăрса илме çук. Ире хирĕç поезд Шăхран (Канаш) станцине мĕшĕлтетсе çитрĕ. Кунта чылай тăтăмăр. Тул çутăлса çитет. Халь ĕнтĕ уçă вагонра камсем, мĕнле çынсем ларнине те куратпăр. Акă эпĕ ура çине тăтăм та хамран пĕр виçĕ плацкарт урлă, проход тепĕр енче, хайхи Милли çывăрса ларнине курах кайрăм. Вăл хура пальтопа, шлепкепе, хул хушшинче хăйĕнчен уйрăлми тулли портфелĕ. Ун патне пырса лартăм, анчах вăл çывăрать те, ăна сăмах хушма каллех хăяймарăм. Поезд Йĕпреç станцине çитсе чарăнчĕ. Миллие куçран çухатмарăм. Вăрансанах пĕр виçĕ сăмах калаçасчĕ кунпа тетĕп. Йĕпреçе çитсен Милли пуçне йăтса чӳречерен пăхса илчĕ те васкасах вагонран тухрĕ. Эпĕ те анса юлтăм. Анчах эпĕ анса çитнĕ вăхăтра Милли вокзал çуртĕнчен иртсе Йĕпреç станцин кăнтăр енчи урамĕ хушшинелле кĕрсе те кайнă. Манăн каллех унпа калаçса паллашасси пулмарĕ. Эпĕ чухлатăп: вăл Шурут енчи çын, хăйсен ялне кайма васкать ĕнтĕ. Манăн çул унталла мар, тепĕр енне лле каймалла. Ăш-чик вĕчĕрхенсе кайрĕ. «Паллă поэтпа»

калаçса паллашайманшăн хама хам ӳпкелесе пăшăрхантăм.

1917 çулхи «Хыпар» Чăваш халăх ушкăнĕ (Чувашское национальное общество) кăларакан хаçат пулнă. Малтанхи вăхăтра эпĕ ку сăмахсем мĕне пĕлтернине те тĕрĕс ăнланман-ха, унăн задачисене те пĕлмен. Чăваш халăх ушкăнĕ политика тĕлĕшĕнчен мĕнле платформа тытса пынипе эпĕ ун чух интереслансех те кайман. Ку ушкăна нимĕнле партипе те çыхăнса тăман, партисĕр организаци пулĕ тесе шухăшланă. Тепĕр енчен тата, тĕрлĕрен партисемпе политикăлла ушкăнсем пĕр-пĕрин программисене хытă хурласа харпăр хăй çулйĕрĕсене çех мухтанă тапхăрта кам тĕрĕссипе тĕрĕс маррине тишкерсе ăнланма та чылай вăхăт кирлĕ пулнă. Маншăн пулсан ун чухне ĕмĕртен ĕмĕре пусмĕрлăх тӳссе пурăннă чăваш халăхĕ ирĕке тухни тата унăн тăван чĕлхипе тухма пуçланă пĕртен-пĕр хаçачĕ хаклă шутланнă. Малтан тата эпир 1917 çулта тухма пуçланă «Хыпар» та 1907 çулта хупса лартнă «Хыпарăн» платформинех тытса пырать пуль тесе шаннă. Çавăнпа та эпĕ «Хыпар» хаçата кăларакансене курасшăн çуннă, вĕсемпе паллашма тăрăшнă. «Хыпар» хаçата кăларакан Чăваш халăх ушкăнĕнче те, хам пекех, чăваш литературипе искусствине тăвасшăн çунакан çынсем çех тăраççĕ пулĕ тенĕ. Анчах та унта тĕрлĕрен çынсем пулнă. Ушкăн пуçĕнче совет влаçĕ тăвассине хирĕç кĕрешекен эсерсемпе националистсем – Г.Алюновсем, С.Николаевсем, И.Васильевсем тăнă. Вĕсем пулас Совет влаçĕпе нихçан килĕшми çынсем пулнă, ку вăл Октябрь революцийĕ çывхарнăçем пушшех те уççăн палăрса пычĕ. Алюновпа Семен Николаевсем «Хыпар» редакцинче хăйсем ĕçлесе ларман, вĕсем унта теплере, сайра хутран кăна кĕркелесе тухнă пулĕ тен, анчах та вĕсем хаçат платформине тытса тăраканĕсем пулнă. Редакци аппаратĕнче ĕçлекенсем – А.Лбов, университет студенчĕсем Андрей Васильевпа М.Филиппов тата А.Милли – влаç тĕлĕшпе кусем хăйсем те иккĕленнĕ пулмалла, ку вĕсем каярахпа коммунистсен партине кĕнинчен те паллă пулчĕ. Анчах та вĕсем хăйсене националистла общество пуçлăхĕсем парса тăракан кăтартусенчен ир-

теймен. Редакцире ĕçлекенсем хăйсем патне пынă çынсене ăшшăн йышăнса илетчĕç, вĕсемпе кăмăллăн калаçатчĕç.

Октябрь революцийĕ çывхарса çитнĕ майăн «Хыпар» советсене хирĕç хаяр статьясем çырма пикенчĕ. Вăл Совет влаçĕ тăвассине хирĕç пыни, юлашкинчен Аслă Октябрь революцине те сивлесе çырни мана килĕшмерĕ. Çакна курса эпĕ «Хыпар» редакцийĕпе çыхăну тытма пăрахрăм. Октябрь хыççăн вара унта кайса та çӳремен».

* * *

Çемен Элкер

ПУРНĂÇРА ИКĔ ЯПАЛА КИРЛĔ

Тинĕсри вăйпа хумсем çырана пырса çапнă пек манăн пуçăма пысăк шухăшсем хумханса килсе пурнăçăма канăçлăх памаççĕ. Çак хама канăççăрлантарса тăракан вăйлă шухăшсене лăплантарасчĕ тесе, вĕсем асаплантарнинчен хăтăласчĕ тесе вĕсене хамăн пуçăмри тăн йĕтемминчен кăларса шурă хут çине тăкас терĕм. Çакă шурă хутах тата «Хыпар» редакцине ярса «Хыпар» çине çаптарас терĕм: мана канăççăрлантаракан вăйлă шухăшсем «Хыпар» хаçачĕ урлă пĕтĕм тăван чăвашсем хушшине сарăлччăр, вĕсене те пурне те пысăк шухăша яччăр тетĕп...

Тăван чăваш çыннисем! Эпĕ сире: манри пысăк шухăш «Хыпар» урлă пĕтĕм тăван чăваш хушшине сарăлтăр та вĕсене пурне те пысăк шухăша ятăр тесе каланăшăн ан çилленĕр мана. Эпĕ ку сăмахсене усал сунса мар, чăваш халăхне пурне те тăван вырăнне хурса, ырă сунса калатăп. Çак шухăшсемпе эпĕ çывăрайматăп. Çавăн пекех çак шухăшсем пур вăранмасăрах çывракан чăваш хресченĕсене вăратинччĕ часрах тесе анчах калатăп...

Мухтавлăхра пурăнас тесен пурнăçра «икĕ япала» кирлĕ: пĕри пурлăхшăн тăрăшни, тепри ăслăлăхшăн тăрăшни пулать. Пурлăхшăн тăрăшни: çурт-йĕршĕн, ĕçме-çимешкĕн тата ытти... ăслăлăхшăн тени вĕренӳшĕн е ăс хастарлăхĕшĕн тăрăшни тени пулать...

Çапла пирĕн чăваш хресченĕсем: пурлăхшăн тăрăшнипех

тĕнчере мĕн-мĕн пуррине те, мĕн пулнине те пĕлмеççĕ, пĕлесшĕн те хыпмаççĕ; çырура ăслăлăха вĕренсе, ун урлă çутă тĕнчене курасшăн мар. Авал Исаія пророк иудейсене каланă пек, пирĕн чăваш халăхĕ те вĕренӳ ăслăлăхне илтесшĕн мар, хăлхисене хуплаççĕ, курасшăн мар, куçĕсене хĕсеççĕ... Çапла эпир ку тĕнчере хамăрăн пурлăхшăн анчах пурăнсан, пурăнма пулать-и вара вăл?!

Чăвашсем! Çапла хальхи пекех пурăнсан, эпир çĕр çинче хамăр чăваш чĕлхине нумаях сыхласа тăраймăпăр, эпир ку таранччен ют халăхсен ури айĕнчен тухаймарăмăр, хальтерех васкамасан, пире ĕлĕкхинчен те хурлăрах кунсем килĕç, мĕншĕн тесен ытти халăхсем пурте васкаççĕ, пурте пĕрлешсе, ушкăнсем пухăнса пурнăçĕсене малалла яма хыпаланаççĕ.Тутарсенех илер-ха, вĕсем епле тăрăшаççĕ: пĕтĕм мусульманран суйласа янă пуху малтан Мускавра турĕç, унтан иккĕмĕш пуху Хусанта июлĕн юлашки кунĕсенче эрне ытла тăчĕ, тата халĕ виççĕмĕш пуху Ташкент хулинче пулать. Вĕсем пур пысăк хуласенче пекех пĕрлешсе ушкăнсем тунă, халĕ темĕн тĕрлĕ хаçат-журнал хăйсене валли кăлара пуçларĕç. Эх! эпир, чăвашсем, вырăспа тутар хушшинче авалтанпах хурлăх, хĕнхур курса пурăнтăмăр, хамăр сикмен пиркиех каллех юлатпăр вĕсен ури айне. Вĕсем вĕренеççĕ, çуталаççĕ, эпир çаплипех пурăнăпăр, кайран каллех пиртен кулма пуçлĕç...

Çапла чăвашсем хушшинче ларакан пĕр вырăс ялех мĕнле чăвашсене пăхăнтарса пурăннă. Ун пек вырăссене кулмалла, чăвашсене макăрмалла ĕçсем ĕлĕк лăнках пулкаланă... Ытти çĕрти, таврари вырăссем те час-часах хĕсĕрлесе пурăннисене калаççĕ. Вĕсем çапла пиртен хĕсĕрлесе-мăшкăлласа кулнисене эпир часах манаяс çук, анчах çавах та вырăссемпе те, тутарсемпе те малашне, ĕлĕкхине астуса, вĕсем çине çилленсе, вĕсемпе çапăçса-вăрçса пурăнас мар! Яланах пуринпе те килĕштерсе пурăнма тăрăшар!!! Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăннине нимĕн те çитес çук.

Тата ватăсем калаççĕ: «Авал чăваш ачисем ăçта та пулсан çул çинче атă йĕрри курсассăн, ах, вырăс пур тесе хăраса

тарса пытанаттăмăр теççĕ. Мĕншĕн апла атă йĕрринчен те хăрама вĕреннĕ-ши ун чух вĕсем? Хăрама вĕрентнĕ! Çавăнпа вĕсем ытти халăхсенчен хăраса сехĕрленсе анчах пурăннă. Çав хăранă пирки вĕсем тутарпа пĕрлешеймен, хутшăнайман. Вĕсемпе мар, хăйсем ăссĕн те пĕрлешсе, пухусем туса хăйсен пурăнăçĕ йывăрри çинчен канашлайман, пухăнас тесен те вĕсене пухăнма паман.

Чăвашсем! Çак манăн каланă сăмахсенчен ытти халăхсем ĕлĕк пирĕн асаттесене нимĕн вырăнне те хуман, нимле çын вырăнне те шутламаннине куратăр ĕнтĕ! Вĕсем таптанă сире! Эпир вĕсен ури айĕнче сапаланса пурăннă, халĕ те ку таранччченех тухаймастпăр, ку таранччен вĕсен урисем айĕнчех мари вара эпир?! Чăваш халăхĕ! Эпир халĕ те ют çын айĕнчех таптанса пурăнатпăр! Ĕлĕк пире ирĕклĕх памарĕç, пире вĕрентмерĕç, эпир халĕ те тĕттĕм. Мĕншĕн вĕрентсе çутта кăлармарĕç-ши пире? Никам та пирĕн хута кĕрекен çук!..

Тăван чăвашсем! Ĕлĕк пирĕн ирĕклĕх çукчĕ, çак ирĕклĕхе ĕлĕкхи патшасемпе пуçлăхсем партармарĕç, анчах çĕр çул хушшинче те çак ирĕклĕхе илсе хура халăха парасшăн нумай тӳрĕлĕхлĕ çынсенĕн пурнăçĕсем пĕтрĕç, нумай юн тăкăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ çав ырă çынсем тăрăшнипе пире те, чăвашсене, «ирĕклĕхе» хамăр алла илсе килсе пачĕç. Ĕлĕк хамăр пурнăçа лайăхлатас тесен те пире çăмăллатма çукчĕ, халĕ çав ĕç хамăр çинче. Юсас пулсан хальтерех васкамалла, васкамасан, ытти халăхсенчен юлатпăр! Халĕ ĕнтĕ çак ирĕклĕхре пур (халăх)сем те хăйсемшĕн тăрă(шаççĕ). Хамăр тăрăшмасан (...) Уес управ (...)енĕсем те пурте чăваш (...)нченех, вара вĕсем пире (хӳтĕ)лĕччĕç. Ытти халăхсене мăшкăллама ямĕччĕç... Эпир вĕсене хамăр чăвашсем пурăнакан вырăнсене паянах суйлама тупса кӳртĕттĕмĕрччĕ те, анчах тата пирĕн чăваш хушшинче вĕреннĕ çын сахал, çитмест. Ун пек вырăнсене пысăкрах школсенче нумайтарах вĕреннĕ çынсем кирлĕ. Нумай вĕреннĕ çынсене тупас тесен пирĕн, чăвашсен, пысăкрах школсем тума тăрăшас пулать... Халĕ пирĕн чăвашсен хăш-хăш пысăк ялсенчех пĕчĕкçĕ кĕçĕн школсем те çук. Çакна курсан эпĕ питĕ пысăк

хуйха каятăп. Мĕншĕн пирĕн чăвашсем вăранмаççĕ-ши часрах, мĕншĕн пырпала хырăмшăн тăрăшсах пуçа çĕклесе çут çанталăка йĕри-тавра пăхма та ерçеймеççĕ-ши? тетĕп... Хресченсем, тăван чăвашсем, вăранăр часрах!!!

«Хыпар» хаçат, 1917, 39 №.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ ÇЕМЕН ЭЛКЕРĔН ХАÇАТ–ЖУРНАЛТИ ĔÇĔ ÇИНЧЕН

Аркадий Александрович Эсхель, эпĕ Йĕпреç вăрманĕнче вунă çул «çĕтсе çӳренине» пĕлсен, «Капкăн» редакцийĕнче ялан Элкере аса илетчĕ. Чылая каякан калаçусенче вăл хăйсем Шупашкарта мĕнле ĕçлени, Семен Васильевичпа туслашни пирки калаçатчĕ. Унăн сăмахĕсенчен те, чăваш халăх поэчĕн сакăр вунă çулхи менелникĕ тĕлне ятарласа кăларнă «Поэт кунçулĕ» кĕнекинчен те çакна асра тытса юлнă:

«Семен Василеьвич 1921-1922 çулсенче Мăн Упакассинчи пуçламăш шкулта учительре ĕçлет.

Ĕнтĕ революци пулнăранпа тăватă-пилĕк çул иртнĕ, анчах ялти лару-тăру йывăр-ха. Вăрçă вăхăтĕнче юхăннă хуçалăха ура çине тăратма ĕлкĕреймен, Атăл тăрăхĕнчи халăхшăн хăрушă выçлăх йăтăнса килет. Ял ачисем шкула çӳреме ӳркенмеççĕ-ха, çапах та вĕсене выçлăх халтан ярать, ураран ӳкерет. Инкекрен хăтăлмалла! Семен Васильевич тăрăшнипе ялти ачасем валли виçĕ столовăй уçаççĕ, вĕсен ĕçне учитель хăй пăхса-йĕркелесе тăрать. Ĕç нумай: кăнтăрла ачасене вĕрентмелле, каçсерен – çитĕннисене. Çав хушăрах Семен Васильевич сăвă-калав валли те вăхăт тупать. Унăн «вăрттăн тетрачĕ» (сăвă тетрачĕ, ара!) хулăнлансах пырать, хăшпĕр сăввисем ĕнтĕ Шупашкарта та çапăнса тухаççĕ.

Тин çеç чăмăртаннă Чăваш автономийĕн тĕп хули - Шупашкар ӳснĕçемĕн ӳсет. Кунта ĕнтĕ Хусантан Чăваш театрĕ, «Канаш» хаçат редакцийĕ куçса килнĕ. Майĕпен кĕнеке кăларас ĕç аталанма тытăнать. Шупашкар ĕнтĕ – тăван культура вучахĕ. Вăл инçетри Мăн Упакассинче пурăнакан çамрăк по-

эта та илĕртмеллипех илĕртет. Тата ăна Хусанта паллашнă тусĕ – Хумма Çеменĕ хаçатра ĕçлеме йыхăрать.

Çапла вара, 1922 çулхи кĕркунне С.В.Элкер ялтан Шупашкара куçса килет. Малтан вăл – «Канаш» хаçатри тăлмачă, корректор. Çав вăхăтрах Семен Васильевич инвалидсен кооперацине ĕçне те активлă хутшăнать. 1923 çулхи апрель уйăхĕнче Кооперацине пĕрлешĕвĕн уполномочĕннăйĕсен облаçри съездĕнче С.В.Элкере пĕрлешӳ правленийĕн членне суйласа лартаççĕ. Правленире вăл член-секретарь ĕçĕнче икĕ çул ытла ĕçлет. 1925 çулхи август уйăхĕнче, «Канаш» хаçат редакцийĕ чĕннипе, Элкер каллех журналист ĕçне куçать. Кунта вăл 1933 çул вĕçне çитиччен информаци пайне ертсе пырать. Çав хушăрах «Сунтал» журнал секретарĕн ĕçĕ те ун çинче тытăнса тăрать. Кайрантарах вăл – Чăваш радиокомитечĕн политикăлла редакторĕ, кĕнеке издательствинчи илемлĕ литература секторĕн аслă редакторĕ. Пĕрмаях çапла пысăк те ответлă ĕçре.

Тăван çырулăха чĕререн юратакан поэт, С.В.Элкер, малтанхи чăваш совет писателĕсемпе журналисчĕсен йышне пĕр организацие пĕтĕçтерес, вĕсемпе пĕрле «Канаш» союза туса хурас ĕçе активлă хутшăннă, уйрăмах вăл çамрăк писательсене пăхса çитĕнтерессишĕн тимлĕ тăрăшнă. Алла тин кăна писатель перине тытнă миçе çамрăка вăл, хăйпе юнашар лартса, лăпкăн та тӳсĕмлĕн ăс паман-ши? Чăн-чăн талант пурринне туйса илсен, кама вăл пĕтĕм ырă кăмăлĕнчен литература çулĕ çине тухма пехиллемен-ши? Хальхи паллă писательсен кĕнекисене нумайăшне вăл хăй аллипе редакциленĕ.

1930 çулта С.В.Элкер Коммунистсен партийĕ ретне кĕнĕ. Нумай çул хушши вăл литература организацине ертсе пырас ĕçе хутшăннă, вунпилĕк çул хушши Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени членĕ пулнă.

«Эпĕ яланах пĕр-пĕр ĕçре ĕçленĕ, службăра тăнă, – тесе çырать Семен Васильевич автобиографийĕнче, – ĕçрен пушаннă вăхăтра вара хамăн пултарулăх ĕçĕпе ларнă». Çавăн пек «службăра тăнă» хушăрах вăл хăйĕн чи паллă та чи пысăк

кĕнекисене çырнă. Вĕсен хисепĕнче: «Самана» сăвă кĕнеки, «Хĕн-хур айĕнче» поэма, «Вăрçă кунĕсем» («Вутпа тăвăл витĕр»), «Шурăмпуç килсен» ятлă романсем, «Хурапа шурă» повесть тата ытти нумай-нумай произведени.

Улăпла ĕç, паттăр ĕç! Ахальтен мар ĕнтĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ 1940 çулхи июнĕн 23-мĕшĕнче кăларнă указпа Семен Васильевич Элкере Чăваш халăх поэчĕ ятне панă. Чыслă ят, тивĕçлĕ ят!»

ГЕОРГИЙ ЕФИМОВ АСА ИЛНИ

Умсăмах пекки

Хăшĕ-пĕри, çак аса илнисене вуласан, С.Элкертен тăрăхлаççĕ теме пăхĕ. Çук, пĕрре те апла мар. Семен Элкер хăй мĕн шутланине, калас тенине нихăçан та пытарса тăман, – кулăшла тухать-и вăл калани – ун пирки шикленмен. Тата сăвăç хăй пĕрремĕш тĕнче вăрçинчен аманса таврăннă хыççăн, суранне пула, пысăк та шавлă хуласене питех тухса çӳремен.

Сăвăç вуланă, тĕнче культурипе кĕнекесем урлă паллашнă. Пурнăç – вăл пурнăçах. Çакна яланах асра тытмалла.

I

Ун чухне А.Талвир чăваш писательсен Канашĕн председателĕнче ĕçленĕ вăхăтра, писательсем валли хваттерсем тăвас пирки хытах тăрăшма тапратрĕç. Акă, Алексей Талвир Илле Тукташпа Семен Элкере Мускаври Литфонда укçа ыйтма командировкăна ăсатать. Ара, Семен Васильевич Элкер РСФСР Аслă Канашĕн депутачĕ-çке! Илья Семенович Тукташăн С.Элкере пур çĕрте те пулăшса пымалла.

Иккĕшĕ те «Мускав» хăна килне вырнаçаççĕ.

Литфонда каяççĕ, унти пуçлăхсемпе курнăçса хĕрӳллĕн калаçаççĕ.

Литфондра ĕçлекенсем иккĕшĕ те чирлĕрех çынсем иккенне те асăрхаççĕ те, хваттерсем тума укçа уйăрса парасси çинчен шантараççĕ.

Вăл вăхăтра Литература фончĕ Беговая урамĕнчи 17-мăш çуртраччĕ. Вăл тĕлтен трамвайсем, троллейбуссем, автобуссем, çăмăл машинăсемпе тĕрлĕ транспорт йышлăн кумса çӳретчĕç. Урам урлă каçса пĕтме, чăннипех те, йывăрччĕ.

Илле Тукташ хăйĕн аслă тусне, Семен Васильевича, асăрхаттарать:

– Эсĕ, Семен Васильевич, халĕ, каçнă чух, сулахай еннелле пăх, кайран, урам варрине çитсен, сылтăмалла хытă сăна.

С.Элкер йăлл! кулать те И.Тукташа:

– Илле тусăм, кунта кайри пайăн шăтăкĕпе пăхсан та ĕлкĕрсе-сăнаса çитерес çук пулĕ? – тесе хурать.

Илле Тукташ каланă тăрăх, урам урлă вĕсем шăпах çирĕм минута яхăн каçнă.

2

1950 çулхи чӳк уйăхĕнче чăваш писателĕсемпе сăвăçĕсем, культура ĕçченĕсем Мускавра пĕрремĕш хут Литературăпа искусство кунĕсене ирттерчĕç. Колонăллă залра уçăлчĕ çак чаплă уяв. Пуçламăш каçне Александр Фадеев сăмах каласа уçрĕ. Кайран вара пирĕнпе Александр Твардовский, Павел Нилин тата ытти паллă писательсем çӳрерĕç. Горбунов ячĕллĕ заводра, концерт хыççăн, А.Твардовскийпе сăн та çаптартăмăр.

Ку сăнӳкерчĕк пирĕнтен кашнинченех упранать пулĕ тетĕп.

Литературăпа искусство кунĕсене ирттерме Мускава килнĕ писательсене, пушă вăхăт тупăнсан театрсене кайса курма билетсем те паратчĕç.

Акă, Пысăк театрта П.Чайковский çырнă «Пиковая дама» операна курма-итлеме каятпăр: И.Тукташ, С.Элкер, А.Артемьев тата эпĕ. С.Элкерпе И.Тукташ партера ларчĕç, эпир бельэтажа кайрăмăр.

Чăнах та, асамлă кĕвĕ тыткăна илет, дуэтсемпе арисене епле килĕшӳллĕн юрлаççĕ тĕнчипе паллă артистсем.

Пысăк театртан тухсан, опера курнă хыççăн, И.Тукташ, ытарлăн кулса, С.Элкертен (курса ларнă вăхăтра сăвăç тĕлĕретĕлĕре илнĕ имĕш) ыйтать:

– Семен Васильевич, опера килĕшрĕ-и сире? Мана килĕшрĕ..

– Килĕшрĕ, Илья Семенович, – тет Элкер ăна хирĕç. – Анчах та темĕншĕн пысăк парапанне хытă çапаççĕ...

Эпир А.Артемьевпа иксĕмĕр шарламарăмăр, пĕрне-пĕри хирĕç пăхса сассăррăн çеç култăмăр.

ШУРĂ ВЫРĂСПА ЧĂВАШ ПОЭЧĔН ТУСЛĂХĔ

Нумаях пулмасть-ха эпĕ тахçанхи дневникĕмсене уçса пăхкаларăм. Унта çакăн пек çырса хунă вырăн тупрăм: «1941 çул. Октябрĕн 27-мĕшĕ. Писательсен Союзне çамрăк белорус поэчĕсем Антон Белевичпа Анатоль Астрейка пычĕç. – Шупашкара Янка Купала, Иван Доминикович Луцевич, килнĕ, – терĕç вĕсем».

Çакна вуланă хыççăн ытти вара пĕтĕмпех куç умне тухса тăчĕ. Вăхăчĕ ытла та йывăрччĕ. Усал тăшман Мускав хапхи умнех çитсе тăнăччĕ. Çанталăкĕ те питĕ япăхчĕ. Малтан тăтăшлатса çумăр çурĕ. Октябрь уйăхĕн иккĕмĕш эрнинче юр та ӳкрĕ. Анчах çĕнĕ юр хăвăрт ирĕлсе пĕтрĕ. Çанталăк уяртрĕ. Тĕлĕнмелле хĕвеллĕ ăшă кунсем пуçланчĕç. Хула урамĕсем пурпĕрех пылчăклăччĕ. Мускавран куллен-кун машина тапатчĕ, – автобуссем, грузовиксем, çăмăллисем.

Эпир Элкер хваттерне каятпăр. Янка Купала арăмĕпе унта чарăннă. Купалăпа Элкер вăрçăчченех паллашнă иккен. 1939 çулхи сентябрь уйăхĕнче армян халăхĕ хăйĕн авалхи эпосĕ «Давид Сасунский» пин çул тултарнине палăртнăччĕ. Çав уява ирттерме пирĕн Чăваш писателĕсен Союзĕнчен С.В.Элкерпе Иван Ивник кайнăччĕ. Семен Василеьвич белорус халăх поэтне шăпах çавăнта – çӳллĕ сăрт-ту тӳпинчи Севан кӳлли хĕрринче тĕл пулнă.

Тепĕр икĕ çултан вара Янка Купала Шупашкара килсе çитрĕ. Анчах уншăн хăна çулĕ, хаяр вăрçа пула, йывăр та хурлăхлă çул пулчĕ.

С.В.Элкер мана Янка Купалăпа паллаштарчĕ.

– Пирĕн писательсен Союзĕн председателĕ, – терĕ ман пирки.

– Голова? – чакăр куçĕпе тинкерсе пăхрĕ ман çине Иван Доминикович. – Çамрăк, çапах та пуçлăх, – хушса хучĕ вăл.

«Голова» тени белорусла председатель тени пулать-ха. Çапах та эпĕ питĕ именткĕм. Хăна çакна асăрхарĕ пулас.

– Çамрăкки лайăх, – терĕ вăл. – Анчах çамрăклăх ытла хăвăрт иртет-çке... Акă, сăмахран, кур-ха мана...

Тин çеç йăл та йăл çиçсе илнĕ чакăр куçсем тĕксĕмленеççĕ. Иван Доминикович салхулланать. Шăпланать. Пурте шăпланаççĕ. Никам та çăвар уçмасть.

Поэт чĕринче мĕн пулса иртнине эпир пурте ăнланатпăр.

– Епле-ха вара? – терĕ вăл, пӳлĕмре кĕтесрен кĕтесе утма тытăнса. – Мĕншĕн?.. Юрлаттăмăр – «Ыран вăрçă тухсан»... Çапла, эпир вăрçă пуласса пĕлнĕ. Çапах та кунашкал пăтăрмах?!

Янка Купала

Янка Купала хăйĕн тăван халăхĕ хаяр вăрçăра тӳсекен инкеке, хăрушă трагедие, пĕтĕмпех чĕре патне илнĕ. Тăшман бомбисен вучĕпе хуласемпе ялсем, тырпулпа выльăх-чĕрлĕх пĕтни çинчен вăл макăра-макăра каласа кăтартатчĕ. Тĕрĕссипе, çавăн пек çын шултра куççуль тăкса макăрнине эпĕ пурнăçра малтанхи хут курнă.

Семен Эльгер

Сиседтĕм: пирĕн Семен Васильевич та, вăрçă инкекĕсене хăй тӳссе курнăскер, белорус поэчĕпе пĕрлех чунтан хуçăлса кулянатчĕ. Анчах вăл хăйĕн хуйхи-суйхине никама шарламасăр, шăппăн тӳссе ирттеретчĕ.

Аркадий Эсхель

Минск хулинчи хваттерĕнче Янка Купалăн питĕ пысăк библиотека пулнă. Ăна вăл хĕрĕх çул хушши пухса пынă. Орша хули патĕнче вăл вăрçăччен нумаях мар малтан дача лартнă. Унта паллă художниксем парнеленĕ картинăсем нумай упраннă.

– Вĕсем мар-ха чи пахи, – аллине сулать Иван Доминикович. – Чи пахи – Горький çы-

рӑвӗсем!.. Вӑл алӑ пусса панӑ кӗнекесем!.. Ах, Алексей Максимович, – куҫ умӗнче тӑракан ҫынпа калаҫнӑ пек калаҫма тытӑнать поэт. – Эсӗ вӑрҫӑ пирки яланах асӑрхаттараттӑн. Фашизма кураймастӑн.

Иван Доминиковичпа мӑшӑрӗ - Владислава Францевна – пӑшӑрханатчӗҫ: Элкер килйышне чӑрмав кӳретпӗр, – тетчӗҫ. Семен Васильевичпа ун арӑмӗ Евдокия Алексеевна хӑйсене май пӑшӑрханатчӗҫ: – Хаклӑ хӑнасене пӑхаймастпӑр, вӑрҫа пула ӗҫми-ҫими те хӗсӗк, – тетчӗҫ. Мӗн тӑвӑн, хӑнисем те, хуҫисем те тивӗҫлипех хурланатчӗҫ.

Эпир, чӑваш писателӗсем, Янка Купалӑпа С.В.Элкер патне час-часах кӗрсе ҫӳреттӗмӗр. Тепле пулсан та, пирӗн тӗлпулусем пӗрмаях хурлӑхлӑ иртмен. Семен Васильевич нумаях пулмасть тӑван Упакассине кайса килни ҫинчен каласа кӑтартатчӗ. Николай Иванович Шелепи хӑйӗн ватӑла пӗлми тенорӗпе авалхи чӑваш юррисене юрлатчӗ. Стихван Шавли Маяковскин тин ҫеҫ чӑвашла куҫарнӑ сӑввисене вулатчӗ. Ухсай Яккӑвӗ Кӗлпук мучин мыскарисем ҫинчен каласа тӗлӗнтеретчӗ.

– Кӑмӑллӑ чӗлхе. Ҫепӗҫ чӗлхе,– тетчӗ Янка Купала чӑваш сӑвви-юррине итленӗ хыҫҫӑн. – Чун-чӗре чӗлхи...

Ҫав кунсенчех эпир, Янка Купала сӑввисене те, ытти белорус поэчӗсен сӑввисене те чӑвашла куҫарса, хаҫатсенче кӑларнӑччӗ. Кайрантарах вара Янка Купалӑн «Ёмӗт» ятлӑ кӗнеки чӑвашла уйрӑммӑн тухрӗ.

Икӗ эрне те икӗ кун ҫеҫ пурӑнчӗ ун чухне Янка Купала Шупашкарта. Ҫанталӑк сасартӑк сивӗтсе пӑрахрӗ. Купалӑпа мӑшӑрӗ хӑйсен «Шевроле» машинипе Хусана кайма пуҫтарӑнаççӗ. Хусанта белорус халӑхӗн ытти писателӗсем те вӑхӑтлӑх кӗтес тупнӑччӗ.

Семен Василеьвич пӑшӑрханать:

– Епле-ха кунашкал сивӗ ҫанталӑкра инҫе ҫула пушмакпа кӑна тухмалла? – тет вӑл. – Кӑҫатӑ туянас пулать хӑнасем валли.

Ун чухне япала туянма ансатах марччӗ ҫав. Вӑрҫӑ. Йӑлтах ордерпа тата карточкӑпа. Семен Васильевич хӑнасемшӗн хытӑ

тăрăшрĕ. Вăл тăрăшнипех хулари суту-илӳ органĕсенчен икĕ мăшăр кăçатлăх ордер илтĕмĕр, кăçаттисене вара Иван Доминиковичпа пĕрле кайса туянтăмăр. Пĕр мăшăрĕ – хăй валли, тепри – шофер валли. Владислава Францевна кăçатă туянасшăн пулмарĕ, унăн шурă фетр ботти вĕр-çĕнехчĕ-ха.

Янка Купалăпа мăшăрне эпир Шупашкартан Хусана çав çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕнче ăсатса ятăмăр. Унтанпа 32 çул иртрĕ. Халĕ вара... Халĕ пĕр мăшăр чăваш кăçатти Белорусси çĕрĕнчи Янка Купала музейĕнче, поэтăн ытти япалисем хушшинче, питех те паллă вырăн йышăнса тăрать. Вăл – чăваш халăх поэчĕ С.В.Элкер белорус халăх поэтне Янка Купалăна халалласа панă хаклă парне.

Чăннипех те ĕнтĕ, тăванла халăхсем хушшинчи туслăх пинпин тĕрлĕ майсемпе çыхăнса-тытăнса тăрать.

Аркадий Эсхель, 1973 ç.

Ӳкерчĕкре (сылтăмран сулахаялла):
С.В. Элкер, Н.И. Шелепи, С.А. Шавли (1941 ç.)

ЭЛКЕР ÇЫРĂВĔНЧЕН

Йĕпреç районĕ, Хурамал ялĕ. В.И.Андреев-Хурамала.

Сывлăх сунатăп, Василий Иванович!

...Ман патра халĕ çеç Белорусси ССРĕн халăх поэчĕ, Сталинла преми лауреачĕ Янка Купалăпа арăмĕ 5 каç выртрĕç. Унпа пĕрле Белорусси Совнаркомĕн председатель заместителĕ Захаров (çур грузин çынни) тата Белорусси Наркомĕн финанс министрĕ Котляров пулчĕç. Çавсем эрех нумай тупса килчĕç. Икĕ каçчен хытă ĕçрĕç, хальччен илтмен-пĕлмен хыпарсене нумай каласа пачĕç. Вĕсем Мускавран Горький хули урлă машинăсемпе Хусана кайма тухнă, анчах та Шупашкар çывăхĕнче машинисем пылчăк çине кĕрсе ларчĕç, хăшин-пĕрин машинисем çĕмĕрĕлсе те кайрĕç. Халĕ машинисене ремонта лартнă. Купалăна вăхăтлăха Хресчен çуртĕнче пӳлĕм пачĕç. Япалисем ман патра выртаççĕ. Парти обкомĕпе Чăваш совнаркомĕ Купалăна лайăх йышăнчĕç, унпа пĕрле приемра пултăмăр. Вара ман хваттерех кунченеçсем ярса пачĕç. Анчах та ĕнтĕ ку хаклă хăна йăлăхтарса çитерме пуçларĕ, мĕншĕн тесен пĕрмаях ĕçет, эрех тупса пама ыйтать, ĕçсен тата этем йĕркелĕхĕ те пĕтет. Ăна пирус та эрех пултăр. Вĕсене тупма хĕн вĕт-ха. Пирус мĕн пур пеккине Чарыков хăй ярса пачĕ. Халĕ ăна та туртса пĕтерчĕ. Те Совет правительстви ытлашши пулăшнипе иртĕхсе кайнă пулĕ, те вăрçă хăрушлăхĕ айĕнче ăсĕ урмăшма пуçланă пулĕ тесе шутлатпăр ун пирки. Темĕнле страннăçсем чылаях вара. Урă чухне лăпкă, чĕмсĕр, сахал каласать, мана тав тăвать, ӳсĕрĕлсен – урăхла. Купала пит те чаплă пурăннă. Ун çинчен кунта пурăнакан Белоруссин еврей писателĕ те каласа парать. Унăн Минскра хăйĕн çурчĕ, Оршара дача пулнă. Унта пĕчĕк библиотекăсем, архив тата ытти пуянлăх та нумай пулнă, халĕ вĕсем йăлтах çунса кайнă. Хăй пĕр машинипе çеç тухса тарнă. Çавăнпа та хытă переживать тăвать. Кунта Мускавран тӳрех Горький урлă автотранспортпа куçакансем пит те нумайччĕ. Халĕ çул пылчăкланнипе çавсем кĕрсе ларса хăшкăлаççĕ ĕнтĕ...

1941, 4 ноября.

ЯНКА КУПАЛĂН ТАСА СĂНАРĔ

Геннадий Васильевич Кузнецов 1945 çулхи январьте Канаш районне кĕрекен Шуртан ялĕнче çуралнă, хăйсенчен инçех мар Кульцаври вăтам шкулта вĕреннĕ. Вĕрентекенĕсем чаплă педагогсем пулнă май, вăл вырăс чĕлхипе литературине тата ытти предметсене те хăйсенчен кая мар пуçа хывнă, çав пĕлӳпе халĕ те пурнăçра пĕлсе усă курать.

Йĕпреçе ĕçлеме куçсан, «Çĕнтерӳшĕн» хаçатра пултаруллă Гена Кузнецова эпĕ тӳрех профессионал куçĕпе асăрхарăм: унăн çырнисенче – сăмах тĕшши, философийĕ палăрать. Майăн-майăн çав тĕшĕ хăйĕн çимĕçне пачĕ.

Эпĕ – Чăвашрадиора. Пирĕнпе юнашарах Илья Александрович Степанов Чăваш çĕршывĕн ял хуçалăхĕ мĕнле аталанса пыни, ял ĕçченĕсем коммунизăмалла маршлатса утни çинчен эфира – тĕнче уçлăхне – кашни кун хыпар салатать, ĕлкĕрсе çитереймест, районсенчен хыпар шырать. Йĕпреç енчен çавнашкал хĕрӳ, пултаруллă хыпарçă тупăнчĕ. Геннадий Кузнецовăн хайлавĕсене – сасăпа калаçаканĕсене пĕтĕм чăваш хăлхана тăратса итлетчĕ. Çав вăхăтра шăпах Чăваш патшалăхĕн Журналистсен пĕрлĕхĕ С.В.Элкер ячĕллĕ преми шутласа кăларнăччĕ. Ял пурнăçне анлăн, сăнарлăн кăтартакан радиоочерксен ярăмĕшĕн вăл лауреат пулса тăчĕ. Мухтав паллине вăрманта кайăксем юррипе çурăмăр.

Пуçĕнче унăн лира кĕвви янăрать. Хайлавĕсем – çав юрă кĕвиллĕ. Ачаранпах поэзи сукмакĕ çине çирĕппĕн ярса пуснăскер вăл Пегас учĕпе Парнас тăвĕ тăрнеллех ӳхĕрет, нумай хайлавлать поэт кутамкки валли. Чи лайăх «япалисене-пурлăхне» пухса хăйĕн шухăшлав сăнарлăхĕн Пысăк кĕнекине кăларчĕ. Унпа яланах тачă çыхăнура. Çак хайлава вăл кĕнекере усă курма сĕнчĕ, унăн историйĕпе паллаштарчĕ:

«Пурăннă чухне эпĕ Андрей Игнатьевич Тряковпа тĕл пул-

сах тăраттăм. Мĕн тивĕçлĕ канăва кайичченех Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен çĕнтерсе тавраннăранпах Йĕпреçри вăрман комбинатĕнче ĕçленĕ вăл. Андрей Игнатьевич малтан хăйĕн кун-çулне финанс ĕçĕпе сыхăнтарнă, анчах та каярахпа Совет Союзĕн тĕрлĕ стройкине паха йывăç ăсатса тăрассине хăйĕн тĕп тивĕçĕ туса хунă фронтовик. Вăрçăри паттăрлăхшăн тата мирлĕ ĕçри хастарлăхшăн 3 орденпа 5 медале тивĕçнĕччĕ Пысăк Упакасси чăвашĕ. Çак ял пирки сăмах хускатсанах пирĕн куç умне чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, тăван литературăна хăйĕн вилĕмсĕр хайлавĕсемпе пуянлатнă Çемен Элкерĕн çутă сăнарĕ тухса тăрать. Кунта вара Чăваш халăх поэтне ăшшăн аса илме тивĕçлĕ сăлтав пур. Андрей Игнатьевич Семен Васильевича «кукка» тесе чĕнетчĕ. Унăн амăшĕпе «Хĕнхур айĕнче» поэма çыраканĕ пĕр варта выртнă иккен.

Пĕррехинче Андрей Игнатьевич «Хыпар» хаçатăн выраннти корпунктне темĕнле ал çырăвĕ илсе килчĕ. «Паллашсамăрччĕ, – терĕ вăл кăмăллăн. – Пушă вăхăтра кукка пурнăçĕпе ĕç-хĕлне аса илӳсенче хăварас тĕллевпе çыру сĕтелĕ хушшине ларакан пултăм-ха. Сирĕн пата илсе килни – Янка Купала поэт вăрçăн пĕрремĕш çулĕнче çемйипе кукка патĕнче хӳтлĕх тупни çинчен. Вулакансемшĕн вăл кăсăк пулассăн туйăнать».

Анчах та тĕрлĕ сăлтава пула А.И.Тряковăн аса илĕвĕ хăй вăхăтĕнче кун çути кураймарĕ... Кăшт вăхăтран авторĕ те çут тĕнчерен уйрăлса кайрĕ.

А.И.Тряков аса илĕвĕ паян та хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман. Белоруссен чаплă сăвăçĕ чăвашсен тĕп хулине килнĕренпе шăпах 65 çул çитрĕ. Çемен Элкерĕн çывăх тăваннĕн хайлавĕнче çав манăçми тапхăр ĕнер пулса иртнĕ пекех уçăмлăн тухса тăрать куç умне».

...Эпĕ ун чухне Шупашкарта Финанс министерстви çумĕнчи курсра хамăн пĕлĕве ӳстереттĕмччĕ. Вăрçă пуçланиччен кăшт маларах мана Хĕрлĕ Чутай районĕнчи финанс пайне ертсе пыма шаннăччĕ. Çĕнĕ ĕç, çĕнĕ вырăн... Яваплăх мĕн та-

ран пысăк пулнине малтанхи кунсенчех ăнланса илтĕм эпĕ. Çапăçакан çара яма ыйтса çар комиссариатне пĕрре кăна мар çитрĕм пулин те, манăн тилмĕрĕве нимĕн вырăнне те хумарĕç унта ĕçлекенсем. «Хальлĕхе эсĕ кунта кирлĕ çын. Вăхăт çитсен, хамăрах чĕнĕпĕр», – çапла лăплантарса кăларса яратчĕ алăкран çыççĕ кăвакарма пуçланă комиссар.

1941 çулхи юпа уйăхĕн варринче вара Шупашкара курса ячĕç мана. Пĕр уйăха яхăнах Çемен кукка патĕнче пурăнтăм. Çавăн чухне курсра паллашрăм та Янка Купала сăвăçпа. «Иван Доминикович Луцевич», – терĕ вăл хыткан, типшĕм аллине тăсса панă май. – Анчах та ку хушамат сана нимĕн çинчен те каламĕ. Эсир шкулта вĕреннĕ çулсенче манăн сăвăсене те вуланах ĕнтĕ. Янка Купала тенине илтнĕ-и?..

Тепĕр пăлĕмрен тухнă Çемен Васильевич пирĕн ума пырса тăнă-тăманах калаçăва хутшăнчĕ: «Ку манăн аппан аслă ывăлĕ-ха. Тăван литературăна питĕ юратать. «Белорус классикĕсене те вуланах ĕнтĕ вăл», – терĕ. Унтан ман енне çаврăнчĕ те: «Андрей, Янка Купалăн пĕр-пĕр сăввине вуласа параймăрши?» – терĕ.

Кульцаври вăтам шкула çӳренĕ çулсенче Янка Купалăн «Белоруссем» сăввине пăхмасăр калама вĕреннĕччĕ. Анчах та ун чухне ăна никам та чăвашла куçарманччĕ-ха. (Каярахпа Аркадий Эсхель куçарăвĕ çапăнса тухнă пек ас тăватăп. Ăçта хăш журналта – калама пултараймастăп).

Кукка та, Янка Купала та ман çине тинкерӳллĕн пăха-пăха илчĕç. Анчах те хумханнипе, те вăтаннипе хам лайăх пĕлекен йĕркесемех пуçран ирхи тĕтре пекех «ирĕлсе» çухалнă иккен. Янка Купала «путакана» çăлма васкарĕ: малтанхи йĕркесене пăхмасăр каларĕ кăна, манăçни çийĕнчех çиеле «тухса выртрĕ»:

Камсем-ха килеççĕ унта
ушкăнпа
Утаç шурлăх урлă, хура
вăрманпа?!

– Белоруссем!
Мĕскер вĕсем йăтнă ырхан
алсемпе,
Мĕскер-ха çĕкленĕ ырхан хулсемпе?
– Ултав-суяна.
Ăçта ăсатаççĕ вĕсем суяна,
Кама кăтартасшăн вĕсем
халь ăна?
– Мĕн пур тĕнчене!
Ăс панă-ха кам çав мĕльюн
этеме,
Ыйхăран вăратса, суяна
пĕтерме?
– Хĕн-хур та асап!
Мĕскер-ха шыраçĕ каллех
çав çынсем
Авалтан пусмăр тӳснĕ
чăлах-чĕмсĕрсем?!
– Этем – тенĕ ят!

– Маттур, маттур! – çурăмран лăпканăçемĕн кăмăллăн сăмах хушрĕ Янка Купала. – Пĕлетĕн-и, халь тин эсĕ вырăсла вуласа панă сăвва 30 çул каяллах белорусларан кам куçарнине? Максим Горький. Çак ырă вырăспа, тĕлĕнмелле улăппа ĕмĕр тăршшĕпех çыру çӳретнĕ эпир. Минскри хваттерте унăн çырăвĕсем, вăл алă пусса панă кĕнекесем мĕн чухлĕ? Тăшман вутра çунтарса ярать ĕнтĕ вĕсене. Эх, çăлма май килмест нимĕнле хакпа та виçме çук пурлăх-пуянлăха.

Çав каç Семен Васильевичпа Иван Доминикович çĕрĕпе те куç хупмарĕç темелле. Вĕсен калаçăвĕнчен çакна пĕлме май килчĕ. Икĕ халăх поэчĕ малтанах пĕлнĕ иккен пĕр-пĕрне. Иван Доминикович манăн куккапа пуçласа Ереван хулинче пал-лашнă. 1939 çулта Арменин тĕп хулинче çак халăхăн паттăр ывăлĕ Давид Сасунский пин çул тултарнине паллă тунă пулнă. Савăнăçлă уява пирĕн Чăваш çĕршывĕнчен Çемен Элкер кайнă.

Атăл хĕрринчен пынă хăна çавăн чухне Севан кӳлли çывăхĕнче Янка Купалăпа ыталашса тăванланнă.

Семен Васильевичпа Иван Доминиковичăн мăшăрĕсем те – Евдокия Алексевнăпа Владислава Францевна вĕсен юратнă упăшкисене йывăр хуйхă-суйхă арман чулĕ пек пусса тăнă вăхăтра ыррăн çывăрайман çав каç. Икĕ хĕрарăмĕ те тарăн шухăшсен серепинче çӳренĕ, Аслă çĕнтерĕве çывхартассишĕн пурнăçне шеллемесĕр çапăçакан тĕрлĕ халăх ывăлĕ-хĕрĕсене тăшмана тĕппипех çапса салатма пилленĕ...

– Кукка, кĕçĕр сирĕн пата килес мар пулĕ, – терĕм эпĕ ирхине вĕсен хваттерĕнчен тухас умĕн. – Хăвăра та тăвăр.

– Тăвăр çĕрте лайăх шухăш çуралать, – шӳтпе тавăрчĕ Семен Васильевич. – Кĕçĕр килмеллех. Вăхăчĕ кĕреке валли мар пулсассăн та, каçпа чăваш çыравçисем Янка Купалăпа тĕл пулма сăмах пачĕç.

Ку тĕл пулу пирки каярахпа Чăваш халăх поэчĕ Стихван Шавли «Виçĕ улăп» статьяра лайăх çырса кăтартнăччĕ. Унти пĕр сыпăка вуласа пăхсамăрччĕ, хисеплĕ вулаканăмсем: «Йышлă мар пирĕн кĕреке, эпир унта тăватă чăваш çеç. Тăваттăмĕшĕ пирĕн «голова», Союз пуçлăхĕ Аркадий Ĕçлĕх (ăна Янка Купала çапла чĕнетчĕ). Çирĕм писательрен вун пиллĕкĕшĕ фронтра.

Эпир чылайранпа ларатпăр ĕнтĕ. Купала сăмахĕ чун-чĕре çине чул пек купаланчĕ.

Калас тенине каланăран-и, ун кăмăлĕ уçăлма тытăнчĕ.

Куçĕ курман Шелепи çакна пуринчен малтан сисрĕ: «Сăвă калар!» – çамрăк йĕкĕт пек пуканĕ çинчен сиксе тăчĕ вăл. Ялан-хи йăлипе пуçне каçăртрĕ:

Тăршшĕ икĕ метр,
Урлăш пĕрре –
территори кирлĕ
Гитлере, – пуçласа ячĕ вăл.

Эпир çак сăмахсене хамăр хăнана куçарса патăмăр.

– Пророк пек тĕрĕс калать! – алă çупрĕ пирĕн хăна.

Этем ирĕке савнă чух
Фашизм пире çĕнес çук! – илтĕнсе каять Элкер сасси.

Эпĕ тин кăна çырса пĕтернĕ «Вĕлер нимĕçе! сăвва кăлартăм. Уçăлса çитнĕ Янка Купала çамрăк колхозник çинчен сăвă каласа парать...»

Пĕтĕмпех тĕрĕс. Çаксем вĕсем йăлтах ман куçăм умĕнче пулса иртнĕ.

Кукка хваттерĕнче Янка Купалăпа мăшăрĕ нумай пурăнмарĕç. Республикăри ертсе пыракан пуçлăхсем пулăшнипе темиçе кунран вĕсене «Колхозник çуртĕнче» вырăн тупса панăччĕ. Элкерсем патĕнчен унта япалисене илсе кайма хам та пулăшнăччĕ. 1941 çулхи чӳк уйăхĕн 11-мĕшĕнче поэтпа мăшăрне Хусана ăсатса янă куна та паянхи пекех асра тытса пурăнатăп.

1942 çулхи çуркунне манăн та фронта кайма шăпа тухрĕ. Тĕрлĕ фронтра çапăçрăм, Украинăпа Белорусси çĕрĕсене тăшманран ирĕке кăларма хутшăнтăм. Янка Купала хăйĕн сăвви-поэмисенче чун-чĕререн мухтанă халăхсен арканми çирĕп туслăхĕ ирсĕр çын çиенсене çапса аркатма пулăшнине хам куçăмпа хам курса ĕнентĕм. Халăх поэчĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă çул çырнă сăвăри йĕркесем чăн пулчĕç:

Хаяр кун-çул куçран çухалĕ,
Суран тӳрленĕ ӳт-пӳре.
Юратнă белорус çуталĕ,
Çĕнелĕ ĕмĕр-ĕмĕре.
Капмар кил-çурчĕсем çĕкленĕç,
Пур халăх тухĕ урама.
Ялавĕсем каллех чӳхенĕç
Телей кӳме, йыхрав тума...

Иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсен варринче мана вăрман комбинатĕнчен Белорусси Республикине командировкăна ячĕç. Икĕ эрнене яхăнах Минскра пурăнма тиврĕ ун чухне. Янка Купалăпа çыхăннă пур вырăна та çитсе куртăм темелле. Унăн музейĕнче те пултăм. Тĕрлĕ экспонат хушшинче пĕр мăшăр çăм атă асăрхарăм... Ара, ăна туянма Шупашкарти тĕп пасара кукка мана хăех илсе кайманччĕ-и? Янка Купалăна Хусана тух-

са каяс умĕн чăваш çыравçи кӳнĕ парне умĕнче чылайччен шухăша кайса тăтăм эпĕ.

Музейран тухсан, тĕп проспектра ларакан бронза палăк патне çул тытрăм. Çавăн чухне белорус халăхĕн чаплă сăвăçипе иккĕмĕш хут тĕл пултăм. Чечек магазинĕнче туяннă икĕ сыхха куккапа хам ятран таса хĕвел шевлипе кĕмĕлленсе çиçекен палăк умне хутăм.

Андрей Тряков.

2006, раштав.

БЕЛОРУС ПИСАТЕЛĔ ЧĂВАШСЕМ ÇИНЧЕН

Тĕрлĕрен тĕлпулу пулать пурнăçра. Пицундăра, Д.Гулиа ячĕпе хисепленекен писательсен пултарулăх çуртĕнче Белоруссирен пынă Вячеслав Рагойша писательпе тĕл пулса паллашрăм. Эпĕ чăвашран иккенне пĕлсессĕн, вăл тӳрех С.Элкер çинчен ыйтрĕ. Пирĕн Чăваш халăх поэчĕ белоруссен паллă çыравçипе, Янка Купалăпа, туслă пулнă. Хаяр вăрçă çулĕсенче Янка Купала Шупашкара килнĕ, С.Элкер патĕнче пурăннă.

«Чăваш çыннисен чун-чĕри ăшши фашистсен аллине лекнĕ тăван Белоруссишĕн кулянса-тертленсе пĕтнĕ чун-чĕрене çĕнĕ вăй пачĕ», – тесе çырнă каярахпа Янка Купала. Çакăн пирки калаçрăмăр Вячеславпа.

– Пирĕн икĕ литература хушшинчи туслăха ӳстерсех пымалла, – терĕ вăл. – Пĕр-пĕрне пирĕн нумайрах куçармалла. Эпир чăваш юмахĕсене белорусла куçарса кăларнăччĕ. Халĕ акă чăваш калавĕсемпе сăввисен кĕнекине пичетлесе кăларма хатĕрленетпĕр.

Çăкăр-тăвар – хире-хирĕç. Эпĕ те ăна Белорусси писателĕсен произведенийĕсен пысăк кĕнеки чăвашла пичетленсе тухнине каларăм. Ку вара Вячеслава питĕ савăнтарчĕ.

– Чăвашсен куьтура ĕçĕнчи çитĕнĕвĕ пирĕн çыравçăсене революциченех питĕ ăмсантарса савăнтарнă, – терĕ вăл. – 1909 çултах пирĕн чаплă писатель Сергей Полуян «Чăвашсен нациллĕ çĕкленĕвĕ» ятлă статья çырнă...

Эпĕ вара Вячеслав Рагойшăна çав стаьяна тупса пама ыйтрăм. Вăл килне, Минска, таврăнсанах мана Сергей Полуянăн эпĕ ыйтнă «Чăвашсен нациллĕ çĕкленĕвĕ» хайлавне ярса пачĕ. Акă вăл, пĕтĕмпех илсе кăтартатăп.

«Чăвашсен нациллĕ çĕкленĕвĕ

Атăл шывĕ юхса выртакан тăрăхра – Чулхула, Чĕмпĕр, Ĕ пхӳ кĕпĕрнисенче – пысăках мар халăх пурăнать – чăвашсем. Йышлă мар ку халăх, пĕтĕмпе те миллиона яхăн кăна, пурăнасса вар чухăн, тĕттĕм пурăнать.Тен, татах та нумайччен асапланнă-тертленнĕ пулĕччĕç-и чăвашсем çав тĕттĕмлĕхре, эхер те хăйсен енĕн вĕсем валли пĕлӳ çутийĕ çутнă – вĕсемшĕн тăван чăваш чĕлхийĕпе çутта кăларас ĕçе пикеннĕ – чи лайăх ывăл-хĕрĕ пулман пулсан.

Чăваш чĕлхи тĕрĕксенни евĕрлĕ, ĕлĕкхи половецсен чĕлхине çывăх (половецсем – тахçан-авал, пĕр пин çулсем каялла, вырăс çĕрне тапăннă халăх).

Вырăс чĕлхипе пачах та пĕрешкел мар, çавăнпа вырăса ăнланмашкăн чăваша питех те йывăр.

Çапла ĕнтĕ ан тĕлĕнĕр: пултарайман чăваш хутла вĕренсе ытларах пĕлӳ илме, наука пулăшнипе хăйшĕн пысăкрах çутă çутма, мĕншĕн тесен япăх е пачах та ăнланса ăша хываймасть вăл вырăс кĕнекине. Чăваш ялĕсем, нумай-нумай çул ĕлĕкхи пекех, тасамарлăхпа сĕм тискерлĕхре пĕтсе-япăхса пынă. Тĕрлĕрен тĕшмĕшле йăла-йĕрке халăх куçне хура карă пек хупласа тăнă, çут тĕнче çине чуна ирĕклĕн уçса пăхма паман, пулассăрлăх ăна çĕр çумне пусарса тăнă, тĕттĕмлĕх ăна мĕн авалтанхи чухăнлăхран хăтăлса тухма паман.

Нумай ĕмĕр чăваш халăхĕ хăйĕн кĕнекисĕр, хăйĕн тăван литература чĕлхисĕр пурăннă. Чăвашла пĕрремĕш кĕнекесене вырăс тĕнне саракансем пичетлеме пуçланă. Çавăнпа пĕрлех вĕсем чăваш шкулĕсем те уçнă. Тин вара халăхран пултарулăрах çынсем палăрса тухма тытăннă. Анчах пирĕннишкелле, пăраха-пăраха кайман вĕсем ăна, çук, – вĕсем вырăнтах юлнă, хăйсен халăхне çĕклессишĕн ĕçе пикеннĕ.

Нумай ĕç тумалла пулнă вĕсен, нумайăшне туса пултарнă

та. Чи малтанах халăха кĕнеке памалла пулнă, – ан тив, шкул пĕтернĕ хыççăн та çыннăн тăван чĕлхепе мĕн вуламалли пултăр.

Пуринчен малтан календарьсем, ялхуçалăхĕпе çырнă кĕнекесем кăлараççĕ. Пĕрремĕш календарь 1901 çулта тухнă, вара мĕн çавăнтанпа çулсеренех тухса пырать вăл. 1908 çулта календаре ак иккĕ тан кăларнă – пĕрне Хусанта, тепĕрне – Чĕмпĕрте. Ирĕклĕх вăхăтĕнче 1905 çулта халăх валли тĕрлĕрен политика ыйтăвĕсемпе, патшалăх тытăмĕ çинчен, вăл мĕнли тата мĕнле пуласси пирки, халăха тивĕç лайăх шăпа çинчен кĕнекесем çапнă. Вăл кĕнекесен шутĕнче чăвашсем хăйсем çырнисем те, куçарусем те нумай пулнă.

Тăван литература сăмахĕ сарăлсах пынă чăваш халăхĕ хушшинче. Хальхи чăваш ялĕсене çитсе, халăх пурнăçĕ çинчен пĕлтерсе тăрас, халăха лайăх пурнăç тума çул кăтартса пырас ĕçре хаçат кăларма тытăнасси те кирлĕ пулса тăнă. Çапла 1906 çулăн пĕрремĕш уйăхĕнче чăвашла пĕрремĕш хаçат «Хыпар» çуралнă. Малтан ун ĕçне тĕн çыннисем ертсе пынă, анчах кĕçех вулакансем хăйсем ăна халăх чĕрине çывăх халăх интеллигенцийĕн аллине памашкăн ыйтма тытăннă. Çав çулхинехи октябрьтех вара «Хыпара» редакицлес ĕç халăха чăннипе юратакан çынсен аллине куçнă. Кĕске хушăрах хаçат хăй тавра вулакансен пысăк йышне пухма ĕлкĕрнĕ. Анчах нумая пыман ун ĕмĕрĕ. – 1907 çулхи июльте хаçата хупнă. Паян кунччен те çапла чăвашсен хăйсен чĕлхипе хаçат çук-ха. Çапах та юлашки кунсем «Хыпар» çĕнĕрен тухма тытăнас хыпара илсе çитерчĕç. Пурăнма пултараймаççĕ, ахăртнех, чăвашсем ĕнтĕ хăйсен тăван хаçачĕсĕр.

Чăваш халăхĕ йăл илсе çĕкленме тытăннин историйĕ нумай интереслине парать пире. Çырулăх культурисĕр, историйĕсĕр пĕчĕк халăх, ĕмĕр шарламасăр пурăннăскер, хăйĕн наци культурине йĕркелесе ярассишĕн хастаррăн тăрăшать. Мĕн тумалла тет-ха вара пирĕн, белоруссен, вунă миллионлă аслă халăхăн?

Ĕçĕ пирĕн чылай лайăхрах пыма тивĕçлĕ мар-ши ĕнтĕ?

Сăмах та çук, тивĕçлĕ, тен, хăçан та пулин çаплах та пулĕ... Халлĕхе вара вăйлăн çывăрма та ыйхă тĕлĕшпе тата кӳршĕсен çитĕнĕвĕсем çине пăхкаласа илме кăна пĕлетпĕр».

Пирĕн вулакансем çак статья çинчен те, унăн авторĕ çинчен те пĕлсех каймаççĕ. Çавăнпа эпĕ кайран Вячеслав Рагойшăран С.Полуян çинчен тĕплĕнрех тĕпчесе пĕлтĕм.

Сергей Епифанович Полуян белоруссен кăвар чĕреллĕ писателĕсенчен пĕри. Питех те сахал пурăннă вăл: 1890 çулта çуралнă та 1910 çулта çĕре кĕнĕ. Ӳкекен çăлтăр пек, ялтăр-р! çиççе илнĕ те хăйĕн халăхĕн асĕнче, историнче ĕмĕрлĕхех юлнă. Ахальтен мар ĕнтĕ Янка Купала хăйĕн чи чаплă хайлавĕсенчен пĕрне, «Курган» поэмине, ăна халалласа çырнă. Белорусси литературин классикĕ Максим Богданович хăй пурăннă чухне пичетленнĕ пĕртенпĕр кĕнекине Сергей Полуяна халалланă.

Сергей Полуян хăйĕн кĕске пурнăçне тискер патша саманинче питĕ йывăр пурăнса ирттернĕ. Ăна гимназирен те темиçе хутчен кăлара-кăлара янă, ĕçлеме те ирĕк паман, çырнă япалисене те пичетлемесĕр халтан янă. Çамрăклах вăл революцилле ĕçе хутшăннă, ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ. Писатель тăван халăхне чунтан-чĕререн юратнă, унăн историне, наци пуянлăхне çине тăрсах тĕпченĕ, пуласлăхĕ пирки пăшăрханса шухăшланă, çулăмлă хайлавсем çырнă. Çав хушăрах Раççей империйĕнчи ытти вак халăхсен пурнăçĕпе те питĕ интересленнĕ: якутсем, чăвашсем, украинецсем çинчен статьясем, тĕпчев ĕçĕсем çырнă. Хăйĕн «Чăвашсен нациллĕ çĕкленĕвĕ» статйине Сергей Полуян 1909 çулта, Вильно хулинче тухса тăракан «Пирĕн ана» (Наша нива) хаçатăн 39-мĕш номерĕнче пичетленĕ. Çак хайлав пирĕншĕн чылай енчен питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чи малтан вăл И.Я.Яковлев тунă çырулăха пула чăваш культури кĕске вăхăтрах çĕкленсе кайнине, çакăн çинчен ытти халăхсем те пĕлсе, ăна кирлĕ пек тивĕçлĕ хак панине пĕлтерет. Тепĕр енчен пире, çĕнĕ чăваш çырулăхĕн эткерĕпе кирлĕ пек усă курса социализмла культура тăвакансене, ĕлĕкхине, хамăр историне манса кайма юраманнине калать. Фактсем енчен тимлĕн пăхсассăн, паллах, С.Полуян стайин-

че тĕрĕсех каламан вырăнсем те пурри палăрать. Калăпăр, чăвашсем валли календарь кăларасси 1901 çулта мар, чылай маларах пуçланнă. «Çулталăк календарĕ» ятпа хăйне майлă чăваш календарĕ çĕнĕ, чăн-чăн чăваш çырулăхĕ тăвичченех пичетленнĕ. Чĕмпĕрти гимназире вĕренекен Иван Яковлев çак кĕнекене тĕплĕн пăхса тухса хăй вăхăтĕнче рецензи те çырнă. Çапах та «Çулталăк кĕнеки» чăвашсене ăнланмалли хайлав пулсах çитеймен. С.Полуян çавна лайăх пĕлни палăрать, «чăвашла пĕрремĕш кĕнекесене вырăс тĕнне саракансем пичетлеме пуçланă», – тет вăл. Уйрăмах чăвашсен çутта тухнă маттур çыннисем тăван халăхне пăрахса кайманни тата «Хыпар» хаçат шăпи пирки çырни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пирĕн малтанхи «Хыпар» хаçат 1906 çулхи январĕн 8-мĕшĕнче тухнă. «Хыпар» хаçатăн пĕлтерĕшне те, унăн вăйĕ, сĕмĕ революци еннелле туртăна пуçланнине те белорус писателĕ тĕрĕс çырса кăтартать. Пурĕ 65 номер пичетленсе тухнă пирĕн «Хыпар» хаçат. Ăна вара патша йыттисем 1907 çулхи майăн 27-мĕшĕнче пачах чарса лартнă. «Çапах та юлашки кунсем «Хыпар» çĕнĕрен тухма тытăнас хыпара илсе çитерчĕç. Пурăнма пултараймаççĕ, ахăртнех, чăвашсем ĕнтĕ хăйсен тăван хаçачĕсĕр», – тесе хăйĕн вулаканĕсене хавхалантарма тăрăшать шĕл-кăвар чĕреллĕ писатель.

Пĕрремĕш революци çулĕсенче белоруссем те хăйсен наци культурине çĕклессишĕн чылай ĕçленĕ. Чăвашсен çитĕнĕвĕ çинчен хăпартланса каласа, хăйĕн халăхне тата та хастартарах пулма чĕнни вăл, паллах, писателĕн çырас мелĕ. Шел, Аслă Октябрь кунĕсемччен пурăнайман С.Полуян. Çĕнĕ саманара пирĕн туслă халăхсем епле çĕкленсе кайнине, вĕсен социализмла культури мĕн тери аталаннине курса вăл чун-чĕререн савăннă пулĕччĕ. С.Полуян çакна шаннă, ĕненнĕ, çавăнпа çырнă та ĕнтĕ вăл «Чăвашсен нациллĕ çĕкленĕвĕ» пек хавхалануллă хайлавĕсене.

Юхма Мишши.

1994 çулта «Вучахра» пичетленнĕ.

ПИТ ХАКЛĂ ПУРЛĂХ ЮРАТУ

2007 çулта Чăвашсен обществăпа культура центрĕн «Аттил» издательстви Янка Купалăн «Пит хаклă пурлăх юрату» кĕнекине пичетлесе кăларнă. Вăл Белорус культурин Чăваш Республикинчи Центрĕн президенчĕ Яков Михайлович Кот çырнă «Великий певец любви и дружбы» статьяпа уçăлать.

Янка Купала (Иван Доминикович Луцевич) – народный поэт Белоруссии, родился 25 июня 1882 года в крестьянской семье. Первое его стихотворение «Мужик» напечатано в 1905 году в газете «Северо-западный край», издающийся в Минске. Впоследствии его произведения активно печатались в газетах «Нива», «Наша нива». Первая книга его стихов «Жалейка» издана в 1908 году в Петербурге. Янка Купала – автор поэмы «Извечная песня» (1908) талантливых книг «Гусляр» (1910), «Сон на кургане» (1910), «Дорогой жизни» (1913), «Могила льва» (1913), драма «Разоренное гнездо» (1913), «Над рекой Оресcой» (1933), «Белоруссии орденоносной» (1937), «Песня строительству», «От сердца» и многих других книг стихов, драм и очерков.

В 1925 году Янке Купале присвоено почетное звание Народный поэт Белоруссии. В 1928 году он избран академиком Академии наук Белорусской ССР, а в 1929 году – академиком Академии наук Украинской ССР. Поэт одним из первых литераторов Белоруссии награжден орденом Ленина. А в 1941 году он стал лауреатом Государственной премии СССР.

Произведения Янку Купалы пользовались подлинной любовью народа. Недаром друзья и почитатели таланта называли Янки Купалу «великим певцом любви и дружбы».

В годы Великой Отечественной войны Янка Купала был в эвакуации, жил в Чебоксарах, Казани и Москве.

В Чебоксарах, столице Чувашской Республики, одна из лучших улиц названа именем Янки Купалы. А в 1957 году Чувашское книжное издательство выпустило отдельным изданием книгу стихов великого белорусского поэта под названием «Ĕмĕт» (Мечта), куда вошли 76 лучших его стихотворений.

Умер Янка Купала 28 июня 1942 года.

* * *

Составитель книги М.Н.Юхма подробно знакомит читателей о мосте дружбы между белоруссами и чувашами. В 1909 году известный белорусский поблицист и литературный критик Сергей Епифанович Полуян, проживший всего-то 20 лет, написал замечательную статью «Национальное возрождение чуваш».

«Диво дивное, в тяжелые времена, когда царизм давил любую свободную мысль, лучшие люди с берегов Немана могли приметить первые проблески возрождения далекого от них народа, чувашей, живущих на берегу Волги. Видимо, небо дает каждому дорогу народу таких друзей, - пишет Михаил Николаевич. - Само по себе похвально желание Сергея Полуяна познакомить тогдашних белоруссов с национально-культурным движением народов, о которых в дореволюционной Белоруссии мало кто и слыхал. Но писатель не просто знакомил, например, с национальным возрождением чувашей и якутов, - он как правило, ставил эти народы в пример белоруссам, тем самым пробуждая у них «национальный стыд», содействуя активной культурно-созидательной деятельности.

Ознакомившись со статьей С.П.Полуяна через писателя, доцента Белорусского государственного университета Вячеслава Рагойши, Михаил Юхма написал статью «Белорусский писатель о чувашах». Он далее говорит:

Янка Купала... Иван Доминикович Луцевич, родившийся 25 июня 1882 года в семье безземельного белоруса, взял себе чисто славянский псевдоним. Знал ли он, Янка Купала, Сергея Полуяна? Можно предположить, что знал хорошо. Наверное, поэтому посвятил одну из самых лучших поэм «Курган» ему, Сергею Полуяну. Известно, что молодой Янка Купала работал именно в этой же газете «Наша нива», где печатал свои произведения, в том числе и статью «Национальное возрождение чуваш» легендарный писатель Сергей Полуян. В 1914-1915 годах Янка Купала был ее главным редактором. Видимо, эта газета в те годы была для белоруссов таким же светочем, как наша газета «Хыпар».

Мост дружбы, построенный Сергеем Полуяном и другими белорусскими и чувашскими деятелями культуры, стал крепким, надежным. Об этом говорит и праздник, прошедший в Белоруссии в октябре 1974 года. В те дни проходили здесь Дни чувашской музыки и литературы.

С тех пор, как мост дружбы соединил наши народы, прошло много времени. Разные были времена. Страна, которая называлась Российской Империей, канула в лета. И другая, сменившая империю, приказала не долго жить. Мы живем сейчас в Российской Федерации в виде отдельного региона, хотя и называемся республикой. А Белоруссия стала независимым государством. Но мост дружбы между чувашским и белорусским народами живет и действует. В Чувашской Республике живут много белоруссов. Они создали Республиканскую организацию Центр Белорусской национальный культуры в Чувашии, руководителем которой стал Я.М. Кот.

Яков Михайлович – человек деятельный, любит литературу, старается поддерживать молодые таланты. И когда возникла идея издать белорусскую литературу в переводе на чувашский язык, мы сразу сказали: «Первая книга будет Янки Купалы...»

Кĕнекере «Икĕ улăп» статья чуна туртăмлă. Унта Михаил Николаевич акă мĕн каланă:

«Эпĕ Янка Купала Шупашкарта пулни çинчен, Семен Васильевич ун çинчен мĕн-мĕн каласа панине йăлтах пĕтĕмлетсе, «Теплота чувашских сердец» тата «Улица Янки Купалы» очерксем те çырнăччĕ. Янка Купала Шупашкарта пулни, чăваш культура ĕçченĕсемпе калаçни чăнласах та пирĕн литература пурнăçĕнче пысăк йĕр хăварнă. Ахальтен мар ĕнтĕ С.В.Элкер хăй те 1957 çулта «Янка Купала Шупашкарта» ятлă пысăк очерк çырса «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пичетленĕ. Çав çулхинех тата Чăваш кĕнеке издательствинче Янка Купалан «Ĕмĕт» ятлă кĕнеки пичетленсе тухнă. Вĕсене пирĕн паллă поэтсем Александр Алга, Стихван Шавли, Александр Артемьев, Николай Евстафьев тата ыттисем те куçарнă.

Янка Купала С.В.Элкерпе туслă пулнине, вăл Шупашкарта

чухне С.В.Элкер ăна мĕн май ситнĕ таран пулăшма тăрăшнине Белорус писателĕсем те питĕ лайăх пĕлнĕ. Ун пирки чăваш писателĕ А.Эсхел хăйĕн «Белорус халăхĕн аслă поэчĕ» статйинче те курăмлăн çырса кăтартать.

А.Эсхел 1949 çулта белорус писателĕсен иккĕмĕш съездĕнче пулнă. Акă, çак статьяри йĕркесем: «Съездри пĕр тăхтав вăхăтĕнче мана такам хулран пырса тытрĕ. Çепĕççĕн. Ачашшăн. Йăвашшăн. Çаврăнса пăхрăм. Хыçăмра Якуб Колас тăра парать. Эпир унченех паллашнă-ха унпала. Халь акă...

– Друже Аркадзь, – терĕ вăл белорусла, унтан тӳрех выраçсла калаçа пуçларĕ. – Каçарăр, Аркадий Александрович, сирĕнпе сăмахласа пăхасшăнччĕ... тусăмçăм Янка Купала пирки. Вăл чи йывăр, 1941 çулхи октябрь кунĕсенче, сирĕн патăрта Шупашкарта пулнă-çке-ха. Кăмăл туйăмĕ еплерехчĕ унăн?.. Сывлăхĕ еплерех?..

– Ах, Константин Михайлович, – терĕм эпĕ, – çав кунсене асăнма та йывăр...

Тепле йывăр пулсан та, эпĕ мĕн астунине йăлтах каласа кăтартрăм. Якуб Колас пĕр чĕнмесĕр, калавăма пĕр пӳлмесĕр питĕ тимлĕн итлесе тăчĕ. Вăхăт-вăхăт çеç хăй çутă пуçне таятая илет...»

Чăнласах та, Янка Купала Шупашкарта пулнă чухне ăна пирĕн Улăп-поэт Семен Элкер мĕн пултарнă таран пулăшма тăрăшни белорус писателĕсен чун-чĕрисенче ырă туйăм çуратнă.

Якуб Колас – белоруссен тепĕр паллă поэчĕ, вăл Янка Купалăпа питĕ туслă пулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ хăйсен çĕрĕнче чăваш писателĕпе тĕл пулсан, тӳрех хăйĕн тусĕ Шупашкарта пулни çинчен каласа пама ыйтнă.

Тепĕр тĕслĕх аса килет. Белоруссен паллă поэчĕ Юрась Свирка икĕ улăп-поэт туслăхне халалласа «1941 çулхи пĕр каласу» ятлă баллада та çырнă. Ăна 1982 çулта, Янка Купала çуралнăранпа 100 çул тултарнине уявланă чухне Г.Орлов чăвашла куçарса «Ялав» журналта та (1982 ç., №7) пичетленĕ. Çавна манăн пĕтĕмпех илсе кăтартас килет:

1941 ҪУЛХИ ПĔР КАЛАҪУ

Элкер
Кăштах пулин те, санăн канмаллах:
Эс ырнă питĕ... Халь хăна пул... пурăн.
Сана кĕтет ман халăх, тахҫанах
Вăл юратать, – ăна хăвах эс куртăн.

Купала
Епле хаяр, хăрушă вăхăт халь:
Ман ен ҫунать, вутра Тăван Ҫĕршывăм.
Чăтма ҫеҫ халăх туптăрччĕ вăй-хал,
Упрантăрахчĕ, юлтăрахчĕ сывă.

Элкер
Мĕнле лăплантарас ĕнтĕ сана...
Сан хурлăху вăл ман чунра-варта та.
Эс, Янка, пĕччен мар, пĕлсем ҫакна.
Килти пек пул эс ман Шупашкарта та.

Купала
Ăш сăмахушăн тав сана, тавах.
Анчах тăван ҫĕртен-ҫке инҫетре эп.
Вăл, ав, ҫунать, ҫунать ҫаплах, йăлтах.
Эп, пур, кунта, унран таҫта, ҫӳретĕп.

Унта каяс – ҫул ҫук, май ҫук пачах,
Темле кĕтсен те Белоруҫ вăрманĕ.
Эп ҫырăп ун ҫинчен, – калас сăмах
Чĕремĕме тулса капланчĕ манăн.

Ҫук, Ҫук! Таптаймĕ сăх тăшман пире,
Славян ҫĕршывĕнче ҫук вырăн уншăн!
Эп ылханатăп чунсăр ирсĕре,
Нихҫан каҫармăп халăх тăкнă юншăн.

...Салхуллăн утнă Атăл хĕррине
Икĕ поэт каçкӳлĕм юнашаррăн.
Вутланнă анăç, сăрĕ-тĕсĕпе
Купалăна вăл туйăннă пушарăн.

Чĕнмен вăл урăх, пĕтĕм хурлăхне
Уçса пама, йăлт пĕлтерме именнĕ.
Асра вăл курнă хăйĕн халăхне,
Унпа пĕрлех вăл тӳснă терт, кĕрешнĕ.

Питĕ тĕрĕс те хитре каланă талантлă белорус поэчĕ Юрась Свирка икĕ поэт туслăхĕ пирки, вĕсем Шупашкарта тĕл пулса мĕн çинчен калаçнине, мĕн çинчен ĕмĕтленнине.

Шупашкарта пулнă хыççăн, вăрçă нуши-асапне тӳссе ирттернĕ поэт-улăп Янка Купала нумай пурăнайман. Унăн хастар чĕри тепĕр çур çултан, 1942 çулхи июнĕн 28-мĕшĕнче тапма чарăннă.

1982 çулта пĕтĕм совет халăхĕ Янка Купала çуралнăранпа 100 çул çитнине чысласа уявланă. Пирĕн паллă писатель А.Эсхель «Белорус халăхĕн аслă поэчĕ» ятлă статья çырса «Ялав» журналта пичетленĕ. Унта вăл хăй 1949 çулта белорус писателĕсен иккĕмĕш съездĕнче пулнине, Якуб Коласпа калаçнине çырса кăтартать.

Якуб Колас – белоруссен тепĕр паллă поэчĕ, вăл Янка Купалăпа туслă пулнă. Чăваш писательне курсассăн, Якуб Колас тӳрех Янка Купала Шупашкарта пулни çинчен, мĕн калаçни, мĕн ĕмĕтленни çинчен ыйтнă.

Тепĕр поэт–Улăп, пирĕн С.В.Элкер çакăн хыççăн та самаях пурăннă-ха. Вĕл çĕнтерӳ кунне те кĕтсе илнĕ, тискер вăрçă паттăрĕ, чăваш ачи Иван Смирнов пулеметчик çинчен питĕ хитре поэма та çырнă. Чăваш поэчĕн, пирĕн литературăн чăн-чăн улăпĕн çулăмлă халăх чĕри 1966 çулхи кĕркунне, сентябрĕн 6-мĕшĕнче тапма чарăннă. Ăна Шупашкарта пытарнă.

Минск хулинче халĕ Янка Купалăн питĕ чаплă музейĕ пур.

Унта, ытти экспонатсемпе пĕрле, Чăваш улăпĕ С.В.Элкерпе унăн юлташĕсем парнеленĕ чусăнкă-кăçат та пур. Минск хулинчех тата Янка Купалăн бронзăран шăратнă кĕрнеклĕ палăкĕ те пур. Гранит постамент çине ылттăн саспаллисемпе сăвă йĕркисем çырса хунă.

И из Кремля дорогой ясной,
Всемирным шляхом человечьим
Идет Коммуны день прекрасный,
Чтоб нашу радость, наше счастье
На всей земле увековечить.

1982 çулта пĕтĕм совет халăхĕ Янка Купала çуралнăранпа 100 çул çитнине уявланă. Пирĕн хаçат-журналсем пурте Белорусси улăп-поэчăн хайлавĕсене пичетленĕ. А.Эсхел вара «Ялав» журналта «Белорус халăхĕн аслă поэчĕ» ятлă очерк пичетленĕ. Унта вăл эпĕ çырса кăтартнă икĕ улăп-поэтсен туслăхĕ çинчен те, хăй 1947 çулта Минскра пулса Янка Купала палăкне чăвашсен ячĕпе пуç тайни çинчен те тĕплĕн çырса кăтартать».

ЯНКА КУПАЛА СĂВВИСЕМ

ĔМĔТ

Пĕтĕм çĕрте халăхпа калаçасчĕ,
Унăн чĕри таппине итлесе –
Пурнăç, ĕмĕт ман çавă пулсанччĕ,
Йывăрлăхсене пырас çĕнтерсе.

Çепĕç илемлĕ çĕн юрă хайласчĕ,
Пур кил-çуртра та юрласчĕ ăна –
Пĕр çакăн пек телее ман курасчĕ,
Çавăн чухне пăрахап хурланма.

Çук, пĕтереймĕ нимле кӳренĕ те
Ыйхăран вăранан халăх чунне,
Çак шанчăкпа çеç пурнатăп халь эпĕ
Кирлĕ мана çакăн пек çуркунне.

Çутă хĕвел патне тĕттĕмлĕхрен –
Манăн çĕклесчĕ тăван халăх ятне.
Çакăн пек çул çеç эп шырап тĕнчере,
Урăх çул-йĕр йышăнматсь ман чĕре.

Савнă çĕршывшăн, телейшĕн тăрасчĕ,
Кам çĕнтерӳçĕ аслă кĕрешӳре.
Уншăн кăна куçсене ман хупасчĕ,
Çак ăраскал илĕртет ĕмĕтре.

1912

ЧĔКЕÇ Люççи куçарнă.

ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Çĕрпе те, тӳпене те çывăх эп ялан,
Çав çыхăну – пит çирĕп, ванмĕ ĕмĕрпе вăл.
Çĕршыв сыхлать мана хăй ывăлне сыхланă евĕр
Хĕвелшĕн – чунăм та, чĕрем те уçă ман.

Сăпка юррисенчен ку тарана çити
Кунта пурне те эп чун-чĕререн саватăп.
Хама çĕршывăмăн пĕр пайĕ тек туятăп,
Чĕремĕмре сӳнмест тăван çăлтăр çути.

Çапла, эп ку çĕре тăван тесе шутлатăп.
Ытти çĕре пĕр ăмсанмасăр пурăнатăп.
Эп йăпшăнап хам çĕр çумне – анне вăл ман.

Манран тăшман кулма пăхсан – туятăп:
Ман çĕршывран та вăл кулать апла пулсан, –
Мана çĕр хут йывăртарах унран кулсан.

1915

Николай ЕВСТАФЬЕВ куçарнă.

САЛАМ СИРЕ...

Салам сире, маттур çыравçăсем –
Ман чун сире салам ярать.
Хайлавăрсем – хĕвеллĕ юрăсем,
Халь ирĕкри çĕршыв юрлать.

Пурнатпăр халь хĕвеллĕ çĕршывра,
Телей тĕнчи пире кĕтет.
Телей тупатпăр пурте чăнлăхра,
Суя тĕнче йăлтах пĕтет.

1936

ЮХМА Мишши куçарнă.

ЯНКА КУПАЛА УРАМĔ

Вун тăххăрмĕш ĕмĕр вĕçнелле Шупашкарта 76 урам, тăкăрлăк, площадь, слобода (сала) тата нумĕрленĕ 860 уйрăм çынсен çурчĕ пулнă.

Хула ӳссе, сарăлса пынă май, урамсем те йышланнă. Вăрçăчченхи çулсенче Трусиха, Сăкăт, Чебоксарка юхан шывĕсем çумĕнчи выльăх çӳретмелли çĕрсене усă курнипе çĕнĕ çурт-йĕр ӳссе ларнă. Ку лаптăксем хулана тивĕçтерми пулнă. Юнашарти колхозсен çĕрĕсене тĕкĕнме юраман. Республикăпа Шупашкар пуçлăхĕсем йывăрлăхран тухмалли майне тупаççĕ. Хула çумĕнчи колхозсене Шупашкар чиккине кĕртсе хула канашĕн ĕçтăвкомне пăхăнмалла тăваççĕ. Ирĕклĕ çĕр хутшăнать. Совхознăй, Кировски, Вокзальнăй çĕнĕ микрорайонсем

ӳсе-ӳсе лараççĕ. Урамĕсене ят панă чухне интернационализм юхăмне вăйлатассине те шута илеççĕ. Çапла чукун çул вокзалĕ хыçĕнче Янка Купала урамĕ те хула картти çине çырăнать.

Промышленность тракторĕсен завочĕ хута кайнă хыççăн хулан çĕнĕ микрорайонĕсем хутшăнаççĕ. Мир урамĕн сылтăм енчи çĕре пулас мотор завочĕ валли уйăраççĕ. Унти уйрăм çынсен çурчĕсене пăсса çӳллĕ çуртсем лартаççĕ. Мир проспекчĕ вара Янка Купала урамне те мирлĕнех куçран çухатать. Белорус халăх поэчĕ, интернационалист ячĕллĕ лăпкă урамра пурăннă хула çыннисем вара хăйсене уйăрса панă чул çуртсене пурăнма куçаççĕ иртнĕ ĕмĕрĕн вĕçнелле.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ ПУЛСА ТĂЧĔÇ

(Семен Элкер премийĕ)

Ватăлма шутламан шухă журналист вăл – Андрей Иванович Михайлов, Ишлей районĕнчи (хальхи Шупашкар районĕ) Хачăк ялĕнче 1930 çулта çуралнăскер. Колхоз пурнăçĕ çинчен район хаçатне «Колхозник сассине» çырма пуçланă, майĕпен республика пичечĕ енне те çывхарнă. Вăтам шкултан вĕренсе тухсассăн тепĕр çулнех хастар комсомолеца ВЛКСМ райкомне ĕçе илеççĕ. 1955 çулта партин аслă шкулне вĕренме яраççĕ. Тăватă çул хушши пуçлăх ăсне пуçа хывса, çирĕпленсе çитнĕ коммуниста парти обкомĕ Çĕрпӳри «Октябрь çулĕ» хаçата ярать. Унта вăл редактор заместителĕнче тата парти пурнăç пайĕн заведующийĕнче ĕçлесе журналистика лаççинче туптанать, унтан Шупашкар районĕнчи «Ленин çулĕпе» хаçат редакторĕн заместителĕ, редакторĕ пулать.

Район калăпăшĕ Михайловшăн тăвăрланса пынине парти обкомĕнче ĕçлекенсем кураççĕ. Çавăнпа ăна анлăрах çул уçса пама шутлаççĕ. Çапла Андрей Иванович партин Питĕрти аслă шкулĕнче икĕ çул хушши хаçат ĕçченĕсен уйрăмĕнче ăс пухать. Унтан таврăнсан тăватă çул обкомăн пропаганда пайĕн пичет секторĕнче инструкторта ĕçлет, сектор пуçлăхне çити ӳсет.

1985 çулта, çĕршывра çĕнетӳ тапхăрĕ пуçлансан, пурнăç йĕрки улшăнать. Михайлов юлташ та урăх пӳлĕме куçать. Вăл халĕ ĕнтĕ пичет вăрттăнлăхне сыхлаканĕсенчен чи асли – ЧР Министрсен Канашĕн патшалăх управленийĕн пуçлăхĕ, СССР Главлитне те пăхăнаканскер. Управлени сотрудникĕсем пичетре, радиопа телевиденире пур материала тĕплĕ вуласа хăйсен инструкцийĕсемпе танлаштарса пăхса ĕненмесĕр халăх хушшине кăларттармастчĕç. Пайтах ăша хыптарнăччĕ вăл, пирĕн «хăрушă тăшман-чаруçă» материалсене юсаттарса е пăрахăçлаттарса. Ăна пула ĕç чарăнса ларатчĕ, пирĕн вăхăт усăсăр нумай çунатчĕ. Çапах та Андрей Иванча эпир уншăн кӳренмен. Хăйĕн кăмăлĕпе вăл темле хаярлăха та пусарма пултаракан çирĕп чунлă çын вĕт.

Пичет секторне ертсе пынă тапхăрта вăл пире Мускава, СССР журналисчĕсен Союзĕн эрнелĕх семинарĕсене Журналистсен Тĕп çуртне илсе каятчĕ. ЧАССР Журналистсен союзĕн хуравлă çыннисемпе пĕрле питĕ туслăн, пĕр-пĕрне ăнланса ăс пухаттăмăр. Çав пĕрлĕх кунĕсем асран тухмаççĕ.

Пичет ĕçĕнче пĕрле ĕçлесе пурăннă хушăрах Андрей Ивановичăн пенси вăхăчĕ те персе çитрĕ. Вăл вăхăтра тата Раççейре пысăк улшăнусем пулса иртрĕç, СССР Главличĕ çĕршывĕпе пĕрлех таçта кайса çухалчĕ. Ăста, пултаруллă çын таçта та кирлĕ. Республикăри Журналистсен союзĕ ăна правленин ответлă секретарьне суйлать. Паян кунччен те çанă тавăрсах ывăнма пĕлмесĕр тĕрмешет çутă сăнлă, кăлтăр кулăллă, ырă кăмăллă Андрей Иванович, Союз правленийĕн ĕç тытăмне йĕркелесе, çирĕп тытса пыракан таса чунлă ĕçчен. Союзăн пуçламăш организацийĕсен ĕçне пĕр чăмăра хытарас çĕрте вăл правлени председательне Валерий Петрович Комиссарова вăйлă пулăшу парать. Унăн ĕçĕ яланах шанчăклă, типтерлĕ, витĕмлĕ. Çырма та, кăнцелярин «хура ĕçне» те вăхăтра, кирлĕ шайра туса пыма та пултарать Çемен Элкерĕн премине чăнни-

пех тивĕçнĕ хĕрӳ, ватă журналист, йĕркелӳçĕ, пирĕн Чăваш журналистикин тĕпчевçи.

1974 çулхи ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче Чăваш Республикин журналистсен союзĕн правленийĕ, унăн председателĕ П.А.Крысин пуçарнипе, çыравçăсен пултарулăх ĕç-хĕлне хавхалантарас тĕллевпе кашни çул памалли преми йĕркелеме йышăннă. Çак тапхăрта республикăра Чăваш халăх поэчĕ Семен Васильевич Элкер 80 çул тултарнине анлă паллă тума хатĕрленетчĕç. Паллă писатель-публицистăн чăваш пичетне, журналистикăна аталантарас тава тивĕçлĕ ĕçĕсене шута илсе премине унăн ятне пама йышăнчĕç.

Чăваш халăх поэчĕ çуралнăранпа 115 çул çитнĕ май (01.05.2009ç.) унăн ячĕллĕ журналистсен сумлă премине иртнĕ çулсенче камсем тата мĕншĕн тивĕçнине пăхса тухни вырăнлă тесе шутлатăп.

Семен Васильевич Элкер 1894 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче Йĕпреç районĕнчи Мăн Упакассинче çуралнă. Çамрăклах пĕрремĕш тĕнче вăрçин вут-çулăмĕ витĕр тухма тивнĕ унăн. Октябрьти революци хыççăнхи çулсенче Кушлавăш вулăс ĕçтăвкомĕнче тата ялти шкулта ĕçленĕ. 1922-1935 çулсенче «Канаш» тата «Пирĕн ял» хаçатсен, «Сунтал» журнал редакцийĕсенче тимленĕ, Чăваш кĕнеке издательствин аслă редакторĕ пулнă. 1935-1966 çулсенче пĕтĕмĕшлех литература ĕçĕ-хĕлĕпе пурăннă.

Чăваш литературине Çемен Элкер «Хĕн-хур айĕнче», «Шурăмпуç килсен», «Вутпа çулăм витĕр» хайлавсемпе, ытти чылай кĕнекесемпе кĕрсе юлчĕ.

С.В.Элкер ячĕллĕ премийĕн пĕрремĕш лауреачĕн ятне 1975 çулта икĕ журналист – Пĕтĕм Союзри радиопа Тĕп телевиденин Шупашкарти корреспонденчĕ Ю.А.Князев тата «Коммунизм ялавĕ» (халĕ «Хыпар») хаçатăн культура, литературăпа искусство пайĕн пуçлăхĕ Л.В.Таллеров тивĕçлĕ пулчĕç.

Паянхи пекех астăватăп, Юрий Князев журналист Шупаш-

карти промышленноҫ тракторĕсен завочĕн стройкинче тăтăшах пулатчĕ. Пĕтĕм Союзри радиопа Тĕп телевидени валли кăларăмсем хатĕрлетчĕ. Вăл çырнă статьясем, очерксем республика хаçачĕсенче тăтăшах пичетленетчĕç. 1974 çулта пулас предприятие халалласа «Гигант на Волге» кĕнеке кăларчĕ. Паллă журналист кĕнеки Шупашкарти трактор завочĕн историйĕн никĕсне хыврĕ тесен те йăнăш мар. Кĕнеке авторĕ ЧР Журналистсен союзĕн премине тивĕçрĕ. Лауреата пĕрремĕш номерлĕ дипломпа тата С.В.Элкер сăнĕллĕ паллăпа чысларĕç. Пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса кайман пулсан Ю.А.Князев анлă тематикăллă, пуян содержаниллĕ хайлав тата чылай çырнă пулĕччĕ.

«Коммунизм ялавĕ» хаçатăн пай пуçлăхĕ Лаврентий Таллеровăн пултарулăхĕнче чăваш культуринчи, литературăпа искусствăри паллă çынсене сăнласси пысăк вырăн йышăннăччĕ. Унăн 1974 çулта хаçатра пичетленнĕ «Мĕн вăл талант?» , «Унăн пурнăçĕ – театр», «Васкат мана пурнăç» очеркĕсене творчество интеллигенцийĕ пысăка хурса хакларĕ, вулакансем ырларĕç. Журналист-писатель çав хайлавĕсемшĕн С.В.Элкер премине тивĕçрĕ. Çакна çирĕплетсе ăна иккĕмĕш номерлĕ диплом пачĕç.

Иртнĕ тапхăрта, 1975-2003 çулсенче, ЧР Журналистсен союзĕн премине 55 автор тивĕçлĕ пулчĕ. Лауреатсен произведенийĕсенче Чăваш Ен экономикин çивĕч ыйтăвĕсем тĕп вырăнта. Вĕсен хушшинче Валентина Иванован «Летопись Тракторостроя» радиоочеркĕсене, Валерий Николаевăн «Орден на знамени» кĕнекине, Валентин Шишкинăн «Трасса» кĕнекипе «Курс на Ямбург» тата «Жизнь, познанная сердцем» статйисене, Герман Желтухинăн «Кашмаш çăлтăрĕсем» кĕнекине, Иван Михайлов, Леонтий Алексеев, Иван Михеев, Аркадий Казанов, Елена Лосева, Геннадий Кузнецов журналистсен ял хуçалăхĕн кăткăс ыйтăвĕсемпе ял ĕçченĕсене сăнлакан произведенисене палăртмалла. Сĕнтĕрвăрри районĕн экономикине тишкернĕ статьясемшĕн «Пирĕн сăмах» хаçатăн тĕп редакторĕ Г.А.Яковлев тивĕçрĕ. Валерий Комиссаров «Чуваш-

ская Республика: приглашение к сотрудничеству» кĕнекере уйрăм предприяти-организацисен ӳсĕм çулне тишкернĕ май Чăваш Енĕн экономика аталанăвне кăтартса пачĕ. Юлашки тапхăрта асăннă кĕнеке çулсеренех тухма тытăнни – ырă пулăм.

Культурăпа литература ыйтăвĕсемпе çырнисенчен Павел Крысинпа Николай Константиновăн «Ăраскал» телеочеркне (Валентин Урташ пултарулăхĕ пирки), Нинель Ургалкинан «А.К.Сверчков» кĕнекине, Валерий Алексеевăн кинофильмсем валли çырнă «Поле перейденное», «Времени круговорот», «Свет и тепло» сценарийĕсене, Петр Андреевăн «Юррăмсем, çунатăмсем» кĕнекине, Петр Сымкинпа Анатолий Абрамов фотоĕçĕсене, Людмила Смолина чăваш литературипе искусствин паллă деятелĕсем çинчен çырнисене палăртмалла.

«Хресчен сасси» хаçатăн тĕп редакторне Сергей Павлова 2002 çулта пичетленсе тухнă «Южное тепло Северной Каролины» кĕнекишĕн (турист çырса пынă çул çӳрев очеркĕсем) С.В.Элкер премийĕ парса хакларĕç.

Раççейĕн паянхи пурнăçĕнче наци ыйтăвĕ – чи кăткăсси. Çакна шута илсе, пирĕн журналистсем наци хутшăнăвĕпе аталанăвĕн проблемине пичетре сахал мар хускатрĕç. Алексей Леонтьев («Хыпар») наци хутшăнăвĕсем пирки тишкерсе уйрăмах нумай çырчĕ. Унăн публицистика статйисен ярăмĕ 1995 çулта С.В.Элкер премине тивĕçрĕ. Паллă журналист-публицист творчествинче наци ыйтăвĕсемпе ĕçлесси паян та пысăк вырăн йышăнать. С.В.Элкер премине 1999 çулта тивĕçнĕ Надежда Смирновăн («Хыпар» хаçат) чăваш диаспорин паянхи пурнăçĕ çинчен çырнă хайлавĕсене палăртмалла.

«Историческая судьба и современные национальные проблемы чувашского народа» кĕнекишĕн тата наци ыйтăвĕсемпе çырнă статйисемшĕн 2001 çулта С.В.Элкер премине РФ Журналистсен союзĕн членĕ В.Д.Димитриев профессор (Чăваш патшалăх университечĕ) тивĕçлĕ пулчĕ: ку тематикăпа нумай енлĕ, содержанипе пуян произведенисем Чăваш Енре ун чухлĕ никам та çырман.

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче 1994 çултанпа журналистика факультечĕ ăнăçлă ĕçлет.Пулас журналистсене çырас ăсталăха алла илме пулăшас тĕллевпе факультет ăсчахĕсем вун-вун кĕнеке пичетлесе кăларчĕç. Иван Тенюшев «Первые чувашские публицисты», Константин Петров «Возникновение чувашской журналистики», «История чувашской журналистики», «Жанры чувашской журналистики», Анатолий Данилов «Чăваш публицистики» кĕнекесемшĕн С.В.Элкер премине илме тивĕç пулчĕç.

Пичет ветеранĕ Андрей Михайлович Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн историйĕ çинчен çырнă очерксем те (вĕсене 2002 çулта С.В.Элкер премийĕпе хаклана) журналистика факультетĕнче вĕренекенсемшĕн усăллă пулмалла.

ЧР Журналистсен Союзĕн премийĕпе хаклана произведенисен тематикине тишкерни çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума май парать: вĕсем пĕр тĕллевлĕ, содержанийĕпе чăннипех те пуян. Çак хушăрах С.В.Элкер премийĕпе палăртнă произведенисенчен çарпа патриотизм темипе çырнисем икĕ кĕнеке çеç – Антип Николаевпа Прохор Трофимовăн «Салтак мухтавĕ» тата Петр Сидоровăн «Çамрăклăх вутра» кĕнекисем. Çамрăксене тивĕçлĕ воспитани парас, саккунлăха çирĕплетес темăпа çырса С.В.Элкер премине тивĕçнисем те иккĕн кăна: Зоя Григорьевăн «Подросток среди нас» ярăмĕ тата Лариса Буланкинăн «Дом без сыновей», «Благополучная деревня», «И никто не остановил» публицистика стайисем. Журналистсен асăннă тематикăсен пĕлтерĕшне шута илесчĕ. Çĕршывра паянхи лару-тăру вĕсене вăйлатма хистет. ЧР Журналистсен союзĕн правленийĕн те хăйĕн ĕç-хĕлĕнче çакăн çинчен манас марччĕ.

С.В.Элкер премийĕн лауреачĕсем чи йышли – «Хыпар» хаçатăн туслă коллективĕ: вуннăн вĕсем. Паянхи куна лауреатсенчен «Хыпар» издательство çуртĕнче Алексей Леонтьев, Геннадий Максимов, Николай Коновалов, Надежда Смирнова ĕçлеççĕ. «Советская Чувашия» хаçат редакцийĕнче С.В.Элкер премине илнисем саккăрăн, республикăри телевиденипе радиовещани коллективĕнче – çиччĕн. Çакна палăртса

хăвармалла, премие тивĕçнисем хăйсен пултарулăхĕпе журналистсемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăчĕç. Çыравçăсен вĕсенчен вĕренмелли нумай.

Чăваш халăх поэчĕн юбилейĕ çулĕнче унăн ячĕллĕ премине Канаш хулипе районĕнче тухакан «Позиция – эксперсс» хаçатра «Современная чувашская деревня» рубрикăпа 2003 çулта пичетленнĕ статьясемпе очерксемшĕн авторсен коллективĕ – Игорь Игнатьев, Василий Лапин, Святослав Максимов – çĕнсе илчĕç. Чăваш радио редакторĕ Лидия Чаева çак сумлă премие «Позывные добра» кăларăмсемшĕн тивĕçрĕ.

Лауреатсенчен çулĕпе чи аслисем – Павел Крысин, Иван Тенюшев, Михаил Иванов. Вĕсем ватлăха парăнмаççĕ, паян кун та журналистикăра малти ретре.

Юлашки çулсенче Элкер премине илнĕ журналистсем хушшинче: Сергей Журавлевпа Семен Игнатеьв фото ăстаçăсем, чăваш искусствин паллă ĕçченĕсем, чăваш культурин аталанăвĕ çинчен нумай çул хушши çырса пынă Галина Матвеева, Петр Краснов тата ытти пултаруллă журналистем те. Элкер премине 64 журналист илнĕ.

Иртнĕ тапхăрта республикăри хаçат-журнал, телевидени-пе радиовещани коллективĕсем çамрăк çыравçăсемпе чылай çĕнелчĕç. Вĕсен йышĕнче пултарулăхра шанăç паракан сахал мар. Вăхăт иртнĕ май çамрăк йышран С.В.Элкер премийĕн çĕнĕ лауреачĕсем тухасса кĕтетпĕр.

Андрей МИХАЙЛОВ,
ЧР Журналистсен Союзăн правлени членĕ.
2009 çулхи авăн уйăхĕ.

1. С.В.Элкер премине йĕркеленĕ Павел Афиногенович Крысин.

2. ЧР Журналистсен Союзĕн правлени председателĕ Валерий Петрович Комиссаров.

3. С.В.Элкер премине парассипе ĕçлекен комисси председателĕ Анатолий Порфирьевич Данилов.

НАЧИНАЛОСЬ ТАК...

Отрадно, что сейчас лучшие журналисты республики за свои работы ежегодно удостаиваются премии имени С.В.Эльгера – почетной награды за высокопрофессиональный труд. А как же зародился именной приз?

В семидесятые годы, когда возглавлял журналистскую организацию республики, мне приходилось часто бывать в Москве, встречаться с руководителями творческих союзов автономных республик и областей на съездах, пленумах, пресс-конференциях. Мы делились опытом своей работы, каждый из нас в непринужденной обстановке рассказывал что-то новое о деятельности своих журналистских организаций. И однажды я узнал, что в одной братской республике для поощрения журналистов учреждена именная премия. И у меня зародилась мысль – ввести такую премию и в Чувашии.

Вернувшись из Москвы, поделился своей мыслью с редакторами республиканских газет. Задумку одобрили. С предложением о целесообразности учреждения именной премии согласились и члены президиума правления Союза журналистов республики. Стали перебирать имена известных в прошлом журналистов и писателей, работавших в редакциях и

оставивших заметный след в жизни нашего общества. Почему писателей? Раньше они все были выходцами из редакционных коллективов газет. Было названо несколько имен.

После всестороннего обсуждения остановились на имени журналиста и писателя Семена Васильевича Эльгера.

В создании медали активно участвовал наш ответственный секретарь Антип Николаевич Николаев. В то время очень трудно было пробить этот вопрос. Антип Николаев, имеющий особый подход к людям, съездил на завод в Мытищи, нашел там специалиста, договорился с ним, вручил ему эскизы, разработанные художником Э.М. Юрьевым.

И вскоре заводской мастер добросовестно выполнил наш заказ.

Так появилась именная премия и медаль с изображением силуэта Семена Васильевича Эльгера.

Павел КРЫСИН,
член Союза журналистов с декабря 1957 г.

ЭЛКЕР ПРЕМИЙĔН ЛАУРЕАЧĔСЕМ ÇИНЧЕН

ЧАПНЕ ЧĂВАШ ТĔНЧИНЕ САРЧĔ

Лаврентий Таллеров çуралнă 1929 çул пуçламăшĕнче Аслă Каçал тăрăхĕнчи Нĕркеç ялĕнче. Ялти ытти ачапча пекех шкулта вĕреннĕ, колхоз ĕçĕнче, кил хуçалăхĕнче хресчен йăлттамлăхĕпе никамран та ӳксе юлман. Ялта, таврара ăслă-тăнлă пултарулăхĕпе палăрма пултарнă. Çавна пулах вăл çамрăксен пысăк ушкăнĕн ертӳçи пулса тăнă, çĕршывра каччăсемпе хĕрсен пурнăçне çĕнĕлле сиктерсе пыракан комсомол хĕрӳлĕхне хăйсен таврашĕнче вăйлатма тăрăшнă.

Пĕлĕве ӳстерсе, чунри тапса тăракан хăват унăн çул тумхахĕсене сирсе пынă. Пултарулăх çăлкуçĕ чарăнмасăр тапнă. Çак ырă улшăнăва район, республика кантурĕсенче те тăнлă çынсем асăрханă. Çапла майпа Лаврентий Васильевич Комсомольски районĕн хаçатĕнче, «Коммунизм ялавĕнче»,

«Тăван Атăл» журналта ăсталăхне туптать, нумай çамрăка илем çулĕ çине кăларать, нумай çырать, ятне чăваш тĕнчине кăларать.

Пуçласа эпĕ унпа Каçалра паллашнăччĕ. Йĕпреçри «Çĕнтерӳшĕн» хаçатра ĕçленĕ май, кам мĕнле хаçат кăларнине питĕ тишкерес килетчĕ. Районсемпе хуласенче кăларакан хаçатсем хушшинче вара Таллеровăн «Октябрь ялавĕ» ялан чи вăйлă виçĕ хаçат шутĕнчеччĕ. Редакцисем туслă çыхăну тытатчĕç. Çапла эпĕ те Аслă Каçала вăрман урлă каçса ăста редактора куртăм. Уçă кăмăлĕ, çамрăк çыравçăсемшĕн тăрăшни, хăйĕн ăсталăхĕ тыткăнларĕ. Çак лайăх енсене эпĕ чылай кайран, хам «Тăван Атăлра» унăн заместителĕнче ĕçленĕ çулсенче, тата аванрах туйрăм. Ĕçлеме аванччĕ унпа. Шанатчĕ вăл пире. Чĕлхе ăсталĕхĕпе, çыравçă маçтăрлăхĕпе, ĕçйĕркелӳ мелĕсене лайăх пĕлнипе хăй çумне туртатчĕ.

Паллах, этемĕн ĕçри ырă енĕсем тӳрех тупăнмаççĕ, пурнăç сунталĕ çинче туптанса çирĕпленеççĕ. Райхаçат редак-

Обществăлла корреспондентсен съездĕнче ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн председателĕ Д.Митьков Л.Таллерова Хисеп грамоти парать. 1956 çул.

торĕнче, вăл вăхăтра парти райкомĕн бюро членĕнче, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕн пай пуçлăхĕнче, журнал редакторĕнче, нумай-нумай обществăлла ĕçре шăварăнса çитнĕ унăн ĕç таланчĕ. Çав хушăрах илемлĕх пултарулăхĕ те пурнăçрах туптаннă. Очеркистран паллă романиста çитме, Чăваш халăх писателĕ хисеплĕ ята чăннипех илме тивĕç çитерчĕ Лаврентий Таллеров. 1976 çулта ăна СССР писателĕсен Союзĕн членне илнĕ. Вăл – ЧР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Журналистăн, писателĕн ĕç сĕтелĕ сăнарлăхпа, çĕнĕ геройсемпе пуян. Ĕçлет ывăнма пĕлмен çыравçă, чăваш халăхĕ валли çĕнĕрен те çĕнĕ калав, повесть, роман шăрçалать. Унăн пултарулăхĕ пурнăç тĕнчекурăм чăнлăхĕпе, сăнарлăхĕпе, тăван çĕрĕн пуянлăхĕ пек пуян чĕлхипе хăйевĕрлĕ анлă çăлтăр тĕнчи.

Иртнĕ ĕмĕрĕн çитмĕлмĕш-сакăрвуннăмĕш çулĕсенче те унченхи пекех социализмла ăмăртура пĕр-пĕр ĕç коллективне е уйрăм çынна çав тери ырласа мухтав тăвĕ тăрне вĕçтерсе ярасси çирĕп йăлараччĕ. Çав юхăма Йĕпреç районĕнчи «Трудовик» колхозпа унăн ертӳçи Антон Григорьевич Шордеев та кĕрсе ӳкнĕччĕ. Шуркасси хресченĕ хăйне евĕр сыннăчĕ. Райком бюровĕнче, район канашĕнче, хăйсен патĕнче пĕрле пулса калаçнă, тавлашнă, савăннă хушăра эпĕ унăн çĕр туртăмлă кăмăл-туйăмне сăнаса, ăша хывса пыраттăмччĕ. Çирĕп кăмăллă хресченĕн ертӳçи вун сакăр çул хушшинче пысăк упакассисене çăкăрлă турĕ, ура сыртарчĕ. Пуçарулăхĕ те, кутăнлăхĕ те, çураçулăхĕ те пĕрлехчĕ ĕнтĕ. Парти райкомĕпе район канашĕн ĕçтăвкомне ертсе пыракан талантлă Николай Григорьевич Лермонтов тата Алексей Васильевич Турханов пулăшнипе Шордеев хăйĕн ылтăн çăлтăрне тытма пултарчĕ, ЧАССР Аслă Канашĕн депутачĕ пулчĕ. 1973 çулта ăна Социализмла Ĕç Геройĕ ятне пачĕç.

Ун пек чухне массăллă информаци хатĕрĕсем текен вĕри вучахра яланах çулăм пĕлĕте çити кĕрлесе хăпарать. Акă,

Пысăк Упакасси те çав çулăм çуттипе ялкăшса çуталса кайрĕ. «Коммунизм ялавĕ» хаçатран культура пайĕн пуçлăхĕ, тахçанах чапа тухнă журналист Лаврентий Таллеров та вашкăртса çитрĕ. Кĕçех чăваш хаçатĕнче «Тарăн суха» очерк пичетленсе тухрĕ. Ăста автор, ял çынни, чунĕпе ăнланма пултарнă пысăк упакассисемпе шуркассисем тата шĕпекечсем мĕнле майпа тырпул тухăçне ӳстернине те, çавна пула выльăхчĕрлĕх тупăшне хăпартса янине те, ял çыннисен пурнăçне курăмлă аталантарма пултарнине те. Кушлавăш тăрăхĕн паттăрĕ Семен Васильевич Элкер çуралнăранпа 80 çул тултарнине анлăн паллă тума палăртнă вăхăтра Чăваш Республики журналистсен союзĕ ун ячĕпе преми тусан, 1975 çулта чи малтан чăваш журналисчĕ, писателĕ Лаврентий Васильевич Таллеров лауреат чысне тивĕçрĕ. Унăн пултарулăхне шута илнĕ вăхăтра комисси членĕсем чи малтан «Тарăн кас» очерка тĕпе хунă. Çапла Таллеров хăйĕн пултарулĕхĕнче тарăн кас хывсах пырать.

КĂМĂЛНЕ СУТМАН, КĂМĂЛĔПЕ ÇЫННА ПУЛĂШАКАН

Эпир, район хаçачĕсенче ĕçлекенсем, хамăрăн коллективсенчи пултарулла журналистсенчен вĕренсе пынă хушăрах, Шупашкарти хаçат ăстисен пултарулăхĕпе чуна канăçсăрлантарса, вĕсен çивĕч те тарăн шухăшлă та, сăнарлă хайлавĕсемпе шухăша каяттăмăр: нивушлĕ пирĕнтен те тухмасть çавнашкал маçтăрлăх?

Тĕп хулана тĕрлĕ енлĕ ĕçпе лексенех манăн хамăн тӳрех «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн редакцинче пулас килетчĕ. Вăл вăхăтра унта Вăрнар ачи Сидор Федотов, Канаш енсем Александр Николаев, хăйне кайран тип çырма ячĕпе Аслут теттернĕскер, Юмансарти Иван Михай-

лов, пĕр сехетре хаçат умстатйи тата ирччен вăйлă очерк майлаштарса хума пултаракан Василий Максимов, васкамасăр, кутран тĕртнине юратмасăр хăйĕн пуç чуппипе ăнтăлса ĕçлекен Николай Герасимов, хаçат «улпутне» Михаил Николаевич Якимова, чĕлĕмне мăкăрлантарма кансĕрлесех, вут-çулăмла ĕçлетчĕç. Вĕсен хушшинче Иван Михайлович Михайлов уйрăмах палăрса тăратчĕ: кăмăл çирĕплĕхĕпе, тавракурăмĕпе, юлташлăх туйăмĕпе. Ку ĕнтĕ вăл хаçат юлташĕсенчен чи аслăрах пулнинчен кăна та мар, унăн эртеллĕхри аслăлăхăслăлăх вăйĕнчен килнĕ пуль. Иван Михайлов, 1926 çулта çуралнăскер, 1943 çулта хĕрлĕ çăлтăрлă карттус тăхăнса, радиста вĕренсе, радиостанци начальникĕ пулса, фронт çулĕсемпе Берлина çитнĕскер, çула май Белоруссие, Польшăна, Померанине нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă хаяр çапăçусене хутшăнса медальсем илме тивĕçнĕскер, фронтовик ячĕпе хăйĕн юлташĕсене сăмсаран шаккама та пултарнă.

Вун çиччĕре вăрçа лексе арçын хурмине кĕрсе тавраннăскер вăл ВЛКСМ Канаш райкомĕнче хăйĕн хастарлăхне кăтартать. Пуçĕнче çыраслăх шăрки ачаранах йăшăлтатма пуçланăскерĕн, вĕренес килнĕ. Хусанти патшалăх университетĕнче пĕлĕвне ӳстернĕ хыççăн вара Шупашкарта Михаил Якимов майор камантине лекет те... пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн унăн заместительне çитет, çирĕм çул чăвашăн тĕп хаçатĕнче вăйне парать.

Чăвашра сахалрах тĕл пулакан хура-хăмăр çӳçлĕ, самантрах улшăнса кайман пит-куçлă, сăмаха вырăнсăр персе яман, кирлĕ чухне тивĕçлĕ çунтарса илме пултаракан çивĕч чĕлхи, аякран сасартăк хăлтăрт туса илнĕ аслати сассиллĕ çăмăл кулли халĕ те куç умĕнчех. Вĕсен редакцийĕнче пулнă чухне эпĕ ăна нихçан та кам çине те пулин сиксе ӳкнине е кама та пулин çухăрса-кăшкăрса кӳрентернине асăрхаман. Кăранташ-ручкине пирус вырăнне чăмлама пăрахманнине курнă вара.

Унпа редакцинче паллашса, унăн хăй кăна кăмăллакан юлташĕсемпе çывăхланса эпĕ чăнах та хамăн ĕмĕтĕме пурнăçа кĕртсе пытăм. Вĕсен калаçăвĕн тĕп шухăшĕ те пултарулăх

çинченччĕ. Пире, шăркалчăсене, сăмах май вĕрентӳ урокĕсем те парса илетчĕç. Ăслă-тăнлă çынпа пуç тавра çавăрттарса калаçниех вăл хăй ăнкарсах илеймен е çав вăхăтри шая çитеймен тĕлтен тăрук çӳлелле вĕçсе кайма пулăшать. Иван Михайлович вăл пирĕн материалсене ручкăпа мар, ăсĕпе редакциленĕн туйăнатчĕ, çавăнпа ун çумнеллех туртатчĕ чунăм.

Эпир те ĕнтĕ, сăмса шывне шăлса хамăрăн пит-куçа чăваш вулаканĕсем умне çитерсе пыраттăмăрччĕ. Çитмĕлмĕш çулсенче, район хаçачĕн редакторĕнче ĕçленĕ чухне, Иван Михайловича Йĕпреçре кĕтсе илтĕм. Вăл, Сăр-Чăваш вăрманне епле те пулин этеме çывăхрах сыхласа хăварассишĕн сахал мар публицистикăллă стаьясемпе очерксем çырса республикăра лайăх-япăх енчен те палăрнăскер, фронтра çамрăк чĕри çумне хывса килнĕ хастарлăхĕпе вăрмана пĕтерекенсемпе хăюллăн çапăçатчĕ. Йĕпреç вăрман хуçалăхĕнче тата вăрман-промхозĕнче чуна кăмăллă-кăмăлсăр калаçусем вĕçленнĕ хыççăн эпĕ ăна хамăр хваттере чĕнтĕм. Вăл, паллах, хапăл пулчĕ, анчах, манпа пĕр урампа Хура шыв еннелле шăкăлтатса калаçса аннă май, мана хăй хăнана чĕнчĕ: «Атя, Володя, ман тăвансем патне кĕрсе курар?»

Пирĕнтен инçех мар, Энгельс урамĕнчех, пире эпĕ тахçантанпах питĕ лайăх пĕлекен, ĕçре ялан пĕрле пулакан Герольд Семенович Разномазов юратнă мăшăрĕпе Валентина Николаевнапа çав тери ăшшăн кĕтсе илчĕç. Иван Михайловичăн ашшĕн йăмăкĕн хĕрĕ Йĕпреç чăтлăхне юратса пăрахнă иккен.

Тепĕр кунне эпир, Йĕпреç вăрман хуçалăхĕн хуравлă çыннисемпе, Пăкăян еннелле çул тытрăмăр. Ухута чирĕпе нушаланакан Михайлов вăрманта чунне кантарчĕ-кантарчех. Чăннипех хăй персе тытнă хир сысни шӳрпине çисех таврăнтăмăр лесник картунĕнчен.

Ун хыççăн та вăл Йĕпреçе кайма ăнтăлатчĕ. Вĕçĕмсĕр ĕç унăн вăрăм та çирĕп урисене те тылларĕ пулас.

Çут çанталăка сыхлас, унăн пулăхне упраса хăварас тĕллевпе тăрăшса çырнă материалсемшĕн Иван Михайлович Михайлова 1976 çулта Чăваш журналисчĕсен Семен Элкер ячĕ-

пе хисепленекен премине пачĕç. Элкер журналист пек хăюллă та, шăртлă та, çивĕч чĕлхеллĕ те, чăваш халăхĕшĕн чунтан çунакан çыравçă çакă вăйлă та чаплă ята чăннипех тивĕçнисенчен пĕри пулчĕ вăл. Элкерĕн чыслă ятне вăл çӳле çĕклерĕ.

В. Кузьмин.

* * *

НАШ ДРУГ И ПОНЫНЕ СРЕДИ НАС

Ивана Михайлова сейчас нет среди нас, он ушел из жизни рано – в 1978 году. С тех пор прошло около двадцати лет, но я его зримо чувствую среди нас, журналистов «Хыпар», слышу его голос, смотрю, как он пишет статью или редактирует авторское письмо...

Время, когда я работал вместе с ним в редакции газеты «Коммунизм ялав\» как бы возвращается назад, и Иван Михайлович, участник войны, талантливый журналист-публицист, внимательно и чуть насмешливо смотрит на меня: «Ну, как вы тут?..»

Он работал заместителем ответственного секретаря, заведовал отделом, был заместителем редактора газеты. И много писал. Основная тема его публикаций - природа родного края, его защита. За это - за публицистические статьи в защиту природы, рационального использования ее богатств Иван Михайлович Михайлов удостоен республиканской премии имени С.В.Эльгера за 1976 год.

Аркадий Казанов,
лауреат премии имени С.В.Эльгера.

ПИЧЕТ ЁÇЁНЧИ САЛТАК

Антип Николаевăн пурнăçĕ çĕршывшăн йывăр тапхăрĕнче пуçланнă. Вăрçă тухас умĕн тăватă кун маларах çеç-ха вăл, Нурăс тăрăхĕнчи Кăмпал ачи, вун çиччĕри йĕкĕт, Чăвашстанри 800 каччăпа хĕр ушкăнĕпе Инçет Хĕвел тухăçнелле пуйăспа çула тухать. Алăра – комсомол путевкки. Умра – ФЗО (фабрикăпа завод вĕренĕвĕ). Промышленность хăватлă аталанать, çавăнпа рабочи кадрĕсем çитмеççĕ. Ял çамрăкĕсене çапла илĕртсе те хĕсĕрлесе рабочи класс çемйине хăвалаççĕ. Уй ĕçĕнчен – тӳрех çĕр айне, шахтăна. Вăй пур, хăвăрт ĕç пĕлĕвĕ илнĕскер, çĕр кăмрăкĕ хăпăтать кăна çамрăк шахтер, хăйсен ĕçĕнче мастера çитет.

Вун тăххăрта салтак ячĕ тухать. Çамрăксене командир пулма тăрăшсах вĕрентеççĕ. Хĕрлĕ Çарăн офицерĕ взводпа та, ротăпа та камантлать, çар чаçĕн парторганизацине те ертсе пырать, 1945 çулхи кĕркунне яппун милитарисчĕсемпе пуçланнă вăрçа хутшăнать.

Çавал тăрăхĕнче пуçланнă пултарулăх çырăвĕн хумĕ Антип Николаева канăç паман. Çамрăклăх хĕрĕвне хĕвре пытарса усрама май çук вăхăтра ăшран капланса тухнă илем йĕркисем унăн шахтăра чухнех уççа сирпĕнсе тухнă. Мана вăл пĕррехинче хăйĕн гражданла лирика сăввисемпе паллаштарнăччĕ. Вĕсем пичетре те майĕпен палăрчĕç.

Çар ĕçĕ нумай енлĕ. Унта камăн хăш енĕпе мĕнле пултарнине шута хуракансем Николаев офицера идеологи енĕпе ытларах усă курма май пуррине асăрхаççĕ. Хăйĕн журналист талантне кура çапла Антип Николаевич çарти хаçатсенче ĕçлесе палăрать. Нумай çырать. Çырни – уссине парать. Çарти, гражданкăри вăйлă очеркист ятне илет. «Тăван Атăл» журналта эпир унăн чуна пырса тивекен новеллисене хаваспах пичетленĕччĕ. Унăн вăл хăй те çав тери савăнчĕ. Çурçĕр Хĕвел

Анăç кĕнеке издательствинчен пичетленсе тухнă чăнлăх (документальнăй) повеçĕсем: чăваш хĕрĕ-снайперĕ Мария Кошкина çинчен – «Фронтовичка», 141-мĕш стрелковăй дивизи боецĕсем çинчен – «От Волги до Карпат», П.А.Любимов чăваш-партизан çинчен – «По ту стороны границы» тата «Подвиги героев бессмертны», «Юность тундры», «Солдатская слава» кĕнекисем. Мĕн чухлĕ шухăшлав, мĕн чухлĕ ĕç! «Юность тундры» кĕнекешĕн Антип Николаева 1966 çулта Аркадий Гайдар ячĕллĕ литература премине панăччĕ.

Çав мухтавпа таврăнчĕ Антип Николаев офицер тăван Чăвашстана. Çыравçăн пĕр тĕллев – пуçри капланнă шухăша, йĕркеленсе çитнĕ геройсен çарне, ушкăнне вулакансен куçĕ умне салтакри пек ретĕн-ретĕн кăларса тăратасси. Унтан... çыраканпа вулакан хушшинчи шухăш кĕрешĕвĕ пуçланать... Антип Никоалевич очерк хыççăн очерк çырать, «Солдатская слава» кĕнекесене кăларать. Çав хаклă ĕçшĕн ăна Çемен Эльгер премине параççĕ.

1985 çулта унăн кĕнекисене Мускавра кĕнеке тĕнчин выставкки-ярмăрккинче кăтартнă. Вĕсем унта тивĕçлĕ хак илнĕ.

Чăваш АССР журналисчĕсен союзĕнче те ĕç мăй таранахчĕ унăн. Пĕтĕм «хура ĕçне» вăл туса пынă. Правлени председателĕпе Павел Афиногенович Крысинпа унăн, хуравлă секретарĕн, ĕçĕ питĕ ваç-ваç майлашăнса пыратчĕ, паллах, хальхи пек ултавлă вăхăтри пек мар. Журналистсен Союзне чун туртатчĕ. Унта чуна уçса калаçмалли те, никамран хăрамасăр тавлашмалли те, куçа-куçăн пăхса лармалли те тупăнатчĕ хăй вăхăчĕпе. Вĕсем Крысинпа иккĕшĕ те нихçан та пире: «Ай, каçарăр, халь ман вăхăт çук-ха, эпĕ унта, кунта... тата унта кунта ĕçлеме васкатăп, каçарăр, мана кĕтеççĕ, эсир кĕтме пултаратăр вĕт», – тесе ухмаха тăратса хăварман. Пире вĕсем хăйсемпе тан журналист вырăнне хуратчĕç, лăпкăн кĕтсе илетчĕç, калаçнă хушăра та алăри сехечĕ çине пăхса пуканне чĕриклеттерсе лармастчĕç. Вĕсен пуçĕнче Чăваш журналистикин, район хаçачĕсемпе журналĕсен ĕçĕ-хĕлĕччĕ, пултарулăх калаçăвĕччĕ. Пуçлăхсен пӳлĕмĕнче хальхи пек икĕ-виçĕ минут

пек ларман эпир. Крысинпа Николаев пёртте пайламан журналистсене, вёсем кам е ăçта ёçленине пăхмасăр тӳсёмлён пурăннă пирёнпе – сахал çул мар. Ытларах хăйсемшён мар, пирёншён, журналистсен пысăк ушкăнёшён, шухăшланă пулас вёсем.

Союз правленийёнче те, районсенче те сахал мар пёрле тёл пулса калаçма тӳр килнё манăн Антип Николаевичпа. Вăл совет офицерён чысне хăйён ӳт-пӳ тытăмёпе те, уттипе те, манерёпе те çӳлти шайра тытатчё. Эпё хам та çав йёркене салтакра хăнăхса пурнăç позицийё туса хунăскер, унпа ăшра мухтанаттăмччё. Çар çыннин, офицерăн, халăх хушшинче хăйне евёр уйрăмлăх, çирёплёх пулмалла-çке! Ёмёртен!

Антип Николаев журналист-писатель пичет ёçёнче, хăйён пурнăçёнче сăнарлă сăмах обоймине пултарулăх пăшалёнчех тытакан салтак, журналистикăпа литературăри ăстаçă. Унпа пёр стройра утма та шанчăклă, чыслă. Халё те.

ПУЛТАРУЛĂХ ПУРНĂÇЁН КУРАВЁ

Петр Васильевич Сымкин хăйён çитмёл çулхи менелникне икё çула яхăн хатёрленчё. 2007 çулхи ака уйăхён 12-мёшёнче вара Чăваш наци музейёнче вăл «Чăваш Ен – тёнче прессинче (1965-1990 çулсем)» ятпа пресса куравне халăх умне кăларчё. Унччен...

Унччен, Чёмпёр енчи Чăнлă районне кёрекен Анат Тимёрçен чăваш ачин пайтах тӳссе ирттерме тивнё нуши-тертне. Ашшё, Василий Михайлович, вăрçăра нимёç фашисчёсемпе çапăçса паттăрăн пуçне хунă хыççăн, амăшён, Ольга Ефимовнан, ывăлёпе хёрне пёччен пăхса çитёнтерме тивнё. Пёлӳшён ăнтăлакан ача вăтам шкул хыççăн Хусанти инженерипе строительство институтёнче аслă пёлӳ илнё, Чăваш транспорт управленийёнче инже-

нерта, аслă инженерта, пай пуçлăхĕнче, управлени пуçлăхĕн заместителĕнче нумай çул ĕçленĕ. Ĕç хевтийĕ, коллектив ертӳçин çаврăнăçуллăхĕ хăвăрт палăрса пынă май ăста инженера КПСС Чăваш обкомĕ партин Чулхулари аслă шкулне пĕлĕвне ӳстерме янă. Икĕ çул парти строительствине тата ытти предметсене тĕпе хурса вĕреннĕ хыççăн, Петр Сымкина обкомри строительство пайĕнче çĕнĕ ĕç кĕтнĕ. Шупашкарта промышленность тракторĕсен заводне тунă, çав вăхăтрах тракторĕсене те кăларма пуçланă хĕрӳ тапхăрта çĕнĕ инструктор çĕнĕ ĕçе тытăнать. Ăна питĕ пысăк, хуравлă ĕç шанса панă. Вăл – стройкăпа заводшăн обком умĕнче яваплă. Обком секретарĕпе строительство пайĕн пуçлăхĕ умĕнче те хăвăн ĕçна çирĕп, йĕркеллĕ кăтартмалла, çӳлтен мĕн хушнине пăркаланса тăмасăр пурнăçламалла, çав хушăрах Шупашкар хула, Калинино район, тĕп подрядчик – 5-мĕш стройтрест, трактор завочĕн парткомĕсемпе тата ытти нумай организацисен пуçлăхĕсемпе те усал пулмалла мар. Эпĕ, 5-мĕш стройтрест парткомĕн членĕ пулнă май, парткомсен пĕрлехи ларăвĕсемпе коммунистсен пухăвĕсенче Петр Васильевич кăткăс ыйтусене татса панă çĕрте яланах çирĕп шухăшлă пулнине манмастăп. Çав аслă стройкăра паллашрăмăр та эпир, паян кунченех туслăн пурăнатпăр.

Çĕнĕрен лартнă Пичет çуртĕнчеччĕ ĕнтĕ. Эпĕ республикăри «Капкăн», «Тăван Атăл» журналсенче вăрах ĕçлерĕм. Сымкин «Правда» хаçатăн Чăваш Енри тата Мари Элри уйрăмне ертсе пыратчĕ. Пирĕн ĕç вырăнĕ – улттăмĕш хутраччĕ, пӳлĕмсем юнашар пекехчĕ. Унпа яланах пĕрле пулнă. Вăл «Тăван Атăлăн» хуплашкийĕсем валли нумай тĕслĕ сăн ӳкерчĕксем яланах тĕрлĕ тематикăпа тупса паратчĕ. Ĕçĕ унăн нумайччĕ, уйрăмах – хаçат çырăнтарнă хĕрӳ тапхăрта. Пĕрмай Атăл леш енчи тата хамăр республикăри районсенче пуçлăхсемпе ĕçлесе çӳретчĕ.

Хаçат-журнал ĕçне çамрăкранах хутшăннă май Петр Васильевич ывăнма, канма пĕлмесĕр «Правдăшăн» та, «Новости» пичет агентствишĕн те хытă тăрăшатчĕ. АПНпа унăн 1963 çул-

танпах çирĕп çыхăнуччĕ. Фото ĕçне алла илнĕ ăстаçă, чаплă çыравçă мускавсене Чăваш çĕршывĕн, республика халăхĕн экономикăпа культурин, общество пурнăçĕпе пур енлĕн тивĕçтерсе тăнă. «Новости» агентстви Петр Сымкин журналист материалĕсене 110 çĕршыва янă. Вĕсемпе тĕнчери 90 информаци агентстви, 120 издательство, 70 радиотелекомпани, 65 чĕлхепе тухса тăракан 6 пин ытла хаçат-журнал усă курнă. Авă епле информаторччĕ вăл ун чухне! Чăвашра ăна çитекен журналист сахал пулнă.

Саманан аслатиллĕ кĕрлевĕнче те Петр Васильевич хăйĕн çирĕп позицийĕнчен пăрăнмасть, «Российская газета» Информацине издательство концернĕн Чăваш Республикинчи хуравлă ĕçне пурнăçлама тытăнать. Ĕçĕ унăн кунта та ăнсах пырать-ха. Эпĕ ăна нихçан та ĕç пӳлĕмĕнче ахаль ларнине курмастăп. Унăн компьютерĕ – ялан пĕр-пĕр пултарулăх ĕçĕпе çыхăннă. Çĕнĕ кĕнеке, проспект, фотоальбом, буклет шăранса тухать.

Юлташĕсем те унăн курăмлă çынсем. Унăн пӳлĕмĕнче пĕрмаях ĕçлĕ калаçу. Хушăран ентешĕ Анатолий Федорович Ермилов курăнкалать. Аслă Нагаткинăран ĕçпе те, хăнана та килсе çӳрекен Юман журналистпа, поэтпа вĕсен авалхи туслăх çыхăнăвĕ.

Вуншар çул тăрăшнă, журналист ĕçне чыслăн пурнăçланă Сымкинăн халăх умĕнче мĕн-мĕн кăтартмалли пухăннах. Çав ĕçсене майласа, рамăсем ăшне вырнаçтарса вăхăт пайтах иртмерĕ-и? Пăхмаллăх, тĕлĕнмеллĕх пур. Ĕçне кура мухтавĕ тенĕ пекех, Петр Сымкина Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ хисеплĕ ят панă. Вăл ЧР Журналистсен Союзĕн Çемен Элкер ячĕллĕ тата Раççей Журналистсен союзĕн премийĕсен лауреачĕ. Курава саламлама пынă Чăваш Ен Президенчĕн Администраци ертӳçи Энвер Аблякимов кĕреке хуçине Чăваш Республикин Хисеп хутне тата унăн кăкăр паллине пачĕ.

Курава чăннипех чăваш интеллигенцийĕн элити пухăннăн туйăнчĕ. Чăвашсен искусствоведени докторĕ Алексей Трофимов

журналистăн нумай енлĕ ĕçне наука шайĕнче палăртрĕ. Кунта тăратнă йышлă ĕçĕсене автор Наци музейне упрама пачĕ.

Çапла Петр Васильевич Сымкинăн Пултарулăх пурнăçĕн Куравĕ вĕçленмерĕ, чăваш наци аталанăвĕн культурăри пĕр пайĕ вырăнĕнче ĕмĕрĕпех малалла та ĕçлĕ.

«АБРАМОВ КĔТЕСĔ»

Журналистика çулĕ çине Анатолий Серафимович Абрамов Йĕпреçри «Çĕнтерӳшĕн» хаçатран путевка илсе тухнă. Серафим Ефимович Ефимов редактор унăн заметкисемпе корреспонденцийĕсене тата сăн ӳкерчĕкĕсене профессионал куçĕпе лайăх хак пама пултарнă. Редакцире ĕçлекен ытти журналистсем те хăйсен пуçлăхăн шухăшĕпе килĕшнĕ: «Ку ачаран тулкки пулать». Абрамова вара хăйсен йышне илнĕ. Шӳтлеме юратакан Анатолий кулкаласа каласнă: «Килти атте те ман Серафим, хаçатри атте те – Серафим. Библири пекех хĕрӳ, чунпа, Турăпа çывăх вĕрентекенсем».

Йĕпреç çыравçисем хăйсен ентешĕн пултарулăхĕ пирки йăнăшман. Анатолий Серафимович Чăваш патшалăх университетĕнче аслă пĕлӳ илет, кĕçех хăй те унтах журналистика факультетĕнче ĕçлеме тытăнать. Аслă преподаватель çамрăк журналистсем вĕрентсе хатĕрлес çĕре тăрăшса хутшăнать. Талантне кура хăйĕн професси ăсталăхне куллен ӳстерет. Фото ĕçĕ ĕнтĕ уншăн чи малти вырăнта. Унăн ĕçĕсене таçта та пысăка хурса хакласçĕ. Акă ăна 1999 çулта И.Я.Яковлев çутта кăлараканăн ăс-тăн пуянлăхне «Хыпар» хаçатра сăн ӳкерчĕксемпе пропагандăланăшăн тата «И.Я.Яковлев сăн ӳкерчĕксемпе документсенче» кĕнекешĕн ЧР журналисчĕсен Элкер ячĕллĕ премине параççĕ. Семен Васильевич ĕмĕтленнĕ пекех, унăн çуралнă çĕршывĕнчен те хăйне тивĕç вăйлă журналист тухрĕ.

Валентин Абрамов, университетра ĕçленĕ хушăрах, «Хыпарпа» та туслă çыхăну тытать, унăн издательство çурчĕ кăларакан «Çамрăксен хаçатĕнче» çур ставкăпа укçа илсе редакци «ачисене» тулли пулăшăвах парать. Сăн ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ хайлавĕсем тӳрех куçа тăрăнаççĕ. Вĕсене, тарăн шухăшлăскерсене, хитре чĕлхепе çырнăскерсене, вулама та çăмăл, интереслĕ, кăмăллă. К.В.Иванов ячĕллĕ Литература музейĕнче С.В.Элкерĕн 115 çулхи менелникне ирттернĕ çĕртен те вăл фоторепортаж пачĕ, çулăмлă ентешĕ ячĕпе ăшă сăмах калама та манмарĕ.

1960-70-мĕш çулсенче тата каярахпа та Анатолий Серафимович çуралнă ялта манăн ĕçпе час-часах пулма тӳр килетчĕ. Пĕррехинче, кĕлĕмкассисемпе калаçнă чухне, хăлхана кĕрех кайрĕ: «Маçтăр, пултаратпăр» тесе мухтанакансем çук мар пирĕн, анчах хăйсен пӳрт кĕтессисем ялан кукăр-макăр пулса юлаççĕ. Авă, çав Серафим ачин Тулян пӳрт кĕтессисем пур çĕрте те тӳп-тӳрĕ те яп-яка. Абрамов кĕтесĕсем çирĕп те, шанчăклă та, куçа илĕртеççĕ. Вăт мĕнле каменщик вăл – аслă шкул учитли. Йăхран пырать çав вĕсен ăсталăхĕ».

Çурт-йĕрĕн çирĕплĕхĕ-чăтăмлăхĕ, илемĕ кĕтесĕ мĕнле пулнинче. Тӳрĕ кĕтес – çурт-йĕр тĕрекĕ. Анатолий Серафимовичăн та пур ĕнтĕ пурнăç кĕтесĕ. Вăл – «Абрамов кĕтесĕ».

Йĕпреçсен ентешлĕхĕн пухăвĕсене те Анатолий Серафимович артист евĕр илемлĕн ертсе пырать. Ентешĕсем уншăн шутсăр кăмăллă.

ӲКЕРЧĔКĔСЕМ ХАЛĔ ТЕ ЧĔРĔ

Çыракан журналистсем яланах йышлă пулнă хăй вăхăтĕнче, халĕ тата нумайрах-ха вĕсем. Çапах та сăн ӳкерчĕк тума пултаракансем вĕсен хушшинче сайра-хутра çеç тĕл пулкаланă.- Эпĕ республика хаçачĕсен фотокорреспонденчĕсене авалхисене те астăватăп. Вĕсен техника енчен ĕçĕ йывăртарахчĕ. Халĕ вăл кашни çыравçă яппунсен аппарачĕпе пăхмасăрах çатлаттарса илме пултарать хăйне кирлĕ ӳкерчĕке е тата

ăстаçăсем сăн ӳкерчĕкĕсене тӳрех редакцисене «вĕçтерсе» çитереççĕ. Пурпĕрех фото ăстаçин ĕçĕ çыравçăннинчен нумай енĕпе уйрăлса тăрать. Илемĕпе те, шухăш тарăнлăхĕпе те, композицийĕпе те, тĕссен ылмашăвĕпе те юрăхлă, сăнарлă ӳкерчĕк тума фотокорреспондентăн ай-яй мĕн тери ăшталанмалла. Кирлĕ, чĕрĕ кадр суйласа илесси вăл художник куçĕпе пăхмасăр, пуçĕпе çавăрттарса илмесĕр яхăнне те пулмасть. Ахаль кăна çатлаттарса илнĕ кадр – фото маçтăрлăхĕ мар.

Çавăн пек ăста ĕçлетчĕç Алексей Припалов, Виталий Исаев, Борис Иванов, Семен Игнатьев... Çавăн пекех ĕçлеççĕ халĕ те Петр Сымкин, Илья Клочков, Вячеслав Романов, Геннадий Верблюдов, Сергей Журавлев, Иван Михайлов, Анатолий Абрамов, Олег Мальцев...

Çапах та манăн кунта Борис Иванов çинчен ытларах пырать калаçу. Етĕрне районĕнчи Анатри Ирçере 1950 çулта çуралнă вăл. И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă. Илья Клочков пекех вăл та унтан илемлĕх урокĕсене хĕве чиксе тухнă, пуçа хывнă. Ахальтен-и Борис Карповичăн сăн ӳкерчĕкĕсем хĕвел-çăлтăр çутиллĕ, кăйкăр çунатлă, чун ăшшиллĕ. «Советская Чувашия» хаçатра, чăваш писателĕсен «Ялав» журналĕнче ĕçленĕ вăхăтра мĕн чухлĕ чаплă сăн ӳкерчĕк тумарĕ пуль вăл. 1979 çулта ăна ЧАССР Аслă Канашĕн президиумĕ Хисеп грамотипе наградăларĕ. Чăваш Республикин Журналистсен союзĕ Çемен Элкер премине пачĕ.

Тĕлĕнмелле, Бориса курса калаçсанах манăн куç умне Джек Лондонăн хастар та вут-çулăмлă геройĕсен сăнарĕ тухса тăратчĕ. Кăмăл сипечĕ, чун кутамкки туллиехчĕ унăн. Эпĕ Чăвашсен обществăпа культура центрĕнче ĕçлеттĕм. Эрнере вун ултă страницăллă «Вучах» хаçат кăларатпăр. Хаçата илемлетме сăн ӳкерчĕк çитмест. Çавна шута илсе ЧОКЦ предсе-

дателĕпе Юхмапа калаçрăм. Михиал Николаевич ман сĕнӳпе килĕшрĕ. Пире пулăшнăшăн Иванова кăштах укçа тӳлеме шантарчĕ «Советская Чувашия» фотокорреспонденчĕ вара «Вучах» сотрудникĕ те пулчĕ пĕр вăхăт. Ӳркенмен ăстаçă хаçатăн сăн-питне уçăлтарсах ячĕ, çав хушăрах ЧОКЦ ирттерекен нумай мероприятисене сăнласа хăварчĕ.

Вăрнар енте шлĕхне те пулăшрĕ Борис Иванов. Пысăк ушкăнпа пĕрле районти ялсем тăрăх пултарулăха кăтартса çӳрерĕмĕр. Вăл ĕнтĕ пирĕн артисткăсен илемлĕх çĕклентерĕвĕччĕ.

«Тăван Атăл» журналта, «Вучах», «Илем» хаçатсенче усă курма панă сăн ӳкерчĕкĕсем мана пĕрле ĕçленĕ вăхăта аса илтереççĕ. Ӳкерчĕкĕсем унăн халĕ те чĕп-чĕрĕ.

ПĔР ЯЛТАН

Аслă Каçал енчи Нĕркеç ялĕ ăс-хакăл пултарулăхĕпе пуян çынсемпе мухтавлă. Вĕсен шутĕнче Чăваш Республики журналисчĕсен Союзăн Çемен Элкер ячĕллĕ премине илме тивĕçлисемех тăваттăн:

1. «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пичетленнĕ «Мĕн вăл талант?», «Унăн пурнăçĕ – театр», «Васкат мана пурнăç» очерксемшĕн иккĕмĕш номерлĕ диплома Лаврентий Васильевич Таллеров журналист-писателе 1975 çулта панă.

2. Федор Георгиевич Коновалов-Агивер журналистикăпа литература ĕçне вĕрен явнă пек ăнтарса пырать. Чăвашрадиора, «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенче ĕçлесе ăсталăхне ӳстерчĕ. 1992-2000 çулсенче ЧР Писательсен союзăн правленине ертсе пычĕ. ЧР искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ – нумай кĕнеке авторĕ, театрсемпе çывăх. «Илем тĕкĕрĕ» кĕнекешĕн 1991 çулта Элкер премине илнĕ.

3. Çамрăкрах журналистсенчен хăвăрт палăрнисем хушшинче эпĕ Николай Дмитриевич Коновалова куратăп. Вăл Хветĕр Агивер ашшĕпе пĕр тăваннин ывăлĕ, 1968 çулта çуралнăскер. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче жур-

налист дипломне илнĕ, Совет Çарĕнче службăра пулнă. 1992 çултанпа «Хыпар» издательство çуртĕнче хыпăнса ĕçлет. Корреспондентран пуçласа «Çамрăксен хаçачĕн» редакторне, унтан «Хыпар» редакцийĕн пай пуçлăхне çитрĕ. 2004 çулта право темипе «Хыпар» хаçатра пичетленнĕ материалсен ярăмĕшĕн Элкер премине тивĕçнĕ.

4. Геннадий Аркадьевич Максимов 1961 çулта Комсомольски районĕнчи Нĕркеçре çуралнă. Ялти шкулта, Вăрнарти техникумра, Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ. Комсомольски районĕн «Октябрь ялавĕ» хаçатĕнче вăй хунă. Совет Çарĕнче арçын тивĕçне пурнăçланă хыççăн ВЛКСМ Комсомольски райкомĕн орготдел пуçлăхĕ пулнă. Чăваш радиора, Чăваш патшалăх телестудийĕнче, «Хресчен сасси» хаçатăн тĕп редакторĕн çумĕнче ĕçленĕ. 1994 çултанпа – «Хыпар» Издательство çурчĕн тĕп редакторĕн çумĕ, шеф-редакторĕ.

Актуаллă та çивĕч материалсемшĕн 2002 çулта ăна «Наци кăларăмĕсен чи лайăх журналисчĕ» ят панă, Раççей Федерацийĕн Пичет ĕçĕсен, телерадиовещани тата массăллă коммуникаци хатĕрĕсен министерствин Хисеп гармотипе наградăланă.

Культурăри пархатарлă ĕçсемшĕн «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă. «Хыпар» хаçатра, «Тăван Атăл» журналта, «Сталин грамоти» кĕнекере политика, экономика, культура ыйтăвĕсемпе çырнă статьясемпе очерксемшĕн республикăри журналистсен чи сумлă наградине тивĕçнĕ – Çемен Элкер ячĕллĕ преми лауреачĕ пулса тăнă.

Л.В.Таллеров

Ф.Г. Коновалов-Агивер

Н.Д. Коновалов

Г.А. Максимов

ПĔР ÇЕМЬЕРЕН

Çамрăк чухне эпир ытларах «Пионер сасси», «Çамрăк коммунист», «Чăваш коммуни» хаçатсемпе çывăх пулнă. Вырăсла пĕлсех кайманнине пула «Красная Чувашия» («Советская Чувашия») хаçат кăшт ютрах пулнă пирĕншĕн. Çавăнпа унăн редакцийĕнче ĕçлекенсемпе те туслашайман. Вăрнар райхаçатĕнче ĕçленĕ чухне кăна «Советская Чувашия» хаçатăн Вăрнарти собкорĕпе Евгений Николаевич Ефремовпа паллашнăччĕ.

Каярахпа, ытти хаçатсенче те ĕçлесе курнă, малалла вĕреннĕ май, эпĕ «Советская Чувашия» хаçат çумне те çыпçăнтăм. Унăн редакторĕ Михаил Иванович Иванов сĕннипе мана КПСС обкомĕн бюровĕ 1974 çулта, «Йĕпреçри «Çĕнтерӳшĕн» хаçатăн редакторне, «Советская Чувашия» хаçат редакцийĕн парти пурнăç пайĕн заведующийĕ тата редколлеги членĕ пулма çирĕплетрĕ. Çавăнтанпа ĕнтĕ эпĕ Михаил Ивановича аван пĕлетĕп, ăна хама Шупашкара илсе пынăшăн, хваттерлĕ тунăшăн шутсăр пысăк тав тăватăп. Мана вăл, тĕрĕссипе, Шупашкар çулне анлăн уçса пачĕ.

Унтанпа ĕнтĕ нумай вăхăт иртрĕ. Журналистсен союзĕнче те, конференцийĕсенче те тата ытти нумай форумсенче манăн унпа ялан пĕрле пулма, калаçма тӳр килнĕ, халĕ те çывăхланатпăр. Ман умра хăйне хăй мăнна хурса каппайланнипе те, хăйĕнчен çамрăкрах пулнипе пире ăсталăх шайĕпе те, ăсĕ-пуçĕпе вăйлăрах шухăшланипе те пусарса лартас йăла çуккă унăн. Тавлашура та ытлашши хăпарса каймасть.

Нумай кĕнеке çырса пичетлерĕ вăл. Документлă повеçĕсемпе тивĕçлипех палăрчĕ. «Радуга над Волгой» кĕнекешĕн Элкер премине пачĕç ăна.

Вăл манран вунă çул аслăрах. 1944 çулта вун çиччĕ тултаричченех Хĕрлĕ Çар ретне хутшăннăскер. Бомбардировщиксен 782-мăш авиаполкĕпе империализмла Япони хирĕç пынă вăрçа хутшăннă радист-стрелок, Отечественнăй вăрçă II степеньлĕ орденĕпе нумай медаль, каярахпа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, «Хисеп Палли» орденĕсем, «Раççей пресси 300 çул» знак илнĕ. Мире сыхлакансен республикăри комитетне 10 çул ертсе пынă, 45 çул редакцисенче, вăл шутра 15 çул «Советская Чувашия» хаçат редакторĕнче ĕçленĕ. Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультечĕн доценчĕ. Манăн вĕрентекенĕм.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси (Эльбарусово) ялĕнче 1927 çулта çуралнă Михаил Ивановăн илемлĕ хайлав çырас туйăм çамрăклах вăй илнĕ. 1958 çулта вăл Ленинградри патшалăх университечĕн журналистика факультетне вĕренсе пĕтерет те Шупашкара ĕçлеме таврăнать. Мăшăрне Валентина Андреевнана та Питĕртех тĕл пулать.

Михаил Иванович Питĕр университетĕнчен пĕр ушкăн çамрăк журналист ертсе килнĕччĕ. Вĕсемпе эпĕ «Советская Чувашия» хаçатра ĕçлесе те куртăм. Вĕсем каярахпа республикăри вырăсла тухакан изданисенче, уйрăмах хăйĕн «Советская Чувашия» хаçатĕнче, пултарулăхĕпе палăрчĕç.

Çавнашкал мăнă ĕç турĕ Михаил Иванов журналист Чăваш пичетне çӳлĕ шая çĕклессишĕн. Семен Васильевич сывă пулас пулсассăн-и, ăна çакăншăн хаваспах алă тытнă пулĕччĕ тесе шутлатăп эпĕ.

Ленинград облаçĕнчи Стрельна хулинче 1937 çулта çуралнă Валентина Андреевна журналист дипломне илсенех, Михаил Иванович илĕртнипе, Атăл хĕрне васкать. Ăна валли ЧАССР телевиденийĕпе радиовещани комитетĕнче вырăн тупăнать. Манăн хамăн та вăл вăхăтра Чăвашрадиора унпа юнашар пӳлĕмрех ĕçлеме тивнĕччĕ. Упăшкипе пĕр майлах ырă кăмăллă Валентина Андреевна пире, чăваш журналисчĕсене, тепĕр чухне вырăсла яках пулса тухайман сăмах çаврăнăшĕсемшĕн ӳпкелеместчĕ, пиртен мăшкăлласа кулмастчĕ, тӳрлетме пул-

ăшатчĕ. Лайăх материалсемшĕн мухтаса та илме манмастчĕ. Ăшă куллипе тыткăнлатчĕ.

1978 çулта ăна ИТАР–ТАССăн Чăваш Республикинчи корреспондентне йышăнчĕç, паян кунченех вăл унта тăрăшать. ЧАССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ – нумай кĕнекесен авторĕ. Ăна «Хисеп Палли» орденпа, медальсемпе, «СССР радио отличникĕ» знакпа наградăланă, «Летопись Тракторостроя» радиоочерксемшĕн 1975 çулта Семен Элкер премине панă.

Журналистсен çемйи профессионал хунавĕллĕ. Настя мăнукĕ ЧГУра, журналистика факультетĕнче вĕренет. Ăçтан пĕлĕн, тен, Ивановсен çемйинче Элкер ячĕллĕ премин виççĕмĕш лауреачĕ те хутшăнĕ.

* * *

СМОЛИНСЕМ пĕр çулхине çемйипех сцена çинче хăйсен пултарулăхне халăха кăтартатчĕç. Нумай енлĕ аталаннă, талантлă çемье, тетчĕç вĕсене мухтаса шупашкарсем.

Анатолий Семенович Смолин Куславкка районĕнчи Шăнчас ялĕнче 1957 çулта çуралнă. 1984-1998 çулсенче çамрăксен «Çилçунат» журналĕн тĕп редакторĕнче, 1998-2002 çулсенче Чăваш Республики Президенчĕн администрацийĕнче ĕçленĕ. 2000 çулта ăна Н.В.Федоров президент çинчен çырнă публицистикăллă поэмăшăн Элкер премине панă.

Анатолий Смолин журналистикăра кăна мар, литературăра та хăватлă. Нумай енлĕ сăвăç. Чăвашларан та, вырăсларан та чи паха куçарать. Никамран кая мар декламатор. Пуласлăхĕ унăн пысăк.

Мăшăрне вăл, Людмила Валерьянована, Чăваш çĕрĕ урлă Элĕк енне çитсе Ярхуньушкăнь ялĕнче шыраса тупнă. Иккĕшĕ те вĕсем Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ.

Л.В.Смолина журналистикăра 1989 çултанпа. 1992-2002 çулсенче «Çилçунат» журналта пай заведующийĕнче, каярахпа редакторта ĕçленĕ. Н.К.Крупская премийĕн лауреачĕ. Элкер премине вăл 1997 çулта чăваш литературипе искусствин ĕçченĕсем çинчен çырнă материалсемшĕн тивĕçлĕ пулнă.

ЙĔПРЕÇСЕН ЭЛКЕР ПРЕМИЙĔ

Патăрьелсен Митта Ваçлейĕ ячĕпе, Трак тăрăхĕсен – красноармейскисен Нестер Янгас ячĕпе хисепленекен литература премийĕсем пур, пирĕн те хамăрăн ентешĕмĕр, чăваш çыравçисенчен халăх поэтне Шелепи хыççăн иккĕмĕш илнĕ мухтавлă çыравçă пур, атьăр-ха эпир те Семен Васильевич Элкер ятне тата çӳлерех çĕкленме пулăшар, тесе килĕшрĕмĕр редакци коллективĕнче. Журналистсен пуçламăш организацийĕпе пĕрле вара Çемен Элкер ячĕллĕ литература премийĕ туса хутăмăр. Район пуçлăхĕсем пирĕн шухăша ырларĕç. Преми памалли йĕркене редакци коллегийĕнче çирĕплетрĕмĕр.

Шупашкарсенчен ӳксе юлас мар терĕмĕр. Элкер ячĕллĕ премие илекене сумлă дипломпа пĕрлех поэт сăнне ӳкернĕ значок та пани вырăнлă тесе шутларăмăр. Значокăн эскизне тума республикăри паллă художника, Йĕпреçри ачасен ӳнер шкулне йĕркеленĕ, Етĕрне хулинче ĕçлесе пурăнакан Илья Григорьевич Бородкина сĕнтĕмĕр. Вăл пирĕн заказа вăхăтра тата лайăх пахалăхпа пурнăçларĕ. Çакăн хыççăн эпĕ Мари Эл тĕп хулине çул тытрăм. Асăннă хулара Йăла çурчĕ çумĕнче геральдика цехĕ пурччĕ. Унта ĕçлекенсем пирĕн сĕнĕве – Элкер премийĕн лауреачĕн паллине сийĕнчех пурнăçласа пачĕç.

Хурамал районти чи пысăк ял. Унтан паллă çынсем, вĕсен

хушшинче литературăпа искусство ĕçченĕсем те халăхра палăрнăччĕ. Василий Иванович Андреев-Хурамалăн тăван çĕршывĕ вăл.

Вăхăтне кура Каçал, Патăрьел, Йĕпреç енсенчи чикĕри ялсем пĕр ушкăналла пĕрлешсе пурăннă.

Пулас журналист Василий Андреев çав çулсенче Пăлапуç Нурăс шкулĕнче учительре ĕçленĕ. Унăн юлташĕсем чылай пулнă, вĕсем те ачасене вĕрентнĕ. Пĕррехинче, 1931 çулхи кĕркунне, вăл ĕçлекен шкула пухăнсан, поэзи çинчен сăмах пынă. Хĕрӳ калаçу унăн чĕринче илемлĕ литература ĕçне хутшăнас ĕмĕт çуратнă. Вăл вăхăтра Патăрьелĕнче «Паянхи сас» хаçат тухса тăма пуçланă. Кĕçех В.Андреев та хăйĕн малтанхи сăввисенчен пĕрне унта ярса панă. Вăл «Хавас» сăвă ятпа пичетленсе тухнă. Мĕн тери савăннă сăвă авторĕ çакăншăн. Çав хаваслăхпа «Экран» ятлă поэма çырнă. Вăл та часах «Трактор» альманахăн (халĕ «Тăван Атăл») 8-мĕш номерĕнче пичетленсе тухнă. Хамăр районта хаçат тухма тытăнсан, çамрăк сăвăç унпа çыхăну тытма пуçланă. 1933 çултан пуçласа, çуллахи каникул вăхăтĕнче çуллен «Колхоз пурнăçĕ» хаçатра ĕçленĕ. Малтанхи хут килсен, ăна редактор вырăнти радиопередачăсене ертсе пыма хушнă. Çапла майпа журналист çулĕ çине тăнă, 1940 çултан тытăнса хаçатсенче вăй хунă.

Çакна палăртма кăмăллă: 1933 çулхи май уйăхĕнче «Колхоз пурнăçĕ» хаçат редакцинче чăвашсен паллă поэчĕ Семен Васильевич Элкер пулнă. Йĕпреçре вăл Чăваш писателĕсен оргкомитечĕ хушнипе районти акатуя хутшăнма килнĕ. Тăван тăрăхра пулнă май, поэт Кĕлĕмкассинчи ял çыннисемпе тĕл пулса, хăйĕн пултарулăхĕпе тата сăввисемпе паллаштарнă.

Çав тĕлпулăва Василий Андреев хăйсен ялĕсене те илсе пынă. Григорий Рикмаса вăл хăй поэзи çулĕ çине тăратнă, хаçатсенче çырма вĕрентнĕ. Вĕсем Элкерпе çывăхланнă. Семен Василеьвич çамрăк çыравçăсене май килнĕ таран пулăшу панă, хавхалантарнă. Каярахпа Рикмас «Çĕнтерӳшĕн» хаçатăн чи активлă та вăйлă корреспонденчĕ пул-

са кайрĕ. Илемлĕ хайлавĕсене унăнне эпир хаваспах пичетлесе пынă.

Çыравçăн пултарулăхне кура хамăрăн районти Элкер премине чи малтан Григорий Рикмаса парас терĕмĕр. Вăл ăна чăннипех тивĕçлĕ.

Владимир Прокопьевич Кузьмин 1965 çултанпа хăйне Шупашкара ĕçлеме куçаричченех «Çĕнтерӳшĕн» хаçат сăн-сăпачĕпе витĕмлĕхĕшĕн, – редакци коллективне çирĕплетессишĕн, хаçат активне йышлатассишĕн вăй хурса ырă йĕр хăварнă. С.В.Элкер ячĕллĕ литература кружокне çĕнĕлле ĕçлеттерсе янă Василий Хурамалпа пĕрле алла-аллăн тытăнса ĕçленĕ. Çамрăк талантсене тупса çул уçса панă, малалла аталанма пулăшнă. Вăл паянхи кун та район хаçачĕпе туслă çыхăну тытать, редакцие хайлавĕсемпе тата ытти материалсемпе тивĕçтерет, вырăнти журналистсемпе, хаçат активисчĕсемпе тĕл пулса ĕçлĕ, пултарулăх каласăвĕсем ирттермесĕр Йĕпреçрен тухса каймасть.

«Çĕнтерӳшĕн» хаçата тăвакансен ушкăнĕ. Малти ретре (сулахайран сыltăмалла): тĕрлĕ çулсенче ĕçленĕ редакторсем – Владимир Прокопьевич Кузьмин, Иван Яковлевич Тенюшев тата Серафим Ефимович Ефимов.

1997 çулта «Çĕнтерӳшĕнре» В.П.Кузьмин журналистăн тата писателĕн «Илем çăлтăрĕ» очеркĕ номертен номере пичетленсе тухрĕ. Кунсăр пуçне унăн ытти произведенийĕсем те кун çути курчĕç. Çавна шута илсе, редакци коллегийĕ çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнче Владимир Прокопьевича хаçатăн Çемен Элкер ячĕллĕ премине пама йышăнчĕ. Улттăмĕш лауреат пулчĕ вăл. Хисеплĕ ята тивĕçнĕ тата 60 çул тултарнă ятпа эпир ăна, Йĕпреç районĕн пысăк делегацийĕ, писатель çуралнă çĕршывра, Çĕрпелти культура керменĕнче, тепĕр кунне чун-чĕререн саламларăмăр, творчествăлла ĕçре татах та пысăкрах ӳсĕмсем тума ăнăçу, ырлăх-сывлăх сунтăмăр.

Эпĕ те ĕнтĕ ун чухне пенсие тухнăччĕ, редакторта ĕçлеместĕм.

Лауреат дипломне тата паллине Владимир Кузьмин çĕнĕ редактор Константин Дмитриевич Алимасов аллинчен хумханнуллăн илчĕ.

Элкер премине район пичечĕн йĕркелӳçĕпе активисчĕсем, сыравçăсем вунă çын ытла тивĕçнĕ. Литературăпа искусствăра, журналистикăра палăракан пултаруллă ентешĕмĕрсен преми лауреачĕн ятне çĕнсе илмешкĕн малашне те шанчăк пур.

Пирĕншĕн хамăрăн Элкер премийĕ Чăваш Республики Журналистсен союзĕн Элкер ячĕллĕ премийĕнчен те хаклăрах тесе шутлатпăр. Мĕншĕн тесессĕн эпир мухтавлă Йĕпреç ăсчахĕн, хĕрӳ журналистăн премине унăн çуралнă çĕрĕпе, ăна çуратса ӳстернĕ халăхĕпе Йĕпреç, Кушлавăш тăрăхне çӳлерех çĕкленме пулăшакан сăмах ăстисене, пичет йĕркелӳçисене кăна паратпăр. Шупашкар премийĕ патне таçти такамăн алли те тăсăлать. Пирĕн преми вара Йĕпреç паттăрĕн ăшă кăмăлĕ пек таса та хаклăрах.

Серафим Ефимов,
1974-1996 çулсенче «Çĕнтерӳшĕн»
хаçат редакторĕ.

АКИ–СУХИ ТИВЛЕЧЁПЕ

Чăвашрадио та маншăн сывăхланнăччĕ. Унта Вăрнар, Элĕк, Йĕпреç районĕсенчен вĕçĕмсĕрех информаци, репортаж, очерк парса тăнă. Йĕпреçре «Çĕнтерӳшĕн» хаçат редакцийĕнче ĕçлетĕп. Редактор пӳлĕмне уçса кĕрсе хамăн пукан çине ларма ĕлкĕреймерĕм, Шупашкартан телефон шăнкăравĕ пулчĕ. Радиовещани студийĕнчен литература-драма редакцине ертсе пыракан Андреев «чăрмантарать» иккен. Петр Кузьмича малтанах паллаканскер эпĕ унпа калаçма хавасах пултăм. Вăл Йĕпреç тăрăхне çитсе курасшăн-мĕн, Çемен Элкер çуралнă ял çыннисемпе курса калаçасшăн, чăвашсен авалхи юррисене радио пленки çине çырса илесшĕн. Çитмелли вăхăтне каларĕ. Эпĕ вара ун пирки «Çĕнтерӳшĕн» хаçата пĕлтерӳ çаптартăм, выраннти, районти радиопередачинче те сас партартăм.

Чăвашсен паллă радиокорреспонденчĕ-журналисчĕ Пысăк Упакассинче хăйĕн тĕллевне пурнăçларĕ, 1978 çулта Чăваш кĕнеке издательствинче «Юррăмсем-çунатăмсем» кĕнеке кăларчĕ, унта Кушлавăш тăрăхĕнче Элкерсем юрланă юрăсене те кĕртнĕччĕ.

Çавăнтанпа сывăхлантăмăр эпир Тутар АССРĕнчи, Октябрьски районĕнчи Якушкино ялĕнче 1938 çулта çуралнă чăваш ачипе Андреевпа. Республикăри журналистсен организацийĕн секретариачĕ, ятарлă комисси йышăнăвне шута илсе, ăна çав çулах асăннă кĕнекешĕн С.В.Эльгер ячĕллĕ премине пама килĕшрĕ.

Петр Кузьмич Свердловскра Урал патшалăх университетĕнче журналист дипломне илнĕ хыççăн 35 çул хушши Чăвашрадиопа «Чувашия» патшалăх теле-радио компанийĕнче литература-драма передачисен редакцийĕнче редакторта тата аслă редакторта ĕçлерĕ.

Андриян Николаев урамĕнчи Радио çуртĕнче çав çулсенче театр искусствин ĕçченĕсем, композиторсем, писательсем кăткă пекех йăшăлтататчĕç. Мĕн чухлĕ чаплă передача эфира кăларман пуль вĕсен тата дикторсен сассипе усă курса вăл. Чăваш культурин аталанăвĕ çав редакцин уçă алăкĕнчен витĕр курăнатчĕ, эфирта янăраса тĕнчене саланатчĕ.

Çав тем тĕрлĕ кăмăл-туйăмлă хĕрӳ халăха Петр Кузьмич ăшшăн йышăнатчĕ, сассине хăпартмасăр, майĕпен калаçса йĕркене кĕртсе пыратчĕ. Ăна пăхсан, унпа калаçма тытăнсан, такамăн та чунĕ уçăлса каятчĕ пуль. Журналистика теорине ăста вĕреннĕ, литературăпа искусствăна чунĕпе юратакан, лайăх пĕлекен ăстаçă вăл – Андреев журналист. Театр çынниsemпе, писательsemпе туслă. Пĕр вăхăт Çамрăксен чăваш театрĕнче литература пайне тытса пычĕ. Çавăн чухне вăл мана, «Илем» хаçат редакторне, пысăк пулăшу пачĕ. Çамрăксен театрĕн юбилейĕ тĕлне «Илемĕн» пĕр номерне вĕсене халаллама шутланăччĕ. Театр, артистсен вуншар çулхи пурнăçĕ çинчен паха материалсем çырса, сăн ӳкерчĕксемпе тивĕçтерчĕ. Çавăншăн эпĕ ăна халĕ те тав тума манмастăп. Ырă кăмăллă, культурăллă, ăслă этем.

Петр Андреев пенсире те килте лармасть, «Çĕнĕ Вăхăт» издательствăра кĕнеке пахалăхĕшĕн, чĕлхе тасалăхĕшĕн çамрăк чухнехиллех пуç çĕклемесĕр ĕçлет. Ĕçĕ унăн ялан типтерлĕ пулнă – хăй пекех.

ЧАССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченне П.К.Андреева В.И.Ленин çуралнăранпа 100 тултарнă ятпа тата «Ĕç ветеранĕ» медальsemпе наградăланă. Радио итлекенsemпе кĕнеке вулаканĕсенчен вара хăйне евĕр награда – Пысăк тав.

«Хĕн-хур айĕнче», «Вăл – вилĕмсĕр» поэмăсем, «Вутпа тăвăл витĕр», «Шурăмпуç килсен» романсем, «Вунсаккăрмĕш çул» драма... Чăваш халăхĕн ĕлĕкхипе хальхи кун-çулне сарлакан, тарăн, ăста çырса кăтартнă çав кĕнекесенче. Мĕн чухлĕ сăнар вĕсенче, миçе тĕрлĕ шухăш-кăмăллă çынсем. Шăпи тата мĕнле-

рех: тӳссе ирттернӗ терт-асапне кура, кӑмӑлӗ-туйӑмӗ хурçӑ пек çирӗп, тӑвас ӗçӗ сумлӑ. Хӑюллӑ Чакка, сӑпайлӑ хӗр сар Васса, е çулӑмлӑ Октябрь çулӗсенче çунат илнӗ Левен, паттӑр чӑваш Иван Смирнов, е çӗнӗ пурнӑçра çӗкленнӗ çӗрӗç ӑсти– пурте вӗсем халӑх хушшинчен тухнӑ, халӑхӑн шанчӑклӑ ывӑл-хӗрӗ. Талантлӑ писатель Семен Элкер хӑйӗн чӗре ӑшшипе чун кӗртнӗ геройсене. Вӑл çут тӗнчене халалласа хӑварнӑ ӑстӑн пуянлӑхӗ – романсем, очерксемпе сӑвӑсем, поэмӑсемпе калавсем – совет çыннисене малашлӑх çулӗпе утма вӑй хушаççӗ.

Хастарлӑ салтак, ӗçчен çын, сӑмах ӑсти Элкер ӗмӗр тӑршшӗпех «тӑван халӑх ячӗ ӳснине курасчӗ» тесе тӑрӑшнӑ. Вӑл, чӑваш чӗлхин хӑватне çирӗп шанса ӗçлесе, ӑна тата та вӑйлӑрах янӑрама май пачӗ.

Мӗнрен пуçланнӑ-ха унӑн пултарулӑхӗ? Чӑн малтан вӑл мӗнле никӗс çине пуснӑ?

Чӑваш халӑх поэчӗ Семен Васильевич Элкер пурнӑçӗнчи çуркунне – ачалӑхӗпе яшлӑхӗ – Йӗпреç тӑрӑхӗнчи сӗм вӑрманта пытаннӑ Пысӑк Упакассинче иртнӗ. «Кушлавӑш текен вуникӗ ял уйӗ хура вӑрманпа хупланса выртать». «Юлашки вӑтӑр çул хушшинче, таврари вӑрмана касса пӗтернӗ пирки, ку уйӑн сӑн-сӑпачӗ нумай улшӑнчӗ. Йышлӑ катасем (ращасем) пӗтрӗç, çырмалӑхри çатракасем çаралчӗç», тесе çырӗ каярахпа поэт. Çын тӗкӗнмен çутçанталӑк ырлӑхӗсем, çаранӗ, çырмисем... Ешӗл курӑк çинче çарран чупнӑ пулас поэт, «пыл хурчӗсем çӗмӗрт тавра сӗрлешнине» сӑнанӑ.

Çететтин, çететтин,
çитрӗм, çитрӗм ӗнтӗ тин...
Çететтин, çететтин,
Çитес çӗре çитрӗм тин...

Çак сӑвӑ та Элкер кӗнекинчен. Чимӗр-ха, тӑри юрри-çке ку! Шӑп та лӑп çапла тӑсать пӗчӗкçӗ кайӑк хӑйӗн ансат кӗввине «шенкеркке тӳпе» айӗнче. Пиртен кашниех итлесе йӑпаннӑ çунатлӑ юрӑçа. Поэтӑмӑр, ав, илтнӗ те астуса юлнӑ. Кай-

ран, çуралнă çĕртен аякра, ют çĕрсенче çӳренĕ чухне те, ватлăх кунченех, хăй асĕнче, чĕринче тытнă ачалăхра курнă илеме:

Çуракинче ĕшеннĕ хыççăн,
Канма пĕлмесĕр, каçсерен,
Ялти тус-тантăш, çамрăк йышшăн
Вăйăа тухаттăмăр килтен.

Йăмраллă аслă ял хушшийĕ
Тулатчĕ купăс сассипе,
Ял çумĕнчи юман ращи те
Янратчĕ шăпчăк юррипе...

Поэта пархатар сунса аслă тĕнчене кăларнă ял. Çакăнтах мар-ши иксĕлми талантăн «çырма пуçĕ». Тата ăçта пултăр-ха? Пĕчĕкле илтнĕ юрă-кĕвĕ канăçсăр чĕрене хытăрах тапма хистенĕ, хресченĕн кун-çулĕ каярахпа писатель кĕнекисенче, ярăм-ярăм сăвă йĕркинче палăрнă. «Халăх сăвви-юррисене, юмахĕ-халапĕсене, – тесе çырать Аркадий Эсхель, – мĕн ачаранах юратнă Семен Васильевич Элкер, çитĕнерехпе, хăй сăвăç пулма ĕмĕт тытсан, вĕсене хут çине çырса пыра пуçланă. Халăх пултарулăхĕ ăна тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерет. Ваттисем каланă ăслă сăмахсем унăн пуçне ĕмĕрлĕхе кĕре-кĕре вырнаçаççĕ. Халăх юррисем хăйсен хитре кĕввипе поэт чĕрине ăшшăн хускатса çĕклеççĕ, юмахсем ĕмĕтне çунатлантараççĕ».

Час-часах пырса çӳренĕ поэт Упакассине. Тăванĕсем ăна юрăпа кĕтсе илнĕ, кайма тăрсан, юрласа ăсатнă.

– Семен Васильевич, килсен, ытларах пирĕн патра пурăнатчĕ: пирĕн анне – унăн аппăшĕ те-ха... Ватă асаттерен Кирилл Тимофеевичран пĕрмаях ыйтса пĕлетчĕ ялти пурнăç çинчен, авалхи çинчен, – каласа кăтартрĕ мана Екатерина Петровна Петрова.

Элкер тепĕр ватăпа Спиридон Васильевич Фетьковпа та туслă пулнă. Ялта çитсенех ун патне кайнă. Вара иккĕшĕ, шăкăл-

шăкăл калаçса, çырма хĕррипе нумайччен утса çӳренĕ, тет. Пулни-иртни, ял историйĕ интереслентернĕ писателе. «Ĕлĕкхи чăвашсем, – тет вăл «Кушлавăш уйĕ» очеркра, – çырăва пĕлмен, çавăнпа вĕсенчен таврара хăçан мĕн пулни çинчен çырса хăваракан та пулман. Анчах çав хут пĕлмен халăх хушшинче те ăслă-тăнлă çынсем сахал мар пурăннă. Ун пеккисем вара тахçан ĕлĕк пулнă ĕçсем çинчен сыпăкран сыпăка куçнă халапсенче те астуса усранă».

Халăх сăмахлăхĕпе лайăх паллашни поэта «Улăпсем», «Хыткукарсем», «Тамаша», «Тăрнаккайпа тăрнасем» тата ытти юмахсене сăвăласа çырма пулăшать.

Пысăк Упакассинче халĕ те халапсене пăрахăçламаççĕ. сăмахран, иккĕмĕш класс ачи Эдик Дмитриев хăйĕн апайĕнчен, асламăшĕнчен, çырса илнĕ «Çĕтĕк кĕрĕк» юмах килĕшрĕ мана. Плаки аппа патне кайрăм, вăл пит тараватт кĕтсе илчĕ. Акă мĕн илтрĕм унран.

Пĕр карчăк пурăннă, тет. Карчăкăн усрав ывăл пулнă, тет. Хăйĕн тата пĕр хĕрпе пĕр ывăл пулнă, тет. Ачисем, ӳссессĕн, хулана тухса каяççĕ. Карчăк пурăна киле ватăлать. Ăна хулана чĕнеççĕ ачисем. Мĕн тăвас? Çурт сутса каяс пулать. Хăй ватăлнипе, ĕçлейменнипе сутса каять карчăк. Укçине çĕтĕк кĕрĕк çумне çĕлесе хурать.

Малтан ывăлĕ патне çитет. Кинĕ ăна: «Уй, ку çĕтĕк кĕрĕкпе мĕншĕн килтĕн? Тухса пăрах тула!» – тет. Кăларса пăрахаççĕ. Карчăк пĕрмаях сыхлать кĕрĕкне: саплăк айĕнче – укçа. Карчăк пурăнать-пурăнать. Кин хăваласа кăларасшăн. Ăçта каяс? Çĕтĕк кĕрĕкне илет те хĕрĕ патне каять.

Хĕрĕ те çĕтĕк кĕрĕклĕ карчăка юратмасть. Тула тухаççĕ те пăрахаççĕ кĕрĕкне. Пурăнать-пурăнать карчăк. Хĕр йăлăхать унран, вăрçма тытăнать, тухса кай! – тет. Карчăк çĕтĕк кĕрĕкне йăтать те тухса каять. Усрав ывăл патне каяс, тет.

Акă усрав ывăл карчăка хапăл туса кĕтсе илет. «Ах, мĕнле килме пĕлтĕн, анне, мĕнле килме пĕлтĕн? – тет. – Ача пăхмаллаччĕ, ăçтан килме пĕлтĕн?» – тет. Пурăнаççĕ-пурăнаççĕ.

Лайăх усраççĕ карчăка. Çĕтĕк кĕрĕкне тирпейлесе çакса хунă. Карчăк, савăннипе, кăсене çурт илсе парас, тет. Лешсем укçа çуккă, теççĕ. Карчăк укçа пуррине нимĕн те шарламасть. Хăй ялан: «Тавай çурт илес, тавай çурт илес», – тет.

Каяççĕ хулана çурт илме. Карчăк çĕтĕк кĕрĕкри саплăка уçать – тем чул укçа тухать, саплăка уçать – татах укçа тухать. Такки çурт илсе пачĕ çĕтĕк кĕрĕкрен.

Хайхи савăнса кайрĕç усрав ывăлпа кин. Ачисем те ташлаççĕ, асанне те асанне теççĕ. Пурăнаç-пурăнаç. Пурнăç çитнĕ май карчăк хăйĕн ывăлĕпе хĕрне хăнана чĕнме шутлать.

Ывăлĕпе хĕрĕ пырса çитеççĕ. Кĕрсен, пўрт пуяннипелен, тĕлĕнсе хытса каяççĕ. Ăçтан кун тĕрлĕ укçа тупнă усрав ывăлпа кин, теççĕ. Йĕркеллĕ ĕçеççĕ-çиеççĕ, юрлаççĕ-ташлаççĕ. Халĕ вара вĕçĕ-хĕррисĕр пĕрле пурăнас теççĕ. Каяс та килмест карчăкран уйрăлса. Çук, такки усрав ывăл панчен килне ăсатса яратех хĕрпе ывăла.

Хай, малтан хĕрпе ывăл карчăка усрамарĕç. Халь хăйсем кўренсе тухса каяç, уйрăлас килмест карчăкран. Хайхи çĕтĕк кĕрĕк пуйтарчĕ, теççĕ. Юмах юплĕ, хўри кукăр теççĕ.

Анисим Спиридонович Фетьковпа, С.Элкер тантăшĕпе, курнăçса калаçрăм эпĕ. Унăн сăмахне итлеме маншăн питех те интереслĕ пулчĕ. Пĕр çултах çуралнă вĕсем, пĕрле выляннă, улăха ĕне çитерме çўренĕ, çитĕнсен, каçхи вăйăсене тухнă. Иккĕшĕ те пĕрремĕш тĕнче вăрçинче йывăр аманнă. Элкер салтака кайнине аса илчĕ те, хумханнипе, сывлăшĕ пўлĕнчĕ ват çыннăн.

Алăкранах тухрăм, эп тайăлтăм,
Аттеех те аннерен уйрăлтăм...

Пăшăлтатнă пек, хуллен-хуллен юрларĕ Анисим Спиридонович, унтан хушса хучĕ:

– Юрлаймастăп, куççуль тухать... Хамăра салтака ăсатнă чухне те хальхи пекех хурланнăччĕ.

Ирпе каяс, шыва каяс, –
Каçпа кайсан пăтранать.
Инçе çĕрте, ют çĕршывра,
Эп мар – кайăк хурланать...
Кайăк вĕçет, кайăк вĕçет
Хура çĕр çине пăхса.
Ир те макрап, каç та макрап
Килнĕ çул çине пăхса...

Çăкăр-тăвара пуç тайса, ялйышпа, çуралнă çĕршывпа сывпуллашса, тутăр вĕçтерсе тухса каять С.Элкер. Ашшĕ-амăшĕ ăна «сĕт çулĕпе кайса, çу çулĕпе таврăнма» пиллесе ярать.

Кайрантарах «Вутпа тăвăл витĕр» романта акă мĕн çырать писатель:

«Чăваш салтакĕсем, вагон алăкĕ умне кĕпĕрленсе тăрса, салтак юррине янтратаççĕ, вĕсене тăлпан Прохăрпа хăйпашка Уртем пуçарса пыраççĕ. Прохăр хулăн саслă, Уртем тенăрпа тăсать. Ку сассем çумне тĕрлĕрен сасă хутшăнать. Инçетри вырăссем, нихçан илтмен чăваш юрри-кĕввисене тĕлĕнсе, юпа пек хытса тăрсах, тăнлаççĕ,

Кикак, кикак хуркайăк –
Кĕр каять те çур килет;
Ах, тăвансем-тантăшсем,
Эпир ун пек килес çук, –
Хуркайăк пек таврăнса
Сире урăх курас çук!

Вирьял – чăвашсен хурлăхлă, авкаланчăк кĕввисем таçти ют çĕрсенче тăлăххăн янраса юлаççĕ».

Элкер – реалист, чăн-чăн ăстаçă, çынсен шухăш-ĕмĕтне пурнăç улшăнăвĕсемпе пĕрле илсе, пĕр тĕвве çыхма пĕлет. Халăх юрри-сăмахĕ унăн произведенийĕсене ăнсăртран пырса лекмен, вĕсем сăнара тĕрлĕ енчен кăтартма кирлĕ пулнă.

Мăн çул çинче çӳлĕ, ай, тăвайкки, –
Улхаймаççĕ ямшăк лашисем;
Каскăнрах та ӳсрĕм, тӳрĕ пултăм,
Юратмаççĕ ялти пуянсем.

Урампала иртсе, ай, пынă чух
Çил тавăрчĕ сăхман аркине;
Чиперех те пурăнас, ай, тенĕ чух –
Çын мăшкăлĕ касрĕ чĕрене...

Ялти куштана тарăхнипе, ăшĕ çуннă енне юрлать Чакка, çак сăмахсене каласа. Каскăн йĕкĕт юрри автора хăюллă çын чĕринче кĕрешӳ тăвăлĕ мĕнле капланса килнине сăнласа пама пулăшать.

«Хĕн-хур айĕнче» поэмăри геройсем кантур таврашĕсенчен инкек, мăшкăл тӳсеççĕ. Патша тарçисем, хырçă пуçтарма пырсан, чухăнсене тискеррĕн хĕнесе хăвараççĕ. Темĕнле йывăрлăх умĕнче те хресчен пуçне усман, пуян-куштансене пăхăнман, тет поэт. Яшсемпе хĕрсем каççерен вăйă тăваççĕ, «шарт-шарт» ал çупса» юрлаççĕ, «нумай урасем харăс тапнипе – çĕре чĕтретет арçынсен ташши».

«Вунсаккăрмĕш çул» драмăра ташă такмакĕсем, вăйă кĕввисем уйрăмах нумай. Халăхра çырса илнĕ юрăсемпе пĕрлех Элкер, кирлех пулсан, произведенин тĕп шухăшĕпе килĕштерсе, хăй те халăх юрри майлă сăвăлать. Питĕ асăрханса, пĕлсе тăвать вăл çакна. Драмăри тĕп сăнар Левен, чухăнсен телейĕшĕн кĕрешекен, акă мĕн калать:

Çапла çав пирĕн юрă-çемĕ
Тулли чунтан юхса тухман.
Илем пулсан та, ун илемĕ
Ял хушшинчен инçех кайман...
Хавас кунçуллă ирĕк халăх
Шăратĕ савăк юрăсем,
Вăл янрĕ витĕмлĕн, вăй-халлăн, –
Ăна юратĕç хуласем...

Октябрьти революци хыççăн, мул хуçисем темĕнле тулхăрсан та, мĕльюн-мĕльюншар çынсем çутă пурнăç патнелле туртăннă. Юрăсем те, вăхăтне кура, улшăнса пынă. Ĕлĕкрех Упакассинче: «Хура пӳрт карнисĕ курнасран йăмра лартса тултартăмăр», – тесе юрланă пулсан, халĕ ĕнтĕ кив тĕнче юлашкисенчен – пуппа пуянсенчен – тăрăхласа сăвă-такмак калама та хăюлăх çитернĕ ĕçченсем:

Хура çип çăмхи кускалать
Нуски кунçи пуласшăн.
Кулак ачи кускалать
Коллективра пуласшăн.

Хутлам-хутлам хуткупăс,
Пĕр хутламĕ ытлашши.
Çĕнĕ пурнăç тунă чух
Пуппа пуян ытлашши.

– Кĕвви питĕ хитре илтĕнет-çке! – терĕ Акулина Евстафьевна Романова бригадир. – Манса кая пуçланă ку юрра, ушкăнпа аса илтĕмĕр халь. Пирĕншĕн вăл хăйне майлă истори документчĕ пекех туйăнать. Малтанах ăна, шкулта вĕреннĕ чухне, учительсенчен илтнĕччĕ. Хамăр та вара хаваспах юрлама тытăнтăмăр, кулаксене питлесе. Колхозсем йĕркеленĕ çулсенче пулнă та-ха çак ĕçсем.

Фольклор произведенийĕсем Элкершĕн мĕн тери хаклă иккенне вăл хăйĕн кĕнекисене кĕртнĕ вуншар халăх юррисенченех туйса илме пулать. Сăвăç кунсерен çырса пынă дневниксенче çакăн пек йĕркесене асăрхатăн:

«Мартăн 28-мĕшĕпе 30-мĕшĕнче Мускавран Воробьев ертсе пыракан Чăвашсен государство хорĕн концертне пачĕç... Мартăн 30-мĕшĕнче «Коминтерн» радиостанцийĕ урлă передача пынă вăхăтра, ирхине тăхăр сехет те вăтăр минутра, эпĕ килте ларатăп, тулли кăмăлтан киленсе итлетĕп.

Передача питĕ лайăх илтĕнет... Питĕ кăмăллă юлтăм» (1937 çул).

Халăх поэчĕ хăй те юрлама юратнă. Тăванĕсем пĕрле пухăнсан, вăл кĕрекере ват çынсемпе ĕлĕкхи çинчен, чухăнсем мĕнле нуша курни, хăй вăрçăра асапланса çӳрени çинчен калаçнă. Вара: «Атьăр юрлар!» – тенĕ. Хăех юрă пуçланă. Хуллен, майĕпен юрланă Семен Васильевич. «Вăхăтлă, çемçен юрлатчĕ, – терĕ ун пирки Анна Леонтьевна Никифорова. – Вăл калаçма та хытă калаçмастчĕ. Тахçанхи юрăсене пĕлетчĕ...»

Аки-сухи тивлечĕпе
Ĕçер-и халĕ, çиер-и?
Аттепе анне тивлечĕпе
Выляр-и халĕ, кулар-и?
Аслă та ката хыçĕнче
Юрласа ака тăваç, тет;
Чĕчĕ те тихи хыçалтан
Выляса чупса пырать, тет.
Кĕçĕн те ката хыçĕнче
Шăхăрса сӳре сӳреç, тет;
Ачи те пăчи хыçалтан
Выляса чупса пырать, тет.

Ĕлĕкхипе танлаштарсан, тĕпрен улшăнчĕ Кушлавăш уйĕ. Кунта халь «сĕрĕшсе çăра ыраш та ылттăн тулă» ӳсет. Кермен пек çуртсенче лайăх пурăнаççĕ С.В.Элкер ентешĕсем. Мĕнпур Чăваш Республикипех палăрчĕ «Трудовик» колхоз ырă ĕçĕсемпе. Ĕç паттăрĕсен йышĕ хутшăнсах пырать. Нумай хреснен кăкри çинче орден-медаль йăлкăшать. Колхоз председателĕ А.Г.Шордеев Социализмла Ĕç Геройĕ ятне илчĕ.

Чаккапа Левен мăнукĕсем, телейлĕ çĕршыв ачисем, кăкăр туллин сывласа илсе, йĕс шăнкăрав пек уçă саспа сăвă калама хавас. Вĕсен ашшĕ-амăшĕсем, уявсенче çакăн пек юрăсем янратса, кĕрекене илем кӳреççĕ:

Эп сар кӗрӗк çӗлетрӗм.
Йӳле ярсан – вӗçкӗн теç,
Тӳмелесен – мӗскӗн теç.
Хамӑр ял – капӑр ял,
Ют ялсене ăçтан юран?

Хура карттус туянтăм.
Чалăш лартсан – вӗçкӗн теç,
Пусса лартсан – мӗскӗн теç.
Хамӑр ял – капӑр ял,
Ют ялсене ăçтан юран?

Упакасси юррине
Хыт юрласан – вӗçкӗн теç,
Юрламасан – мӗскӗн теç.
Хамӑр ял – капӑр ял,
Ют ялсене ăçтан юран?..

«Хаваслă вăйăра пӗр кассăн вылян, кулатăн – ăш канать... Çав çутă вăхăт пурнăç витӗр çаплах çиçсе тăрать асра», – тесе çырнă, яш чухнехине тепӗр хут куçĕ умне кăларса, çӳçĕ шуралнă С.В.Элкер. Хура çӗртен, Тăван Упакассинчен вăл пӗр самантлăха та уйрăлса пурăнман. Синкерлĕ саманари «хĕсĕк кĕтессе» тӗршӗннĕ чăваш юррине те, «хаваслăхпа çĕкленнĕ юрра» та юрланă, чылай çаврăма-такмака хăйĕн произведенийĕсене ӗмӗрлĕхе кӗртнĕ. Вăл кĕнекесене эпир халь сăвăçа тав туса вулатпăр. Килес тăхăмсем те вулĕç. Çавăн пекех халăх поэчĕ çуралнă ял юрри-сăмахĕ те сыпăкран сыпăка, ӳсĕмрен ӳсĕме куçса пырĕ.

Петр Андреев.
«Юррăмсем – çунатăмсем» кĕнекерен.
Шупашкар, 1978.

ЭЛКЕР МАН ПУРНĂÇРА

КĂТКĂС ТА ЙЫВĂР ÇУЛПА

Аркадий Александрович Эсхель 1914 çулта Чăваш АССрĕнче, Çĕрпӳ районĕнчи Янсакассинче çуралнă. Сакăр çул вĕренмелли шкул хыççăн ял хуçалăх техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Хусанти педагогика институтĕнче чĕлхепе литература факультетĕнче вĕреннĕ. Вулăсри комсомол комитечĕн секретарĕ, колхоз председателĕ, ВЛКСМ райкомĕн пай пуçлăхĕ пулнă.

1934-1940 çулсенче Эсхель «Чăваш коммуни» хаçатра ĕçлесе литература сотрудникĕнчен редактор заместительне çити ӳснĕ.

Пултарулла çыравçа 1937 çулта СССР писателĕсен Союзĕн членне илнĕ, вăл хĕрĕхмĕш çулсенче Чăваш писателĕсен Союзне ертсе пынă. Аллăмĕш çулсенче Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи искусство управленийĕн начальникĕнче, «Ялав» журнал редакторĕнче ĕçленĕ. Литература ĕçĕнчи ӳсĕмсемшĕн Эсхеле Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав тата «Хисеп палли» орденсемпе наградăланă.

Вăл чăваш халăх поэчĕпе Семен Васильевич Эльгерпе ĕçлĕ, туслă çыхăну тытнă.

Унăн сăнарĕ паянхи пекех – куç умĕнче...

Шурă-шурă Шупашкар çине каç ĕнтрĕкĕ ӳксен, савăтсенче каçхи смена ĕçе тытăнсан, асфальт сарнă аслă урама сăпай тумланнă, аллине туя тытнă ватăрах çын тухать. Ури унăн пĕрремĕш тĕнче вăрçинчех аманса сусăрланнă, апла пулин те вăл, кăшт малалла ӳпĕнсе, васкамасăр, анчах яланхи мелĕпе сулмаклăн утать. Поэт паянхи йывăр ĕçĕ хыççăн уçăлма тухнă, сывлăш çавăрма, шухăш шухăшлама.

Малтан вăл, Карл Маркс урамĕпе улăхса, Ленин

площадьне ҫитет. Час-часах эпĕ ăна ҫакăнта тĕл пулаттăм. Эпир самантлăха аслă ҫулпуҫ палăкĕ умĕнче чарăнса тăраттăмăр. Ку вăл – Шупашкарăн чи илемлĕ вырăнĕсенчен пĕри. Кĕрнеклĕ палăк Ильичăн чĕрĕ сăнарне аса илтерет. Вăл тин ҫеҫ Советсен ҫуртĕнчен, пĕр-пĕр ĕҫлĕ ларуран тухнă тейĕн. Сăнĕ кăмăллă. Халь вăл ҫĕнĕ ĕмĕт-шухăшпа малалла васкать. Унăн пальто аркине ҫил варкăштарать.

«Манми капитан! Хăватлă ҫын – Ленин!»..

Мана «Хурҫă карап» сăвăри йĕркесем аса килеҫҫĕ. Анчах эпĕ вĕсене сасăпа мар, хам ăссăн ҫеҫ пăшăлтатса калатăп.

Ҫуран утнă май шухăшлама ансат. Сисетĕп: поэт хăй шухăшне «ҫăмхалать». Вăл ун чухне питĕ пысăк ĕҫе пуҫăннăччĕ. Хăй ҫырнисен пилĕк томлă пуххине хатĕрлетчĕ. Аллă ҫул хушшинчи пултарулăх ĕҫне пĕтĕҫтермелле, нумай япалана паянхи куҫпа пăхса тухмалла, хăшне-пĕрне тӳрлетмелле, хăшне-пĕрне, тен, ҫĕнĕрен те ҫырмалла. Манăн поэта шухăшлама чăрмантарас килмест. Тĕрĕссипе каласан, поэт-писательсен пуҫ мими пĕрмаях ĕҫлет. Уншăн канмалли кун та, отпуск та ҫук. Тепĕр чухне вăл тĕлĕкре те пĕр-пĕр сюжет калăплать.

Эпĕ, поэта ырă сывлăх сунса, алă паратăп. Вăл тăвалла утать, Карл Маркс урамĕнчен Ленин проспектне тухать. Майĕпен Чапаев палăкĕ патне ҫитет.

«Вунсаккăрмĕш ҫул» ятлă драмăллă поэмăри сăнарсем поэт куҫĕ умне хăйсем тĕллĕнех тухса тăраҫҫĕ. Юлашнутлă Чапай та сасă парать:

...Астăватăп
Чăваш ҫыннин мĕскĕнлĕхне.
Хисеп пулман ун... Халь ырлатăп
Чăваш Советшăн тăнине.

Ҫапла куллен тенĕ пекех тĕл пулаттăм эпĕ чăваш халăх поэтне Семен Васильевич Элкере, сăмахлаттăм

унпа – пурнăç çинчен, литература çинчен. Пуçне пĕр-пĕр пысăк шухăш çавăрса илмен чухне, кăмăлĕ пур чухне, вăл никампа та сăмах ваклама ӳркенсе тăмастчĕ. Уйрăмах çыннăн килйышĕ çинчен, ачисем епле çитĕнсе пыни çинчен ыйтса пĕлме юрататчĕ...

* * *

Кĕнеке вулакан çын писательпе инçетрен, хăйне куçа-куçăн куриччен нумай маларах паллашать. Халь акă, Семен Васильевич Элкер пурнăçĕпе пултарулăхĕ пирки шухăшланă май, мана тӳрех ача чухнехи вăхăтсем аса килеççĕ.

...1927 çул. Эпир пысăк килйышăмăрпа «çĕнĕ çĕре» – Тутар республикине куçса кайрăмăр. Революциччен кунта Демидов улпут хуçаланнă. Хура тăпраллă техĕмлĕ çĕршыв, пуян та илемлĕ тавралăх. Анчах çывăхра чăваш шкулĕ çук. Атте мана хамăрăн çĕнĕ ялтан хĕрĕх-аллă çухрăмра ларакан Сиктĕрме ялне – хресчен çамрăкĕсен шкулне вĕренме леçрĕ. Кунта пире чăваш чĕлхипе литературине паллă педагог Наталья Яковлевна Яковлева вĕрентетчĕ. Унччен вăл нумай çул хушши Чĕмпĕр шкулĕнче Иван Яковлевичпа пĕрле ĕçленĕ.

Тăван халăха юратма, тăван чĕлхе пуянлăхĕпе илемне туйса илме хавхалантарнă çывăх çыннăн ятне ырăпа асăнмасăр иртме çук. Литература урокĕсенче Наталья Яковлевна пире Чĕмпĕр шкулĕ çинчен, унăн алăкне чăваш ачисем валли уçнă Иван Яковлевич Яковлев çинчен, унта вĕреннĕ Константин Ивановпа Николай Шупуççынни, Федор Павловпа Степан Максимов çинчен час-часах каласа кăтартатчĕ. Унăн сăмах-юмахне эпир çăвара карсах итлесе лараттăмăр.

Пурăна киле эпĕ Михаил Федоровăн «Арçури» балладине, Константин Ивановăн «Нарспи» поэмине хам тĕллĕн темиçе хутчен те вуласа тухнă, артистсем каласа кăтарнине те пайтах илтнĕ, анчах çав япаласене Наталья Яковлевна вуласа пани паян кун та чĕрере. Çавăнпа та ачасене кĕнеке вулама

хăнăхтарнине унăн чи пархатарлă ĕçĕ тесе шутлатăп эпĕ. Хăй вăл кĕнекене тĕлĕнмелле ăста, чăннипех чĕре патне пымалла вулатчĕ. Кашни урокрах пире пĕр-пĕр çĕнĕ сăвăпа е калавпа паллаштаратчĕ, пысăкрах япаласен пуçламăшне малтан хăй вуласа паратчĕ те ыттине хамăра вулаттаратчĕ. Унăн килĕнче библиотека пуянччĕ вара, эпир унта тăтăшах кĕнеке илме çӳреттĕмĕр. Тата вăл ун чухнехи «Сунталпа» «Капкăн» журналсене йĕркеллĕ пухса пыратчĕ.

Çапла эпир Аслă Октябрь хыççăн вăйлă ӳсме тытăннă тăван литература кунçулĕпе утăм хыççăн утăм паллашаттăмăр. Ку вăхăталла ĕнтĕ Н.И.Шелепин «Çĕрпӳ пасарне» кашни ача тенĕ пекех пăхмасăр каласа çӳретчĕ. «Сунтал» журналта унăн «Эссепе», «Пӳлере илни çинчен» ятлă халапĕсем тухнăччĕ, Н.Шупуççыннин «Еркĕн» поэми пичетленме тытăннăччĕ.

– Пăхăр-ха, ачасем, – тетчĕ пире Наталья Яковлевна, – хамăр чăвашрах кĕнеке çыракансем йышлă курăна пуçларĕç. Нумай та вăхăт иртмĕ, пирĕн пысăк поэтсемех ӳссе çитĕнĕç.

Тăван литература ӳсĕмне çапла пире учительница куçа курăнмалла тĕслĕхсемпе çутатса паратчĕ.

Астăватăп: «Çирĕм улттă» поэмăна вуланă кун пирĕн класри ачасемшĕн кĕтмен уяв пек пулчĕ. Ăна çыраканĕ – Петĕр Хусанкай – Сиктĕрме ачи-çке-ха, вăл çак ял урамĕсемпе чупса çӳренĕ, Ĕнчĕ çырминче шыва кĕнĕ, çак шкулти парта хушшине ларса вĕреннĕ.

«Çирĕм улттă» поэмăна авторĕ Элкере халалласа çырнă.

– Кам вăл Элкер? – тесе ыйтаççĕ пирĕн хăшпĕр ачасем Наталья Яковлевнăран.

– Эпĕ ăна хам куçăмпа курман, анчах чĕлхе манерĕнчен – вăл тури чăваш пулма кирлĕ, – тет учительница. – Ачасем, ан васкăр, эпир Элкерпе те кĕçех паллашăпăр-ха.

Пĕррехинче Наталья Яковлевна, яланхи пекех, хул айне кĕнекесем хĕстерсе кĕчĕ те, вĕсене сĕтел çине майласа хурса, тем пирки класран каялла тухрĕ. Пурне те хăвăрт тĕпчесе пĕлме çунаканскерсем, эпир, сĕтеле тухăмрах сырса илтĕмĕр. «Сун-

тал» журналăн 1925-1926 çулсенчи пĕрле пухса çĕленĕ номерĕсем. Эпĕ вĕсене хуплашкисенченех питĕ лайăх астăватăп — сарă та кĕрен, кăвак та симĕсчĕ вĕсем. Анчах эпир уçкаласа пăхма та ĕлкĕреймерĕмĕр, Наталья Яковлевна класа каялла кĕчĕ. Ачасем сĕтел тавра кĕпĕрленсе тăнине курсан, вăл, пуçне пăркаласа, пире кăшт ӳпкеленĕн кулса илчĕ. Унтан, пĕр сăмах чĕнмесĕр, сĕтел умне ларчĕ, «Сунтал» журнала уçрĕ.

– Элкер, «Хĕн-хур айĕнче»... «Айăпсăр таркăн» ятлă. Историлле поэмăн малтанхи сыпăкĕ, – терĕ учительница.

Вăл, сывлăш çавăрнă май, кăшт тытăнса тăчĕ, сăмси вĕçне анса ларнă çутă куçлăхĕ урлă ачасем çине тинкерсе пăхрĕ, вара питĕ тӳлек сасăпа вулама пикенчĕ.

Учительница лăпкăн çеç вулать пулин те, поэма сăвви тĕлĕнтермĕш юмах çеммипе сулмаклăн юхса пырать. Класра питĕ шăп, ачасем сывлама та чарăннă тейĕн. Акă пирĕн куç умне хура вăрман хĕрринчи Кушлавăш уй-хирĕ тухса выртать. Хӳтĕ вырăн, ырлăхлă çĕршыв. Пĕр икĕ ĕмĕр ĕлĕкрех çак аслă вăрманăн вĕçĕ-хĕрри те курăнман. Унта яштака хырсем пĕлĕте çити кармашса ларнă, кунĕн-çĕрĕн канмасăр тем канашланă пек кашланă.

Эпир хамăрăн шухăшăмăрпа çав аслă вăрмана шалтан-шалалла кĕретпĕр. Ĕлĕк-авал пулса иртнĕ ĕçсем куçкĕретĕнех курăна пуçлаççĕ. Сасартăк Наталья Яковлевна сасси чĕтренсе илет, эпир ун çинелле шăтарас пек пăхатпăр.

Итапай пичче юр çинче выртать,
Икĕ куçĕнчен ун куççуль юхать...

Çутă куçлăх айĕнчен «Сунтал» страници çине шултра куççуль тумламĕсем пат та пат татăла-татăла анаççĕ. Учительница пуçне çĕклемест, малалла вулать, часах унăн сасси çирĕпленет. Çур яла саламатпа çунтарса, таса юр çине халăх юнне сирпĕтсе хăварнă кантур чуниллисем ялтан тухса кайни çинчен калакан йĕркесене вăл шăл витĕр çилĕллĕн сăрхăнтарать. Тепĕр самантрах унăн сасси каллех тӳлекленет:

Вăхăчĕ шăвать. Пăч-тĕттĕм пулать.
Пĕчĕкçĕ ялта сас-хура чарăнать...
Чалхăрса тăракан мĕльюн çăлтăрсем
Тĕттĕм тӳперен çĕре пăхаççĕ,
Лупассем тăрринче выç тăманасем
Хыт тĕвиклетсе шăпа пăсаççĕ.

«Хĕн-хур айĕнче» поэмăн хальхи вариантĕнче ку сăмахсем çук. Анчах вĕсем ача чухне пуçа кĕрсе юлнă та халĕ те асрах тăраççĕ.

Малашнехи литература урокĕсенче Наталья Яковлевна пире Элкерĕн «Шуçăм килнĕ чух» калавне вуласа панăччĕ. Ку калава «Сунтал» журналăн 1926 çулхи 3-4 номерĕсенче пичетленĕ. Калаври Долбилов учитель сăнарĕ пире ун чухне питĕ хаваслантарнăччĕ. «Эх, çавăн пек хастар çын пуласчĕ», – чунтан ĕмĕтленсе калаçаттăмăр эпир хамăр хушăмăрта. Кайрантарах С.В.Элкер çав калавăн темипе «Шурăмпуç килсен» ятлă пысăк роман çырса кăларать, Долбилов сăнарĕ вара кунта тата вăйлăрах ӳсет, чăн-чăн революционер сăнарĕ пулса тăрать.

1928 çулхи кĕркунне, Чистайри ялхуçалăх техникумĕнче вĕреннĕ чухне, эпĕ Элкерĕн «Самана» ятлă сăвă кĕнекине туяннăччĕ. Çав кĕнекене эпĕ Чулман Атăл хĕрринче, техникумăн вĕренӳпе сăнав хуçалăхĕнче ĕçленĕ чухне вуласа тухрăм, хама вара таçти çĕнĕ çĕршывсене çитсе курнă пекех туйса илтĕм. Манăн çамрăк чуна кĕнекери шухăш хăвачĕ çĕклентерчĕ. Эпĕ çак кĕнекене (хуплашки çĕтĕлсе тухичченех) нумай çул хушши кĕсъене чиксе çӳрерĕм. Манăн, епле пулсан та, кĕнеке çыраканне хăйне курас килетчĕ.

Халь ĕнтĕ эпĕ, Шупашкарта вăтăр çул ытла пурăнса, Семен Васильевич Элкерпе питĕ çывăх паллашнă, унпала хирехирĕç ларса та нумай калаçнă, унăн пултарулăхĕ çинчен докладсем те тунă, статьясем те çырнă, анчах малтанхи тĕлпулу паян кун та пуринчен пахарах пек туйăнать.

1931 çулхи май уйăхĕ вĕçнелле эпĕ Шупашкара килтĕм.

«Шупашкар туйи – шурă туя, çул çӳреме шанчăклă..» Таçта çитсен те, вăл вăхăтра çак юрă манăн чĕлхе вĕçĕнчен татăлма пĕлместчĕ, мана пĕрмаях Атăлăн чăнкă çыранĕ патнелле илĕртетчĕ. Ун чухне эпĕ Тутар республикинче хамăр ялта колхоз председателĕнче ĕçлеттĕм, çав вăхăтрах литература ĕçне хутшăнма та хытă ĕмĕтленеттĕм. Ку вăхăта ман пĕр пилĕкултă сăвă пичетленсе те тухнăччĕ ĕнтĕ.

* * *

...Чулман Атăл пăрахучĕ Шупашкара хĕвелпе пĕрле çитрĕ. Савăннипе тейĕн, вăл юрăри пекех, «чăтаймарĕ, тӳсеймерĕ, кăшкăртса ячĕ». Хулара ун чухне пысăк çуртсем сайраччĕ-ха. Çапах та тин тухнă хĕвелĕн ылтăн пайăркисем пин-пин кантăк çинче выляса ялкăшнипе хула тĕлĕнмелле илемлĕ курăнатчĕ. Чи пахи тата акă мĕн: ку вăл – тăван республикăн тĕп хули, тăван культура вучахĕ, кунта хамăр тăван чĕлхепе кĕнекесем, хаçатсемпе журналсем тухаççĕ, кунта паллă писательсемпе артистсем, композиторсемпе художниксем пурăнаççĕ.

Акшар чул сарнă çулпа Шупашкарăн чăнкă çыранне улăхнă чух эпĕ хама чăннипех темĕнле юмахри чаплă çĕршыва килсе кĕнĕ пек туйса илтĕм. Чун пĕрре çӳçенет, тепре вĕриленет. Халлĕхе ăçта каймаллине те пĕлместĕп. Вывескăсем çеç вулатăп.

Манăн аташсах çӳремелле пулмарĕ. Эпĕ Канаш урамĕпе (хальхи Çеçпĕл Мишши урамĕ) тăвалла улăхрăм та хаçатсемпе журналсенчи ӳкерчĕксем тăрăх палласа илнĕ икĕ хутлă хĕрлĕ чул çурт умĕнче чарăнтăм. Пĕлетĕп: кунта «Канаш», «Сунтал», «Капкăн» редакцийĕсем вырнаçнă. Писательсем те чылайăшĕ кунта ĕçлеççĕ. Анчах вăхăт ытла та ир-ха. Урамăн тепĕр енче, редакцие хирĕç ларакан йывăç çурт умĕнче, пĕр улах сак пур. Çавăнта вырăн йышăнатăп. Кунтан урампа иртсе çӳрекен çынсене сăнама питĕ лайăх, хама вара никамах та асăрхаймĕ.

Ларатăп çапла, кĕтетĕп. Хĕвел хытах хĕртме пикенчĕ. Анчах ку нимех те мар. Манăн писательсене курмалла. Кама та

пулин палласа илеймĕп-ши е çук-ши? Халиччен эпĕ вĕсене «Сунтал» журналти ӳкерчĕксенче çеç куркаланă. Уйрăмах эпĕ юлташла тăрăхласа ӳкернĕ сăнсене пăхма юрататтăм. Тен, çавсенчен те пулин палласа илĕп?!

Акă урампа çынсем ытларах иртсе çӳре пуçларĕç. Эпĕ кашни çынна куçăмпа тĕпчесе тĕрĕслетĕп. Урам леш енчи икĕ хутлă хĕрлĕ çурт хапхинчен кĕрсе каякансене уйрăмах хытă сăнатăп. Халлĕхе пĕр писатель те куç тĕлне пулман пек туйăнать. Чим, кам ку?.. Аллине пысăк хут тĕрки тытнă сарлака сăн-питлĕ те хура çӳçлĕ çын редакци хапхи умĕнче самантлăха чарăнса тăчĕ те, хăй тĕллĕн тем каласкаласа илсе, хĕрлĕ çурт еннелле – э-э, кайран та кĕрĕп-ха! – тенĕ пек алă сулчĕ, вара тăкăрлăкпа тепĕр урамалла уттарчĕ. Унта – типографи, ку çын çавăнталла çул тытрĕ ĕнтĕ. Ваçанкка!.. Никам та мар, шăпах çавă пулчĕ ку.

Кун хыççăн эпĕ Иван Мучипе Шăпчăка питĕ çăмăл палласа илтĕм. Юлташла тăрăхласа ӳкернĕ чухне художниксем вĕсен сăнĕсене ытла та хăйсем пек сăнласа кăтартаççĕ иккен.

Эпĕ ĕнтĕ редакцие кам ĕçе килмеллисем пурте килсе çитрĕç, тек манăн никама та кĕтмелли çук пуль тесеттĕм. Çав самантра хайхи анатран пĕр çын ерипен, анчах питĕ сулмаклăн уксахласа хăпарнине курах кайрăм. Писательсем çинчен хам унччен мĕн вуланисене аса илетĕп. Камччĕ-ха вăл вăрçăра хытă аманни? Тăхта-ха, тăхта, лайăхрах аса илем.

Акă туяллă çын çывхарсах килет. Вăл шурă йĕтĕн пиртен çĕлетнĕ «толстовка» тăхăннă (ун чухне çав йышши тум уйрăмах сарăлнăччĕ). «Толстовки» айĕнчен тĕрĕллĕ кĕпе çухи курăнать. Йĕтĕн пиртенех çĕлетнĕ шурă карттусне вăл пусарса мар, кăшт çӳлелле хăпартарах лартнă та, карттус сăмси айĕнчен унăн çаврака пысăк çамки çуталса тăрать. Редакци хапхи умне çитсен, вăл ман еннелле çаврăнса пăхрĕ. Самантлăх çеç... эпĕ ăна палласа илтĕм те ура çине сиксе тăтăм, анчах пĕр утăм та малалла ярса пусаймарăм. Иментĕм, вăттантăм... вара çав кун «Канаш» редакцине те кĕмерĕм.

...Семен Васильевич Элкерпе куçа-куçăн тăрса, алă тытса паллашма мана тепĕр çулхи кĕркунне тин тӳрĕ килчĕ. Вăл ун чухне «Сунтал» журналăн секретарĕччĕ тата ăнах «выпускающий редактор» та тетчĕç. Эпĕ писательсен Союзĕн оргкомитетĕнче ĕçлеттĕм, «чин» тĕлĕшĕпе кам пулнине хам та лайăххăн пĕлейместĕм – те «литконсультант», те «техсекретарь», анчах ĕç вăхăтĕнчех кунĕ-кунĕпе сăвă çырса лараттăм. Пире, Семен Васильевичпа иксĕмĕре, пĕр пысăк сĕтел панăччĕ, сĕтелĕн пĕр сунтăхĕнче – унăн япалисем, тепринче – манăн.

– Эс, ача, тем, питĕ нумай çыратăн, – терĕ мана пĕринче Семен Васильевич, çамрăк сăвăçа кӳрентересрен асăрханнă пек йăваш сасăпа. – Пирĕн ĕçре васкани ытла выраннлах та мар. Сахал пултăр та – лайăх пултăр. Сăмах çине сăмах купаласа кайнинчен усси çук. Пĕлес пулать: сăвă тĕшши - шухăш. Тĕшши пулмасан, нимĕнле вăрлăх та шăтаймасть. Çавăн пекех витĕмлĕ шухăшсăр нимĕнле сăвă та пулма пултараймасть. Тепĕр сăвă, калăпăр, тултан пăхма илемлĕ пек, анчах ку вăл сăмах эрешĕ çеç. Шалта пуш-пушах. Хăш сăввăн тата шухăшĕ пулсан та илемĕ çук, кун пек сăвă вара вулаканăн кăмăлне ниепле те çавăраймасть, хайхи чи лайăх шухăш та ахалех сӳнсе ларать.

Ун чухне эпир, çамрăк çыравçăсем, нумайăшĕ сăвă йĕркисене пусма картлашки пек картлантарса çыраттăмăр. Семен Васильевич çакăн пек çырнине вара уйрăмах кăмăлламастчĕ.

– Маяковскин хăйĕн сасси, сирĕн те хăвăрăн сасă пулмалла, – тетчĕ вăл. – Кашнин сасси – хăйне кура. Ху мĕн калас тенине çеç витĕмлĕрех калама тăрăш. Хăвăн сăмахна шыра.

«Сунтал» редакцине çамрăк авторсем нумай пыратчĕç. Семен Васильевич, кашнине хăйпе юнашар лартса, вĕсен сăввисене питĕ тимлĕн вуласа тухатчĕ, хăш чух авторĕсене хăйсене сасăпа вулаттаратчĕ, унтан майĕпе калаçма тытăнатчĕ. Сассине хăпартмасăр, ашшĕ е аслă пиччĕшĕ хăй ачисене е шăллĕсене ăс вĕрентнĕ пек, лăпкăн та ĕнентермелле калаçатчĕ вăл. Çак ĕçе тума мĕн тери пысăк тӳсĕм кирлине, тен, кашниех тавçăр-

са та илеймĕ. Семен Васильевичăн çав тӳсĕм пурччĕ вара. Кирек мĕнле йывăç та хăй тавра ешĕл те патвар хунав çитĕнтерет. Семен Васильевич Элкере эпĕ хамăр тăван литературăн çамрăк вăрманĕнчи кĕреш юман пек кураттăм. Ун йĕри-тавра пĕрмаях йăрăс хунав кашлать. Ку вăл – пирĕн литературăри çамрăк йыш. Пултарулăх ĕçне тин çеç хутшăнакансене Семен Васильевич, яланхи пекех, тĕрĕс сăмахпа, ăслă канашпа пулăшатчĕ, кирлĕ чухне хăтăрса та илетчĕ.

Элкер çăлтăр тесе авалхи чăвашсем телей çăлтăрĕсен ушкăнне каланă. Пирĕн Семен Васильевич ку тĕлĕшпе чăннипех телейлĕ пулнă. Самана таппи малалла пынă май, тăван поэзи тӳпинчи Элкер çăлтăр тавра çĕнĕрен çĕнĕ çăлтăрсем пĕрин хыççăн тепри ялкăшма тытăннă.

...Хальхи Роза Люксембург урамĕнчи пĕчĕк йывăç çурт çинче («Родина» кинотеатрпа юнашар) асăну хăми пур: «Çак çуртра 1896-1897 çулсенче граждан вăрçи геройĕ В.И.Чапаев вĕреннĕ», – тесе çырнă унта. Шăпах çав çуртăн пĕр пӳлĕмĕнче çирĕммĕш-вăтăрмĕш çулсенче С.В.Элкер пурăнатчĕ.

Пĕррехинче Семен Васильевич патне йĕпкĕн хура та кăтра çӳçлĕ çирĕм çулхи йĕкĕт пырса кĕрет. Апатланаççĕ, чей ĕçеççĕ, сăмахлаççĕ. Вăхăт çĕрлене каять. Хулана тин çеç килнĕ йĕкĕтĕн хваттер те çук иккен. Семен Васильевичăн та хатĕр кравать çук. Вăл вара çамрăк хăнана урайне вырăн сарса парать. Çутă сӳнет(ватăраххисем астăваççĕ: Шупашкарта ун чухне электростанци çĕрле пĕр сехетчен кăна ĕçленĕ). Çапла, çутă сӳнет, анчах хĕрӳ каласу вĕçленмест-ха. Урайĕнче выртакан çамрăк йĕкĕт сасартăк сăвă калама тытăнать:

Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă çулпуç – сахал мар.
Вĕсен ячĕ пуриншĕн те ылтăн,
Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă чăн-чăн коммунар...

Сăвă калакан йĕкĕт малтан вырăнĕ çинче ахаль тăрса ларать, унтан ура çине сиксе тăрать. Сăвви вăйлăран вăйлăрах янăрама тытăнать:

Каспи тинĕсĕ чăн та йĕрет-çке...

Ку вăл «Çирĕм улттă» поэма авторĕ çирĕм çулхи Петĕр Хусанкай пулнă. Шăпах çав кунсенче çуралнă унăн çĕнĕ произведенийĕ. Семен Васильевич Элкер вара поэзири «çĕнĕ чунăн» сăпки умĕнче тăнă. Ахальтен мар ĕнтĕ çамрăк автор хăйĕн çĕнĕ поэмине Элкере халалланă.

Ун чухне Элкер те, Хусанкай та халăх поэчĕн ятне илеймен-ха. Ун чухне вĕсем тин çеç çула тухнă. Аслă çула... Çапла, нумай çамрăк сăвăçа Семен Васильевич тăван поэзи уйхирĕнче ăнăçлă ĕçлеме ырă сунса пехилленĕ.

Тин çеç илсе кăтартнă эпизода Семен Василеьвич мана хăй каласа панăччĕ. Чăннипех ăшă чун-чĕреллĕ вĕрентекенччĕ вăл çамрăк авторсемшĕн! Эпĕ кунта çĕр тĕслĕхрен пĕрне илсе кăтартма пултаратăп.

...Писательсен Союзĕнче пысăк пуху. Тĕм-хура çӳçлĕ çамрăк йĕкĕт çĕнĕ поэма вулать. «Халăхăн ылтăн кĕнеки»...

Саккун тесен, сехре хăпатчĕ,
Чĕтретчĕ пирĕн ӳтĕмĕр.
Тӳре-шаран чĕн саламачĕ
Çунтарнине тӳсеттĕмĕр.
Пулатчĕ çамрăк сыннăн çӳçĕ
Чарлан çуначĕ пек чăпар...
Эпир чăмланă çăкăр йӳçĕ, –
Тутлисене саккуншăн пар.

Пушкăрт çеçенхирĕнчен килнĕ хура йĕкĕт поэмине вуласа пĕтерет. Тĕлĕннипе малтан никам та нимĕн чĕнеймест. Акă С.В.Элкер диван çинчен тăрать те, йĕкĕт патне пырса, алă парать.

– Маттур, Ухсай, пултаратăн, – тет вăл.

Ун чухне Ухсай Яккăвĕ те халăх поэчĕ ятне илеймен-ха.

Анчах Семен Васильевич шăпах çав кун ăна халăх поэчĕ пулма ырă суннă пек туйăнать.

Халăх поэчĕ... Çук, ку ят ахаль килмест. Ку ята илес тесен, санăн сăвву халăх чĕрине кĕрсе вырнаçмалла, халăх чунне ăшăтмалла, халăх ĕмĕт-шухăшне çунатлантармалла.

Элкер пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен эпĕ ĕнтĕ нумай шухăшланă, вăл çырнисене темиçе хутчен те вуласа тухнă. Халĕ манăн пуçа килнĕ шухăшсене вăй çитнĕ таран йĕркеллĕрех пĕтĕçтерсе калас килет.

Хамăрăн тăван литературăра Семен Васильевич аллă çул ытла ĕçлерĕ. Малтанхи утăмсенчен пуçласах вăл хăйĕн сăввисемпе тăван халăха çĕнĕ пурнăç тунă çĕрте пулăшма ĕмĕт тытнă. Яланах – ĕçпе кĕрешӳре, савăнăçра е инкекре – халăхпа пĕрле пулмалла, халăхшăн унăн ырлăхĕпе телейĕшĕн тăрăшмалла, – пĕтĕм кун-çулĕ тăршшĕпех çак шухăш хавхалантарса пынă С.В.Элкере. Хăй суйласа илнĕ çулпа вăл малтан малалла утрĕ.

Хăй суйласа илнĕ çул... Ку вăл – литература çулĕ, кăткăс та йывăр çул. Çав вăхăтрах вăл чăн-чăн пултарулăх çыннине пысăк хавас та кӳрет. Тăван халăх телейĕшĕн чунтан тăрăшас

С.В.Элкер хăйĕн ĕç пӳлĕмĕнче (1961 ç.)

пĕр çутă ĕмĕтпе ĕçлесе, С.В.Элкер пирĕн литературăра пысăк çитĕнӳсем турĕ, пирĕн паллă та чаплă писательсенчен пĕри пулса тăчĕ.

С.В.Элкерĕн пултарулăхĕ Октябрьти социализмла Аслă революци ирĕке кăларнă çĕр çинче ӳссе çитĕннĕ, вăл чăваш халăхĕн историлле кунçулĕпе, халăхăн çутă малашлăхĕпе тачă çыхăнса тăрать. Элкер хăйĕн пысăк кĕнекисенче халăх кунçулĕн питĕ паллă тапхăрĕсене çутатса пачĕ. Унăн сăввисемпе поэмисенчи, калавĕсемпе романĕсенчи шухăшсем вĕсем – халăх пурнăçĕнчен илнĕ анлă та тарăн шухăшсем, революциллĕ самана сывлăшĕпе хавхаланса çĕкленнĕ шухăшсем.

Нумай ĕмĕр хушши хĕн-хур айĕнче асапланнă чăваш халăхĕ ирĕке тухма ĕмĕтленни, хăйĕн чăн-чăн этемле тивĕçĕпе телейшĕн, политикăлла прависемшĕн тăванла ытти халăхсемпе пĕрле тăрса кĕрешни, çав кĕрешӳре чуралăх сăнчăрне татса ывăтса, ирĕклĕ çĕр çинче коммунизм тума тытăнни – çакна кăтартса парать Элкер хăйĕн кĕнекисенче, çакă пулса тăрать ун пултарулăхĕн ăшчикĕ. Çакă чăн-чăн ирĕклĕх туртăмĕсем унăн поэзине чĕрĕ вăй парса çунатлантараççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ унăн сăвви-юррисем халăх чĕри патне пыраççĕ.

Халăхăн кĕрешӳре иртсе пынă кунçулне пĕтĕçтерсе, поэт çапла çырать:

Паян эс историн мăн çулĕ çинче
Умна та, хыçна та пăхса тĕлĕнен,
Тăван ялусем, хулусем хушшинче
Хăвах чăн хуçа пулнипе хĕпĕртен.

Тăван литературăн малтанхи шурăмпуçĕ çуталса килнĕ чух Константин Иванов мухтаса юрланă çакă çутă тĕнчерен вăйлă этем, пусмăртан хăтăлса, хăй кунçулĕпе ăраскалĕн хуçи пулса тăнине С.В.Элкер çĕнĕ саманара çĕнĕлле кăтартса парать. Çапла сыпăнса пыраççĕ чăваш поэзийĕн паха традицийĕсем.

Элкер пултарулăхĕ чăваш халăхĕн обществăлла пурнăçĕнче, ĕççыннисене, уйрăмах çамрăксене, коммунистла вĕрентсе çитĕнтерес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Писатель-коммунист Элкер хăйĕн произведенийĕсемпе яланах парти ĕçне, патшалăхпа халăх ĕçне туса пынă. Ĕççыннисене поэт, хăйĕн кĕнекисем тăрăх халăхăн иртнĕ йывăр кунçулĕпе паллаштарса, малашнехи çутă кунçула уççăнрах курма пулăшать, вĕсен ĕçри хастарлăхне çĕклет. Çавăнпа та халăх Элкере хăйĕн поэчĕ тесе йышăнчĕ. Вăл – чăннипех халăх поэчĕ.

Аркадий Эсхель.
1974 ç.

ЭЛКЕР САЧĔ

Василий Иванович Давыдов-Анатри 1917 çулта Чăваш АССРĕнче, Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуçĕнче (халĕ Первомайски) çуралнă. Ялти вăтам шкултан, республикăри хаçат шкулĕнчен, Шупашкарти учительсем хатĕрлекен институтран вĕренсе тухнă. Первомайски районĕнчи «Коммунар» хаçат редакторĕ, Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи Радиоинформаци комитетĕнче драма передачисен редакторĕ, КПСС обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн пичет секторĕн инструкторĕ, «Чăваш коммуни» хаçат корреспонденчĕ, Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕ пулса ĕçленĕ.

Унăн йышлă произведенийĕсем хушшинче чи палли «Чеменпе Мерчен» поэма. Вăл – поэт-юрăçă. 1958 çултанпа СССР писателĕсен Союзĕн членĕ. Ăна Халăхсен туслăхĕ орденпа тата медальсемпе наградăланă.

Унăн чăваш тата ытти нумай халăхсен литературăпа искусство, культура ĕçченĕсем çинчен çырнă аса илĕвĕсем нумай. Вĕсенчен пĕрне Василий Иванович мана çак кĕнекене кĕртме хаваспах килĕшрĕ.

Паянхи пек астăватăп: 1932 çулта, çиччĕмĕш класа çӳренĕ чухне, пире чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Вячеслав Павлович Павлов учитель Семен Васильевич Элкер поэт пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен каласа пачĕ те унăн «Хĕн-хур айĕнчи» поэмине черетпе вулаттарма пуçларĕ. Кĕнеке алăран алла куçса пырать. Куç умне тăван халăхăмăрăн авалхи тертлĕ пурнăçĕ, ирĕклĕшĕн кĕрешекен çынсен сăнарĕсем тухатуха тăраççĕ.

– Мĕнле лайăх çырнă. Поэма авторĕ пирĕнпе кӳршĕ Йĕпреç районĕнче çуралнă иккен, – тетпĕр эпир пĕр-пĕрне.

Унтанпа нумаях та вăхăт иртменччĕ, 1936 çулта мана Шупашкарти хаçат шкулне вĕренме ячĕç. Ачаранах сăвăсем çырма тытăннăскер эпĕ хамăрăн Патăрьел районĕн хаçатне те, Шупашкарти «Чăваш коммунипе» «Пионер сассине» те шкул ачисен тата колхоз çыннисен ĕç-хĕлĕ, пурнăçĕ çинчен хыпарласа тăраттăм. Çыравçă ĕçĕ мана питĕ хавхалантаратчĕ. Çавăнпа эпĕ журналист ĕçне вĕренме хавасах пултăм. Çапла пĕрре хамăн юлташпа Пичет çурчĕ еннелле утса пыратпăр.

– Акă вăл, Ваççа, эс тахçантанпах курма ĕмĕтленекен çын – Семен Василеьвич Элкер, – тесе хавхалантарса ячĕ вăл мана.

Тăлпан кĕлеткеллĕ, аллине туя тытнă çын эпир каласнине илтрĕ пулас та тăпах чарăнчĕ.

– Эсир камсем пулатăр-ха? – ыйтрĕ вăл ăшран тухакан сасăпа.

– Эпир – Юхма чăвашĕсем. Кунта хаçат шкулĕнче вĕренетпĕр, – пĕлтертĕмĕр ăна.

Семен Васильевич çавăнтах хаçат шкулĕ çинчен ыйтма пуçларĕ. Эпир, паллă поэт хамăрпа çапла ăшшăн калаçнинчен тĕлĕннĕскерсем, темле вăтантăмăр пулин те, çухалса каймарăмăр, ăна хамăр пурнăç çинчен каласа патăмăр.

Хаçат шкулĕ Володарский урамĕнче, Пичет çуртĕнче вырнаçнăччĕ. Те çавна пула пире час-часах чăваш писателĕсен пухăвĕсене чĕнетчĕç. Çав пухусенче эпĕ Семен Ва-

силеьвич Элкер каланă ăслă та хĕрӳ сăмахсене сахал мар итлесе пуçа хывнă. Вăл çамрăк çыравçăсене яланах пурнăçа çине тăрса вĕренме, ĕçе юратма, тăван чĕлхемĕре тарăнрах вĕренсе, ăна хисеплеме, ăсталăха алла илме чĕнетчĕ. Вăл çынсене чун-чĕререн юратакан, юлташлăха, туслăха хисеплекен писатель пулни пире пурне те савăнтаратчĕ.

1941 çулта эпĕ Первомайски районĕнчи «Коммунар» хаçат редакцийĕнче ĕçлеттĕм. Ун чухне Семен Васильевичран час-час çырусем илеттĕм, Шупашкар хыпарĕсене пĕлсех тăраттăм. Акă, вăл сентябрĕн виççĕмĕшĕнче çырнă хăш-пĕр йĕркесем:

«Ку вăхăтра çемйипех аван пурăнатпăр-ха. Паллакан çывăх çынсенчен чылайăшĕ Хĕрлĕ Çар ретне тухса кайрĕç. Çамрăк писательсенчен Шупашкарта Эсхель, Алагер, Кăлкан, Краснов-Кĕçĕнни, Ястран, Уяр, Агаков çеç юлчĕç... Алка (Бычков) вăрçăран аманса килчĕ. Вăл таврăнни пĕр уйăх патнех ĕнтĕ, халĕ Етĕрне хулинче пурăнать. Унăн алли, пуçĕ тата аякки аманнă... «Ленин çулĕпе» журналсăр пуçне, пур журналсем те, тата вакăрах хаçатсем те тухма пăрахрĕç. «Сунтал» журнал та тухмасть. Вăхăтлăх çеç ку. Вăрçă иртсен вĕсем каллех тухма пуçлĕç...»

Вăрçă çулĕсенче, Шупашкарта пулнă вăхăтра, эпĕ Семен Васильевич патне час-часах кĕреттĕм. Вăл яланах совет халăхĕн вăрçăри паттăрлăхĕ çинчен хавхаланса калаçатчĕ.

– Пирĕн ĕç – тĕрĕс ĕç. Эпир хаяр тăшмана, фашизма çĕнтеретпĕрех! – тетчĕ. Пĕррехинче вăл Белорусси халăх поэчĕ Янка Купала çула май хăй патĕнче чарăннине асăнчĕ.

– Фашистсем Янка Купала çĕршывне, Белоруссие, çунтараççĕ. Пирĕн тăван çынсене тертлентереççĕ, хĕн-хур кăтартаççĕ, тискеррĕн вĕлереççĕ. Ватă поэтăн çавăнпа хăй çуралнă кĕтесрен, хăй пурăннă çуртран ирĕксĕрех тухса кайма тивнĕ. Хăрушă япала. Поэт пуриншĕн те кулянать. Вăл совет халăхĕн

вăйне пĕтĕм чунтан ĕненет, хамăр çĕнтерессе çирĕп шанса тăрать. Чăваш писателĕсем Купалăна чăн-чăн çывăх тăван вырăнне хучĕç, ăна пур енĕпе те пулăшма тăрăшрĕç. Поэт Шупашкартан тухса кайнă чух чăваш халăхне пĕтĕм чун-чĕререн тав турĕ. Аван çын, пысăк поэт Янка Купала, – терĕ Семен Васильевич.

Пирĕн туслăх ӳссе, вăй илсе пычĕ. Эпир пĕр-пĕрин патне хăнана та çӳреттĕмĕр. 1960 çулхи ноябрь уйăхĕнче Шупашкара тутарсен паллă поэчĕ Шараф Мударрис килнĕччĕ. Семен Васильеивч пире хăй патне хăнана чĕнчĕ. Чылайччен калаçса лартăмăр. Эпир Мударрисран Хасан Туфан, Ахмет Ерикеев, Ахмет Файзи тата ытти тутар поэчĕсем çинчен ыйта-ыйта пĕлтĕмĕр. Габдулла Тукай, Хади Такташ, Муса Джалиль сăввисене вуларăмăр.

Шараф Мударрис чăвашла та лайăх калаçатчĕ. Вăл Семен Васильевич килĕнчен тухса кайнă чухне чăвашсен авалхи «Айтăрах каяр çĕнĕ çĕре» юррине юрласа пачĕ.

Тутар поэчĕ юрланă çак юрра Семен Васильевич каçса кайса итлерĕ, Мударриса тав турĕ. Тухса каяс умĕн чăваш халăх поэчĕ Мударриспа иксĕмĕре те хăйĕн сăввисемпе поэмисен кĕнекине парнелерĕ. Мана панă кĕнеке хуплашки çине: «Василий Иванович Давыдова, кĕнекен редакторне, чĕререн хисеплесе-асăнмалăх», – тесе çырса хучĕ.

1958 çулхи кĕркунне эпир Семен Элкер, Илпек Микулайĕ, Иван Кузнецов, Александр Янташ, коллективлă сад ӳстерекенсен пĕрлешĕвĕн членне кĕтĕмĕр. Пирĕн сад Лакрей вăрманĕ çумĕнче. Семен Васильевич çак садра пĕрмаях тăрăшса ĕçлетчĕ. Ăна хăйĕн мăшăрĕ, Евдокия Алексеевна, яланах:

– Çитĕ ĕнтĕ, Семен, канма та пĕлместĕн, – тетчĕ.

Семен Васильевич ун çине ăшшăн пăхса илетчĕ те:

– Çук, чун чăтмасть, ĕçлесех килет. Хамăр алăпа ӳстернĕ йывăçсем кашласа ларнине хăвăртрах курасчĕ-ха, – тетчĕ.

Чăнах та вăл кĕске вăхăтрах нумай ĕç турĕ. Ун садĕнче

панулми, чие, хурлăхан, торн, крыжовник, хăмла çырли йывăççисем таврана илем кӳме пуçларĕç.

Нихçан та манас çук: пĕр çулхине Семен Васильевич сад хыçĕнчи çырмана йăмра, çăка, шĕшкĕ, вĕрене йывăççисем илсе килсе лартрĕ.

– Эпĕ вăрман айĕнче ӳснĕ чăваш. Маншăн çак йывăççем питех те хаклă: йăмра хӳтлĕх парать, çырана ишĕлесрен сыхлать, шĕшкĕ мăйăрĕпе савăнтарать... Илемĕ мĕн чул тата! – терĕ.

Çав йывăççем пĕлĕтелле кармашма тытăнсан, пĕрле савăнаттăмăр. Поэт лартса ӳстернĕ сада кĕрсен, пирĕн ума ешĕл палăк тухса тăнăн туйăнатчĕ.

1964 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче эпир, республикăри литературăпа искусство деятелĕсем, Чăваш писателĕсен союзăн çуртне Семен Василеьвич Элкер çурални 70 çул çитнине чыслама пухăнтăмăр. Ĕçри тусăмăрсем поэт ячĕпе ăшă сăмахсем каларĕç. Семен Василеьвича телейлĕ кун-çул, ырлăхсывлăх сунса килнĕ саламсене вуласа пачĕç. Эпĕ те поэта халалласа çырнă çак сăвва вуласа парнелерĕм:

Семен Васильевич Элкер мăшăрĕпе Евдокия Алексеевнапа тата мăнукĕпе.

Наш кряжистый чувашский дуб
Семен Васильевич Эльгер – наш друг,
Прекрасен дружеский наш круг.
Подснежником весной родился,
И в люди добрые пробился.
В руке всегда перо скрипит,
И труд твой, знай себе, кипит.
Шумит листвой зеленый сад,
И ты ему душою рад.
Ты, жизнью преданный народу.
Удачи и словесных мук,
Наш кряжистый чувашский дуб.

Семен Васильевич çак чыса чăннипех те тивĕçлĕ çынччĕ. Вăл пĕтĕм пурнăçне, вăй-халне тăван çĕршывăмăра, хамăр юратнă халăхăмăра парнелерĕ.

Кунсем, çулсем иртрĕç. Элкер пирĕнтен пурнăçран малах уйрăлса кайрĕ. Эпĕ те ĕнтĕ 92 çула çитрĕм. Анчах та эпир хамăрăн юратнă поэтăмăра, сăпайлă та ырă чунлă çынна, пултаруллă та ĕçчен Семен Васильевич Элкере, ĕмĕрех хамăр чун-чĕрере усрăпăр.

Василий Давыдов-Анатри,
Раççей тата Чăваш АССР культурисен
тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.
2009 ç.

ÇИЧ ÇĂЛТĂРТАН ЧИ ÇУТТИ

Михаил Николаевич Ильин-Юхма 1936 çулта, Чăваш АССРĕнчи Патăрьел районĕнчи Сăкăт ялĕнче çуралнă. Патăрьелĕнчи вăтам шкулта, Шупашкарти И.Я.Яковлев ячĕллĕ педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Республика краеведени музейĕнче, вăтам шкул учителĕнче, ЧАССР Министрсен Совечĕн пай инспекторĕнче, Чăваш кĕнеке издательствинче ĕçленĕ. Нумай çул хушши Пĕтĕм чăвашсен обществăпа культура центрне тата Чăваш писателĕсен Союзне ертсе пырать. Обществăпа политика деятелĕ. Чăваш халăхне И.Я.Яковлев çулĕпе ертсе пыракан ăсчахсенчен чи хăватлă те чи ăнтараканни. Чăваш халăхĕшĕн калама çук вăйлă ĕç тунă, çав ĕçе ывăнмасăр чунтан тăрăшса, чăваш халăхне тĕнче шайĕнче илемĕпе, пултарулăхĕпе чапа кăларассишĕн вăй-халне шеллемен ăсчах.

Илем пултарулăхĕ унăн аллăмĕш çулсенче пуçланнă. 1964 çултанпа – СССР писателĕсен Союзĕн членĕ. Ку таранччен 200 ытла кĕнеке кăларнă. Вĕсенчен пурте тенĕ пекех – чăваш халăхĕн историйĕ, культури паянхи кунпа аталануллăн çыхăнса тăни çинчен. Унра чăваш халăхĕн ăс-тăнĕ, ĕçченлĕхĕ, тăванлăх çыхăнăвĕ никамăннинчен те ытларах та вăйлăрах тапса тăрать. Ăна эпĕ хăйпе пĕрле Чăвашсен обществăпа культура центрĕнче алла-аллăн тытăнса ĕçленĕ вăхăтранпах аван пĕлетĕп. Вăл нумай-нумай талантлă чăваш ывăлĕпе хĕрне пултарулăх çулĕ уçса пачĕ, чăрмавсене сирсе вĕсене çĕкленме пулăшрĕ. Хăйĕн наци аталанăвĕн çĕнелӳ ĕçне никама пăхăнмасăр, никамран хăрамасăр, ăслăн та тӳррĕн вăйлатса пырать.

1.

Çӳл тӳпере çич çăлтăр,
Çич çăлтăр та çут çăлтăр,
Çич çăлтăртан чи çутти
Элкер çăлтăр тесеччĕ.

Чăвашра поэт нумай,
Кашни поэт – çут çăлтăр,
Поэтсенчен чи чапли
Пирĕн Элкер пиччеччĕ...

Çапла çырнăччĕ эпĕ хам кун кĕнекине тасаран та таса кăмăллă, ырăран та ырă чĕреллĕ Семен Васильевич Элкер пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайсассăн.

Унтанпа 43 çул çитет.

С.В.Элкере Шупашкара вĕренме килсен, çамрăк çыравçăсен съездĕнче пуçласа курнăччĕ. Ун чухне Чăваш АССР Писателĕсен союзĕн председательне А.Ф.Талвира суйланăччĕ. Союзра çамрăк çыравçăсене чи хаклă çынсем пек кĕтсе илетчĕç. Вĕсене хавхалантарма ятарласа съезд ирттереççĕ! Вăл Советсен çурчĕн Аслă залĕнче пулчĕ.

Лайăх ас тăватăп: С.В.Элкер малти ретре ларать. Эпир, çамрăксем, шур сухалсем çине тĕлĕнсе пăхатпăр, вĕсен кашни сăмахне тимлесе итлетпĕр. Те вăхăтра сăмах паманнипе – В.Урташ кăшкăрашма тытăнчĕ. Сасси вăйлăччĕ унăн. Съезда ертсе пыракансем Урташа чарас тесе апла та, капла та каласçĕ. Çук, итлемест çакскер. Вара С.В.Элкер туйи çине таянса тăчĕ те ун патне уксахласа пычĕ. Шăппăн кăна темиçе сăмах каларĕ.

– Юрĕ, юрĕ, – терĕ Валентин, урăх пĕр сăмах каламасăр залран тухса кайрĕ.

Акă мĕнле пысăк хисепреччĕ Семен Васильевич. Ун умĕнче эпир кăна мар, çитĕнсе çитнĕ, писатель ятне илнĕ çыравçăсем те шăппăн, яланах йĕркеллĕн калаçатчĕç.

2

Эпир, темиçе студент, Ярославль урамĕнчен тухăçалла, Хайпăлкка шывĕ еннелле кĕрсе каякан пысăк мар тăкăрлăкри йывăç çуртра пурăнаттăмăр.

Тăкăрлăкран Ярославль урамне тухса çул урлă каçсен уйрăм йывăç çурт пурччĕ. «Элкер çурчĕ», – тетчĕç ăна пĕлекенсем.

Чăнах та, эпир çав çурт таврашĕнче васкамасăр утса çӳрекен Семен Васильевича темиçе те курнă. Анчах патне пырса калаçу пуçлама вăтанаттăмăр.

3

Семен Васильевичпа пĕрремĕш хут калаçасси 1958 çулта пулчĕ. Питĕ хытă тапăнчĕç çавăн чухне пуçлăхсем А.Ф.Талвира. Партирен, писательсен Союзĕнчен кăларчĕç, тĕрмене лартассипе хăратрĕç. Алексей Филипповича пулăшас, ăна хӳтĕлес тесе пуçлăхсем патне çыру çыртăмăр. Хамăр кăна мар, ятлă-сумлă çынсене те алă пустарса Верховнăй Совета ярса парас терĕмĕр.

Чи малтан кам патне каяс? Паллах, А.Ф.Талвирăн мĕн çамрăкран çывăх юлташĕ пулнă, Мускавра та пĕрле вĕреннĕ, пĕрле ĕçленĕ Чăваш халăх поэчĕ пире çак ĕçре пулăшмалла ĕнтĕ. Ăна халăх поэчĕ ят парас тĕлĕшпе Алексей Филиппович питĕ тăрăшнине те пĕлетпĕр.

Анчах эпир кайнă поэт хăй юлташне пулăшма килĕшмерĕ.

– Юрамасть! Обкома хирĕç каймалла мар! – терĕ вăл тарăхса.

«Мĕн тумалла?» – аптраса ӳкрĕмĕр эпир. Чылайччен шухăшланă хыççăн С.В.Элкер патне каяс терĕмĕр.

Семен Васильевич пирĕн çырăва вуласа тухрĕ те тӳрех: «Инкеке лекнĕ юлташа пулăшас пулать», – терĕ. Алă пусрĕ те А.Алка патне шăнкăравларĕ, пире пулăшма ыйтрĕ.

Пирĕн çыру айне вара А.Алка та, паллă ытти çыравçă та алă пусрĕç.

Çавăнтанпа эпир Семен Васильевичпа туслашса кайрăмăр.

1956 çулта эпĕ Куславккари фургон тăвакансен завочĕн пионер лагерĕнче вожатăйра ĕçленĕччĕ. Ман отрядра Семен Васильевичăн ывăлĕ Петя та пулчĕ. Çакă та пире унпа тата ытларах çывăланма пулăшрĕ.

4

Семен Васильевич мана хăйĕн ывăлĕ пекех куратчĕ. Хула урамĕсем тăрăх васкамасăр утса çӳренĕ май мĕн çинчен кăна калаçман! Манăн «Элпи чечекĕсем» кĕнеке ăна питĕ килĕшетчĕ. Эпĕ чăваш халăх историне, халăх пултарулăхне тĕпченишĕн, аваллăх халапĕсене пуçтарнишĕн питĕ савăнатчĕ. Семен Васильевич тăван халăха, тăван чĕлхене чун-чĕрипе юрататчĕ. Çаксем çинчен эпĕ хăй вăхăтĕнче «Имена улиц твоих, Чебоксары» кĕнекере, «Улица звездного человека» тата «Янка Купала в Чебоксарах» очерксенче тĕплĕн çырса кăтартнă. Белоруссен аслă та чаплă поэчĕпе Янка Купалăпа Семен Васильевич 1939 çулта Мускавра паллашса туслашнă. Ун чухне эрменсен «Сасун Давичĕ» эпосĕ пин çул тултарнине уявлама Совет Союзĕпех хатĕрленнĕ. Чи пысăк уявĕ Ереванра иртмелле пулнă. С.В.Элкерпе Янка Купала Мускавран Еревана пĕрле кайнă, питĕ çывăх туссем пулса тăнă. 1941 çулта вара, фашистсем пирĕн çĕршыв çине тискеррĕн кĕрсе кайсан, Янка Купала хăйĕн тусĕ патне Шупашкара килнĕ. Семен Васильевич ăна тăванĕ пекех кĕтсе илнĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсен вĕçĕнчен пуçласа чăваш чĕлхине хĕсме пуçларĕç. Ачасене пĕрремĕш класранах вырăсла вĕрентме тытăнчĕç. С.В.Элкер тăван чĕлхене хӳтĕлесе парти обкомне пысăк çыру çырчĕ. Çавăн хыççăн хаçат-журналта Семен Васильевич хайлавĕсене пичетлеме мар, унăн ятне асăнма та чарнăччĕ. Çакă пире, çамрăк çыравçăсене, питĕ тĕлĕнтернĕччĕ.

5

1964 çул. Эпир мăшăрпа Шупашкарти 6-мĕш шкулта ĕçлеттĕмĕр. Пĕтĕм çемьепех, икĕ ачапа, шкул çуртĕнчех пур-

ăнаттăмăр. Унтан та хуса кăларма тытăнчĕç. Нимĕн тума çуккипе обкома кайса пăхас терĕм. Обкомăн пĕрремĕш секретарĕ С.М.Ислюков йышăнчĕ, пулăшма пулчĕ. Ун патĕнчен тухрăм та виççĕмĕш хутран анатăп. Туйи çине йывăррăн пусса Семен Васильевич хăпарать.

– Хуçапа калаçса пăхас терĕм. Эпĕ çырнă хайлавсене вĕренӳ кĕнекисенчен те кăларса пăрахма тытăннă, – тет.

Семен Васильевич Советсен çуртĕнчен тухасса кĕтетĕп. Ислюков мĕн каланине пĕлес килет. Чылайччен утса çӳрерĕм, çапах та кĕтсе илтĕмех. Семен Васильевич кăмăллă.

– Эх, Мишша, ачам, – терĕ çавăн чухне Семен Васильевич, – тăван чĕлхене те хӳтĕлеме пĕлмелле çав. Чĕнмесĕр тăрсассăн пĕтереççĕ кăна мар, хăвна та ним юлми таптаса каяççĕ. Хуçана ĕнентерĕм пек-ха. Кăмăллах калаçрĕ. Ара, чĕлхе пĕтсен кам пулса юлатпăр-ха эпир?.. Тăван чĕлхине çухатнă халăх вăл сурăх кĕтĕвĕ пекех!..

Семен Васильевича килне çитиех ăсатса ятăм.

6

Вăрçă хыççăн пирĕн ялта, Сăкăтра, Ентимер урамĕн вĕçĕнче çĕр чавса тунă пӳртре аманса-сусăрланса пĕтнĕ пĕччен çын пурăнатчĕ. Мĕнле килсе лекнĕ вăл пирĕн яла, халĕ ас тумастăп. «Упакасси» тесе чĕнетчĕç ăна çынсем.

Вăл чăнах та Упакассинче çуралса ӳснĕ-мĕн.

«Упакасси – Элкер ялĕ!» – хăйсем пĕлнипе мухтанса калаçатчĕç пысăккисем.

Пĕрремĕш хут эпĕ Йĕпреç районĕнчи Пысăк Упакассинче 1990 çулта пулнăччĕ. Кăçал нумаях пулмасть тепре кайса килтĕмĕр. Хусанти чăваш пукане театрĕн режиссерĕ, Чăваш Республикин Писательсен союзĕн членĕ В.С.Бисякова çак ялта çуралса ӳснĕ. Вăл пирĕн «Аттил» издательство кăларнă кĕнекесене тăван шкулне парнелес терĕ.

Упакасси С.В.Элкер ялĕ пулни кашни утăмрах курăнать. Шкулĕ поэт ячĕпе хисепленет. Шкул умĕнче питĕ хитре палăк. Кунтах С.В.Элкер музейĕ. Тĕлĕнмелле чаплă, пуян музей.

«Пирĕн яла С.В.Элкер упраса пурăнать, – теççĕ ял çыннисем. – Кирек мĕнле йывăрлăх пулсассăн та пуçлăхсемпе калаçнă чухне Элкер ятне асăнатпăр. Çакă пулăшать...»

Элкер ячĕ, чăнах та, яла çити çул тума та, клуба тытса тăма та, шкула упрама та пулăшни çинчен питĕ савăнса каласа пачĕç ял çыннисем.

7

С.В.Элкер пирĕнтен уйрăлса кайсан çырнă сăввăма эпĕ çак йĕркесемпе вĕçленĕччĕ:

Кашни поэт тăван пек,
Тăван пек те пичче пек.
Анчах Элкер пирĕншĕн
Тăван атте пекехчĕ...

С.В.Элкер пирĕншĕн, ун хыççăн литературăн асамлă пахчине пырса кĕнĕ çыравçăсемшĕн кăна мар, кашни чăваш çыннишĕнех яланах тăван атте пекех пулнă. Паян та çаплах. Унпа тĕл пулни, унпа калаçни яланах асра. Поэтăн кашни сăмахне ĕнер кăна калаçнă пек ас туса тăратăп.

Юхма Мишши,
Чăваш халăх писателĕ. 2009 ç.

АСĂМРА МĂНАÇЛĂН ЮЛЧĔ

Николай Лукич Яковлев Чăваш АССРĕнчи Элĕк (халĕ Муркаш) районĕнчи Актай ялĕнче, 1925 çулта çуралнă. Чирлĕ ашшĕ çамрăкла вилнĕ пирки ăна амăшĕпе ама çури ашшĕ Яков Кондратьев пăхса ӳстернĕ. Ыттти ачисем пекех, 7-10 çулсенчех колхоз ĕçне кӳлĕннĕ. Панклейри тулли мар вăтам тата Юськассинчи вăтам шкулсенчен вĕренсе тухсан, ял Совет секретарĕнче ĕçленĕ. 1943 çулта ăна фронта илнĕ. Зенитчиксемпе артиллеристсен дивизионĕнче Яковлев старшина нимĕç фа-

шисчĕсемпе паттăрăн çапăçнă. Çичĕ çул çурă çар службинче пулнă хыççăн, нушаллă пурнăçрах вăл вĕренес шухăша вăйлатсах пырать, 1956 çулта Шупашкарти ӳнер училищинчен ăнăçлă вĕренсе тухать. Çамрăк художникăн пултарулăхне асăрханă пуçлăхсем Николай Яковлева «Капкăн» журнала ĕçлеме илеççĕ. Сатира графикипе вăл 35 çул тертленсе, хавхаланса ĕçлет. СССР художникĕсен Союзĕн членне кĕме тивĕçлĕ пулать. Ăна Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятне параççĕ.

Йывăрлăха çирĕппĕн чăтса ирттерме пултаракан хурçă пек этем вăл – Николай Лукич. Пусахлама пуçланă чир-чĕре парăнтарса, малалла талпăнать. Спортпа туслă. Уншăн 30-35 çухрăм вĕçĕмсĕр утасси – чун кантармăшĕ çеç. Мускавра пулса иртнĕ тĕнче марафонĕсенче (42 км та 195 м.) ултă хутчен чупса, чăтăмлăн финиша тухнă, спорт парнисене илнĕ.

Пенсие тухсан та ахаль ларман. Кĕçĕн Панклире историпе краеведени музейĕ йĕркеленĕ, ăна хăй халĕ те чун хавалĕпе тытса пырать. Хăйĕн «пĕчĕк çĕршывĕн» мухтавлă сыннисем çинчен кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларать. Художник та, журналист та, паллă ăсчах та вăл.

«Капкăн» редакцийĕнче Николай Лукичпа ĕçлеме кăмăллăччĕ. Унăн кăмăл-туйăмĕ яланах тĕрĕслĕхшĕн, пурнăç илемĕшĕн çунатчĕ. Халĕ те ватăлма пĕлмест, ăстаçă, Маçтăр.

Паян, Семен Васильевич Элкер çуралнăранпа 115 çул тултарнине паллă тунă çĕре Константин Васильевич Иванов ячĕллĕ литература музейне чĕннĕшĕн эпĕ çав тери хĕпĕртерĕм. Эпĕ – художник, писатель мар пулин те, илем тĕнчинче сыравçăсемпе пĕр кимĕрех ишетĕп тесе шутлатăп. Мĕншĕн тесен пирĕншĕн пуриншĕн те шкулта вĕреннĕ вăхăтранах литература ăшра, ăс-тăнра.

Эх, анне çĕлесе панă пир сумккăна кĕнеке-тетрадь, хырăм выççи кучченеçĕ чиксе шкула чупатăп вун иккĕрискер. Çирĕммĕш ĕмĕр пуçланнăранпа ялти пурнăç тин кăна йĕркене кĕрсе, халăх сăн-питĕнче хĕвеллĕ кулă йăлкăштарма тытăннăччĕ. Анне те, атте те хаваспах колхозра ĕçлеççĕ. Эпир те вĕсене уйра пулăшатпăр. Хаçатсем, кĕнекесем нумай кăларма пуçланăччĕ. Шкулти кĕнеке пуххинчен эпĕ те «Вăрçă кунĕсем» ятлăскерне киле хĕстерсе çитрĕм. Сасăпах вуласа ларатăп. Атте, Яков Кондратьевич Кондратьев, ăна эпĕ икĕ çул çурăранах атте тесе ӳснĕ, вăл та мана хăйĕн аннепе пĕрлешичченхи ачисемпе пĕр тан пăхнă, империализм вăрçинчен аманса таврăннăччĕ, унăн III степеньлĕ Георги хĕресне хамăн пир кĕпе çине те çакса салтакланнăччĕ. Итленĕ май пуçне кăтăрт-кăтăрт хыççа илчĕ те ман итлекенскер, тăрук ура çине сиксе тăчĕ, манран хуллен ыйтрĕ:

Яков Кондратьевич Кондратьев. 1950 ç.

– Тăхта-ха, тăхта, Микулай, – терĕ вăл. – Эп вăрçăра çапăçнă вырăнсене куç умне тухса тăмалла каласа парать-çке ку çын, хăй те австро-венгрсемпе, нимĕçсемпе çапăçнă пать... Алексей Цесаревич ячĕллĕ полкранах... Вăрçă пăтти мĕнле сиксе вĕренине эп те, вăл та куçпа курса, тӳссе ирттернĕ-ха. Кам пулать-ши вăл, пĕлесчĕ. Хăлхара вăрçă сасси янăраса кайрĕ...

Эпĕ аттене 1937 çулта тухнă кĕнекене кам çырнине, вăл Çемен Элкер писатель пулнине пĕлтертĕм.

– Элкер тени хушма хушамат анчах пуль-ха, чăн-чăн хушамачĕ Васильев, Семен Васильев. Пĕр полкрах тăнă, пĕрле çапăçнă тăшманпа. Эпир те хытă тӳнккерĕмĕр те австро-венгрсене, вĕсем те пире нателă ăшаларĕç. Эпĕ темле майпа вилĕмрен çăлăнса юлма май çитертĕм, Васильев вара, аман-

нăскер, вăрçă хирĕнчех выртса юлнă, тăшман аллине лекнĕ. Юрать-ха ăна çавăнтах тĕп туман, тыткăнра сыватса каллех çын тунă. Йĕпреç енчен, Пысăк Упакассинчен иккен. Чăвашсем пирĕн полкра чылайччĕ çав. Ай, хăйпе курса калаçасчĕ пĕрре...

Ача, паллах, вăл вăхăтри тĕнче историне пĕлмен. Ашшĕсем акă мĕншĕн тата камшăн юн тăкнă империализм вăрçинче.

Ĕмĕрĕ-ĕмĕрĕпех патшалăхсем пуç пулса тăма хăтланнă. Пĕччен вăй çитереймесен, темиçен эртеллешсе килĕшӳсем тунă: 1907 çул тĕлне çапла Анăçра антантăсем çуралнă. Антанта сăмах француз чĕлхинчен килĕшӳ тесе куçарăнать. Çавнашкал килĕшӳ-антанта 1907 çул тĕлнелле Великобритани, Франци тата Раççей хушшинче çирĕпленсе çитет. Унăн тĕп тĕллевĕ – Германипе Австро-Венгрин империалистла каппайчăклăхне пусарса лартасси пулнă. Çапла 1914 çулта империализм вăрçи пуçланать. Антантăна майлă çирĕме яхăн патшалăх вăрçа хутшăнать. Патша правительстви хăйĕн чи вăйлă çарĕсене унта янă. А.А.Брусилов камантлакан 8-мĕш çар Галицире çĕнтерӳ тунă, çав çарта 1-мĕш Туркестан корпусĕ палăрнă. Унта чăвашсем те йышлăн çапăçнă. Кăнтăр-Хĕвел анăç фрончĕн командующине лартнă хыççăн Брусилов çар вăййинче тепĕр ăнăçлă çĕнтерӳ тăвать – тăшманăн Хĕвел тухăç фронтне сарлакан татса шалалла кĕрет. «Брусиловский прорыв» тесе ят

Акă вĕсем – Туркестан корпусĕнчи Раççей çарĕн паттăрĕсем. Семен Элкер те вĕсен ретĕнче пулнă.

параççĕ вара çар çыннисем ăна – чаплă операцие. Çавăнта Туркестан корпусĕ, пĕрле чăвашсен полкĕ те, Фат генералăн ушкăнне Стоход юхан шывĕ леш еннелле хăваласа салатнă, шыв урлă каçса, шурлăхсенче пута-пута çапăçнă, 12 пин австриеца, нумай çар техникине çавăрса илнĕ. Кунти çапăçусем нимĕçсен вăйне палăрмаллах хавшатнине хăйсен генералĕсем те йышăннă. Брусилов çарĕнче çапăçнă чăвашсем вырăс хĕçпăшалĕн чысне татах та çӳлерех çĕкленĕ. Вĕсен аслă ертӳçи Брусилов генерал Октябрь революцийĕ çĕнтернĕ хыççăн Хĕрлĕ Çар ретне куçнă, çамрăк Совет республикине тăшмансенчен хӳтĕлесе хăварассишĕн нумай пулăшнă. Вырăс çарĕн мухтавлă полководецĕ 1926 çулта вилнĕ.

Ку юрĕ-ха, Раççейĕн аваллăхри хăватне, вырăс çарĕн, ун шутĕнчи чăваш салтакĕсен – пирĕн асаттесемпе асаттесен паттăрлăхне аса илни никама та пăсмĕ терĕм. (В.К.)

Ачаранах манăн ӳкерчĕксем тăвас килетчĕ. Вĕреннĕ чухне те, ĕçрен каннă вăхăтра та кăранташпа е сăрăпа хамăн куç тĕлне пулнине хут çинче хăварма тăрăшаттăм. Çар хĕсметĕнчен таврăнсан тин ӳнер училищине вĕренме кĕтĕм. Программăпа ятарлă ӳкерчĕксем нумай тумаллаччĕ. Хам пуçра çуралнисене те сăрмаклаттăм. Атăл çыранне тухса ларатпăр та... Канма е уçăлма, шухăш çуначĕ вĕçтерме тухнă çынсем хушшинче эпĕ вăтам пӳллĕ, кĕрнеклĕ, шукăль тумланнă ватах мар арçынна час-часах асăрхама пуçларăм. Вăл туйи çине сылтăм аллипе таянса, илемлетнĕ чул карта çуммипе васкамасăр тăвалла хăпарать те анаталла анать, унтан юхан шыв тăрăх каллĕ-маллĕ шăвакан пăрахутсене, сип-симĕс йăлăма сăнать. Тепĕр чухне унпа пĕрле хăй пекех типтерлĕ çынсем ытлашши шавламасăр калаçса, ăшшăн кулкаласа çӳретчĕç. Çак çыннăн сăнарĕ майĕпенех манăн ăс-тăна çапрĕ, хăйпе калаçса паллашас килсе кайрĕ. Эпĕ вара вăтана-вăтанах ун патне çывхартăм, сăмах пуçартăм:

– Здравствуйте!

– Ырă кун пултăр, çамрăк çыннăм! Мĕн ыйтупаччĕ? – тăпах чарăнчĕ вăл ман çине ăшă куçĕпе пăхса.

– Эсир Çемен Элкер-и? Кĕнекери ӳкерчĕкри пекех те...

– Çавă пулатăп. Пичет çуртĕнче хут тусанĕпе чыхăнса ывăнатăп та, уçă сывлăшпа чуна уçăлтаратăп кунта килсе, – манăн этюдник çине тиркевлĕн пăхса хăйне палласа илчĕ Семен Васильевич. Калаçнă май эпĕ ăна хамăн атте пирки пĕлтертĕм. Хăй унпа пĕр полкра çапăçнине пĕлсен, вăл питĕ хавасланса ӳкрĕ, унпа курса калаçасшăн пулчĕ, фронтовикла пысăк салам калама хушрĕ.

Яла çитсен эпĕ ку тĕлпулу çинчен аттене пĕлтертĕм, вăл та хĕпĕртерĕ. Анчах ватă салтаксен пĕр-пĕринпе куçран-куç пăхса вăрçăн йывăр саманчĕсене аса илесси пулмарĕ.

Семен Васильевич Элкер... Чăваш халăх поэчĕ. Каярахпа манăн унпа, хам «Капкăн» журналта ĕçлеме пуçласан, Пичет çуртĕнче тăтăшах тĕл пулса калаçма тӳр килнĕччĕ. Хушăран Яков Кондратьевăн сывлăхĕ мĕнли çинчен ыйтса пĕлетчĕ. Яланах унран ырă канаш илтнĕ эпир. Пире ăнăçу сунатчĕ. Ӳкерчĕкне тăрăшсах турăм темелле пек. Чăвашсен мухтавлă çынни ман асăмра çакнашкал юлчĕ.

1938 çулта Çемен Элкерĕн «Унтри» калавĕ пичетленнĕччĕ. Эпир ăна вуласа шкулта вĕреннĕ. Шкул программине, чăваш литератури кĕнекине кĕртрĕç ăна.

Ӳнер училищин виççĕмĕш курсĕнче вĕреннĕ вăхăталла пирĕн маçтăрлăх класне арçынсемпе хĕрарăмсем хăйсен çара кĕлеткине ӳкерттерме çӳретчĕç. Пулас художниксем умĕнче вĕсем, чухăнлăха пула, çăкăр туянмалăх укçашăн сехечĕ-сехечĕпе хускалмасăр тенĕ пек ларатчĕç. Натурщиксем хушшинче мана пĕр арçыннăн кĕлетки килĕшрĕ. Калаçса кайрăмăр. Ку Шупашкар районĕнчи Андрей Александров пулчĕ. «Эпĕ «Унтри» калавăн тĕп геройĕ», – тесе тĕлĕнтерчĕ вăл мана. Писатель хăйĕн калавне мĕнле сăнарласа çырни çинчен аса илчĕ. Эпĕ вара, асăнмалăх тесех, чăн-чăн Унтри портретне те ӳкертĕм.

Семен Васильевич хăй вăхăтĕнчи нумай писательпе çывăх, туслă пулнă. Вĕсенчен пĕри вăл – Николай Иванович Полоруссов-Шелепи. Хăйĕнчен аслăрах юлташĕ çинчен Элкер

1936 çулта «Канаш» хаçатра «Паллашу тапхăрĕсем» статья пичетлесе кăларнă. Вĕсем пĕр-пĕрин пултарулăхне сăнасах тăнă. 1981 çулхи çуркунне чăваш халăхĕн пĕрремĕш поэчĕн Николай Шелепин 100 çулхи менелникне паллă турĕç. Эпир те, капкăнçăсем, аякра юлмарăмăр. Журнал валли чăваш писателĕсен сăнĕсене хăватлă юман йĕкелĕсем пек туса ӳкертĕм: 31 гени. Вĕсенчен чи аялти тураттинче –

Çемен Элкер. Шелепи хăйĕн юман шерепине чăваш çаранĕн сывлăм шывĕпе шăварать. Шелепи шерепине малалла Элкер шăварса пычĕ.

Николай Яковлев,
ЧР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.
2009 ç.

Шелепин шерепи

ИКĔ ХУТЧЕН ПАЧĔÇ

Михаил Алексеевич ВАСИЛЬЕВ Вăрнар районĕнчи Айкăш ялĕнче 1939 çулхи кăрлачăн 28-мĕшĕнче çуралнă. Ашшĕ учитель пулнă. Тăван çĕршыв Аслă вăрçинче нимĕç фашисчĕсемпе çапăçса пуçне хунă. Амăшĕ ачисене вара хăй çуралнă Мăн Явăш ялне илсе кайнă. Ашшĕсĕр çăмăл пулман вĕсене вăрçă вăхăтĕнчи тата хыççăнхи нушаллă пурнăçра. Ачаранах ял ĕçне хутшăнма тивнĕ. Темле йывăр килсе тухсан та амăшĕ ывăлне вăтам шкул пĕтерттеретех. Миша кӳршĕри Кĕçĕн Кипеке тантăшĕсемпе çурран çӳренĕ пĕлӳ илессишĕн.

Салтак ячĕ тухсан Михаил Васильев Тинĕс-Çар флотне службăна лекет. Çурçĕр флочĕн Североморскри тинĕс-çар базинче вăй-халне, кăмăл-туйăм хăватне моряксен çемйинче туптать.

Килĕнче вĕсен вуламалли кĕнеке нумай пулнă. Пĕчĕкренех вара вăл литература тĕнчине ăнтăлса кĕрсе ӳкет. Хавхалану ăшри сăнарлăх вутне чĕртсе ярать. Сăвăсем çырма пуçлать. Мăн Явăшри Алексей Воробьев, хăйсен колхозĕнче агрономра ĕçлекенскер, пултаруллă ачан хайлавĕсене хакласа, вĕсене пичетлеме сĕнет. Çапла Чăвашра паллă поэт çумĕнче çĕнĕ калча шăтса тухать – Муза калчи.

Эпĕ çартан Мишăран маларах таврăннăччĕ те, районти «Социализм çулĕпе» хаçат редакцийĕнче ĕçлеттĕм. Редакторĕ, Петĕр Ялгир поэт, литература кружокне вăйлăн аталантарса янăччĕ. Çавăнта эпир флотран ярса панă Михаил Васильев аслă матросăн сăввисене те эртелпе шĕкĕлчесе тухнăччĕ. 1962 çулта акă хăй те тăван ялне перçе çитрĕ. Редакцие матрос формипех лăпкăн, кăшт именереххĕн пырса кĕчĕ. Пĕрле ĕçлеме пуçларăмăр. Çывăх туслашса кайрăмăр. Кĕçĕн чинран пуçласа Васильев хаçат редакторĕ таран ӳсрĕ.

Пĕррехинче Михаил Алексеевич ман пата Шупашкара шăнкăравларĕ: «Мана, Володя, тĕрмене хупрĕç». «Мĕнле тĕрмене?» – хыпăнса ӳксе тĕлĕнтĕм. «Парти тĕрминче», – кулса ячĕ тусăм. Ăна КПСС Вăрнар райкомĕн иккĕмĕш секретарьне суйлаттарнă иккен обком. Мĕнех, пурнăç опычĕ, тăнĕ пур, Хусан университечĕн журналистика факультетĕнчен лайăх вĕренсе тухнăччĕ. Ăнăçлах ĕçлесе кайрĕ, район ĕç çыннийĕсем хушшинче идеологи ĕçне хăй умĕн ĕçленĕ секретарьсенчен темиçе хут вăйлăрах аталантарса ячĕ. Унашкал тарăн пĕлӳллĕ, нумай енлĕ шухăшлавçă халлĕхе Вăрнар тăрăхĕнче курмастăп-ха эпĕ. Кĕрешӳçĕ-çĕнтерӳçĕ журналист, ăста лирик, сăнарлă чĕлхеллĕ прозаик. Чĕлхе, сăмах философийĕ тапса тăрать унра. Çавăнпа вăл калаçнине тимлĕн итлес, хайлавĕсене, кĕнекисене ăнтăлсах вулас килет.

Пĕррехинче, Вăрнар район администрацийĕнче, унăн ертӳçи Анатолий Иванович Кузьмин пире иксĕмĕре хăйĕн вăрттăнлăхне пĕлтерчĕ: «Михаил Алексеевич – манăн учитель шутланать, шкулти мар, пурнăçри. Унран эпĕ çак выраńта ĕçлеме нумай вĕрентĕм. Уншăн – пысăк тав». Вăрнарти нумай-нумай çын тав тăвать ăна, мухтанма юратман, кăмăл-туйăмне сутман, тус-юлташне хисеплекен интеллигентлă этеме.

Патшалăх енчен те тавĕ пур унăн. Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн ăна ЧАССР Аслă Канашĕн Хисеп грамотине, «СССР пичет отличникĕ», СССР Гражданла Хӳтĕлев отличникĕ» знакĕсене, «Ĕç ветеранĕ» медаль панă. Вăл Раççей Федерацийĕн писательсен Союзĕн членĕ.

Элкер мана, Çеçпĕл пекех, тăван чĕлхешĕн хытă тăнăран тыткăнланă. Вăл хамăрăн çырулăхшăн чунне ыраттарни халăх кунçулĕпе, унăн малашнехи шăпи çинчен шухăшланипе çыхăннă. Пултарулăхĕн пĕтĕм ĕçĕ-хĕлĕ çав йĕрпе пырать. Хаçатра ĕçленĕ хушăра, чĕрĕк ĕмĕр тăршшĕнче, тăван чĕлхене хӳтте илсе эпĕ хам та çыркаланă. Паллăрах тишкерӳсене асилес-тĕк: «Чăвашла пĕлетпĕр-и?», «Чĕлхемĕре хисеплесе, чăвашлах çырасчĕ» («Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат), «Тăван чĕлхесĕр

чăн-чăн пĕлӳ çук» («Тăван Атăл» журнал), «Çеçпĕл урокĕсем» («Хыпар» хаçат)... Пирвайхи иккĕшне Вăрнар районĕн çӳлти тытăмĕсем ятарласах сӳтсе явнăччĕ. Чылай пысăк пĕр статьяра («Хыпар» хаçат) районти училищĕре «чăваш сăмахĕпе» ăссăрла хăтланнине тиркерĕм. Ют сăмахсене пуçа хывма вырăсла чăвашсемпе пĕрле Аçтăрхан, Алтай, Мускав (тата ытти çĕртен) ачисене, тĕрлĕрен виçĕ-тăватă группăна, харăс пĕр класа чыхатчĕç. Тулкки тухмарĕ. Министр та ăнланчĕ курăнать. Кунашкал «опытпа практикăна» пăрахăçлама тиврĕ.

Эп шкулта ĕçлеме пуçланă вăхăтра Çемен Элкерĕн филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Виталий Родионов пухса хатĕрленĕ кĕнеки пичетленсе тухрĕ («Хурапа шурă». Шупашкар. 1994). Унти хайлавсем çыравçăн унченхи томĕсене кĕмен, чылайăшне эпир пĕлмен. Çамрăк йыша чăвашлăха ăша хывма, тăван чĕлхене чун-чĕрепе юратмашкăн хăнăхтарма пуçламăш никĕсре И.Я.Яковлев, К.В.Иванов, Çеçпĕл Мишши вĕрентнисем тĕпре тăратчĕç пулсан, хайхискер, вĕсемпе пĕрле ман тĕллĕн тепĕр классик çывăхарах килчĕ. Программăра тĕллеттернипе çырлахмастăмăр. Темăсене анлăраххӑн çутатма вăхăт тупаттăмăр. Литкружок сехечĕсем те пулăшатчĕç. Çутĕç патриархĕн халалне эпир пайăн-пайăн шĕкĕлченĕ («Чăн-чăн пĕлӳ тăван чĕлхерен пухăнать», «Наци культури вырăссеннипе пĕрле чечекленĕ» т.ыт.те). Кун-çулĕпе ĕçне-хĕлне «Çитĕннĕ вăхăтсем», «Манăн пурнăç» кĕнекисем тăрăх 5-мĕш класран пуçласа 9-мĕш таран тишкернĕ. «Чăвашсен мĕншĕн çырулăх çук?», «Чăваш шкулне уçни», «Канăçсăр шухăшсем» тесе ят панă асилĕвĕсем тăрăх сочиненисем çырнă. Константин Ивановăн нумай енлĕ пултарулăхĕнчен (поэт, художник, артист, фотограф, алăсти...), «Нарспи» поэмăн илемлĕ чĕлхинчен тĕлĕннĕ. Сăвă йĕрки те сăмах тапратма юранă. «Чăвашла та калаçмасть, тăванне те астумасть...» Ку – поэмăран мар, урăх çĕртен. «Хальхи саманара ун йышшисем ытларах пуль», – тетчĕç ачасем. Çеçпĕл урокĕсем çинчен эпĕ «Хыпарти» статьяра туллин калама тăрăшнăччĕ. Унăн «Чăваш сăмахĕ»

статйипе (1920 ç.) С.Элкерĕн «Ху чĕлхӳне ан хурла» статйине (1917 ç.) пĕрле пăхма тытăнтăмăр. «Хĕн-хур айĕнче» поэмине килте вуланă, урокра калаçнă. Ултă-çичĕ тĕлтен пăхмасăр вĕреннĕ (нумайлăха асра юлать). Ку произведенишĕн сехет шутне хĕрхенмен. Çавăнпа авторĕ хăй виличчен çырса хăварнă «Кушлавăш уйĕ» ĕçĕпе те, «Çамрăксене хам çинчен» сăмахĕпе те, кун кĕнекинчи тĕслĕхсемпе те («Хам чăваш, ачасем – вырăс», «Чăваш йышĕ хăвăрт ирĕлет», «Вирьял чĕлхи пирки»...) паллашма ĕлкĕрнĕ.

Çапла вара, пĕр вунă çуллăха «учителе тухни» мана Çемен Элкерпе тĕплĕнреххĕн паллашма, ăна ачасене тарăнраххăн, анлăраххăн вĕрентме хистерĕ.

Унччен маларах ман пурнăçра аслă поэт ячĕпе çыхăннă пăтăрмах та пулнă...

Горбачев çăварĕнчен кĕрслеттернĕ «перестройка» сăмахпа пĕрле килнĕ пулăма эпир, хаçатçăсем, чăнласа, чĕре варне хурса йышăннă. Пăнтăх сывлăшне сирмешкĕн çĕнĕ варкăш кирлехчĕ. Пултару тени ирĕк ăспа хĕмленет. Хăюллă шухăшлакан хăватлăрах ĕçлет. Вăрнар хаçатĕнче çĕнĕ рубрикăсем уçрăмăр: «Шăматкунхи калаçусем» (хамах çĕр ытла статья çырнă), «Кĕçнерни тĕпелĕ», «Кĕтеслĕ сĕтел», «Уçă калаçу: вулакансем патĕнче»... Тăплăм шурлăхне вĕри сăмахпа хĕртнĕ чулсем пăрахкаласах тăраттăмăр. Парти ретне карьерăшăн шăвăннине, пухусене райком машинипе пуçтарнине, парти ĕçĕнчи формализма эпĕ бюросенче, пленумсенче, хаçатри материалсенче çивĕччĕн, тĕллĕн-кĕретĕн хирĕçленĕ. Манăн çавнашкал паллăрах статьясене журналистсен республикăри пĕрлешĕвĕн С.В.Элкер ячĕпе хисепленекен премине илме тăратрĕç.

1988 çулхи çуркуннеччĕ пулас. Ялкăш хĕвеллĕ çутă ăшă кун. Ялан хаваслă, вăр-вар та вашават Антип Николаевич çав самантри евĕр салху та сулхăн курăннине эпĕ унччен асăрхаман. «Саншăнах чирлесе кайрăм, – терĕ кулянчăклăн. – Премишĕн икĕ çĕрте пĕр кăмăллăн сасăларĕç. Çирĕм çын хыççăн

пĕри сана урлă тухрĕ. Вăл правленипе комисси членĕ мар...» «Васильев тăхтатăр, – тенĕ партноменклатура чиновникĕ. – Хăйне ытла чарусăрла тытать, пăхăнуллă пурăнма пĕлеймест...»

Çав тери ырă çынччĕ А.Н.Николаев. Канăçа пĕлмен хастарччĕ. Вун сакăр çул ытла республикăри журналистсен союзĕн правлениче ответлă секретарьте тăрăшрĕ. Вăрçăра паттăра тухнă чăвашсене сăнларĕ. Çар мухтавĕн чăваш енĕнчи летописне çырса хăварчĕ. Аркадий Гайдар премийĕн лауреачĕ («Боевая вахта» хаçатшăн, «Советский воин» журналшăн ĕçленĕ). Çемен Элкер премийĕн лауреачĕ (1976 çулчченхи кĕнекисемшĕн панă). Преми пирки манпа малтан вăл сăмах пуçарнă. «Ан хуçăл, – хавхалантаратчĕ ентешĕм. – Хĕсекенсемпе элекçĕсем Семен Васильевичăн та пулнă. Ун ячĕпе çирĕпленсе, ĕçӳсене тепĕр хут тăрат».

Лауреат дипломне мана журналистикăри чи лайăх произведенисемшĕн тесе 1990 çулхи майăн 4-мĕшĕнче тыттарчĕç. Диплом номерĕ – 27. Унччен хи номерне пĕлместĕп. Пуринчен маларах Антип Николаевич саламларĕ: « Ак ĕнтĕ, иккĕмĕш хут лауреат пултăн...»

Мана йĕрлекенсем иккĕмĕш хут та тупăнкаларĕç. 1991-мĕшĕнче Ельцинпа пĕрле пач кĕтмен этемккесем влаçшăн та капиталшăн кĕшĕлтетсе çиеле тухрĕç. Пĕрскер ман пирки компромат шыраса чупкалама тытăнчĕ (эп ăна чунтанах хĕрхенсе икĕ хутчен ĕçе йышăнни хамшăн çеç мар, районшăн та йăнăш туни пулса тухрĕ). Васильева преми тĕрĕс мар панă тесе çав этем йĕркеллĕ чылай çынна ура çине тăратнă, вăрçăнса пĕтнĕ, мĕнпур хутсене айăн-çийĕн çавăрттарнă. Кашни ельциноид ырлăх тупаймарĕ, çав элекçĕн те сас-хури таçта путланчĕ.

Эп çыракан редактор пулнă (яка номере алă пусма хăнăхнисем халь те хитре пурăнаççĕ). Ман 70-мĕш çулсенчи фельетонсем (икçĕрĕшĕ тăрăх хăшне-пĕрне вăрахчен астумалăх ответ тыттарнă), «Вăйсăрлăх мĕнрен килет?», «Хăюллă сăмах»,

«Куллен витĕмлĕ пултăр», «Çĕнетӳ хĕрӳ ĕçпе çирĕплентĕр», «Шавлать, кашлать... хут çинче» йышши статьясем (пурте «Коммунизм ялавĕнче» пичетленнĕ), журналистсен пухăвĕсенче каланисем влаçрисене килĕшменнине туяттăм (статьясене парти органĕсенче сӳтсе явнă чух тӳрех курăнатчĕ). 1976 çул вĕçĕнче «ӳстерсе» пăхрĕç, обкомра тăватă кабинетра тăна кĕртрĕç, Шупашкара лартса кайиччен пач систермесĕр парти райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ туса хучĕç. Оргпай пуçлăхĕ «юлташла асăрхаттарчĕ»: «Пире айăкран йĕплеме аван, халь критиклесе пăх-ха...» Хаçата таврăнсан каллех çăварлăх пеме хăтланчĕç. 1986 çулхи сентябрьте парти райкомĕн пленумне редактор отчетне кăларчĕç. Мана хирĕç виççĕн тан ман фельетонсен геройĕсене тăратрĕç. Пăтăрмах редактортан каятăп, партирен тухатăп, «Журналиста» статья çыратăп тенĕ хыççăн ман пирки йышăнтарнă страницăна протоколран тăпăлтарса пăрахнипе вĕçленчĕ.

КПСС, шел пулин те, бюрократи танатинчен хăтăлаймарĕ, лару-тăрăва тĕрĕс хаклама хал-хăват шырамарĕ, организаторла роле вĕçертмерĕ, совет çĕршывĕн шалти тата тулашри тăшманĕсене хирĕç тăраймарĕ. Тем авăкра пуç çĕкленĕ кăрлаппансем мала тухрĕç. Тĕрлĕ йышши гипнозпа наркоз сĕрĕмĕнче çаплах-ха иртнине ылханатпăр. Тăватă-пилĕк парти улăштарса çатăлтатнисем хăйсене пирвайхинчен чăнах та хăпса урăхланнăн, влаçа чăнласах пĕр сăмахсăр пуç çапнăн курнăçланаççĕ.

Эп хамăрăн (!) пулнă партие те, никама та ылханмастăп. Ман ăшра горбилле тавăру туртăмĕ çук. Путсĕрсем кирек хăш партире те çителĕклĕ. Хăшпĕринче – суеçĕ те, хурахĕ те кĕшĕл. Эп хамăн ĕненӳпе, гражданла çирĕп позиципе сутуçла-усламăçла выляман (элкерлĕх мана пăрахмастех). Ман тӳпере элкерле таса çăлтăр пурах пек. Мана хăй ячĕпе премипе чысланăшăн Семен Васильевич пăшăрханман пулĕ теессĕм килет. Журналистсен республикăри союзĕ хăй вăхăтĕнче шутсăрах тĕрĕс тунă: премие сумламашкăн таланчĕ нумай енлĕ

паллă çыравçа суйласа илнĕ. Поэт. Халăх поэчĕ. Н.И.Шелепи хыççăн ку ята иккĕмĕш тивĕçнĕ. Писатель (халăх писателĕ, тейĕпĕр). Журналист. Тĕпчевçĕ-историк. Тишкерӳçĕ-критик. Общество деятелĕ... Элкер çăлтăрĕ чăваша чăн чăваш пулса чăвашлăхшăн ĕçлеме чĕнет. Элкер, апла – тасалăх, тӳрĕлĕх, чăнлăх, тĕрĕслĕх, çавсене пĕр чăмăрта ăсталанă пултарулăх. Элкер, эппин, – тĕслĕхлĕ çăлтăр. Влаçпа та Элкерле хăюллăн, ăслă-пуçлăн каласма вĕренесчĕ пирĕн!

Михаил Васильев,
Вăрнар районĕнчи «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатăн
1970-1976, 1982-1991 çулсенчи редакторĕ,
С.В.Элкер ячĕпе, И.Н.Ивник ячĕпе,
А.В.Емельянов ячĕпе хисепленекен
премисен лауреачĕ.

ЭЛКЕР ÇĔРШЫВĔ МАНШĂН ТА ТĂВАНЛАНЧĔ

Пантелеймон Михайлович ЕРМОШКИН 1933 çулхи кăрлачăн 28-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Каншел ялĕнче çуралнă. Унăн ачалăх тусĕсем Геннадий Лисин-Айхипе йăмăкĕ Ева Лисина, Василий Игнатьев прозаик, чăвашсен паллă театр режиссерĕ Алексей Васильев пулнă. Вĕсем хаваласансах сăвă-калав çырнă, Пăла юхан шывĕнче Панька Ермошкин ăстаçăн пĕрене суллипе ишсе аташнă, пĕчĕк театр йĕркеленĕ.

Ӳссе пынă май, вĕсен пурнăç çулĕсем тĕрлĕ çĕрелле такăрланнă. Панька Ермошкин Саратоври ял хуçалăх механизаци институтĕнчен вĕренсе тухсан, министерство направленийĕпе Йĕпреç поселокне çитнĕ. 1955 çултанпа ĕнтĕ вăл Сăр вăрманĕн хĕрринче, курортлă вырăнта пурăнать. Ачи-пăчи кунтах çуралса йĕпреçсем пулса кайнă.

Инженерта, тĕп инженерта, директорта-управляющире тăрăшса Пантелеймон Михайлович Йĕпреç «Сельхозтехникине» республикăра малтисен ретне кăларма пултарчĕ. Пĕчĕкрех завод пекехчĕ унăн юсав производстви.

1977 çулта П.М.Ермошкина Йĕпреç район Совечĕн ĕçтăвкомне ертсе пыма шанчĕç. Çав хушăра вăл Йĕпреç поселокне уйрăмах хула сăнĕ кĕртрĕ, пĕр гектар ытла çĕр çинче этногрфи музейĕ йĕркелесе ячĕ.

Ăста ĕçлевçе-ертӳçе Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ механизаторĕ ятсем панă, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Каншелĕнчи (Патăрьел районĕ) шкула çӳренĕ çулсенчех юратса вулаттăм эпĕ Çемен Элкер çырнă произведенисене. Пуринчен те ытларах килĕшекенни вара «Хĕн-хур айĕнче» поэмăччĕ. Авторĕ ăна сăвăласа çырнă повесть тенĕ. Чăваш халăхĕн аваллăхĕ, вăл тӳснĕ нуша-терт тĕкĕр çинчи пек яр-уççăн тухса тăрать çак хайлаври йĕркесенчен. Пĕр ӳстермесĕрех çапла калама пулать: Çемен Элкер хăй, чухăн хресчен çемйинче çуралса ӳснĕскер, ял çыннисен пурнăçне, йăли-йĕркине питĕ лайăх пĕлнĕ, тăван халăх историйĕпе кăсăкланни ăна литературăн ылтăн фондне кĕме тивĕçнĕ япаласем ăсталама вăй-хал парса тăнă.

Манăн килти библиотекăра «Хĕн-хур айĕнче» кĕнеке пур. Эпĕ ăна тăтăшах алла тытатăп, пушă вăхăтра поэмăра сăнарланнă геройсемпе тĕл пулса калаçнине чи ырă самантсем вырăнне хуратăп. Пурнăçри терт-йывăрлăхсене çĕнтерме, тĕрĕслĕхпе чăнлăхшăн тăма хавхалантараканĕ маншăн Чакка пулнă. Унăн сăнарĕ çутă, таса. Чăваш академи драма театрĕнче лартнă «Хĕн-хур айĕнче» спектакле те пĕрре кăна мар пăхнă эпĕ. Чакка сăнарне тунă Чăваш халăх артисчĕ Игнатий Молодов тĕлĕнмелле ăста выляни халĕ те куç умĕнчех. Чакка сăнарне унран çеç çырса илмелле.

Çулсем иртĕç, пĕр ăру тепринпе улшăнĕ, анчах та Чăваш халăх поэчĕ çырнă çак шедеврăн хакĕ те, пĕлтерĕшĕ те чакмĕç. Поэмăна пирĕн хыççăн килекенсем те юратса вулĕç, хăйсен мăн аслашшĕсен кун-çулĕ çăмăл пулманнине курса ĕненĕç. Чылайăшĕшĕн Чакка ӳлĕмрен те идеал пулĕ.

Çамрăклах ял хуçалăх техникине юратнăскершĕн маншăн, вĕренсе инженер специальноçне илнĕ хыççăн, юсавпа техника станцийĕнчи «хура ĕç» нимĕн чухлĕ те хăрушă марччĕ. Йĕпреçре эпĕ хампа пĕр шухăш-кăмăллă, пултаруллă инженерпа Владимир Иванович Ушмаринпа тĕл пулнăшăн хĕпĕртерĕм. Тăвай чăвашĕн пуçĕнче ялан çĕнĕлĕх вĕретчĕ. Пĕрле мастерскойĕнче «пĕчĕк мартен кăмаки» майлаштартăмăр. Ку çĕнĕлĕх юсав ĕçне хăвăртлатрĕ, пахалатрĕ. Ăста специалистсене вĕрентсе пытăмăр. Çапла ăслайлă çирĕп коллектив чăмăртанчĕ. Çĕнĕрен кантур çурчĕ, общежити, шывпа ăшă памалли, юсав каяшĕсене тасатмалли вырăн, канализаци турăмăр. Ĕç культурине çўллĕ шая çĕклерĕмĕр. Çынсен кăмăл-туйăмĕ урăхланчĕ, ĕçлес хастарлăхĕ хутшăнчĕ.

Район «Сельхозтехникин» база вырăнне çĕнетнĕ хушăрах эпир колхозсемпе совхозăн юсав мастерскойĕсене типлă проектпа тăвассине, вĕсенче юсав техникине вырнаçтарассине хăвăртлатма пулăшаттăмăр. Ял механизаторĕсен вĕренĕвне йĕркеленĕ. Яланах ялсенче пулнă май, «Трудовик», «Путиловка» колхозсен ўссе пыракан техника паркĕсем куçа савăнтаратчĕç. Социализмла Ĕç Геройĕ Антон Григорьевич Шордеев, колхоз производствин ветеранĕ Георгий Семенович Ильин Элкер асăннă Кушлавăш уйĕнчи çĕр çинче ĕçлекенсене чăннипех хавхалантарса ĕçлеттерме пултарнине туяттăм. Вĕсене хамăр енчен пулăшсах тăнă.

Çапла маншăн та, Патăрьел енчи чăвашшăн, Йĕпреç тăрăхĕ пурнăçри иккĕмĕш çĕршыв – юратнă çĕршыв пулса юлчĕ.

Пантелеймон Ермошкин.
Инженер.
2009 ç.

ВĂЛ КАШНИН ЧĔРИНЧЕХ ПУРĂНАТЬ

Гаврил Спиридонович Лосев (Гаврил Луç) Чăваш АССРĕнче, Йĕпреç районĕнчи Хумри Ишек ялĕнче, 1935 çулта çуралнă. Ашшĕне айăпсăр тĕрмене хупнине пула, çитиçитми пурнăçра, кĕçех амăшĕ те чирлесе вилет. Пиллĕкĕн хăр-тăлăххăн нушаланса ӳсеççĕ вĕсем. Хурамалта çичĕ класс пĕтернĕ хыççăн малалла хăй тĕллĕн кăна вĕреннĕ вăл. Нумай вуланă, çавна май литературăна юратнă, сăвăсем çырма пуçланă. Вун пилĕк çул ялти клуб заведующийĕнче ĕçлет. Хут купăс, баян, гитара калама вĕренет. Ялти драма кружокне ертсе пырать. Çăмăл атлетикăра çитĕнӳсем тăвать, фото ĕçне юратса пăрахать, баян-купăс кăна каламасть, ытти инструментсемпе те шăрантарать.

Шупашкарта эпир унпа çамрăк çыравçăсен канашлăвĕнче паллашнăччĕ. Хама Йĕпреç райхаçатне кăларнă çĕре парти енĕпе куçарнă хыççăн самаях сывăхлантăмăр. Çамрăк авторсене литпĕрлешӳ канашĕсене чĕнсен, Гаврил Луç яланах питĕ хĕрӳччĕ, пĕр-пĕрин произведенине сӳтсе явнĕ çĕре тăнлăн хутшăнатчĕ. Хăй ĕçлекен клуб çумĕнче те ялти çыравçăсен кружокĕ пурччĕ унăн. Василий Иванович Андреев-Хурамал, Семен Васильевич Элкер унăн чи малтанхи вĕрентекенĕсем-канашçисем пулнă. Элкерпе çыру урлă калаçнă. Хăй 70 çул тултарнă тĕле Гаврил Спиридонович тăватă кĕнеке кăларчĕ. Пĕринче писатель чăваш халăх поэчĕпе мĕнле паллашни, сывăхланни çинчен калать. Ун çинчен автор çак кĕнекере те вулакансене паллаштарасшăн.

Семен Васильевич Элкерпе пуçласа 1957 çулта районти хаçат редакцийĕнче паллашнăччĕ. Унпа çыру çӳретме вара 1958 çулта пуçларăмăр. Ку ĕç çапла пуçланчĕ. С.В. Элкер

çырнă «Вутпа тăвăл витĕр» роман-хроника тăрăх ялти библиотекăра вулакансен конференцине ирттерме хатĕрленеттĕм. Çавна май С.В.Элкер патне çыру ятăм, тӳсеймесĕр ответ кĕтме пуçларăм. Хам иккĕленетĕп, ватă енне сулăннă, сывлăх енчен хавшакрах поэт хирĕç ответ çырса яма хал тупайĕ-ши? Иккĕленме кирлĕ пулман иккен... Конференцире С.В.Элкер пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа панă чух эпĕ унăн çырăвĕпа анлăн усă куртăм.

Çакăн хыççăн пĕр-пĕрин патне час-часах çыру çӳрететтĕмĕр. Ĕçĕ темĕн чухлех пулнă пулин те, ырă кăмăллă поэт кашни çыру çинех тĕплĕн ответ паратчĕ. Çакă, паллах, пире, çамрăк сăвăçсене, питĕ савăнтарчĕ, хавхаланса ĕçлеме, çĕнĕрен çĕнĕ сăвăсем çырма хистетчĕ.

1959 çул. Эпир Шупашкара ĕçпе юрă уявне кайрăмăр. Уяв вĕçленсен, юлташпа С.В.Элкер хваттерне шыраса тупрăмăр.

Семен Васильевич пире хăй пурăнакан хваттере илсе кĕчĕ. Кунта пурте хăй вырăнĕнче, кăмăллă. Пирĕн калаçу, паллах, ытларах литература çинчен пулчĕ. Урăх мĕн çинчен пултăр-ха халăх поэчĕпе тинтерех çырма пуçланă çамрăк хушшинчи калаçу?Хамăрăн ентеше эпĕ район хаçатĕнче пичетленнĕ сăввăмсене вуласа патăм. Вăл питĕ тимлĕн итлесе ларчĕ. Хăш-пĕр вырăнсене икшер хут вулаттарчĕ, кирлĕ канашсем пачĕ.

Калаçу вĕçленес умĕн юратнă поэта ялти клуб умĕнчи волейбол площадкинче ӳкерттернĕ сăн ӳкерчĕке хыçалта алă пусса парнелерĕм. Уйрăлас умĕн С.В. Элкер пире, юлташпа иксĕмĕре, хăйĕн анчахрах пичетленсе тухнă «Хĕрлĕ çăлтăр» кĕнекине çырса парнелерĕ. Алă пуснă чухне «эль» саспаллисене çырнă хыççăн чарăнчĕ те:»Чăвашла çырам-ха» терĕ. Вара çемçетекен паллăн çӳл енне кăшт туртса «к» сас палли турĕ. Ку кĕнеке маншăн хаклăран та хаклă парне пулчĕ. Вăл паян кунччен манăн килти библиотекăра упранать.

Эпĕ каллех Семен Васильевич патне çыру çыртăм. Ялти библиотекăра вăл çырнă «Шурăмпуç килсен» романа сӳтсе

явма хатĕрленни çинчен хыпарларăм. Романри ĕçсем çинчен, иккĕмĕш кĕнеки еплерех пуласси пирки пĕлтерме ыйтрăм. Мĕншĕн тесен манăн пĕрремĕш кĕнекене вуланă çынсене конференцире произведенири геройсен пурнăçĕ çинчен тĕплĕн каласа парас килчĕ.

Часах Семен Васильевичран çыру килчĕ. Чылаях пысăк вăл. Акă маншăн хаклăран та хаклă çав çыру:

« Гаврил ЛУÇ юлташ! Эсир манăн «Шурăмпуç килсен» романа сӳтсе явни – лайăх ĕç, вăл мана савăнтарать. Сире уншăн чĕререн тав тăватăп. Романăн иккĕмĕш кĕнекине çырма хатĕрленни чылай пулать. Унăн планне туса хатĕрленĕччĕ, анчах обществăри тĕрлĕ ĕçсем «айне» пулнипе тата чĕрепе пуç чирĕсем аптратса çитернипе пуçланă ĕçе пăрахмалла пулчĕ: 8 çул хушши РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулса пилĕк район тăрăх чылай çӳремелле пулчĕ, ку ĕç мана чылай вăхăта литература творчествинчен уйăрса тăчĕ, ĕçлеме памарĕ. Каярах больницăсенче те выртма килчĕ. Халĕ тин общество ĕçĕнчен те хăтăлса çитрĕм ĕнтĕ. Çырма та вăхăт тупăнать, анчах пурнăçăм ватă еннелле сулăнчĕ, нумаях ĕçлеме май килмест. Пĕлместĕп, сывлăхăм тепĕр вунă çул аптрамасăр пырсан, ман çырма пуçланă урăх произведенисем те пур-ха, халĕ вакăрах произведенисене çырса пĕтересшĕн. «Шурăмпуç килсен» романăн иккĕмĕш кĕнекине юлашки плана тăратса хăвартăм. Мĕншĕн тесен вăл пысăк пулмалла, ун валли энерги нумай кирлĕ.

Романра кăтартнă геройсем, Долбиловпа Ананьева ссылкăран таврăнаймарĕç. Вĕсен юлташĕ Нечаев (тĕрĕссипе вăл Почуев) каялла таврăнчĕ, вĕсен революцилле ĕçĕсем çинчен нумай каласа пĕлтерчĕ

Долбилов, Почуев, Ананьева – виççĕшĕ те вĕсем Етĕрне хулинчен. Вĕсене тытса мĕнле суд тунине кăтартакан материалсене халĕ Шупашкарта Центральный архивра тупрĕç. Ку тĕрĕс пулнă ĕç... Нечаев (Почуев) каласа панă тăрăх, Долбилов ссылкăран тухсан, Ананьевăна качча илнĕ, вĕсем Çĕпĕр-

тех пурăнма юлнă, тетчĕ. Почуева эпĕ юлашки хут 1936 çулта курнăччĕ. Ун чухне Долбиловран çыру-хыпар илменни чылай пулать, тесе пĕлтерчĕ вăл... Почуев хăй 1936 çул вĕçнелле вилчĕ.

Çитĕç Иванĕ (Иван Сидоров) ссылкăран таврăнсан, Пушкăрт çĕрне куçса кайрĕ, вăл вилни те нумай пулать ĕнтĕ. Муççа революцие хавхаланса йышăнса илчĕ, вăл комбедра ĕлесе ĕлĕк чухăнсене пусмăрланă куштан-пуянсене раскулачить тăвас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлерĕ. Вĕсем Бурцевпа та курнăçса, хăйсем тахçан ĕмĕтленни пурнăçа кĕнишĕн хавасланаççĕ. Муççа 1922 çулта вилет. Ванеçпе Павăл та совет саманинче паллă ĕçлекенсем пулаççĕ. Çитăр Иванĕ 1933 çулта ман патăмра пулса кайрĕ, хăйсен паттăр ĕçĕсем çинчен çырнăшăн чунтан савăнса тав турĕ. Ун ывăлĕ Макçăм учитель пулса ĕçлет... Миххасен, Каврuксен, Унтюксен пурнăçĕ революци хыççăн час хĕсĕнсе çитет, вĕсем аяла тăрса юлаççĕ. Леврensем (Леврен сăнарĕн прототипĕ Семен Васильевич Элкер хăй, çакăн çинчен вăл мана кĕнекери геройăн пурнăçĕ çинчен калаçнă чух каласа пĕлтерчĕ), Мишшасем ӳссе çитĕнеççĕ, вĕсем вĕренсе паллă çын пулаççĕ. Кăтра Митюк тĕрлĕ майпа чееленсе чылайччен пурăнать, вăл колхоза кĕрсе те вăрттăн сăтăрла нумай сиен кӳрет: юлашкинчен, вăл сăтăрçă пулнине пĕлсе çитсен, тĕрмене лекет, унтан таврăнсан каллех колхоза кĕрет. Леврен яла таврăнсан, унăн революцичченхи провакаторла ĕçĕсене тĕпчесе пĕлме материалсене тивĕçлĕ çĕре ярса парать те, Митюка тытса хупаççĕ, вăл вара каялла таврăнаймасть. Кунта çакна каламалла: романри ĕçсене вĕсене чăн-чăн пулса иртнĕ пекех çырма кирлĕ мар, ун пек çырни вăл геройсене характерĕ енĕпе типизацилеме, çирĕп сăнара кăтартса пама кансĕрлет, произведенисенче обобщенный типсем туса кăтартмалла, пурнăçра пулни пекех çырса пыни вăл произведение композиципе фабула енчен çирĕппĕн формăлама чăрмантарать тата идейăллă тĕллевсем патне илсе пыма та кансĕрлет.

Писателĕн хăй умне лартнă задачăна татса пама мĕн пур ĕçсенчен хăйне кирлине кăна суйласа илсе сюжетламалла. Эпĕ хам та малтан калавсемпе романсенче пурнăçра пулнă пекех çырса пынипе чылай йăнăшнă. Очерксенче кăна, чĕрĕ çынпа унăн ĕçĕсем çинчен çырнă чух, произведение пĕр фантази кĕртмесĕр, мĕн-мĕн пулнă пекех йĕркипе çырса пымалла. Çакна асра тытнипе, «Шурăмпуç килсен» романăн иккĕмĕш кĕнекине эпĕ халь ирĕклĕрех рамка тăрăх çырнă пулăттăм. Анчах та çырса пĕтерейĕп-и ăна, е çук-и – ку пĕтĕмпех малаллахи сывлăхăм çирĕп тăнинчен килмелле. Çырасси час пулмасть, мĕншĕн тесен вулама çăмăл та – çырма питĕ йывăр. Произведени пысăк художествăллă та тулли ăшчиклĕ, паха пултăр тесен, ун пек ĕçленĕ чух пуç мими вĕресе кăна тăмалла.

Районти хаçата пысăклатни тата ăна чăвашлатни (1960 çулччен район хаçачĕ 2 страницăллă тата чăвашла та, вырăсла та тухса тăнă. – Г.Л.) питĕ лайăх япала, уншăн савăнмалла анчах! Литстраницăна тинкеререх вуласа тухса тишкереймерĕм-ха, хĕрӳллĕ творчествăллă ĕçсем чăрмантарчĕç.

Хисеплесе юлатăп. С.Элкер. Шупашкар, январĕн 13-мĕшĕ. 1960 çул.»

...Халĕ ĕнтĕ юратнă поэтăмăр пирĕн хушăра çук. Анчах та эпĕ Семен Васильевич хама парнелесе панă кĕнекене çӳлĕк çинчен илетĕп те сасăпах калатăп, «Семен Васильевич Элкер чăваш литературине юратакансен кашнин килĕнчех пурăнать. Вăл – вулакансен юратнă хăни».

1994 ç.

ХАЛĔ ТЕ КУҪ УМĔНЧЕХ

1957 ҫулхи сентябрĕн 21-мĕшĕнче пире, литпĕрлешӳ членĕсене, черетлĕ заняти пуласси ҫинчен пĕлтерчĕҫ редакцире ĕҫлекенсем. Йыхрав хучĕ ҫине занятире Чăваш халăх поэчĕ Семен Васильевич Элкер пулать, тесе ҫырнăччĕ. Эпир, чăваш литературипе интересленекенсем, куншăн чĕререн савăнтăмăр. Палăртнă кун хаҫат редакцине пухăнтăмăр. Заняти уҫăлас вăхăта тӳсĕмсĕр кĕтетĕп ĕнтĕ, хăвăртрах поэта курас килетҫке. Хамăр пурте урамра, камăн-ха ҫакăн пек самантра пӳрте кĕрсе ларас килтĕр?

Акă, урам тăваткалĕнчен иккĕн утса килни курăнчĕ: пĕри – пирĕн литпĕрлешӳ ертӳҫи Василий Иванович Андреев-Хурамал, тепри, паллă ĕнтĕ, Семен Васильевич Элкер пулма кирлĕ. Туйи ҫине йывăррăн таянса утать вăл. Ҫывхарсах ҫитрĕ... Ҫапла, портрет ҫинче курнă тăрăх, шăпах пирĕн юратнă поэтăмăр пулчĕ ку. Семен Васильевич пире пуҫ тайсах сывлăх сунчĕ. Эпир те пуҫ пĕкрĕмĕр. Унтан литпĕрлешӳ ертӳҫи пирĕнпе кашнинпе паллаштарчĕ. Ентешĕмĕр пире кашнинех алă парса тухрĕ. Эпир, чунтан савăнса ӳкнĕскерсем, ҫунатланса ҫеҫ тăратпăр. Паллашнă хыҫҫăн редакци ҫуртне кĕпĕрленсе кĕтĕмĕр. Часах заняти пуҫланчĕ. Элкер пире чăваш литературин ӳсĕмĕсем ҫинчен каласа пачĕ. Хăй «Хĕн-хур айĕнче», «Шурăмпуҫ килсен», «Вутпа тăвăл витĕр» кĕнекисене епле ҫырни ҫинчен каласа пачĕ. Ҫавăн чухне ăна ыйтусем парса хăшкăлтартăмăр, кашнине хурав пачĕ вăл васкамасăр. Юлашкинчен, асăнмалăх пултăр тесе, редакци ҫурчĕ умĕнче сăн ӳкерчĕк ӳкерттертĕмĕр. Сăмах майăн каласан, ку ӳкерчĕк 1967 ҫулта район хаҫатĕнче пичетленсе тухнăччĕ. Ҫак ӳкерчĕке эпĕ чи хаклă япалана сыхласа хăварнă пек упратăп. Поэтăн чĕрĕ сăнĕ халĕ те куҫ умĕнчех.

Калас пулать, эпĕ нумай ҫулсем хушши клуб заведующийĕ пулса ĕҫлерĕм. Ҫавна пула пирĕн вулакансен конференцийĕсем, литература каҫĕсем тăтăшах ирттерме тиветчĕ. Акă эпир

«Вутпа тăвăл витĕр» роман-хроника тăрăх конференци ирттерме хатĕрленетпĕр. Конференци умĕн вулакансене кĕнеке авторĕн литературăри ĕçĕ-хĕлĕпе, писатель кун-çулĕпе паллаштарас пулать-çке. Ку ĕçе эпĕ хам çине илтĕм. Кĕнекере Çеменпе Клавдин таса юратăвĕ çинчен çырни пур. Клавди чăн пурнăçра пулнă-и, вĕсем кайран Çеменпе пĕрлешнĕ-и? Çак ыйтусем канăç памарĕç мана. Çапла вара Çеменпа Клавдин юратăвĕн малашлăхĕ çинчен каласа парас килчĕ. Вара Элкер патне ӳркенмесĕрех çыру çыртăм. Унтан хурав илмесĕрех вулакансен конференцине ирттерес терĕмĕр. Юлашкинчен кĕтнĕ çыру çитрĕ. Акă мĕн хуравлать Семен Васильевич: *«Хисеплĕ Гаврил Спиридонович! Çырăву çине час хурав яраймаршăн чи малтанах каçару ыйтатăп. Сывлăх начарри хупларĕ, чĕре аптратрĕ. Çавăн пек тапхăрсенче вилĕмрен тепĕр икĕ-виçĕ çуллăха та пулсан çăлăнса юлассишĕн кăна шухăшлатăп. Пĕтĕм ĕçсене пăрахса пурнăçшăн çех кĕрешме тытă-*

Йĕпреçри редакци çурчĕ умĕнче асăнмалăх ӳкерттернĕ фото. 1957 ç. Лараççĕ: Н.Теветкел, Ç.Элкер, В.Андреев, К.Александров; тăраççĕ: Г.Луç, В.Сорокин, Ген. Рикмас, Григ.Рикмас, Н.Чернышев-Шетмĕ.

натăп. Мĕншĕн тесен, манăн туса пĕтереймен, вĕçлесе çитерменнисем нумай халĕ. Хамăн ĕмĕт-шухăшсене пурнăçа кĕртсе çитереймен, хам ума ларт нă задачăна татман. Акă мĕн пăшăрхантарать мана, пăшăрхантарать кăна мар, вăл хытах шиклентерет те тепĕр чухне. Пуçланă пысăк произведенисем çырăнса пĕтмесĕрех выртаççĕ. Çавсене пĕтерсенех лăпланăттăм. Çавăн пек тапхăр килсе пуснă чух эпĕ хам тата çырнă çырусем çине ответ пама та ĕлкĕрейместĕп. Сирĕн çырăвăр çине ответ парайманни те çак сăлтавранах килчĕ. Çакна шута илсе, мана ытлашши ан ӳпкелĕр. Пĕр вун-вун икĕ çул каяллах, хам сывă чух, эпĕ кашни кунах 2-3-шер çыру е çамрăк писательсен произведенийĕсене илсе тăнă, вĕсене авторĕсене пурне те вăхăтрах татăклă ответ парса тăнă, консультацисем панă. Халĕ апла мар ĕнтĕ.

Юлашки вăхăтра пăртак ĕçлекелекен пултăм. Чăвашиздат йышăннă план тăрăх, 1960 çул тĕлне манăн пĕтĕм произведенисене пухса 5 кĕнеке туса кăлармалла. Халĕ кăçалах кăларма палăртнă пĕрремĕш кĕнеке валли кирлĕ произведенисене тӳрлететĕп. Ку кĕнекене поэмăсемпе сăвăсем кĕмелле. Вĕсене тӳрлетсе пĕтеретĕп ĕнтĕ. Ытти 4 кĕнекене прозăллă произведенисем кĕмелле. Май уйăхĕ тĕлне «Шурăмпуç килсен» («На заре») роман вырăсла тухмалла, халĕ унăн корректурине вулатăп. «Хĕн-хур айĕнче» поэмăна çĕнĕрен тӳрлетрĕм. Ăна, тӳрлетнĕ хыççăн, Мускав поэчĕсем вырăсла куçарса пĕтерчĕç, халĕ çав куçарнă алçырусене те вуласа тухса тишкермелле пулать. Пĕрремĕш кĕнеке валли машинисткăсем пичетлекен алçырусене те тепĕр хут вуласа тĕрĕслемелле. Ĕç нумай, туса пĕтерессин вĕçĕ те курăнмасть. Çак ĕçсем хушшинче путланса лармалла пулĕ те... Ну, ытлашши çырса кайрăм, каçарăр. Эпĕ кăна хам сывлăх начар пулсан та, пĕр канăççăр ĕçлесе лармалла пулнине кăтартса парас тесе çех çырса пĕлтерес терĕм. Нумай ĕçлеме лекет, çавăн пиркиех сывлăха çирĕплетме те май килмест.

Хаçатра пичетленĕ сăввусене икĕ хут вуласа тухрăм. Аван вĕсем. Колхозниксен уй-хирти ĕçĕсене картинăллă та поэзиллĕ кăтартса параççĕ. «Улăхри» сăввăр пушшех те лайăхрах. Чăн та, хăш-пĕр тĕлте ритмика, стилистика çитменлĕхĕсем сисĕнкелеççĕ, вĕсем нумай мар. Картинлă илемлĕх енĕпе вĕсене «Ялавпа» «Коммунизм ялавĕнче» ĕçлекенсем хапăлласах йышăнма пултараççĕ. Анчах ритм, тоникăлла законне хытă тытакан поэтсем çак енчен илсен кăна кăшт тытăнса тăма пултарĕç – йышăнмĕç. Ĕçри поэзи курăнать сирĕн сăввăрта. Малашне те çав йĕркепех кайма тăрăшăр. Çакна çеç асăрхаттарасшăн: тырă вырма тухнă вăхăтра тăрисем юрлаççĕ-ши? Сирĕн юрлаççĕ, тенĕ. Тата «вăй выляса çулатпăр» тесен тĕрĕсрех пулĕ, «вăй вылятса» тени тĕрĕс мар вăл.

«Вутпа тăвăл витĕр» роман-хроника тăрăх заняти ирттертĕр-и е çук? Ыйтусем пирки çапла каламалла: Çемен обществăлла ĕçе тимлĕн хутшăнса кайнă, Клавдипе Хусанта курнăçнă хыççăн, вăл хăйсен ялĕнче пит те сахал пурăннă, çур çул ытла волисполком членĕ пулса ĕçленĕ, Атăл çинчен шурă гвардеецсене хуса янă хыççăн, 1919 çулта Çĕпĕртен Атăл еннелле Колчак çĕмĕрсе килнĕ. Вăл кĕç-вĕç Атăл урлă куптама каçса килессипе хăратнăччĕ, çав вăхăтра вулăсра пĕтĕм тимлĕхе хурса ĕçлемелле пулчĕ: Хĕрлĕ Çар валли çăкăр, ăшă тумтир, утлă çар лашисем валли утă-улăм кирлĕччĕ, выçă ларакан пысăк хуласем валли тырă тупса памаллаччĕ, чарăнса ларакан поездсем валли вăрман кастарса вутă турттарса памаллаччĕ. Çав ĕçсенче Çемен чирлерĕ, авланасси çинчен шухăшлама та пултарайман. 1919 çул вĕçнелле каллех Хусана педагогика курсне вĕренме тухса кайрĕ. Клавди хăйĕн хресчен хуçалăхĕнчен уйрăлма пултараймарĕ. Каярахпа вăл хăй те туберкулезпа чирлесе вилчĕ. Вĕсене хăйсен хуçалăхĕнче ĕçлеме сывă арçын кирлĕччĕ. Пĕр арçынна киле кĕртнĕччĕ, анчах хăй пурăнаймарĕ, часах вилчĕ».

...1964 çул. Семен Васильевич Элкер 70 çул тултарать. Эпир поэт юбилейне лайăх кĕтсе илме хатĕрленетпĕр. Литература каçĕ туса ирттерме палăртрăмăр. Литература каçĕнче поэт ĕçĕ-хĕлĕпе кун-çулĕ çинчен доклад тăвассине, Семен Васильевича çывăх пĕлекен çын пулнине шута илсе, каллех хам çине илмелле пулчĕ. Çакăн çинчен пĕлтерсе ентешĕмĕр патне çыру çырса ятăм эпĕ. Халĕ ĕнтĕ литература каçĕ ирттерме поэтран ответ килессе кĕтмерĕмĕр эпир. Майăн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух, каçхине, поэт 70 çул тултарнă ятпа литература каçĕ ирттертĕмĕр. Малтан, çӳлте асăннă пек, доклад пулчĕ. Шкул ачисем поэт çырнă сăвăсене пăхмасăр каласа пачĕç. Юлашкинчен драма кружокĕн членĕсем «Вунсаккăрмĕш çул» произведени сыпăкне сăнласа пачĕç.Лайăх иртрĕ литература каçĕ.

Темиçе кун иртнĕ хыççăн эпĕ Семен Васильевичран саламлă открытка илтĕм. Акă мĕн çырать вăл унта: *«Гаврил Спиридонович! Каярах юлчĕ пулин те çутă çу уйăхĕн 1-мĕш кунĕ ячĕпе сывлăх сунатăп.Ответне мĕншĕн час парайманнине хăвах чухлатăн пулĕ, хумханмалли, пăлханмалли кунсем пулчĕç.Сывлăх та çирĕп марччĕ. Ман пурнăçăмпа творчество çинчен доклад туса пама шутланине ырă ĕç, тетĕп.Эпĕ хамăн пурнăçăма чăваш халăхĕн искусствипе литературине хăпартассишĕн патăм. Обществăлла ĕçсенчен те пăрăнман. Докладне тăвăр, хăраса тăмалли çук. Пултаратăр. Хисеплесе С.Элкер».*

Унтанпа 30 çул пĕр сисĕнмесĕр иртсе кайрĕ. Акă халĕ унăн 100 çулхи юбилейне паллă тăватпăр. Аслă поэтăмăрăн çырăвĕсене тата унпа пĕрле ӳкерттернĕ сăнӳкерчĕкне чи хаклă парне вырăнне хакласа упратăп. Унăн кĕнекисене алла тытмассерен лăпкă сăнлă Элкер сăн-сăпачĕ яр-уççăн ман умăмра сăнланать. Калăн, ик-виç кун каялла е ĕнер çеç курса каласнă тейĕн.

1994 ç.

ĂСТАЛĂХШĂН

1956 çулта пирĕн ялта поэзие юратакан çамрăксем алăпа çырса «Хĕлхем» ятлă журналăн пĕрремĕш номерне кăларнă. Анчах çак журнал, тĕрлĕ сăлтавсене пула, тухма чарăннă. Халĕ эпир çак журнала çĕнĕрен кăларма тытăнасшăн. Литпĕрлешӳ членĕсем журнал ятне улăштарчĕç. Вăл халĕ «Хум» ятпа тухма пуçлать. Эпир, чăваш литературине юратакансем, малашне çине тăрса, тăрăшса ĕçлесен, пирĕн журнала ĕç çыннисем юратса вуласса шанса тăратпăр.

Чылай çамрăк авторсем сăвă çырас ĕçе хĕрӳллĕн тытăнаççĕ пулин те сăвă çырмалли техникăна вĕренме тăрăшмаççĕ. Сăвă çырасси çăмăл ĕç мар. Ку ĕçĕн майĕсене тĕплĕн тĕпчесе вĕренмесĕр илемлĕ япала çыраймăн. Пирĕн произведенисенчи тĕп герой хальхи çынсем, коммунизм тăвакансем пулма тивĕç. Пурнăçра, чăнах та, тĕрĕс кăтартса паракан сăнарсем тăвас тесен, ăсталăх кирлĕ. Ăсталăх вара пурнăçпа тан пырсан тата нимĕн чарăнмасăр ĕçлетĕн пулсан çеç çивĕчленет. Пирĕн яланах çакна асра тытмалла: чăн-чăн поэзи шухăш енчен çивĕч, содержани енчен пуян, илемлĕх енчен ытарайми чаплă пулмалла, асра юлмалла.

Тăван халăха юратма, тăван чĕлхе пуянлăхĕпе илемне туйса илме вĕрентнĕ çывăх çыннăн ятне ырăпа аса илмесĕр иртме çук.

1956-мĕш çулхи август уйăхĕнче пирĕн районта тухса тăнă «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçат редакцийĕ çумĕнче Василий Иванович Андреев журналист пуçарнипе литература пĕрлешĕвĕ ĕçлеме пуçларĕ. Ку пирĕншĕн, çамрăк авторсемшĕн, калама çук пархатарлă ĕçĕн пуçламăшĕ пулчĕ. Литпĕрлешӳ пилĕк çул ытла ĕçлесе, чылай çамрăк авторсене вĕрентсе, поэзире малтанхи утăмсем тума пулăшрĕ.

Малтанхи вăхăтра хаçатра сăвăсем пичетлекенсен йышĕ нумаях марччĕ. Хамăр районтан Н.Йăлăм (тăпри çăмăл пулт-

ăрччĕ),Н.Теветкел, çак йĕркесене çыракан, кӳршĕ районсенчен С.Мерчен, А.Канаш, С.Михайлов тата П.Вашават час-часах хăйсен сăввисене пичетлетчĕç.

Чĕрĕ пĕрчĕ çĕр çине ӳксен шăтса тухатех. Çавăн пекех пирĕн литпĕрлешӳ те çулсерен вăй илсе аталанса пычĕ. Литпĕрлешӳ хатĕрлесе кăларакан страницăсенче çĕнĕрен çĕнĕ ятсем курăнма пуçларĕç: С.Григорьев, А.Исаков, А.Карсаков, И.Аксянов, Г.Рикмас, Н.Чернышев-Шетмĕ, В.Чернов, Н.Максимов, Н.Уткин тата О.Захарова хăйсен сăввисемпе такмакĕсене, калавĕсемпе юмахĕсене пичетлеме пуçларĕç.

Çавăнпа эпĕ литпĕрлешӳ ертӳçине, Василий Андреев юлташа, паян кун та ырăпа асăнатăп. Вăл пире литература ĕçĕнче куллен пулăшса, вĕрентсе пычĕ.

Эпир çакна асра тытса, ялти клуб çумĕнче литпĕрлешӳ йĕркелерĕмĕр. Çакна литературăна юратакан çамрăксене вĕрентсе пулăшу парас тĕллевпе тунă та ĕнтĕ. Çавăнпа та çырма ĕмĕтленекен çамрăксен çĕнĕ пултарулăх коллективне хутшăнма, унăн занятийĕсене активлăн çӳреме тăрăшмалла. Ушкăнра пысăк вăй пуррине яланах асра тытмалла.

Тепĕр хут калатпăр: сăвă çырасси çăмăл ĕç мар, вăл таса алăпа тумалли ĕç. Ахальтен мар пĕр критик: «Сăвă çырассине эпĕ чĕрене операци тунипе танлаштаратăп», – тенĕччĕ.

«Сăвă – романтизм ялавĕ», – тенĕ Александр Блок. «РЕВОЛЮЦИЛЛЕ РОМАНТИЗМĂН ЯЛАВĔ тейĕпĕр эпир», – тесе çырать пирĕн аслă пиччемĕр халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай.

Çырма камран вĕренмелли паллă. Вырăс классикĕсем А.Пушкин, М.Лермонтов, В.Маяковский, хамăрăн чăваш поэчĕсем Ç.Элкер, П.Хусанкай, Я.Ухсай, Çеçпĕл Мишши, К.Иванов – пирĕн маяк пулса тăраççĕ.

Хамăн статьяна кăвар чĕреллĕ поэтăмăрăн Çеçпĕл Мишшин сăмахĕсемпе вĕçлесшĕн:

Çĕн поэт ака та тутăр,
Утă çултăр,
Вутă çуртăр,
Ĕçлесе çĕн юрă хутăр,
Туй пулсан, – ташлатăр, култăр...

Гаврил Лосев,
Раççей писателĕсен Союзĕн членĕ,
Йĕпреçри Элкер ячĕллĕ тата республикăри
Талвир ячĕллĕ литература
премийĕсен лауреачĕ.
1963 ç.

АСЛИ

Анатолий Федорович Юман (Ермилов) 1932 çулта Ульяновск облаçĕнче çуралнă. КПСС Тĕп комитечĕн Хусанти аслă парт-шкулĕн журналистика уйрăмĕнчен вĕренсе тухнă, район, облаçри «Канаш» хаçачĕсенче ĕçленĕ. Поэт. «Телей сăпки», «Чĕмпĕр чулĕ калаçать», «Çунатсем» тата ытти кĕнекесен авторĕ. Журналистикăра та, илемлĕ литературăра та ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Малтанхисен тĕслĕхĕ çамрăк ăрушăн яланах пурнăç шкулĕ пулнă. Аслисен пултарулăхĕ, пурнăç опычĕ яш-кĕрĕме суйласа илнĕ çул çинче ăнăçусем тума хавхалантараççĕ, вĕсен паха енĕсене шута илсе ӳсме пулăшаççĕ. Кирек мĕнле профессие илсен те, кĕçĕннисем яланах аслисенчен вĕренсе ӳснĕ. Çав шутрах писательсен ăрăвĕ те, паллах. Генисем те хăйсене аслисенчен мăнна хуман. Асли пулма пĕртте çăмăл мар, ара вăл хăйшĕн çеç мар, пулас ăру сыннисемшĕн те яваплă-çке. Шел, çак чăнлăх ватăлмалăх кунра кăна пуçа пырса кĕрет.

Чăваш литературине илес пулсан, Çемен Элкер нумай

ăрури чăваш çыравçисен асли пулчĕ. Çулĕпе çеç мар, ăсталăхĕпе те. Вăл – чăваш халăх поэчĕ ята тивĕçнĕ малтанхи чаплă çыравçăсенчен пĕри. Унăн йышлă сăввисемпе «Хĕнхур айĕнче» ятлă эпикăлла сулăмпа çырнă поэмине шкул ачисем тăван чĕлхе асамне ăса хывнă. Поэт прозăра та, драматургире те, публицистикăра та ăнăçлă ĕçленĕ. Калавĕсемпе романĕсем таранах хрестоматие кĕнĕ, вĕсем классикла хайлавсем пулса тăнă. Ячĕсене асăнмастăп, вĕсем пурне те паллă. Ку чухнехи писательсем эпир пурте çав шедеврсене вуласа ӳснĕ. Çав вăхăтрах çамрăк авторсемпе те пурнăç тăршшĕпех ырми-канми ĕçленĕ вăл. Кĕнеке издательствинче,хаçат-журнал редакцийĕсенче вăй хунă май, вĕсен ал çырăвĕсене тишкерсе хак панă, çыравçă ăсталăхне алла илме пулăшнă. Ку енĕпе вĕçсĕр-хĕрсĕр тĕслĕхсем илсе кăтартма пулать. Тăван çĕршыв аслă вăрçи çулĕсенче вăйпитти ятлă-сумлă писательсем çапăçуллă çара тухса кайсан çак çăмăл мар ĕçе вăл пĕччен тенĕ пекех туса пынă.

Ман алла Çемен Элкер çав çулсенче литературăра малтанхи утăмсем тăвакан Владимир Садай пулас паллă прозаик патне çырнă çырăвĕ лекнĕччĕ. Нумаях пулмасть ăна эпĕ, ытти паллă писательсен çырăвĕсемпе пĕрле, Шупашкарти Патшалăх гуманитари институчĕн архивне упрама патăм. Вăт çав çырура Семен Васильевич çар хĕсметĕнче тăракан, халиччен нимĕнпе те палăрма ĕлкĕреймен чăваш каччин пултарулăхне асăрхани туллин сисĕнсе тăрать, хăй енчен ăна ырă канашсем парать, литература цехĕнчи ун чухнехи лару-тăрупа тĕплĕн паллаштарать. Çакă мана питĕ тĕлĕнтерчĕ те, савăнтарчĕ те. Кайран пирĕн ентеш, чăнах та, унăн шанăçне тӳрре кăларчĕ вĕт. Аслă пиччĕшĕн канашне тĕпе хурса ĕçлесе. Вăт çапла.

Владимир Леонтьевич Садай (Цырульников) 1926 çулхи çуркунне Чĕмпĕр енчи Пухтел районне кĕрекен Каша ялĕнче çуралнă. 1943 çулта фронта кайнă. 1949 çулччен Сывлăш-Çар флотĕнче службăра тăнă. 1945 çулта яппун самурайĕсене те

тăн кĕртнĕ. Вăрçă хыççăн Мускавра Литература институтĕнчен вĕренсе тухнă.

В.Садайăн илемлĕ хайлавĕсем нумай. «Летчиксем» роман ăна ăмăрт кайăк пекех литература анлăшне хăпартрĕ.

Перифери тунсăхĕ – писателĕн ӳсĕм çулĕнчи чи пысăк чăрмавĕ. Çакна эпĕ хам тӳссе курнăран калатăп. Пирĕн тăрăхра В.Садай тантăшĕ, тепĕр çыравçă тунсăхласа пурăнатчĕ. Вăл – Самар чăвашĕ, юлашки çулсенче Ульяновск облаçĕнчи Димитровград хулинче ĕçлесе пурăннă Яков Рогачев (Мăйрака Яккăвĕ). Çемен Элкер ун патне çырнă икĕ çыру сыхланса юлнă. Вĕсем унăн «Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем» кĕнекинче çапăннă. Малтанхи çырăвĕ айĕнчи дата – 1944 çулхи майăн 1-мĕшĕ. Ун чухне Ç.Элкер 50 тултарнă. Вăл хăйне юбилей ячĕпе саламланă çамрăка хуравлать. Чи малтанах саламĕшĕн тав тăвать. Унта «кулленхи вĕçĕмсĕр ĕçсем, вак-тĕвек те ывăнтаракан ĕçсем литература творчествипе ярăнса ĕçлеме чăрмантарни» çинчен çырать. Çырупа пĕрле хăйĕн корреспондентне «Ирĕклĕх юрри» кĕнеке ярса парать. Шупашкарта тухнă çĕнĕ кĕнекесем, вĕсем халăх хушшинче епле сарăлни, фронтри çухатусем çинчен хыпарлать: «Писательсенчен Ленинград фронтĕнче Данилов-Чалдун тата Ситта Ф. (Ситов майор) çапăçура геройла вилчĕç.

Хусанкай, Ухсай, Алга, Алагер т.ыт.те чылайăшĕ фронтраха. Ыттисем (Тукташ, Агаков, Малкай) чирлесе таврăнчĕç те халь Шупашкартах пурăнаççĕ. Тукташа писательсен Союзĕн правлени председателĕ туса хутăмăр».

Хăй çинчен çырса кăтартма та манмасть: «Вăрçă вăхăтĕнче чирлесе пурăннă пирки паллă произведенисемех çырса параймарăм. Çырма çыратăп-ха: пĕр «Лейтенант Смирнов» поэма тата тепĕр повесть – прозăпа. Сывлăх аптрамасан – пĕтерĕп. Вăрçă çинчен паллă япалах çырайман пирки юбилее (50 çул тултарнине) пĕр шавсăр ирттерес терĕм».

Халăх поэчĕ Ç. Элкер пурнăçра яланах сăпай пулнă. Çавна

май пирĕн тепĕр классик Александр Артемьев халăх писателĕ каласа кăтартни аса килет.

– Вăрçă хыççăнхи çулсенче çăкăр лавкки умĕнче вăрăм черет тăсăлса кайнă. Чи хыçалта Çемен Элкер тăнă. Такам ăна палласа лавккаçăна халăх поэтне черетсĕр кĕртсе яма ыйтать. Часах чăнах та черетсĕр иртсе çăкăр туянма ирĕк параççĕ. Семен Васильевич хăйне айăплă пек туйса малалла иртет, – тесе каласа кăтартнăччĕ вăл.

Иккĕмĕш çырăвĕнче халăх поэчĕ Я.Рогачеван «Герой Георгий Дюдюкин» поэмине тĕплĕн тишкерсе тухать. Поэмăна кирлĕ пек калăпласа çитерейменнине, герой сăнарне чĕррĕн кăтартса парайманнине асăрхать, техника çитменлĕхĕсене те илсе кăтартать т.ыт.те. Çав вăхăтрах автора çапса хуçмасть вăл, ăна малашне тимлĕрех ĕçлеме сĕнет кăна. Акă епле сăмахсем тупать вăл ăна хавхалантарма:

«Паллах, Рогачев юлташ, ку поэмăна пичете пама май çуккишĕн эсир кӳренсе е çилленсе ан тăрăр. Çитменлĕхсем çинчен пурне те çыру тăрăх каласа пама йывăр. Ун пирки сăмаххăн каласмалла. Творчество ĕçĕн малтанхи тапхăрĕнче ун пек çитменлĕхсем пулаççех вĕсем. Нумайрах, пикенерех ĕçлемелле. Кирек кам лайăх произведени çырсан – эпĕ чунтан савăнатăп».

Кайран Яков Рогачев, чăнах та, хăйĕн çырас ăсталăхне ӳстерсех пычĕ. Вăл чăвашла та, вырăсла та ăста çыратчĕ. Димитровградра тухса тăракан хаçатсенче чылай çул хушши вăй хучĕ, «Ульяновская правда» хаçат корреспонденчĕ те пулчĕ. Унăн сăввисемпе поэмисем вырăнти хаçатсемпе коллективлă сборниксенче тухкаласах тăратчĕç. Çав вăхăтрах темиçе кĕнеке кăларма та ĕлкĕрчĕ. Юхма Мишши йĕркеленĕ Чăваш писателĕсен Союзĕ ăна хăйĕн йышне те илчĕ. Шел, вăл пиртен вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ, пурăннă чух Союз членĕн билетне аллине тытса кураймасăрах çĕре кĕчĕ.

Çын ăнăçлă ĕç тусан уншăн савăнма пĕлни – акă Çемен Элкерĕн пурнăçри паха енĕсенчен пĕри. Ку е вăл автор пулта-

рулăхĕнче хĕлхем таврашĕ асăрхасан, ăна пур енĕпе те пулăшма тăрăшнă вăл. Чăннипех те пысăк писательсем пурте тенĕ пекех çапла пулнă та (М.Горький, А.Чехов т.ыт.те). Шел пулин те, ку чухне ят илнĕ писательсенчен чылайăшне çак ырă туйăм çитеймест.

Иртнĕ ĕмĕрти çитмĕлмĕш-сакăр вуннăмĕш çулсенче эпĕ хам ĕçлесе пурăннă Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи райхаçат редакцине Пушкăртра шăмă туберкулезĕпе асапланса пурăнакан çамрăка Владимир Дмитриев-Аптрамана тăлмачăра ĕçлеме чĕнсе илнĕччĕ. Унпа мана çыру урлă Альпăрт Канаш паллаштарнăччĕ. Çамрăк автор майĕпен хаçат ĕçне хăнăхса çитрĕ. Сăввисене те чиперех çырма пуçларĕ. Чĕмпĕр Енре хăйĕн телейне те тупрĕ, çемье çавăрса ача-пăчаллă пулчĕ. Унăн сăввисене Çемен Элкерпе Стихван Шавлы сумлă поэтсем те асăрхарĕç. Вĕсемпе вăл çыру та çŭретрĕ. Кайран сăввисем çамрăк талантсен «Çеçпĕл çеçкисем» кĕнекисенче, чăваш халăхĕн тĕп хаçатĕнче – «Коммунизм ялавĕнче» те кун çути курчĕç.

Çемен Элкере Петĕр Хусанкай пысăка хурса хаклани паллă, унăн 1944 çулта çырнă «Элкере – вăрçă хирĕнчен» сăввине аса илниех çителĕклĕ. («Çĕнтерŭ юрри» кĕнекере (1947 ç.) вăл «Элкере. Чăваш поэчĕсене» ятпа тухнăччĕ):

Нумай-и пурнăçăм, сахал-и, –
Пăхассăм çук калла-малла.
Сана тытма эп тивĕç алă,
Салтак пиччеçĕм, салтакла.
Пĕрре килет этемшĕн аллă,
Пуртех çитеймĕпĕр алла.

Эпир те, иртнĕ ĕмĕрти аллăмĕш-утмăлмĕш çулсенче литературăна кĕнĕ çамрăксем, Ç.Элкер витĕмне кашни утăмрах туйса тăнă. Чĕрĕ классикпе эпĕ малтанхи хут 1956 çулта, çамрăк писательсен канашлăвĕнче тĕл пулнăччĕ. Вăл

ун чухне президиумра А.Талвир, П.Хусанкай, А.Алка т.ыт. пирĕн кумирсемпе юнашар ларатчĕ. Тăхтав вăхăтĕнче фотокорреспондентсем пире Ç.Элкерпе тата П.Хусанкайпа юнашар лартса ӳкере-ӳкере илчĕç. Çав сăн ӳкерчĕк манăн халĕ те упранать.

Чăваш писателĕсене нихăçан та çăмăл пулман. Революци хыççăн В.И.Ленин ĕçлесе пурăннă çулсенче кăна вĕсем пĕр хушă туллин сывласа яма пултарнă. Ура хуракансем ун чухне те тупăнман мар. Ахальтен мар тăван чĕлхе шăпи Çеçпĕл Мишшине чунтан пăшăрхантарнă. Кун пирки вăл хăйĕн «Йывăр шухăшсем» сăввинче (1921) чĕрене пырса тивмелле çырса хăварнă.

Тепĕр вăтăр çул иртнĕ хыççăн шовинизм чирĕпе минренĕ тӳресем каллех пуçĕсене çĕклерĕç. Çакă периферинче уйрăмах сисĕнсе тăратчĕ. 1956 çулта Чĕмпĕрти историлле чăваш шкулĕ, И.Я.Яковлев чĕртсе хăварнă тăван культура вучахĕ, сӳнсе ларчĕ. Шкулсенче тăван чĕлхене вĕрентме чарни те пулчĕ. Çакнашкал лару-тăру пирĕн ятлă-сумлă поэтсене

Ӳкерчĕкре: Çемен Элкер çамрăк писательсем хушшинче. Иккĕмĕш ретре, сылтăмри – А. Юман.

пăшăрхантармасăр тăма пултарайман. Шăпах Çемен Элкерпе Петĕр Хусанкай влаçра ларакан яваплă тӳресем патне пăшăрхануллă çырусем çырса яни çинчен сас-хура çитрĕ. Ку вăл калама çук хăюллă утăм пулнă. Аслисен пуçарăвĕ пире те вăй парса тăратчĕ. Çĕнĕ чĕрĕлӳ тапхăрĕ пуçланчĕ. Чăвашсем тĕпленсе пурăнакан регионсенче тăван чĕлхепе вуламалли хаçатсем çуралма пуçларĕç. Ку енĕпе эпир, Ульяновск-Чĕмпĕр чăвашĕсем, малтанхисем пултăмăр. И.Я. Яковлев ячĕллĕ культурăпа çут ĕç обществи туса хутăмăр, кайран унăн никĕсĕ çинче культура автономийĕ йĕркеленчĕ.

Епле пулсан та, кивĕ чир хăй çинчен аса илтерсех тăрать. Кăçал акă ЮНЕСКО атласĕнче чăваш чĕлхи малашлăхсăр чĕлхесен шутне кĕнине илтсе тĕлĕнтĕмĕр. Эппин, лăпланса ларма иртерех-ха. Тăван чĕлхепе халăх вилĕмсĕрлĕхĕшĕн çĕкленнĕ кĕрешӳ паян та çивĕч тăрать. Çак кĕрешӳре пире, чăваш çыравçисене, аслисен ырă тĕслĕхĕ хавхалантарать.

Анатолий Юман.
2009 çул, авăн уйăхĕ.

ХУРАВ ПАРАЙМАРĔ

Геннадий Алексеевич Уткин Чăваш çĕрĕн Каçал тăрăхĕнчи Тукайра 1945 çулта çуралнă. Нумай вĕреннĕ, çамрăк чухне ачасене те шкулта вĕрентнĕ, ун хыççăн Чăваш педагогика институтĕнче тата пысăкрах пĕлӳ илнĕ. Вăл çитмен... Чулхулара КПССăн аслă шкулĕнче унпа пĕр вăхăтра çĕнĕ пĕлӳ илтĕмĕр. Район хаçачĕсен редакторĕсем те пулса куртăмăр, республикăри хаçат-журналта та хамăрăн пултарулăха чыслăнах кăтартрăмăр, литература çулĕ çине те ăнтарсах тухрăмăр. Çĕмĕрттеретпĕр – ăмăртсах!

Ун чухне эпĕ шкула çӳреме тытăнманччĕ-ха. Атте сурăх фермин пуçлăхĕнче ĕçлетчĕ те, киле каçа юлса таврăнатчĕ. Эпир, унăн малтанхи виçĕ ачи, вăл килмесĕр çывăрма выртмастăмăр.

Акă, пĕррехинче, атте çĕрле тенĕ пекех киле çитсе тăчĕ, пире тытса юратрĕ, апат ăшăтнă май сăвă калама пуçларĕ. Сăвви савăнăçлиех те мар-мĕн:

«Тĕнчере нумай
Юнлă кĕтессем,
Этем шăммипе
Акăннă çĕрсем.
Çаврака çĕре
Çаврăнса пăхсан,
Ун пек кĕтессем
Шутсăрах тупан».

Ку сăвă мана тата йăмăксене салхуллантарчĕ. Сăввине, атте каланă тăрăх, Элкер текен поэт çырнă иккен. Атте ăна çиччĕмĕш класра вĕреннĕ чухне пăхмасăр калама пĕлнĕ-мĕн те, халĕ те манмасть. Çавăн чухне эпĕ Элкер ятне пуçласа илтрĕм.

Шкул алăкне уçнă-уçманах Элкерпе тĕплĕнрех «паллашма» тӳр килчĕ. «Тăван сăмах» кĕнекере вăл çырнă сăвăсем сахал мар-мĕн. Мана ытларах çут çанталăк çинчен калаканнисем кăмăла каятчĕç:

«Кӳтнĕ пĕлĕт шăппăн шуса
Килчĕ хĕвел анăçрен,
Уя-хире хупăрласа
Илчĕ карса тӳперен.
Çитрĕ, çитрĕ вашлаттарса, –
Сапса ячĕ типĕ юр;
Аслăк айне кĕчĕç тарса
Чăххи-чĕппи, ула хур...

(«Хĕл ларни»)

Е тата:

«Шăпăр-шăпăр çумăр çуса
Çĕр кăкăрне шăварать,
Йывăç-курăк хавасланса
Хăвăрт пĕвве ярăнать».

(«Çуллахи çумăр»).

Элкер сăввисене пăхмасăр калама хăвăрт вĕренеттĕмĕр, яланлăхах ас туса юлаттăмăр. Пиллĕкмĕш-улттăмĕш классене çӳренĕ чухне поэтăн прозипе паллашма май килчĕ. Унăн «Унтри» калавне миçе хутчен вуласа тухман пулĕ! Хăш-пĕр сăввисене («Хурçă карап», «Çу кунĕ») сцена çинчен те сахал мар каланă.

Элкер – Çеçпĕл Мишшин традицийĕсене (йăлине) малалла аталантарнă поэт. Унăн ямб, хорей, анапест, амфибрахий мелĕсене тĕпе хурса çырнă сăвăсем йышлă. Сайра тĕл пулакан дактиль мелне тĕпе хурса çырнă сăвăсем те пур. Илсе пăхар-ха:

«Ирĕклĕ, уçă-çке ырă çу кунĕ!
Имлĕхлĕ çутă туртса чĕннипе
Тухрĕ çĕр-шывăн пытаннă чĕр чунĕ, –
Кӳчĕ илем вăл çара çĕр патне.

(«Çу кунĕ»).

Çара кайиччен çулталăка яхăн шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентрĕм. Çакна асăрханă: ачасем Элкер поэзине те, прозине те чăн-чăнах юрататчĕç, киленсе вулатчĕç, пăхмасăр калама вĕренетчĕç. Çарта строительсен отрядне лекрĕм. Ултçĕр салтакран çĕр аллăшĕ чăваш ачисемччĕ. Вĕсем хамăр республикăран çеç мар, Хусан, Ĕпхӳ, Ульяновск, Самар тăрăхĕнчи чăваш ялĕсенченччĕ. Хамăр чаçре мана клуб, библиотека, почта ĕçĕсене йĕркелесе тăма хушрĕç. Малтанхи тапхăртах (1965 çул) Шупашкартан «Коммунизм ялавĕ»

хаçата, «Ялав», «Тăван Атăл», «Капкăн» журналсене вун-вун экземпляр çырăнса илтĕмĕр (çар строителĕсен укçа сахал марччĕ). Чăваш салтакĕсем чăвашла хаçат-журнала алран ямасăр вулатчĕç.

1965 çул вĕçĕнче «Ялав» журналта Çемен Элкерĕн Г.В.Зайцев–Тал-Мăрса çинчен çырнă «Поэт, драматург, талантлă режиссер» очеркĕ пичетленсе тухрĕ. Салтаксем ăна кăсăкланса вуларĕç. Г.Зайцев çуралса ӳснĕ Тутар республикинчи Çĕпрел районĕнчи Чиркӳллĕ Упи ялĕнчен пĕр чăваш ачи пирĕнпе пĕрле службăра тăратчĕ (халĕ хушаматне ас тумастăп). Тал-Мăрса йăхне-тĕпне пĕлсех каяймастчĕ вăл, анчах хăйсен ялĕ çинчен çĕкленсе, хавхаланса каласа паратчĕ. Элкер очеркне эпир, чăваш ачисем, пĕрле пухăнса сӳтсе явăмăр.

1966 çулхи çуркунне çитсе тăнăччĕ ĕнтĕ. Çу варринче эпир Элкер патне çыру яма шухăш тытрăмăр. Çырăвне пысăках çырмарăмăр. Сăвăçа пултарулăх ĕçĕнче ăнăçу сунтăмăр, сывлăхлă, телейлĕ пул терĕмĕр. Нумай хĕн-хур тӳснĕ поэтăмăр ватăлса çитнĕччĕ çав ĕнтĕ. Хурав параймарĕ вăл. Çав çулхи авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра вăл вилни çинчен салху сăн ӳкерчĕклĕ, хура хашаклă некролог пичетленчĕ.

Геннадий Уткин,
Раççей Федераци писателĕсен Союзĕн членĕ.
Авăнăн 20-мĕшĕ, 2009 çул.

ЧĂВАШЛĂХШĂН ПАТТĂР КĔРЕШНĔ

Сергей Павлович Юшков 1918 çулта Етĕрне районĕнчи Атликасси ялĕнче çуралнă. Педагогика наукисен кандидачĕ, Чăваш педагогика институтĕнче тата университетĕнче студентсене чăваш литературине вĕрентнĕ. Литератор нушине самаях курчĕ ĕнтĕ вăл – иртнĕ хаяр вăрçа хутшăннăскер, нимĕç фашисчĕсене çĕнтерчĕ, анчах хăйĕн тăшманĕсене пи-

сательсен союзĕнче парăнтараймарĕ. Юрать хăюллă Юхма Мишши Чăваш писателĕсен Союзне йĕркелерĕ. Эпĕ те ун чухне унтах ĕçлеттĕм. Нумай кĕнеке авторне 1991 çулта вара Писательсен Союзĕн членне йышăнчĕç.

Эпир Палтай шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренетпĕр. Нимрен ытла чăваш литература урокĕсене савăнса кĕтсе илетпĕр. Пире вĕрентекен чăваш чĕлхи учителĕ те сăвăсем çыратчĕ, ирĕклĕ вăхăтсенче вĕсене хавхалансах вуласа паратчĕ. Ăна Павăл Данилччă тесе чĕнеттĕмĕр. Çулĕпе вăл пирĕнтен пĕр вунă çул аслăрахчĕ, çураласса районĕпе паллă Сăрьел ялĕнче çуралнă.

Раштав уйăхĕн пуçламăшĕнче пĕр ирхине пирĕн класа Павăл Данилччă яланхи пекех савăнăçлă пырса кĕчĕ. Эпир ăна ура çине тăрса хавассăн кĕтсе илтĕмĕр.

– Паян, ачасем, тепĕр паллă поэта вĕренме тытăнăпăр тесе вăл доска çине пысăк саспаллисемпе «Семен Васильевич Элкер», «Хĕн-хур айĕнче» поэма» тесе çырса хучĕ, пире тимлĕ итлеме хушрĕ. Пирĕн ун чухне хальхи пек чăваш литературипе хрестоматисем пулман. Учитель хăй вуласа е каласа панипе писательсен произведенийĕсене вĕреннĕ.

Павăл Данилччă ниçта пĕр пăхмасăр поэмăна илемлĕн каласа пама тытăнчĕ. Вăл пире «Нарспи», Шупуççыннин «Янрак Янтравĕ», Илле Тăхтин «Колчак» поэмăсене те пăхмасăр каласа панăччĕ. Вăл пăхмасăр йăлт астунинчен хытах тĕлĕнеттĕмĕр.

Шупашкарти педагогика институтĕнче вĕреннĕ чухне А.Алка ертсе пыракан литература кружокĕн черетлĕ ларăвне Çемен Васильевич Элкерпе Уйăп Мишши пычĕç. Кружок членĕсем паллă поэтсене ура çине тăрса кĕтсе илтĕмĕр, хытă алă çупрăмăр. Алка вĕсемпе паллаштарнă хыççăн чи малтан Элкере сăмах пачĕ. Поэт пĕрремĕш тĕнче вăрçинче аманнă май туяпа çӳретчĕ. Вăл пире

сĕтел хушшине ларнипе хăй сăмахне лăпкă та уçă саслăн каларĕ. Ытларах поэт «Хĕн-хур айĕнче» тата «Вăрçă кунĕсем» (мемуарсем) произведенисене çырни çинчен каласа пачĕ.

Питĕ активлă кружок членĕ Аркадий Сорокин унран ыйтрĕ: «Мĕншĕн эсир, Семен Васильевич, хальхи пурнăç çинчен мар, тахçан иртнĕ пурнăçа тĕп вырăна хуратăр?» Элкер вара çапла хуравларĕ: «Чăваш халăхĕн иртнĕ асаплă та хĕн-хурлă пурнăçне пĕлмесĕр хальхи пурнăçа хаклама пултараймастăр. Уйрăмах эсир – совет влаçĕн ирĕклĕхĕпе ӳснĕ çамрăксем. Сирĕншĕн пулсан пурнăç яланах хальхи пек ирĕклĕ те лайăх пулнă пек туйăнать. Çук çав, çамрăк тусăмсем, Ылтăн Урта патшалăхĕнче те, Раççей империйĕнче те чăвашшăн пурăнăç пулман, тӳсме çук йывăр, асаплă пулнă, темĕн чухлĕ пĕтернĕ... Эпĕ хамăн поэмăра чăваш халăхĕн асапĕн пĕр вуннăмĕш пайне те кăтартайман-ха. Тен, вăхăт тата вăй çитсен, çав Ылтăн Урта тапхăрĕнчи чăвашсен пурнăçне сăнлăттăм. Вăт кунта вара чăвашсем чăнах та тамăк хуранĕнче çуннă. Унтан тарса хăтăлнисем, халь пурăнакан Чăваш çĕршывне (ун чухне вĕç-хĕррисĕр сĕм вăрмансем, тарăн çырмасем пулнă унта) тарса ӳкнисем кăна хальхи халăха упраса хăварнă. Ун чухне вара çĕр çынтан пĕр-икĕ çын кăна упранса юлнă пулас. Çав Ылтăн Уртапа Хусан ханстви тапхăрĕ пулман пулсан, халĕ те вăтăр-хĕрĕх миллионлă халăх пулатчĕ чăваш».

Эпир унăн тарăн пĕлӳллĕ сăмахне шутсăр тимлĕ итлерĕмĕр. Ун чухне вăл чăваш кĕнекине кăларнă çĕрте тĕп редакторта ĕçлетчĕ.

Вăрçă хыççăн Шупашкара Чăваш патшалăх институтне вĕренме килсен, эпĕ Семен Васильччăпа сахал мар тĕл пулса сăмахланă. Уйрăмах ăна К.Маркс урамĕнче туяпа майĕпен утса çӳренĕ чух нумай хутчен тĕл пулнă, унпа сăмахланă. Вăл чăваш кафедринчи ĕçсемпе интересленетчĕ. Семен Петрович Горскийпе Михаил Яковлевич Сироткин филологи ăслăлăхĕн докторĕсем, профессорсем пулнишĕн савăнатчĕ.

Утмăлмĕш çулсенче чăваш чĕлхине хытах хĕстерсе çитерчĕç. Парти обкомĕпе Министрсен Совечĕ йышăннипе шкулсенче тăваттăмĕш класран тытăнса пур предмета та вырăсла вĕрентме постановлени кăларчĕç. Чăваш чĕлхипе литературăна вĕрентме те сехетсем сахал хăварчĕç, илнĕ сехетсене пĕтĕмпех вырăс чĕлхине вĕрентме куçарчĕç. Учрежденисенче, шкулсенче пĕтĕмпех вырăсла çеç калаçма хушрĕç. Хрущев шучĕпе, вак халăхсен чĕлхи коммунизм тума чăрмантарать имĕш. Пĕр Семен Васильевич Элкер партин çак тĕрĕсмарлăхĕпе кĕрешме çĕкленчĕ. Вăл партин Тĕп Комитетне те, обкома та чăваш чĕлхине хĕснине хирĕç çырусем çырать.

1962 çултаччĕ пулас, çĕртме уйăхĕн малтанхи кунĕсенче, унпа Маркс урамĕнче тĕл пултăмăр. Вăл манпа пĕтĕм чун тарăхăвĕпе чăваш чĕлхине хĕсĕрленĕшĕн кăмăлсăр сăмахларĕ. Эпĕ те хам тарăхăва пытармарăм. Элкер чăваш чĕлхине хŭтĕлеме ыйтса парти обкомне çыру янине пĕлтерчĕ. Эпĕ ăна тĕрĕс тунă тесе ырларăм.

Кайран пĕр-икĕ эрнерен пĕлетĕп: С.В.Элкере парти обкомне чĕнеççĕ те парти ертŭçисем халăх поэтне питĕ хытă вăрçаççĕ, çирĕппĕн асăрхаттарса хăвараççĕ. Пĕр тапхăр унăн произведенийĕсене кăларма чараççĕ. Вăт мĕнпе вĕçленет унăн кĕрешĕвĕ.

Анчах вăл пурпĕр чарăнмасть, чăваш чĕлхи прависемшĕн малалла та кĕрешет.

Сергей ЮШКОВ.
Чăваш писателĕ,
Алексей Талвир ячĕллĕ преми лауреачĕ.
1994, ака.

КУККАН МАНĂÇМИ СĂНАРĔ

Тряковсен «Тĕрек йăхĕ» çур Упакасси тесен те йăнăш пулмĕ тетĕп. Ман алла тахçан çав йăхран тухнă, Вăрнарта пурăнакан пĕр Тряковĕ хăй тертленсе çырса хатĕрленĕ Тĕрек йăхĕн «Чĕрĕ йывăççине» панăччĕ. Эпĕ унпа усă кураймарăм, хулăн тетраде хăйсен тăванне Николай Алексеевич Андреева парнелерĕм.

Йĕпреçре ĕçленĕ чухне Андрей Игнатьевич Тряковпа çывăхчĕ. Вăл вăрманпромхозра хуравлă ĕçре ĕмĕрне ирттерчĕ. Питĕ аван кăмăллăскер, нушаллă çынна пулăшма ялан хатĕрччĕ. Элкер унăн куккăшĕ пулни çинчен сахал мар аса илетчĕ. Аса илĕвĕсене çырса хăварма та манман вăл. Акă вĕсем:

«Тăван литературăра хăйĕн ятне пысăк сас паллисемпе çырса хăварнă Семен Васильевич Элкер манăн пурнăçра паллă вырăн йышăнать. Эпĕ хам мĕн ас тума тытăннăранпах унăн сăнарне, ăш пиллĕ калаçăвне ăша хывса пыма тăрăшнă. Кукка чăваш халăхĕшĕн калама çук улăпла ĕç туса хăй те юмахри Улăп вырăнне йышăнасси çинчен ача ăсĕпе тавçăрса илме пултарайман эпĕ. Шкула çӳренĕ çулсенче унăн кĕнекисене вулама тытăнсан чун-чĕреме ырă та мăнаçлă туйăмсем çупăрланă самантсене ăçтан манайăн? Кукка вулакансене савăнтаракан кĕнекесем çырма пултарнăшăн тивĕçлипех мухтанаттăм, мăнаçланаттăм. Манăн анне – Матрена Васильевна – Семен Васильевичăн аслă аппăшĕ. Вăл 1880 çулта Мăн Упакассинче çуралнă. Пулас сăвăç аслă аппăшĕн ăслă канаш-сĕнĕвне ăша хывмасăр юлман паллах. Вăл ăна пĕрремĕш тĕнче вăрçине ăсатса янă, аманса таврăнсан тараватлăн кĕтсе илнĕ. Тен, хăйĕн чун-чĕринче малтанхи хĕлĕхсем сасă пани çинчен те чи малтан аслă аппăшне хăйса каланă çамрăк сăвăç?

Хам çиччĕ-саккăрта чухне фронтран туяпа таврăннă куккана ас тума пуçланă. Ял çыннисемпе сассине хăпартмасăр

калаçни, унăн лăпкăлăхĕпе тӳреклĕхĕ мĕн паян кунчченех асра. Атăл тăрăхĕнче хуçаланнă выçлăх çула манма çук. Мăн Упакассинче униче çывăхĕнчех пурăнаттăмăр эпир. Анчах çав çулхине калча çăп-çăра шăтса тухмарĕ. Пусăсем çийĕн хура тĕс куçа йăмăхтарса çиçетчĕ. «Эй, Турă,çăлăнăç яр çĕр çине», – текех кĕл тăватчĕ анне кĕтесри турăш еннелле сăхсăхса.

Атте вăй питти çынччĕ. Вăл пĕрмаях вăрмантан лашапа вутă турттаратчĕ. Кил-хуçалăхра икĕ лаша тытнă. Çавсем çăлса хăварчĕç те пире выçлăхран. «Кун пек нуша-асап нумая тăсăлас çук, – ватă çын пекех сăмахлатчĕ пирĕн пата килсен Çемен кукка. – Самана йĕркеленсе кайĕ акă. Пĕчĕк Читри те (ку эпĕ) шкула çӳреме тытăнĕ».

Ял канашĕн çыруçинче ĕçленĕ май куккăн килĕнче те пĕчĕк библиотека пурччĕ. Эпĕ ун патне пырсан вăл мана тăтăшах ача-пăча кĕнекисем пара-пара яратчĕ. Вулама пĕлмен пулин те ӳкерчĕксене пăхкаласа тухнă. Кӳршĕ-аршă ачисене те хушăран тыткаласа пăхма панă пуль.

Пĕчĕклех кĕнекесен тĕнчине лекни манра та вĕренес туртăма хускатма пулăшрĕ. 1928 çулта Кушлавăшра колхоз çамрăкĕсен шкулĕ уçăлчĕ. Эпĕ унта вĕрентĕм. Ку вăхăт тĕлне кукка Шупашкарта, хаçат-журнал кăларнă çĕрте ĕçлетчĕ. Унăн сăввисем çине-çинех пичетленсе тухатчĕç. Ушкăнпа вулаттăмăр вĕсене. «Самана» ятлă сăвă кĕнеки те çитнĕччĕ яла. Ăна Семен Васильевич мана алă пуссах парнеленĕччĕ. Поэтăн пĕрремĕш кĕнекинче тăван вырăнсемпе лайăх пĕлекен çынсен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă сăвă нумайччĕ. Самана варкăшĕ сисĕнетчĕ вĕсенче. Ахальтен паман ĕнтĕ кĕнеке ятне çапла. «Çамрăк поэт çула тухсанах самана утăмĕпе утма тытăннине пĕлтерекен ят вăл», – тенĕччĕ куккан пĕрремĕш кĕнеки пирки Аркадий Эсхель сăвăç.

Эпĕ Элкерĕн чылай сăввине пăхмасăр калаттăмччĕ. Хам Улатăрти педтехникумра, каярахпа Канашри финанс технику-

мĕнче вĕреннĕ çулсенче унăн хайлавĕсене сцена çинчен пĕрре кăна мар вуланă.

1926 çулта, вун иккĕ тултарайман ача, Шупашкара пуçласа кайса куртăм – ялтан килнĕ, халиччен хула курман çынна пурте тĕлĕнтерчĕ. Ун чухне кунта курса çӳремелĕх суртсем те çукчĕ, анчах та кукка ĕç хыççăн мана Атăл хĕррине уçăлма илсе кайнине ниепле те манаймастăп. Хăй пĕр вĕçĕмех пăшăлтатса пыратчĕ. Ахăртнех, пуçĕнче тĕвĕленекен шухăшĕсене чуна пама васканă вăл. «Тепĕр темиçе çултан эсĕ ку вырăнсене паллаймăн та, – тетчĕ кукка мана çурăмран çемçен лăпканă май. – Шупашкар чăннипех пĕтĕм чăвашсен тĕп хули пулса тăрĕ. Ун çинчен сăвă-юрă сыракан та йышланĕ».

Ун чухне Элкерĕн сăмахĕсене чăнласа йышăнма пултарайман эпĕ. Вăл шӳтлесе калаçнăн туйăнатчĕ.

Каярахпа та кукка патĕнче темиçе хутчен те пулнă, Шупашкар юмахри пекех хăвăрт улшăнса пынине курса тĕлĕннĕ. Тăваш çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланиччен Элкер «Родина» кинотеатр сумĕнче пурăнатчĕ. Вăрçă çулĕсенче Çамрăксен театрĕ сывăхнелле куçрĕ. Çав вырăнтах Николай Иванович Полоруссов-Шелепи хваттерĕнче чăваш халăхĕн икĕ мухталлă ывăлĕ пĕр-пĕринпе тĕл пулсан Гитлер çарне хăвăртрах çапса салатасси çинчен чунĕсене ыраттарса калаçнине пĕрре кăна мар илтнĕ.

Пӳлĕмре пусăрăнса ларса ĕçленипе кăна çырлахман манăн кукка. Шелепи хыççăн ăна 1940 çулта «Чăваш халăх поэчĕ» хисеплĕ ят парсан вăл нихăçанхинчен ытларах тăрăшма пуçларĕ. Çав хушăрах тăван тăрăха килсе кайма вăхăт тупатчĕ, ман пата кĕретчĕ.

1949 çул. Эпĕ ун чухне Йĕпреç вăрман пункчĕн пуçлăхĕччĕ. Кукка Йĕпреçре виçĕ кун пурăнчĕ. «Ыран санпа пĕрле вăрман ĕçлекенсем патне çитсе курасшăн», – терĕ вăл Шупашкара тухса каяс умĕн. Ирех лаша кӳлтĕм, Семен Васильевича тăлăп тăхăнтартрăм. Хĕллехи сивве пăхмасăрах

вăрмана тухса вĕçтертĕмĕр. Вăрман касакансемпе пĕтĕм кăмăлтан хавхаланса калаçрĕ сăвăç. Хăйĕн çинчен кăна мар, ытларах вăрман çыннисен ĕçĕ, вĕсен пурнăçне лайăхлатмалли çинчен калаçрĕ. Вăрман касакансем патăнчен таврăннă чухне Семен Васильевич писателĕн яланах халăх умне тухмалли пирки сăмахласа пычĕ. «Çынсемпе куçа-куçăн калаçсан чун уçăлать, – терĕ вăл. – Йĕпреçрен çĕнĕ хайлавсем çырас ĕмĕтпе каятăп».

Кайран та пĕрре кăна мар килсе çӳрерĕ Йĕпреçпе Мăн Упакассине Семен Васильевич. 1951 çулта ăна Çĕрпӳ суйлав округĕн Раççейĕн Аслă Канашне депутата суйларĕç. Тепĕр тăватă çултан çав округри суйлавçăсемех халăх поэчĕшĕн сасăласа ăна парламентра хăйсен интересĕсене хӳтĕлеме шанчĕç. Литературăпа общество ĕçне пĕр шайра пĕрешкел ăнланулăхпа тата пĕр пек яваплăхпа туса пынă хаклă тăванăмăр хăйĕн сывлăхне хĕрхенмесĕр ĕçлерĕ. Юлашки çулсенче пуçĕ ыратни çинчен калатчĕ, ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртме ĕлкĕреймесси пирки пăшăрханатчĕ. Ĕмĕрĕ вĕçне тухса пынине сиснĕ ĕнтĕ кăварлă чĕри.

1966 çулхи авăн уйăхĕн 6-мĕшĕнче Элкер пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ. Телеграмма илсенех мăшăрпа Шупашкара тухса кайрăмăр. Куккана юлашки çула ăсатма халăх йышлă пуçтарăннăччĕ. Ем-ешĕл чечек кăшăлĕсен хушшинче выртакан кукка Кушлавăш тăрăхĕнчи улăх-çарансен сипетлĕ шăршине сывласа вилĕмсĕрленнĕнех туйăнчĕ мана...»

Андрей Тряков.

Хăй пекех чĕррĕн курăнтăрччĕ

2009 çулхи çу уйăхĕн пуçламăшĕнче, Шупашкара С.В.Элкер çуралнăранпа 115 çул тултарнине паллă тунă çĕре Пысăк Упакассинчен пынă сывăх тăванĕ, писательсемпе тата Йĕпреç ентешлĕхĕн пуçлăхĕсемпе масар çине кайса килнĕ хыççăн, манпа хурлăхлăн калаçрĕ:

«Семен Васильевич 1960 çулта пирĕн пата сакăр страницăллă çыру янăччĕ. Унта вăл тăван яла пырса курас, ялйышпа курса калаçас килнине чунтан палăртнăччĕ. Анчах хама япăх туятăп, сывлăх самайлансан çитме тăрăшăп тенĕччĕ. Эпир хамăрăн мухтавлă тăванăмăра кĕтме пуçларăмăр, урпа сăри туса нӳхрепе лартрăмăр пичкине, сурăх пусса шăрттан пĕçертĕмĕр. Анчах вăл яла килсе кураймарĕ урăх.

Вилес-тăвас пулсан Семен Васильевич хăйне Упакасси масарне пытарма ыйтнă. Вăл ĕмĕрĕпех ял-йышпа пурăнасшăн, вилсен те пĕрлех пуласшăн пулнă.

Анчах та унăн ĕмĕчĕ пурнăçланаймарĕ, ăна Шупашкарти Богдан Хмельницкий урамĕнчи масара пытарчĕç.

Ял масарне çапах та халăх йышлă çӳрет, хулари пек пĕчченикĕн мар.

Элкер менелникĕсене Пысăк Упакассине пырса çӳрекен нумай писателе пĕлетĕп эпĕ. Вĕсенчен Аркадий Эсхелпе Георгий Ефимов пирĕн тăван пирки ăшшăн аса илнисем ытларах асра юлнă. Эсхелĕ те мухтанса, те хăпартланса калаçрĕ пĕррехинче хăйне сăра курки тыттарсан, анчах ман хăлха паллă писатель сăмахĕсене пуç кунтăкĕнчен ку тараннчен те кăларса яман: «Эпир хамăртан яланлăхах уйрăлнă çыравçă юлташсене нихçан та манмастпăр. Вĕсен вил тăприсене писательсен союзĕ типтерлĕн йĕркелесе тăма пулăшать. Çемен Элкер тусăмăра та çаплах капăрлатса усратпăр».

Паян масар çинче пултăмăр та, тĕлĕннипе куççуль тухрĕ. Унăн вил тăприне юхăнтарса яма пуçланă. «Мĕншĕн çуккă-ши паянхи писательсем хушшинче Эсхелсем. Ялтах пытарнă пулсан тăванăмăра, эпир унăн вил тăприне ял тирпейĕпе тытса тăраттăмăрччĕ. Ял халăхĕ умĕнче те, аякран килекенсен умĕнче те намăс курман пулăттăмăр.

Çапла, чăваш халăх поэчĕн вил тăприйĕ те яланах хăй пекех чĕррĕн курăнтăрччĕ.

Клавдия Васильева.»

МАН ЯТПА – ÇЫРУ

«Здравствуйте, Владимир Прокопьевич!

Сирĕн çырăва илсе вуларăм. Спасибо! Чăн та, 2004 çулхи ака уйăхĕн вĕçĕнче Йĕпреçе пĕрле кайса килни, Пысăк Упакассинче, шкулта, Элкер музейĕнче пулни, унăн тăванĕсем патĕнче шӳрпе çисе хăналанни, пире вĕсем ăшшăн кĕтсе юрăпа ăсатса яни халĕ те куç умне тухса тăрать. Мана хушнă темăна – «Элкер ман пурнăçра» – материала çырма мана йывăр. Çапах та Семен Васильевичсен çемйипе пурнăç мĕнле çыхăнса кайни пирки пĕлтерме пултаратăп.

Чутайран аякра вырнаçнă упакассисемпе тăванланса-çывăхланса кайрăмăр. С.В.Элкер мăнукĕ манăн кин пулать, Люда ятлă, ăна ман ывăл качча илчĕ. Вĕсен икĕ хĕр. Асли Мускавра «Халăхсен туслăхĕ» университетĕнче вĕренет, виççĕмĕш курсра. Паян пĕр ушкăн студент икĕ уйăхлăха Африкăри пĕр патшалăха каять, вăл шутра – Элкер правнукĕ Маша та.

Элкерĕн хваттерне, унăн арăмне Евдокия Алексеевнăна, лайăх астăватăп. Элкерĕн тĕп хваттерне, Карл Маркс урамĕнчине, ывăлĕ, Петр Семенович, урăх çынпа улăштарчĕ. Улăштарни 15 çул та иртсе кайрĕ. Халĕ Петр Элкерсем Юрий Гагарин урамĕ пуçланнă кĕтесри пӳртре пурăнаççĕ.

Шупашкарăн универмагне хирĕç ларакан тахçанхи тăпăлка çурта, Элкерсен унти лăпкă хваттерне, халĕ те пырса кĕрессĕнех туйăнать. Вăл хваттерте эпĕ Элкерĕн чылай кĕнекине тытса вуланă. Пĕррехинче алла вĕсен родословнăй çинчен çырнă тетрачĕ лекрĕ. Питĕ кăсăкланса вуларăм та унта мĕн çырнине, вара хăш-пĕр страницисене тĕппипех çырса илтĕм. Тен мана, краеведа, хăçан та пулин кирлĕ пулĕ, терĕм. Çавсене çырса яратăп. Акă кĕскен çырса илни (ăна хама валли çеç çырса илнĕччĕ):

«Семен Васильевич Элькер. Родился в деревне Мăн Упакассы Ибресинского района в 1894 году». Андрей Михайлов çырса пынă пулас ун çинчен.

Элькер получил звание народного поэта вторым после Николая Шелепи. Открыл его образ, образ поэта, писателя, гражданина. Хорошо анализировал деятельность С.В.Элькера Николай Теветкел (вĕçне яснă çырман).

Ç. Мишши çырнă:

Килĕç чаплă, çивĕч ăслă
Кĕнекеçĕсем.
Чаплă та илемлĕ çырĕç
Ун чухне вĕсем.

Çак сасă паракансенчен пĕри С.В.Элкер, 1918 ç., – «Вăрçă хирĕсенче» кĕнеке кăларнă (çырнă).

Из родословного: Начало с 1660 по 1730 г.г.

Алиткей был язычником. Филипп – 1715, Гавриил – 1740. От Гавриила – Алексей (1760), Петр (1764).

От Петра – Павел (Марфа), Иван (1790). От Петра же – Федот (жена Ульяна Никитична).

От Федота – Никита, Дарья, Захар, Ксения, Иван (1880). От Федота – Василий (1843). Прожил 69 лет. Умер случайно от попадания мяса в сухое горло.

От Василия – Мария (1897), Семен (1894), Павел, жена Елена, Петр – Ирина, Егор – Дарья, Матрена, Федор – Евдокия, Иван – Ольга.

Семен Васильевич – жена Евдокия: Тамара (1921), Юрий (1930), Петр (1942).

От Петра – Юра, Люда.

P.S. От Гавриила – Алексей (1760). От Алексея – Ефрем, Роман.

Всего – 60.

С.В.Эльгер написал так:

«Восстановить это родословное дерево я решил после того, как в 1919 г. бывший священник Кошлоушской церкви Николай Александрович Архангельский разыскал мне несколько

имен из нашего родословия – отца, деда, прадеда и прапрадеда. Но он ошибся второпях в датах рождения или смерти некоторых родственников. Потом, в 1952 г., а затем с 1962 по 1965 годы я сам рылся в метрических книгах в Центральном чувашском архиве. В результате выявил ранее неизвестных лиц, принадлежавших к роду Гавриила Филиппова и уточнил дату рождения и смерти многих.

Кроме того очень памятлив был наш дед Никита Федотов (старший брат отца). Он еще до выявления Архангельским все рассказывал о том, что прадеда нашего звали Петром, прапрадедов – Гавриилом и Филиппом. Притом Филипп был не крещен.

4 января 1966 г. С.Элкер».

Çакăн çинчен çырнă тетрачĕ халĕ унăн ывăлĕ патĕнче-ши, е кунта, Чутайри манăн дачăра. Библиотекăри çӳлĕк çинче тăнă кĕнекисем чылайăшĕ кунта – Чутайра.

Тата çакăн çинчен çырса ярасшăн. Карл Маркс урамĕнчи хваттерне юсанă чухне хăш-пĕр хучĕсем, ӳкерчĕксем С.В.Элкерĕн ăнсăртран çӳп-çаппала картишĕнчи ещĕке те лекме пултарнă пулас. Çавсене тепри пухнă та, хăйсемпе канашламасăрах усал хăтланнă. Хаçат çине çырнăччĕ ун çинчен. Хваттерне кĕртсе памалла çеç пулнă иккен çав авалхи документсене. Çавăн пирки Семен Васильевичăн тăванĕсем çилленнĕ, халĕ архивне кăтартасшăн та мар.

Çакăнпа вĕçлетĕп, куриччен.

Салам юлташусене, килти тăванусене.

Владимир НЕМЕШКИН.

7.09.2009 ç.

ВИҪҪĔМĔШ СЪЕЗДА ХУТШĂННИСЕМ

Çак сăн ӳкерчĕке 1952 çулта, Чăваш писателĕсен III съездĕнче ӳкерттернĕ. Вăл Шупашкарта çĕртме уйăхĕнче иртрĕ. Çав çул республикăн литература пурнăçĕнче сахал мар çĕнĕ ӳсĕм пулнăччĕ. Ухсай Яккăвĕн «Ту урлă çул» сăвăлла романĕ тухнăччĕ. Петĕр Хусанкай «Чĕре юрри» сăвă-поэма кĕнеки кăларчĕ. Çемен Элкер вулакансене «Шурăмпуç килсен» романĕн çĕнетнĕ иккĕмĕш кăларăмне парнелерĕ. Владимир Садай икĕ томлă «Летчиксем» романăн пĕрремĕш кĕнекине халăх умне кăларчĕ. Тăван литературăна Леонид Агаков, Александр Алга, Хветĕр Уяр, Александр Артемьев,

Сылтăмран сулахаялла: пĕрремĕш ретре – Чăваш халăх поэчĕ Ç.Элкер, СССР Писательсен союзĕн председателĕсем Э.Успенский, А.Хусаинова, М.Прилежаева, парти обкомĕн секретарĕ С.Ислюков, иккĕмĕш ретре – В.Давыдов-Анатри, çармăс сăвăçи Г.Матюковский, Чăваш радиокомитечĕн председателĕ П.Николаев-Тарават сăвăç, В.Алагер, Т.Тани-Юн, И.Максимов-Кошкинский, П.Хусанкай, А.Алга, А.Талвир, В.Урташ, А.Афанасьев, Г.Ефимов; виҫҫĕмĕш ретре – мордва çыравçи И.Киняков, «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн литературăпа искусство пайĕн пуçлăхĕ И.Алтын-Баш, К.Пайраш, А.Медведев, тутар писателĕ Н.Давли, Н.Минин журналист, Л.Родионов, П.Щипцов, И.Пиняев, В.Ухли, П.Ялгир.

Василий Алендей тата ыттисем те çĕнĕ хайлавсемпе пуянлатрĕç.

Çав çулах Шупашкарта К.В.Иванов палăкне уçрĕç. Ăна Илле Кудрявцев скульптор ăсталанă.

Киевра Çеçпĕл Мишши сăввисене украинла куçарса «Хурçă шанчăк» ятпа кăларнă. Ю.Збанацкий «Çеçпĕл» роман тата киносценари çырма пуçланă.

1952 çулта чăваш яш-кĕрĕмĕ валли «Çамрăк большевик» хаçат çĕнĕрен тухма пуçларĕ.

Съездра писательсен калаçмалли нумай пулчĕ. Ун чухнехи председатель Леонид Агаков витĕмлĕ доклад турĕ. Съездра делегатсем те, Мускавран, Хусантан, Йошкар-Оларан, Саранскран килнĕ хăнасем те хĕрӳллĕ калаçрĕç, литературăна паха произведенисемпе пуянлатмалли майсене палăртрĕç.

Петĕр ЯЛГИР

ЮРАТСА ÇЫРНĂ КĔНЕКЕ

Чăвашсен паллă поэчĕ Митта Ваçлейĕ (Василий Егорович Митта) 1908 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче Чăваш АССРĕнче, Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуçĕнче (хальхи Первомайскинче), вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. 1924 çулта 8 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнă, 1922 çулта комсомол ретне кĕнĕ. 1928 çулта Ульяновскри педагогика техникумĕнчен вĕренсе тухнă, учитель ĕçне тытăннă. Пĕр хушă вăл Патăрьел районĕнчи «Октябрь ялавĕ» (хальхи «Авангард») хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ. 1930

çулта каллех учитель ĕçне куçнă: икĕ çул хушши Çĕмĕрле енчи Хутарти колхоз çамрăкĕсен шкулне ертсе пынă. 1932 çулта Шупашкара пурăнма куçнă: 1937 çулхи кĕркуннеччен Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Радиоинформаци комитетĕнче литературăпа драма передачисен редакторĕ пулнă. Ăна 1934 çулта СССР писателĕсен Союзĕн членне илнĕ. 1937 çулта поэтăн юратнă ĕçĕсенчен нумайлăха уйрăлма тивнĕ.

1955 çултан пуçласа литература ĕçне çĕнĕрен тытăннă, Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕнче литература консультанчĕ, «Тăван Атăл» альманах редакцийĕн секретарĕ пулса ĕçленĕ.

Митта Ваçлейĕ 1957 çулхи июнĕн 10-мĕшĕнче вилнĕ.

Митта Ваçлейĕ хаçат-журнал ĕçне хастар хутшăннă журналист-поэт. Александр Алга палăртнă тăрăх, вăл нихăçан та, нихăш кĕнекене те, вăхăт пуртан, ахаль анчах тишкерсе тухмасть. Унăн вăл статьяра хăйĕн шухăшне, ĕмĕтне пĕлтермелле. Калăпăр, С.В.Эльгерĕн шкул ачисем валли çырнă «Ешĕл хунав» ятлă пĕчĕк кăна кĕнеки, теприншĕн пулсан, тĕплĕн тишкерĕве тивĕçлех те мар пек. Анчах Митташăн апла мар. Вăл савăнса вуласа тухать те çуралнă шухăшĕсене хут çине ӳкерме васкать.

Чăваш АССР талккăшĕн виççĕмĕш пайĕ – вăрман. Ку вăл, халавлă чĕлхепе каласан, управлă халăхăн юратнă пурлăхĕ, перекетлĕн тытакан ешĕл ылтăнĕ. Чăнах та, истори пăтăрмахĕсем тĕлĕшпе нихăçан та тĕк тăман çĕршывра çакăн чул пурлăха тирпейлĕ те ĕмĕтлĕ халăх çеç сыхласа тăма тата, сыхланипе сахал, аталантарса пыма пултарнă. Уйрăммăн Сăр массивĕ çинчен каласан, ун пек пуян та пархатарлă вăрман пиртен кăнтăралла та (Атăл тăрăх), явкай еннелле те (Дон çийĕпе) урăх çук. Ун урлăшĕ тĕл-тĕл утмăл километра çитет, тăршшĕ çĕраллăран та иртет. Мĕн кăна ӳсмест, кам кăна пурăнмасть çак аслă вăрманта! Флорăпа фауна тĕлĕшĕнчен Сăр вăрманĕ – Совет Союзĕпе чи пехиллĕ кĕтессенчен пĕри. Ан-

чах ку ен пĕрре те упа ушахлăхĕ текен улах кĕтес мар. Кунта республикăн харсăр экономикăллă, çӳлĕ культурăллă вунă районĕ вырнаçнă. Промышленноçлă пысăк хуласем, уçланкăсенче ларакан тăтăш ялсем – çĕрĕç тата алăсталăх кооперацийĕсем, вĕсене кал-калăн çыхăнтарса тăракан ям тата авто çулĕсем, вăрман кăларакан юханшывсем, икĕ çĕртен каçакан икĕ чугун çулĕпе вĕсен юпписем – çаксем пурте кунти пурнăç вăйĕсем халăхăн саманине тивĕçлĕ шайпа тапса тăнине пĕлтереççĕ. Анчах çак вăрманта мыскараллă контрастсем те сахал мар, – авалхипе хальхи, иртнипе пуласси час-часах кунта çумма-çуммăн пурнăççĕ: те хирĕçӳре вĕсем, те мирлĕ килĕшӳре? Ĕшнере çӳрекен колхоз ĕнисем патне пăши пăрушĕ пырса тухни; Пасна çинчи хăнтăрсем, вăрман юхтаракансем иртсе каймассерен, хăйсен хуралчĕсене çĕнĕрен ятлаçа-ятлаçа юсани; упа мучи хăйĕн çырлаллă шурлăхĕсене иленнĕ хĕрсене туха-туха хăратни – çакă контрастсем вĕсем халап та, чăнлăх та. Контраст мар-и киремет юманĕ патĕнчен хальчченех шикленсе иртекен сурпанлă ватă кинемей тата унăн ывăлĕ – Атăлçи институтне пĕтернĕ вăрман ăсти, наукăсен кандидачĕ, чăваш юманне çĕнĕ меслетсемпе хунаттарасси çинчен çырнă кĕнекеçĕ?

Сахал ĕнтĕ Сăр тăрăхĕнчи вăрманта ал тĕкĕнмен хĕрхаллĕ чăтлăхсем. Пирĕн республика вăрманпа, çакă экономикăра паллă вырăн йышăнса тăракан пурлăхпа, тивĕçлĕ таран усă курать, вăрман тата унăн промышленноçĕ – чăваш çĕршывĕн чысĕ те, илемĕ те.

Çакна астуса тăрса, ирĕксĕрех пирĕн чăваш çыруçисем пирки ӳпкелешес килет.Мĕскершĕн тараватлă вăрмантан пăрăнаççĕ вĕсем, ма шалалла кĕмеççĕ, мĕскершĕн романтикăлла вăрман теми пирĕн литературăра хальчченех ал тĕкĕнмен хĕрхаллĕ чăтлăх пулса тăрать?

Рехмет Хусанкая, тавтапуç Элкере, – çак тунсăхлă сасса чи малтан илтекенсем çавсем пулчĕç. Хусанкай, ачасен кăмăлне тесе, вăрман çинчен ытарма çук илемлĕ сăвăсем çырчĕ, поэзи техĕмне чухлакан ăстасем ку сăвăсене пĕр сас-

ăпа: классикла! – тесе хак пачĕç. Чăнах та вĕсем – ламран лам, ăруран ăрăва, хрестоматирен хрестоматине каймалли çутă пуласлăхлă сăвăсем! Анчах вĕсем пирки эпир, сывлăх пулсан, тепĕр чух калаçăпăр. Халь – С.В.Элкерĕн очеркĕ, «Ешĕл хунав» çинчен. Тӳрех калас пулать, кун пек пултаруллă ĕç очерксен жанрĕпе чăваш çырулăхĕнче сахал пулкаланă. Иртнĕ çулсенче пире Леонид Коробовăн «Атăл çинче» ятлă очеркĕ савăнтарсаччĕ, – унта эпир ăрăмлă поэзи мĕнпур чиперлĕхпе ялтăраса тăнине куртăмăр. Чăн-чăн поэзи никĕсĕнче, пирĕн шухăшпа, виçĕ пăрăс: чĕлхе илемĕ, чĕре хĕлхемĕ тата çунатлă ăс, – саманана тивĕçлĕ илем, хĕлхем тата малалла чĕнекен пуçаруллă ăс. Çак элементсем пулсан, поэзи вара, нимĕнле жюри пиллемесен те, çын çине тухма кăкăр урлă теттесем çакмасан та, пултаруллă пурнăçпа пурăнать, халăхăн чĕлхи, чĕри, ăсĕ пулса тăрать. Çак пархатарлă элементсем Элкер очеркĕнче пур.

Очеркăн фабули, сюжет схеми, канви питех те ансат. Тарăнвар шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекен ачасем, хăйсен учителĕ Павел Петровичпа пĕрле, çывăхри вăрмана, колхоз грузовикĕ çине тиенсе, экскурсие каяççĕ. Вăрман хуçалăхĕн кантурĕнче çак ачасене Рунгш хушаматлă лесничи ырă кăмăлпа кĕтсе илет. Вăл, вăрман çĕршывĕнче ӳссе çитĕннĕ нумай вĕреннĕ чăваш çынни, ачасене вăрман тăрăх илсе çӳрет, ăнланмалла тата илемлĕ чĕлхепе халăх пурлăхĕ – вăрман мĕнле ырлăх пулса тăни çинчен каласа парать. Çавă анчах. Ачасем, лесничи калавĕ хыççăн, вăрман хуçалăхĕн опытлă ĕçĕсемпе паллашаççĕ, унтан, хаваслă çамрăк сассисемпе ешĕл вăрмана янăратса, киле таврăнаççĕ. Капла каланипе очеркра ăмсанмалли ытлашши нимех те çук пек. Анчах вуласа пăхăр-ха эсир кĕнекене! Мĕн кăна курмастăр эсир унта, мĕн кăна илтместĕр, мĕн кăна туймастăр! Çитменнине тата – çакă вăл пĕтĕмĕшпех хамăр патăрта, пире мĕн ачаран хӳтлĕх панă Сăр вăрманĕнче! Лесничин ачасен аудиторийĕ валли чăн-чăн маçтăрла йĕркеленĕ лекцине автор-художник, шкулта проек-

ци аппарачĕпе усă курнă пек, паха иллюстрацисемпе çутатса пырать. Эпир, çак кĕнекене вулакансем, хамăр çĕршывра мĕн тери хаклă та усăллă йывăçсем ӳснине, мĕнле сив кайăксем тата вĕçен кайăксем пурăннине пĕлетпĕр. Ку тĕлĕшпе писателĕн эрудицийĕ чăнах та халланмаллах вара. Тĕплĕн пĕлетпĕр-и эпир чăваш йывăçĕсем çĕр-çĕр тĕслĕ тавар пулнине, вĕсем, хальхи техникăпа авăрланнă пин-пин çын алли витĕр тухса, çĕр çĕрелле саланнине? Лайăх пĕлетпĕр-и эпир нумай область ачисемшĕн И.А.Крылов урлă çеç паллă пулса тăракан юптару персонажĕсем пирĕн патăрти вăрмансенче паян кун та пурăннине? Упа, кашкăр, тилĕ, мулкач, пурăш, сăсар, пăши, пакша, юс, шашкă, ăтăр тата ыттисем те. Нумай пĕлетпĕр-и эпир кĕпшĕл, сульха, хыркук, рункăш, улатăпа, карăк, ăсан, пăчăр кайăксем çинчен? Вĕсен ятне автор чăвашла кăна мар, авалтан пирĕн шкулсенче йĕркене кĕнĕ ырă йăлапа, вырăсла та каласа парать. Ку кăна мар, автор хăйĕн натуралистла тивĕçлĕ витĕр куçĕпе асăннă кайăксен уйрăмлăхĕсене ăстан палăртать, – кунăн сасси çапла, ку çавăн тĕслĕ, тесе каланипе кăна çырлахмасть, тата хăшĕ мĕнле вĕçнине те кăтартать (пĕри чăмса, тепри пăрлатса). Экскурсинчи ачасем çаксене пурне те, май килнĕ таран, хăйсем сăнаççĕ. Питĕ лайăх çырнă автор «ешĕл хунавсен» питомникĕ çинчен калакан пайне. Касăлса тавар пулакан йывăçсен вырăнне, ăслă çынсен хавалĕпе, çĕнĕ ăру кашласа ӳсет. Пурнăç сыпăнсах пырать. Паянхи хунав хулăсенчен 100-150 çултан йĕкĕр ытама кĕрейми юмансем çитĕнмелле. Час мар. Çавăнпа, шанчăклă пултăр тесе, йĕкеллисене аксах тăраççĕ, шăтнине-пĕрне пăхса ӳстермелле. Паянхи хулă вăл пулас кĕреш, ăна упрамалла. Çак шухăша сăнарлас тĕлĕшпе автор çырса кăтартнă туратлă патаксем пирки тухнă тав калама çук вырăнлă, кунта вара Элкер, художник анчах мар, педагог та, – вăл чăн сăмаха, суя юлташлăхăн принципĕсене пăхмасăр, тӳррĕн (вăрттăн-кĕрттĕн мар!) куçкĕрет калама вĕрентет.

Вырăнлă – автор тăвакан историллĕ экскурсисем те,

вырăнлă – лирикăллă отступленисем те. Çавăнпа та ку очерк прозăпа çырнă поэма пек вуланать, Савнă Короленкăна аса илтерет.

Кунта ытлашши, тĕлсĕр, виçесĕр япала ним чухлĕ те çук. Ачасен ушкăнĕ çине кĕтмен çĕртен мулкачпа тилĕ сиксе тухни те чăнласах ĕненмелле.

Çапла ку пĕчĕк кĕнеке, илемлĕ те пуян чĕлхепе килентернисĕр пуçне, нумай пĕлӳ парать, ĕмĕтлĕ шухăша ярать. Чăваш çамрăкĕсем вăрмана тата вăрман ĕçне хавас. Мĕн чухлĕ пирĕн вăрман ĕç паттăрĕсем – Улатăрта, Кирара, Буинскинче, Çĕмĕрлере? Атăл çинчи пĕртен-пĕр вăрман институтĕнче, Йошкар-Олара, вĕренекенсен тăваттăмĕш пайĕ – пирĕн республикăри çамрăксем. Сăмах май каласан, вăл институтăн директорĕ те чăваш, малтанхи ӳсĕмри комсомолец, халĕ паллă ученăй, СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ – Данилов. Нумайрах пулччăрччĕ çакăн пек çынсем, вара пирĕн çĕршывăн чапĕ – вăрман хăлхаллă, хир куçлă – тата та лайăхрах сарăлĕччĕ.

Çакăн çинчен калать, çакăн пек шухăшсене çуратать С.В.Элкерĕн «Ешĕл хунав» ятлă произведенийĕ. Ăна вăл тăван çĕршыва юратса, çамрăк чĕресенче амаланакан туйăмсене вăратса, пурнăç тăвакан халăхăн пултаруллă вăй-хăватне сума суса çырнă. Хавас чунлă ачасем кăна мар, эпир те, шăпчăк юрринчен тахçанах писнĕ хумхавсăр чĕресем, ку кĕнекене халавлăн хапăл турăмăр. Анчах ку кĕнеке Сăр вăрманне илсе кĕрекен малтанхи пионер сукмакĕ çеç, темелле. С.В.Элкер, çĕнĕ тема патне кайса килнĕ пирвайхи ходок, Сăр вăрманĕ чăваш писателĕсемшĕн иксĕлми çăлкуçĕ пулса тăнине пире çак кĕнекипе лайăххăн каласа пачĕ. Кунта ачасем валли те, ваттисем валли те çырмалăх пур. Çамрăксем пирĕн пушă вырăнта çуралман, вĕсен йĕри-тавра пурлăх, çак пурлăха малалла яма учитель пек ăслă, тăван пек илемлĕ, юлташ пек маттур кĕнекесем кирлĕ.

Рецензи туллирех пултăр тесе, кĕнекен çитменлĕхĕсене те

кăтартмалла. Ку пиртен тухакан йăлана чӳклес тĕлĕшпе çакна çеç калăпăр. Кĕнекери иллюстрацисене художник васкаса туни сисĕнет – çул май, икĕ ĕç хушшинче, е ирпе, вутуççинче, тенĕ пек. Тĕплĕ çырнă кĕнекене тĕплĕн иллюстрацилемелле. Сизов пек пултаруллă художникшăн ку кĕнекере материал пайтах. Ку пĕр пуçне, пĕр ӳкерчĕк айне те ăнлантарса çырман: те карăк, те ăсан? те тăмана, те услан?

Пихта йывăççисене С.В.Элкер чăвашла яхтă, тет. Эпир хальччен пĕлнĕ тăрăх, яхтă тени хырă йывăççин иккĕмĕш ячĕ. Н.И.Ашмаринпа В.Г.Егоров словарĕсем те çаплах калаççĕ. Эрне, яхтăпа пихта янтăрав тĕлĕшĕнчен пĕр майлă, ку ĕнтĕ питĕ те илĕртӳллĕ, анчах вĕсем пĕр йывăç мар. Пихта – шур чăрăш. Лиственница – чăвашла та пур, – лиçван, – Çĕпĕрти чăвашсем çапла калаççĕ.

Василий Митта.
1955 ç.

ЭЛКЕРЕ ЧУНТАН ХАЛАЛЛАНИ

* * *

Пулас халăх поэчĕ Александр Алга Çемен Элкерпе Митта Ваçлейĕн пултарулăхне епле пĕр вĕрене явма май килтернĕ.

Митта Ваçлейĕн 1959 çулта тухнă «Кăмăлăмпа шухăшăм» кĕнеки валли çырнă умстатйинчи А.Алган сăнарлă калани пур:

«Поэт-критик пирĕн тăван поэзире, – тенĕ унта, – Нарспи пек ĕмĕрлĕхе халăх асĕнче юлмалла сăнарсем курасшăн. Вĕсене шыра-шыра, вăл темиçе произведение тишкере-тишкере тухать. С.В.Эльгерĕн «Асран кайми» сăвăлла драмине тишкернĕ чух критик пуринчен ытла Иссине кăмăллать. Ăна вăл чи пуян та чи паха сăнар тет, ăна Нарспи йăмăкĕ вырăнне хурать, анчах унра ĕнтĕ çĕннине те нумай курать, мĕншĕн тесен вăл урăх самана-ра пурăнать, çавăнпа тем чухлех мала кайнă вăл кантăр варĕнче канлĕх тупнă пăлхавлă аппăшĕнчен. Çавăн пекех, вăл «Пурнăç чăнлăхĕ» статьинче «хамăр ялсем» поэмăри Улька çинчен савăнса сăмахласа пĕтерет те, юлашкинчен, çапла каласа ху-

рать: «Нарспи мăнакка тепĕр йăмăкĕпе мухтанма пултарать. Чăваш çырулăхĕнче Улька çуралчĕ. Салам сана, Силпи çĕршывĕ! Эс хăрхăм мар, эс хĕсĕр мар!» Иссипе Улька чăн-чăнах Нарспи йăмăкĕсем пулĕç-и, пулаймĕç-и – ăна пуринчен иртте-рекен критик – вăхăт калĕ, анчах Митта Ваçлейĕн чунтан килекен сăмахĕсенче такам та вăл пирĕн поэзире Нарспи пек ытарайми сăнлăхсем курасшăн çуннине туять».

* * *

Митта Ваçлейĕ

Ç.Элкере

Кас-кас пит хурлăхчĕ мана,
Чĕре наркăмăшпа тулатчĕ.
Аса илеттĕм те сана,
Пăртак лăш кайнă пек пулатчĕ.
Калаттăм: пур-ха, пур этем,
Тĕнче пĕтсех пĕтмен-и, тен...

* * *

Михаил Сироткин

«Элкер çырнă сăвăллă юмахсем халăх юмахĕсенчи сюжетсене анлăн усă курнипе, унпа пĕрлех юмахсенчи сăнарсен идейăллă пĕлтерĕшне ӳстернипе паллă пулса тăраççĕ.

Элкер произведенийĕсен чĕлхи – пуян чĕлхе. Вăл ăна халăх калаçăвĕнчи сăмахсемпе хăюллăнах усă курса пуянлатса пыни куç кĕретех палăрать».

* * *

Александр Алга

«Çамрăк чухнех эпир Элкерĕн «Вăрçă кунĕсем» романне пĕр тытсан аякка хумасăр вуласа тухрăмăр. Кайран, 1949 çулта ку кĕнеке «Вутпа çулăм витĕр» ятпа тухрĕ.

Вуласа тухрăмăр та Çемен Элкерĕн яш чухнехи пурнăçĕпе паллашрăмăр. Çак хушăрах пирĕн ума халăхăн асапĕ-терчĕ,

вăрçă хăрушлăхĕ, халăхăн кĕрешĕвĕ, кун-çулăн нумай-нумай енĕ килсе тухрĕ. Ку кĕнекене хăй хура-шур курнă писатель анчах çырма пултарнă».

* * *

Стихван Шавлы

«...Нимрен нимĕр тума çук. Поэт та çара вырăнтан çĕкленеймест. Есенин вырăс Рязань çĕрĕнче, Исаковскипе Твардовский Смоленск таврашĕнче вăй илеççĕ. Элкер Мăн Упакассинче, Хусанкай Сиктĕрмере, Ухсай, Константин Иванов хыççăн Слакпуçĕнче малтанхи утăм тăваççĕ, унтан поэзи тӳпине çĕкленеççĕ. Сăвăç тавракурăмĕ, унăн теми тăван çĕртен, тăван ялтан сарăлса, ӳссе пырать. Тарăна кайтăр çав тымар, вара сăвă-поэмăра тăван тавралăх сăнарĕ çеç мар, республикăпа çĕршыв сăнарĕ витĕр курăнса тăрĕ, çĕр сĕткенĕ тапса тăрĕ, чĕлхе пуянлăхĕ çирĕпленĕ, нихăçан та мăкалмĕ. Ăшăхра пултăр çав тымар – сăвăçа трагеди пырса çапать, ун пултарулăхĕ типсе ларать, ун пек сăвăç, юлташĕсенчен юлас мар тесе çырать пулсан та, вулакана шĕвĕ е хăлтăркка сăвăран пуçне нимех те «пиллеймест».

* * *

Николай Дедушкин

Историлле Çĕнтерӳ патне çитме питĕ йывăр пулчĕ. Совет çыннисем юратнă çĕршыва кар тăрса хӳтĕлерĕç, фронтра та, тылра та чăн-чăн паттăрлăхпа хастарлăх кăтартрĕç. Вăрçă çулĕсенче пирĕн писательсен хĕрӳллĕ сăмахĕ чăваш халăхне ирсĕр тăшмана хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме хавхалантарчĕ. Ун чухнехи сăвăсемпе поэмăсем, очерксемпе калавсем, повеçсемпе пьесăсем тăван халăхăн вăрçăрипе тылри паттăрлăхне, унăн шухăш-туйăмне лайăх уçса пачĕç. Çакă пуринчен ытла документлă произведенисенче палăрчĕ. Вĕсенче Тăван çĕршывăн мухтавĕ, совет çыннисен моральпе поли-

тикăлла пĕрлĕхĕ, тăшмана курайманни, ăна çĕнтерессе çирĕп шанса тăни питĕ уççăн курăнать.

Кам илтмен-тĕр тата Ленинграда хŭтĕлесе паттăрăн пуç хунă чăваш çамрăкĕ Иван Смирнов çинчен! Унăн вăрçăри мухтавлă ĕçĕпе вилĕмĕ пирки вырăс поэчĕ В.Рождественский тупă-пăшал сасси кĕрлесе тăнă сехетсенче сăвă çырать, П.Лукницкий писателĕн «Рождение бессмертия» ятлă калавне, К.Турханăн «Пулеметчик Иван Смирнов» очеркне, С.Элкерĕн «Вăл вилĕмсĕр» поэмине те пурсăмăр та ăшшăн йышăнтăмăр.

С.Элкер поэминчи вăрçă геройĕн сăнарĕ вулакан куçĕ умне Улăп-паттăр пек тухса тăрать. Совет халăхĕ ăна манмасть, герой ячĕ – вилĕмсĕр:

Чăваш ачи, чăваш çынни –
Совет çемйин тăванлăхне,
Мĕльюн çынсен ирĕклĕхне,
Сыхласшăн хучĕ хăй пуçне,
Вăл тивĕç чăн герой ятне.
Ун ячĕ вилмĕ ĕмĕрне.

* * *

Виталий Родионов
Эпир – пĕр тĕпрен

Пĕри манран ыйтрĕ: «Ăçти пултăн эсĕ?»
«Пĕлетĕн-и – терĕм – Кольцовка енне?»
«Юлташăм, ан кул-ха, ăна те пĕлмесĕр.
Тăхта-ха. Тен, эс Коротков тăванех?

«Ăçтан эс?» тесессĕн: «Пĕлетĕр-и, – терĕм –
Кушлавăш текен вун ик ялăн уйне?»
Умри чăвашсем алă тытрĕç: «Элкерĕн
Ентешĕ эппин. Тен, ун тăванех?»

Ытти халăхсен хушшинче те чылайăн
Ыйтаççĕ манран: «Сан килӳ ăçтарах?»
«Илтсе-и эсир Андриян Николаев...»
«Тăхта-ха. Тен, эсĕ те Шуршăлтанах?»

Таçти кĕтесре те мана питĕ лайăх
Пĕлеççĕ пулсан та, паллашчăр тепре:
Элкер, Коротков, Николаев
Манпа пĕр тăван. Эпир – пĕр тĕпрен!

1967.

Сăпка юрри

Хĕвел те килте ăшăрах текен туйăм
анне сĕчĕпех юнăмра юлчĕ-ши?
Кушлавăш текен çав вун ик яллă уйăм
кун-çулăмăн тĕнĕлĕ, чунăм ăшши.
Анне чĕрçине улăштарчĕ хыт çĕр,
кипке чĕркевне çут тӳпе ылмаштарчĕ.
Сăпка юррине илтсенех пурĕ пĕр
асамлă хăват хальхинче йăлт мантарчĕ.
Туратшăн хакли вăл пĕрремĕш папка,
кайран туратран пысăк йывăç çĕкленĕ.
Баха пĕличчен чылай тунă «паппа»,
асамлă сăпка юррине эп итленĕ.

Эй, юрă!
Ачалăхăмран вĕçсе тух,
инçе çулрисем те сана халĕ илтчĕр.
Ӳкес тенĕ чух, парăнас тенĕ чух
кăштах тĕлĕрсе каллех чĕр вăй илччĕр!

Йĕпреç, 1974, çу.

Тăван ен, Кушлавăш уйĕ

Улăх-çаранлă, тăп-тăрă шывлă,
Илĕртетĕн илемӳпе.
Ăçта кайсан та пирĕншĕн хаклă
Тăван ен, Кушлавăш уй.

Куккук сассиллĕ вăрманусем сан,
Сарă хумлă уй-хирӳсем,
Ырă та паттăр ĕçченӳсем сан,
Тăван ен, Кушлавăш уй.

Çакăнтах иртрĕ пирĕн ачалăх,
Юратуллă лăпкă каçсем.
Çакăнтах пĕрремĕш юрату та,
Куççуллĕ уйрăлусем.
Ытармалли мар кунти хĕрсене.
Каччисем те ĕçре маттур.
Мăшăр суйлама кунта çеç килĕр.
Сирĕн валли те савни пур.

24.04.1976.

Тĕпчев малалла пырать

Çынна ĕçсĕр пуçне асăну йĕрки те тытса тăрать иккен. Çемен Элкер çинчен калаçнă чух ăна çитĕнтернĕ Кушлавăш тăрăхĕ пирки чарăнса тăмасăр май çук. Элкер кунта çуралман пулсан, урăх çĕрте çуралман та пулĕччĕ. Илемлĕ тавралăх, кăмăллă çыннисем май панă ăна пултарулăха аталантарма. Эпĕ çапла шутлатăп: литературăра икĕ Элкер пур: пĕри – официаллă Элкер, тепри – кун кĕнекисенче юлни. Иккĕмĕшĕнче вăл чăваш халăхĕшĕн, шăпишĕн çунакан çын. Элкер пурнăçĕпе пултарулăхĕ чăваш идейи тавра иртнĕ. 1917 çул-

тах вăл чăваш хăйĕн чĕлхипе калаçманнишĕн пăшăрханать. Ху чĕлхӳне ан хурла, тет вăл кашни чăваша. Наци идеи тенĕрен, вăл 60-мĕш çулсен пуçламăшĕнче хайланă сăвă йĕркисене аса илер:

Ĕçленĕ хĕрĕх çул таран,
Чăвашлăха савса чунтан.

Çакă унăн пурнăç тĕллевĕ пулнă. Çав чăвашлăхшăнах ăна 30-мĕш çулсенче айăплама пăхнă, çăхавсем çырнă. 50-мĕш çулсенче «Хурапа шурă» повесть çырать. Ун пирки критиксем калаçсах кайман. Мĕншĕн? Унта класс кĕрешĕвĕ çук. Унта – чăн-чăн пурнăç. Повеçĕн тĕп шухăшĕ – кашни çыннăн турă çырни пур, унтан иртейместĕн тени. Анчах эпир хамăр пурнăçа мĕнле илемлетме пултаратпăр? Турă çырнипе килĕшӳллĕн, тасан ирттерме пултаратпăр. Эппин, кашни çыннăн турă çырнипе килĕшӳре пулмалла. Эпир Элкер пултарулăхĕ пирки тĕпчесе пĕлмен япаласем татах пур-ха. Çак ĕçсем кĕтеççĕ пире, тĕпчевçĕсене.

1994, çу.

* * *

Хветĕр Агивер

Леонид Леонов писатель çапла каланă: «Кашни писателĕн хăйĕн юратнă тĕп теми пур». Мĕнле тема-ши вăл Элкерĕн? Ахăртне эпĕ тĕрĕс шыраса тупрăм пулсассăн, «Вутпа тăвăл витĕр» романĕнче те, «Вунсаккăрмĕш çул» тата ытти поэмисенче те, ман шутпа, пĕр тема пулнă: чăваш чуралăхра пурăнать. Çав чуралăх, тӳррипе каласан, паян та иртсе кайман. Тĕрĕсех. Пирĕн литература вăйлă, эппин халăхĕ вăйлă, çыравçисем вăйлă. Кĕнекесем çырса халăха парнеленисĕр пуçне, халăх ăс-тăнне тытса тăнисĕр пуçне, паянлăха вĕсен патшалăха тытса тăма вăйсем çителĕксĕр. Вăл ӳлĕм писательсен, ӳнер тата ытти пултарулăх ăстисен аллинче пулнине курасчĕ.

Çемен Элкер пулни – халăх телейĕ. Пирĕн çуллен паллă тăвакан уявсем пур. И.Яковлев, К.Иванов, Çеçпĕл Мишши, Митта Ваçлей кунĕсем. Çемен Элкере асăнассине те йăлана кĕртесчĕ. Вăл ăна тивĕçлĕ. Чăваш çыравçисенчен пĕртен-пĕр вăл çеç хăй пурăннă чухне хăйĕн произведенийĕсене 5 томпа кăларма пултарнă. Унăн чăваш литературинчи виçĕ тĕп юпи ман шутпа çаксем – «Вутпа тăвăл витĕр», «Шурăмпуç килсен», «Хĕн-хур айĕнче». Çак произведенисем пурри чăваш халăхĕ пуррине, çухалманнине, хăçан та пулсан чуралăхран тасалассине калать.

1994 ç.

* * *

Петĕр Ялкир

Элкерьенче

Кушлавăш текен вуникĕ ял уйĕ
Çемен Элкере тытать асĕнчех.
Савса çутатать унпах-и тен, уйăх
Кунти таврана кăвак каçсенче.
Хĕвел те сапать хитре хирсем çийĕн
Чунтан ыр сунса сап-сар ылтăнне.
Кам тăрăшмĕ-ха хастарлăн каç-ирĕн
Татах пуйтарма Элкер çĕршывне?
Ăста кайăксем юрлаççĕ мăнаçлăн,
Сараççĕ Элкерьенĕн чапне.
Поэт кĕввинчен илеççĕ хаваслăн
Вĕсем кулленех юрлас хăватне.
Хĕн-хур айĕнчен тухса телей тупрĕç
Маттур чăвашсем Упакассинче.
Хайласшăн вĕсем тата шепрех пурнăç,
Элкер те тимлет ялйыш хушшинче.

* * *

Геннадий Кузнецов

«Элкер» «ĕлкĕр» тенĕ пек илтĕнет:
васканă вăл, «ĕлкĕрмелле ман» тенĕ.
Çуталакан таланчĕ тек хистенĕ
хĕлхем сапма çынсен ăсне-тăнне.

Сутман вăл, ăмсанман та кĕвĕçмен,
юлташĕсемшĕн хĕпĕртенĕ шутсăр!
Кĕрекере шав кăларман - ĕçмен,
Кану тĕлне пĕлмен те кăвак çутсăр.

Тĕнче çине таса куçпа пăхма
ун пулнă чыс та, тивĕç те, ят-сум та.
Уксах пулсан та, утнă япăх мар:
ăна хăратайман тумхахлă сулнăк.
Поэт! Çула тухсан, ан пул мĕлке!
Пире ал патăр кăмăллăн Элкер.

* * *

Георгий Федоров

Александр Артемьев. Чăваш вулаканĕшĕн ĕмĕре сăваплă ят. Сăнарлă сăмах анине вăл мĕн кĕçĕнренех савнă. «Тăваттăмĕш класс пĕтернĕ тĕле манăн хам «карталанă» сăвă тетрачĕсем те пурччĕ ĕнтĕ», – аса илет каярахпа прозаик. Ал вăйне пĕлмелĕх тенешкел, çырни-тунине аслă çулсенчи пултаруçăсем патне çитересси те килет. «Шупашкара, Элкер писателе» палăртать адресне Ванька Жуковла. Элкер 12 çулхи ачана кӳрентерес темест, хавхалантаруллă хут çырса ярать. Кунран курмалăхне, хастарлăхĕ ӳсет çамрăкăн: çырма ал кĕçĕте-кĕçĕте тăрать. Хайхи, 17 çула çитнĕ кӳлĕмре вăл 234 сăвă, 2 поэма, 2 повесть авторĕ.

Авă епле хавхалантарма май тупнă чăваш халăх поэчĕ Çемен Элкер пулас чăваш халăх поэтне.

Родионов с актерами

ГЕРОИ ЭЛЬГЕРА – НА СЦЕНАХ ТЕАТРОВ

В тридцатых-сороковых годах прошлого века Чувашия добилась больших успехов в социально-культурном преобразовании сел и городов. Выполняются программы культурной революции. Развивается литература и искусство. В духовном воспитании людей важную роль начало сыграть театральное искусство. Талантливая чувашская молодежь учится в Москве, Ленинграде у выдающихся мастеров театрального искусства. После окончания Государственного театрального института в 1940 году возвращается на родину Леонид Никонорович Родионов и с большим вдохновением ставит в Чувашском театре спектакль «Чакка» по поэме Семена Эльгера «Под гнетом» («Х\н-хур ай\нче»). Постановка молодого режиссера имела грандиозный успех. Вот как об этом пишет в своей книге «Театр, любимый народом», талантливый театровед Ф.Романова:

«Своеобразным мостом между предвоенным репертуаром и репертуаром военного времени в Чувашском театре стал спектакль «Чакка» по поэме С. Эльгера «Под гнетом». Спектакль, поставленный в 1940 году, по всем своим идейно-эмоциональным настроем он принадлежал военному времени. Более того, именно время – тревожное, напряженное, героическое – вывело на передний план основные мотивы поэмы, укрупнило образы главных героев. И многие строки поэмы зазвучали современно.

Содержание спектакля уводило к концу XVIII века. Подавлена Крестьянская война под предводительством Е. И. Пугачева, но еще не потухли пожары волнений, не склонили головы вожаки повстанцев, и в памяти народа жив образ «крестьянского царя».

...Жестоко избили за недоимки чувашского крестьянина Чакку. По закону за ним не должно быть недоимков: ведь долгие годы он нес тяжелую солдатскую службу. Но оказалось, что в солдаты его отправили вместо сына деревенского богача Алабита, совершившего грязную сделку с «конторскими». Личная обида Чакки скоро вливается в общенародный гнев против угнетателей, его судьба оказывается неотделимой от судьбы народной. Чакка становится предводителем повстанцев и с пламенным призывом встать на борьбу за свободу обращается к угнетенным. Когда его товарищи засомневались – хватит ли у них сил для победы, он отвечает:

Есть силы! Есть! Ведь мы — народ!
Ведь в нас начало жизнь берет.
Настал наш день, настал наш час...

Яркой, колоритной фигурой выступает в поэме народный певец Тевенеш. Ослабли руки старика, нет прежних сил. Но богачи боятся его не меньше, чем по-

встанцев, ибо велики его мудрость, его разум, сильно его оружие – песни, страшные для врагов и нужные для восставших крестьян.

Против крестьян направляются царские войска. Силы оказались неравными. Чакка вынужден бежать на Волгу, к бурлакам, жить вдали от деревни, от семьи. Лишь перед самой смертью ему удается встретиться со своим сыном – уже юношей.

«Чакка» стал первым спектаклем молодого режиссера Л. Родионова, который довольно быстро проявил себя самостоятельно мыслящим художником. Это яркое историческое произведение, эпопея народной жизни, в военные годы живо перекликалось с современностью. Спектакль прозвучал как глубоко патриотическое произведение. Несколько сезонов военных лет он не сходил со сцены.

Значительного творческого успеха добился молодой актер Л. Семенов в роли Чакки. Широкоплечий, рослый, он покорял внутренней силой, мужеством. Вначале угловатый, замкнутый, он преображался, становясь вожаком повстанцев, покорял открытостью чувства, смелостью и решительностью, душевностью.

Не меньшее впечатление оставлял образ народного певца, доброго и справедливого Тевенеша, в исполнении совсем молодого Б. Алексеева, сумевшего передать мудрость народа, его непреклонность, его силу.

...Идёт первый акт. В деревню опустошающим вихрем налетают слуги Алапита (артист Г. Фадеев) – сегодня день сбора податей. Правые и неправые – обобраны будут все. Веками угнетаемый народ безропотен. Лишь один из них – Чакка (артист Л. Семенов) – не желает терпеть насилие. Он восстает против бесправия. Но силы неравны, его жестоко избивают. Глухое возмущение крестьян остается затаенным, невысказан-

ным. И вот тогда, как и прежде в тяжелые минуты народного горя, рядом с ними появляется Тевенеш-Алексеев. В белом одеянии, седой, как лунь, со своими неизменными гуслями в руках, спокойный и величественный на фоне озверелых врагов, он вырастает в монумент народной мудрости и справедливости. Слуги Алапита бросаются к нему, чтобы схватить и так же, как с Чаккой расправиться. ...Сильный в своей правде, он уверенно и смело шагнул им навстречу, гневно сверкнули его глаза, грозно зазвучал голос певца. И застыли на месте враги. Это был сам народ... В Тевенеше-Алексееве было столько внутренней силы, столько убежденности в правоте своего поступка, что подобное решение сцены совсем не выглядело нарочито, надуманно. Внутреннее состояние актера было так жизненно убедительно, что эта мизансцена лишь помогала выражению сути роли. Молодой актер добился многого – при скупом внешнем рисунке сумел передать богатое содержание образа. Его успех в этой роли был так значителен, что дирекция театра, вынося своим приказом благодарность всей труппе, особо выделила игру двух актеров – Б. Алексеева в роли Тевенеша и Л. Семенова в роли Чакка.

Сильными, жестокими врагами крестьян представали в спектакле Алабит в исполнении Г. Фадеева и Бурмистр в исполнении П. Медикова.

Спектакль заканчивался сценой смерти Чакки. Бурлацкой лямке отдал народный герой свои последние годы и силы. И вот теперь, больной и старый, он умирает среди таких же обездоленных людей. ...Крутой берег Волги. Где-то вдали светятся костры, на небе сгущаются грозовые тучи. Внизу, у самой Волги, в грустной песне бурлаки изливают тоску по родине.

Природа как бы слита воедино с судьбой Чакки. И вдруг вторгается новая тема: появляется Илюш, сын Чакки. В финале заключался многозначительный смысл. Илюш, преемник дела народного героя, должен был оказаться рядом с отцом, чтобы принять наказ и благословение на продолжение борьбы. Веру в жизнь, уверенность в светлое будущее вносил в спектакль этот сюжетный поворот. Эпизодическую роль Илюша играл один из ведущих актеров театра – А. Ургалкин. Перед зрителем как бы представал новый Чакка, сильный, смелый, как достойный продолжатель дела отца.

Спектакль «Чакка» встретил горячий отклик зрителей. Так, Калининская районная газета 31 июля 1941 года, рецензируя спектакль, подчеркнула, что зритель сам выделил в спектакле мотивы героической борьбы народа за свободу. Многие сцены вызывали моментальную реакцию, будили глубокие патриотические чувства».

Будущему народному артисту СССР Борису Алексееву в спектакле Эльгера «Под гнетом» в инсценировке Ф.Трофимова (режиссер Родионов) посчастливилось играть и роль Текея очень успешно. Театральный критик В. Иокар, уделив наибольшее внимание творчеству актеров Чувашского театра, перечисляя мастеров сцены, среди которых первым был назван Борис Алексеев. Вот как писал он в своей статье, опубликованной в журнале «Театральная жизнь (№4, 1958 г.):

«Какая-то по-особому склоненная голова, острый подозрительный взгляд, семенящая походка - и перед нами удивительно колоритная фигура. Это не придуманная внешняя характерность, а точное выражение того внутреннего мира, которым живет этот человек».

В 1955 году на сцену Чувашского театра вышла драма Семена Эльгера «Асран кайми кунсем» («Незабываемые дни»), написанная по поэме «1918 год» в инсценировке И.Молодова, поставленная другим известным режиссером Константином Ивановичем Ивановым. В спектакле особо отличился своим незаурядным талантом актер Ефим Никитин.

С. Эльгерпе И. Молодов çырнă «Асран кайми кунсем» драмăри сцена. Сантăр ролĕнче – Е. Никитин.

«АСРАН КАЙМИ КУНСЕМ»

Мĕнпур кăмăлтан калатпăр: лайăх спектакль. Чăн ĕнтĕ, малтанхи курăм-туйăм çинчен асăрханарах калаçмалла, ан тив, чи тĕрĕс сăмаха ӳлĕм, пыра-киле, вăхăт сăнавĕ калатăр, анчах халĕ те, çак самантра, искусствăн таса хĕрĕвĕпе хăпартланса кайнă чух, калас килнине каламасăр чăтма çук. Тата, тепĕр тесен, пирĕн хаçатçăсен ĕçĕ те çавă: пурнăçри пархатарлă пулăм-тăвăмсене çийĕнчех палăртса пырасси, вĕсене паянхи кун ячĕпе хак парса хăварасси. Çавăнпа та, сăмах «ăшăлла» пулассине пăхмасăр, театр коллективĕ «куçăхасран» хăрамасăр, эпир çĕнĕ спектакле çĕнĕ çитĕнӳ тетпĕр, ăна ырă сунатпăр, вăл малашне ĕмĕтлĕ, вăрăм кун-çуллă пуласса шанатпăр.

«Вунсаккăрмĕш çул» поэмăра кăтартнă аслă пулăмсем, çав пулăмсемпе çĕкленнĕ тата çав пулăмсене çĕклекен хăватлă этемсем, искусство асамĕпе чĕрĕлсе, хăйсен мухтавлă пурнăçне тепĕр хут пурăнма сцена çине тухрĕç. Чăнах та асран кайми, яланах асра тытмалли мĕнешкел тапхăр!

Драма тăршшĕпех пирĕн саманари пултарулăх теми: халăх, революци, социализм çĕнтерӳллĕн янăраса тăрать. Аслă вырăс халăхĕпе тапраннă чăваш çĕршывĕ историллĕ ĕçсем тăвать. Ĕнтĕ ĕлĕкхи чăваш кĕтесĕ – упа ушахлăхĕ çук, халĕ кунта, 1918 çулта, пĕтĕм Россия телейĕшĕн кĕрешӳ пырать, вăрçă çулăмĕ уласа, мĕкĕрсе явăнать, вăрçă урапи юнланнă çĕршыв урлă аслати пек кĕмсĕртетсе каçать. Кам пăшал йăтма пултарать, çав революцие хӳтĕлеме каймалла. Революци салтакĕсем хушшинче пин-пин чăваш паттăрĕсем: Левенсем, Миххесем, Никантăрсем. Вĕсемпе пĕрле Исси (Лиза) пек хĕрсем те сахал мар. Вĕсемшĕн революци ĕçĕ – тăванран тăван! Октябрь чăвашсене, çĕрсĕр тĕкĕнсе пурăннăскерсене, çĕр панă, ятсăр, тивĕçлĕхсĕр пулнăскерсене, наци тивĕçлĕхĕ панă. Анчах çак ырлăха чăваш такамăн «милăçлă» аллинчен йышăнман, ăна вăл хăй, аслă

вырăс халăхĕпе пĕр харăс тăрса, ытти тăван халăхсемпе пĕр-пĕтĕм пулса, çапăçура туртса илнĕ. Чăваш çĕршывĕ вырăс революцийĕсенчен пĕринчен те юлман, вăл революци наукине, пролетариатăн ăсне, кĕрешӳ меслечĕсене ăнăçлăн вĕренсе пынă, ахальтен мар 1917 çулхи Октябрь тĕлне чăвашсем хушшинче те революцилле лару-тăру ĕлкĕрсе çитнĕ. Ытла та ăнланмалла пулнă революцийĕн задачисем! Революци ĕмĕрхи ĕмĕтсене çитернĕ. Кунсăр пуçне, революцие пуç пулса ертсе пыракансем те, революцие çарпуçĕ пулса сыхлакансем те чăвашсемшĕн ытла та сывăх çынсем пулнă. Аслă Ленин, пирĕн культурăшăн çамрăк чухнех ĕмĕр манмалла мар ĕçсем тунă çын, халĕ те, тĕнче ĕçĕсене ертсе пынă чух, чăваш халăхне асăнмасăр тăман; паттăр Чапаев, чăваш ачисемпе выляса ӳснĕскер, хăйĕн çарĕнчи чăваш салтакĕсене: маттур янташсем! тесе саламланă. Чăвашсем çакă юлташлăха, ĕмĕртен амаланса пынă туслăха нихçан та манман, ăна вĕсем яланах ĕçпе çирĕплетнĕ. Илер-ха çакăн пек тĕслĕхе.

Питĕрти рабочисем çур чĕрĕк çăкăрпа пурăннă чух, халтан кайса çапăçакан Хĕрлĕ Çар çăкăр ыйтнă чух, 1918 çулта, чăваш уезчĕсем – Етĕрнепе Çĕрпӳ – иккĕшĕ кăна миллион пăт ытла патшалăха тырă панă; ку хисеп пĕтĕм Хусан кĕпĕрни ун чух тăратнă тырăран 70 процент пулать. (И.Е.Петров. «Чувашия в период иностранной интервенции и гражданской войны»). Çак çăкăр сая кайман. Капитализм пусмăрне çĕнĕрен кӳрес текенсене Хĕрлĕ Çар пирĕн çĕршывран ĕмĕрлĕхех шăлса тасатрĕ; кунсăр пуçне – çăкăр-тăвар хире-хирĕç тенĕ пек – 1921 çул чăваш çĕршывĕ нихçан пулман хăрушă выçлăха кĕрсе ӳксен, ырă кăмăллă вырăс пролетариачĕ (чи малтан – Мускав) хăй çиес çăкăра чăваш ачисене парса тăчĕ.

Мĕнле йывăрлăхпа тухнă ун чух çавă миллион-миллион пăт тырă! Шалчи тулман чăваш буржуазийĕ, кулаксем, усламçăсем, куштансем, паллах, хăйсене пĕтерме çуралнă паттăра – Совет влаçне – çăкăр парасшăн пулман. Анчах тĕнчене çăлма

килнĕ ачан харсăр пăхаканĕсем сывăрман. Пĕр Етĕрне уездĕнчи комбедсем кăна 1918 çулхи сентябрь-ноябрьте пуянсенчен 953.770 пăт тырă туртса илнĕ, 180.899 пăтне выраннти чухăнсем хушшинче салатнă, ыттине патшалăха панă. (И.Е.Петров. Çӳлте асăннă кĕнекеренех).

Çак тапхăрта пуçланаççĕ драмăра кăтартнă ĕçсем.

Ял. Классен кĕрешĕвĕ. Пĕр енче – Левен большевик, унта – чухăнсем тата совет енне куçса пыракан вăтам хресченсем. Тепĕр енче – Каврук, çĕрме пуян ачи, патша офицерĕ, унта – ялти пуянсем тата Совет влаçĕ пĕтессе халланса тăракан тăшманла элементсем.

Анчах тĕнче асапĕпе çуралнă, тĕнчене çăлма килнĕ паттăр пĕтме шухăшламасть, вăл куллен улăпла вăй илсе пырать, хăйĕн тăшманĕсене ярса тытать, вара урăм-сурăм çапăçу пуçланать. Этем чунлĕ çын çак çапăçăвăн тулашĕнче юлма пултараймасть – пĕтĕм ял вĕресе тăрать, çаврăнса пăтранать. Юнлă тытăçусем, перӳ, вĕлерӳ, пĕчĕк ялта пуçланса, вăрçăн аслă хирĕсене куçаççĕ, пĕтĕм çĕре чĕтретеççĕ. Çакăн çинчен калать эпир курнă драма.

Ахăрса хускалнă халăх тинĕсĕ, социаллă хирĕçӳсем, уйрăм çынсен пурнăçĕнчи, йăлинчи тавлă хутшăнусем, тытамаклăн кисрене-кисрене илсе, акăш-макăш драмăллă конфликтсем, коллизисем пулса, ĕмĕр асран кайми сăпатпа ӳтленсе сăнарланаççĕ. Кунта курмалăх та, пăлханмалăх та, вĕренмелĕх те пур. Хумхантарать, шухăша ярать.

Чăвашсен авалхи сăмахĕ: «тамаша», историн тĕрĕсмарлăхне пула, кайттă пĕлтерĕш туянман пулсан, эпир, çак спектакле курнă хыççăн: акă вăл тамаша, тенĕ пулăттăмăр.

Икĕ каччăн пĕр шухăш – пĕр хĕре юратаççĕ, анчах пурнăçра вĕсен икĕ тĕрлĕ тĕллев. Пĕри – Левен, ĕçхалăх ачи, учитель, салтак, командир, хăйĕн телейне вăл халăх телейĕшĕн кĕрешес ĕçре курать. Левен шухăш-кăмăлĕ таса, илемлĕ, вăл ача пек çепĕç – юратнă чух, арслан пек хаяр – курайман чух. Унăн çамрăкранпах пĕр шухăш:

Инкеклĕ чухăна курсан,
Хам выç юлам – пулăшмалла.
Пулăшмасан, чун пушă ман...
Инкек курсан, – пĕрле тӳсĕп.
Вăл савăнсан – эп хĕпĕртĕп.
Мăнаçлă çын е вăрă çын,
Усал ĕçсем тăвать пулсан,
Ăна çапас килет пуçран.
Юратнă халăх хушшинче
Пулминччĕ чир-чĕр, мĕскĕнлĕх;
Тăван çĕршывăм çийĕнчен
Часрах сирлинччĕ тĕттĕмлĕх.
Курасчĕ ман тĕнче тени
Çурхи кунсем пек тăнине.
Курасчĕ пур чăваш çынни
Культурлă, чыслă пулнине,
Эп çавăншăн вăя хурап,
Пĕр çавăншăн эп тăрăшап.

Çакă вăл ахаль такмаклу мар, Левенĕн пурнăç тĕлĕ, йĕрĕ. Куç уçăлнă чăваш çамрăкĕ, вăл халĕ ĕнтĕ тĕнче çине ăнланнуллăн пăхма пуçланă, вăл, хресчен тавракурăмĕн тăвăрлăхне çĕнтерсе, тĕнчене улăштарма, тĕнчене хăйĕн йĕрне хăварма килнĕ çĕнĕ Сетнер. (Сетнер тенĕрен, ку ят чĕлхе çине ăнсăртран килнĕ тесе ан шутлăр. «Вунсаккăрмĕш çул» поэма нумай енчен «Нарспие» аса илтерет. Элкер çыннисем пек туйăнаççĕ: Нарспи те, Сетнер те, Михетер те, Тăхтаман та пур унта, анчах, пурнăç малалла кайнине пула, вĕсен шăписем халĕ урăхла – пĕрисем тĕрĕссипе çиеле тухаççĕ, теприсем тĕрĕссипе историн çĕр-минне анса пыраççĕ, тĕп пулаççĕ. Çакă япала икĕ аслă поэт хушшинче тачă хурăнташлăх (преемственность) пуррине пĕлтерет. Çапла Ивановăн тĕрĕс традицийĕсем, ламран лама куçса пырса, чăваш çырулăхĕн тĕп шăнăрĕ пулса тăраççĕ).

Драмăри тепĕр герой – Каврук. Пуян ачи. Офицер. Вĕренкеленĕ çын пулсан та, унăн, Тăхтаман пиччĕшне кайса хунăскерĕн, чĕрере пĕр ырă кăмăл, чĕлхере пĕр ырă сăмах çук. Таса ĕмĕтлĕ, илеслĕ шухăшлă халăх интеллигенцийĕ чунпа-чĕрепе Ленин партийĕ енне тăнă чух, Каврук çапла калать:

Мĕскер пире тахçан пуласлăх!
Ăçта вăл сан илем пахчи?
Хресченшĕн пултăр халь хаваслăх!
Пире аван – вĕлтрен пахчи.
Эпир саватпăр, кăмăллатпăр
Çуталнă лăпкă ялсене.
Анчах коммунсăр. Юрататпăр
Асаттесен йăлисене.

Паллах, кив ял Каврукшăн «мемме», уншăн пурнăç тĕрекĕ – кивви, киввишĕн вăл, урнă кашкăр пек тилĕрсе кайса, кĕрешме пуçлать. Юратăвĕ те ун – юрату мар: аçалăх, çара физиологи. Вăл, революцие пула, хуларан яла тарнăскер, ĕлĕкхи аскăн пурнăçĕ пирки тунсăхлать, хула пикисене асăнать, ăна чăваш хĕрĕсен мораль хытлăхĕ тарăхтарать, вăл, ним тăвайман енне, авланса яма та хатĕр. Ун куçĕ тĕлне кӳршĕ хĕрĕ Исси – хĕрхаллĕн чăн-чăн илемĕ, тасалăхăн чи çӳлĕ виçи – тухса тăрать. Тен, кам пĕлет, акă илеме курсан, унăн таçта питĕрĕнсе, тăхăр хут пĕркенсе çывăракан этемлĕхĕ йăшăлтатма та пуçларĕ пулĕ, тен, выльăх-антроп чăн-чăнах юратса пăрахма та хатĕрччĕ-и, анчах та вăл, хĕр хирĕçнине кура:

Пĕрре алла çавăрсанах
Туптаттăм-ха ун кăмăлне;
Пĕлеттĕмĕр – çураçсанах
Ăна мĕнле тытмаллине...

тесе татăклăн еветлененинче эпир ним иккĕленмесĕрех Тăхтаман ятлă упăтене куратпăр. Унăн ăшĕнче юрату тĕвĕленмен те. Ку çын пурнăçа татулăх тата юратулăх пама килмен, ыл-

хан яма килнĕ. Ватă Тăхтаман аллинче – саламат, кун аллинче – пистолет. Вăл – этемлĕхе хирĕç хĕçпăшал çĕкленĕ усал.

Поэмăри, çавăн пекех драмăра, чи пуян та паха сăнар – Исси. Калас пулать, пирĕн чăваш литературин паттăр хĕрсем тĕлĕшпе телейлĕ «тĕс» парать пире. Ку тĕлĕшпе, Исси – Нарспин йăмăкĕ. Анчах мĕнле мала кайнă вăл кантăр варĕнче канлĕх тупнă хăйĕн пăлхавлă аппăшĕнчен! Исси тăван ялне, тăван килне, ачаран хăнăхнă йăласене, ялăн поэзиллĕ тăнăçлăхне юратать. Анчах ниçта та канăçлă та, тăнăçлăх та çук, чун пăшăрханать, асаплă вăрçă пырать, ял илемĕ – каччăсем акă тăватă çул ĕнтĕ юнлă хирсенче «ака» тăваççĕ. Телейсĕр те кичем хĕр ĕмĕрĕ, «ватта» юласси те инçе мар.

Левен таврăнать. Вăл хĕрлĕ командир. Иссишĕн тĕнче уçăлса каять. Йывăр шухăшсем – пулманпа пĕрех. Анчах Левенпе Исси хушшине Каврук тата кивĕ тĕнче тăрать. Хăрушă чăрмав. Çĕннин шăпи ун чух ытла та иккĕллĕн туйăннă. Исси килйышĕн кăмăлĕ, теветкел чунлă Левеншĕн мар, пуян Каврукшăн. Энтри, Исси ашшĕ, Левен çинчен илтесшĕн те мар. Хăш чух Исси те:

Атте-çке вăл... Итлес пулать,
Вăл калани саккун пекех, –

тесе, спектакль пăхакан хальхи çамрăксене тарăхтарать. Анчах Исси, ашшĕн тĕрĕсмарлăхне куратăркач, ку сăмахсене йăлашăн çеç калать, темелле, вăл хăйĕн ăнлавĕпе тахçанах ял йăлисен кивĕ хуппине çĕмĕрсе тухнă. Ахальтен мар вăл, Иванов поэмине пăхмасăр пĕлекенскер, Нарспи аппăшĕн пурнăç шăпине асра тытать, ахаль мар вăл хутла пĕлет, ăна шкулта Российĕри чи лайăх шкулсенчен вĕренсе тухнă учитель ăс панă. Исси тĕлĕнмелле сăпайлă. Каччăпа ларнă чух ашшĕ курасран тем пекех хăрать вăл. Çав вăхăтрах, хирĕçӳллĕ самант çитсен, вăл пĕрре те чăрманса тăмасть: ашшĕ хапхине шаплаттарса хупса, савни патне тухса каять. Исси шăй-шайран, ятлаçу-харкашуран хăрать, вăл çуйханнă пуху çине чӳрече-

рен пăхма та шикленет, çав вăхăтрах, хирĕçӳлĕх тулса çитсен, савнă тусне сыхлама пăшал айне хăй тăрать. Юлашкинчен Иссипе Левене эпир Чапаев çарĕнче куратпăр. Çĕнĕ тĕнче телейне мĕнпур ырă вăйсем хӳтĕленĕ чух, Нарспипе Сетнер – Иссипе Левен урăх çĕрте пулма пултарайман.

Чăваш академи театрĕ «Асран кайми кунсене» лартса, тепĕр хут калатпăр, пысăк çитĕнӳ турĕ. Вăйпитти коллектив хăйĕн çуллен-çул тĕрекленсе пыракан иксĕлми пултарулăхĕпе пире тепĕр хут савăнтарчĕ.

Чапаев образĕ пирки. Поэт ăна питĕ кăмăллăн, юратуллăн çырнă. Поэма тăрăх, Чапаев хăй хура халăхран тухнине те, хăй пысăк çар пуçлăхĕ пулнине те пĕр самант та манмасть. Унăн ĕçĕ-хĕлĕ, хăйне тыткалани çак ăнлануран килсе тăрать. Пирĕн шухăшпа, Борис Алексеев поэмăра кĕскен те витерӳллĕн панă герой образне çителĕклĕ туллин, çителĕклĕ тĕрĕссĕн сăнарлаймасть. Алексеевăн геройĕ хăй çар пуçлăхĕ пулнине час-часах манать, вăл хăйĕн пысăк чапĕпе мухтанса илме те хатĕр. Эрне, Алексеев тунă образра пире ĕлĕкренпех пĕлĕш геройăн илемлĕ енĕсем нумай: сăнран пĕр пекки, ытарма çук хăюлăх, тапса тăракан çутă энерги, чуна пăхăнтаракан уçăлăх – çаксем пурте пур, пĕр сăмахсăрах, ку вăл Алексеевăн тăрăшăвĕ сая кайманнине пĕлтерет. Анчах, кирек те мĕн калăр, Борис Алексеев тунă герой темшĕн вăхăчĕ-вăхăчĕпе янкăс тумланнă пĕр-пĕр грузин княçне аса илтерет. Поэмăра Чапаев ташламасть, спектакльте ура хуçса «ислетет». Артистăн тĕлĕнмелли ташă ăсталăхне кăтартас тесе, çар пуçлăхне ташлаттарма кирлĕ пулнă-ши?

Асăннă спектаклĕн вăйлă енĕ – революцилле пафос, кĕрешӳ романтики. Геройсем çĕкленсе каланă сăмахсем чуна кайса тивеççĕ, хавхалантараççĕ. Левен вилес пек аманнă савнине:

Эх, чунăмçăм, куçна уçсамччĕ,
Хĕвеллĕ кун кĕтет сана!–

тесе чĕре хавалĕпе чĕнни пĕрре те суян илтĕнмест.

И.Молодов драматургăн пайĕ ку спектакльте калама çук пысăк. Хăш чух генилле хăватпа çырнă драмăллă произведенисем те сцена çинче ăнăçлăх кураймаççĕ. (А.Пушкинăн «Борис Годунов»). Эльгер хăйĕн «Вунсаккăрмĕш çулне», ăна вăл драмăллă поэма тесе ят панă пулсан та, сцена валли çырнă теме çук, анчах пирĕн поэт драма ăсталăхĕ мĕн иккенне пĕлекен çыншăн калама çук пархатарлă материал кӳнĕ. Молодов поэмăна драма виçисемпе виççе, чухласа, майлаштарса, кирлĕ пек йĕркеленĕ, авторăн шухăшĕсене, сăмахĕсене тивмесĕр, поэмăри конфликтсене чикке çитиччен çивĕчлетнĕ, çĕнĕрен тупнă килĕшӳллĕ эффектсемпе пуянлатнă. Пайпа пай пĕр-пĕринпе çыхăнса, пĕр-пĕринчен килсе тăрать, драма хумхануллăн амаланса пырать. Чи вăйлă пай – Иссине çураçни. Молодов драматург ку пайра хăйĕн пултарулăхне чăннипех кăтартнă.

Драма тем анлăш, тем тарăнăш. Паллах, этем шухăшĕн çак улăпла капламне сцена çинче çĕклеме, пурнăç пама калама çук йывăр пулнă. Анчах спектакле тăвакан коллектив – поэтран, драматургран, режиссертан пуçласа сăмахсăр артиста çитиччен – пысăкран та пысăк вăй кӳнĕ. Лавçă – Маштанова пĕр сăмах кăна калать, вăл та пулин (сăнĕ, сăпачĕ, пĕртен-пĕр сăмахĕ) асра юлать.

Драмăн чĕлхи – сăвă. Ăна силлабо-тоника метрикипех йĕркеленĕ, анчах янтравĕ ун чăвашсен авалхи сăвă виçине питĕ те çывăх. Çак обстоятельство – драмăна сăвăлла çырни – пире малтан шиклентерчĕ те: ян кайĕ-ши, теттĕмĕр, тăршшĕпех тенĕ пек пĕр виçепе çырнă тирпейлĕ сăвă? Ахалех пулчĕ. Ургалкинпа Ерусланова калаçма тытăнсанах, артистсем ку тĕлĕшпе тĕрĕс тон илнине сисрĕмĕр: вĕсем, сăввăн куммине ытлашши пусмасăр, ураççине лайăхрах палăртма тăрăшаççĕ, урăхла каласан, сăввăн чĕлхи калаçу чĕлхи патне çывхарать. Уйрăм пафосла вырăнсенче кăна сăввăн янăравлă фонĕ хăватлăн кашлама тытăнать.

Çитменлĕхсем çинчен каланă чух, çакна асăрхаттарас ки-

лет. Каврук капитан фронтри салтаксене кун памасть, хĕнет, мăшкăллать, калăн, вăл фронтри офицер мар, тылри пĕр-пĕр унтер, тесе. Чăн, Каврук çын мар иккенне эпир малтанхи пайсенчех куртăмăр, анчах вăл, мĕнле пулсассăн та, фронтра ун пек хăтланас çук: пуля ун пеккисене умран кăна мар, хыçран та тивет. Тата тепĕр ĕненмелле мар вырăн пур. Шуррисемшĕн чи кризисла вăхăтра офицерсем çапла калаçса чакаççĕ:

Вăтам хресчен пиртен вăл тарчĕ,
Аван – Антанта пулăшать!
Пĕр ун çинче çеç пысăк шанчăк,
Тен, юлмăпăр-ха кулăша.

Мĕне кирлĕ çакăн пек «политграмота» вĕрентекен резонерсем! Кун пеккисем поэмăра татах та пур, драмăна та куçкаланă вĕсем. Авторсем хăш чухне ытлашши чăмласа пама тăрăшаççĕ. Калас пулать, пирĕн вулакансем, çавăн пекех кураканссм те, чăмлак ыйтма пăрахни чылай пулать ĕнтĕ.

Сцена çинче пуху хыççăн пуху кăтартма тытăнсан, спектакль «каçхи кĕлле» тухас хăрушлăх патне çитсе перĕнет. Çак айăп та çук мар драмăра. Çакна та калас килет. Çамрăксен рольне вылясси – чи малтан çамрăксен тивĕçĕ. Хăюллăнрах çул парăр çамрăксене. Тиркешместĕп, вăйлă вылять Молодов – Левен те, калама çук вăйлă – Ургалкин – Каврук та, анчах ӳте кайнă пилĕк-сурăма нимĕнле писевпе, нимĕнле гримпа пытарма çукки ку «çамрăксене» чылаях кансĕрлет.

Спектаклĕн вĕçĕ сулчă пĕтет. Хăватлăн янăракан юлашки аккорд çук темелле. Парад пырать, анчах çарсем курăнмаççĕ те, туйăнсах та каймаççĕ. Тен, поэт палăртнă пек, Иссипе Левен драма вĕçĕнче каллех уйрăлмалла мар-и? Поэмăра вĕсем, вăрçăн хаяр хистевне пăхăнса, пĕри – пĕр енне, тепри тепĕр енне каяççĕ. Ку шухăшра пысăк тупсăм – вăрçă вĕçленмен, 1919 çул пырать, телее çĕнтерсе илес тесен, татах вăй хумалла, татах кĕрешмелле.

Çӳлте асăннă çитменлĕхсем, паллах, тулли хăватпа пыра-

кан спектакле чăрмав кӳреймеççĕ, çапах та вĕсем пур, вĕсенчен хăтăлмалла.

Çапла, Чăвашсен государство академи театрĕн активĕнче тепĕр туяну – идея тĕлĕшĕнчен пуян, илем тĕлĕшĕнчен паха спектакль: «Асран кайми кунсем».

Митта Ваçлейĕ. 1955 ç.

ЭЛКЕР УЯВĔСЕМ

1940 çулта.

Чăвашрадиора ĕçленĕ чухне пирĕн хуçасенчен пĕри телевиденири Василий Сорокинччĕ. Тĕлĕнмелле асра тытатчĕ вăл хăйĕн пурнăçĕнче тĕл пулнă, пĕрле ĕçленĕ литературăпа искусство, радио çыннисене. Унăн вĕсем çинчен яланах пурччĕ мĕн те пулин аса илмелли, пурне те тĕлĕнтермелли. Пĕррехинче, радиостудине артистсем йышлăн пухăннă кун, вăл уçăлсах кайрĕ, ушкăнра калаçу рольне çавăрса тытрĕ.

– Эсир халĕ, хисеплĕ артистсем, Элкерĕн Чăваш драма театрĕ Игнатий Молодовăн «Вун саккăрмĕш çул» драмине питĕ ăнăçлă лартнă вăхăта паянхи кунпа çĕнетсе ятăр, – терĕ вăл. – Чăнах та вăйлăччĕ вăл постановка. Элкерне хăйне те лайăх астăватăп. Унпа сахал мар калаçнă. Унăн менелникĕнче те пулнăччĕ. Мухтанатăп унашкал ентешĕмсемпе – чăвашсемпе.

Çакна та лайăх астăватăп. 1940 çулхи пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче Элкер литературăра ĕçлеме пуçланăранпа çирĕм çул çитнине анлăн паллă турĕç. Савăнăçлă ларура Аркадий Ĕçхĕл унăн пултарулăхĕ çинчен доклад турĕ. Ăна писательсемпе общественность представителĕсем, тусĕсемпе юлташĕсем ăшшăн саламларĕç. Акă сăмах Иван Мучие пачĕç. Вăл сцена çине васкамасăр тухрĕ те икĕ сăмах çеç каларĕ: «Юбиляра салам». Пухăннисемшĕн кĕтмен япала пулчĕ ку. Вĕсем çавăнтах шавлăн ахăлтатса, зал кис-

ренмелле кулса ячĕç, тăвăллăн ура тапса алă çупрĕç. Иван Мучи сăнарĕ, унăн çав сăмахĕсем халĕ те асрах. Саламăн пĕтĕм тексчĕ çав кун «Канаш» тата «Красная Чувашия» хаçатсенче пичетленнĕччĕ.

Çапла вăл кулăш ăстийĕн сăнарлăхĕ.

ХАЛĂХРИ ЧЫСЛĂ ЯТ

1974 çулта

Алексей Александрович Воробьев

Вăрнарти тусăм М.А.Васильев, пĕрле хаçат кăларнă чухне, ялан хăйĕн ялне хăнана чĕнетчĕ. «Алексей Александрович килне килет». «Воробьев колхоз хуçипе Михаил Петрович Петровпа ятарласа уй тăрăх курса çӳрессĕн». «Çурçĕр Флотĕнчен Виктор Туринге капитан-лейтенант курма таврăннă та поэзи каçне Алексей Александрович ятаралса ун ячĕпе ирттересшĕн...» тесе хăналăх серепине лартсах пыратчĕ хăй те каçса кайсах лирика туйăмĕпе вылякан çыравçă. Те ĕçри, те вĕçри сăлтавсене пула эпĕ Мăн Явăша кашнинчех çитеймерĕм. Хамăрăн чаплă ентешĕмĕрпе Вăрнар редакцийĕнче, Шупашкарта темиçе хутчен те тĕл пулса калаçнăччĕ-ха.

Алексей Александрович Воробьев 1922 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнче Чăваш Республикинче, Вăрнар районĕнчи Мăн Явăш ялĕнче, вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Хăйсен ялĕнчи пуçламăш шкулта, унтан тулли мар вăтам шкулта вĕреннĕ.

1941 çулта вăл Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Çав çулах ăна Канаш районĕнчи çĕрĕç пайне ĕçлеме янă, каярахпа Вăрнарти машинăпа трактор станцине куçарнă, унта вăл участок агрономĕнче ĕçленĕ.

1942 çулхи май уйăхĕнче вăл фронта нимĕç фашисчĕсемпе кĕрешме кайнă. Сталинград патĕнчи хаяр çапăçура йывăр аманнă. Вăрçăри паттăрлăхшăн ăна виçĕ медальпе наградăланă.

Кăштах сывалса таврăнсан, Алексей Воробьев малтан хăйсен ялĕнче агроном, унтан колхоз председателĕ пулнă. 1945 çулта ăна Йĕпреç районĕнчи МТС директорне лартнă. 1946 çулхи кĕркунне вăл Хусанти ял хуçалăх институтне вĕренме кайнă. Вăрçăра суранланнă сывлăх тепĕр хут хавшатма тытăннă пирки унăн кĕçех яла таврăнма тивнĕ. 1955 çулччен вăл хăйсен Ленин ячĕпе тăракан (халĕ Ульянов ячĕпе хисепленет) колхозра ĕçленĕ.

А.А.Воробьев 1957 çултанпа Шупашкарта пурăнать. Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи радиокомитетра ял хуçалăх передачисен редакцине ертсе пырать. Мускавра Горький ячĕллĕ литинститутра вĕреннĕ хыççăн, Чăваш писателĕсен Союзĕн литконсультантĕнче ĕçлет. 1964 çултанпа вăл СССР писателĕсен Союзĕн членĕ. Поэзири ӳсĕмшĕн ăна Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл ячĕпе хисепленекен премине панă. Унăн чăвашла – 12, вырăсла – 6 кĕнеке тухнă.

Алексей Воробьев 1976 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче Шупашкарта вилнĕ.

Шăпа çулĕ телейлĕ теççĕ те, çаплах пуль çав. Çав çул çапла 1974 çулхи çуркуннен, чăваш ăс-хакăл вучахĕсен пĕрийĕн умне çитсе тухрĕ.

Çу уйăхĕн илемлĕ кунĕ – пичет кунĕ. Хĕвел çĕр питне ачашшăн çутатса тĕнчене чĕртет. Тӳпери тăрисен юррине хупласа хăватлă тракторсем уй кĕввине пуянлатаççĕ. Нӳрлĕрех кăпăшка çĕр ылтăн тулă пĕрчисене кăкăрĕ çумне йышăнать. Тырă акма тухнă пĕрремĕш кун. Кабинăран гусеницăсем çине тухса тăнă çĕр ĕçченĕ ялалла çывхаракан автобуссемпе çăмăл машинăсене карттусĕпе сулласа саламлать.

Йĕпреç райхаçачĕн корреспонденчĕ Дмитрий Киселев хăнасене кĕтсе илнĕ самант ӳкернĕ. Сылтăмран – КПСС райкомĕн идеологи секретарĕ Христина Сергеевна Башкирова тата Е.А.Эльгер.

Хĕрӳ вăхăт пулин те, культура çурчĕ умĕнче халăх йышлă. Пысăк Упакассине кӳршĕ ялсенчен те, Йĕпреçрен те капăр çынсем Семен Элкер менелникне хавас кăмăлпа пухăннă. Аслă уява районта тивĕçлипех хатĕрленсе кĕтсе илтĕмĕр. Мана та, редактора, юбилей комиссине кĕртнĕччĕ. Ялĕнче уйрăмах тимленĕ.

Ушкăнăн çурма ункă варричне хăнасене çăкăр-тăварпа сăйлаççĕ.

– Тавтапуç ырă кăмăлшăн, хамăрăн юлташа Семен Васильевича пĕрле илсе килеймерĕмĕр пулин те, вăл пирĕнпех, юнашарах, пирĕн чĕререх, – илтĕнет Александр Кăлканăн çирĕп сасси. Аслă юптаруçă тĕрленĕ алшăлли çинчи çăкăра Аркадий Эсхеле парать те аллине сăра курки тытать. Кăпăклă чăваш сăрине – Упакасси сăрине – пурте активсе пăхаççĕ, – Элкер мăшăрĕ Евдокия Алексеевна та...

Ачасем хăнасене чĕрĕ чечек çыххи парнелеççĕ, вĕсене çывăхри вăрмантан, ĕлĕк-авал Чакка çӳренĕ çĕртен татса килнĕ.

Хĕрӳ сăмах – асаилӳ, мухтав, пултарулăх сăмахĕ тыткăн-

лать культура çуртне пухăннисене. Артистсем юрă шăрантараççĕ, сăвăçсем хăйсен чĕлхе-шухăш ăсталăхĕпе тĕлĕнтереççĕ. Акă, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премине тивĕçнĕ Алексей Воробьев та халăх умне хăюллăн утса тухать.

– Кунта килес умĕн, ĕнер, – тет вăл кăшт хумханарах парса, – эпĕ ятарласа сăвă çыртăм. Пĕчĕккĕ чухне те сирĕн яла Вăрнар енчен вăрмана килнĕ, 1945 çулта, Йĕпреç МТСĕнче ĕçленĕ чухне те пулнă. Çавăнпа мана ял сăнĕ улшăнни, сирĕн ӳсĕм, аталану уйрăмах куça лайăх курăнать.

Сцена çумĕнчи пӳлĕмре иксĕмĕр ентешле калаçса асилсе ларнă вăхăтра Алексей Александрович çав сăвăпа мана малтанах паллаштарнăччĕ-ха, Эсхель те вуласа пăхрĕ ăна, мухтарĕ. Улăпла ĕç, паттăр ĕç тунă, халăхра чыслă ят, тивĕçлĕ ят илнĕ ăсчах ентешĕсене халалланă сăнарлă илем сăмахĕсем пĕрремĕш хут Упакассинче янăранине хăлха тăратсах итлерĕмĕр эпир те

УПАКАССИ

Салам сана, Упакасси,
Эльгер поэт çуралнă ял!
Сăмах нумай ман каласси,
Анчах епле çитерĕн хал!
Кунти çĕрсем – вăрман енчи,
Кушлавăш уйĕ тенĕ ен,
Эп çавĕнта, вирьял ачи,
Килсе çӳренĕ пĕчĕкрен.
Ани-çаранĕ хĕсĕкрен
Тертленнĕ халăх авалтан.
Асаплăн выçă вилесрен,
Юрать-ха, çăлнă сĕм вăрман.
Хĕле кĕрсессĕн пĕр шăпа –
Çынсем пĕлмен кунне-çĕрне,
Тăрмашнă вутă-шанкăпа,

Турттарнă пӳртлĕх пĕрене.
Пӳлме çаралнине кура
Сутмашкăн тивнĕ çурт-йĕре.
Кĕлет-сарай е хыр пура
Пайтах ăсаннă ют çĕре.
Кунта тăпра та – кĕл тăпри,
Тырпул ӳсет-и ун çинче?
Вĕçсе килмен кунта тăри,
Юрланă урăх уйсенче.
Аса илме ырри мĕн пур?
Пит йывăр килнĕ чухăна.
Эльгер поэминчи хĕн-хур
Хĕстернĕ хĕскĕч пек ăна.
Халь ĕнтĕ урăх самана.
Тĕп пулчĕ хурлăх та асап.
Упакасси, сăн-сăпатна
Эп тĕлĕнсе паян сăнап.
Тĕрленĕ çĕн çуртсем, куран,
Тăрри çыруллă – кил, вула.
Вăрман пек ялĕ катаран,
Çитсе кĕретĕн – чăн хула!
Телей ыйтмасть ял-йыш кивçсен,
Пуян пурнать колхоз касси.
Çак тăрăхра, ĕçпе илсен,
Малта пырать Упакасси.
Мĕн чухлĕ паттăр çак ялтан
Çунат сармарĕ хальçине?
Салам калатăп кăмăлтан
Ĕçчен те ырă çынсене.
Тен, çĕнтерӳ тума ансат?
Çук çав, ĕçре тупса ăна.
Хирте тырпул пулать ăнса
Тар пĕрчине тăксан кăна.
Мухтав Упакасси ялне!

Эп хĕпĕртетĕп чĕререн:
Çемен пиччен манми ятне
Кунта упраççĕ килĕрен.
Куратăп эп: хастар чунсем
Пит хапăл сасса.
Шанас килет, малаш кунсем
Çĕн эльгерсем çуратасса.
Çак ĕмĕт – чи пахи, таси,
Вăл кĕрĕ пурнăçа кал-кал.
Ялан ыр кур, Упакасси,
Тăван поэзири мăн ял.

Сцена çумĕнче, артистсен пулĕмĕнче, Алексей Александрович Пысăк Упакассинче хăй тĕлĕннине пытармарĕ. Манран вăл хăй ĕçленĕ МТС пирки ыйтса пĕлчĕ, ун чухнехи çынсене аса илчĕ. Эпĕ ентешĕме, хам кунта чылай ĕçленĕ май, нумай-нумай ырри çинчен каласа патăм. Унта вăл тепринче ятарласах çитесшĕнччĕ. «Пысăкупакассисене тарăн касă çăкăрлă турĕ, Шордеев сухапуçне упаллах туртать çав», – терĕм те, Воробьев куçлăхне хывса чеен кулчĕ, çыравçăсемпе çĕкленӳллĕн ахăлтатса тăракан Антон Григорьевич еннелле çаврăнчĕ те: «Семен Васильевичпа иккĕшĕ те вĕсем çĕр шкулĕ – чи аслă шкул пĕтернĕ çав, çавăнпа пĕри – поэзире, тепри – çĕр çинче тарăн йĕр хăварнă», – терĕ пуçне ухса.

Çĕр тухтăрĕ Алексей Воробьев Пысăк Упакассинче Шордеевпа уйрăммăн та чылай вăхăт калаçрĕ, хам ăнкартнă тăрăх, паллах, вĕсем Эльгер пултарулăхне те, поэзири лару-тăрăва та шĕкĕлченĕ пулас çук, мĕншĕн тесен Антон Григорьевич литературăран аякра тăракан хресченччĕ, Алексей Александрович та кайран, сăмахне çăкăр çине куçарнă май, «Трудовикри» çĕр академикне пит тавçăруллă, туйăмлă мужик тесе çине-çине мухтаса пынăран ăнлантăм вĕсем мĕншĕн хуйхăрнине, ĕмĕтленнине: вăйлă тырпулшăн. «Çĕр чăмăрĕ евĕр çавра Çĕн

çăкăр куратăп умра», – ăшра кĕвĕлесе калаçнă пуль ĕнтĕ вăл тепĕр çĕр тухтăрĕпе.

Алексей Александрович йĕпреçсене те уй-хир культурине лайăхлатма пулăшнă, тăван Вăрнар тăрăхĕнче те тулли пучах ӳстернĕ. Унăн хресчен туйăмĕпе çырса кăларнă «Хиртех ман чун», «Йăмра», «Хĕрлĕ пучахсем», «Ывăçри тырă» кĕнекисем ял çыннисен кĕреке кĕнекисемччĕ.

Серте яшки тутаннă хыççăн, чăх тукмакки алла тытсан, сăраэрех курки шăнкăртатсан, купăс сасси ян-ян кайсан... Элкер уявĕ иртрĕ пит хавас. Çыравçăсем те, вăл шутра Алексей Вороьтев та, ташша сӳрĕç кăна.

Çирĕм çултан та иртсе кайман иккен çак хаваслăх. Семен Элкерĕн çĕр çулхи менелникне эпир чăваш çыравçисем, йышлăн килтĕмĕр. Ун чухнехи çамрăк çыравçă, Кушлавăш уйĕнчи Хураçырма каччи Виталий Родионов, хăй хайланă Кушлавăш гимнне ял артисчĕсене юрлаттарнă хыççăн, мана çапла каларĕ: «Çакăнта халăх хушшинчен кĕçвĕç Алексей Воробьев кампа та пулин калаçса тухассăн, мăнаçлăн сăвă вулассăн туйăнать». Эпĕ те хамăн çавнашкал шухăшăмах пĕлтертĕм ăна, «çĕн эльгерсен ретĕнчи» пултаруллă çыравçа, ученăя, ырă кăмăллă чăваша. «Кушлавăш текен вуникĕ ял уйĕ» ăслăлăх, ĕçченлĕх тухăçĕпе пуянлансах пырать.

Хурăнсур Çармăс ялĕ,
1997 çулхи ака уйăхĕн 3-мĕшĕ.

Вăрнарпа Йĕпреç çĕрĕ вăй панă

Патăръел тăрăхĕнчи Каншелтен Йĕпреçе ĕçлеме лекнĕ Ермошкин, Саратоври ялхуçалăх инженерĕсен институтĕнче илнĕ пĕлӳпе, вăрман ен хуçалăхĕсене техникăпа аталантарассишĕн мĕнле тăрăшнине эпĕ питĕ аван пĕлетĕп. Тăвай чăвашĕпе Владимир Иванович Ушмаринпа Пантелеймон Михайлович районти машинăпа трактор станцине, каярахпа юсавпа

техника станцине, «Сельхозтехника» пĕрлешĕвне пĕчĕк завод майлах ĕçлеттерсе янăччĕ.

Йĕпреçре эпир унпа утмăлмĕш çулсен варринче чи малтанах литература юмах-халапĕпе çывăхлантăмăр. Ачаранах сăвă-поэмăпа, калав-романпа аппаланнă иккен вĕсем – кӳршĕ ялсенчи Панька Ермошкин, Геннадий Лисин (Айхи), Ева Лисина, Ваçлей Игнатьев. Хальхи паллă режиссер Алексей Васильев вĕсене спектакльсенче артист пек выляттарнă. Çав вăхăтри сăнарлăх илемĕ унăн вăйлă пит-куçĕнче чăваш хĕвелĕн çутă пайăрки пек çиçетчĕ. Туслăх вунă çула çывхарнă тĕлелле те вăл мана хăйĕн ачалăх, çамрăклăх поэзийĕн çăкăрне хуçса-касса пĕр татăк та, пĕр чĕл те тутантармарĕ.

«Эпĕ поэт мар, эпĕ – инженер, Айхисем ӳстерччĕр поэзи тыр-пулне, пире вăл тутлă çăкăра мĕнле тутăпа çисе тăраннипе те çитет», – тетчĕ вăл Ермошкин, мана машинăна ларма кăчăк туртатчĕ. Çӳреттĕмĕр вара ял-ял тăрăх уазикпе. Упакасси упин менелникне çитейменшĕн час-час кулянатчĕ Семен Васильевич Элкер сакăрвуннă тултарнă вăхăтра, çу пуçламăшĕнче. Ун чухне вăл Мускавраччĕ. Ăна, республикăри чи ăста ертӳçĕ – инженера, Пĕтĕм Союз калăпăшĕпе ирттерекен семинара хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пама чĕннĕччĕ.

Кĕçех çитрĕ те акă пирĕншĕн тепĕр телейлĕ кун. Йĕпреçе Вăрнартан Алексей Воробьев сăвăç хăйĕн Пегасĕпе юрттарса каçрĕ. Ун пирки эпĕ тӳрех Ермошкина систертĕм. Вăл уазикĕпе туххăмрах парти райкомне кĕрлеттерсе пычĕ. Виçсĕмĕр район тăрăх каласа тухрăмăр. Алексей Александровичăн чĕлхи çинче пĕр сăмах кăна: «Ай епле улшăннă Хурамал, Чăваш Тимеш, Упакасси...» Пантелеймон Михайловичăн та пĕр хурав: «Хурамалта эпир юсавпа-техника мастерскойĕ турăмăр, вĕсен 30 трактор, 25 автомашина...» «Хĕрĕх пиллĕкмĕш çулта, эпĕ кунта МТС директорĕнче ĕçленĕ чухне, манăн 20 трактор çеçчĕ...» – тесе пуçне пăркалать Воробьев. Çав самантрах вара вĕсем, Йĕпреçри икĕ хуçа, каласа пĕр çĕре кĕртеççĕ – аталану йĕрне. Хăйсем

те сисмеççĕ çав, такăш хушăра тĕп калаçу уттинче такăнаççĕ те, ун çинчен пач манса кайса, сăнарлăх тĕнчине кĕрсе каяççĕ, чăваш, совет, тĕнче литературине тутлăхлăн шĕкĕлчеме тытăнаççĕ.

Воробьевăн кашни ялта тенĕ пекех паллана пĕр-пĕр ватă тупăнатех. Çанăран туртмалла пуличченех асаиўлĕпе çĕтеççĕ вара. Çын йышлă çĕрте сăвă янăрать: поэт чĕлхийĕ те уй-хир кĕрлевĕпе вăйланать.

Алексей Александрович, Йĕпреçе таврăнсан, Ермошкин «хулипе» тата «завочĕпе» сăмах чĕнмесĕр – шухăшлавлăн та, калаçа-калаçа – тĕлĕнтермĕшлĕн те, аллисене пĕç çумне çапсах паллашрĕ, хăй кунта камантланă çулсенчех сыхланса юлнă йывăç çурт умĕнче шăппăн, карттусне алăра лўчĕркесе, вăрахчен тăчĕ, астăвăмĕпе пĕрлех, унпа ĕмĕрлĕхех сывпуллашнăн туйăнчĕ.

Кĕрнеклĕ, кăмăллă, вĕçев шухăшлă икĕ директор калаçăвне итлеме те хаваслă: сăмахĕ иккĕшĕн те мал ĕмĕтлĕ.

Вăрнарпа Йĕпреç çĕрĕ вăй панă чăваш шăпчăкне чикке çитичченех ăсатрăмăр. Çула май Шордеев патне кĕтĕмĕр. «Трудовик» колхоз ертўçи, Социализмла Ĕç Геройĕ Антон Григорьевич хăйĕн эртел хуçалăхĕпе паллаштарчĕ, хăналанма вăрманти утара чĕнчĕ. Тăватсăмăр пĕвере пулă тытрăмăр. Пулă яшкине те, ăшаланă какайне те çирĕмĕр, пыл кăрчамине те тутантăмăр, юрларăмăр та, ташларăмăр та, хамăрла – чăвашла савăнса килентĕмĕр

«Сывă пул – Йĕпреç, сывă пул – Упа касси! Тавах сана вăй панăшăн, поэзи лаççинче хĕрме пулăшнăшăн», – тенĕнех çиçрĕç. Мăн Явăш улăпĕн куçĕнчи хĕлхем йăлтăрккисем.

2003 çулхи юпа уйăхĕн 20-мĕшĕ.
Шупашкар.

1979 çулта.

Чăваш халăх поэчĕн кун-çулĕ пирки савăнăçлă пухусенче калаçнă вăхăтрах чăваш писателĕсен илемлĕ литература журналĕсем те çывăрса юлман. Унăн пултарулăхне çĕклесе статьясем пичетленĕ.

Ялав» журналта та, яланхи «Пирĕн календарь» рубрикăпа, филологи наукисен кандидачĕн Валерий Степанович Эзенкин доцентăн тĕпчев статйине пичетленĕ.

Валерий Степанович Эзенкин Хĕрлĕ Чутай ялĕнче 1941 çулта çуралнă. Мускаври Ломоносов ячĕллă патшалăх университетĕнче вĕреннĕ, çавăнтах аспирантура пĕтернĕ. Чăваш гуманитари институтĕнче, И.Н.Ульянов ячĕллĕ патшалăх университетĕнче ĕçленĕ. Филологи наукисен кандидачĕ, литературовед. «Чăваш романĕн çулĕ», «Теоретические основы чувашской литературной критики», «Чăваш литературоведенипе критика историйĕн кĕске очеркĕ» кĕнекесем тата нумай статьсен авторĕ.

Çамрăк çыравçăсен чăваш халăх писателĕ Илпек Микулайĕ ертсе пынă семинарĕн ĕçне Кăкшăм кану çуртĕнче активлă хутшăнчĕ. Иккĕмĕш хутри пĕр пӳлĕмре пурăнтăмăр. Писательсен пурнăçĕ, чăваш литературин кун-çулĕ, малашлăхĕ çинчен çĕрĕ-çĕрĕпех калаçаттăмăр. Хăйне мăнна хуман, çӳлелле сикме юратман, тăнлă ученăйччĕ.

ХАЛĂХ САССИ

Чăваш халăх поэчĕ Семен Василеьвич Элкер çуралнăранпа сакăрвун пилĕк çул çитрĕ, вăл литературăна килни утмăл çул тултарчĕ. Тăван халăхăн чун-кăмăл туйăмĕпе çулăмланнă сассийĕ унăн паян кун та янăрасах тăрать.

С.Элкер пирĕн совет литературине пуçараканĕсен хисепĕнче. Чăваш кун-çулне эпикăлла ӳкерчĕклекен жанрсен аталанăвĕ чи малтан унăн пултарулăхĕнче вăй илнĕ теме пулать. Пысăк калăплă повествованилле произведенисенче литера-

турăн хальхи çĕнĕ меслетне çирĕпленме çул уçса параканĕ те – ытти паллă чăваш çыравçисемпе пĕрле – вăлах.

Калавла жанрсемпе кăна мар, С.Элкер сăнарлă сăмахăн тĕрлĕрен тĕсĕсемпе ăста усă курнă. Халĕ эпир унăн лирикине пĕтĕмĕшпе пăхса тухас пулсан, унта тӳрех сăвăçăн граждан-ла çирĕплĕхĕнче çуралнă пысăк пулăмсене асăрхăттăмăр. империализм вăрçин тискер сăн-сăпатне сивлекен сăвăсенчен тытăннăскер, вăл пирвайхи тапхăртах халăха çĕнĕ пурнăç хывма хавхалантаракан кĕвĕсем шыранă. Унăн çав малтанхи сăввисенчех хăйне евĕрлĕ туртăма сăнама пулать: поэт тăван халăхăн ĕмĕрхи çутă ĕмĕтне, ырă шухăш-кăмăлне уçса пама хыпăнать. 1920 çулта «Чăваш халăхне» сăвăра вăл çапла каланă:

Ирĕклĕхшăн çунакан
Чăваш халăхĕ, асту:
Яланах, мĕн авалтан
Пулнă санăн хастару.

Пусмăрлăха тарăхса
Хĕç тытмасăр эс тӳсмен,
Тăшманпала çапăçса,
Юн юхсан та шикленмен.

Поэт халăх историне социалла кĕрешӳ историйĕ тесе пахалать. Çеçпĕл Мишшипе пĕр саслă пулса, вăл «чăваш-йăваш» тенине хирĕç тăрать. Çĕнĕ пурнăç тума çĕкленнĕ ĕçхалăх чунĕнче мĕскĕнлĕх ан пултăр! Çапла шухăш поэтăн.

С.Элкер хăйĕн произведенийĕсенче чăваш халăхĕн историне кĕрешӳпе паттăрлăх утăмĕсенче курать. Сăвăласа илемлетнĕ халăх юмахĕсенче («Юмахсем», 1947) вăл ĕççыннин чун пахине хапăллать. Улăп сюжечĕсене сăвăласа («Улăпсем», 1941), халăхăн сĕм аваллăхран пыракан аптраманлăхне кăтартма хыпăнать. Пирĕн халăх пысăк историллĕ халăх тесшĕн вăл. Çакă ăна историлле произведенисем енне туртнă, вăл

тăван халăхăн историне авалхи тапхăртан пуçласа хальхи саманачченех ӳкерсе кăтартнă: аваллăх («Улăпсем»), XVIII ĕмĕр («Хĕн-хур айĕнче»), 1905-1907 çулсенчи революци вăхăчĕ («Шурмпуç килсен»), пĕрремĕш тĕнче вăрçипе граждан вăрçи («Вутпа тăвăл витĕр», «Вунсаккăрмĕш çул»), Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи («Вăл вилĕмсĕр»). Шутласан, тĕлĕнмелле, ушкăн тăвас ĕçе писатель пĕччен туса ĕлкĕрнĕ!

Çак туртăм 1923 çулта çырма тытăннă «Хĕн-хур айĕнче» поэмăран пуçланнă. Поэмăра вăл историри чăн ĕçсене сăнласа, чăвашсен XVIII ĕмĕр вĕçĕнчи ирĕклĕхшĕн пынă кĕрешĕвне кăтартса парас тĕллев лартнă. Истори чăнлăхне писатель ĕненмелле сăнарсемпе уçса парать. Ку енчен уйрăмах Чакка сăнарĕ витĕмлĕ. Сăпайлă, сынна хĕрхенекенскер, вăл юнлă çапăçусенче паттăр. Çĕрĕç сынни, Чакка ирĕклĕ Пахомка хусахĕсемпе çыхăнать. Хăй вилес умĕн ывăлне çапла каласа хăварать:

Сĕнетĕп сана ирĕкшĕн тăма...
Пиллетĕп - вăйна тӳр ĕçшĕн
хума...

Кĕрешӳ вĕçленмен, кĕрешӳре халăх çĕнтерĕ – çапла поэмăри тĕп шухăш.

Историри паллă тапхăра илсе, С.Элкер поэмăра унăн тĕп социаллă туртăмĕсене уçса парать. Истори чăнлăхĕ кунта – характерсемпе конфликтсем классен кĕрешĕвĕ çинче никĕсленнинче, вăл вăхăтри пурнăç юхăмне пăхăнса пынинче. Çак поэма хыççăнах çырнă «Вутпа-тăвăл витĕр» роман-хроникăра писатель историн тепĕр тапхăрĕнчи пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсене çутатса парать. Тĕп сăнара, Семен Васильева, тыткăнра, 1917 çулхи революциллĕ Петроградра, граждан вăрçи вăхăтĕнче кăтартать, вĕсем урлă самана, ĕççыннисен тавракурăмĕ улшăннине сăнлать.

«Шурăмпуç килсен» романра, «Хĕн-хур айĕнче» поэмăри пекех, ĕçсем чăваш ялĕнче пулса иртеççĕ. Анчах кунта пĕтĕм

Раççейри революци тăвăлĕ сисĕнет. Пăлхав çĕр пирки пуçланать. Хресченшĕн чи кирли - çĕр. Вăл унăн телейĕ, асапĕ те. Çĕрлĕ пулас шухăшпа кĕтсе илеççĕ революцие чăваш хресченĕсем. Ял çĕрне тĕрĕс, законлă валеçессе ĕмĕтленеççĕ Муççапа ытти чухăнсем. Кĕçех патша законĕнче тĕрĕслĕх çукки куç умне тухать. «Долой новый закон!» – кăшкăраççĕ çав Муççасемех земство пуçлăхне хирĕç. ПолициПе çапăçнă хыççăн вĕсен куç уçăлсах çитет. «Çĕр ыйтнăшăн вĕлереççĕ. Тĕрĕслĕхе каланăшăн тĕрмене хупса лартаççĕ. Кам саккунĕ ку? Паллах, саккунĕ те пирĕн майлă мар, вăйлисем майлă», – шухăшлать Муççа пусмăрçăсем пăлхава юнпа путарнă хыççăн. Трагедиллĕ вĕçленет çĕр валеçес ĕç. Çакна пĕлсех Çитăр Йăванĕ, ялти пăлхавçă, халăха полицие хирĕç ертсе тухать, ирĕклĕхшĕн кĕрешнин пархатарлăхне туйса илет.

Мĕнпур произведенийĕсене С.Элкер историзм, халăхлăх, партилĕх принципĕсене çирĕп пăхăнса çырнă. Сăввисенче те, поВеçĕсемпе романĕсенче те, очеркĕсемпе стайисенче те çаКнах куратпăр. Унăн пултарулăхĕ питех те нумай енлĕ. Вăл илемлĕ произведенисен ăсти кăна мар, пултаруллă публицист пулнипе те паллă. Писатель нумай çулсем хушши кĕнеке издательствин редакторĕ пулнă. Çамрăк çыравçăсене пулăшма вăй хунă. Ача-пăча литературинче те С.Элкер тарăн йĕр хăварчĕ.

Пысăк чĕреллĕ гражданин сăнарĕ тухса тăрать пирĕн ума Элкер тесен. Халăхшăн кирлине ниме те вак-тĕвек темен вăл. Вывескăсемпе урам ячĕсене тăван чĕлхепе çырассинчен пуçласа шкулта мĕнле вĕрентесси таранах хыпăнса-пăшăрханса пурăннă. Халăх ăна пĕрре кăна мар депутата суйланă.

С.Элкер пуçарни паян пирĕн литературăра аталансах пырать. Вăл халĕ те пурнăç хывакансен, малалла талпăнакансен ретĕнче. П.Хусанкай: Элкер вăл – ушкăн çăлтăрăн асли, тенĕччĕ. Çăлтăр çути халĕ те ялтăрах!

Валерий Эзенкин,
1979 ç.

ЭЛКЕР ЧĂВАШ ХАЛĂХĔШĔН, ШĂПИЙĔШĔН ÇУННĂ

2004 çулта.

Элкер 100 тултарнине чăваш халăхĕ, ытти шăв-шавлă çыравçăсене пĕлĕте çити сиктерсе уявланă пекех паллă тăваймарĕ. Çапах та Аслă çыннăн ĕмĕрне чыс туса, тĕнче уçлăхĕнчи Элкер çăлтăрĕ ытти çăлтăрсенчен çуттăнрах йăлкăшрĕ. Çĕр Элкерне Çӳлти вăй-хăватпа тата çӳлерех çĕклерĕ, унăн ятне халăхра çĕнĕлле вăратрĕ. Кӳрши, Хураçырма ачи Виталий Родионов профессор, унăн пилĕк томлă çырнисен пуххи çумне тепĕр хулăн кĕнеке хушса кăларчĕ. Йĕпреç районĕнчи шкулсен пултарулăх смотр-фестивальне Семен Васильевича халаллană. Шупашкарсем асăну палăкĕ хатĕрленĕ. Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн те паллă кунран çывăрса юлмарĕ. Манăн, «Илем» хаçатăн тĕп редакторĕн, тăван ентешĕме халалласа, ятарлă номер кăлармалла пулчĕ. Çав ĕçпе аппаланнă хушăра иртнĕ вăхăтри паллă кунсем аса килчĕç.

Чылай çул каялла

Ун чухне эпĕ Йĕпреç районĕнчи «Çĕнтерӳшĕн» хаçат редакцийĕнче ĕçлеттĕм. Парти райкомĕ Чăваш халăх поэчĕн Семен Васильевич Элкерĕн менелникне ирттерме комисси йĕркелерĕ. Ăна райком секретарĕ Христина Сергеевна Башкирова ертсе пычĕ.

Ака йăхĕн 5-мĕшĕнче Пысăк Упакассине Шупашкартан хăнасем автобуспа килсе çитрĕç. «Элкер менелникне килнĕ хăнасене хĕрӳллĕ салам!» – чĕнет Культура çурчĕ çинчи хĕрлĕ хăмач. «Трудовик» колхоз председателĕ А.Г.Шордеев, парторганизаци секретарĕ В.И.Герасимов, ял Совет председателĕ Т.И.Степанова, Пĕчĕк Упакассинчи «Путиловка» колхоз председателĕ Г.С.Ильин, менелник комиссийĕн членĕсем, упакассисем, йĕпреçсем, вăрнарсем çурма ункă варринче. Чăваш

литературипе искусствин ĕçченĕсене авалхи йăлапа çăкăртăварпа кĕтсе илчĕç.

– Тавтапуç ырă кăмăлушăн, хамăрăн юлташа Семен Васильевича пĕрле илсе килеймерĕмĕр пулин те, вăл пирĕнпех, юнашарах, пирĕн чĕререх, – тет Александр Кăлкан. Вăл тĕрленĕ алшăлли çинчи çăкăра Аркадий Эсхеле парать те, аллине сăра курки тытать. Кăпăклă чăваш сăрине – Упакасси сăрине пурте активсе пăхаççĕ. Элкер ячĕпе хисепленекен вăтам шкул ачисем хăнасене чĕрĕ чечек çыххисем парнелеççĕ.

Культура çуртĕнче халăх лăк тулли. Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕн ответлă секретарĕ Георгий Краснов хăйĕн сăмахĕнче «Элкер пирĕншĕн атте те, асатте те, тăван та, чăваш литературине ӳстерессишĕн вăй хурса ĕçленĕ тантăшăмăр та. Çавăнпа унăн ятне çӳлте тытас пулать, тытатпăр та», – тесе хумханса калаçрĕ.

Аркадий Эсхель чăвашсен паллă писателĕн пултарулăхĕ çинчен нумай каларĕ, хăй çырнă «Поэт кунçулĕ» кĕнеке парнелерĕ упакассисене. Кĕнекине менелник тĕлне ятарласа кăларнă-мĕн.

Сăвă-юрă шăранчĕ анлă залра. Василий Давыдов-Анатри, Александр Кăлкан, Аркадий Эсхель, Алексей Воробьев, Николай Петровский-Теветкел, Хветĕр Агивер, Петĕр Ялкир, Порфирий Афанасьев, Виталий Родионов поэтсем сăвă каларĕç, Зоя Ананьевапа Венера Иванова тата Иван Аршинов чăваш юррисене юрларĕç.

Çĕрлечченех тăсăлчĕ Элкер уявĕ.

Маншăн уяв хĕрӳллĕ хĕвел тухсан та малалла тăсăлчĕ, хамăр хаçат валли мăшăр страница хатĕрлерĕм. «Элкер улăпла ĕç, паттăр ĕç тунă, халăхра чыслă ят, тивĕçлĕ ят илнĕ» сăмахсем айне чаплă кун репортажне, Порфирий Афанасьев поэтăн «Вилĕмсĕр идейăсен çĕнтерĕвĕшĕн» статйине, Алексей Воробьевăн «Упакасси», Виталий Родионовăн «Сăпка юрри», Василий Хурамалăн «Поэзи уявĕ» сăввисене, упăшкин менелникĕнче упакассисем умĕнче ăшă кăмăлпа тав туса каланă Евдокия Алексеевна Эльерăн сăмахне тата Чăваш писателĕсен Союзăн правлени председателĕ Н.С.Дедушкин КПСС Йĕпреç райкомне, «Трудовик» колхоз правленине янă саламлă телеграммăна, Дмитрий Киселев корреспондентăн сăнӳкерчĕкĕсе-

не вырнаçтартăмăр. Паллах, Çемен Элкерĕн «Этеме» сăвви те вулакан чун-чĕрине хускатмасăр хăвармарĕ пуль:

Ырă чунлă этем!
Инкек-хĕн çапсан – йăшса ан йӳте,
Этем тĕршĕнет вăл хуйхă-суйхăран,
Ун чух хавшама тытăнать ăшран.
Асту, ан çемçел, – чул пек çирĕп пул;
Пĕлсе тăр: пурнăç вăл – пĕрре кăна;
Вилсессĕн урăх курмăн çут куна.

ĂШĂ КĂМĂЛПА ТАВ

Семен Васильевич 80 çул тултарнине чыслăн уявлама пухăннă юлташсем, унăн ял-йышĕ, тăванĕсем! Элкер ячĕпе хисепленекен шкулта вĕрентекенсемпе вĕренекенсем! Сире пурсăра та манăн мăшăра чыс тума килнĕшĕн чĕререн тав тăватăп.

КПСС Йĕпреç райкомне, Чăваш писателĕсен Союзĕн правленине, «Трудовик» колхоз правленине юбилее хатĕрленĕшĕн, Семен Васильевич Элкер ятне, унăн ĕçĕсене сума сунăшăн чи ăшă кăмăлпа саламлатăп!

Эпĕ, Семен Васильевичпа 39 çул куллен çывăх пулнă çын, вăл чăваш литературишĕн мĕнле тăрăшнине, мĕн чухлĕ вăй хунине лайăх пĕлсе тăратăп. Ĕçре чухне те, пенсие тухсан та хăйĕн произведенийĕсене çырассишĕн çĕрĕ-çĕрĕпе ывăнмасăр нумай-нумай ĕçлерĕ. Шăпчăк епле çĕрĕпе канмасăр юрлать, Çемен те çавăн пекех хăйĕн поэзи канвине тĕрлесе пурăнчĕ.

Унăн сывлăхне, унăн ĕçлес вăй-халне упрасси, кăмăлне хавхалантарасси манăн тата ман ачасен кулленхи, кашни сехетри тимлĕх пулнă.

Хаклă пĕлĕшсем, ял-йышсем! Сирĕн колхоз пысăк утăмсемпе, ăнăçлăн малалла аталанса пырать. Колхозри

ĕç паттăрĕсен, колхоз председателĕн, Социализмла Ĕç Геройĕн Антон Григорьевич Шордеевăн ячĕ халĕ пĕтĕм çĕршывĕпе паллă.

Сире малалла та тата тăрăшса ĕçлеме чĕререн ырă сунатăп. Элкер акса хăварнă поэзи çимĕçĕсем сирĕн ĕçри хастарлăха татах та ӳстерсе пыччăр.

Е.А. Эльгер.

«Çĕнтерӳшĕн» хаçатра пит хастарланса, пултаруллă ĕçленĕ çамрăк тусăм, вĕренекенĕм Виталий Родионов «Элкер номерне» шупашкарсем валли пĕр çыхă илсе кайрĕ. Элкер çĕршывĕнче журналистика çулĕ çине хăйĕн уттипе тухнăскер вăл «Илемпе» сывăхланма та ютшăнмарĕ. Семен Васильевичăн 1966 çулта çырнă «Произведенисене тĕрĕс хак памалла» критикăллă статйине пичете хатĕрлесе пачĕ. Унччен вăл йышлă вулакан патне çитеймен пулас. Хастар чунлă çыравçă Элкер хăюллăн, уççăн калаçать чăваш литературин кун-çулĕ пирки:

«Отечественнăй вăрçă хыççăнхи çулсенче пирĕн чылай пысăк произведенисем тухрĕç. Ун пеккисем хушшинче Куçма Турханăн «Йăмраллă ялпа» «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романĕсем, Я.Ухсайăн «Акăшкӳл», «Çĕр» поэмисем, Хусанкайăн «Аптраман таврашĕ», Марье Ухсайăн «Кăра çилсем» романĕ, Мраньккан виçĕ томлă «Ĕмĕр сакки сарлака» романĕ, Агаковăн «Юманлăхра çапла пулнă» пысăк повеçĕ, Ĕçхĕлĕн «Хĕвеллĕ çумăр» повеçĕ, Кипек Мĕтрин юлашки çулсенче пичетленнĕ повеçĕсемпе романĕсем тата ыт.те, урăххисем те. Кунта асăннă хăш-пĕр произведенисем тухнăранпа вунă çул та иртсе кайнă ĕнтĕ, анчах та вĕсем пирки пĕр дискусси те пулман, вĕсене творчество секцийĕсенче те сӳтсе-явса татăклă хак паман. Чăн та, Мраньккан «Ĕмĕр сакки сарлака» романĕн иккĕмĕш кĕнеки пирки пĕр-икĕ çул каялла пуху туса иртернĕччĕ. Ăна та проза секцийĕ роман авторĕ хăй Сироткин профессор критикине хирĕç тухнă пирки çех сӳтсе явнăччĕ.

Пысăк произведенисем çинчен пĕчĕк рецензисемпе çиелтен кăна тишкерсе çырнисемпех çырлахса тăнă.

Пирĕн пысăк произведенисене нумайăшне ятлă писательсем çырса кăларнă. Çакна пула вĕсенче чылай çитменлĕхсемпе кăлтăксем пулсан та, авторсене кӳрентерес мар, юлташлăха пăсас мар тесе, пирĕн критиксемпе рецензентсем çав çитменлĕхсене кăшт-каш асăрхаттарнипех е хăш-пĕр чух нимĕн шарламасăр та иртсе каяççĕ.

Тĕрĕс хакласа тивĕçлĕ вырăн паман пирки хальхи вăхăтра пирĕн хăш-пĕр чухăн произведенисемех малти вырăна йышăнса илнисем те пур. Тĕслĕхе çакнах илер. Турханăн «Йăмраллă ял» романĕ, ман шутпа, типĕ хаçат чĕлхипе çырнă художествăсăр япала. Анчах та Мускаври «Академкнига» 1965 çулта кăларнă «Народы Европейской части СССР» текен хулăм кĕнекере, чăвашсем çинчен уйрăмра, «Йăмраллă яла» чи малти вырăна тăратнă. Ку вăл СССР-ти халăхсем çинчен калакан кĕнеке, Совет Союзĕнче кăна мар, тĕнчипех саланма пултарать. Çав кĕнекерех чăвашсен совет поэзине пуçлакан çулăмлă Çеçпĕл, малтанхи писательсем Хумма Çеменĕ, Исаев, Н.Васянка çинчен ниçта та пĕр сăмах асăнни çук. Кам айăплă-ши кунта? Паллах, статйине çыракан Н.Воробьев профессор мар, ăна материал паракан чăваш историкĕсемпе этнографĕсем ответлă. Вĕсем тĕрĕс çырнă материал тупса парайман».

Илемлĕн, кăмăллăн, çирĕппĕн пăхать Çемен Элкер «Илем» хаçатăн пуçелĕкĕнче, «Ман пурнăç килет пĕр вĕçсĕр...» сăмахсемпе вулакана хавхалантарса хăй çумне туртать. Юнашарах – паттăр чăвашăн пурнăçĕ çинчен çырнă тĕп редактор умстатйи:

«Поэт чĕри – халăх чун-чĕри»

Семен Васильевич Элкер 1894 çулхи çу уйăхĕн (майăн) 1-мĕшĕнче Чăваш Республикинче, Мăн Упакассинче, вырăнта Пысăк Упакасси теççĕ, вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă. Пысăк Упакасси 1917-1927 çулсенче Етĕрне уесне кĕнĕ. 1917 çулта ăна Туçа (хальхи Йĕпреç районĕ) вулăсне кĕртнĕ, 1918

çулхи нарăсăн 17-мĕшĕнчен Кушлавăш (хальхи Вăрнар районĕ) вулăсне, 1919 çулхи авăн уйăхĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа 1927 çулччен каллех Туçа вулăсне кĕртнĕ. 1927 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнче Пысăк Упакассине Вăрнар район территорине кĕртнĕ. 1928 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче яла каллех Йĕпреç районне куçарнă. 1962 çулхи раштавăн 20-мĕшĕнчен пуçласа 1965 çулхи пуш уйăхĕн 14-мĕшĕччен Пысăк Упакасси çĕнĕрен Вăрнар районĕнчи ял шутланнă. Çавăн хыççăн тин вăл Йĕпреç районне çирĕплетнĕ. Упакассисене вăрман пуянлăхĕ ытларах туртнă-ши, е Вăрнара Йĕпреçрен çухрăм ытларах утмалла пулнăран, пĕлме хĕн, шутласан, Вăрнарĕпе Йĕпреçĕнче те чукун çул станцийĕсем пур, Кушлавăша Вăрнар районне хăварсах, вĕсем Кульцавсемпе икĕ район чикиллĕ пулсах, кăнтăралла пуçа çавăрнă. Пурăнаççĕ халĕ вĕсем Пысăк Упакасси ял Советне кĕрекен «Трудовик» колхозра. Пысăк ĕçченсем. Ял Совечĕ вĕсен 1927 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Упакасси ятлă. 1935 çулхи кăрлачăн 31-мĕшĕнчен – Пысăк Упакасси ятлă. Халĕ вара темле шутласа кăларнă администраци ятпа çӳрет пулас.

Шавлă пурнăç авăрĕнче пысăк ял, тем пек шампа-çăрттан ункинче явăннă пулин те, хăй вырăнĕнчен куçса ларман, халĕ те «...Кушлавăш текен вуникĕ ял уйĕнчех» сарăлса ларать, хамăр çĕр çинчех: Вăрнарпа Йĕпреç çĕрĕнчех.

Çавăнпа вăрнарсемпе йĕпреçсен Чăваш халăх поэтне ниепле те пайлама май çук. Вăл – хамăрăн.

Пысăк Упакассинче ун чухне хальхи пек нумай енлĕ пĕлӳ паракан вăтам шкул пулман. Пуçламăш пĕлӳ çеç панă ачасене. Малалла вĕренме каясси, паянхи пек тĕнче университечĕсем хыççăн хăваласси çинчен ĕмĕтленме те пултарайман ял ачи. Çав вăхăтрах тата тĕнче вăрçи йăтăнса тухнă. Ака-суха туса, çемьере усă парса пурăннă каччăна патша çарне илсе кайнă. уйăх хушши пăшал тытма вĕрентнĕ салтак юнлă вăрçа лекнĕ. Çапăçусенчен сывă кĕрешӳçĕ сахал тăрса юлать, Васçĕли ачи Çемен те йывăр аманать, хăйĕнчен килмен йывăр-

лăха пула, тăшман аллине лекет. Вăл вăхăтра Упакасси ачи, 1915 çулта, 51-мĕш пехота Литва полкĕнче службăра тăнă. 1916 çулта вăл, вăрçакан çĕршывсен аманнă çар çыннисене пĕр-пĕринпе улăштарнă май, Раççее тыткăнран таврăнать. Аманнă урапа. Питĕрпе Хусанти госпитальсенче сывалать.

1917-1918 çулсенче С.Элкер çитĕнсе çитнисен шкулĕнче Хусанта вĕренет, çав çулсенчех литература ĕçне тытăнать. 1918 çулхи утă уйăхĕнче вăл, хăйĕн çуралнă ялне таврăнса, малтан ял Совечĕн чи малтанхи секретарĕнче, унтан чухăнсен комитечĕн пуçлăхĕнче ĕçлет. 1919-1920 çулсенче, Хусанти педагогика курсĕсенчен вĕренсе тухнă хыççăн, икĕ çул Пысăк Упакасси шкулĕнче учительте ĕçлет.1922 çулхи юпа уйăхĕнчен вара «Канаш» хаçат редакцийĕнче ĕçлеме пуçлать. Çавăнтанпах вăл хăйĕн тапса тăракан пултарулăхĕпе иксĕлми вăй-хăватне чăваш литературипе журналистикине аталантарас ĕçшĕн парать.

С.В.Элкер 1930 çулта Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине кĕнĕ.

Поэтăн ячĕ чăваш вулаканĕсемшĕн 1928 çулта «Самана» ятлă сăвă кĕнеки тухнă хыççăн паллă пулса тăрать. Çавăнтанпа вăл пирĕн халăхăн чун-чĕрине яланлăха кĕрсе юлнă произведенисем сахал мар çырнă. Унăн «Хĕн-хур айĕнче» историлле поэми, «Вутпа тăвăл витĕр», «Шурăмпуç килсен» романĕсем, «Вăл вилĕмсĕр», «Вунсаккăрмĕш çул» поэмисем, нумай-нумай сăввисемпе калавĕсем, очеркĕсемпе статйисем чăваш литературин ӳсĕм çулĕ çинчи сулмаклă утăмĕсем пулса тăнă. Куçне хупичченех Элкер, вăл 1966 çулхи авăн уйăхĕн 6-мĕшĕнче Шупашкарта вилнĕ, тăван чăваш литературине çĕклессишĕн хыпса çуннă, чунне парса тăрăшнă. Тăван халăха хăй çырнисен пилĕк томне (1960 ç.) парнелесе хăварнă.

Семен Васильевич Элкерĕн нумай енлĕ те пуян пултарулăхне халăх, правительство яланах пысăка хакланă. Литература тата обществăлла ĕçри паллă çитĕнĕвĕсемшĕн ăна 1940

çулта Чăваш халăх поэчĕн хисеплĕ ятне панă, 1945 çулта Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, 1950 çулта Ленин орденĕпе наградĕланă. 1964 çулта Чăваш Республикин Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăх Хисеп Кĕнекине кĕртнĕ. Раççей Федерацийĕн аслă Канашĕн депутатне суйланă. 1934 çулта ăна СССР писателĕсен Союзĕн членне илнĕ.

Чăваш Республикин писателĕсен Союзĕн правленийĕнче упранакан ĕç-пуç кĕнеки С.В.Элкерĕн çак сăмахĕсемпе уçăлать:

Нихçан та манми
Пĕр юратнă çĕршыв.
Мана та нихçан
Эс манăça ан хыв.

С.В.Элкер Шупашкарти Ярославский урамĕнчи пĕчĕкрех йывăç пӳртре, кайран Карл Маркс урамĕнчи тăватă хутлă чул çуртра, электричество таварĕсем сутакан магазина хирĕç (ĕлĕкхи универмаг) пурăннă. Ун çине халĕ Асăну хăми вырнаçтарнă.

Поэт чĕри халăх чĕрипеле халĕ те пин-пин хĕлĕхпе çыхăнса тăрать, «Ман пурнăç килет вĕр вĕçсĕр» тени унăн - ĕмĕр-ĕмĕр чăваш халăхĕнче пурăнакан вилĕмсĕр сăмахĕсем».

1994 çулхи çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче эпир ятарлă автобуспа Пысăк Упакассине мăн эртелпе перçе çитрĕмĕр. Калаçу çул тăршшипех литература çинчен хĕрсе пычĕ. Аркадий Эсхель чăваш халăх поэчĕпе тĕл пулнисене аса илчĕ. Вăл ăна çамрăк вăрманти кĕреш юманпа танлаштарать. Ун йĕри-тавра пĕрмаях йăрăс хунав кашлать, ку вăл пирĕн литературăри çамрăк йыш, тет. Элкер хăйĕн пысăк кĕнекисенче халăх кун-çулĕн питĕ паллă тапхăрĕсене çутатса панă. Тăван çырулăха чĕререн юратакан поэт малтанхи чăваш писателĕсен йышне пĕр организацие пĕтĕçтерес ĕçе хастаррăн хутшăннă. Шухăш – Элкер сăввин çуначĕ. Элкер пултарулăхĕ вăл – хăй пĕр пысăк шкул, тенисене эпир тăнласа итлетпĕр. Хамăр та калаçăва хутшăнатпăр.

Вăрнар урлă каçма тăнăскерсем, Măньял Хапăсран Емельянова илсе тухас терĕç. Çăрăлчăк пирки урамне машина тавраш ĕ кĕреймест те, анкартисем хыçĕпе çурран утрăмăр. Шел, Анатолий Викторович, йывăр чире пула, Упакассине пыраймарĕ. Вăл Элкер енне вăрнарсемпе хапăссенчен салам кăшăлĕ çеç парса яма пултарчĕ.

Çанталăкĕ ăшă. Хĕвел çунтарать. Пысăк Упакасси писательсен, журналистсен, художниксен, ученăйсен йышлă ушкăнне, патшалăх органĕсенче ĕçлекенсене, поэтăн тăванĕсене, хăнасене хапăлласа кĕтсе илчĕ.

Уяв Семен Васильевич çуралнă мăн урамра пуçланчĕ. Вăл пурăннă кил-çурт умĕнче уçалнă митингра ЧР культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министрĕ В.П.Иванов, аслă поэт ентешĕсене саламласа, çапла каларĕ:

– Чăваш халăхĕн писателĕсем сахал мар, анчах халăх историйĕнче, куьтуринче вĕсенчен кашниех тарăн йĕр хăвараймасть. Çемен Элкер пирки вара ун пек калаймăн. Эпир унăн произведенийĕсем тăрăх вĕренсе ӳснĕ. 1994 çул – Элкер çулĕ. Эпир паян ăна çакăнта чысланипе вĕçленмĕ вăл. Юпа уйăхĕнче Шупашкарта республика шайĕнче паллă тăвăпăр. Çитес вăхăтрах хисеплĕ поэтăмăр çырнисен пуххи пичетленсе тухмалла. Эпир те сире парне тăвас терĕмĕр. Ялти клуба аталантарма 300 пин тенкĕ уйăртăмăр. Паян эпир Элкерсен çемйи пурăнакан пӳрт умне асăну палăкĕ вырнаçтарăпăр. Çак вырăн ял çыннисене ентешĕ пирки аса илтерсех тăрĕ. Ир те, каç та вĕсене асăну палăкĕ çине ӳкернĕ поэт сăнĕ тинкерĕ.

Палăк çинчи çивиттине Иванов министр, ял администрацийĕн пуçлăхĕ Н.Н.Яковлева уçса ячĕç. пурте палăк çине çырнине вулаççĕ: «Чăваш халăх поэчĕ Семен Васильевич Элкер (1894-1966) çак ялта çуралнă». Йĕпреçри ӳнер шкулĕнчен тухнă В.А.Зотиков скульптор хăйĕн ĕçне пысăк ăсталăхпа тунă. Асăну палăкĕн пултарулăх ушкăнĕ ячĕпе П.С.Пупин скульптор сăмах каларĕ. Элкерĕн ывăлĕ Петр Семенович ашшĕне хи-

сеплесе асăну палăкĕ уçма, уява йĕркелеме хутшăннă çынсене çемйи, тăванĕсем ячĕпе тав турĕ.

Уяв Элкер ячĕллĕ вăтам шкул картишне капланса çитрĕ. Ял шкулĕ Семен Васильевичăн тантăшĕ-мĕн. Икĕ менелник вĕсен паян. Шкул директорĕ Н.А.Васильев шкулăн унченхи тата хальхи пурнăçĕпе паллаштарчĕ, Элкерĕн вĕрентӳри пĕлтерĕшне палăртрĕ.

Çемен Элкер музейĕнче пулса тĕлĕнтĕмĕр. Р.А.Евграфова учительница епле ăслайлă йĕркелеме пĕлнĕ ăна. ЧР писательсен Союзĕн ертӳçи Ф.Г.Агивер, «Ялав» журналăн тĕп редкторĕ Ю.С.Сементер, Н.А.Теветкел поэт, ЧР вĕрентӳ, наука тата аслă шкул министрĕн çумĕ В.Сапожников, Йĕпреç район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В.А.Михалик, Элкер уявне пичетре çутатма Чĕмпĕртен ятарласа килнĕ «Канаш» хаçат фотокорреспонденчĕ Николай Казаков тата эпĕ музее парнесемпе пуянлатрăмăр.

Акă клубра савăнăçлă пуху уçăлчĕ. Райадминистраци пуçлăхĕн тепĕр çумĕ Г.М.Петров Элкерĕн вырăнти пĕлтерĕшĕ, кăçалхи район акатуйне ăна халаллама палăртни, ялсемпе поселоксен пурнăçĕ пирки каларĕ, ун хыççăн Ф.Г.Агивере сăмах пачĕ.

– Леонид Леонов писатель каланă тăрăх, – терĕ Федор Георгиевич, – кашни çыравçăн тĕп теми пур. Мĕнле темă-ши вăл Элкерĕн? Ахăртне эпĕ тĕрĕс шутласа тупрăм пулсассăн, «Вутпа тăвăл витĕр» романĕнче те, «Вунсаккăрмĕш çул» тата ытти поэмисенче те, ман шутпа, пĕр тема пулнă: чăваш чуралăхра пурăнать. Çав чуралăх, тӳррипе каласан, паян та иртсе кайман. Тĕрĕсех. Пирĕн литература вăйлă, эппин халăхĕ вăйлă, çыравçисем вăйлă. Кĕнекесем çырса халăха парнеленисĕр пуçне, халăх ăс-тăнне тытса тăнисĕр пуçне, паянлăха вĕсен патшалăха тытса тăма вăйсем çителĕксĕр. Вăл ӳлĕм писательсен, ӳнер тата ытти пултарулăх ăстисен аллинче пулнине курасчĕ. Çемен Элкер пулни – халăх телейĕ. Пирĕн çуллен паллă тăвакан уявсем пур. Иван Яков-

лев, Константин Иванов, Çеçпĕл Мишши, Митта Ваçлейĕ кунĕсем. Çемен Элкере асăнассине те йăлана кĕртесчĕ. Вăл ăна тивĕçлĕ. Чăваш çыравçисенчен пĕртен-пĕр вăл çеç хăй пурăннă чухне хăйĕн произведенийĕсене пилĕк томпа кăларма пултарнă. Унăн чăваш литературинчи виçĕ тĕп юпи ман шутпа çаксем – «Вутпа тăвăл витĕр», «Шурăмпуç килсен», «Хĕн-хур айĕнче». Çак произведенисем пурри чăваш халăхĕ пуррине, çухалманнине, хăçан та пулсан чуралăхран тасалассине калать.

Çемен Элкерĕн пултарулăхне тахçантанпах тăрăшса тĕпчекен Виталий Григорьевич Родионов, кӳршĕри ялта çуралса ӳснĕ ученăй, Чăваш патшалăх университечĕн профессорĕ, филологи наукисен докторĕ ытла пуян килнĕ иккен аслă вĕрентекенĕн менелникне. Малтан хĕрӳ сăмах каларĕ:

– Çынна ĕçсĕр пуçне асăну йĕрки те тытса тăрать иккен, – ăслăн çавăрттарса пычĕ вăл. – Паян çакăнта пуçтарăнни çакна çирĕплетет. Çемен Элкер çинчен каласа чух ăна çитĕнтернĕ Кушлавăш тăрăхĕ пирки чарăнса тăмасăр май çук. Элкер кунта çуралман пулсан, урăх çĕрте çуралман та пулĕччĕ. Илемлĕ тавралăх, кăмăллă çыннисем май панă ăна пултарулăха аталантарма. Эпĕ çапла шутлатăп: литературăра икĕ Элкер пур: пĕри – официаллă Элкер, тепри – кун кĕнекисенче юлни. Иккĕмĕшĕнче вăл чăваш халăхĕшĕн, шăпишĕн çунакан çын. Элкер пурнăçĕпе пултарулăхĕ чăваш идейи тавра иртнĕ. 1917 çултах вăл чăваш хăйĕн чĕлхипе калаçманнишĕн пăшăрханать. Ху чĕлхӳне ан хурла, тет вăл кашни чăваша. Наци идейи тенĕрен, вăл утмăлмĕш çулсен пуçламăшĕнче хайланă сăвă йĕркисене аса илер:

Ĕçленĕ хĕрĕх çул таран,
Чăвашлăха сунса чунтан.

Çакă унăн пурнăç тĕллевĕ пулнă. Çав чăвашлăхшăнах ăна вăтăрмĕш çулсенче айăплама пăхнă, ун çинчен çăхавсем çырнă. Вăл аллăмĕш çулсенче «Хурапа шурă» повесть çырать.

Ун пирки критиксем калаҫсах кайман. Мĕншĕн? Унта класс кĕрешĕвĕ çук. Унта – чăн-чăн пурнăҫ. Повеҫĕн тĕп шухăшĕ – кашни çыннăн турă çырни пур, унтан иртейместĕн тени. Анчах эпир хамăр пурнăҫа мĕнле илемлетме пултаратпăр? Турă çырнипе килĕшӳллĕн, тасан ирттерме пултаратпăр. Эппин, кашни çыннăн турă çырнипе килĕшӳре пулмалла. Эпир Элкер пултарулăхĕ пирки тĕпчесе пĕлменнисем татах пур-ха. Çак ĕҫсем кĕтеҫҫĕ пире, тĕпчевҫĕсене.

Тем вăхăтра Родионов хăйсен ялĕсене уяв кăшăлне çавăрчĕ. Хăй çырнă савăнăҫ юррине баян каласа хураçырмалла янраттарчĕ.

Йĕпреç шăпчăкĕ Микулай Теветкел ăслă шухăшлă сăввине шăрантарчĕ. Элкере вăл ачаран астăвать. Район хаçачĕ çумĕнчи литпĕрлешӳре чаплă поэт канашĕсене сахал мар пуçа хывнă. Элкер йĕрне поэзире те, прозăра та çирĕп тытса пырать, Кушлавăш тăрăхне кăна мар, Чăваш çĕршывне те пултарулăхра çӳле çĕклет. Ăна курсассăнах эпĕ хамăн пĕр кулăша аса илетĕп:

«Хисеплĕ ят паракан Аслă кантур алăкĕ умĕнче кĕтӳҫ пушши пек икĕ вăрăм черет. Пĕр енчисем сăвă сăвăрса, поэма пырши кумаҫҫĕ, тепĕр енчисем калав-роман кăрманĕнчен шыв юхтараҫҫĕ. Унта Николай Теветкел çыравçă çывхарать.

– «Чăваш халăх поэчĕ» пулас килсен, сăмсуна ытлашши ан каçăрт, пурпĕрех пирĕнтен мала иртейместĕн, тăр черете, – сĕнеҫҫĕ ăна хывăх вĕçтерекенсем.

– «Чăваш халăх писателĕ» ят та япăхах мар, хисепрех, кутна хĕстер кăрман хыçне, – кăчăк туртаҫҫĕ сăмах купи купалакансем.

– Чăваш халăхĕ мана хăйĕн хисеплĕ ятне черетсĕрех панă, – тет те Теветкел, аллисене шарт! çупса çунатланать, тӳпери Элкер çăлтăр çумне вĕçсе хăпарать.

Халран кайнă икĕ черечĕ те ун хыççăн сиксе пăхать, анчах Аслă кантур маччинчен çӳлерех вĕçме Микул чăваш поэчĕнни пек Турă панă хăватлă çунат нихăшин те çук иккен. Ирĕксĕрех черет çитессе кĕтме тивет».

Ура хурса пыракансем йăшсан, хăй вăхăчĕпе Теветкел те чăваш халăх поэчĕсен ретне, анчах малтисен ретне, тăрĕха та...

Сăмах калас текенсем татах та пулчĕç. Акă. Пысăк Упакассинче çуралнă Игорь Юрьевич Миронов. Элкерпе пĕр урамран. Вăл Чăваш Республикин экономика министерствине ертсе пырать, СССР наука академийĕн Экономика институтĕнче, Раççей Федерацийĕн вĕрентӳпе экономика министерствисенче, РФ Правительствинче хуравлă вырăнсенче ĕçленĕ. Философилле тарăн шухăшлă сăмах каларĕ ентешĕсем умĕнче. Тулĕк, чăвашла калаçма манарах пырать пулас.

Унпа юнашар – Йĕпреç ялĕнче çуралнă Борис Михайлович Яковлев. Кунти округран ăна нумаях пулмасть Чăваш Республики Аслă Канашĕн депутатне суйларĕç. Вăл йĕпреçсемшĕн хаклă хăна. Шупашкарти энергетика техникумĕнчен тата Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă, хуçалăхпа йĕркелӳ ĕçĕнче приборсем тăвакан заводран пуçласа КПСС Чăваш обкомĕ тата Республика Аслă канашĕ таранах ăнăçлă ĕçленĕ, пултарулăхĕпе ӳссе çитĕннĕ. Район экономикипе культурине аталантарас ĕçре вăл палăрмаллах пулăшу кӳнĕ.

Чăвашсен паллă поэчĕсенчен пĕри Г.А.Ефимов та Йĕпреçъеншĕн асра юлнă çын. Георгий Андреевич çамрăк чухне Йĕпреçри колхоз театрĕнче ĕçленĕ. Пысăк Упакассинче те ăсталăхне сахал мар кăтартнă. Театрпа çыхăннă асаилӳ артист-поэтшăн сахал мар пулчĕ. Хăй Шупашкарта Семен Элкерпе пултаруллă ĕçлени, туслă пурăнни çинчен вăл хумханса каласа пачĕ.

Туслă калаçу майĕпен аслă кĕрекене куçрĕ. Кунта та кашнин аса илӳ сăмахĕ чĕлхе çинчен каймарĕ.

Купăс каласах, юрласах ăсатрĕç пире упакассисем. Вăрнара кĕрес умĕн хырлăхра Элкерпе пĕрле лартăмăр, Шетмĕ тăрăхне çывхарсан, Юрий Сементер Элкерпе траксен юррине юрлас, терĕ. Шупашкара çитсен, Петр Семенович хăйсен хват-

терне туртрĕ. «Мĕнле-ха капла, аттепе юнашар кĕреке хушшине лармасан», – терĕ те çамрăк Элкер, никам та хирĕçлекен пулмарĕ. Çĕр çула çĕрĕпех паллă турăмăр вара. Уççăн. Кăмăлтан.

2005 çул, çу уйăхĕн 12-мĕшĕ.

ЭЛКЕР ЕТКЕРĔ

Чăваш кĕнекине хĕрлĕ ĕне çинĕренпе кăçал 1450 çул çитрĕ. Чăваш патшалăхне тăшман аркатнăранпа – çичĕ ĕмĕр çурă. Çавăнтанпа чăваш кĕнекине, асаттесен ăс-хакăлне чĕртес тесе пайтах ăру, пайтах этем тăрăшнă пулĕ – халĕ тин ячĕсене тĕрĕссипе пĕлсе пĕтереймĕпĕр. Анчах улăп-этемсен ячĕсем халăх кун-çулĕн тапхăрĕсене çухрăм юписем пек палăртса тăраççĕ. Бичурин, Яндуш, Яковлев тата ытти теçетке ят пуç таймалли таса сăнар пулса тăчĕ. XX ĕмĕр хутлăхĕнче аякранах уççăн çутатса тăраканĕсенчен пĕри – чăваш халăх сăвăçи Семен Васильевич Элкер (1894-1966). Константин Ивановпа Николай Шупуççынни поэзийĕнчен Çеçпĕлпе Хусанкай таппине сыпăнтаракан сăмах ăсти. Халăх сăмахлăхĕпе шухăшлавне çыруллă çĕнĕ кӳлепене кĕртме пултарнă ăсчах.

Поэтăн, гражданинăн чăн-чăн сăнарĕ, чăтса курнин сăмахпа илемлетмен сăпачĕ халăх умне туллин тухман-ха. Вĕсене курас тесен, малтан унăн кун кĕнекисене, патшалăх архивне халиччен лекмен еткерне пĕр пăсмасăр туллин пичетлесе кăларас пулать.

Элкер еткерĕ – чăваш халăхĕн сăмахлăхри тĕрĕслĕх кĕперĕ. Вăл пире иртнĕ ĕмĕртен малаш кунсене тĕрĕс-тĕкелрех каçса кайма кирлĕ.

Йĕпреç хутлăхĕнче Элкер кунĕсем çуркуннех пулса иртрĕç. 100 çулхи сăвăç тăван ял урамĕпе, тăван уй-хир сукмакĕсемпе пин-пин çын уттипе утрĕ, пин-пин çын сассипе калаç-

рĕ. Элкер музейĕнче пин-пин çынна курса савăнчĕ пулĕ. Ватти-вĕтти ун сăввисене пăхмасăр калать, калавĕ-романне вулать, драмисене вылять. Сăмахĕсем юрăсемпе оперăна кĕрсе вырнаçрĕç. Кушлавăш текен вун икĕ ял-уйĕ, Чакка çĕршывĕ Йĕпреç енчи çамрăк та ватă элкерçĕсене селĕм сăвă-калав çырма хистерĕ. Элкер 50 çулне Ухсай Карпат тăвĕсем хушшинчен сăвăран пуçласа паянччен пичетленисене пухсан, питех те шеп хитре элкериана пуçтарăнать. Сăвăçсемпе танах тĕпчевçĕсем Элкер çинчен ăшă сăмах нумай каланă. Михаил Сироткин, Никифор Вăсанкка, Афиноген Кузьмин, Аркадий Эсхель, Геннадий Хлебников, Николай Григорьев, Александр Артемьев, Хветĕр Уяр, Николай Евстафьев тата ыттисем ятарлă статьясем, тĕрленчĕк-очерксем, кĕнекесем пичетлесе кăларнă. Тем чухлĕ тĕпченĕ, тишкернĕ, каламан сăмах хăварман та пулĕ. Петĕр Хусанкай Элкер çинчен каланă сăмахĕ – хăй пĕр шедевр. С.В.Элкер ячĕ пысăк сăмахсарсемпе энциклопедисенче чыслă çырăннă.

Сăвăçăн халиччен тĕпчев куçĕ умне тухман çырăвĕсене, кунчăкĕсене (хăй вăл вĕсене «кун кĕнекисем» тенĕ), çутă курман хайлавĕсене пăхса тухнă хыççăн çĕнĕ сăмах калама кирли хыттăнах сисĕнсе кайрĕ. Çавăнпа Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ «Хурапа шурă» кĕнеке кăларчĕ. Ăна сăвăç ентешĕ, сăмах ăслăлăхĕсен тухтăрĕ Виталий Родионов пухса хатĕрленĕ, умсăмахланă. Элкерĕн хăй пурăннă чухне тухнă 5 томлă çырнисен пуххи çумне хушса кăларнă 6-мĕш кĕнеке вырăнне пулчĕ вăл. Çĕнĕ кĕнекене тăрăшса, май пур таран çыпăçуллă туса йĕркеленĕ.

Çырнисен пуххин 6 томĕнче – Семен Элкерĕн тĕнчи, шухăшĕ, ăсĕ, пултарулăх еткерĕ. Унта унăн сӳнми хĕлхемĕ тĕлкĕшет. Кам та кам çав аякри вут çутин иксĕлми ăшшине сиссе илет, вăл «тискер çил кашласан та, сив тинĕс шавласан та» чун çирĕплĕхне çухатмĕ. Халăхăн эпир савакан ĕçчен, тӳсĕмлĕ, талантлă ывăлĕ хурапа шурра, усалпа ырра, тĕрĕспе

суяна уйӑрма вӗрентни пире, çирӗплӗхпе ӑнкарулӑх парӗ, çул юппинче иккӗленсе, алӑ усса, хуйха путса тӑрассинчен хӑтарӗ.

Ярӑмӑн пӗрремӗш кӗнекинче – 1917-1957 çулсенчи сӑвӑсем, юмах-халап, поэмӑсем. Иккӗмӗшӗнче – асран кайми «Хӗн-хур айӗнче». Ку ӗнтӗ вилӗмсӗр «Нарспи» пекех пирӗн чуна кӗрсе юлнӑ маршал-повесть. Унтан – «Вутпа тӑвӑл витӗр» роман-хроника, «Хурапа шурӑ» повесть. Ку повесть малашне шкул кӗнекине кӗрет. Вӑл яш-кӗрӗме кирлех тесе шутлатӑп. «Унтри» калав та – чӑваш литературин генерал-калавӗ. «Шурӑмпуç килсен» роман нумай вӑхӑт шкул программинче пулчӗ. Анчах ӑна çыравçӑн хӑйӗн ытти хайлавӗсемех хӗссе кӑларчӗç. Çырнисен пиллӗкмӗш кӗнекинче – «Вунсаккӑрмӗш çул» драма. Кӑçалхи кӑларӑмри статьясем, «Кушлавӑш уйӗ» истори очеркӗ, асаилӳсем, çырусем ярӑма самай вирлӗ пуянлатаççӗ. Чӑваш чӗлхине, шкулне хӳтӗлесе Чӑваш парти обкомне янӑ çыру хӑй пӗр истори, пӗр трагеди.

Поэтшӑн, художникшӑн такам панӑ выговор е сумлӑ ят пурӑннӑ чухне кӑна нумая пӗлтерме пултарать. Вӑхӑт иртнӗçемӗн хайлавӗсем хӑйсемшӗн хӑйсем явап тытаççӗ. Кивелнӗ тӗк вӗсем, хӑть ылтӑн тесе кала, тӗрӗс хӗвел çинче йӑлтӑртатаймӗç. Халиччен эпир пач шутламан енчен татах йӑлтӑртатса каяççӗ пулсан, çав хайлавсем чӑнах ӳнер япалисем пулни, кивелменни курӑнать. Элкерӗн кивелми сӑнарлӑх пур. Халӑхла, фольклорла вӑл, çавӑнпа яр-ялтӑркка та мар, пушӑ хӑлтӑркка та мар.

Пӗр-ик çӑмӑл тӗслӗхпе сӑмахӑма çирӗплетем-ха.
Тӗнче туллиех халь – ӗçсӗр выççисем.
Нумай – вӑрçӑ ватнӑ уксах та чӑлах,
Хыт пурнӑç амантнӑ инкеклӗ çынсем.
Чура тенисем те ӗлӗкхи майлах.
Наука ӑслайӗпе пурнӑç юсанса
Мӗнпур этем йӑхӗ ыр курас чухне,

«Çĕршыв хуçисем» тек мулшăн харкашса
Пĕр шелсĕр тăкаççĕ халăхшăн юнне.
Итле, чаплă ĕмĕр: этемлĕх сантан
Кĕтет лăпкă, тутă,телейлĕ кунçул.
Мул вăйĕ – усал вăй, ыр кун памасан,
Ăна аркатар та – эсĕ пирĕн пул.

Çакна кам хăçан хайланине калас пулмасан, ним шутламасăрах хальхаççăн çырнă теме пулать. Căввине ĕмĕр пуçламăшĕнче 1926 çулта çырнă, вăл ĕмĕр вĕçĕнче те – тĕрĕсех.

Акă тата «Çĕршыв чĕрĕлет» (1925) сăвăри йĕркесем:

Тӳсми йывăра тек чăтса тăраймасăр
Кисренчĕ Россия çĕршывăн чĕрçи.
Çак тапхăр, нимрен тытса чарăнаймасăр,
Кăкланчĕ те ӳкрĕ капмар йывăççи.
Хура çăхансем çеç савса, ытармасăр,
Нумай йăва хывнă çак хӳтлĕх ăшне,
Е выçкăн хурчка та караппăл, тăрлавсăр,
Лара-лара каннă ун çӳллĕ вĕçне...

Ку сăвă йĕркисем вара «Çĕршыв чĕрине» – Мускав, Шурă çурт патне çитернĕнех туйăнать.

Анчах – ырса çитнĕ çĕре тӳсме йывăр, –
Капмар йывăç айĕ каять кисренсе:
Нихçан та ӳкмес пек çĕкленнĕ ват йывăç
Тĕппех, шăлтăр-шалтăр анать ишĕлсе.

Паллах, Элкер ку сăвва çырнă чухне Мускавра Шурă çурта шăлтăр-шалтăр кисретессе пĕлмен. Вăл пачах урăх ĕçсем çинчен çырнă. Анчах сăнарлă çырнă. Сăнарлă сăмахăн ĕмĕрĕ вăрăм.

С.В.Элкерĕн классика çӳлĕкĕ çинчи хайлавĕсем вĕренӳ

кĕнекисене вырнаçнă. Вĕсем унтан часах тухас çук. Ачасем валли çырнă «Тăри юрри» («Çететтин, çететтин, Çитес çĕре çитрĕм тин, Çак çĕршыва асилтĕм, Хăвăрт вĕçсе эп килтĕм») йышшисем, юрату юррисем – «Сакăлта çыр хĕрринче», «Çу иртсе кĕр çитес умĕн», «Асри çуркунне» тата гражданла лирикăн сулмаклă маршĕсем – «Хурçă карап», «Ирĕклĕх юрри», «Паян», «Фашизм йăхне – çĕр тĕпне» шалти хăвачĕпе пуян. Вĕсем чăваш сăмахлăхĕн историне çырăнса юлчĕç. Анчах Элкере тĕпченĕ, вĕрентнĕ, вуланă чухне Çеçпĕлпе, Хусанкайпа танлаштарса сăвă илемĕн çĕнĕлĕхĕсене шырани пайта парас çук. Сăвă сыпăкĕ, засташ тĕлĕнтермĕшĕ мар, шухăш сарлакăшĕ хаклă Элкере. Эпос хывса юрлама çуралнă вăл, анчах тĕлне лекеймен – халăх сăмахлăхĕнчен совет çырулăхне йĕркелеме тивнĕ. Ку вăл синкерлĕ куçăм Шелепипе Элкершĕн. Вăл К.В. Ивановпа, Д.П.Юманпа,

Я.Г.Ухсайпа пĕр сулăмра, эпика сăнарлăхĕ енче тăрать. Чăнласа пăхсан, ăна халăх халапçи, улăпçи, акынĕ темелле. Унăн пултарулăхĕнче халăхлăх туртăмĕ, шухăшлавĕ, сăнарлăхĕ малта. Çавна тата вăл пурăннă самана витĕмне чухласа пăхсан, Элкер поэзийĕ вăхăт иртнĕçемĕн тата хаклăрах пулса юлĕ.

Виталий Станьял,
1994 ç.

Виталий Петрович Никитин-Станьял Шупашкар районĕнчи Станьялĕнче 1940 çулта çуралнă. Чăваш пединститутĕнче, Чăваш университечĕн аспирантуринче вĕреннĕ, филологи наукисен кандидачĕ, литературовед, поэт, ЧР аслă шкулĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, чăваш филологийĕн кафедрине доцент шайĕнче ертсе пынă. Педагогика, литература ăсталăхĕсен паянхи çивĕч ыйтăвĕсемпе тата илемлĕ литература произведенийĕсен кĕнекисене йышлăн кăларнă.

Элкер çĕршывĕ ăна кăмăллăн алă панă – хăйĕн кĕрӳшĕ – хисеплĕ çынни вырăнне хурса йышăннă.

ЭЛКЕР СЕХЕЧĔ ÇĔР ХЫÇÇĔН ПИЛЛĔК ÇАПСАН

1999 çулта.

Халăх умне манăн яланах çĕнĕ хайлавпа тухас килет, мĕншĕн тесессĕн, çĕнĕ çынсене курнă май, вĕсемпе çĕнĕ шухăшпа калаçмалла-çке, вĕсен умĕнче пĕрмай пĕр юрă юрламалла мар, вĕсене çывăх, кăмăллă, витĕмлĕ сăмах çаптармалла. Çапла, Виталий Григорьевич Родионов университетран шăнкăравласан, пуçăм сисмесĕрех Йĕпреç еннелле сулăнчĕ, тăван вырăнсем, çывăх çынсем куç умĕнче вĕлтлетсе явăнма пуçларĕç. Ĕçленĕ вăхăтра Мăн Упакассинче мĕн

чухлĕ пулнине астумастăп, анчах та «Трудовик» колхоза кĕрекен ялсен ĕçченĕсемпе калаçнине, савăннине шутпа палăртма та май çук пуль. Çывăх тăванĕ те, шанчăклă юлташĕ те, пархатарлă пуçлăхĕ те, çĕр ĕçченĕ те Элкер ялĕнче манăн никамăннинчен те нумайрах пуль тесе шухăшланă эпĕ тахçанах. Хураçырма ачи ыранхи авточупу пирки пĕлтернĕ хыççăн çав вăхăт туйăмĕ чуна уçса ячĕ. Пуçра «Элкер çĕршывĕ» ятлă сăвă çуралчĕ:

Элкер тесен, чăваш çыннийĕ
Сăнанă анлă тӳпене
Йăлкăшакан çăлтăр çутийĕ
Парать тесе мăн телейне.

Элкер тесен, Упа кассийĕ
Татах мăнаçлăн курăнать,
Çуратнă шăпчăкĕн сассийĕ
Ялта паян та пурăнать.

Элкер тесен, Илем картийĕ
Ытла та анлăн сарăлать,
Чăваш сăмахĕн чĕр хуртийĕ
Пулса чечек пек çурăлать.

Элкер тесен, кĕрлет хăватлăн
Поэт хайланă «Самана»,
«Вăл вилĕмсĕр» юлать сăваплăн
Килсен çĕн шуçăм таврана.

Элкер тесен, кунçул чуппийĕ
Хĕн-хурлă пулнă, мĕн тăван.
Паян Чакка пурнăç хуçийĕ,
Сăнарлăх паттăрĕ – тăван.

Элкер тесен, вун ик ял уйĕ
Пуян та кăмăллă кĕтес.
Янрать Çемен мучин уявĕ,
Ăмăртмалла туртар йĕтес.

1999 çулхи çу, 27.

Ирпе, 1999 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче, Чăваш патшалăх университечĕн тĕп никĕсĕ умне, эпĕ пит хаваслăн персе çитрĕм. Ăслăлăх çурчĕ умĕнче ăслă чăвашсем ушкăншарăн-ушкăншарăн халап çапса тăраççĕ. Вĕсем хушшинче – Николай Александрович Петровский-Теветкел, Георгий Иосифович Федоров, Валентин Александрович Абрамов, Виктор Леонтьевич Немцев... Таса ӳт çинчи ӳпне çăпан пек, литература çумçаккийĕ, вăрттăн сутакан йăпăлти те вĕсенчен юлман.

Чăвашăн тĕп элкерçи Родионов кӳршин менелникне малашне кашни пилĕк çулта пĕрре чаплăн паллă тăватпăр, тенĕччĕ. Ĕçчен ентеш хăйĕн сăмахне çирĕп тытать. Паянхи çулçӳреве шăпах вăл палăртнине пурнăçлас тĕллевпе йĕркеленĕ. Чăваш филологийĕпе культури факультечĕн деканĕ хăйсен автобусне çыртарса илнĕ, йĕпреçсене юрă-ташăпа савăнтарма «культурниксен» артисчĕсене те хăйсенчен хăварман. Вĕсен хĕрӳлĕхне чăтаймасăр, Вăрнартан тухсан, çамрăк хырлăхра ушкăнпа хăпартланса, сăмах-юмах пăтти пĕçерсе çирĕмĕр. Ун хыççăн, чиперех манпа юнашар ларса пыракан Федоров профессор, «çав хĕрсене кăштах консультаци памалла-ха» тесе, сулахай питçăмарти çинчи пĕчĕк тур паллиллĕ чиперкке еннелле туртăнчĕ. «Вĕрентекенпе вĕренекен хушшинче пуплемелли пĕтмест пуль çав», – тесе шухăшласа пытăм вара çав хĕр куллипе пите çăва-çăва.

Родионов килсен кунта, Упакасси çĕнĕлле – ентешле сывлама пуçлать. Хăйсен ялĕсем те капăрăн ушкăнланса пынă. Виталий Григорьевич вĕсенчен уйрăлма пĕлмест. Хаваслăх тĕлпулăвĕсенче калаçмалли, ыйтса пĕлмелли, пĕлтермелли,

шантарса сăмах памалли вĕçĕмсĕрех. Халăхпа лăк тулнă ял клубĕнче эпĕ те хамăн хĕрсе çуралнă сăввăма пăхмасăр каласа патăм: «Элкер тесен...» Манăн тата, Чăваш Республики писателĕсен Союзĕн председателĕн çумĕ пулнă май, хамăрăн сыравçăсен ячĕпе хĕрӳ салам валеçмелле пулчĕ упакассисене. Василий Николаевич Еникова та алă тытрăм. Самай туртăннă ял маçтăрĕ, пӳрт-çурт ăсти. Пуçласа эпĕ унпа 1967 çулта, совет влаçне туса хунăранпа çур ĕмĕр çитнĕ тĕле очерк хатĕрлеме пырсан, хăйсен типтерлĕ килĕнче паллашнăччĕ. Хастар салтак-сапер, рота старшини вăрçăран Ленин, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсем, икĕ «Мухтавшăн» медаль кăкăрĕ çине çакса таврăнни питĕ тĕлĕнтернĕччĕ. Ара, паттăрлăхĕ пулнă çав унăн. Мирлĕ ĕçре те вăл тепĕр виçĕ медаль илме тивĕçрĕ. Наградăсемшĕн темиçе хутчен те саламланăччĕ ăна. Питĕ тараватлăн, васкамасăр, тулăхлă юхтарса пырать вăл калаçăвне. Семен Васильевичăн тăван çĕрти кун-çулĕпе хăпартланса паллаштарать. Эпĕ вара хамăн юратнă упакассисем иртнĕ вăхăтра мĕнле пурăннине тĕпĕ-йĕрĕпе тенĕ пекех пĕлсе юлатăп.

Район, ял пуçлăхĕсем йĕркеленĕ савăнăç тĕлпулăвĕ шупашкарсене яланах чунтан килĕшнĕ. Хальхи тĕлпулу вара уйрăмах кăмăллă çӳллĕ шайра иртрĕ пек туйăнчĕ. Виталий Родионов «камантине» шутсăрах хисепленĕшĕн пулчĕ пулмалла ку. Упакассин ватă улăпĕ Кушлавăш çĕрĕн çамрăк улăпне хăй ытамне тăванла йышăнать. Унăн пултаруллăхне хăйĕн вăйхăвачĕпе, ăс-тăн пуянлăхĕпе пĕрешкел шайра танлаштарса.

«Элкер сехечĕ тепре пиллĕк çапсассăн, çурхи хĕвелпе пĕрле, каллех эртеллешсе килĕпĕр», – çак шухăшпа уйрăлтăмăр эпир чăваш халăх поэчĕпе, унăн курăмлă ентешĕсемпе ун чухне.

2005 çулхи çу уйăхĕн 18-мĕшĕ.

2004 çулта.

2004 çулхи ака уйăхĕн вĕçнелле писательсен союзне кĕмен пулсан, хальхинче эпĕ Элкер мучипе тĕл пулаймастăмччĕ те пуль. Икĕ вашнăй писатель-профессионал Йĕпреçе кайма хатĕрленеççĕ. Пысăк Упакассине. «Мана илсе каймастăр-и?» – тесе ыйтса пăхрăм та, вĕсем пĕр-пĕрин куçĕнчен ытарлăн пăхса илчĕç те, кăшт тăхтасан, пĕри сăмах хушрĕ: «Эсĕ те каяс шухăшлă-ха апла унта...» Пирĕн пеккисемсĕр, ятарлă ушкăн пухма хатĕрленнине туйрăм-ха, çапах, çине тăрсах, аслă «профессионалсемпе» кайса курас терĕм хаклă ентешĕме. Чаплă çыннăмăрăн 110 çулхи уяв кĕрекинче Упакасси сăрине тутанса пăхассăмах килчĕ.

Шухăшăмпа эпĕ унта университет ачисемпе пĕрле каясшăнччĕ. Вĕсем транспорт ыйтăвĕпе çыхланса ларнă курăнать. Ик мулкача хăваласа пĕрне те тытайман тенĕ пек, шăхăрса тăрса юласран та шиклентĕм, ирĕксĕрех вара «профессионалсем» çумне çыпçăнма тиврĕ.

Шупашкарти Ленин палăкĕ çумĕнчен уйрăлса вăрăм çул тытрăмăр кăнтăралла. Ятарлă автобусра – ЧР Культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерствин, республикăри наци библиотекин хуравлă çыннисем, ЧР профессионал писательсен Союзĕн правлени председателĕн çумĕ П.В.Афанасьев, Г.А.Ефимов поэт тата Элкерĕн çывăх тăванĕсем. Унченхи çулçӳревсем пек шав тĕнчи мар. Пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл калаçса пымалли çул пулчĕ. Ăнлантăм: нимле Теветкелсем те, Родионовсем те кирлех мар иккен паянхи ушкăнра. Вĕсем пултарулăх эртелĕнче çуккишĕн хыпса çунаканах пулмарĕ. Хама хам ытлашши çын вырăнĕнче пек туйса пытăм.

Юрать манăн вăрăм çула кĕскетмелли тахçанхи юлташăм тупăнчĕ: Владимир Иванович Немешкин. Унпа эпир хăй вăхăтĕнче Компартин Чулхулари аслă шкулĕнче пĕрле

вĕреннĕччĕ. Кайран вăл Хĕрлĕ Чутай райсовет ĕçтовкомнĕ чылай çул ăнăçлă ертсе пычĕ, канăва тухсан та алă усса лармасть иккен, краевед, çав хушăрах республикăри ветерансен юхăмĕн активлă çĕмĕрттерӳçи. Республика лапамĕнче Элкер патне каякансем хушшинче ăна курсассăн, эпĕ малтанах тĕлĕннĕччĕ-ха, «Мĕнле сăлтавпа лекнĕ-ха ку ырă çыннăм пирĕн ушкăна», – тесе шутласа илтĕм. Сăлтавĕ часах уçăлчĕ. Унăн мăнукĕпе Элкер ачин, Петр Семенович ачи пĕрлешнĕ иккен. Йыш та хушăннă. Ватă Немешкин пукане пек пĕчĕк мăнукне чĕрçи сине лартсах çитерчĕ мăн аслашшĕн ялне. Унта Владимир Иванович питĕ интересленсе паллашрĕ аслă поэтăн ялĕпе, ял çыннисемпе, тăхлачă-хăтисен тăванĕсемпе, халăх умĕнче уççăн, кăмăллăн калаçрĕ.

Упакассисем пире маларахах кĕтнĕ иккен. Унченхи йăлапа эпир хамăра официаллă чинсем кĕтсе илеççĕ пуль, тенĕччĕ. Çавăнпа пуçлăхсене шыратпăр тĕп лапамра. Пире вара Семен Василеьвичăн йăмăкĕ пĕтĕм Йĕпреç тăрăхĕ ячĕпе кĕтсе илчĕ. «Атьăр шӳрпе çиме, кăпăклă сăра ĕçме», – тесе вăл чи малтан хăйĕн тăванĕсене ытакласа илчĕ, унтан пире ăшă аллине парса тухрĕ. Элкерсен йăхĕнчи Владимир Ильич Герасимов, унччен вăл партком секратерĕнче, ферма заведующийĕнче ĕçлетчĕ, яланхиллех хăна кĕтсе илмелли йĕркепе пирĕнпе тĕл пулчĕ.

Вĕсем çавăтнипе эпир пуян кил-çурта çитсе кĕтĕмĕр. Пиччĕшĕн çуралнă кунĕ ячĕпе йăмăкĕн упăшки сысна пуснă. Килте ирех така хуранĕпе шӳрпе пĕçернĕ.

Анлă пӳрт ăшчиккине эпир тултарсах лартрăмăр. Йăмăкĕ Семен Васильевичăн епле йăрăскер, сывлăхлă, ĕçлекен чипер хĕрарăм.

Пăхсан тинкеререх, каснă-лартнă пиччĕшĕн сăнĕ. Калаçăвĕ те унăнни майлах, çемçен, типтерлĕн тухаççĕ сăмахĕсем. Çаврăнуçулăхĕ тата мĕнлерех. Хăнасене сăрине те, сăмакунне те, каçуннăй эрехне те питĕ меллĕн ĕçтерме пĕлет. «Мана

халь аташма юрамасть-ха», – текелесе калаçакан Ефимов та чăтаймарĕ, «тусăм ячĕпе»тесе, шуррине стаканĕпех пушатса пачĕ. Чĕлхи тата ытларах уçăлса пынă май, Георгий Андреевич иртнине аса илме пуçларĕ.

– Писательсен Союзĕнче пирĕн, Атăл хĕрринчи çуртра, иксĕмĕрĕн пĕр сĕтел пурччĕ. Пĕр енчи сунтăхĕнче – Çеменĕн ĕç хучĕсемччĕ, тепринче – манăнччĕ. Хирĕç те ларса пăхнă, черетленсе те ĕçленĕ. Çав туслăх сĕтелĕ хушшинче ларнă пекех туятăп эпĕ паян сирĕн хăна сĕтелĕ хушшинче. Тавах сире ырă кăмăлшăн, – тесе вăл Семен Васильевичăн йăмăкĕпе тата Петĕр ывăлĕпе сăра куркине шаклаттарчĕ.

Апат хыççăн мухтав вăхăчĕ пуçланчĕ. Яланхи йăлапа мăн ушкăн Элкерсен тĕп килĕ еннелле хăпарчĕ. Тряккассинче çуралнă, ӳснĕ паллă сăвăç. Пӳрт умĕнчи палăк сăнарĕ чĕрĕлсе пире хирĕç утса пынăнах, кашнине алă парса саламланăнах, кĕреке хушшине чĕннĕ пекех туйăнчĕ. Вăтам шкул картишĕнче те вăл бронза палăкĕнчен чĕрĕ çын пулса пирĕнпе юнашар ытакланса тăнă пекех пулса кайрĕ савăнăç самантĕнче. Эпир ăна çурхи чечек çыххисем тыттартăмăр. Хăйпе хаваласса, çунатланса калаçрăмăр пек. Музей пӳлĕмĕсем тăрăх та вăл хăй кăтартса çӳрет пек, парнеленĕ пирĕн кĕнекесене уçа-уçа хупать пек. Сасси çеç илтĕнмест. Ун вырăнне кĕçĕн ывăлĕ калать: «Атте сăнарне тасан упранăшăн, унăн еткерлĕхне çухалма паманшăн сире чун-чĕререн тав сăмахĕ калатăп», – тет Петр Семенович. – Ял атте сывлăшĕпех сывлать. Çакă савăнтармаллипех савăнтарать пире кашнинех кашнинчех, Упакассине килсессĕн».

Вăтам шкул çуртĕнче çар мухтавĕн музейне уçнă вăхăтра эпĕ пухăннă çынсене тепĕр хут пăхса çаврăнтăм, хамăн авалхи паллаканăма Еникова шырарăм. «Василий Николаевич çуккă-çке...» теме ĕлкĕреймерĕм, мана Герасимов хурлăхлă хыпар пĕлтерчĕ: «Нумаях пулмасть пытартăмăр ăна». Ячĕ çеç юлнă паттăрăн, С.В.Элкерпе Пысăк Упакассин ытти мухтавлă

ывăл-хĕрĕн ырă ячĕ мăнаçлăн курăнать музейра, халăх асĕнче пурăнать.

Мĕн авалтан библиотека вăл кĕнеке, хаçат-журнал пуххисен пуянлăхĕ пулнă. Çĕнĕ самана ăна та çĕнĕ сăн, çĕнĕ пулăм кĕртнĕ. Электронлă тĕлĕнтермĕшпе халĕ пĕтĕм тĕнчепе сыхăнса, тĕнче культурин аталанăвĕпе ниçта тухмасăрах паллашма пулать. Республикипех моделлĕ библиотекăсем уçăлаççĕ. «Тĕслĕх библиотеки» текен çĕнĕлĕх паян Пысăк Упакассине те çитрĕ. Парнесем, тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан мăн телевизор таранах, пачĕç библиотекăна. Компьютер пулăшнипе, ял пурнăçĕ çинчен ӳкернĕ фильма пăхрĕç. Пурнăç аталанăвĕнче тăван чĕлхе, чăваш сăмахĕ ан çухалса кайтăрччĕ çеç ку «модельсемпе». Элкер те хăйĕн ятлă çăлтăрĕ пекех ялкăштăрччĕ чăваш халăхĕн чун-чĕрине ăшăтса.

Каллех пире Элкер тăванĕсем çула ăсатрĕç.

Шупашкарта Родионова тĕл пултăм. Упакассине мĕнле кайса килни çинчен каласа парас тесе çăвара уçнăччĕ çеç, вăл мана, аллине ласт сулса, чарса лартрĕ:

– Манран ытла нимле «профессионал» та Элкере тĕплĕн, тарăннăн пĕлмест. Ячĕшĕн, «галочкăшăн» кăна тĕл пулмалла мар унпа. Пурне те чунран йышăнмасть вăл. Каласа пачĕç мана...

Писательсен союзĕнче ĕçлекенсем хăйне Элкер юбилейне илсе кайманшăн кӳренмесĕр епле чăттăр-ха вăл – чăвашăн тĕп элкерçи?

Упакассинче çав кун кама куратăн, çавă: «Родионов ма килмен тата?», «Родионова эпир чунтан кĕтеттĕмĕрччĕ», «Виталий Григорьевичсăр епле-ха капла...» Ах, чĕререн калаçаттăмăр...» тесе ыйтнисем çине хуравласа ĕлкĕреймерĕм.

Теветкел Микулайĕ те хăйне пăрса хăварнăшăн хытах кӳреннĕ. Питĕ ятлаçрĕ.

Мĕн тăвăн ĕнтĕ, уяв тени уявлах иртрĕ, анчах... Кушлавăш тăрăхĕнчи вăйлă та талантлă писательсемсĕр, Элкер тымарĕн чĕрĕ хунавĕсемсĕр.

Эпĕ вара хамăн пуçра çуралнă сăвă йĕркисемпе хама хам лăплантартăм:

Йĕпреç вăрманĕ, эс сип-симĕс, анлă,
Хĕвеллĕ тухăçран инçе анат таран,
Тĕнче кăрманĕ, эс пуян, ытамлă,
Хĕрӳллĕ пурнăçпа çиçсе тăран.

Йĕпреç кĕтесĕ, эс ытла асамлă,
Чăваш йăхне авалтанпа упран,
Тĕнче картийĕ ăшĕнчи çĕр халăх
Çемйи йышне вăйлантарса пыран.

Йăпреç çĕршывĕ, эс вутра та çуннă,
Тăшман килсен çĕн пурнăçа ватма.
Тĕнче хăвачĕ пулнă иккен санăн
Хура эшкер çулне пӳлсе лартма.

Йĕпреç кĕтесĕ, эсĕ – мăн тăванлăх,
Епле манайăн сиплĕ çăлкуçа.
Тĕнче картинĕ – хурăнлăх, юманлăх,
Сăнарлăн, паттăр курăнан куçа.

Йĕпреç çыннийĕ, эсĕ çил-çунатлă,
Чапна кăтартрăн вăрçăра, ĕçре,
Тĕнче юррийĕ шăратан уç саслăн,
Ытакланса ларса кĕрекере.

Йĕпреç телейĕ, эс – манра, санра та,
Çĕнсе туптаннă çутă ăраскал.
Тĕнче паллийĕ илнĕ çич ютра та,
Кĕрешӳре нихçан чакман вăй-хал.

2005 çулхи çу уйăхĕн 19-мĕшĕ.

* * *

Чăваш Республикин Журналисчĕсен союзĕн Йĕпреçри пуçламăш организацине ертсе пыракан Геннадий Кузнецов Элкер уявĕ çинчен «Хыпар» хаçатра статья пичетлерĕ:

УПАКАССИ ТĂРĂХĔ ЧАПЛĂ ЕНТЕШНЕ ЧЫСЛАРĔ

Кушлавăш текен вун икĕ ял уйĕн варринче вырнаçнă Пысăк Упакассине чаплă уяв çитрĕ. Ял-йыш, ку тăрăхра пурăнакан çынсем тăван литературăна хăйĕн вилĕмсĕр хайлавĕсемпе пуянлатнă мухтавлăран та мухтавлă ентешĕ – Чăваш халăх поэчĕ Çемен Элкер çуралнăранпа 110 çул çитнине чыслăн паллă турĕç. Çак ятпа Çемен Элкер ячĕллĕ вăтам шкул картишĕнче, поэтăн бронза палăкĕ умĕнче савăнăçлă митинг пулчĕ. Ăна, кĕске сăмах каласа, вырăнти ял администраци пуçлăхĕ Е.Петрова уçрĕ. Тухса калаçакансем Семен Васильевич тунă вышкайсăр пысăк ĕçĕн паянхи вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ, вăл çырнă романсемпе повеçсем, поэмăсемпе калавсем, историллĕ очерксемпе тавра пĕлӳ енĕпе тĕпченĕ хайлавĕсем тăван çырулăхăн ылтăн çӳпçине кĕрсе юлни çинчен тулли кăмăл-туйăмпа, таса мăнаçлăхпа пĕлтерчĕç. Уяв хаваслăхне пайлама Шупашкартан килсе çитнĕ, Элкере лайăх пĕлнĕ çыравçăсем – Чăваш халăх поэчĕсем Георгий Ефимовпа Порфирий Афанасьев тата Владимир Кузьмин писатель хутшăнчĕç. Шкул ачисем вĕсене чечексемпе, çăкăр-тăварпа тараватлăн кĕтсе илчĕç, хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç. Хаклă хăнасем ЧР Профессионал писательсен йышĕнче тăракансен ячĕпе поэт палăкĕ умне чечек çыххи хучĕç.

Район администраци пуçлăхĕ Г.Яковлев Элкере лайăх пĕлет иккен. Çакă унăн сăмахĕнчен те уçăмлăн сисĕнчĕ. «Пулас халăх поэчĕ 1928 çулта кăларнă пĕрремĕш сăвă кĕнекине «Самана» ят панă. Паянхи саманашăн та вырăнлă вăл. Элкер çырнă хай-

лавсем пире самана утăмĕпе тан утма хавхалантараççĕ, – терĕ вăл. – Çавăн пек çын пирĕн тăрăхра çуралса ӳснишĕн эпир тивĕçлипех мăнаçланатпăр. Вăл район чысĕпе чапне çӳле çĕклерĕ. Халăх поэчĕ çĕкленĕ темăсем вĕсем – социаллă темăсем, самана темисем. Ахальтен мар ĕнтĕ Семен Васильевич – Чăваш Республикин Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп кĕнекине пирĕн районтан кĕме тивĕçнĕ пĕрремĕш çын».

Элкер юбилейĕ унăн тăван ялĕнче тата икĕ пулăмпа палăрса юлчĕ. Çав кун вăтам шкулта халăх поэчĕн музейĕ çĕнĕ, малтанхинчен чыпай аслăрах пӳлĕмре ĕçлеме пуçларĕ. Кунта Элкер усă курнă япаласем, унăн тĕрлĕ издательствăра çапăнса тухнă кĕнекисем, ал çырăвĕсем, тус-юлташĕсемпе тăванĕсем патне янă çырусем, сăн ӳкерчĕксем вырăн тупнă. «Атте сăнарне тасан упранăшăн, унăн еткерлĕхне çухалма паманшăн сире чун-чĕререн тав сăмахĕ калатăп, – терĕ Семен Васильевичăн кĕçĕн ывăлĕ Петр Семенович. – Ял Элкер сывлăшĕпех сывлать иккен. Çакă савăнтармаллипех савăнтарчĕ мана та, çывăх тăвансене те».

Вăтам шкулта Çар мухтавĕн музейне уçнине те халăх поэчĕн юбилейĕпех çыхăнтарчĕç.Кунта вара Семен Элкер хăй вăхăтĕнче Упакасси тăрăхĕнчен пĕрремĕш тĕнче, империализм вăрçине тата Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, вĕсенче пуç хунă ентешĕсем çинчен пухнă калама çук пысăк материал тĕп вырăн йышăнать. Ӳлĕмрен Паттăрлăх урокĕсене çакăнта ирттерме палăртаççĕ педагогсем.

Элкер Упакасси тăрăхĕнче халăха çутта кăларас ĕç мĕнлерех пулса пынине те тĕплĕн тишкерсе самаях сулмаклă япала çырса хăварма вăхăт тупнă. Ара, вăл хăй те 1920 çулта Хусанти учительсем хатĕрлекен курсран вĕренсе тухнă хыççăн, икĕ çул ялти пуçламăш шкулта ĕçленĕ-çке. Сăмах май каласан, Пысăк Упакасси шкулĕ кăçалхи кĕркунне 110 çул тултарать. Халăх поэчĕпе тантăшлă вăл.

Ял-йыша çуклăхпа чухăнлăхран тухма пулăшас, унăн

пĕлĕвĕпе тавра курăмне малалла аталантарса пырас ĕçре чăвашла çырнă кĕнекесем çуккишĕн пăшăрханса калаçнă Семен Васильевич. Çĕнĕ ĕмĕре алăк уçса кĕнĕ хыççăн унăн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕнине палăртма ытла та кăмăллă паян. Юбилее паллă тунă кун Пысăк Упакассинче тĕслĕх библиотека пĕрремĕш хут вулакансене йышăнчĕ. Ку вăл – Чăваш Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн районта уçăлнă виççĕмĕш тĕслĕх библиотека.

Тĕслĕх библиотека уçăлнă ятпа сумлă парнесем йышăнчĕç. Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин, архив ĕçĕсен министерствин, ЧР Наци библиотекин, ЧР Профессионал писательсен союзĕн представителĕсем пушă алăпа килмен. Пысăк Упакассинче çуралса ӳснĕ, хальхи вăхăтра Пенси фончĕн районти уйрăмне ертсе пыракан В.Ермолаев библиотекăна тĕслĕ телевизор парнелерĕ.

Чăваш халăх поэчĕн Георгий Ефимовăн çак библиотекăна уçнă чухне каланă сăмахĕ пил выраннех янăрарĕ: «Паянхи самана тĕлĕнтермĕшсемпе пуян. Шкул ачи пĕчĕклех компьютер тĕнчипе паллашать. Вăл, темĕнле ăслă-тăнлă пулсассăн та, этем шухăшлавне, ăсне-тăнне улăштараймĕ. Эсир ачаранах чăвашлăха хисеплесе те сума суса ӳсĕр. Тăван халăхăн чĕлхине, культурине лайăх пĕлни сире пурнăç тăрăх хăюллăн утма хавхалантарса пырĕ. Çемен Элкер шăпах çавăн пек çын пулнă та. Унăн халалĕсене асра тытса пурăнма, вăл утнă çула малалла такăрлатма ырлăхсывлăх сунатăп сире».

2009 çулта.

Çу уйăхĕ – Элкер уйăхĕ. Хăçантанпа ĕнтĕ Шупашкарта та, Пысăк Упакассинче те çу пуçламăшĕнче Семен Васильевича ăшшăн аса илеççĕ. Кашни пилĕк çултах чăваш халăх поэчĕн çулталăкне палăртаççĕ. Эпĕ çав уявсене 1974 çултанпах хутшăнатăп. Кашни уявĕ хăйне евĕр чаплă, асăмра юлать.

Акă, кăçал та Константин Васильевич Иванов ячĕллĕ Литература музейĕ хăнасене хаваспа йышăнчĕ. Унта ĕçлекенсем залра «Вăл вилĕмсĕр» курав хатĕрленĕ. Пухăннисене музейăн ăслăлăх аслă сотрудникĕ Галина Георгиевна Еливанова, Элкер пултарулăхĕ, пурнăçĕ çинчен каласа, куравпа паллаштарчĕ.

«Унăн пĕр хайлавĕ шăпах çавăн пек ятлă. Элкер хăй те вилĕмсĕр, мĕншĕн тесен хайлавĕсем, кĕнекисем паянхи кун та пурăнаççĕ. Поэтăмăр ячĕ нихăçан та вилмĕ, çухалмĕ, – терĕ вăл. – Авă, стендсем çинче Чăваш халăх поэчĕн документчĕсем, кĕнекисем, сăн ӳкерчĕкĕсем вырăн тупнă.

Çемен Элкерĕн хайлавĕсенче хăйне пурнăç хуçи пек тытакан ĕç çыннин сăнарĕ палăрать. Семен Василеьвичăн кĕнекисен тĕп сăнарĕсем – халăхран тухнă çынсем. Çыру ĕçне иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче пуçăнса вăл чăваш литературине пуçараканĕсенчен пĕри пулнă. Тăван литературăна çĕнĕ жанрсемпе – роман-хроникăпа («Вутпа çулăм витĕр»), истори романĕпе («Шурăмпуç илсен»), драма поэмипе («Вун саккăрмĕш çул») – пуянлатнă.

Çемен Элкер пултарулăхĕ нумай енлĕ. Вăл поэт, прозаик, драматург, публицист, халăх ĕçченĕ, икĕ вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнă çын.

Сăмах ăстисен поэмисем тăрăх 1936 çулта Чăваш академи драма театрĕнче спектакльсем лартнă.

Пĕрремĕш Чăваш халăх поэчĕ Николай Шелепи, Петĕр Ху-

санкай, Стихван Шавли – Çемен Элкерĕн чи çывăх юлташĕсем. Ун йĕри-тавра ялан çамрăк çыравçăсем пулнă».

Шкул ачисем, студентсем, писательсемпе журналистсем, республикăри, хулари паллă çынсем, поэтăн тăванĕсем, йĕпреçсем, Шупашкарти «Йĕпреçсем» ентешлĕхĕн хуравлă çыннисем, ЧР Журналистсен Союзĕн Элкер ячĕллĕ премийĕн лауреачĕсем, вилĕмсĕр ăсчахăн пултарулăхне сума сăвакансем хăйсен ырă шухăшне пĕлтерсе черетленсе калаçрĕç.

Шупашкарти Герман Лебедев ячĕллĕ интернат-лицей ăстисем, тăван ен культурине вĕрентекен Алевтина Анисимова ертсе пынипе, Çемен Элкерĕн сăввисене маçтăррăн шăрантарчĕç.

Елчĕк енчи Лаш Таяпара çуралса ӳснĕ, район çамрăкĕсен хастар ертӳçи пулнă, республикăри «Урожай» спорт обществине ертсе пынă, 1983 çултанпа çыравçă ĕçĕнче палăрнă, Чăваш патшалăх академи хор капеллин администраторĕ Петр Петрович Сидоров Элкер премийĕн лауреатне «Çамрăклăх вутра» («Молодость в огне») кăнекешĕн илнĕ. Вăл хăй воин-интернационалистсем çинчен çырнă очерксен пуххишĕн çакă мухтава тивĕçме тӳр килнĕшĕн епле савăнни, чăвашсен паллă хурналисчĕсен пĕрин ятне - Элкер ятне - чĕре çумĕнче тытни çинчен хăпартланса каларĕ.

Пухăннисемшĕн паллă ӳнерçĕ-карикатурист, вăрçă участникĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Николай Лукич Яковлев аса илни питĕ кăсăклă пулчĕ. Çамрăк чухне вăл, ӳнер училищинче вĕренекен Муркаш ен ачи, Семен Васильевича тата Элкерĕн «Унтри» калавĕн геройне пир çине сăрăпа ӳкерме май çитернĕ. Поэтăн ӳкерчĕкне сцена çинчен кăтартса ăнлантарчĕ.

Йĕпреç районĕнчи Пысăк Упакассинчи шкул директорĕ, Элкер ячĕллĕ музей пуçлăхĕ Р.Евграфова мăнаçлă поэтăмăра çитĕнтернĕ Кушлавăш уйĕнчен ăшă сăмахсем илсе çитерчĕ.

«Кушлавăш текен вун икĕ ял уйĕ
Хура вăрманпа хупланса выртать», – çырнă Ç.Элкер.

Çак йĕркесене вуласан кунта темĕнле пысăк хăватлă вăй пурăнать пек туйăнатчĕ. Çитсессĕн – чăваш ялĕсемех. Унăн сăпайлăхĕ халĕ те упранать. Чăваш халăх поэчĕ ларса ĕçленĕ сĕтел-пукан пирĕн музейре кăна. Унта вырнаçатăн та лăпланатăн, мĕншĕн тесен хыçра çыравçăн портречĕ çакăнса тăрать. Унăн сăнарĕ çав тери лăпкă.

Элкер – писательсен «ашшĕ». Вăл хăй тавра çамрăк хунава пуçтарса, ăс-тăн парса, ялан ырă кăмăллă пулмалли çинчен вĕрентсе чылай каланă. Паянхи куçпа тинкерсен хайлавĕсенче тĕлĕнмелли нумай. Тăлăх, ашшĕ-амăшĕ пур çĕртенех вĕсен хŷттисĕр ŷсекен ачасем çинчен каланă вăл «Унтри» калавĕнче. Çемье ыйтăвĕ те, паттăр салтак сăнарĕ те вичкĕн курăнать çыравçăн произведенийĕсенче. Пысăк Упакасси Элкере пула паллă. Шупашкарта кăна мар, тăван ялĕнче те унăн ячĕллĕ урам, шкул, музей, палăк пур.

Чăвашлăхшăн нумай тăрăшнă çынсен ячĕ манăçмасть. Элкер ячĕ нихăçан сŷнмессине ĕненетĕп, – хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ Раиса Афанасьевна.

Йĕпреçсен пурах мĕн çинчен ыррине каламалли, халăха пĕлтермелли. Элкер çуралса ŷснĕ симĕс вăрман тăрăхĕн, пуян тыр-пуллă уйсенчи ялсен аталанăвĕ, ŷсĕмĕ куç умĕнчех. Халăх пурнăçĕ лайăхланать, культури ŷсет. Районти чăваш, вырăс, ирçе, тутар çыннисем хăçантанпа туслăн ĕçлесе пурăнаççĕ. Ирçе Çармăсра мордва халăхĕн çут ĕç аскалĕ Макар Евсевьевич Евсевьев çуралнă, ялта унăн музейĕ ĕçлет. Пысăк Упакасси – чăваш ăсчахĕн Семен Василеьвич Элкерĕн çĕршывĕ. Ун ячĕпе те музей уçнă. Ялсемпе поселоксенче çĕнĕлле ĕçлекен 21 библиотека. Район центрĕнче чаплă спорт комплексне хута янă. Халăха таса шывпа тивĕçтернĕ. С.В.Элкер тăван тавралăх ŷлĕм чаплăн аталанса чечекленессе кĕтни пурнăçлансах пырать.

Çакăн çинчех хаваспах пĕлтерчĕ район администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Вячеслав Людвигович Михалик.

Михаликпе Эльгерĕн пурнăç шăпи пĕрешкел пулса тухнă. Вячеславăн ашшĕ Людвиг, словак, Йĕпреçе çирĕммĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче этемлĕх тинĕсĕ вăйлăн хумханнă май килсе лекнĕ. Раççей çĕнĕ йĕркепе пурăнма пуçланă хăрушă та выçлăх тапхăрĕнче чĕрĕ тăрса юлнă, чăваш халăхĕн ыр кăмăллăх апачĕпе тăранса, вăй илсе çын пулнă. Вăрманпромхозра ĕçлесе чап илнĕ. Йĕпреç словакĕн-чăвашĕн ачи халĕ авă епле мухтаса асăнать Семен Василеьвич Элкере.

Патша салтакĕ Семен Васильев империализм вăрçин хаяр вут-çулăмĕнче Австро-Венгри патшалăхне тыткăна лекнĕ. Вăл чăваш пулнине пĕлнĕ çĕнтерӳçĕсем, ăна хăйсен халăхĕн тĕп тымарĕн пĕр юппи тесе, лагерьте çăмăллăх туса панă. Васильев лагерьтен хуралсăрах тухса çӳреме, Раççей çыннисемпе ирĕклĕн калаçса хутшăнма пултарнă.

– Семен Васильевич XIX ĕмĕрте çуралнă, XX-мĕшĕнче ĕçлесе пурăннă, эпир вара XXI ĕмĕрте те ун пултарулăхĕ çинчен калаçатпăр, тĕлĕнме пăрахмастпăр. Çамрăксен унăн хайлавĕсене, кун-çулне пĕлмелле. Вăл чăваш малашлăхĕшĕн

Чăваш халăх художникĕ Виктор Немцев Николай Яковлевăн Семен Элкере сăнарланă ӳкерчĕкĕн илемлĕхĕпе чĕрĕлĕхĕ, туртăмлăхĕ епле вăйли пирки профессионаллăн туйăмпа ăнлантарать литературăпа искусство кунне хутшăннисене.

тăрăшма вĕрентет, – палăртрĕ «Йĕпреҫсем» ентешлĕхĕн пуҫлăхĕ Вячеслав Васильевич Федоров.

Пултарулăх уйăнче Ҫемен Элкерпе ăмăртса утакан Николай Теветкел хăйĕн вĕрентекенне халаллана сăввисене чăвашла-вырăсла каларĕ, «Хĕн-хур айăнче» поэмăна «Нарспипе» тан тĕлĕнмелле хайлав терĕ, ЧР тава тивĕҫлĕ артисчĕсем Надежда Кирилловапа Геннадий Кириллов поэтăн сăввисене пысăк хавхаланупа, ăста вуларĕҫ. Элкер премийĕн лауреачĕ, Кĕлĕмкасси ачи, И.Н.Ульянов ячĕллĕ патшалăх университечĕн аслă преподавателĕ Анатолий Абрамов Элкере чăвашăн улăпĕсемпе Яковлевпа, Никольскипе, Ивановпа, Ҫеҫпĕл Мишшипе танлаштарчĕ, асăну мероприятийĕ вĕҫленнĕ май çак сăн ӳкерчĕке турĕ.

Пысăк Упакасси ял тăрăх администрацийĕн пуҫлăхĕ Нина Михайловна Антонова тата ялти вăтам шкул директорĕ раиса Афанасьевна Евграфова та хăйсен чаплă ентешне С.В.Элкере вăйлă уяв туса панă.

«Вырăнти хăй тытăмлăх администрацийĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн Упакасси тăрăхĕнче ку ҫула Элкер ҫулталăкĕ тесе палăртрăмăр. Ҫавна май ăна халалласа чылай мероприяти ирттертĕмĕр. Вĕсен хушшинче – халăх таланчĕсен фестивалĕ (унта тыр-пул ӳстерекенсемпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен, тивĕҫлĕ канăва тухнисен хутшăнăвĕ), литература вулавĕсем, поэзи каҫĕсем, «Кушлавăш текен вун икĕ ял уйне» кĕрекен хутлăхри ал ĕҫ ăстисен куравĕ т.ыт.те. Пысăк Упакассинчи тĕслĕх вулавăшра Ҫемен Элкерĕн кĕнекисем тăрăх йĕркеленĕ курав уҫăлчĕ.

Кашни ҫулах «Кăтартуллă урам», «Чи лайăх ҫил-ҫурт», «Тĕслĕхлĕ хушма хуҫалăх» конкурс ирттерессине йăлана кĕртрĕмĕр, – пĕлтерчĕ Нина Михайловна. – Ял ҫыннисем тасалăхпа тирпейлĕхшĕн пыракан тупăшăва хастар хутшăнаççĕ. Ăмăртăва Элкер юбилейĕ тĕлне пĕтĕмленĕ.

Халăх поэчĕн кун-ҫулĕпе тата ĕҫĕ-хĕлĕпе тĕплĕн паллаш-

ма ӗлкӗрнӗ вулакан çакна пӗлетех ӗнтӗ: Çемен Элкерӗн чи малтанхи «Çамрӑк хурӑн» сӑвви 1921 çулхи нарӑсӑн 21-мӗшӗнче «Канаш» (хальхи «Хыпар») хаçатра, çапӑнса тухнӑ. Халӑх юрри майлӑ, çут çанталӑк илемӗпе хӑй кӑмӑлне çыхӑнтарса çырнӑ пӗрремӗш хайлав ал çырӑвӗ халӗ ялти шкулта вырнаçнӑ Элкер музейӗнче упранать. «Çурхи ирӗклӗ çӗр çинче ешерекен çамрӑк хурӑн вӑл – пирӗн ӗçченсен тирпейлӗхӗпе тӑрӑшулӑхӗн таса символӗ. Çемен Элкерӗн пилӗпе халалне асра тытса эпир кашни çулах урамсенче, общество çуртйӗрӗ таврашӗнче йывӑç нумай лартатпӑр. Машина-трактор паркӗнче, шкул умӗнче, фермӑсен çывӑхӗнче, çулсен хӗрринче Семен Васильевич килӗштернӗ шурӑ хурӑнсем мӑнаçлӑн кашлаççӗ. Юбилей çулталӑкӗнче поэт ячӗпе ятарлӑ сквер турӑмӑр».

Элкер хурӑнлӑхӗ

«Юмахри пекех ытарайми илем хуçаланать ку тӑрӑхра. Ӑна сӑмахпа каласа пама та йывӑртан чун-чӗрере çӗкленӳллӗ туйӑмсем амаланса хӑпарнӑ вӑхӑтра çакӑнта çул тытатӑп. «Çакӑнта» тени вӑл – Чӑваш халӑх поэтне çуратса ӳстернӗ Мӑн Упакасси ялӗ. (Хӑçан, мӗнле майпа, кам аллинчи калем «Мӑн Упакассинчен» «Пысӑк Упакасси» туса хунӑ-ши? Ара, Çемен Элкер хӑй те «Мӑн Упакасси» тесе çырнӑ-çке. Çакӑ чӗлхеçӗсене, тавра пӗлӳçӗсене тӗплӗн, вӗçне çитичченех тӗпчеме хистекен сӑлтав пултӑр).

Йӗпреçрен вунӑ çухрӑмра вырнаçнӑ тӗп чӑваш ялне вунӑ минутранах çитетӗн. Мӑн Упакассинче, кашни утӑмрах – Элкере сума сунине, унпа тивӗçлипе мухтаннине кӑтартакан паллӑ. Авӑ, пӗрлешӳллӗ хуçалӑхӑн техника паркӗпе юнашарах кашлакан хурӑнлӑх. Чӑлт шурӑ хурӑнсем çӳлелле туртӑнаççӗ. Вӗсене çывӑхри вӑрмантан, хӗрӳ Чаккана хӳтлӗх панӑ çӗртен кӑларса килсе лартнӑранпа çур ӗмӗр ытла иртнӗ ӗнтӗ.

Ял-йыш халĕ çак вырăна Элкер хурăнлăхĕ тет, мĕншĕн тесен пулас сăвăç ача чухнех шутсăр кăмăллана çак йывăçсене яла илем кӳмешкĕн лартма ентешĕсене хăех сĕннĕ пулнă. Çамрăк «элкерçĕсем» паян кун та тăтăшах килсе çӳреççĕ, садпа вăрман уйăхлăхĕ çитсен вара Элкер хурăнлăхне çĕнĕ хунавсемпе пуянлатаççĕ», – тесе мухтавлăн çырнăччĕ Геннадий Кузнецов сăвăç.

* * *

Çу уйăхĕн хĕвеллĕ пĕр кунĕнче Пысăк Упакасси Элкер сехечĕпе вăранчĕ. Шупашкар, Йĕпреç хăнисем вăхăтра çитнĕ.

Хăйсем палăртнă пекех, упакассисем тĕслĕх вулавăшра та, ялти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта та поэт, писатель, драматург хайланă ĕçсен куравне йĕркеленĕ, «Элкер вулавĕсене» ирттернĕ. Литература кружокне çӳрекен çамрăк авторсен сăвви-калавне пухса «Самана» альманах кăларнă. «Самана» тени ытла та вырăнлă кунта. Хăйĕн 1928 çулта кун çути курнă пĕрремĕш кĕнекине шăпах çав ятлă панă пулнă халăхран тухнă талант. Ăнсăртран килнĕ ят мар ку, Элкер ун чухнех кĕрлевлĕ те янравлă пурнăç çулĕ тăрăх самана утăмĕпе утма тупа тунине çирĕплетекен ят.

«Хыпар» хаçатăн корреспонденчĕ Геннадий Кузнецов пĕлтернĕ тăрăх, С.В.Элкер юбилейне ирттерме Шупашкартан пысăк ушкăн килнĕ. Унта – çыравçăсемпе ăсчахсем, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕсем, республикăн тĕп хулинчи «Йĕпреçсем» ентешлĕх членĕсем, ытти паллă çынсем. Çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче «Самана», «Хĕнхур айĕнче», «Вăрçă кунĕсем», «Вун саккăрмĕш çул», «Шурăм пуç килсен» кĕнекесен авторĕн ачалăхĕпе çамрăклăхĕ иртнĕ ялта чăн-чăн поэзипе искусство уявĕ пулнă.

Тĕл пулăва хутшăннисем малтан Семен Васильевич çуралнă кил вырăнĕнче вунă çул каялла уçнă Асăну чулĕ умне чĕрĕ çеçкесем хунă. Ун хыççăн хăнасем ялти шкула çул тытнă.

Шкул лапамĕнчи сăваплă вырăнта, Чăваш халăх поэтне сума суса лартнă палăк умĕнче иртнĕ митингра Йĕпреç район пуçлăхĕ Анатолий Петров, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, Элкер еткерлĕхне тĕпчекен Виталий Родионов профессор, Валентин Абрамов критик, Осип Алексеев (Ăсан Уçăпĕ) çыравçă, Вячеслав Ендерев филолог-тĕпчевçĕ, К.В.Иванов ячĕллĕ литература музейĕн ĕçченĕ Галина Еливанова, Шупашкарти «Йĕпреçсем» ентешлĕх ертӳçин çумĕ Зиновий Сергеев ăшă сăмах каланă.

Кушлавăш тăрăхĕн халăхĕ мухтавлă ывăлне чаплăн чысланă.

* * *

Шупашкартан Пысăк Упакассине кайма малтантарах хатĕрленнĕ пулин те, çула тухас умĕн пĕчĕк пăтăрмахсăр пулмарĕ. Малтан Чăваш патшалăх университечĕ умĕнчен каятпăр тенĕччĕ элкерçĕсем, каярахпа планĕ улшăннă. Хама пĕлтернине ĕненсе эпĕ Çĕнĕ кăнтăр районĕнчен университет патне троллейбуспа тĕлсĕр хăлтăртатса чуптарса Чапаев скверне усăсăр таврăнтăм. «Йĕпреçсем» ентешлĕх автобусĕ çур сехет маларах тухса вĕçтернĕ иккен. Телевидени комитечĕн автотранспорт ерçмен пирки операторсене çăмăл машинăпа лартса ячĕç. Чăваш филологийĕпе культурологин факультетне ертсе пыракан Виталий Родионов пире, хăйĕн культурологи кафедрин пуçлăхĕпе Георгий Федоровпа иксĕмĕре, аллисене саркаласах культурăллă пĕлтерчĕ: «Шел, сирĕн валли вырăн юлмарĕ, каçарăр».

Паллă тĕпчевçĕпе, ăста çыравçăпа вара эпир симĕс лапамра тăлăххăн майлах, юпа пек хытса тăрса юлтăмăр. Вăл тарланă куçлăхне шăлса типĕтнĕ хушăра ман куçăм умĕнчен литература тĕнчин паянхи мăн уявĕпе çыхăннă ӳкерчĕксем вĕлтлетсе иртрĕç.

Акă, 35 çул каялла, 1974 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче, Шупашкар енчен кĕрлеттерсе çитнĕ автобусран Семен Васильe-

вич Элкер тăван çĕрĕ çине юратнă мăшăрĕпе Евдокия Алексеевнапа васкамасăр анчĕ, тăван ял халăхĕн çăкăр-тăварĕпе урпа сăрине тутанчĕ.

Хăйĕн 80 çулхи менелникне уявлама чăваш халăх поэчĕ ĕçтешĕсене чĕннĕ. Уяв кĕрекинче Упакассин паттăр Упипе юнашар писательсем, композиторсем, ĕç паттăрĕсем, тĕрлĕ шайри пуçлăхсем, хăнасем...

Уй-хир кĕввипе хутăш сăвă-юрă янăрарĕ. Элкершĕн Кушлавăш текен вун икĕ ял уйĕ кăна мар, Йĕпреç-Вăрнар тăрăхĕ те, пĕтĕм чăваш çĕршывĕн, поэзин, чăвашăн сĕтеклĕ сăмахĕн мăн уявĕ пулчĕ. Пысăк Упакассинче çавăнтанпа ĕнтĕ çав уяв малалла тăсăлать. Акă, паян чăн-чăн Чăвашăн, сăмах Маçтăрĕн, ырă кăмăллă хастар Этемĕн пурнăç сехечĕ çĕр вун пиллĕк шаккарĕ. Унăн сасси Пысăк Упакассипе Шупашкарта та пĕр харăс янăрарĕ, мана шухăш асапĕнчен вăратрĕ. Куçа уçрăм та, умра тăлпан кĕлеткеллĕ юлташăм кулкаласа калаçса тăрать: «Кулянар мар, Улатимĕр, хулара пирĕншĕн те уяв кĕтесĕ тупăнĕ, каясах тенĕччĕ те, упакассисен умĕнче сăмах калас шутпа ĕнер Элкер хайлавĕсене тепĕр хут пăхса тухнăччĕ те... юрĕ, пуçа усаканнисемех мар эпир, хуллен шутарар», – тет.

Хăйне евĕр курăмлă, сăнарлă чĕлхеллĕ çак чăваш ачипе, Çĕмĕрле енчи Патаккасси ялĕнчи Георгий Иосифовичпа тĕл пулнăшăн эпĕ хамăн шăпана мухтатăп кăна. Çитмĕлелле çывхарса пыраканскер вăл пĕчĕкренех нумай пĕлесшĕн пулнă. Хутарти вăтам шкултах учитель пуласшăн çуннă. Çавăнпа Канашри педучилище хыççăнах Чăваш патшалăх педагогика институтне, историпе филологи факультетне вĕренме кĕрет, унтан чи лайăх паллăсемпе пĕтерсе тухать. Ĕмĕчĕ пурнăçланнă май вун пилĕк çул Вăрнар, Шупашкар, Комсомольски районĕсенче вырăс чĕлхипе литературин учителĕнче ĕçлет. Чăваш патшалăх гуманитари институтĕнче пай пуçлăхĕ пулать. Литература процесĕпе историне тĕпчет, наука ĕçĕсене

журналсенче пичетлет, чăваш прозинчи психологизм поэтикине тишкерсе çырнă диссертацине 1990 çулта Ĕпхӳре (Уфара) хӳтĕлет. Филологи наукисен кандидачĕ малаллах талпăнать, «1950-1990 çулсенчи чăваш прозин илемлĕх тĕнчи» темăпа вăйлă диссертаци хатĕрлет. Хусан ученăйĕсем ăна пысăк хак параççĕ. Филологи наукисен çĕнĕ докторĕн ĕçĕ çинчен Тутарстанри хаçатсенче мухтав статйисем пичетленеççĕ. Пĕлтĕр ăна, тепĕр çĕнĕ наука ĕçĕшĕн, Чăваш Республикин Патшалăх премине панă.

Виталий Григорьевич Родионов патĕнче вунă çула яхăн культурологи кафедрине тытса пырать вăл. Чăваш чĕлхипе литературине вĕреннĕ хушăрах студентсем хушма специальнăçсем илеççĕ. Кафедра архивра, музейре, библиотекăра, клубсемпе культура çурчĕсенче ĕçлеме пĕлекенсене хатĕрлет. Профессорсемпе доцентсем, преподавательсем çирĕмĕн ытла вĕрентеççĕ вĕсене.

Георгий Иосифович пĕр вăхăтрах наука кадрĕсем хатĕрлессипе те ăнăçтарать. Иртнĕ вунă çул хушшинче сакăр çын ун патĕнче вĕренсе-хатĕрленсе наука кандидачĕсем пулса тăнă. Унăн ячĕ Атăлçи регионĕнчи ученăйсем хушшинче самай курăмлă.

Пурнăçа, философие тарăн пĕлни Федоровăн сăввисенче те, прозăри хайлавĕсенче те уççăн палăрать. Унăн произведенийĕсене, сăнарлă çырнăскерсене, никампа та пăтраштармастăн, ытарлă чĕлхипе-сăмахĕпе ытти çыравçăсенчен уйрăмрах, хăйне евĕрлĕ илемлĕ сăнлăхĕпе туртаççĕ вулакансене. Раççей писателĕсен союзăн членĕ «Тăван Атăл» журнала вăйлăрах кăларассишĕн те тăрăшать. Сăвă кăна мар, юрă та кĕвĕлет вăл, çав тери талантлă пирĕн хаклă юлташăмăр. Акă, халĕ те вăл чăваш кĕввине ĕнĕрлесе манпа юнашар утать.

Шупашкарта хальхи вăхăтра такăш кĕтесре те пурнăç «университечĕ» туллиех. Пирĕн валли те пĕр тăрăхла пушă пӳлĕм тупăнчĕ. Кафедра вырăнне вăл сĕтел çине хăйĕн яланхи профессор портфельне хучĕ те... Лекци икĕ академи сехечĕ чухлех тăсăлчĕ. Лекци вĕçленнĕ хыççăн иксĕмĕр харăс алă çупса пĕр-пĕрне алă тытрăмăр та питĕ кăмăллăн кулса ятăмăр: «Элкер уявне эпир те начарах ирттермерĕмĕр пулас хамăра Шупашкарта пăрахса хăваракансенчен».

Профессор сăмахĕсенчен вара ман пуç алинче çакă ылтăн кĕмĕрккеленсе юлнă:

ЧĂВАШ СĂМАХĔН ЧĂН СĂВАПĔ

Çемен Элкер ячĕ пирĕншĕн, вăрçă çулĕсенче çуралнă йышшăн мĕн кĕçĕн çулсенчен сăваплă та асамлă пулнă. «Хĕнхур айĕнче» поэма (тен, сăвăлла роман-драма темелле мар-и ăна?), «Кивĕ пӳртре» калав, «Унтри» калав-очерк, ун вуншар сăвви – çавсене тĕппи ăша хывса ӳснĕ эпир; чăваш сăмахĕн екки-евĕкне упрама та хаклама вĕреннĕ çав чун çимĕçĕпе.

Астăватăп-ха – эпĕ ун чух пединститут студенчĕччĕ, Андрей Алексеев аспирантпа туслă пурăнаттăмăр. Утатпăр, çапла, пĕрре каç кӳлĕм Ленин площадĕнче. Умра, протезне шăкăлт-шăкăлт тутарса, туйине ерипен малалла куçара-куçара, Элкер пырать. «Тăхта-ха, – тет юлташăм, чарăнса тăрса, унтан, сассине çĕклерех, сăвă йĕркисене аса илет. «Кăвак тинĕсре шавлакан хумсем урлă...» Кăпăлт çаврăнчĕ пирĕн енне паллă çыравçă, пирĕнпе тахçанах пĕлен-тăранпа сăмахланăн калаçа пуçларĕ: «Ыйхă вĕлерес умĕн кăшт уçă сывлăша тухса кĕрес йăла пур çав ман...» Пĕрле утса çӳреме сĕнчĕ вашават кăмăллăн. Сăмахĕ-юмахĕ вара ытла та ансатăн, çăмăллăн сыпăнса кайрĕ. Революци кӳнĕ май-шыв çинчен калаçрĕ писатель, ăна пула, чăваш кĕнекеллĕ çеç мар, литературăллă та пулнине асăнчĕ. Революцие шансах шаннă-тăр чăваш

сăмахĕн чăн ăсти. Апла пулин те, вырăнтти пуçлăхсем тăван культурăшăн хыпсах çунманнишĕн пăшăрханчĕ, хăй кĕнекисенчи нумай сăнар автобиографиллĕ пулни патне çаврăнса çитрĕ шухăш. Чăвашсен ĕмĕрсем урлă выртнă çулĕ пирки чĕрине çунтарса-вĕрилесе илчĕ. Вырăспа тутар хушшинчи çĕршер çулхи хурлăх, асаттесем тӳснĕ асап-терт ватать иккен ун чунне.

Икĕ-виçĕ ăнлава, куçăн курса тенешкел, ăнлантăм çав каç. Чăвашлăх тенĕ аслă ăнлава чуна ыратуллăн хывса ĕçленĕ Элкер. Мĕн ĕмĕр тăршшĕпе, ăна хăй шăпи витĕр (автобиографилĕх!) тĕшмĕртсе, тăван сăмах кун-çулне чĕри витĕр кăларса. Çаплах мар-и-ха! – «Шурăмпуç килсен» повеçри Арлан Муççин сăнарĕн прототипĕ – прозаик ашшĕ, Василий Федотов, «Унтри» очеркра та çыравçă биографийĕн паллисем çук мар, «Вăрçă кунĕсем», «Хурапа шурă» повеçсем пирки вара каламалли те çук. Кăмăла пĕçертсе, вĕрилесе тăнă шăпи апла ун халăх сунămĕ-юнăмĕпе, тĕнче нуши-хурипе юнран тымарлă пулнă. Австро-Венгрире тыткăнра пулниех, аманса шар курниех, ав – ун пултарулăхĕнче эпикăллă сăн-сăпат тупать, писатель, автобиографиллĕ сăнар пулса, пĕтĕмлетӳллĕ, калăплă сăнар пулса тăрать. Ăна, çак героя, пĕр хайлав шайĕпе кăна виçме çук, унăн эпикăллă анлăшĕ çыравçăн пĕтĕм пултарулăхне (уйрăмах прозине) витерет.

Ак тата эпĕ тĕшмĕртнĕ тепĕр ен: эпика туйăмĕ мĕн çырас ĕçĕн пуçламăшĕнчех ăшра пулнă унăн. Кайран-кайран, сăввиюррипе çывăхрах паллашсан, татах ĕнентĕм – поэзийĕ те эпикăпа сывлать авторăн. Чăн та, «Сахрун мучи калавĕсем» евĕр хайлавсем ăçтан сăвă калăпне вырнаçчĕр! Виççĕмĕш ен – жанрĕсем ялан тенешкел синкретикăллă пăтранчăклă писателĕн: поэзире проза туртăмĕсем вăйлă, «Вăрçă кунĕсемпе» «Шурăмпуç килсен» хайлавсенче повесть паллисем те, роман паллисем те уçăмлă. «Кун кĕнекинче», унта та пулин, илемлĕх, сăнарлăх тымарĕсем парка. «Кун кĕнекинчен» шухăшсем кăсăк: «30 çул тултарни маншăн, – тет Элкер, – йывăр

ĕмĕрĕн çуррийĕ пулать; лутăрканнă шăмшакшăн тата 30 çул пурăнасси ытлашши шанчăк анчах», – хушса хурать хăйĕн сусăрлăхĕшĕн пăшăрханса. Шĕкĕр турра, тата нумай çул пурăнма пӳрнĕ-мĕн писателе. Ан тив, 30 çулхи юбилей тапхăрĕнчех çапла каланă пулсан та: «Çӳлелле упаленнĕ сукмакăм питĕ хĕсĕк, тăкăс (кăткăс), чăнкă пулчĕ», «хуйхăллă синкерлĕхсем хушшинче чеченнĕн, çуттăн йăлкăшса тăракан ӳсĕмсем те пулчĕç». Апла тăк Элкер ĕмĕртен ăнкарнă: йывăрлăхпа çитĕнӳ хушшинче пурăнать этем. Кăтартуллă мар-и-ха! – Çеçпĕл те çав хушăлăха шырлан варкăшĕ пек илнĕ хăй ăшне. «Хурапа шурăри» пĕр сыпăк чуна-чĕрене тарăннăн кĕрсе вырнаçать: «Ку санитарка, лăпкă, кĕтесри чăваш хушшинче ӳснĕскер, пĕрре тĕл пулсанах хăйĕн сăпайлăхĕпе тыткăна илчĕ. Вăл хăйне кăшт именчĕклĕреххĕн тыткалать, анчах пуринпе те уçă кăмăлпа, ăшшăн каласать». Ку сăмахсенче прозаикăн хăйне тивĕçекенни те пур, хăй те тĕлĕнмелле сăпайлă пулнă паллă писатель. Ак çав повеçри тата тепĕр вырăн – «Кам пĕлет, тен, нумай та пурăнаймăп. Хамăн кĕске ĕмĕре (! – Г.Ф.) хусаххăн, пĕр-пĕччен çеç ирттермелле пулать тесе çех шухăшларăм», – çапла аманать повесть геройĕ, Сергей Андрейч. Епле кунта Элкере палласа илмĕн! Ытла та таса, пысăк, анчах аманчăк чĕреллĕ этем ку персонаж.

Çавна кура-тăр пурнăç тăршшĕпех вилĕм, асап, чурăс та чыссăр çынсен тӳрккеслĕхне туйни шăнăрласа тăрать ун ăшĕчиккине. Тепĕр енĕ те пур – «чăнкă» ту çине хăпарнă чух тупнă савăнăç. Çак хушăлăхра пурăнакан Сергей Андрейчă та, вăл чĕререн савнă Лена та вĕçĕмех шар тӳсеççĕ. Çерушăн Ленăпа мăшăрланма майĕ тупăнмасть, арăмĕ пекки (Наçтӳç) арçынна «ырми» пусмăрласа тăрать, Ленăпа курнăçнине, ăна пулăшма тăрăшнине ун мăшăрĕ, ĕçкĕçĕ Попов тиркет, арăмне те нумай асап кӳрет. Апла пулин те çынлăха çухатмасть герой, тем пек йывăрта та чунне вараламасть. Лена чирлесе çĕре кĕни те самай хуçать çамрăк арçын кăмăлне. Ку ĕнтĕ –

мĕн пурĕ – этем чыссăрлăхпа тасалăх, вилĕмпе пурнăç хушалăхĕнче тăнин палли. Çавă сăлтавлать пулĕ эппин Элкер хăй хайлавĕсене пĕрремĕш сăпатран, психологи енĕпе тарăннăн, чун уççиллĕн хайланине. Çавă тата писатель кашни калавĕ-поверçĕнче хăй чун-чĕрин биографине, хăй кун-çулне çывăх çынсен, мĕнпур тĕнчен нуши-хурине ытла та ыратуллăн, анчах сăваплăн ăша хывса пурăнни. Çакăнта тупăнчĕ маншăн Элкер хывнă сăн-сăпатăн, сăнарлă тĕнчин психологиллĕ эпикăлăхĕ, сисĕмĕ-туйăмĕн автобиографилĕхĕ.

Çакна та калам: ку пулăм чăваш литературишĕн – пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кашни хайлав тенешкел, пĕрремĕш сăпатран çырăнни автобиографиллĕ повесть шайне çеç вырнаçмалли мехел пулмарĕ, писатель хăй хайланă сăнарлă тĕнчен социаллă тата психологиллĕ панорамăлăхне алран ямарĕ. Элкер сăнланă чăваш ĕмĕрĕн сăн-сăпачĕ, чунĕ-чĕри вулакан чĕринче, литература астăвăмĕнче нумай-нумай çул пĕр тĕссĕрленмесĕр упранĕ.

Георгий Федоров,
филологи докторĕ.

ЭЛКЕР УРАМĔСЕМПЕ УТАТПĂР, ЧУПАТПĂР

Пысăк Упакассинче

Вăрнар çумĕнчи Санарпуçĕнчен Пысăк Упакассине кайнă анне шăллĕн Элексантăрăн хĕрĕ Марья аккасем патне хăнана ачаранах çӳренĕ май, эпĕ хамăрăн Хурăнсур Çармăсран çирĕм çухрăмри çав пысăк яла асра хăварнă. Ун чухне, паллах, эпĕ Элкер камне те пĕлмен. Маншăн Хумма йысна тата вĕсен тăванĕсем çывăхчĕ.

Вăрăм кĕпер урлă каçса пĕр урамĕпе вăрманалла çул тытаттăмăр. Вăл вăхăталла ĕнтĕ мăн вăрман Упакассинчен самаях аяккалла тарнăччĕ, утмаллăх пурччĕ. Аттепе вутă турттарма та, пӳрт валли мăк кăларма та лашапа сахал мар кайнă.

Каярахпа, ӳссен тин, эпĕ çав урамăн ятне астуса юлтăм. Траккасси урамĕ пулнă иккен вăл. Унта Тряк йăхĕ йăва çавăрнăран, тен, урамĕ Тряккасси, Упакассисен тĕрек касси ячĕпе мухтавланнă-ши, ăна тĕпрен калаймастăп.

Хамăн ĕçпе Вăрнартан Йĕпреçе, Йĕпреçрен Вăрнара çӳренĕ çулсенче манăн мĕн чухлĕ уçса хупмалла пулман-ши çав вăрăм урамăн униче хапхине. Каярахпа, урам хыçĕпе сарлака çул çĕр хăпартса, асфальт сарса турĕç те, унта пурăнакансемшĕн ял шăплăхĕ чун кантармăшне куçрĕ.

Траккасси-Тряккасси урамĕнче çуралса ӳснĕ çынсемпе те майĕпен паллашса пытăм. Униче хĕрринчех Андреевсем пурăнатчĕç. Ялта ятлă пулнă. Унтри Элекçийĕн ывăлĕ Микулай Йĕпреç районĕнчи çамрăксен ертӳçиччĕ. Вăйлă кĕлеткеллĕ, çивĕч чĕлхеллĕ, хĕрӳ вут-çулăмлă пĕрремĕш секретарь комсомолецсемшĕн курăмлăччĕ. Унăн «çарĕ» республикăра яланах малтисен ретĕнчеччĕ. Эпĕ ăна ырă кăмăлĕшĕн, йывăрлăхра яланах туслăх вăйĕпе аллине вăхăтра тăсса пама пултарнишĕн, тĕрĕслĕхшĕн, кӳрентерменшĕн ырлаттăм. Çав енсем унăн паянхи кунченех сыхланса юлнă.

Комсомол ĕçĕнчен парти ĕçне куçрĕ вăл, КПСС Йĕпреç райкомĕн йĕркелӳ ĕç пайне лайăх шайра тытса пычĕ. Пĕрле, райком бюровĕн членĕнче чухне, район пурнăçĕн аталанăвĕнче сахал мар ырă йĕр хăвартăмăр пуль. КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Николай Григорьевич Лермонтов калани çеç асра: «Сирĕн пек хастар, çирĕп чунлă, ăста ĕçлеме пултаракан коммунистсем ытларах пулсанччĕ...»

Унтри Элекçине те хăй вăхăчĕпе ял масарне хурлăхлăн ăсатрăмăр, ывăлĕ Николай Алексеевич та пурнăçне педагогика енне пăрса ячĕ, Шупашкара куçса килсе хула ачисене вĕрентсе тăн пачĕ, 2000 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче 60 çул тултарчĕ. Çав хаваслă кун ячĕпе эпĕ ăна, шанчăклă юлташăма, çемйи, тăванĕсем, хурăнташĕсем, тус-юлташĕсем умĕнче хамăн чĕререн тухнă сăвă йĕркисемпе саламларăм:

АН УС ПУҪНА!

Йӑмраллӑ ял, Упакасси,
Ҫуратнӑ Микулай сана.
Хӑватлӑ йӑхлӑ Тряккасси
Ӳстернӗ вӑй парса кӑна.

Вӑрман енчи Чакка сасси
Пӑлхатнӑ уҫӑ кӑмӑлна.
Алри ҫаван янрав сасси
Илемлентернӗ пурнӑҫна.

Ҫурла тытма, лаша кӳлме
Эс ӳркенмен нихҫан ялта.
Сана пула килти пӳлме
Чӑп тулнӑ тырӑпа ялан.

Анат енчи Ҫемен Элкер
Сӑнарлантарнӑ ӑс-тӑнна.
Вӑй пухнӑ, ҫитӗннӗ ӗлккен
Пӑхса ху тӑрӑх ҫи-пуҫна.

Ҫунатлӑ урхамах ҫине
Утланнӑ ҫилхерен тытса.
Хастарлӑ ҫамрӑксен ҫарне
Чуптарнӑ чи малта пырса.

Хӗрӳлӗх хурҫӑ пек хӗрсен,
Пиҫсе ҫитсен кӗрешӳре,
Компарти уҫӑмлӑн чӗнсен,
Ӗҫе кар кӳлӗнтӗн тӳрех.

Шкула куҫсассӑн хӑв камне
Каллех кӑтартрӑн халӑха.

Вĕрентнĕ ачусен сумне
Туятăн халĕ ватлăхра.

Йĕпреç енче те, пур çĕрте
Ямарăн Упасен ятне,
Илсе пехил тăван çĕртен
Хунатрăн Унрисен йышне.

Ал тыт тусна куçа уçса, –
Вăйланнă туслăх парăнмасть.
Ан ус пуçна çула пăхса, –
Вĕçĕ-хĕрри ун курăнмасть.

Çурран та, урапа-çунапа та, автомашинăпа та такăрларăм пуль Тракасси урамне. Асран кайми самант – вăхăт куç умĕнчех.

Траккасси урамне 1994 çулта тепре килсе тухма тиврĕ. Çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче эпир – писательсем, художниксемпе скульпторсем, чĕлхе-литература тĕпчевçисем, республика шайĕнчи пуçлăхсем Семен Васильевич Элкерĕн 100 çулхи менелникне паллă тума йышлăн кĕрлеттерсе çитрĕмĕр Шупашкартан. Кушлавăш тăрăхĕнче хĕвеллĕ кун тăрать. Ял халăхĕ, хăнасем йышлă пухăннă.

Чăваш халăх поэчĕ çуралнă çурт çуккă ĕнтĕ, анчах авалхи килĕ сыхланса юлнă. Семен Васильевичăн тăванĕ Элкер çемйин йăх тымарне малалла аталантарса пурăнать. Кирпĕчрен хăтлă çурт лартнă. Анкартийĕ Йĕпреçрен килекен асфальт сарнă çул хĕррине тухать.

Ку паллă кун тĕлне шупашкарсем чаплă парне хатĕрленĕ. Хурамалта çуралса ӳкнĕ В.Зотиков скульптор асăну палăкĕ туса пĕтернĕ. Ăна маçтăрланă çĕре П.Пупин скульптор та хутшăннă. Ăна çĕнĕ пӳрт умне вырнаçтарса лартнă. Çав ятпа митинг пулчĕ. Ăна Пысăк Упакасси ял администрацийĕн пуçлăхĕ Нина Николаевна Яковлева уçрĕ, хăйсем паллă ентешĕ-

пе чăннипех мухтанни, унăн пултарулăхне хаклани, ятне яланах асра тытни çинчен каларĕ. Палăк çинчи çивиттие ЧР культурăпа национальноҫсен ĕçĕсен министрĕ В.П.Иванов, Н.Н. Яковлева салтса ячĕç.

– Çак сăваплă вырăн ял çыннисене ентешĕ пирки аса илтерсе тăрĕ. Ир те, каç та вĕсене асăну палăкĕ çине ӳкернĕ ентешĕн сăнĕ тинкерĕ, – терĕ В.П.Иванов.

Ерçмен пирки В.Зотиков тăван енне килеймен, скульпторсен ячĕпе П.Пупин калаçрĕ.

Петр Семенович Эльгер хăйĕн ашшĕне хиселесе асăну палăкĕ уçма, тăван ялĕнчи пысăк уява хатĕрлеме хут-

Н.А. Андреевпа (сылтăмри) В.П. Кузьмин. Йĕпреç поселокĕ. 1974 çулхи утă уйăхĕ.

шăннă хуравлă çынсене хăйсен çемйи тата тăванĕсен ячĕпе тав турĕ.

Хăйсен Кушлавăш уйне, Пысăк Упакассин,Траккассин урамне, хăйсен пурнăç пуçламăш кĕтесне, аякра пурăнакан ентешсем нумайăн пухăннăччĕ. Вĕсене ялăн лăпкă та типтерлĕ, йывăçлă ешĕл вырăнĕ канăç памасăр туртать-çке. Вĕсен хушшинче кам кăна çук-ши? Акă...

Борис Иванов çапнă çак ӳкерчĕкре эсир Элкер ентешне Игорь Юрьевич Миронова (сулахайран пĕрремĕшĕ) куратăр. Вăл Чăваш Республикин экономика министерствине ертсе пырать. СССР Наука академийĕн Экономика институтĕнче, Раççей Федерацийĕн вĕрентӳпе экономика министерствисенче, Раççей Федерацийĕн Правительствинче хуравлă вырăнсенче ĕçленĕ, философилле тарăн шухăшлă сăмах каларĕ. Ун çумĕнче – Йĕпреç ялĕнче çуралнă Борис Михайлович Яковлев. Ку округран ăна нумаях пулмасть Чăваш Республики Аслă Канашĕн депутатне суйларĕç. Б.М.Яковлев йĕпреç-

Сăн ӳкерчĕкре (сылтăмран сулахаялла):
П.С.Элкер, С.В.Эльгерĕн çывăх тăванĕ Клавдия Тимофеевна Васильева, П.С.Эльгерĕн мăшăрĕ, Евдокия Алексеевна.

семшĕн хаклă хăна. Шупашкарти энергетика техникумĕнчен тата Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă, хуçалăхпа йĕркелӳ ĕçĕнче приборсем тăвакан заводран пуçласа Республика Аслă Канашĕ таранах ăнăçлă ĕçленĕ, пултарулăхĕпе ӳссе аталаннă. Район экономикипе культурине аталантарас ĕçре вăл палăрмалли пулăшу кӳнĕ. Чăвашсен паллă поэчĕсенчен пĕри Георгий Ефимов та Йĕпреç еншĕн асра юлнă çын. Георгий Андреевич çамрăк чухне колхоз театрĕнче ĕçленĕ. Пысăк Упакассинче те ăсталăхне сахал мар кăтартнă. Йĕпреçри колхоз театрĕпе çыхăннă асаилӳ артист-поэтшăн сахал мар пулчĕ. Хăй Çемен Элкерпе Шупашкарта пултаруллă ĕçлени, туслă пурăнни çинчен хумханса каласа пачĕ. Хыçалта блокнот тытса тăраканни – Элĕк райхаçатĕнчен саламлама килнĕ Вениамин Павлов. Журналистикăна вăл «Çĕнтерӳшĕн» хаçатра уçăмлăн утса кĕнĕччĕ, Йĕпреç çыннисемпе туслă çыхăну тытать. «Канаш» хаçачĕн фотокорреспонденчĕ Николай Казаков Элкер уявне пичетре çутатма Чĕмпĕртен ятарласа килнĕ. Семен Василеьвич пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен кăларнă хаçат номерне упакассисене парнелерĕ.

Çапла, 100 çул Тракасси ячĕпе пурăннă, аталанса çĕнелнĕ Пысăк Упакасси урамĕ хăйĕн чаплă çыннине хисеплесе Эл-

кер урамĕ ятне илчĕ. Ял администрацийĕн канашĕ пĕр саслăн йышăннă хыççăн. Ĕçчен те пуян, пултаруллă та тараватлă вуншар çемье пурăнать унта. Пурнăç кĕнекисем-паспорчĕсем çинче – кашниннех Элкер ячĕ.

ЙĔПРЕÇРЕ

Тепĕр чухне эпир шăнаран та слон тума хатĕр. Пĕр-пĕр событие хамăр тăван ен çумне çыпăçтарса чикĕрен иртсе кайсах аслатилле кĕрлесе янратпăр. Унашкалли Йĕпреç енче те пулчĕ. Акă, тĕслĕхрен, Совет Союзĕн Геройĕ, Борис Полевойăн «Чăн-чăн этем çинчен çырнă повесть» кĕнекин тĕп герой-сăнарĕ Алексей Петрович Маресьев летчик пирки.

Историйĕ унăн çавнашкал. Нимĕç фашисчĕсем пирĕн Совет Союзĕ çине сĕмсĕррĕн тапăнсан, 1941 çулхи чӳк уйăхĕнче Йĕпреçе Тула облаçĕнчи Сталиногорскран авиашкул куçса пынă. Чăваш Тимеш, Кĕлĕмкасси, юнашарти Шуртан (Канаш районĕ) ялĕсен уйĕсенче вăхăтлăх аэродромсем тунă. Авиашкул хăйĕн планĕпе летчиксем хатĕрленĕ, вĕсене сывлăшра тăшманпа мĕнле çапăçмалли майсене вĕрентнĕ, çавăн пекех аманнă «ăмăрткайăксене» çар самолечĕсене тытса пыма çĕнĕрен хăнăхтарнă.

1943 çулта çак çар чăçне госпитальте сывалса тухнă Алексей Маресьев лейтенант ССР Союзĕн Сывлăш-çар Вăйĕсен тĕп командованийĕ хушăвĕпе Канаш станцийĕ урлă Йĕпреçе пуйăспа çитнĕ. Аманиччен хастар летчик фашистсен тăватă самолетне персе антарнă. Хăйне те тăшмансем тавăрнă хыççăн икĕ ура лапписĕр тăрса юлнăскерĕн, протезпа каллех самолет кабинине ларас ĕмĕт канăç паман ăна. Офицер сурана çĕнтерсе хăйне çирĕплетсе пынă, летчик-инструктор ĕçне пĕлсе пурнăçланă, хăйĕн вĕçев программине устав ыйтнă шайра вĕçленĕ, çавăн хыççăн ăна Мускав çывăхĕнчи çар чăçне истребительсемпе вĕçме хăнăху илмешкĕн куçарнă. Фронтра

тата темиçе хура хĕреслĕ хурчкана тĕп тунă. Вăрçă хыççăн та вăйне шеллемесĕр мирлĕ пурнăçшăн ĕçленĕ.

А.П.Маресьев Йĕпреç тӳпинче виçĕ уйăха яхăн кăна вĕçнĕ, паллах, летчиксем каланă пек, иккĕмĕш çунат хушнă. Çар чаçĕнчен тухса вăл та, ытти летчиксем те, Йĕпреçшĕн уссине тума пултарайман, унта паттăрлăх та кăтартайман. Çар шкулĕнче Маресьев пек лейтенантсем нумай-нумай пуçласа вĕçме те, госпиталь хыççăн тепĕр хут çĕнĕрен вĕçме те вĕреннĕ. Вĕсенчен ун пекех паллă летчиксем те, паттăрсем те сахал мар тухнă Сывлăш Çарĕнче. Маресьев Йĕпреçре пулни пирки шав çĕклесе Йĕпреç çамрăкĕсене патриотла туйăмпа воспитани панă вăхăт усăсăр иртмерĕ, паллах. Вăл кирлĕ пулнă. Çапах та... хăйпе çывăх çыхăну тытнă хыççăн та, çыру янисĕр пуçне, вăрçă геройĕ Йĕпреçе пĕрре те килсе курмарĕ. Йĕпреçре Маресьев ячĕллĕ урам пур, вăл кунта иккĕмĕш хут вĕçме вĕреннине ас тутарса тăракан Асăну чулĕ вырнаçтарнă... Борис Полевойăн литература сăнарне хăçантанпа ĕнтĕ йĕпреçсем такамран та ытларах çӳле çĕклесе пурăнаççĕ. Çав хушăрах...

Йĕпреç çĕрĕнче, Йĕпреç поселокĕнче иртнĕ ĕмĕрте чапа тухнă çынсем мĕн чухлĕ! Вĕсен шутĕнче – чăваш Улăпĕ, Кушлавăш Упийĕ Çемен Элкер те. Хамăн тăван хаçатăм текен «Çĕнтерӳшĕнре» 1994 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче В. Ивановăн «Пулĕ-ши çав урам?» статйине вуланă хыççăн шухăша путрăм. Корреспондент чунне хытарса çырнă:

«Пирĕн районта çуралнă çыравçăсенчен Элкер – пĕрремĕш гени. Вăл 1940 çултах Чăваш халăх поэчĕ пулса тăнă. Унпа пирĕн мухтанмаллах. Анчах унăн ятне асра тытса сума сăватпăр-и эпир? Ку тарана çитсе те Йĕпреçре поэт ячĕпе хисепленекен урам çук...

Хаçат сăнни Йĕпреç поселокĕн тата район администрацийĕн кантурĕсене те çитсе тăрăннă пулас, вунă çул иртнĕ майлăн поселокра тинех Элкер урамĕ çуралнă. Çĕнĕ урамра çамрăк-

сем кил çавăрма пуçланă. Унччен Йĕпреçрен Упакассинелле тухса каякан вăрман çулĕ шăпах çав урамран вăрманалла кĕрет. Çумрах – хурăнлăх кати. Епле илĕртӳллĕ те илемлĕ вырăн. Элкер урамĕпе Йĕпреçрен Упакассине, Упакассинчен Йĕпреç варрине тухатăн. Семен Васильевичпа юнашар урапа çинче шăкăл-шăкăл калаçса ларса пынă пекех туйăнать.

ШУПАШКАРТА

Аэропортра 15-мĕш маршрут автобусĕ çине ларатăн та, вентрсен «Икарусĕ», Кăнтăр поселокĕ витĕр тухса, Иван Яковлев проспекчĕпе авто-чукун çул вокзалĕсем патне çывхарать, Ленин проспекчĕпе кăшт кайсан, хулан тĕп пасарне сылтăмра хăварса икĕ кĕпер урлă каçать те Гузовский вăрманĕ-урамĕ тĕлĕнче чарăну тăвать, унтан Таса Татиана чиркĕвĕ çуммипе Мичман Павлов урамĕпе икĕ квартал пек кайсан сылтăмалла пăрăнать те, Эльгер урамне кĕрет, кĕçех шавлă вырăна çитсе чарăнать.

Ку лапамра ялан халăх кăткă пек йăшăлтатать. Авă, сылтăм енче «Туслăх» универсам, аптека, «Вилка» кафе, «Удобная обувь» магазин, «Фитнес-центр» (солярий, массаж) вырнаçнă. Сулахайра – пасар, «Новь» универсам, «Продукты», «Золотая бочка» магазин, «Ли-лу» салон-магазин, «Аврора» сутуилӳ çурчĕ, «Зоосервис», «Ателье школьной формы», тумтир çĕлекен, юсакан ателье, сбербанк уйрăмĕ, пĕр сехетре куçлăхлă тăвакан пункт, «24 часа» хупах...

Анаталла çурран утнă май, сылтăмра ачасем шавлани илтĕнет. 39-мĕш шкулта вĕренекенсем стадионта чупаççĕ, сикеççĕ, мечĕк тапса выляççĕ. Шкулпа хирĕç сулахайра апатçимĕç таварĕсем сутакан «Купец» магазина çынсем кĕре-кĕре тухаççĕ. 10-мĕш çурт – юлашки. Урам Максим Горький проспектне тухать. Çывăхрах – «Элкер урамĕ» ятлă чарăну вырăнĕ. Кунта троллейбуссем, автобуссем, маршрутлă таксисем пассажирсене тĕп хуланалла тата Ульянов ячĕллĕ уни-

верситеталла лартса каяççĕ, вырăна çитнисене антарса хăвараççĕ. Çывăхрах – Шупашкар тинĕсĕ.

Ку вăрăмах мар урам хулан Çурçĕр-хĕвеланăç микрорайонĕ сарăлма пуçласан тунăскер – Шупашкарăн пĕр çуначĕ айĕнче вырнаçнăскер. Сарлаках мар, икĕ енĕпе те хурăнлăх ешерет. Упакасси Упи хăй çуралнă вăрман тăрăхĕнчен, Йĕпреç енчен, савăнса-киленсе пурăнмашкăн кăкласа килсе лартса ӳстернĕ пекех. Çав йăрăс йывăççем айĕпе васкамасăр анса Чулхула вырăсĕпе Алексей Пешковпа литература, пурнăç çинчен калаçассăнах туйăнать чăваш халăх поэчĕ Семен Элкер. Вырăс халăхĕн паллă писателĕ Максим Горький ăна ытама илес пекех. Урамĕсем, ят-хисепĕ вĕсен пĕрлешсех тăраççĕ-çке. Урамĕсем яланах чĕрĕ, вĕсем те яланах вилĕмсĕр – халăхпа пĕрле.

Кушлавăш ен паттăрĕн, Чăваш халăх патриочĕн ятне сума суса Карл Маркс урамĕнчи 24-мĕш çурт стени çине мрамортан ăсталанă барельеф вырнаçтарнă, унта çапла çырнă: «Ку çуртра 1954-1966 çулсенче Чăваш халăх поэчĕ Семен Васильевич Эльгер пурăннă».

СТРАСТНЫЙ ЭЛЬГЕРОВЕД

Будучи заместителем председателя Союза писателей Чувашской Республики, мне пришлось заниматься оформлением документов по приему авторов в Союз писателей Российской Федерации. Как-то председатель Агивер положил на мой стол истрепанную толстую папку и сказал: «Надо подготовить материал к следующему заседанию правления Союза». Ознакомился с выцветшими бумагами. Афиноген Иванович Кузьмин еще двадцать лет назад обратился в

правление Союза писателей ЧАССР о принятии его в Союз, но… Папка с документами покрылась толстым слоем пыли бездушия и подлости. На мой взгляд, вокруг руководства правления всегда приспосабливались мстительные и коварные литераторы, и они не давали хода талантливым авторам. Сами восторжествовали, получая по очереди почетные звания, издавая в Чувашгизе только свои произведения. В правлении Союза был такой неписанный закон: «Есть 3 книги – примем, нет – не примем». А в издательстве строго отказывали: «Мы печатаем только произведения членов Союза писателей». Попавшие молодые авторы, да и взрослые, годами крутились в белкином колесе. Да еще попробуй выскажи свою мысль против бесправия, твою рукопись раскромсают так… У них на кормушке всегда содержались спецрецензенты – палачи пера для таких подленьких дел.

Пожалуй, Афиноген Кузьмин тоже оказывался в таком положении, да ему и некогда было наверное воевать с бюрократами литературы. Успокоившись нечестным поведением земляков, он, кандидат филологических наук, преподавал русский язык и литературу в институтах Крайнего Севера и Дальнего Востока, руководил научными экспедициями по изучению русского фольклора, писал по проблемам устного народного творчества, опубликовал в Чувашии актуальные исследования о творчестве наших земляков-писателей. А до этого…

Родился он в Ядринском районе, работал в колхозе, окончил Ядринское педучилище, Чувашгоспединститут, очную аспирантуру Московского университета имени Ломоносова, вернувшись в Чебоксары, работал научным сотрудником научно-исследовательского института.

Вот тогда он истинно познал таланта С.В.Эльгера. Изучив подлинно, полюбив его, увлекся таинственным миром

мыслителя, мудреца, творца настоящего художественного слова. Так одна за другой появляются творческие работы А.И. Кузьмина: монография «Художественная проза С.В. Эльгера», «Ранние этапы мастерства С. Эльгера», «Художественные традиции русских писателей в прозе Эльгера», «Новая повесть С. Эльгера», «О стиле романа С.В. Эльгера «Сквозь огонь и бури» и другие материалы.

Только за эти труды можно было без лишних задоринок принять его, более тридцати лет преподававшего русскую литературу в различных вузах страны, известного в московских литературных кругах критика и литературоведа, в Союз писателей.

А старая бумажная папка лежит передо мной мертвой. Рекомендации постарели, авторы давно ушли в тот мир… Пришлось оживить. С Федором Георгиевичем враз написали рекомендации, провели заседание приемной комис-

Сăн ӳкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла), аялти ретре: чăваш халăх поэчĕ Александр Алга, Александр Кăлкан юптаруçă, чăваш халăх поэчĕ Семен Эльгер, Михаил Сироткин профессор; çӳлте – тăраççĕ: Илпек Микулайĕ писатель, Юсуп Хаппалаев, Наталия Андриевская, Мĕтри Кипек писатель, Василий Давыдов-Анатрипе Георгий Ефимов поэтсем, Василий Долгов литература критикĕ.

сии. На заседании правления не было отрицательных выступлений.

Все документы подготовил, дома на своей машинке напечатал, подписи поставили и Агивер вскоре отправился в Москву. Там в секретариате утвердили протокол нашего правления Союза и Федор Георгиевич вручил Афиногену Ивановичу Кузьмину членский билет Союза писателей России.

Работа была проведена оперативно и отлично. О творчестве Эльгера написано много разными авторами: талантливыми, средненькими и слабенькими. Среди них Афиноген Кузьмин выделяется особо своими неповторимыми творениями. Он заслуженно считается страстным эльгероведом.

2009, 15 октября.

ЭЛКЕР ВĂРМАНĔ

Йĕпреç районĕнчи «Колхоз пурнăçĕ» хаçат тухма тытăннă 1932 çултанпах редакци хăй тавра пичет активисчĕсене явăçтарма тăрăшнă. Пĕрремĕш пилĕкçуллăх валли илнĕ тĕллевсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ударлă вăхăтра тăрăшакан çынсемпе вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă материалсем хаçатăн кашни номерĕнче тенĕ пекех тухса тăнă. Редакци папкинче майĕпен сăвăсем те пухăнма тытăннă. Çамрăк авторсене тăван литературăра ăнăçлă утăмсем тăвакан Çемен Элкерĕн пултарулăхĕ хавхалантармасăр тăма пултарайман, паллах.

Акă, эпĕ архивра упранакан хаçат подшивкисене уçатăп. Çав вăхăт хăйĕн мĕнпур анлăшĕпе тухса тăрать куç умне. Литература лаççи вĕрет те кĕрлет кăна. Кашни уйăхрах «Литература страници» тухса тăнă. Пултаруллă, шанчăк паракан яшкĕрĕме вăхăтра асăрхани хăйĕн «çимĕçне» кӳнех. Вĕсенчен чылайăшĕ кайран паллă çыравçăсен йышне кĕнĕ. Тĕслĕх вырăнне Н.К.Кириллов (Патман) тата К.С.Сергеев (Турхан) пи-

сательсене илĕпĕр. Пĕрремĕшĕ 1895 çулта – Чурачăкра, иккĕмĕшĕ 1915 çулта Вăрманхĕрри Чурачăкра çуралнă. Вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче хальхи Комсомольски районĕн пĕр пайĕ Йĕпреç районне кĕнĕ май тăван литературăра тарăн йĕр хăварнă çыравçăсен ăсталăх çулĕ пирĕн тăрăхран пуçланнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар. Каçал тăрăхĕнчен хаçата çырса тăракансен хушшинче çавăн пекех Василий Викторов (Çиçĕм Ваççи), Михаил Митрофанов (Хурăнай Мишши) пур. Ку йышра «Хастарлă, хыт утăмлă» çамрăксем сахал мар. Вĕсенчен пĕри – Çиçĕм Ваççи, хальхи Комсомольски районне кĕрекен Тукай ялĕнче çуралса ӳснĕскер. 1932-1933 çулсенче тухнă райхаçатра вăл çырнă сăвăсемпе калавсем нумай. Ал айне лекнĕ пĕр подшивкăна çеç уçса пăхас терĕм. 1933 çулхи февралĕн 5-мĕшĕнчи номерте (хаçат тухма тытăннăранпа çулталăк çитнине халаллана ăна) Çиçĕм Ваççи «Пĕр çул» ятлă сăвă пичетленĕ. Хаçат хăйĕн сăввисене вулакансен умне кăларсах тăнипе питех те кăмăллă вăл. Кунпа пĕрлех çĕнĕ пурнăç тăвассишĕн ырми-канми вăй хуракан çынсен хастарлăхĕпе тăрăшулăхĕ хавхалантарнă çамрăк сăвăçа. Хаçат икĕ çул тултарнă куна та вăл сăвăпа кĕтсе илнĕ.

1935 çулхи декабрь уйăхĕнче «Колхоз пурнăçĕ» тăван литературăра пĕрремĕш утăм тăвакан çамрăксене хавхалантарас тĕллевпе, ятарласа литература номерĕ кăларнă. Унта Çиçĕм Ваççи çырнă «Юлашки каç» очерк, Василий Деферан, Елеç Палли, Захар Тимофеев, Клавдия Матвеева, Клавдия Илларионова, М.Питуган, Ан.Розов сăввисем çапăнса тухнă.

Василий Деферан ăсталанă хайлавсем те тăтăшах курăнма пуçланă хаçатра. Хурамал каччи, Çиçĕм Ваççин пултарулăхĕпе хавхаланса, тĕрлĕ жанрлă материалсем калăплама пуçланă. 1932 çулхи августăн 3-мĕшĕнче райхаçатра унăн пĕрремĕш сăввине вырăн панă. Çакăн хыççăн çамрăк автор сахал мар сăвă пичетленĕ «Колхоз пурнăçĕнче». Псевдонимĕсене час-часах улăштарнă вăл. Те вăхăчĕ ун чухне çавнашкал

пулнă, те яш-кĕрĕме асаплантаракан чиртен хăтăлаймасăр çапла тунă? В.Иванов-Фет, В.Савган, В.Силти, Вас.Хурлан, Палан, А.Илем, А.Илемпек, Вас.Хурамал, Шевлин – акă вăл, В.И.Андреев псевдонимĕсен тулли мар списокĕ.

Хаçат редакцийĕ çамрăксен сăвви-калавĕсене пухса «Литература страници» тата «Литература кĕтесĕ» кăларса тăнă. Кунсăр пуçне Чăваш халăх поэчĕ Полороссов-Шелепи 55 çул тултарнă, литературăра ĕçлеме пуçлани 30 çул çитнĕ ятпа ятарлă страница хатĕрленĕ.

Хĕрĕхмĕш çулсен пуçламĕшĕнче литпĕрлешӳ çемйине шанчăк паракан çамрăксен çĕнĕ йышĕ килсе кĕнĕ. Ишлĕ Шетмĕрен (халĕ Патăрьел районĕ) Çенни Петти, Пучинкерен Василий Дмитриев (Василий Юманкка), Çиçĕмкассинчен Глеб Марушев, Кĕлĕмкассинчен Аркадий Никонов, Хурăнайĕнчен (халĕ Комсомольски районĕ) Михаил Митрофанов самаях ăнăçлă хайлавсем ярса тăнă редакцие. Йĕпреçъен авторĕсен произведенийĕсене республикăри хаçатсемпе журналсенче те вырăн пама пуçланă. Василий Дефераипа Василий Юманкка сăввисем «Чăваш коммуни» хаçатра, «Трактор» альманахра курăнса кайнă. Çавăн пекех Хурăнай Мишши, Çиçĕм Ваççи, Кузьма Сергеев (чăвашсен паллă писателĕ Кузьма Турхан), Çенни Петти (Петр Ибасов) чăваш литературин анине шанăç вăрлăхĕ акнипе палăрнă. Çав вăхăталлах пирĕн хаçатра Канаш районĕнчи Пукăртан çамрăкĕн Трофим Иванов-Таçукăн янравлă сасси илтĕнсе каять. Каярахпа вăл чăвашсен паллă поэт-сатирикĕ пулса тăнă.

Элкер вăрманĕн хунавĕ çултан-çул тенĕ пек сарăлса, чечекленсе, вăй илсе, çӳлтен те çӳлелле çĕкленнĕ. 1941 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче район хаçачĕ пирĕн мухтавлă ентеш литературăра ĕçлеме пуçлани 20 çул çитнĕ ятпа ятарлă страница кăларнă. Унта поэтăн 1920-1923 çулсенче хайланă «Паян», «Чикĕ çапса пачĕ», «Ирĕклĕхшĕн çунакан», «Çуллахи каç» сăввисем тухнă. Вĕсене вырăн парса, редакци çамрăк авторсене ятлă сăвăçран вĕренсе пыма, унăн пултарулăхне тĕплĕнрех тишкерме чĕннĕ.

Каярахпа Рикмас Кĕркурийĕпе Иван Митяçăн малтанхи хăюсăр сăввисем пичетленсе тухаççĕ.

Кам пĕлет, ылханлă фашизм пирĕн çине ултавлă майпа сĕкĕнсе кĕмен пулсан, тăван литературăра хăйсене туллин палăртма ĕлкĕретчĕç пулĕ Йĕпреçьен çамрăкĕсем? Анчах вĕсене синкерлĕ шăпа вăрçă хирĕнче вилĕмпе куçа-куçăн тăратса тĕрĕслет. Çамрăк авторсенчен чылайăшĕ фронта тухса каять. Кăвар чун-чĕреллĕ Çиçĕм Ваççи, пултаруллă та харсăр Хурăнай Мишши, вулакансем килĕштерсе пăрахма ĕлкĕрнĕ Василий Юманкка, çепĕç те черченкĕ саслă Глеб Марушев, Пăлаçи Атăкра (Патăрьел районĕ) çуралса ўснĕ, вăтам шкул хыççăн Йĕпреçри радиовещани редакцийĕнче ĕçленĕ Иван Алексеев, Пăлапуç Нурăс каччи Алексей Рогожин т.ыт.те Аслă Çĕнтерĕве кĕтсе илеймен, фронтра паттăррăн пуçĕсене хунă.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче редакци çумĕнчи литпĕрлешӳ çĕнĕ вăйпа хĕмленме тытăнать. Çĕнĕ авторсем, çĕнĕ хушаматсем курăнма пуçлаççĕ хаçат страницисенче. Вĕсем, хăйсем аслă юлташĕсен эстафетине малалла илсе пыма шантарса, чун-чĕрери вăрттăн та хăюсăр туйăмсене хут çинче «тĕрĕслеме» васкаççĕ. Николай Кудрявцев (Йăлăм), Василий Волгин, Гаврил Луç, Иван Константинов (Ахрат), Николай Петровский (Теветкел), Николай Андреев (Чураш), Спиридон Борцов, Сергей Селезнев (Мерчен) т.ыт.те ăнăçлă утăмсем туни сисĕнет.

1956 çултанпа пирĕн литпĕрлешӳ Чăваш халăх поэчĕ Çемен Элкер ячĕпе хисепленсе тăрать.

«Çакăн хыççăн, – аса илет Луç Кавĕрли, – паллă ентеш пирĕнпе тытакан çыхăнăва татах та вăйлатрĕ. 1957 çулхи сентябрь уйăхĕнче вара вăл тăван тăрăха килчĕ. Районти ĕççыннисемпе тĕл пулчĕ поэтăмăр. Эпир, литература пĕрлешĕвĕн членĕсем, Чăваш халăх поэтне редакцие чĕнтĕмĕр. Чылайччен пулчĕ кунта хаклă хăна, тăван литература ўсĕмĕсем çинчен каласа пачĕ, хăйĕн сăввисемпе паллаштарчĕ.

Паян кунченех тухмасть çак тĕлпулу асран. Халĕ те Çемен

Ӳкерчӗкре: Çемен Элкер литпӗрлешӳ çамрӑкӗсемпе – Вячеслав Сорокинпа, Геннадий Рикмаспа, Гаврил Лосевпа тата Николай Теветкелпе.

Элкерӗн лӑпкӑ сӑнӗ куç умӗнчех тӑрать пек, çамрӑк авторсене панӑ канашсем халӗ те хӑлхарах янӑраççӗ пек. Улӑп çын сӑнарӗ ӗмӗрлӗхех пирӗнте юлчӗ».

Аслӑ Çӗнтерӳ тунӑранпа 25 çул çитнине паллӑ тума хатӗрленнӗ май, район хаçат редакцийӗ фронтра пуç хунӑ ялкорсемпе сӑвӑçсене асӑнса тӗл пулу ирттерме палӑртнӑ. Ун ӗçне хутшӑнма Шупашкартан сумлӑ çыравçӑсене те йыхравланӑ. Паянхи пекех лайӑх астӑватӑп çав тӗл пулӑва. Василий Давыдов-Анатри (ун чухне вӑл «Чӑваш халӑх поэчӗ» хисеплӗ ята илейменччӗ-ха) хӑйӗн ентешӗ Иван Алексеевич (Алекс) çинчен ӑшшӑн аса илсе каласа пачӗ çавӑн чухне. «Сӑвӑсем çырма унпа пӗр вӑхӑталлах пуçланӑ, – теннӗ вӑл. – Первомайски районӗнчи «Коммунар» хаçатра пирӗн вӗренмелле çырнӑ сӑвӑсене вырӑн парсан калама çук хӗпӗртерӗмӗр. Малалла вӗренме, журналист пулма ӗмӗтленетчӗ тусӑм. Хаяр

та ылханлă вăрçă татрĕ çутă ĕмĕтне. Унăн паттăрлăхĕ çинчен Мускавра пичетлесе кăларнă «Говорят погибшие герои» документлă кĕнекере тĕплĕн çырса кăтартнă...».

Халăх сума сăвакан сăвăçăмăр тĕл пулура пирĕн литпĕрлешӳ членĕсен хайлавĕсене пăхса тухса хакларĕ, лайăхрахисене Шупашкарти хаçат-журнал валли суйласа илчĕ.

Çамрăк авторсемшĕн çавăн пекех Геннадий Мальцев (Кенаш мучи) писателĕн сĕнĕвĕсем те вырăнлă пулчĕç. Йăпреç районĕнчи Эйпеç вăтам шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Роман Чепунов (халĕ вăл Шупашкар районĕнче пурăнать, «Хыпар» хаçатăн штатра тăман хастар авторĕ) райхаçатра кун çути курнă очерксене тишкерсе тухрĕ. Чăвашрадион литература кăларăмĕсен редакторĕ Петр Андреев, Йĕпреçри çамрăк

Малти ретре (сулахайран сылтăмалла) – Геннадий Мальцев писатель, «Çĕнтерӳшĕн» хаçат редакторĕ Владимир Кузьмин; иккĕмĕш ретре – Николай Перлов журналист, Чăвашрадио редакторĕ Петр Андреев, Роман Чепунов педагог-филолог, писатель, Константин Алимасов журналист (халĕ «Çĕнтерӳшĕн» хаçатăн тĕп редакторĕ); виççĕмĕш ретре – Петр Кузьмин-Çăлкуç поэт, Василий Андреев-Хурамал сăвăç, Василий Башкиров журналист, Василий Давыдов-Анатри, Аверкий Смирнов журналист, Виталий Родионов, Геннадий Кузнецов журналист тата поэт.

çыравçăсен пултарулăхĕпе паллаштарма тĕллев тытнăскер, эпир сăвă вуланине магнитофон пленки çине çырса илчĕ...

Паллă çыравçăсем литературăра малтанхи хăюсăр утăм тăвакан авторсене хавхалантарни йĕрсĕр, тĕлли-паллисĕр çухалмарĕ. Пирĕн литпĕрлешӳ Николай Теветкеле, Николай Максимова, Иван Ахрата, Гаврил Луçа, Микул Пулара пултарулăх çулĕ çине тухма «путевка» панă. Халĕ «Хресчен сасси» хаçатра ĕçлекен Петр Кузьмин-Çăлкуç тата Чăваш патшалăх университечĕн профессорĕ, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Виталий Родионов та хăйсен пĕрремĕш сăввисене Йĕпреçре ĕçленĕ чухне, «Çĕнтерӳшĕн» хаçатра çапса кăларнă. Çав вăхăта ăшшăн аса илеççĕ вĕсем.

Шел, паянхи пăтрашуллă-пăтăрмахлă саманара Шупашкарта пурăнакан писатель-поэтсем районсенче пулса редакцисен çумĕнчи литпĕрлешӳсене тивĕçлĕ пулăшаймаççĕ. Пултарулăх союзĕсем темиçе ушкăна пайланни те килĕшӳллĕ мар. Ятлă çыравçăсене Йĕпреçре кăна мар, Вăрнарпа Канашра та, Элĕкпе Хĕрлĕ Чутайра та, Каçалпа Шăмăршăра та кĕтеççĕ çамрăк авторсем...

Вĕсем те пурнăçăн кĕрлевĕ юххинче хăйсен тивĕçлĕ вырăнне тупасшăн, вулакансен кăмăлне пур енлĕн тивĕçтерсе тăракан хайлавсем ăсталасшăн.

Йĕпреç районĕнчи «Çĕнтерӳшĕн» хаçат редакцийĕ çумĕнче йĕркеленĕ литпĕрлешӳ республикăра «чи ваттисенчен» пĕри. Вăл район хаçачĕ пуçласа тухнă хыççăнах чăмăртаннă. Вуншар çул хушшинче ун йышĕнчен мĕн чухлĕ пултаруллă çыравçă ӳссе çитĕннĕ. Чăваш халăх поэчĕн Элкерĕн вăрманĕ пек.

Халĕ вара кивĕ сăн ӳкерчĕке тинкерсе пăхсамăрччĕ.

Турат çумне турат хушать. Элкер хунавĕ сарăлса, йышланса пырать литературăн ем-ешĕл вăрманĕнче тĕрлĕ сассемпе кĕрлесе-чечекленет.

Геннадий Кузнецов,
литпĕрлешӳ ертӳçи.
2009 çулхи юпа уйăхĕ.

* * *

Кушлавăш уйĕнчи хăйĕн ялĕнчен те хăй пекех илем çынни çут тĕнчене йăлкăшса тухасса шаннах ĕнтĕ Семен Васильевич.

Йывăç сумĕнче хунав шăтса тухатех. Пысăк Упакассинчи Çемен Элкерĕн вăрманĕнче те пултарулăх хунавĕ туратланса хĕвел еннелле туртăннă. Ача чухне çеремлĕ-йăмраллă урамра пĕрле выляса ӳснĕ Бисяковсен-маттурĕсен йăхăнчен, акă, Сильвестр хĕрĕ Валентина сăнĕ-пуçĕпе те, кĕлетки-хусканăвĕпе те, çаврăнăçулăхĕпе те тантăшĕсенчен уйрăмрах палăрнипе шкулта та, ял ушкăнĕнче те çынсене тĕлĕнтерсе ярать. Хĕр ачан литературăпа искусство туртăмĕ вăйлансах пынă. Çемен Элкер ентешĕн пултарулăхĕ ăна хавхалантарса пурнăç çулĕ суйласа илме пулăшнă. Вĕреннĕ, вĕрентӳ ĕçне тытăннă çулсем хыçалта ĕнтĕ. Акă, Упакасси чиперкки Шупашкарти пукане театрĕн актриси. Ачасемпе 1973 çултах юратса ĕçлеме пуçланăскерĕн уншăн кунта тепĕр çĕнĕлĕх уçăлать. Пуканесем пулăшнипе, спектакльсенчи персонажсен чĕлхипе пĕчĕккисен чун-чĕрине савăнăçлăн хускатма айăй мĕн тери кăткăс та йывăр. Çамрăк актрисăн ĕçĕ сцена çинче ăнать. Çав хушăрах унăн майĕпен лайăх пьесăсене хăй пуçĕпе çавăрттарса, хăй аллипе лартас ĕмĕт çуралать те... вăйланса каять.

Çапла унăн Хусан çулĕ уçăлать. Таврара чап илнĕ шупашкарсен пукане театрĕ тутарсене те тахçанах кăмăла кайнă. Пĕрпĕрин хушшинчи çыхăну вăйланнă. Кӳршĕсене шăпах режиссер кирлĕ пулнă. Хусан хулин Авиастроительсен районĕнче В.С.Бисякова 1997 çулта «Теремок» ятлă пукане театрĕ йĕркелесе ярать. Чăваш актриссин искусство кĕтесĕ кĕçех районта, хулара ачасемпе ашшĕ-амăшĕсен туртăмлă вырăнĕ пулса тăрать. Хăй хатĕрленĕ автор программипе 1-9-мĕш класри

ачасем çул шайĕпе килĕшӳллĕн вылякан пуканесен мĕн пур искусствипе пилĕк çул хушши тĕплĕн паллашаççĕ: пуканисене те хăйсемех маçтăрлаççĕ, сцена çинче те выляççĕ, теорине – ăсталăхне вĕренеççĕ.

Спектакльсен репертуарĕнче – вырăссен, тутарсен, чăвашсен пьесисем. Валентина Сильвестровна хăй те пьесăсем çырса лартма вĕренсе çитнĕ ĕнтĕ. Ăна Чăваш патшалăх пукане театрĕнчен, уйрăмах ентешĕнчен, Йĕпреç ен ачинчен, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистĕнчен Геннадий Кирилловран – професси енĕпе, репертуар туса хатĕрлессипе – Тутар Республики культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕнчен М.Н.Юхмаран пысăк пулăшу пырса тăрать.

Театр ĕçне йĕркелесе тытса пырас енĕпе те Михаил Николаевичăн хуравлă тĕккисĕр иртмест, паллах. Хусанта Юхман авторитечĕ пысăк.

Хусан ачисем чăваш халăх писателĕн М.Н.Юхман «Улăм арçын ача», «Хĕвел тĕрри», «Мĕн вăл ирĕклĕх?», «Рая мĕнле лекмелле?», «Турăсен куççулĕ» тата ытти нумай пьеси тăрăх лартнă спектакльсене курса киленеççĕ. Вĕсене чăвашла та пăхаççĕ, вĕсемпе, тутарла, вырăсла куçарнăскерсемпе, хăйсен чĕлхипе те паллашаççĕ. Сăмах май, Юхман произведенийĕсене тĕнчери 100 ытла чĕлхене куçарнă, пьесисене 40 ытла çĕршывра лартаççĕ.

Бисякова театрĕ хăйсен районĕнчи, хулари, республикăри культура мероприятийĕсене ялан хутшăнать, 1984 çулта «Кăтартуллă театр» ятне тивĕçнĕ, 1987 çулта халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш фестивальти çитĕнӳсемшĕн театра лауреат ят, ертӳçине тата унта ĕçлекенсене дипломпа хисеп грамоти панă.

2004 çулта, акă, «Теремок» шупашкарсене савăнтарать. Ачапча тата пукане спектаклĕсене çӳллĕ шайра вылянăшăн Хусан театрне çӳле çĕклеççĕ, илем ертӳçине Валентина Силвьестровнăна Чăваш писателĕсен Алексей Талвир ячĕллĕ литература премине параççĕ. Чăвашсен обществăпа культура центрĕ ача-

сем чи хисеплекен-юратакан искусство ĕçченĕсене хавхалантаракан «Пӳрнеске» премине те тивĕçет вăл.

В.С.Бисякована Тутарстан Республикин «Вĕрентӳри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» паллăпа хаклана, Раççей писателĕсен Союзĕн членне илнĕ.

2004 çулта театра Чăваш халăх писателĕ М.Н.Юхма ятне панă. Çав паллă сăлтавпа Хусанта чăваш тата тутар искусствисен чаплă уявĕ пулнă.

Акă епле пысăк хак параççĕ «Теремока» тата унăн мухтавлă ертӳçине:

«В.С.Бисякова фестивальсем, смотрсем, конкурссем ăста та чаплă ирттерме маçтăр. «Теремок» Хусанти, республикăри нумай çул ăнăçлă ĕçлекен уçăмлă, интереслĕ театрсенчен пĕри.

Чăваш хĕрарăмĕ пулнă май вăл хăйĕн халăхĕн фольклор искусствине пропагандăлать, çапла вара ачасен чун-чĕринче интернационализма хисеплеме, вĕсене Раççей Федерацийĕнчи халăхсен наци пĕрлĕхне тивĕçлипе хаклама пулăшать.

Тутар патшалăх «Экият» пукане театрĕн режиссерĕ,
Раççей Федерацийĕн тата Тутар Республикин
искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ
Людмила Дьяченко».

– Йĕпреҫсемпе вăрнарсен туслăхне Семен Васильевич Элкер ҫыхăнтарса тăрать. Пирĕн литература пĕрлешĕвне ҫĕнĕрен чĕртсе яма пулăшнăшăн пысăк тав сире, Владимир Прокопьевич! Малалла пĕрле ҫĕмĕрттерер, – хаваслăхне пытараймасăр ҫĕкленӳллĕн калаҫать Василий Иванович Андреев-Хурамал.

Сулахайри – Вăрнартан хăнана килнĕ «Çĕнтерӳ ҫулĕ» хаҫат сотрудникĕ Владимир Иванович Москвин.

Дмитрий Семенович Киселев фотокорреспондент 1972 ҫулта Йĕпреҫ вăрманĕнче ӳкернĕ сăн.

«Теремок» театра тутарсем патшалăх енчен укҫа-тенкĕпе тивĕҫтереҫҫĕ. Мĕнле вăйлă пулăшу!

* * *

Чăваш халăх поэчĕ Ҫемен Элкер йĕпреҫсемпе вăрнарсемшĕн литература вучахĕ умĕнче вĕркĕч вĕртерсе сăнарлăх хĕлхемне ялкăштараканни те, ăс-тăн мăлатукĕпе лира сунталĕ ҫинче ҫамрăксен хайлавĕсене туптаса вулакан умне чун туртăмлĕ илем таварĕ кăларакан пĕртен-пĕр ăсчах пулнă. Сăр вăрманĕн кашлавĕнче сăвă-калав, повесть-роман ҫыракансем Кушлавăш уйĕнче, икĕ район ҫĕрĕ ҫинче, – тымар ярса ӳсрĕҫ.

Вăрнар районĕнчи «Социализм ҫулĕпе» хаҫат та 1930 ҫултанпах илемлĕ произведени ҫырма сĕмленекенсемшĕн уяв

вырăнĕ пекех пулса тăнă. Малтанхи номерсенчен пуçласах вулакансем валли Çĕпритун Шăпчăк кулăшĕсем, Иван Ивник сăввисем, Мĕтри Кипек калавĕсем, Аполлон Федоров очеркĕсем, В.И.Краснов-Аслин «Тăвалла» романĕн сыпăкĕсем пичетленнĕ.

Вăл вăхăтра Василий Иванович Вăрнарта парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче ĕçленĕ, район хаçатне кăларма тытăнас тĕлĕшпе хытă тăрăшнă, хаçат тухма тытăнсан ун тавра литература еннелле сулăнакансене пĕрлештерме хал çитернĕ.

Хаçатра Çемен Элкерпе Митта Ваçлейĕн сăввисем те кун курнă. Митта Ваçлейне ку тăрăха В.Краснов-Асли илĕртсе килнĕ, Василий Егоровича Хутар шкулĕн директорне лартнă. Çĕмĕрле районне тăвиччен, Хутар 1935 çулччен, 7 çул, Вăрнар районне кĕнĕ.

Вăрнарсен писательсемпе телей пулнă. Хаçат редакторĕнче вăтăрмĕш çулсенче Григорий Алендейпе Иван Павлов-Пинер ĕçленĕ. Вĕсем сăвă-калав çыракансене хăйсем патне таланчĕпе те, чунĕпе те туртнă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан хаçат корреспонденчĕсем, журналисчĕсем фашистсемпе çапăçма кайнă, талантлă Николай Юманкай, Петĕр Тимухха, Исливан Лисков фронтран таврăнайман.

Вăрçă чарăнсан Вăрнара Хĕрлĕ Чутайран Петр Тихонов-Ялгир фронтовик куçса пынă. Пултаруллă сăвăçа редакцин ответлă секретарьне ĕçлеме илнĕ, каярахпа ăна редактора лартнă. Мускаври М.Горький ячĕллĕ литература институтĕнчен вĕренсе тухнăччĕ вăл. 1946-1980 çулсенче районти литература пĕрлешĕвне ертсе пычĕ, ăна вăл хăех йĕркелесе янă.

Журналист, литератор-сатирик, Уравăш ачи Степан Александрович Юркин çав вăхăта çапла аса илет:

«П.Тихонов-Ялгир литература пĕрлешĕвне питĕ хастар, пĕлсе ĕçлеттеретчĕ. Эпир уйăхра пĕрер-икшер хут пухăнса юлашки вхăтра хамăр çырнă хайлавсемпе паллашаттăмăр, пĕр-пĕрне усăллă канашсем параттăмăр. Пирĕн «профессор»,

литература теорине вĕрентнисĕр пуçне, авторсен хайлавĕсене пичете хатĕрлесе пама вăхăт тупатчĕ».

Эпĕ салтакран тавраннă вăхăталла литпĕрлешӳ вăйланса çитнĕччĕ. Пире пулăшма Шупашкартан паллă писательсемпе поэтсем час-часах килетчĕç. Акă, 1959 çулхи çу уйăхĕн вĕçĕнче эпир П.П.Хусанкая кĕтсе илме редакцие çирĕмĕн пухăнтăмăр. Чăваш халăх поэчĕ пирĕнпе икĕ кун чăтăмлăн ĕçлерĕ. Вăл пире чăваш литературинчи лару-тăрупа паллаштарчĕ, хăй ют çĕршывсенче курни-илтни çинчен, унти халăхсем, уйрăмах пăлхарсем, чăвашсем çине мĕнле пăхни пирки каласа пачĕ. Эпир хамăр çырнисене вуласа-каласа патăмăр. Кун вĕçленсен Петр Петрович пирĕн ĕçсене çĕклерĕ те, «Кусене кĕçĕр хăна çуртĕнче пурне те вулама илсе каятăп», – тесе сывпуллашрĕ.

Тепĕр кунне хаклă хăна редакцие савăнăç кăмăллăн çитрĕ.

– Тунмастăп, Вăрнара килнипе эпĕ питĕ кăмăллă юлтăм, – терĕ вăл сĕтел хушшине кĕрсе ларнă май. – Çакăнта ларакансенчен, çине тăрсан, тăват-пиллĕкĕшĕ кĕçех паллă çыравçă пулатех тетĕп. Уйрăмах илсен, мана Григорий Михайловпа Анатолий Емельянов сăввисем кăмăла кайрĕç. Зоотехник-ветеринар кăна мар иккен вĕсем, чăн-чăн пулас поэтсем! Акă, Кĕркури сăввинчи йĕркесене илер:

Чăваш йăмрин асамлă тумĕ
Чĕнтĕрленет пĕве çинче.
Хĕвел çиппи тирсе шыв хумĕ
Тĕртет илем, тĕртет çинçе.

Куратăр-и, унăн шыв хумĕ ăса пулнă, хĕвел çиппи тирнĕ те, çинçе пир тĕртнĕ пек илем тĕртет. Тата – çинçе. Чăн-чăн поэзи. Аван, пуçламăшне тунă тес пулать. Лайăхрах сăвăсене, калавсене пурне те «Ялавпа» «Тăван Атăл» редакцийĕсене çитсе парăп, пичетлеме пулăшăп. Çав хушăрах хамăн çывăх тусăма, Элкере, сирĕн пултарулăх çинчен каласа кăтартăп, Семен Василеьвича санăн çывăх кӳршӳсем илемлĕ литературăна епле хăюллăн кĕни, санăн литература вăрманне çĕнетсе симĕслентерни çинчен каласа савăнтарăп.

Пирĕн «литинститут» занятийĕ малалла тăсăлчĕ. Юлашкинчен сăн ӳкерттертĕмĕр. Çур ĕмĕр каялла çавăнта çапăннă сыравçăсенчен эпир иккĕн-виççĕн кăна пурăнатпăр-ха. Анчах пурте вĕсем маншăн чĕрĕ пек, пĕрле калаçса-тавлашса литература çинчен шавлас пек. Акă эпир, «Ялгир шкулĕн» ачисем, аслă поэтпа юнашар: малти ретре лараççĕ (сулахайран сылтăмалла) – Георгий Игнатьев, Григорий Илепер, Петр Хусанкай, Петр Ялгир, Василий Еремеев, Павел Вырсов; тăраççĕ – Николай Орлов, Анатолий Емельянов, Степан Юркин, Филипп Андреев, Степан Филиппов, Анатолий Хум, Павел Николаев, Владимир Кузьмин (гимнастерка тăхăнни), Макар Филиппов.

Петĕр Хусанкай калани-ĕмĕтленни чăнах та пурнăçланчĕ: Анатолий Емельянов чăваш халăх писателĕ ятне тивĕçрĕ, Григорий Илепер, Владимир Кузьмин, Анатолий Хум СССР писательсен Союзĕн членĕсем – нумай кĕнеке авторĕсем пулса тăчĕç.

Хамăрăн ентешсем – Мускавран тăван Вăрнара курма килсен К.В.Иванов ячĕллĕ ЧР Патшалăх премийĕн лауреачĕ Мĕтри Кипек, ЧАССР писательсен Союзĕн литература консультанчĕ Алексей Воробьев литература пĕрлешĕвĕн занятийĕсене çӳллĕ шайра, интереслĕ ирттерни асрах.

Вăрнар çыравçисенчен Антип Николаев, Алексей Воробьев, Юрий Айдаш, Григорий Луч, Порфирий Егоров, Виталий Родионов, Сарра Баранова, Михаил Васильев писательсен Союзĕн ретне кĕме тивĕçрĕç.

Кушлавăш уйĕнчен Хураçырма çыравçи, ученăй В.Г.Родионов уйрăмах палăрчĕ. Виталий Григорьевич хăй çырнипе çырлахмасть, çĕршер чăваш ывăл-хĕрне ăслăлăх çулĕ çине тăратать. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче чăваш филологийĕпе культурологи факультетне нумай çул хушши вăйлă аллинче тытса пыраканскер, Иван Яковлевич Яковлевăн ăслăлăх юхăмне вăйлатса тăрать, пĕтĕм халăх хушшинче чăвашлăх мухтавне тĕнче шайне çĕклет.

Кушлавăшĕнчен хăйĕнчен Вячеслав Кондратьев-Славан Савгай поэт-лирик, журналист-сатирик Чăваш çĕршывĕнче чапа тухрĕ. «Капкăн» журналăн ĕçтешĕсем хушшинче вăл хăйне евĕр çыпăçуллă сăмах-кулăшĕпе, вăтанчăклăрах енĕпе тата таса чĕреллĕ пулнипе уйрăлса тăратчĕ. Хамăн ĕç мехелĕпе хушнине вăл тасан, литература жанрĕн йĕркипе пурнăçлатчĕ. Ахальтен-и вăл, Чăваш университетĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕреннĕ хыççăн хăйсен пултаруллă ушкăнĕпе (çав ачасем вăйлă журналистсем пулса тухчĕр тенĕ) Михаил Ломоносов ячĕллĕ университета направленипе лекет. Унти журналистика факультечĕпе Чăвашуниверситечĕн хаçат-журналта ĕçлеме хатĕрлекен уйрăмĕ Слонпа Моська шайĕнче çеç вĕт. Эпĕ Вячеслава çырнă хайлавсен шайĕпе танлаштарма пултараттăмччĕ. Темиçе хаçатра та ĕçлесе хăйĕн перин тĕсне ылтăнлатсах пычĕ. Хăйсен ялĕн чиркĕвĕ пирки чĕререн пăлханатчĕ. Унпа тĕл пулсан вара Кушлавăш тăрăхĕ, Кушлавăш чиркĕвĕ пирки çеç калаçу хĕретчĕ. Аван юлташчĕ, мана вăтанарах, куçран пăхатчĕ те: «Мĕнле, Владимир Прокопьевич, пĕрле тепре кайса килетпĕр-и хамăр енне», – тетчĕ. Вăл вăхăтсăр çĕре кĕчĕ те, хамăрьен хамăртах юлчĕ.

Ершипуçĕнче те поэзи тымарĕ чĕрĕлсех тăнă иккен. Павел

Николаевич Николаев та çав тымартанах илем шывне ĕçсе хавхаланнă. Сăвăсем çыратчĕ, вĕсене П.А.Тихонов-Ялгир хаçатра пичетлетчĕ, Ершипуç ял совечĕн ĕçтăвком председателĕнче ырми-канми ĕçлерĕ. Партин Чулхулари аслă шкулĕнче унпа пĕрле вĕрентĕмĕр, пĕр пӳлĕмре пурăнтăмăр. Ун хыççăн вăл парти райкомĕнче пропаганда пайне ертсе пычĕ, райхаçат редакторĕнче ĕçлерĕ... Пурнăç çулĕ вăрăм, ун тăрăх утса Павел Николаевич Çĕпĕр еннелле те шутарса пăхрĕ, унта чылай хуравлă ĕçре пулчĕ. Тунсăх кĕвви ăна та вăрăм çул çинчен каялла тавăрчĕ – вăл каллех Кушлавăш çĕрĕнче, Ершипуçĕнче. Шел, тăван кĕтесре нумаях пурăнаймарĕ, йывăр пурнăç тылли ăна та хăй айне турĕ.

Кушлавăш тăрăхĕн анлă уйĕ çутçанталăк хĕмленĕвĕпе малалла ешерет. Çав улăхра Вăрнар хĕрĕсемпе йĕкĕчĕсем те хăйсем майлă илем чечекне çурăлтарса ӳстереççĕ. Сăр вăрманĕ кашланă пекех Элкер вăрманĕ те хăйĕн тăнлă ачисемпе-турачĕсемпе чăваш литературине, журналистикине çĕнĕ вăй парса тăрать – Илем вăйĕ.

Çак ӳкерчĕкре Элкер хунавĕсем епле хĕвел куллиллĕ!

Чăваш писателĕсен VI съездĕнче.
Сулахайран сылтăмалла – А. Отачкин-Çулĕç сăвăç,
вĕренӳ кĕнекисен авторĕ, М. Николаева прозаик-драматург,
М. Кипек çыравçă, А. Воробьев сăвăç, В. Абашев литературовед,
чăваш халăх поэчĕ С. Элкер, В. Канюков литературовед,
А. Галкин сăвăç, П. Ялкир сăвăç.

Ăнлавĕ пултăр малтанах Пегас çинчен. Пегас вăл – авалхи грексен халапри çунатлă паттăр лаши. Асамçă-урхамах турăсем пурăнакан таса Олимп тăвĕ тăрне улăхса, турăсемпе этемсен туррине Зевса çиçĕм тытса пама пултарнă, çапла ăна çут тĕнчепе хуçаланма пулăшнă имĕш. Пегаса шурăмпуç туррипе Эоспа та çыхăнтарнă, çăлтăрсен ушкăнне те кĕртнĕ. Зевс хĕрĕсен юрăпа поэзин, искусствăпа наукăн туррисен – музăсен шухăш-кăмăл çĕкленĕвĕн астармăшĕпе те çывăхлатнă. Малтанах виçĕ музăна пуç çапнă: Мелета-Шухăшлав, Мнема–Ăс-тăн, Аэда-Юрă пулнă. Вăхăт иртнĕ çемĕн музăсем тăххăра та çитнĕ. Майĕпен вĕсем этемлĕхĕн ăслăлăх пайĕсенчен ытларахăшне – наука таранах хăйсен ытамне илеççĕ.

Музăсем-турăсем Геликонпа Парнас тăвĕсен çӳл тӳпинче туртăм йăви çавăрнă. Грецири çӳллĕ тусем çинче Зевс ывăлĕ Аполлон та музăсемпе хуçаланнă. Вăл хăйĕн пĕр ӳтри тăванĕ текен Гермес маçтăрланă лирăна хăй аллине çавăрса илнĕ те музăсен аслă турри пулса тăнă. Музăсем уçăмлăн та пит янравлăн юрланă. Вĕсен концерчĕ вăхăтĕнче пĕррехинче капашсăр хавхаланупа сасартăк ту çӳл тӳпенелле таçта çитичченех ӳссе кайнă. Тинĕс турри Посейдон хушнипе вара Пегас урипе хытă тапнă та, тăва çĕр çине антарса лартнă. Çавăнтанпа ту тăрринче ăйăр-çилçунат çăлкуçĕ вăйлăн тапса тухнă. Ытарлăн каласан, çав çăлкуç хăвачĕ юрăçсемпе поэтсен пултарулăх тӳпинче чи çӳллĕ шайĕ шутланма пуçланă. Илем тĕнчинче Парнас вăл: поэтсен йышĕ, пĕрлĕхĕ, вĕсен сăввисем – Парнас чечекĕсем, музăсем – Парнас пикисем.

Çак ытарлă сăнарсемпе вырăссен паллă поэчĕсем, уйрăмах А.С.Пушкин ăслайлăн усă курнă: «Пора Баратынскому занять на русском Парнасе место, давно ему принадлежащее», «Но мне знаком латинской музы голос! И я люблю парнасские цветы», «Поссорившись с парнасскими сестрами, мне пропо-

ведовать пришел сюда стихами», – вулатпăр унăн произведенийĕсене алла илсен.

В.В.Маяковский те тĕнчери паллă литераторсенчен ӳксе юлман ку енĕпе, «Фининспекторпа поэзи пирки калаçни» хайлавĕнче: «А что, если я десяток пегасов загнал за последние 15 лет?!» – каснă хăйĕн пултарулăх хĕçĕпе.

Чăваш поэчĕсем те тĕнче культурин аталанăвĕнчен ӳксех юлман – патша саманинчи тĕттĕмлĕхре пурăннă пулин те, советсен çĕнĕ «ликбезĕнче» майĕпен кăна «массăллăн» хутла пĕлме пуçласан та... Çĕршер пин чăваш çинче шăтса ӳснĕ ăслăлăх калчи хĕвел патнелле имшеррĕн туртăннă. Хăйсен хăюсăр, вăйсăр алли-урипе Пултарулăх Урхамахĕ çине утланкаласа ларма, Парнас çулне аран-аран тĕттĕмлĕхре тупкаласа Илем тӳпинелле хăпарма хăтланнă-ха талантлисем. Анчах Илем çулĕ ытла та инçе, çӳллĕ пулнă-çке. Унтан Зевс хĕрĕсем-пикисем Муза пусмине пăрахса пама васкаман. Вĕсене тĕнчене кисретекен, тĕлĕнтерекен юланутçă-паттăр кăна кирлĕ пулнă-çке.

Сарлака Çĕр çинчи Чăваш эртелĕнчен çав пусма вĕçĕнчен çирĕп аллипе ярса тытма пултаракан гени çуралать-çуралатех, акă. Константин Иванов хăйĕн «Нарспи» пикипе Парнас тӳпине улăхать-улăхатех. Ун хыççăн, тĕнче кисревĕн хумĕпе çӳлелле вĕçсе, Çеçпĕл Мишши те, Зевс туррăн кĕрӳшĕ пулса, Илем кĕрекинче музăсем кĕтекен хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне шанчăклăн кĕрсе ларать, поэзи çӳл тӳпине Хĕрлĕ Çăлтăр лартать. Аполлон турă, унран кăштах кулкаласа, калать:«Йăмăкăмсем ман кунта, этем çури, йышлах мар, сан хăюлăхна йышăнса, тĕнче уçлăхĕнчи çăлтăрсен пĕр ушкăнĕнче хăйĕн лирипе лирика янраттарма пуçланă сирĕн тепĕр генине те вăрăм пусма пертерсе партарăп та хитре музăсенчен вăтанчăкраххине».

Çапла Çемен Элкер те, Кушлавăш уйĕ шăварса ӳстернĕ, лира каласа халăха çĕклентернĕ поэт, Пысăк Упакассинчи хăйсен колхозĕн ырхан лашине шанмасăр, Парнасран тăсса

панă Муза аллине çепĕççĕн тытать те, тăпăртатса тăракан Пегасĕ патнелле утать.

Темшĕн унăн Чăваш çĕрĕнчен çӳл тӳпене пĕччен вĕçес килмест. Вăл вара, тавралла çаврăнса пăхать те, Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишшин сукмакĕпе чупакан Йĕпреç ачине курах каять. Сăр вăрманĕнчи Савкка сăвăçне Теветкел Микулайне Пегас çине çĕклесе лартать те чĕлпĕрне ăна шанчăклăн тыттарать. Кĕçех çапла Аполлонпа музăсен – илем туррисен – йышĕ çĕнĕ кавалерсемпе хутшăнать.

Пысăк Упакассинче Савкка урамĕ пур. Ял хапхинчен тухакан çул вăрманалла кукăрăлса кĕрет те тăпăлкка Савккана çитет. Кушлавăш тăрăхĕнчи халăхпа Савкка ялĕнче пурăнакансем ĕмĕр-ĕмĕрĕпех пĕр-пĕринпе сывăхланнă. Упакассинче пĕр Элкер Упа-утаман ӳссе тĕрекленнĕ пулсан, Савккара та, вăрман шăтăкĕнче, тепĕр Упа-хăраман хăйĕн сассине панă. Çамрăкки ваттин хăвачĕ патнелле туртăннă, ватти çамрăккине хăйĕн хул хушшине хупнă. Çапла 1937 çулта çуралнă Николай Александрович Петровский Аслă поэзин тертлĕ тĕнчине кĕнĕ, Микулай Теветкел хушма ятпа вулакан чун-чĕрине тарăннăн вырнаçнă.

Хăй вăхăтĕнче Çемен Элкерĕн пуçĕ сийĕн хура пĕлĕтсем явăннă пекех, Микулай Теветкелĕн калпакне те вĕсем пуç тӳпекинчен шăлса ывăтас пек вĕçсе иртнĕ. Тертлă пурнăç вăрман уписен урисене те нуша сăнчăрĕпе явакланă. Нуша тыткăнĕнчи чăтлăхран уççалла тухмашкăн çăмăл пулман. Çапах та вăрман шавĕпе хастарланнă хресчен ачи Микулай упаллах çĕмĕрттернĕ. Çичĕ çул вĕреннĕ хыççăн колхоз лашисене пăхнă. Çавăн чухнех вăл, шутсăр нумай пĕлесшĕн çунаканскер, Илем уйĕнче кĕçенсе чупакан Пегас урхамаха хăйĕн ăйăрĕсемпе танлаштарма ăс çитернĕ, вĕри ăшран капланса тухакан сăввисене пир кутамккана чиксе, çамрăк хура тихипе Парнас тăвĕ патнелле тăсăлакан вăрăм та чăнкă çул çине ĕрĕхтерсе тухнă: ĕмĕчĕпе те, чăнлăхĕпе те.

Колхоз «пегасĕсем» те илĕртӳллĕ те уншăн, анчах çамрăк

кĕтӳçĕн кĕсйи шăтăк пулнă, ăна сапламашкăн ăслай шырама тивнĕ. Микулай вара вăрмантан тухса Атăл çыранне чуптарса çитет. Сĕнтĕрвăрринчи профтехшкулта икĕ çул хушши сĕтел-пукан тăвакансен ăсталăхне вĕренсе Йĕпреçе тавраăнать. Поселокри сĕтел-пукан фабрикинче самаях маçтăрланать.

Поэзи Музи-Илемпийĕпе пĕрлех ăна чечекленсе чун туртмăш сăнарĕ сапалакан тепĕр Муза çавăрса илет. Шупашкарти ӳнер училищинче Микулай, унăн вăрттăнлăхне чăтаймасăр, парăнать. Платник те, маляр та, художник та ĕнтĕ халĕ Николай Петровский, çав хушăрах – Микулай Теветкел поэт та. Ăна Элкер, Хусанкай, Алка, Шавлы хăйсен шавлă лира кĕрекине чĕнеççĕ, унта тивĕçлĕ вырăн параççĕ. Çав вăхăтрах хăйĕн те татах та ăстарах çырас, малалла вĕренес кăмăлтуйăмĕ хĕрсе пырать. Мускаври А.М.Горький ячĕллĕ литинститут çумĕнчи Литература аслă курсĕнчен вăл татах та ытларах ăсланса, тавракурăмне тĕнче чиккипе çавăрса таврăнать Шупашкара...

Чăваш поэзине çĕнĕлле вăратнă çулăмлă чĕлхеçĕ пĕрмай çырать, классиксене чăвашла никамран ăстарах, вулакан чăвашла ăнланмалларах чĕлхепе куçарать. Шупашкарта та, Мускавра та нумай пичетленет, чаплă кĕнекесем кăларать, пьесисене театрта ларттарать. Кушлавăш тăрăхĕнчи вăрман пекех шавлать. Ĕнтĕ вăл халĕ Элкер-упа хыççăн хăй Упа-утаман, хăйне тапăнакан, чăваш поэзине чухăнлатакан путсĕрсене канăç паман-аптраман.

Ăс кĕрсе çитнĕ, вăраннă, литературăра хăйĕн вырăнне тупнă, Парнас тăвĕ çинче поэзи туррисемпе шавласа ларакан чăнчăн чăваш поэчĕ халĕ вăл – Микулай Теветкел. Элкер унта ăна вăйлă пултарулăхĕшĕн савăнса, çырă çӳçлĕ ăслă пуçĕнчен хуллен шăлса хавхалантарать.

Йĕпреç тăрăхĕнче те, Шупашкарта та манăн талантлă Савкка ачипе сахал мар тĕл пулма, хĕрсе калаçма тӳр килнĕшĕн эпĕ кăмăллă. Унра ытти хăш-пĕринчен урăхларах, тиркевлĕрех,

сăнарлăрах, хăюллăрах сасă пурри палăрать. Хăй пăхнă колхоз лашисем пекех ырми-канми ĕçлет вăл поэзипе искусствăн анлă уйĕнче, мăн эртелĕнче.

Эпĕ «Элкер кĕнекине» кăларма хатĕрленни çинчен илтсен вăл питĕ хавасланчĕ, май килнĕ таран мана пулăшма сăмахсăрах килĕшрĕ, хăйĕн хайлавĕсемпе усă курма сĕнчĕ. Çакăнта пичетленекен хайлавĕсенче – унăн çамрăклăх хĕрĕвĕ те, паянхи иксĕлми сăнарлăх хăвачĕ те уççăн палăрать.

ЙĔПРЕÇ ЮМАНĔ

1957-мĕш çул, авăн уйăхĕ, Йĕпреç... Çанталăк кĕр енне сулăннă пулин те, хĕвел хĕрĕвĕ чакман-ха: çуллахи пек уяр кунсем тăраççĕ. Ялсенчен тырă тиенĕ тулли машинăсем кĕрлеттерсе килеççĕ, хатĕрлев пунктне çĕнĕ тырă пушатаççĕ. Пур çĕрте те кĕркунне хуçаланать. Сад ĕçĕпе юп курса пурăнакансем те кăмăллă: хĕп-хĕрлĕ панулмисем улмуççи турачĕсене çĕре çитиех уса-уса антарнă. Пысăк панулмисем хутранситрен, хăйсен йывăрăшне чăтаймасăр, çĕр çине пат! та пат! татăла-татăла анаççĕ... Çакăн пек сăнсемпе тулса тăрать çав манăçми кун. Эпир, Йĕпреç райхаçачĕ çумĕнчи литпĕрлешӳ членĕсем, редакци пӳлĕмĕнче ларатпăр. Хĕрсех тавлашу пырать. Çамрăк авторсем пĕр-пĕрин сăввикалавĕпе паллашаççĕ. Çитменлĕхсем тупса, вĕсен сăлтавĕсене шыраççĕ. Кунтах тăлпан пӳ-силлĕ йӳрĕк çын – Василий Иванович Андреев-Хурамал редакцие пухăннă çынсемпе каласать. Вăлах литература пĕрлешĕвне ертсе пыратчĕ. Поэзие питĕ юрататчĕ вăл: кам та пулин сăвă е калав çырнине пĕлсен, çак ĕçе малалла аталантарса пыма ырă сĕнӳ-канаш пама тăрăшатчĕ. Хăйĕн ывăлĕ те, Василий Волгин, тăван поэзире сасă панă-çке-ха. Анчах сарăмсăр чире пула вăхăтсăр çĕре

кĕнĕ. Хам эпĕ Липовкăри çичĕ çул вĕренмелли шкултах, виççĕмĕш класран пуçласах, çырма пикеннĕччĕ. Астăватăп-ха, пĕрремĕш сăвва çыртăм та учительницăна кăтартрăм. «Çуркунне» ятлăччĕ пулас вăл. Малтанхи сăвăсем яланах çутçанталăк вăхăчĕпе çыхăнса тăраççĕ: çуркунне, çулла, кĕркунне, хĕлле... Вăл халĕ те çапларах. Ӳкерме те юрататтăм эпĕ: хуткăранташ алран каймастчĕ. Юрĕ, ӳкересси пирки каярах калăпха, халĕ çав пĕрремĕш сăвă пирки асăнса хăварам. Сăвва учительница вуласа тухрĕ те, нимĕн чĕнмесĕр, класс журналĕ хушшине чиксе хучĕ. Эпĕ ун пирки ыйтма вăтантăм. Темиçе кунтан шкулта тухса тăракан стена хаçатĕнче курах кайрăм хамăн сăвва. «Кам çырнă?» та «Кам çырнă?» тесе ыйтаççĕ хамăртан аслăрах классенче вĕренекенсем. Ахăртнех, автор адресне шыраса тупрĕç пулас, пирĕн пата, виççĕмĕш класа кĕркелесе тухаççĕ те, ытахальтен тенĕ пек, ман енне пăхапăха илеççĕ. Унтан, нимĕн ыйтмасăр, туха-туха каяççĕ. Акă, пĕр çӳллĕ кăвак куçлă ача ман пата пычĕ те: «Эсĕ çырнă-и вăл сăвва?» – тесе ыйтрĕ. Эпĕ нимĕн те чĕнмерĕм. Каярахпа паллашса кайрăмăр унпа. Валентин Алексеев пулчĕ вăл. Халĕ унăн юррисене час-часах радиопа итлеме пулать. Хăй вăл музыка шкулĕнче вĕрентет... Пуçламăш классенче вĕрентекен учительница ман çинчен мĕн каланине те астăватăп-ха:

– Сăвă çырасси чун хушнинчен килет. Кам пĕлĕ? Тен, унтан Элкер пек поэт та çуралĕ?

Эпĕ хĕрелсех кайрăм. «Пăх-ха ăна, – шухăшлатăп: мĕнле пысăк поэтпа юнашар тăратасшăн вăл мана пĕрремĕш сăвă пеккипе. Уй-уй!» Эпĕ хамăн шухăша уççăнах каларăм ăна. Учительница, Анфиса Ивановна, кулса ячĕ те çапла каласа хучĕ:

– Эпĕ те, çамрăк чухне, манран учительница пулас пулсан, чӳлмекрен хĕвел тухĕ теттĕм...

Элкер... Астăватăп-ха: шкул библиотекинче, ăнсăртран, манăн алла хуплашкасăр кĕнеке лекрĕ. Сăвăлла çырнă. Эпĕ хыпалансах ăна киле илсе кайрăм. Акă вулама пуçларăм:

Кушлавăш текен вуникĕ ял уйĕ
Хура вăрманпа хупланса выртать.
Хĕлле е çулла, такам та туйĕ,
Вăрманлăх кунта хŭтлĕхе тытать.

Ай-ай, мĕнле вăрттăнлăхпа илĕртеççĕ ку йĕркесем! Малалла вулатăп, кĕнекене алран яма май çук. Акă, саккăрмĕш страницăна вĕçне çитичченех вуласа тухрăм та, страница айĕнче, петитпа, «Хĕн-хур айĕнче» тесе пичетленине асăрхарăм. «Хĕнхур айĕнче» ятлă иккен ку поэма. Чакка, Паххом, Тайпи, Алапит... Ай, мĕнле çырма пултарнă-ха авалхи пурнăç çинчен Элкер! Тĕлĕнтерет. Килтисем пĕр-пĕр ĕç хушса ан чăрмантарччăр тесе, аслăк тăррине кушак пек хăпарса кайса вулама пуçларăм. Хуппа витнĕ аслăк тăрри шултăркана та çурăк-çарăкран хĕвел шевли сăрхăнса кĕрет. Вулама меллĕ, никам та кансĕрлемест. Çапла паллашрăм эпĕ Çемен Элкерĕн «Хĕнхур айĕнче» поэмипе. Ах, епле чăн-чăн чăвашла çырма пултарнă! Вăрман çыннисен пурнăçне епле аван сăнласа панă тата! Вуласса вара пĕчĕкрен вулама юрататтăм. Иккĕмĕш класрах «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» романа чăвашла вуласа тухнăччĕ. Ялти избачпа паллашса кайсан, эпĕ унăн шкафĕнчи кĕнекесене кантрапа çыха-çыха вулама илсе килеттĕм киле. Куншăн эпĕ ăна спектакльсем валли декорацисем ŭкерсе параттăм. Вĕсене хальхи куçпа пăхсан, хамăн айванлăха темĕн чухлех тупнă пулăттăм. Çавах та килĕшетчĕç çав декорацисем вылякансене. Юрĕ, ку сăмах майăн тейĕпĕр. Халĕ Йĕпреç хаçачĕн редакци пŭлĕмне куçар. Эпир, 17-20 çулхи çамрăксем, пĕр-пĕрин пултарулăхне тишкерсе, ăнăçлă сăвă-калав суйлаттăмăр, литература страници валли материалсем хатĕрлеттĕмĕр. Пирĕн пата хутран-ситрен «Коммунизм ялавĕн» корреспонденчĕ В.Кузнецов та кĕркелесе тухкалатчĕ (Халĕ вăл радиора ĕçлет). Вăл литпĕрлешŭ членĕсенчен кам ытларах палăрма пултарнине пĕлесшĕн тăрăшатчĕ пулас. Хальхинче те пирĕн пата кĕрсе тухрĕ, сасартăк, канăçсăррăн хускалкаласа илчĕ те,

пăлханчăклăн пăхкаласа, каялла-малалла уткаласа çаврăнчĕ. Унтан çапла пĕлтерчĕ:

– Паян Йĕпреçе Çемен Элкер килет. Вăл, çула май, пирĕн пата та кĕрсе тухма пултарать.

Эпир, савăнса кайнăскерсем, пĕр-пĕрин çине чĕлхесĕр пулнă пек пăхкаласа илтĕмĕр. Элкер... Ара, вăл маншăн хрестоматисенче çеç пурăнакан çын пек туйăнатчĕ. Хăйĕнпе хăçан та пулин куçа-куçăн калаçасси çинчен ĕмĕтре те тытма пултарайман эпĕ. Акă, паян, тĕлĕнмелле ăшă кун, эпĕ хамăрăн чаплă ентешпе – Çемен Элкерпе курнăçатăп! Тĕлĕкре те кун пек пулма пултараймасть! Пурнăçра апла мар иккен.

Василий Андреев-Хурамал пире, Элкере кĕтсе илме, урама чĕнсе кăларчĕ. Пурте кар! тăрса тухатпăр. Элкер килессе тӳсеймесĕр кĕтетпĕр. Вăхăт питĕ йывăррăн шунăн туйăнать.

Чăваш халăх поэчĕ Çемен Элкер (пĕрремĕш ретре, варринче) Йĕпреç районĕнчи çамрăк авторсем хушшинче (1957 çул).

Акă урам кĕтесĕнчен çăмăл машина ярăнса тухрĕ. Пирĕн тĕле çитрĕ те чарăнчĕ. Машина алăкĕ уçăлчĕ те туяллă, çирĕп, тирпейлĕ старик курăнса кайрĕ. Элкер! Вăл, уксахласа, пирĕн пата çул тытрĕ. Унăн урине пĕрремĕш тĕнче вăрçинче амантнă. Кун çинчен эпĕ Элкерĕн «Вутпа çулăм витĕр» роман-хроникинчен пĕлеттĕм. Элкер хăмăр костюмпаччĕ, пиншакĕ çинче депутат значокĕ кăваррăн йăлкăшса илкелетчĕ. Эпир Çемен Васильевича сывлăх сунтăмăр та пурте пĕрле редакци пӳлĕмне кĕрсе кайрăмăр. Çемен Васильевич пире хăйĕн малашнехи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пачĕ, литература ĕçĕ йывăр та кăткăс пулни çинчен ăнлантарчĕ. Такам такăрлатса панă çулпа утмасть çыракан çын – çĕнĕ, хăй тупнă çулпа утмалла вăл хăйĕн пултарулăхĕпе ăсталăхĕнче. Ку сăмахсем аса кĕрсе юлчĕç. Калаçу нумаях тăсăлчĕ. Ăшшăн сăмахлать пирĕнпе Элкер. Тути хĕрринче çемçе кулă пытанса тăрать, хăмăр та чĕрĕ куçĕсем çын çине лăпкăн та тĕпчевлĕн пăхаççĕ. Хăй мĕн курнине, асăрханине чун кĕнеки çине çырса хурать тейĕн çав. Эпир, паллах, Çемен Васильевич ывăннине те сисетпĕр. Çавăнпа ăна хамăрăн ĕçĕмĕрсемпе паллаштарса ĕшентерес темерĕмĕр. Ку шухăш пирĕн пуçра та пулман. Кунтах пĕр фтограф чупкаласа çӳрет. Урамра эпир Элкерпе пĕрле сăн ӳкерттертĕмĕр. Асăнмалăх! Тĕлпулу хыççăн Андреев-Хурамал Çемен Васильевича хăй патне илсе кайрĕ. Мана та пĕрле чĕнчĕ вăл. Хаклă хăнапа пĕрле пыма хăюсăрлăх чарса тăратчĕ пулин те, унпа куçакуçăн ларса калаçас кăмăл манăн именчĕк туйăма çĕнтерчĕ-çĕнтерчех. Акă эпир сĕтел хушшинче ларатпăр. В.Андреев-Хурамал мăшăрĕ, Татьяна Егоровна, сĕтел çине апат-çимĕçне хурсах тăрать. Çиесси-мĕнĕ тем мар-ха вăл маншăн çак хаклă самантсенче. Калаçу тĕшши хаклă. Çемен Васильевич ман çине тинкерӳллĕн пăха-пăха илет. Эпĕ ăна хамăн сăвăсене бандерольпе ярса парса паллаштарас шухăша пĕлтеретĕп. Нумай чăрмантарса ларас мар тесе, эпĕ хаклă хăнапа ал тытса уйрăлтăм та каçхи пуйăспа хамăр яла таврăнтăм. Чĕрере ăнланмалла мар тунсăх. Ун чухне эпĕ профтехшкултан вĕренсе

тухса пĕр вăхăт Йĕпреçри сĕтел-пукан фабрикинче, кайран леспромхозра ĕçлерĕм. Анчах ман ĕмĕт хăй çулнех йĕрлетчĕ. Эпĕ Шупашкарти художество училищине вĕренме кĕме хатĕрленеттĕм. Акварельпе пейзажсем, натюрмортсем ӳкереттĕм. Ун чухне изостудисем пысăк хуласенче çеç ĕçлетчĕç. Ял çамрăкĕсем, искусство керменне туртăнакансем, вĕсем çинчен тĕлленмен те. Кайран ку тĕллев пурнăçа кĕчĕ. Юрĕ, эпĕ хамăн асаилӳ йĕрĕнчен кăшт пăрăнтăм пулас. Ялтан эпĕ Çемен Васильевич патне хам сăвăсемпе поэмăна (поэма та пурччĕ манăн) бандерольпе ярса патăм, кун хыççăн В.Андреев-Хурамал акă мĕн каласа пачĕ мана Элкерпе тĕл пулни çинчен:

– Çемен Васильевич кăмăлне кайнă эсĕ, – терĕ вăл.

Кĕçех Çемен Васильевичран манăн бандероль каялла персе çитрĕ. Уçатăп, сăвăсем хушшинче çыру та пур. Тимлесе пăхса тухнă манăн алçырусене Çемен Васильевич, нумай кăтартусем панă. Чĕлхепе тĕрĕс те тирпейлĕ усă курмаллине ăнлантараççĕ унăн кăтартăвĕсем. Каярахпа, хам Шупашкара килсен, Çемен Васильевичпа хутран-ситрен тĕл пулаттăмăр та, пĕр-пĕринпе калаçса, Ленинград урамĕпе каялла-малалла утаттăмăр. Пĕринче, калаçу май, эпĕ ăна хамăн вăхăтри çамрăксен поэзийĕ хăйевĕрлĕхĕпе уйрăлса тăни çинчен, ăраснах пулни çинчен каларăм.

– Тĕрĕс, – манпа килĕшсе пуçне сулчĕ вăл. – Вăхăт çĕнĕ сăвăсене суйласа илет.

Поэт вăхăт таппине чунпа илтнине туйрăм эпĕ. Çыравçăсем çурхи акана тухнă пекех туйăнать мана тăван литература уйĕнче. Пĕри çиелтен шăйăрттарса çеç сухаласа утать, хевти çитмест. Теприн тарăн касăсем çеç юлаççĕ. Тăван литература анинче Элкер сухаласа хăварнă пултарулăх çĕрĕ тарăн касăллă. Çемен Васильевич Элкер акса хăварнă çырулăх хирĕнче ăсхакăл тырри кашни ăрушăнах тухăçлăн çитĕнет. Вулакансемшĕн аслă поэт пултарулăхĕ яланах чун çăкăрĕ пулса тăрать.

1984 çул.

ÇЕМЕН ЭЛКЕР ТАТА ÇЕÇПĔЛ МИШШИ

«Хыпар» хаçатăн 2006 çулхи авăн уйăхĕн 22-мĕш, юпа уйăхĕн 26-мĕш кунĕсенче тухнă номерĕсенче «Çемен Элкер тата Çеçпĕл Мишши» ятлă тĕпчевлĕ статьясем пичетлесе кăларчĕ Микулай Теветкел.

Иртнĕ ĕмĕрте те, халĕ те – темиçе теçетке çул ĕнтĕ! – Çеçпĕл Мишши çинчен калаçатпăр. Вĕçсĕр-хĕрсĕр калаçу, пухусем, тĕл пулусем ирттеретпĕр. Унăн шухăш-кăмăлне мĕн тĕрлĕ вутлă сăмахсемпе танлаштаратпăр тата! «Вут чĕре», «кăвар чĕре», «çулăмлă сăвăç», «шĕл-кăварлă сăвăсен авторĕ», «вут-хĕм тăкакан вут чĕреллĕ Çеçпĕл», «кăра сăвăç» тата ыттисем те. Пушарник чирлĕ мар-ши кунта? – тесе, шалт! аптраса ӳкетĕн тепĕр чухне. Ан тив, Çеçпĕл Мишши пултарулăхĕ хавхалантартăр, çунатлантартăр чăваш чĕлхин вăрттăнлăхне пĕлмесĕрех «сăвă калăплакан» авторсене. Çапах та... Революци хыççăн тăван литературăна ăшă хум илсе килнĕ çынсенчен пĕртен-пĕр Çеçпĕл Мишши çеç пулман-çке! Акă, сăмахран, хăйĕн пултарулăхĕпе тата хăйне евĕрлĕхĕпе Çеçпĕл Мишширен пачах та аякра тăман Çемен Элкере аса илер-ха:

Пирĕн ăшра вут çунать,
çулăм тухни курăнмасть.

Пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçлансан Семен Васильевич Элкере патша çарне илеççĕ. Çамрăк чăваш салтакĕ пĕр çапăçура тыткăна лекет. Нимĕçсен «дум-дум» тесе ят панă пуля (лексенех çурăлса каяканскер) çамрăк салтака йывăр амантать. Çемен Элкер асапланать. Вăрçăн хăрушă сăн-сăпатне сăвăç «Карпатра» (1917) сăвăра шухăш ӳкерчĕкĕсем урлă сăнласа парать. Çакнашкал йывăр вăхăт ӳкерчĕкне сăнласа пама витĕмлĕ йĕркесем шырать.

Ку вăхăтăн юнлă тапхăрне Çеçпĕл Мишши «Час» (1916) сăввинче сăнласа кăтартать, патша вăрçине питлет, шухăш-кăмăлне çĕнетет.

Çеçпĕл Мишши танмарлăхпа килĕшмест. Вăл, çамрăк романтик, темĕнле çутă ĕненӳ шырать, кăмăлне тивĕçтерет:

Халăх хум пек çĕкленет,
Тăвăллăн, хаяррăн:
Таса мар патша йăхне
Час юхтарса ярĕ.

Ку йĕркесем, паллах, революци сывлăшĕпе çуралнă. Ĕненӳ, киленӳллĕ ӳкерчĕк çамрăк поэта çăтмах тĕнчинех илсе кĕрет. Анчах Çемен Элкер шухăш-кăмăлне – аманнă çамрăк салтака – этемлĕхре час-часах вутланса иртекен вăрçă хăрушлăхĕ мĕн тери килпетсĕр пулни шутлаттарать.

Хăйĕн анлă хайлавне Элкер 1918 çулта çырнă. Семен Васильевич тĕп шухăшне пĕтĕмлетсе калама тăрăшать.

Вăл этемлĕх хăйĕн пурнăçне хăех йĕркелесе ярассине шанать. Юнлă çапăçусенче пулнă чăваш салтакĕ пĕр-пĕрин хушшинчи вăрçă мĕнешкел инкеклĕ ĕçсем патне илсе çитерессине те лайăх ăнланать.

Философ куçĕпе пăхса çакнашкал шухăш пĕтĕмлетĕвне тупма пултарнă 24 çулти çамрăк поэт. Ӳсĕмĕ чăнласах нумай пĕлтерĕшлĕ. Паянхи саманара сиксе тухакан вăрçăсен (вĕсене час-часах тĕрлĕ хĕç-пăшалпа хăратса тăракан çĕршывсем пуçласçĕ) тискерлĕхĕ мĕнешкел тип-шар илсе килет пĕчĕк çĕршывсене. Çĕр тупри тĕлĕшпе нумай çĕршыв тан мар. Нумайăшĕн патшалăх бюджечĕ хĕсĕк. Çавна пула хĕсĕнсе, йӳнеçтерсе пурăнаççĕ. Анчах ăнăçсăр политиксем вĕскĕртсе тăнипе (пысăк влаç хӳттипе мăн кăмăлланса тейĕпĕр) çакнашкал çĕршывсем çине тĕрлĕ йышши ракетăсем, бомбăсем шăхăрса ӳкме тытăнсан кам ытларах инкек тӳсет? Хура халăх.

Çĕр чĕлхеллĕ халăх та
Çут тĕнчере тан пултăр,
Вĕсен пуçне никам та

«Пĕттĕр! – тесе ан пустăр», – тесе калас килет Семен Васильевичпа пĕрле. Çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче хут пĕлмен

чăвашлăхра çакнашкал чăнлăха витĕмлĕ уçса панă пулас Чăваш халăх поэтне Семен Элкере чăннипех те пысăк тавра курăмлă çыравçă тесе калас килет.

Çеçпĕл Мишши те, Семен Элкер те хăйсен пултарулăхне тăван çырулăхра пĕр вăхăтра никĕсленĕ. Анчах икĕ поэт тавçăрулăхĕ, ăсталăхĕ пĕрешкел мар.

Семен Элкер сăвă кĕвĕлĕхне час-часах халăх сăмахлăхĕпе шырать пулсан, Çеçпĕл Мишши ытларах çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче вырăс поэзийĕн çĕнĕ корифейĕсен – тĕрлĕ футуристсен, акмеистсен, символистсен – юхăмĕпе паллашать. Çеçпĕл Мишшин малтанхи çул юпписем – Надсон тата Горький. Кун пирки Руф Ишутов та хăйĕн темиçе çул каялла пичетленнĕ статйисенче тĕрĕс палăртать.

Семен Элкер хайлавĕсенче ытларах хресчен психологийĕ пуç пулса тăрать. Çĕр ĕçĕ ăна ытларах тăван тавралăх илемĕпе пурăнма хистет. Çут тĕнчене килнĕ çыннăн хăйне сума суса тата ыттисене те хиселесе пурăнмалла, тăнăçлă çĕр çинче пĕр-пĕринпе килĕшӳ шырамалла. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна аслă Пушкин пехилĕпе хавхаланса çухалми йĕр хăварнă Кольцов тата Ив.Никитин сăвви-юрри çав тери хавхалантарать. Ку ĕç, паллах, аслă Пушкин хайлавĕсемпе паллашмасăр пулман. Кольцов та, Иван Никитин та – ял халăхĕн терт-нушипе сасă тупнă сăвăçсем. Хăйĕн анлă тавракурăмĕпе тĕнче культурине тĕлĕнмелле паха ĕçсем хăварнă улăп пек Пушкин çырулăхĕ те çамрăк Элкере чăннипех ӳсĕмлĕ çул çине тухма пулăшнă теме пулать. Унăн хăш-пĕр сăввине Элкер чăвашла та куçарать. Литература суя илем шыракан йыш пултаруллисене час-часах таптама тăрăшнă. Акă мĕнле сăвăласа çырнă Ревтрибунал председателĕ пулнă Çеçпĕл Мишши-Кузьмин:

Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вут-кăварĕ,
Çут тĕнче çуталчĕ, иртрĕ авалхи.
Пусмăрĕ тĕп пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ,
Тин ирĕке тухрĕ тĕп чăваш чĕлхи.

«Ирĕке тухнă тĕп чăваш чĕлхи» малашĕ мĕнле пулнă-ха?

Çакнашкал сăмах çаврăмĕ те пур: «Çуклăхпа çуралнă революци çуклăх çеç тупать». Истори страницисене уçкаласа пăхсан çак сăмах çаврăмĕ çав тери тĕрĕс иккенне куратпăр.

Çемен Элкер те çак шухăш патне çитсе тухать. Пĕрремĕш тĕнче вăрçинчен çунса тухнă чăваш салтакĕ хăйĕн шухăшкăмăлне тăван çырулăх урлă каласа пама ĕмĕтленет, вăрçăпа тăнăç пурнăç икĕ енлĕхĕ çинчен шухăшлама пуçлать. Çеçпĕл Мишши «çут тĕнче çуталĕ, иртрĕ авалхи» тет пулсан, Çемен Элкершĕн «авалхи» вăл – чăвашăн ас тăвăмĕ, тĕрлĕ йывăр ĕмĕрсем витĕр утса тухнă çул-йĕрĕ.

Çемен Элкер те самана тытăмĕ çинчен шухăшлать: акă 1921 çулта çырнă «Çынпа хăйăр» сăвă йĕркисем:

Хăйăр пĕрчине уйăрса пăхсан, –
пĕчĕкçĕ пĕрчĕ, пĕччен вăл ним мар.
Çав пĕрчĕсемех купипе выртсан,
Вĕсенĕн йышне май çук шутлама.
Хирте çил-тăвăл тухса çавăрсан,
Хăйăр хирĕнче йывăр ун пек чух:
Пĕчĕк пĕрчĕсем вĕçме тытăнсан
Куçа уçма та, сывлама та çук!..
Çил-тăвăл иртсе сывлăш лăплансан,
Çав хăйăр хирех йăлтах урăхла:
Пĕрчĕсем – çĕрте, çанталăк – аван;
Хăйăр хирĕпех утса пымалла.
Çынпа хăйăрлăх хушшинче пĕр пеклĕхсем пур:
Пĕр çын вăйлă мар, халăх кӳл тăвать!
Пăлхав-вăрçă чух – ăна пăхса кур:
Халăх хĕвĕшет, – ватать, çавăрать.
Лăплантăр халăх – пурнăç тăп-тăпах:
Кашни уйрăм çын, хăй пек шăпах.

Акă вăл 27 çула çитнĕ çамрăк Элкер философийĕ! Вăрçине те, пăлхаварне те курнă сăвăç тăван литература анинче тарăн суха тума тытăнать.

Хăйĕн «Пуласси» сăввинче Çеçпĕл Мишши – Революци Романтикĕ – малтанлăха çапла савăнса çырать:

Пусмăрĕ тĕп пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ,
Тин ирĕке тухрĕ тĕп чăваш чĕлхи.

Семен Элкер те «Çĕршыв чĕрĕлет» сăввинче (1925) хăйне евĕрлĕ сăнарлă шухăш шырать, патша империйĕ ишĕлсе аннă хыççăн чăваш малашлăхĕ ирĕклĕн çуталса каяссине шанать:

Çеçпĕл Мишши те, Семен Элкер те хăйсен сăввисене малашлăх çутипе хавхаланса çырнă тесе калама пулать. Анчах «ирĕке тухнă тĕп чăваш чĕлхи» халăх ăсчахĕсен шухăшкăмăлне Сталин саманинче ирĕклĕн уçса пама «ирĕклĕ» пулнăши? Ку «ирĕк» читлĕхе хупса хунă кайăк «ирĕкĕ» пулнă тесен те йăнăш мар. Çак тапхăра вăрçă умĕн çуралнă пирĕн ӳсĕм лайăх ас тăвать. Семен Элкер те «вĕт-шак йывăççемшĕн хĕвел çутатать» тесе хĕпĕртет. «Вĕт-шак йывăççем» патша культурине йĕркелесе-тытса пыракансен ушкăнĕ шутласа кăларнă сăмах çаврăмĕ теме те пулать. Çак ушкăншăн чăваш хапăхĕ «вак халăхсен» шутне çеç кĕнĕ. Унăн аваллăхне те, историне те шута илмен çавнашкал мăн кăмăллă ушкăн. «Совет империйĕнче» вара Китай халăхне те «вырăс халăхĕн кĕçĕн шăллĕ» теме тытăнчĕç. Кулăшла! Семен Васильевич та «Монархи йывăçĕ» каярахпа пĕтĕм халăхсен çул пуçĕ тепĕр хут пăхса çитĕнтернĕ «совет империйĕн» армак-чармак тимĕр туратлă йывăçĕ пулса тăрассине сисмĕше перет.

Хальхи куçпа пăхсан Семен Элкерĕн сăввине «Монархи йывăçĕ» тесен те йăнăш мар.

Çапах та революци хыççăн чăваш культури, унăн çырулăхĕ, театрĕ, юрри-кĕвви анлăн аталанни çинчен çăвар хупса ларма ниепле те май çук. Çырулăхра хăш-пĕр чăваш интеллигенчĕ Чеховăн «Хупăлчари Этем» калавĕнчи Беликов пек пурне те сăнаса, элек-челек пуçтарса çӳренĕ пулин те арăслан сассиллĕ улăпĕсем те йышлă пулнă. Чее те ăслă, шиксĕр те

пултаруллă ăсчахсен хушшинче И.Максимов-Кошкинский, Ф.Павлов, Н.Шупуççынни, Ухсай Яккăвĕ, Петĕр Хусанкай, Митта Ваçлейĕ, Çемен Элкер, Александр Алка, Александр Артемьев кĕлеткисем паян кунччен те ĕмĕлкеленсе тăраççĕ пирĕн ас тăвăмра. Вĕсен ретне ытти ăстасен нумай-нумай хушаматне, çурма ятне çырса хума пулать. Хальлĕхе манăн сăмах Çеçпĕл Мишшипе Çемен Элкерĕн ыттисенчен иртерех çĕкленнĕ çырулăхĕ епле аталанни çинчен пырать. Ку çеç те мар. Çӳлерех асăннă аслă ăру çыннисем Çемен Элкере хытă хисепленĕ, унăн пултарулăхне пысăк хак панă.

* * *

Вулакансем умĕнчи иккĕмĕш тĕл пулăвне халăх поэчĕ Теветкел Георгий Ефимов сăмахĕсене умĕн калани вырăнне хурса пуçлать.

«Чăваш совет литературинче мухтавлă Çеçпĕлĕмĕрпе пĕр вăхăтрах ĕçлеме пуçланă Чăваш халăх поэчĕ, хисеплĕ Семен Васильевич Элкер, чирлĕ пулин те, хăйĕн сăвви-юррине, поэмисемпе халапĕсене, повеçĕсемпе калавĕсене çĕнĕрен пăхса тухма, çырнисен пуххин 3-мĕш томне кăларма ĕлкĕрчĕ... Кунта манăн «Хĕн-хур айĕнче» эпика поэми пирки çеç сăмах каласа хăварас килет. Элкер ăна çĕнетнĕ, хитрелетнĕ... Анчах та мĕн ачаран вуласа çитĕннĕ, хăнăхнă япаласене темле ялан пăстарас, улăштарттарас килмест».

Г.Ефимов.

«Ялав» журнал, 4 №, 1963.

Хальхи вăхăтра (ĕлĕкхиллех) Çеçпĕл Мишши пултарулăхне чăтма çук пысăк хисепре тытакансен ушкăнĕ унăн чăн-чăн ăсталăхне тата сăввисенчи тавра курăмне тĕплĕн тишкерсе тухса тивĕçлĕ хак памасăрах унран тăван çырулăхăн ялавĕ туса хуни – тем тесен те! – сăпайсăртарах. Çеçпĕл Мишшин чăваш литературине аталантарма хавхалантарнă тĕслĕхсем

сахал мар. Апла пулин те пĕр ят тавра пĕрмаях ташласа çаврăнни тата унăн трагедине тĕплĕн уçса паманни – пирĕн тĕлсĕрлĕх тата йăлăхтарса çитернĕ пĕр пеклĕх.

Хăш-пĕр чухне çеçпĕлçĕсен курăнман ушкăнĕ те пур пек туйăнать. Хăш-пĕри хăйĕн пĕр-пĕр ăслăлăх хуравĕнче Çеçпĕл Мишшине чи малтан асăнса илет, кайран – ыттисене. Анчах вăл асăннă ятсен хушшинче Иван Яковлев та, Константин Иванов та çук. Юри «манса хăварать» пулас. Тĕлĕнмелле!

Эпĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче Первомайски районне кĕрекен Çăкалăх ялĕнчи (халĕ Йĕпреç районĕнче) шкулта вĕренеттĕм.

Чăваш чĕлхипе Любовь Гавриловна Викторова вĕрентетчĕ. Аслă Арапуçĕнчен. Ăна çак ялтан тухнă Чăваш халăх поэчĕ В.Давыдов-Анатри те лайăх пĕлет иккен. Темиçе çул каялла халăх поэчĕ вăл юрласа панă юрăсене çырса илсе «Хыпар» хаçатра пичетлесе кăларнăччĕ. Любовь Гавриловнăн ашшĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулне пĕтернĕ.Юлашки çулĕсене вăл упăшкипе пĕрле ывăлĕсен патĕнче пурăнса ирттернĕ. Унтах çĕре кĕнĕ. Чăваш чĕлхин вăрттăнлăхĕсене тĕплĕн вĕренме хистенĕшĕн паянхи кунченех хисеплесе пурăнатăп ăна. Элкер, Алка, Ивник, Çеçпĕл, Хусанкай сăввисене пăхмасăр калама вĕренеттĕмĕр. Çак çулсенче Çеçпĕл Мишши çырнă «Иртнĕ самана» сăвва пăхмасăр калаттăмăр. Сталин самани. Вăрçă хыççăнхи ӳсĕм. Шукăль тумпа çӳрекен ача-пăча çукпа пĕрех. Анчах «Иртнĕ самана» сăвва вуланă чухне çав самана пĕрре те иртсе кайман пек туйса çӳреттĕм. Ку сăвва сăвăç 1919 çулта «Канаш» хаçатра пичетленĕ.

Мĕскĕн юлташăм, хăта,
Сухапуç çынни,
Иртсе кайнă вăхăта
Ас тăватăн-и?
Старшинапа тиеке
Е пупа курсан,

Хыватăмăр çĕлĕке
Çурă çухрăмран.

Ирĕксĕрех шухăша каяттăм. ара, налук пуçтарса çӳрекенсем те «сехре хăппи» пулсаччĕ мар-и вара?

Килчĕç кантуртан пурмиспа тиек,
Килчĕç тиесе ял тулли инкек.
Иккĕш те вĕсем шыçмак та сăнсăр,

Пичĕ-куçĕсем калăпсăр мăнтăр, – тет «Хĕн-хур айĕнче» поэмăра Çемен Элкер. Сталин вăхăтĕнче çакнашкал сăнсене курман-и вара эпир? Ял канаш, колхоз председателĕсем е вырăнти парти секретарĕ çул çинче ăнсăртран тĕл пулсан «сухапуç сынни» хăйне епле тыткалани çинчен каласа пама кирлĕши? «Пус çумне пус» хушса çемьен пур-çук бюджетне тытма тăрăшакан, фуфайкине çирен яман колхозник час-часах çухалса каятчĕ вырăнти пуçлăхсен умĕнче. Вĕсемпе авăнса, пуç тайса, çемçе чĕлхепе юравлăн каласа тăрăшатчĕ. Колхоз лашине пĕр-пĕр ĕç тума кӳлес тесен «аншарлисĕр» е лавкка эрехĕсĕр ан та пыр çатăлти бригадир патне. Иртнĕ саманари йăла-йĕрке хамăр пурăнакан вăхăта куçса килнĕ пекех туйăнатчĕ. Çеçпĕл Мишши те революцичченхи чăваш ялĕсенче куланай ыйтса çӳрекенсем çинчен çырнă-ха.

Аса ил-ха: пĕр çулне,
Шăнкăртаттарса,
Килчĕ-кĕчĕ сан килне
Кантур йăтăнса.
Куланайшăн ĕнӳне
Кайрĕ вăл тытса, –
Ылханайрăн вĕсене
Питĕ хурланса.

Ку ӳкерчĕк Сталин саманинче те улшăнманччĕ. Налук тӳлемесен – кĕтсех-тăр! – ĕнӳне сутса пулин те парăмна татма

лекет. Сăввин юлашки пĕтĕмлетӳллĕ йĕркинче Çеçпĕл Мишши çапла хуравласа çырлахать:

Ватă аслаçу-пӳртне
Йăвантарса яр,
Ĕмĕрлĕх никĕс çине
Çĕнĕ çурт лартар!

Çакăн пек чĕнӳ, лозунг сăран пиншаклă, маузер çакнă комиссарсене çав тери кирлĕ пулнă. Çĕнĕ чăваш, çĕнĕ идеологи, çĕнĕ поэзи!.. Анчах çакна шута илер: «Асатте пӳрчĕсене» йăвантарса янă хыççăн Раççей мĕн тери юхăнса ишĕлсе кайнă ял хуçалăхĕпе тапаланса выртни çинчен час-часах сăмах хускатаççĕ. Хăрушă вăхăтăн ăншăрчĕ Çеçпĕл Мишшине те хуçлатса ӳкермен-и-ха?

Тирне сӳнĕ çара анчăкла
Ют çатан хушшинче çыртăк шырăп,
Пĕр йĕпе-сапара кăнса выртăп,

Шупашкартан выçса йынăшса, – тет сăвăç «Паянтан» хӳхлевĕнче (1922). Пĕрремĕш тĕнче вăрçи, «асатте пӳрчĕсене йăвантарса янă революци» тата граждан вăрçи мĕн чухлĕ кил-çурта арçын аллисĕр хăварни çинчен калама та кирлĕ мар. «Мулçăсене» – экономика кăткăслăхне тата укçа-тенкĕ ĕçне тĕплĕн пĕлекен банк хуçисене, большевиксене революци тума укçатенкĕ парса пулăшнă тĕрлĕ Морозовсене (фабрикантсене) хăваласа янă хыççăн «кухарка та патшалăх ĕçне тума пултарать» текен шухăшпа хăлаçланнă çул пуçсем юхăнчăк Раççейре хăйсем те аптраса ӳкнĕ курăнать. Выçлăх, тиф, юхăнчăк çĕршыв «Çĕнĕ Экономика Политики» çулĕпе утма хушать канăççăр çул пуçсене. Унсăрăн –

Пур чухăнсен тĕнчипе
Вăл çурта тăвар?
Йăлтăр хĕвел çуттипе

Тăррине тăрлар! – тесе ĕнентерме питĕ йывăр пулса тухĕччĕ пролетари революцине пĕтĕм тĕнчипе ялкăштарма ĕмĕтленнĕ çул пуçсене. Ку идея Çеçпĕл Мишшишĕн çăлăнăç çути пекех илĕртӳллĕ: шанать, ĕненет вăл. Вăхăт çитĕ, вăхăт пулĕ:

Çĕн йĕрке килсен,
Юхмĕ, юхмĕ тек куççлĕ
Пурнăç хĕсĕкрен!

«Çĕнĕ пурнăç хĕвелĕ çунĕ çутатса!» – тесе хăйĕн шухăшне çирĕплетсе калать пулин те – каярахпа, темиçе çултан – çĕнĕ идеологи хуралçисене килĕшмен тепĕр хăватлă поэт элек-челек мишенĕ пулса тăрать. Ку вăл – Митта Ваçлейĕ. Элекпе тата кĕвĕçӳпе сĕлекелесе Сталин тĕрмине лартаççĕ ăна. Акă «Тайăр» ятлă поэмăн хăш-пĕр йĕркисем:

Ураран ӳкерен шарталма
Кун каçа муталарĕ пире.
Ни ĕçпе, ни вутпа ăшăнма,
Тумтирри тумтир мар-çке çире!..

Тĕрĕссипе каласан, «Тайăр» поэма элегиллĕ туртăмпа çырнă сăвăсенчен йĕркеленĕ ярăм теме пулать. Çеçпĕл кĕтнĕ «çĕн йĕрке килсен» (пролеткульт сăвăçисен вăхăчĕ теме пулать ăна) пулас Чăваш халăх поэчĕ Çемен Элкер те асăрхануллă пăхкалама тытăнать. Акă мĕнле çырать вăл хăйĕн 1931 çулта пичетленсе тухнă «Хĕн-хур айĕнче» кĕнекин пĕчĕк ум сăмахне: «Хальхи вăхăтра ĕлĕкхи хĕн-хурлă пурнăç çинчен историллĕ поэмăсем çырса ларни килĕшмест те пек. Мĕнле усă кӳме пултарĕ чăваш литературине хальхи вăхăтра ĕлĕкхи пурнăç çинчен çырса пани?.. Ĕмĕрсем тăршшĕнче пурнăç мĕнле улшăннине пĕлес тесен тата вăл мĕн чухлĕ малалла кайнине курас тесен, иртнипе хальхине илсе пахаламалла».

Ман шутпа, Çемен Элкерĕн çакăн пек сăмах çаврăмĕ па-

янхи тĕрлĕ ăсчахсемшĕн те пĕтĕмлетӳллĕ шухăш пек ялкăшса тăмалла. Шел те, хăш-пĕри çакнашкал чăнлăх патне халĕ те тимĕр шапа хăвăртлăхĕпе çеç шукаласа пырать-ха. Çемен Элкер – шухăшлав поэчĕ. Сăмахран, «Хĕн-хур айĕнче» поэма персонажĕ – пуян та куштан Алапит – чăваш аваллăхне те сума сăвать иккен! Хăйĕн пуян кĕрекине хăна-вĕрле пухсан хайскер ăшă кăмăлпа çĕкленсе каять:

Хайхи талт! сиксе, кĕсле кĕввипе,
Маттур йĕкĕт пек ташша çаптарать.
Сиксе ĕшенсен, сăвăлла юррипе
Каллех кĕреке хушшине ларать.
– Ей-ну, куккаçăм, мĕн-ма шăп ларан?
Юрла-ха пĕрре авал юррине!..
Терĕ Алапит Тĕпек куккăшне...

Семен Васильевич каярахпа хăйĕн поэмине «сăвăласа çырнă повеç» тесе хисеплет. Ман шутпа, «Хĕн-хур айĕнче» хайлава «поэма» тесех хакламалла. Апла пулсан Николай Васильевич Гоголь хăйĕн «Виле чунсем» хайлавне мĕншĕн «поэма» тесе ĕнентернĕ пире?

Паянхи кун пуян чăвашсем сахал мар. Апла тăк – пуян Алапитрен тĕслĕх илсе, чăваш аваллăхне упраса хăварма, чăнчăн ăсталăхпа çыракансен пултарулăхне хаклама вăхăт тупаççех тесе шанас килет.

Сывлăхсăр Çеçпĕл Мишши тăван çырулăхра сахал мар ырă ĕç туса хăварнă. Анчах пĕрремĕш тĕнче вăрçинчен çунса тухнă чăваш салтакĕ Çемен Элкер те юман кĕреш пек çирĕп сывлăхпа çӳремен. Чăваш юррин ытарлă сăмахĕсемпе хамăр майлă çавăрттарса юрласан, юлашки вăхăтра çакнашкал такмаклама вăхăт çитрĕ мар-ши?

Элкер лайăх-и, Çеçпĕл лайăх-и?..
Çеçпĕл лайăх-и, Элкер лайăх-и?..

Мĕншĕн çапла калатăп-ха? Ара, юлашки çулсенче тĕрлĕ ăслăлăх çыннисем çакнашкал çаврăмпа тахçанах юрлама пуçларĕç ĕнтĕ:

Иванов лайăх-и, Çеçпĕл лайăх-и?..
Çеçпĕл лайăх-и, Иванов лайăх-и?..
Унтан,
Хусанкай лайăх-и, Ухсай лайăх-и?

Ухсай лайăх-и, Хусанкай лайăх-и? – тесе юрлама тытăнчĕç. Çăмăл çулпа чупма тытăнтăмăр пулас. шухăшламасăр, тĕрлĕ пулăмсен пĕлтерĕшне шута хумасăр, çамка тарне купăс пек пĕркелемесĕр, çырнă япаласене шĕкĕлчесе пăхмасăр кĕрнекленсе çӳретпĕр. Пĕр çемĕпе юрлама аван. Анчах çав тери йăлăхтарать вăл. Çапах та Çеçпĕл Мишши Ахаха халлласа çырнă хурлăхлă йĕркесене вуласан çамрăклах пуçне хунă çыравçа хĕрхенсе каятăн:

Коммунизмăн хĕрлĕ ялавне
мĕн виличчен çĕре ӳкермен, – иккен вăл.

Раççейре выçлăх çулĕсем шăл шаккама тытăнсан выçăпа 7 миллион çын пĕтнĕ. Çапла вара «коммунизмăн хĕрлĕ ялавне ӳкерменнисен» чыс-хисепĕ те типĕ çулçă пекех вĕлтĕртетсе çухалнă. Пуян Нарспипе чухăн Тайпи ролĕсене тан марлăхпа улăштарса янă вăхăт-режиссер чăнласах та тĕрлĕ курăмлă пьесăсемпе тĕлĕнтерме шутланă пулас. Халĕ те тĕлĕнтерет. Раççей çĕршывĕ – калама çук пысăк арена. Раççей пуян та тулăх, çĕр айĕнчи пурлăхĕ шутсăр нумай. «Пуласси» сăввинче Çеçпĕл Мишши –

Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх йăранĕ
Ирĕкпе çĕнелнĕ пурнăçран тарĕ,
Чĕрере ачашшăн çунĕ, çулăмланĕ

Тантăшлăх, тăванлăх, юрату кăварĕ, – тенĕ пулсан, унран маларах Николай Шелепи (1905-1906) çапларах кĕвĕленĕ хăйĕн «Раççей» сăввине –

Пирĕн Раççей вăрмансенче –
Ах, анчах! –
Шучĕ те çук пурлăх çĕрет –
Эх, тĕнче!
Хура халăх çурчĕ-йĕрĕ –
Ах, анчах!
Хăрăк-марăк тӳнсе тăрать –
Эх, тĕнче!

Шелепи сăмахĕсем халăх хушшинче юрă пек саланни çинчен те хыпарлаççĕ тĕпчевçĕсем. Паянхи кун «чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх йăранĕ» пысăкланса, сăнсăрланса пырать. «Ирĕкпе çĕнелĕ пурăнăçран» – хамăр куратпăр ĕнтĕ! – «тантăшлăх, тăванлăх, юрату кăварĕ» хĕрĕвне илеймесĕрех сӳнсе ларчĕ. Çеçпĕл шанса каланă илемлĕ сăмахсем хăйсен пĕлтерĕшне çухатсах пыраççĕ. Вĕсем «ирĕкпе çĕнелнĕ пурăнăçран» чăнласах тарса çухалнă ĕнтĕ. Хăш-пĕри хăйне хăй «çав тери ăслă шухăш калам-ха» тенĕ пек хавхалантарса Çеçпĕл Мишшине «çĕр çулта пĕрре çуралма пултарнă гени» тесе хак пачĕ. Кунашкал сăмаха эпĕ Иванов Кĕçтук çинчен те, Çемен Элкер çинчен те, Федор Павлов çинчен те калама пултаратăп. Тĕрĕссипе илсен, вĕсен шучĕ те çук. Пылак та тутлăн калаçакансен йышĕ пирĕн ретре пĕчĕк мар. Пылаккăн кулаççĕ, тути-çăварĕ ейĕлсе çеç тăрать. Чăн-чăн пултарăва курмăш пулаççĕ, анчах шакăртмана йĕс шăнкăравпа танлаштарма пĕрре те именмеççĕ вара. Афган вăрçинче çунса кĕлленнĕ танк кӳлепине ӳкерсе пысăк политиксен хӳтлĕхне шыракан пĕр-пĕр художнике çавнашкал пылак чĕлхеллĕ çыравçă «Леонардо да Винчи пек» тесе хаклать пулсан – кĕтсех тăрăр! – хамăрах ютсен кулли пулса тăратпăр эпир. Пукане пек хитре, анчах тавра курăмĕпе картишĕнче кĕтиклетсе çӳрекен чăх мимипе çеç вĕтеленсе калаçакан чиперккесен умĕнче çавнашкал çыравçă пысăк авторитет пек курăнĕ. Курăнтăр! Никам та чармасть ăна. Ку вăл Гоголь Маниловĕ кирек хăш тапхăрта та хăйĕн сăнарне çухатманнине пĕлтерет.

Тапхăр-тапхăр Çеçпĕл палăкĕ умĕнче сăвă калама та чĕнеççĕ. Çуллен пухăнаççĕ унта. халăх сахал. Сывлăша кисретсе сăвă вулакансен йышĕ те йăшрĕ пулас. Çеçпĕл хĕвеле саламлать. Хăш-пĕрне кунашкал сăн килĕшмест. Мана килĕшет! Чула хаваслăх пама пултарнă скульптор чăнласах пултаруллă курăнать. Хушамачĕ – Майраслов. Ирĕсĕрех Роберт Бернс сăввинчи йĕркесем янраса каяççĕ:

Выçса вилес пек поэта
Пĕр татăк çăкăр та паман.
Хăш чух ăмсаннă вăл йытта
Хуçи апат йăтса тухсан.

Сăвви-юрри халь янăрать
Кĕрекере те хупахра.
Хăй палăкра, ав, палăрать,
Мухтавĕ юлчĕ таврара.

Ан тив, вăл çăкăр вырăнне
Халь кăшлама пултартăр чул.
Пĕрех çемçетрĕ çынсене
Çырулăхра вăл тупнă мул.

Çак сăмахсене Çеçпĕл Мишши çинчен те калама пулать. Анчах Семен Васильевич Элкер шăпи урăхларах. Унăн анлă çырулăхĕ анлă тавра курăмлă ăсчахсене кĕтет. Виталий Родионов профессор та Элкер еткерлĕхне тепĕр хут тимлесе тухасса шанас килет. Çемен Элкер те, Çеçпĕл Мишши те – аслă ăру çыннисем. Анчах, паянхи куçпа вулав ирттерсен, Çеçпĕл Мишшин кĕвĕллĕ сăввисенчи шухăш-кăмăл айванлантарса ярать.

Поэт, поэт! Часрах чĕнсем!

Тен, сан чĕлхӳн суя кăварĕ

Мана йывăрлăхра вăй парĕ, – тесе сăвăлать Митта Ваçлейĕ. Çеçпĕл Мишшин вĕçĕ-хĕррисĕр эмоцийĕ, кăварланса

тăракан чĕлхи вĕçĕмсĕр çырлахтарса тăма пултараймасть, паллах. Анчах Çемен Элкере акă мĕнле халал сăввипе хисеплет Митта Ваçлейĕ:

Кас-кас пит хурлăхчĕ мана,
Чĕре наркăмăшпа тулатчĕ.
Аса илеттĕм те сана –
Пăртак лăш кайнă пек пулатчĕ.
Калаттăм: пур-ха, пур этем,
Тĕнче пĕтсех пĕтмен-и, тен...

Айăпсăр тип шар курнă Митта Ваçлейĕ хăйĕн сăввине Çемен Элкерĕн чун-хавалне ăнланса çырнă. Анчах та пулас халăх поэчĕ Г.Ефимов хăйĕн «Хальхи сăнар пысăк ăсталăх ыйтать» статйинче («Ялав», 42 №, 1963) «пĕр вырăс писателĕ: «Мы все вышли из Гоголевской шинели» тесе мăнаçлăн каланă пулсан, эпир ăна кăштах улăштарса: «Эпир те Çеçпĕл шкулĕнче вăй илнĕ», – теме пултаратпăр, – тет. – Çав Çеçпĕл шкулне çирĕплетекенсенчен пĕри вăл вăхăтра Хусанкай пулнă. Ун пирки ним иккĕленмесĕрех калатпăр», – тесе ăнлантарать. Эпĕ, сăмахран, ку шухăшпа ниепле те килĕшме пултараймастăп. Михаил Федоровăн «хăрăк турат пуçтарма каякан Хĕветĕрĕ те», Кĕлпук мучин сăсар çĕлĕкĕ те, Константин Ивановăн уйăх çутипе шалтлатса килекен тимĕр тылли те, Чакка сăхманĕ те, Алкан вут-çулăмпа ĕнсе-çунса Бранденбург хапхи витĕр тухнă шинелĕ те, Хусанкайăн «Зоя» поэминчи

«Тулта шатăртатать декабрь
автоматпа унта-кунта», – текен вăрçă сассиллĕ йĕркисем те пирĕн ӳсĕм пултарулăхне самана сывлăшĕпе аталантарма хавхалантарчĕç. Митта Ваçлейĕн хурлăхлă сăввисем вара идеологсен хура ăш-чиклĕ хуралçисем çинчен асăрхаттарчĕç.

ЧĂВАШ «СФИНКСĔ»

Сфинкс сăнĕпе пăхса ларать
чĕнмесĕр
Аманнă, сусăрланнă ватă çын:
«Яш-кĕрĕм ĕмĕрех тĕнче хуçи!
Тӳсеймĕ çав тиха пек кĕçенмесĕр.
«Дум-дум» аркатнă урари суран
Ыратнăран ларатăп эп «сăпайлă».
Хам курнă тип-шара кампа-ши
пайлăп?
Калаçăп шур хутпа çеç ăш
çунсан.
Ташларăм вăрçă ташшинчех
пит хытă,
Çав юнлă туй хăварчĕ те урасăр,
Юман туя тыттарчĕ ман алла.
Сăпайлăх – шухăш чĕлĕмĕ.
Ма тытăн?
Туртсан – чыхăнтарать ятна
ыйтмасăр:
вăл – тĕттĕмсĕр. Хăй йӳçĕ япала».

САЛАМ СИРЕ, ЙĔПРЕÇ ВĂРМАНĔСЕМ

Салам сире, Йĕпреç вăрманĕсем!
Яштак хырсем, кĕреш ват юмансем
кĕрекери çынсем пек шавласассăн
сар кайăкла çунат çапать хавасăм.

Юрлать çĕр хăй те уçă сасăпа:
чунра янрать тĕлĕнмелле симфони.
Итлеп хăна курки сыпа-сыпа:
ку кĕвĕре – ан ман! – ĕçчен çын сăнĕ.

Ĕçре çаврăнăçуллă ал-ури,
çурхи вăрман пек чун-чĕри сăпайлă.
Шăпчăксемпе саркайăксен юрри
шăраннă чух, çĕршыв асамçă майлă:

çĕклет таса ĕмĕтсене çӳле,
чечекленет хĕвеллĕ кăмăл-шухăш.
Куран та ăнсăртран çавра кӳлле,
сиксе тухассăн туйăнать пек вутăш.

Паллах, ку туйăмра çеç çуралать...
Хыр тăррисем хумсем пек хускалсассăн,
вăрман – сивлек, вăл тинĕс пек шавлать,
туятăп эп карап ишсе тухсассăн.

Лăпланчĕ тăвăл. Халь умри хырсем –
çарти кĕрнеклĕ салтаксен ĕречĕ.
Парад ирттернĕн туйăнчĕç вĕсем,
кирек ăçта та шухăша кĕреççĕ...

Салам, Йĕпреç вăрманĕсем, сире!
Юмахçăсем пек шухăша путатăр.
Мухтам эсир сĕткен илен çĕре –
вутра-шывра пулма çак чысшăн хатĕр!

Николай Теветкел,
ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ.
1994 ç.

РОДНОЙ ЯЗЫК

Народному поэту С.В.Эльгеру

Было время род людской арканил
Разум свой с идеей бесприданной –

Лились слезы, край родной пустел,
Всех кромсал ужасный беспредел.

Что ж молчите, Вековые Дали?
Ваши вихри нас разъединяли:
Кто сегодня друг, он завтра – враг,
На сердца влюбленных хлынул мрак.

Но родной язык звенел как песня,
И манил он чистотой чудесной.
Стар и млад его благодарил,
Как святыней дорожил и чтил.

Выбегая из густой чащобы
Пел он звонко и задорно, чтобы
Слушал молча, всем наперекор.
Иногда наш дивный птичий хор.

Мой язык! Златым осенним медом
Пахнешь и журчишь над небосводом.
О батырах разных речь ведешь,
В сказочных сказаниях живешь.

Бьет ключом язык родной чувашский,
Часто он в беду подбодрит лаской.
Было время – под ногой Земля
Нищая шипела как змея.

Сил лишаясь, падали – немели,
Но назло судьбе держались смело.
Мир смотрел как недруг, был крутым,
Не был щедрым, был он нелюдим.

Но чуваш окреп, потом воспрянул,
Отточил меч разума и грянул

«Гимн Пахоты» – чуваш на ноги встал,
И лемехом нужду змею кромсал.

Гнет веков язык чувашский помнит,
Он – суров, но порою – комик.
Мой язык родник мой вековой –
Он же голос материнский мой.

Николай Теветкел.
1960. Перевел автор.

ӲНЕРÇĔСЕМ СĂНАРЛАÇÇĔ

Семен Васильевич Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэми тăрăх Федор Осипов график ӳкернĕ иллюстрацисем. «Хĕн-хур айĕнче» спектакльте вылякан артистсен сăнĕсем те тĕрлĕ рольсене уçăмлăн та ĕнентерӳллĕн кăтартса параççĕ поэмăри персонажсем.

Пахомка рольне вылякан Виктор Родионов герой сăнарне витĕмлĕн уçса панă.

Георгий Фадеев артист поэмăри Алапите уççăн курма пулăшать.

Спектакле Чăваш драма театрĕ иртнĕ ĕмĕрти аллăмĕш çулсенче лартнă.

Çав çулсенчех С.В.Эльгерĕн «Хĕн-хур айĕнче» кĕнеки пичетленсе тухнă. Унта, сцена çинче вылякан артистсен çакă икĕ

сăнĕсĕр пуçне, тата темиçе ӳкерчĕк кĕнĕ. Акă вĕсенчен тата иккĕшĕ.

Николай Петровский-Теветкел художник пысăк хак парать Эльгер произведенине сцена çинче сăнлакансене те, ӳнер искусствинче сăнарлакансене те.

Пахом чăвашсене влаççене хирĕç пăлхава чĕнет.

Акă пусмăрçăсене хирĕç пăлхав пуçланнă.

А вот поэт совсем иного плана. Обычно он щедр на зрительные, броские метафоры. Само стихотворение, как правило, разворачивается у него как единый сложный троп. Но, входя в теремок детской поэзии, Николай Теветкель как бы оставляет на пороге свой меткий, прицельный взгляд и умение одной строчкой» создать яркий образ. Лишь в отдельных стихах его книги «Волшебная зима» (1983) мы видим, что поэт «играет» всерьез. Вот он пишет наступающий вечер, когда ветер рысью пробегает по верхам деревьев, и в багреце заката солнце словно швыряет золотые снопы своих лучей, и таинственные лоси собираются на водопой у круглого прозрачного озера в глубине леса, тишину которого нарушает одинокий птичий крик; от берега мягко, по-медвежьи туман карабкается по склону холма – и всю эту картину делает еще пронзительней присутствие того, кто видит все это; здесь схвачено смятение души. (Стихотворение «Вечером»)...

Теветкель иногда может «поразить цель» с ходу, без предварительной размалевки. У него в стихотворении «Зеленый парус», например, крона одинокой березы надувшимся зеленым парусом плещет в открытом поле, шелестя на солнечном свету, а «ветер-рулевой натягивает стропы, дабы направить этот порыв в даль красоты. Такой образ, поданный в двенадцати строчках, действует сразу, мгновенно. Из таких штрихов, в конечном итоге, и может сложиться в сознании ребенка цельный образ Чувашъень – чувашской родины. Я не хочу этим сказать, что все ее приметы должны быть броскими и пестрыми. Есть в нашей природе и своя негромкая, потаенная красота, которую тоже надо уметь увидеть и довести ее до сердец (1983). Н. Теветкелю удается двумя-

тремя штрихами дать характер ребенка, нарисовать его образ в движении. И все же книжки многих авторов выглядят «малонаселенными» (чаще всего речь ведется от первого лица, «я» которого, тем не менее, остается достаточно неопределенным); герои в них не существуют сами по себе. Постоянно ощущается за ними присутствие автора, который дергает то одну ниточку, то другую и водит свое дитя, не спуская с него строгого родительского взгляда: как бы чего не выкинул!

Среди немногих примеров эпической поэзии для детей я также хотел бы отметить произведения Н. Теветкеля, В. Эндипа, В. Тимакова.

Борение природных стихий, своего рода новосозданный космогонический миф о сотворении мира, где действующими лицами на стороне добра являются персонифицированные Месяц, Небесная Заря, их дочь Росинка, страж света Солнце, а на стороне злых сил – Черная Ночь, Буйный Ветер и разная нечисть, предлагает в своей поэме-легенде «Росинка» Н. Теветкель. Нагромождение метафор, игра подтекстами и аллегориями вряд ли делают это произведение, безусловно оригинальное по форме, доступным для детского восприятия. Оно рассчитано на более искушенного читателя.

Атнер ХУЗАНГАЙ.

«Из родника народной мудрости»

Соревнуясь с прозаиками, чувашские поэты тоже сочинили немало сказок. И в них предпочитается мотив очеловечивания природы, что характерно для детского восприятия. Николай Теветкель в поэме-легенде «Росиночка» изображает борьбу мифических персонажей Солнца,

Луны, Росиночки с Темной Ночью, Бурей и т. д. Персонифицируя природные явления и космические тела, автор драматизирует конфликт между добром и злом. Фольклорное мышление у поэта сочетается с яркой живописностью. Своеобразные образы Теветкеля заставляют читателя задумываться о смысле своих поступков.

Геннадий Юмарт.

Выдержки из высказываний о творчестве Николая Теветкеля взяты из журнала «Детская литература» №10, 86 г. (Москва).

ЭЛКЕР ÇĂЛТĂРЛĂХĔ

Çĕр чăмăрĕ миллионшар çул хушши пулса çитнĕ майăн, ун çинчи чĕрчун тĕнчи те куçăн-пуçăн, сассăр-саслăн аталанса пынă, пуç кунтăкĕнче ăс пурри хăйне хупăрлакан тискер кайăкпа çапăçса, вучах тавра сиккелесе, пĕр-пĕрин çумне çыпçăнса шавланă, çут çанталăк инкекĕсене тӳссе, пĕр-пĕринпе тытăçса-çапăçса, ăнлав вăйĕпе малалла утнă, çӳлелле-çӳлелле çĕкленнĕ. Мĕнпур чĕрĕ чунран уйрăлса-уйрăлса, икĕ уралла çăмламас утаман тирне-ӳтне çутата-çутата хитреленнĕ, пуç çинче тăрса юлнă çӳçне пӳрнисемпе тураса, пичĕ çинчи сухалне кăвапа таран ӳстерсе, унтан ăна касса-хырса, пĕç кăкĕ умĕнчи кăтрине пытарма вĕренсе, Çĕр хуçине тухнă. хăйне хăй Этем теме май çитернĕ икĕ уралла Упăтен чĕлхи-çăварĕ Çĕр чăмăрĕн тĕрлĕ кĕтесĕнче тĕрлĕрен мăнкăлтатнă, ăсĕ хăйне евĕр çивĕчленнĕ.

Этем, хăйне хăй тытăнса тăмашкăн майлашăнса пурăнма пуçланă вăхăтрах, пĕлес, ăнланас тесе, пĕрмай пуçа

каҫартса тӳпенелле тинкернĕ. Таҫти инҫĕшрен сиксе тухнă куҫа шартаракан вĕри ҫăмха кунĕпе ăшăтса пĕҫертнĕ те, каллех таҫта, ҫĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ ҫĕрте ҫухалнă. Тавралăха тĕттĕм чатăрĕ карса илнĕ. Ҫĕрле тĕксĕмрех măн ҫаврака пĕлĕтсем хушшине сиксе тухнă, майĕпен вăл катăлса та, тулса та хăй йĕррипе куҫнă. Куҫ виҫсе илмелле мар аякри анлăшра йăлтăркка пăнчăсем вылянă. Этем, паллах, вĕсене пĕрне те алăпа тытайман, хăй сисмесĕрех-туймасăрах, пуҫĕпе шутлакаласа-шухăшлакаласа, ытла та ытарлă тавралăха-инҫĕше хăй ҫумнерех ҫывăхлатнă. Тĕнче, ҫĕр ҫынни ҫут ҫанталăк вăрттăнлăхне уҫа-уҫа пĕр йышши ҫăлтăрсен йĕркине этемлĕх умне тĕлĕнтермĕшле сарса хума май ҫитернĕ. Ҫав вăрттăнлăха тĕпче-тĕпче хăй те анлă уҫлăха вĕҫсе тухнă, Уйăх ҫине хăпарса тата тарăнрах куҫпа таҫта ҫити сăнанă, халĕ ĕнтĕ тата аяккарах, инҫерех кайма хатĕрленет.

Андриян Николаев чăваш та ҫăлтăр пăтти мĕнле вĕренине пиртен нумай ҫывăхарах курса, ăслă пуҫĕпе наука ҫĕнĕлĕхĕсем хушнă этемлĕхĕн аталану шкулне.

Ҫут тĕнчи вара, пĕр пĕчĕк Ҫĕр-планетăпа пĕрле, космос саккунĕсемпе килĕшӳллĕн, пирĕн куҫ умĕнче йăлкăшса тăрать.

Хĕвелпе уйăх кулленхи пурнăҫ йăлине туллинрех кĕрсе пынăран-ши, Этем ытларах таҫти аякри ҫутă пăнчăсене тĕплĕнрех пĕлесшĕн ҫуннă пулас. Ҫăлтăр ятне панăскерсене вĕсене мĕн тĕрлĕ, мĕн чухлĕ сăнаман-ши? Ҫăлтăрсене аваллăхра арабсем, египтянсем, грексем, вавилонянсем, австралиецсем, кельтсем тата тухăҫ енчи ытти халăхсем хытă сăнаса тишкернĕ, уҫлăхра ҫĕнĕлĕх хыççăн ҫĕнĕлĕх тупса палăртнă. Вĕсене шута та илнĕ: нумай миллион. Этеме Турă икĕ пин ҫурă ҫăлтăра куҫлама, вĕсен хушшинче хăйне те шыраса тупма сывлăх панă. Этемĕ

хăйне пурăнмашкăн çăлтăр вăхăчĕ шутласа кăларнă. Куçса выляман çăлтăрсен йĕркипе Çĕр хăйĕн тĕнĕлĕ тавра 24 сехет хушшинче çаврăннă вăхăт талăк шутланать.

Этем тӳпене 88 çăлтăр ушкăнне пайланă, ушкăнĕсене, пĕрлех тата çутăрах çăлтăрĕсене уйрăм ят панă. Çав тери мăнă çăлтăр – Орион çăлтăрлăхĕнчи Бетельгейзе. Çутă çулталăк хушшинче 9,46 миллион километр хăвăртлăхпа куçать пулсан, унăн çути çав çăлтăр патне тата çур миллион çулталăк тăршшĕнчи хăвăртлăхпа (500 тысяч свето-лет) тин çитет. Ку çăлтăр калăпăшĕпе Хĕвелтен 160 миллион хут пысăкрах, 14 пин хут хĕрӳрех. Танлаштару: Хĕвелĕн радиусĕ 696 пин километр, тулаш температури – 6000 градус С.Орион çăлтăрлăхĕ Çĕр çинчен çын кĕлетки пек курăнать. Египетра ăна «çăлтăрсен патши», Вавилонра «тӳпен шанчăклă кĕтӳçĕ», Грецире «мухтавлă сунарçă» тенĕ. Грексен халапĕнче Орион, тинĕс турри Посейдонпа Эвриала ачи, никам çĕнейми паллă сунарçă шутланнă. Маншăн тĕнчери нимле чĕрчун та хăрушă мар, тесе мухтаннă вăл.

Критран куçса пынă Энопион Хирос утравĕнче хуçаланнă, анчах тискер кайăк тапăннипе хĕн курнă. Кам ман патшалăха усал-тĕселрен тасатать, эпĕ çав паттăра хамăн хĕре качча паратăп, тесе шантарнă. Улăп пек Орион вара утрав-патшалăхри мĕнпур тискер-кайăка тĕп тунă. Анчах патша хăйĕн сăмахне тытман. Тарăхупа хаярланнă Орион вара, эрех ĕçсе ӳсĕрлет те, патша хĕрĕн пӳлĕмне сĕмсĕррĕн кĕрсе, Меропа илемпие хăйне ирĕксĕр юрататарса пĕрле çывратать. Урса кайнă ашшĕ, Энопион, çакăн хыççăн сунарça суккăрлатать. Анчах Хĕвел турри Гелиос, хĕрхенсе, ăна çут тĕнчене курмалла тăвать.

Мухтаннăшăн, Ориона Зевс арăмĕ Гера малтанах кĕвĕçнĕ, ун патне улăп пек Скорпиона вĕслетсе янă пулнă. Орион унран парăнман. Скорпион вара ăна наркăмăш пар-

са вĕлернĕ. Турăсен турри Зевс иккĕшне те тӳпене çĕкленĕ, вĕсене унта питĕ ăслайăн вырнаçтарнă. Орион çапла хăйĕн тăшманĕнчен яланах хăтăлма пултартăр тенĕ. Çавăнпа Орионпа Скорпион çăлтăрлăхĕсем тӳпере нихçан та пĕр вăхăтра курăнмаççĕ.

Экваторти Орион çăлтăрлăхĕ – тĕнче уçлăхĕнчи чи çутă та, чи хитре те, чи курăмлă та, чи туртăмлă та. Тепĕр халапĕнче грексем Орион пирки урăхларах калани те пур. Зевс арăмĕ Лето йĕкĕреш ачасем çуратнă: Аполлон ывăлпа Артемида хĕр. Артемида та Орион пекех сунара килĕштернĕ, тискер-кайăк тытма шутсăр юратнă, тăшманĕсене те ухăпа хăратнă, ухута турри пулнă, Ориона хытă юратнă. Тĕлĕнмелле хитре Эос та, шурăмпуç турри, Орионшăн чĕрине çунтарнă. Артемида çак мăшкăла чăтаймасть, кĕвĕçнипе савнине, Ориона, ухăран персе вĕлерет. Зевс улăп-ухутнике анлă тӳпере çăлтăрсен ушкăнĕн чи аслийĕ туса хунă. Артемида Уйăх турри ята илнĕ. Орион çăлтăрлăхĕ çавăнтанпах хăюлăхпа паттăрлăх, пултарулăх, илемлĕх çути сапалать Çĕр çине.

Орион çăлтăрлăхĕ çумĕнчех Вăкăр (Телец) çăлтăрлăхĕн ушкăнĕнче вырăсла «Плеяды» текен виççĕмĕш ушкăнри çăлтăрсен кĕпĕрленчĕкĕ пур. Унта 3 пине яхăн çăлтăр. Чи çутти – Альциона.

Çăлтăрсен ячĕсем пирки грексен халапне аса илер-ха. Турăсем хушшинче те пĕрмаях хирĕç тăру, вăрçă пулнă. Пурте аслăран та аслă пуçлăх пуласшăн чунĕсене хĕмлентернĕ-çке. Зевс та хăйĕн капашсăр пысăк влаçне кĕрешӳре çĕнтерсе çирĕплетсе пынă. Аслă ӳсĕмри турăсен Уранăн (Тӳпен) тата Гейăн (Çĕрĕн) ачисем-титансем Олимп турисене хирĕç тăнă. Вĕсенчен Крон текенни хытă чăрсăрланнă. Атланчĕ те турăсемпе çапăçса паттăрлăхĕпе палăрнă. Анчах олимпиецсем Крона пусараççĕ, тăшман-

сене çирĕп, хаяр айăплаççĕ, хăйсем вăйланса юлаççĕ. Атлантăн тӳпене икĕ хулпуççи çинче тытса тăрса асап курма тивет.

Атлант пĕтĕм турăсен ăру ашшĕн Океанăн Плейона хĕрĕпе пĕрлешнĕ пулнă. Вĕсен 7 хĕр ӳснĕ: Алкиона, Келено (Альциона), Майя, Меропа, Стеропа, Тайгета, Электра. Çак пикесем хастар йĕкĕтсене илĕртнĕ, улăпйĕкĕчĕсем те вĕсене куçран вĕçертмен. Вĕсен умĕнче Орион сунарçăн та куçĕ-пуçĕ алчăранă пуль. Зевс турă вара Атлант чиперккисене тискер-кайăксемпе хĕрӳ сунарçăсенчен хăтарас тесе анлă тӳпере çăлтăрсен ушкăнне чăмăртать. Акă ĕнтĕ çав çут çăлтăрсен йăлтăр чăмăрĕ çут тĕнче илемне çĕр çине сапма пуçлать. Кашни халăх ун хăватне хăй майлă ăнланса савăннă. Çӳл тӳпе-

ри çич çăлтăр вырăссемшĕн «Стожары», чăвашсемшĕн «Ала çăлтăр» пулнă. Сăвăçĕ, юрăçĕ, куç-пуç ăстийĕн тем тĕрлĕ маçтăрĕ çич çăлтăр-пикепе хавхаланса тĕлĕнмелле ĕç тăвать. Тĕнчере литературăпа искусство ушкăнĕсем чăмăртанаççĕ. Тава тивĕçлĕ пултаруллă çынсен çăлтăрлăхĕ çапла аваллăхрах çиçме тытăннă. Вăтам ĕмĕрсем хыççăн наукăпа искусство чĕрĕлсе аталанма пуçланă тапхăрта (Возрождение), 1549 çултах французсен «Плеяда» ятлă политика шкулĕ хăйĕн сассине панă. П.Ронсар, Ж.Дю Белле, А.Ж.де Банф тата ытти пĕр шухăшлисем литературăн обществăри пĕлтерĕшне çӳле çĕклессишĕн çине тăнă, поэзи чĕлхине пуянлатнă, унăн гражданла никĕсне çирĕплетнĕ. Акă, талантлă поэтсен, политика деятелĕсен çăлтăр ушкăнĕсем: пирĕн эрăчченхи виççĕмĕш ĕмĕрти Александри çăлтăрлăхĕ, вун тăххăрмĕш ĕмĕрти Пушкин çăлтăрлăхĕ, çирĕммĕш ĕмĕрти Элкер çăлтăрлăхĕ...

Çĕрпе Пĕлĕт хушшинче пулса иртекен вăрçăсенче яланах Çĕр çынни хăйне хăех çĕнтернĕ. Унăн Тӳпепе, Анлă Уçлăхпа çапăçма ăсĕ те, вăйĕ те çителĕксĕр пулнă. Тӳперен, Анлă Уçлăхран, Хĕвелпе Уйăхран тата хăйĕнчен кула-кула çиçекен мĕльюн-мĕльюн çăлтăр, мĕльярт-мĕльярт галактика вăрттăнлăхне пуçра кумласа анранă. Пĕр йышши çăлтăрсен системине галактика теççĕ. Çав тери аякра вĕсем. Галактика çăлтăрсен çути çĕр çине 15 пин миллион çул хушшинче тин çитет. Вăйлă шухăш, сăнарлă сăмах вĕçевĕ те çавнашкалах вĕçĕмсĕр.

Чăваш та, ытти халăхсенчен ӳксех юлманскер, тӳпе анлăшнех тинкернĕ. Унтан ун пуçĕ çине «çăлтăр çумăрĕ» (метеорсен йăр-йăр çути) çунă, куçне çăлтăрĕсем те алчăраттарнă, ăна Анлă Уçлăхпа пĕр чĕлхе тупма майсем шыраттарнă, тĕнче вăрттăнлăхĕсене уçса пурнăç йĕркине майлаштарттарнă. Тухăçран хĕвел çутипе чупса килнĕ

ăслă та паттăр хун текен этем Аслă шыв çыранĕнче – Атăл тăрăхĕнче – хăватлă патшалăх туса хунăскер, вăйлă культура аталантарнăскер, тутар-монгол саранчине анăçалла çĕмĕрсе кĕме чи малтан чарса лартнăскер, пурăна киле чăваш ятне илнĕскер, Анлă Уçлăх вăрттăнлăхĕсене те кулленхи пурнăçра усă курма пĕлнĕ. Уншăн та ытарлă «çичĕ» сăмах илем палли пулса тăнă. Чăваш пикисемпе йĕкĕчĕсем çăлтăрлă каçсенче карталанса юрланă:

Çӳл тӳпере çич çăлтăр,
Çиччĕшĕ те çут çăлтăр.
Пирĕн вăйăра çичĕ хĕр,
Çиччĕшĕ те сарă хĕр...

Юрла-юрла, пĕр-пĕринпе ытаклана-ытаклана чăваш çамрăкĕ тӳпене сăнанă, авалхи сăмах-юмаха аса илсе тарăн шухăша путнă. Чăваш мĕн авалтанах Ала çăлтăр текен йăлтăркка çиçĕмсен çăмхинчен çĕр çине çичĕ çип юхса аннă. Çав çипрен хĕрĕсем пир тĕртнĕ, каччисем вĕрен явнă. Вĕренĕнчен çыхнă пусма вĕсене çăлтăр-пикесемпе çывăхлатнă. Чăвашсем пĕр-пĕринпе çапларах калаçнă: «Ала çăлтăр уйăхран иртет нурăс уйăхĕнче. Çичĕ кунта иртет пулсассăн çичĕ эрнере юр каять, тăхăр кунта иртет пулсан тăхăр эрнерен юр каять...» Ала çăлтăра вырăссем Утиное гнездо тенĕ. «Утиное гнездо семь звезд. Кто это знает или скажет семь раз, тому пусть это зачтется за доброе дело» тени те пур халăхра.

Хăй вăхăтĕнче Мăн Упакасси каччи пулнă Ваçĕли Çеменĕ те хăйсен урамĕнчи лаштра йăмрасем айĕнче хĕр-яш пăшăл пăттине пĕçернĕ ĕнтĕ. Вăл та чун туртмăш вăтанчăк пикипе хăйĕн çăлтăрне курнă. Пурнăç чуппинче хăй тӳпери çичĕ çăлтăр, Вăкăр çăлтăр ушкăнне кĕрсе ӳкнине те сисеймен. Тапса тăракан пуç мимийĕ унăн çуралнă

Чăваш Республикинчи Йĕпреç районĕнчи
Пысăк Упакасси шкулĕ умне лартнă
Чăваш халăх поэчĕн С.В.Элкерĕн бюсчĕ.
Бюст народного поэта С.В.Эльгера
в д.Большие Абакасы (Чувашская Республика).

чухнех Инçет Анлăшĕн çичĕ пикийĕпе пĕр çăмхана пуçтарăннă иккен. Тĕнче курăмĕн курăнман çиппи çапла пултарулăха, хăватлăха пĕр сыхăра вĕçĕмсĕр аталантарать. Чи çут çăлтăрне Элкер ятне панă.

Чăн-чăн чăваш халăх поэчĕсем Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши, вĕсен хыççăнхи патшалăх пичечĕллĕ Чăваш халăх поэчĕ Николай Полоруссов-Шелепи, ун хыççăнхи Чăваш халăх поэчĕ Çемен Элкер те чĕрĕ чухне хăйсен Илем туррине çумрах туйнă, унăн кăтăклавĕпе хĕрӳленнĕ. Çав хĕрӳлĕхпе вĕсем халăхра сăнар çути сапаланă, авалхи Атлант хĕрĕсен хĕрӳлĕхĕпе, лира каласа, чăваш халăхне ура çине тăратнă, савăнтарнă. Вĕсен юрри – çĕнĕ пурнăç юрри пулнă. Кĕрешӳре вăй илсе паттăрлăха тухнă Сăнарлă Сăмах çĕнтерӳçи Çемен Элкер те халапри Атлант пекех Чăваш литературине нумай çул хушши вăйлă икĕ хул пуççийĕ çинче шанчăклăн тытса тăнă. Çав йывăрлăха унăн вĕренекенĕсем Петĕр Хусанкай, Ухсай Яккăвĕ, Митта Ваçлейĕ, Александр Алка, Микулай Теветкел тата ыт. те. хăйсен хул пуççийĕ çине тиенĕ.

Йăлкăшать çĕрле çăлтăр тĕнчи. Орион çăлтăрлăхĕ те, çăлтăрсен Вăкăр ушкăнĕ те пире шухăша ярса хăйсем патне туртаççĕ. Пурте эпир унта шухăш-ĕмĕтпе хамăр çăлтăра шыратпăр, анчах çав çăлтăр хăшне пĕлмесĕрех хамăрăн юратăва мухтанарах калатпăр: «Авă санăн çăлтăр, авă манăн çăлтăр. Чи çут çăлтăрне эпĕ сана парнелетĕп». Çăлтăрсем вара пиртен куласçĕ, çĕрле тĕлĕкре хăйсемпе выляттарса аташтараççĕ.

Çăлтăрлăха, çăлтăр ушкăнне шыраса тупса тĕпчени, унпа пурнăçра, ĕмĕтре усă курма пĕлни Этемшĕн телей. Пĕр сыхăнура эпир яланах шухăш вĕçевлĕ, ĕмĕт кĕрлевлĕ. Элкер çăлтăрлăхĕ те Орион çăлтăрлăхĕпе, Вăкăр çăлтăрĕсен ушкăнĕпе пĕр сыхăнура – аталану, вĕçĕмсĕр малашлăх сыхăнăвĕнче.

2009 çулхи чӳк уйăхĕн 4-мĕшĕ.

ТУПМАЛЛИ:

Им гордится Чувашия 4
Из «Краткой литературной энциклопедии 7
«Чăваш писателĕсем» библиографи
справочникĕнчен 8
Семен Элкерĕн аса илĕвĕсенчен 14
Киле таврăнсан 18
Кушлавăш уйĕ ĕлĕк тата халĕ 21
Кушлавăшпа Хураçырма 39
Кушлавăш уйĕ Йĕпреç енне юлсан 44
Çĕр çăлтăрĕ 60
Элкер çĕршывĕ – илем çĕршывĕ 69
Пултарулăх çăлкуçĕ иксĕлми тапать 77
Кушлавăш уйĕ Вăрнар енне каçсан 82
Хусанкайсем Элкерĕн ăс-хакăлĕ пирки 89
Тĕп элкерçĕ-ăсчахăн таса сăмахĕ 118
Элкер-журналист 152
Элкер – «Хыпарта» çуралнă журналист 160
Пурнăçра икĕ япала кирлĕ 167
Аркадий Эсхель Çемен Элкерĕн хаçат-журналти
ĕçĕ çинчен 170
Георгий Ефимов аса илни 172
Шурă вырăспа чăваш поэчĕн туслăхĕ 175
Янка Купалăн таса сăнарĕ 180
Белорус писателĕ чăвашсем çинчен 186
Пит хаклă пурлăх юрату 191
Янка Купала сăввисем 198
Янка Купала урамĕ 200
Ырă тĕслĕх пулса тăчĕç 201
Элкер премийĕн лауреачĕсем çинчен
Чапне Чăваш тĕнчине сарчĕ 209
Кăмăлне сутман, кăмăлĕпе çынна пулăшакан 212
Пичет ĕçĕнчи салтак 215

Пултарулăх пурнăçĕн куравĕ 218
«Абрамов кĕтесĕ» 220
Ӳкерчĕкĕсем халĕ те чĕрĕ 222
Пĕр ялтан. Пĕр çемьерен 224
Йĕпреçсен Элкер премийĕ 229
Аки-сухи тивлечĕпе 233
Элкер ман пурнăçра. Кăткăс та йывăр çулпа 244
Элкер сачĕ 257
Çич çăлтăртан чи çутти 263
Асăмра мăнаçлăн юлчĕ 268
Икĕ хутчен пачĕç 276
Элкер çĕршывĕ маншăн та тăванланчĕ 282
Вăл кашнин чĕринчех пурăнать 285
Асли 297
Хурав параймарĕ 303
Чăвашлăхшăн паттăр кĕрешнĕ 307
Куккан манăçми сăнарĕ 310
Ман ятпа – Çыру 315
Юратса çырнă кĕнеке 319
Элкере чунтан халаллани 325
Герои Эльгера – на сценах театров 333
«Асран кайми кунсем» 339
Элкер уявĕсем 349
Халăхри чыслă ят 350
Упакасси 353
Вăрнарпа Йĕпреç çĕрĕ вăй панă 356
Халăх сасси 359
Элкер чăваш халăхĕшĕн, шăпийĕшĕн çуннă 362
Поэт чĕри – халăх чун-чĕри 367
Элкер еткерĕ 376
Элкер сехечĕ çĕр хыççăн пиллĕк çапсан 381
Элкерçĕсĕр ирттернĕ уяв 384
Упакасси тăрăхĕ чаплă ентешне чысларĕ 389
Çăлтăр хушаматлă çăлтăр 392

Чăваш сăмахĕн чăн сăвапĕ 402
Элкер урамĕсемпе утатпăр, чупатпăр 405
Страстный эльгеровед 415
Элкер вăрманĕ 418
Парнас çинче – Элкерпе Теветкел 434
Йĕпреç юманĕ 438
Çемен Элкер тата Çеçпĕл Мишши 444
Ӳнерçĕсем сăнарлаççĕ 462
«Кто живет в теремке поэзии?» 464
Элкер çăлтăрлăхĕ 466

КУЗЬМИН Владимир Прокопьевич

СОЗВЕЗДИЕ ЭЛЬГЕРА

О жизни и деятельности славного сына чувашского народа,
общественного деятеля, журналиста-публициста,
народного поэта Чувашии Семена Васильевича Эльгера

Подписано в печать 09.12.2009. Формат 60x84/16.
Тираж 150 экз. Заказ № К-2003.

ГУП «ИПК «Чувашия».
428019, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

КУШЛАВĂШ ТЕКЕН ВУН ИКĔ ЯЛ УЙĔ

ЧĂВАШ ÇĔРĔНЧЕ ЕШĔРСЕ ВЫРТАТЬ